К 84.09(=Чув)
К89
Ч-42359

Владимир КУЗЬМИН

Ҫымар

III кёнеке

Национальная библиотека ЧР
4-042359

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Чув К 84.09(=Чув
К.89

ВЛАДИМИР КУЗЬМИН

ТЫМАР

Роман

Виссёмёш кёнеке

Шупашкар
«Çёнё Вăхăт»
2009

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-444.2
К 89

Кузьмин В.П.
Д

Кузьмин В.П.
Тымар. Роман. 3-мĕш кĕнеке. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2009. – 384 с.

Çирĕммĕш ĕмĕр вĕçнелле кисретнĕ пурнăç тăвăлĕнчен Чăваш çĕршывĕ тасалса та çĕнелсе тухрĕ. Чăваш та ăс-тăн, шухăшлав чуралăхĕнчен хăтăлса, ирĕклĕн сывласа ячĕ. Вăл хăйĕн чун туртăмне – çулти вăй ĕненĕвне, аваллăхран пыракан йăли-йĕркине тĕпелти турă кĕтессинче, сăваплă вырăнта кăмăлтан малалла тăсса кайрĕ, ăшран тухакан хăватпа хăйĕн пултарулăхне ытларах шанмаллине, тăрăшаканшăн, çине тăраканшăн телей уççи çумрах пулнине ăнланса илчĕ, тăнлăрах тапаçланма пуçларĕ.

Романăн çак кĕнекинчи геройсен хутшăнăвĕсем, ĕçĕ-хĕлĕ, шухăш-ĕмĕчĕ чăваш ялĕн сăн-сăпачĕ илемленсе пынă, ял хуçалăхĕнче, халăхăн социаллă-культурăллă пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртнĕ тапхăрта уçăмлăн палăраççĕ.

ПРОВЕРЕНО
2010 05 ОКТ 2017

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-42.359

© Кузьмин В.П., 2009

ТЫМАР

Такăнмасăр ўкес мар, ватăлмасăр вилес мар.
Ваттисен сăмахĕнчен

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

1

Чăваш çĕрĕн варрине сарăлса ларнă Хурăнвар, Тарăнвар, Кайривар тата Сăр вăрманĕн авалхи уçланкинче йăва çавăрнă Тымар, Хурашур, Авруй çыннисем те яланхиллех хĕвел пайăркисене ывăçла-ывăçла ирсерен пит-куçне çăваççĕ, сывлăмлă ўсен-тăран имлĕхне ăш каниччен ĕçсе кăкăр туллин уçăмлăн сывласа яраççĕ те, çĕнĕ куна тĕрлĕ-çĕрлĕ майлă кăмăл-туйăмпа, вĕçсĕр ĕçлĕ шухăш-ĕмĕчĕпе кĕтсе илеççĕ. Этемлĕхĕн Вăрманкас тăрăхĕнчи «Шурăмпуç çăлтăрĕ» пĕрлешўллĕ хуçалăха кĕрекен икĕ пинлĕ пайĕ-ушкăнĕ, акă, паян та, пин те тăхăр çĕр сакăр вун пиллĕкмĕш çулхи утă уйăхĕн вун иккĕмĕшĕнче, Чăваш çĕршывĕн юн таппипе хутăшса, Раççейĕн юн таппине вăйлатма пулăшса, пурнăç çулĕпе малалла утса каять.

Хурăнварта çирĕммĕш ĕмĕрпе ăмăртса çуралнă, ялта Салакайăк Карачăмĕ текен Герасим Филиппович Воробьев та çут тĕнче çуттинче çав çулпах тапаçланать.

Ачаран тăн кĕрсе пынăранпах халăх праçникне Петрава кĕтме хăнăхнăскер вăл çўллĕ тĕкĕр айĕнчи числиникне çĕнĕ кун сăнĕпе уçăлтарчĕ, пĕтĕм кĕлеткине кăтартакан куç кĕски умĕнче хăйне пĕр самант тимлĕн сăнарĕ, кăвакарса шуралнă çўçне пўрнисемпе тураса, вăрăм сухалне якатрĕ, сиккелесе илнĕ май хул-çурăмне выляткаласа вăйне тĕрĕслерĕ, ăш-чикре нимех те канăççăрлантарманнине туйса, йăлл кулса илчĕ. Хăйне хирĕç ылтăнланă шăлне йĕрсе тăракан правур мучине ырă ирпе сывлăх суннă хыççăн, савăнăçне пытараймасăр, уççăн сасă турĕ: «Вилместпĕр-ха сывлăш тухнă чух, ура утнă чух».

Çав вăхăтрах акă тур кĕтессине, çăка пĕрене çумне çакса янă тăваткал арчаран патшалăх юрри «нихçан арканми» сăмахсемпе хăватлăн, çĕкленӳллĕ кĕвĕпе янăраса кайрĕ, хыççăнах хăнăхнă ян сасă пӳрт ăшчиккине тултарса лартрĕ: «Говорит Москва!..»

Вун ултă республикăна пĕрлештерсе тăракан анлă çĕршывăн тĕп хули юлашки хыпарсем пĕлтерчĕ. Патша тронĕ çинче пĕр сăмаха çĕр хут каласа та халăх хăлхине тăнлăн кĕртеймен каппайчăк шакла пуçа эфир çăвĕпе çунисĕр пуçне тăваткал арча нимле ылтăн пĕрчиех те сапса параймарĕ. Ара, кашни кун ăçтан-ха тата çĕр чĕтретĕр, хĕвел-уйăх тĕттĕмлентĕр тата çĕнĕ патша çуралтăр? Хушăран хывăх та вĕçтермелле мар-и ратисчĕсен те... Вĕсем те Сталин хыççăн çĕн патшасем çинчен павраса ывăнчĕç пуль. Хура мăйăхлă круçин юррине çеç килте ирсерен, куç уçсассăнах итлеймен, çукчĕ Вăрманкас тăрăхĕнче хальхи пек пралук тăрăх чупакан сасă та, пӳрте хĕвел кĕртекен çуттийĕ те. Чăвашшăн та чухăн, хăватсăр самана пулнă. Вулав çуртĕнче çеç хăлхана чикме пултарнă типĕ батарейкăпа ĕçлекен радио курупкинчен Мускав сассине. Унта кашни каç каяймастăн та, килти шивуй радиона тăнласах тĕлĕрсе каятăн. Карчăккин, Анукăн чĕлхи, уншăн темле диктор чĕлхинчен те хăватлăрах та, лăпкăрах та, чун уççиллĕрех те туйăнатчĕ. Анук радиовĕ – сарахван-кĕпе арки хыпарĕ – ял пурнăçĕн ырлăхне-хурлăхне куллен пĕлтерсе тăратчĕ. Çапла вăл «Говорит Москва» тата «Шупашкар калаçать» вырăнне мĕн авланнăранпах, «Итле, Карачăм?» тенине килти диктор сасси шутĕнче хăлхана чиксе пурăннă. Анчах та паян Анук калаçмасть, Анук ял хыпарне те, ют çĕрти сас-хурине те, леш тĕнче сассине те янраттармасть, стариккине çуралнă кун ячĕпе те: «Эс, Карачăм, чăнах Петравра кун курнăччĕ-и-ха, активсе пăхар-ха апла пĕрер алтăр кăпăклă сăрамăра пичке пуçласа», – тесе йăл кулса хĕпĕртеттереймест.

Вырăн майласа диван çине таяннăччĕ çеç, район радиовĕ, ава, тăванла çывăх сассине пачĕ: «Вăрманкас

калаçать!..» Ирхи кăмăл валеçекен хĕрарăм, çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарса пынă хушăрах, çепĕç сассипе пĕлтерчĕ: «Паян – «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхозăн хисеплĕ членĕ Герасим Филиппович Воробьев хурт-хăмăр ăсти сакăр вун пилĕк çул тултарать. Вăл çирĕммĕш ĕмĕр çулĕпе вут-çулăм витĕр хастаррăн утса тухнă, граждан вăрçинче совет влаçне хŭтĕленĕ. Çĕршывăн йывăр та савăнăçлă вăхăтĕнче паттăрлăх кăтартнă. Ĕçри хастарлăхшăн патшалăх наградисене тивĕçнĕ. Ĕçпе вăрçă ветеранĕ – таврари ятлă-сумлă çын, халĕ те колхоз утарĕнче ĕçлет, пыл нумайрах туса илессишĕн чунне парса тăрăшать. Ăна, мăн менелник ячĕпе хыттăн-хыттăн саламласа, татах та нумайрах пурăнмашкăн ырлăх-сывлăх сунса, чăваш халăхĕн «Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать» юррине парнелетпĕр».

«Ву фрунт!» камантăна илтнĕ салтак пек чалт сиксе тăрса сывламасăр тăнларĕ Салакайăк Карачăмĕ Вăрманкас хыпарне-саламне. Юррийĕ, курупка алăкĕнчен шăнкăртатса юхса тухнă майăн, ватта пусарах панă çулсенче Анукпа тур кĕтессинчи юман сĕтел хушшинче хирĕç пăхса, кил сассипе шăрантарнăн туйăнса кайрĕ:

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать те
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шыв юхать те,
Шыв юхать те – чун юлать.
Шухăшлăр-ха, тăвансем те,
Шухăшлăр-ха, тăвансем:
Ĕмĕр иртет,
Ĕмĕр иртет – кун юлать...

Авалхи юрă Карачăмăн ăшĕнче чăваш халăхĕн пурнăç кĕввине çĕнĕрен вăратса, карчăккин чĕрĕлĕх туйăмне виличченех ăшшăн пăхса пурăннă хĕсĕкрех çырă куçĕнче вăйланса каять. Сĕтел урлă ŭпĕннĕ хăй хаклана «стантартлă» вăр-вар кĕлетке, тулли чĕччисене силлентерсе, кăвакарнă çŭçĕнчен явнă вăрăм

çивĕчĕсемпе сăмсана кăтăклантарса «ученăй-тумхуçяина» ытакласа илессĕнех пек, анчах... Карчăккин ĕмĕчĕпе хăйĕн ĕмĕтне пĕрлештерсе кĕреке сĕтелне мăшăр пуянлăхĕпе вăйлатмашкăн май çук. Юратнă çыннине ыталаса хăй çумне çывхартас тесе аллине тăсрĕ те вăл чӳречерен шăтарса кĕнĕ хĕвел ачисене-мулкачĕсене çеç ывăçласа илме пултарчĕ, вара ирхи шевлепе питне çунă пекки турĕ.

Çак самантра унăн шăнкăрав сасси пек илтĕнекен шыв юххине тимĕр пралук тăрăх чуптаракан диктор пикене, юрăшăн тав туса, Асанхăтлă çырми çыранĕнчи çĕр çырлине тутантарса хĕретес килчĕ. Эх, ыраш çумĕнчи пиçнĕ çырлана, ана вырса тухнă хыççăн, выртсах пуçтаратчĕç пурак тулли. Анук юрлама юрататчĕ. Карчăккин чуна уçакан сасси, пин-пин тĕслĕ чечеклĕ улăх тăрăх хумлăн-хумлăн юхса, тырă выракан хĕрарăмсемпе ачасен кăмăлне янкăр тӳпене çити çĕклентеретчĕ. Тӳперен хĕвел йăлкăшса çунтарать пек, çумра – Анукăн чăп-чăмăр кĕлетки пĕçертет пек.

Пек те пек кăна çав, авă, тул çутăлнă та, хĕвел çĕрлехи сĕмлĕхе каçчен читлĕхе хупнă. Тĕттĕм пуличчен Карачăм, тӳпене шăтарса тухасла сиксен те, çăлтăр тĕнчине чĕртеймест, Анукĕн пуринчен те çутă çăлтăрне куç вăйĕпе çывхартаймасть, карччăккине алла илсе пăчăртаймасть, аякран таврăннă хыççăн хура мунчара çурăм çуса çут тĕнче тĕсне кĕртеймест, тур кĕтессинчи сĕтел хушшине хăйпе хирĕç лартаймасть, пĕрле юрлаттараймасть. Тур кĕтессинчи илем сăррин хăвачĕ те – Христус сăнĕ – Карачăма нимпе те пулăшаймасть.

Ах, çӳлти Турă, Карачăм ятлă чуру хăй тар кăларса тертленмесĕрех, тур кĕтессине сăх сăхса темле пуç çапсан та, чиркĕве кайса пачăшкă юмахне итлесен те, çурта лартсан та, Анук тĕнчинчен тумлам сĕт те, аш татăкки те, çăкăр чĕлли те, куфайкă-çăм атă та ăшă çумăр çунă пек пуç тăрринче кĕтсе илеймен. Çапах та ват çерçи, мĕльюн-мĕльюн çынпа, çĕр-çĕр пин чăвашпа пĕрле,

курнăçмасăр, виçĕ пӳрнине хуçлатса тăнлăн хĕрес хурать сарлака кăкăрĕ çине: «Эй, Çӳлти патша, Эсĕ чуна лăплантаратăн, Эсĕ тӳрĕ Сывлăш, Эсĕ пур çĕрте те пур, Эсĕ пурне те пултаратăн, пур ырăлăх та Санран тухать, чĕрĕлĕх те Эсĕ паратăн: пур усалтан та тасат пире, ырă Турă, пирĕн чунсене çăл. Паян пурăнмалăх çăкăр пар».

Çак тĕн юррипе те, халăх юррипе те «шăнкăр-шăнкăр шыв юхтарса ĕмĕрĕ иртет, кунĕ юлать» унăн та, Хурăнвар çĕр хурчĕн. Хĕр-диктор та, хăйĕн «ирхи мулитвине» кăкăрне каçăртсах вуласа пĕтерчĕ ĕнтĕ, ватă çыннăн кĕреçе сухалне çамрăк чун хĕлхемĕпе сапса, çĕнĕлле чĕртсе хăварчĕ.

Шухăшĕпе Карачăм мучи тем тума та хатĕр-ха. Вăрманкас пики те сасă курупкинчен явкаланса тухса хăйне хĕрӳллĕн ыталасса кĕтет, астармăша ĕмĕтленет. Ах, шухă шухăша ăна, ватăлма мар, çамрăклатса ярать.

Тĕлĕк тĕлех килет тени те тĕрĕсех пуль çав. Салакайăк Карачăмĕ Тымар ялĕ хыçĕнчи вăрманта-заказникре çĕрĕпе хир сысни çинче граждан вăрçинчи утлă çарти пек вĕçрĕ. Хăйĕн умне чиперех ферма сыснисене пăхакан Крахьяна лартнăччĕ. Крахьян сысна аçине, чĕлпĕр тытнă пек хăлхаран çулса илнĕ те, ĕрĕхтерет кăна вăрман ăрсурникĕпе. Карачăм та ямшăка пилĕкĕнчен çавăрса тытнă, пӳрни пуçĕсемпе унăн тулли чĕччисене кăтăкласа киленет. Ясарланса кайнăскер ват пăшал йăпанура сисмерĕ те куç умĕнчех темле йĕтре çурăлса ялтлатнине. Самантрах пуç тăрринче хăватлă хум капланчĕ, хăрушă хура мĕлке сысна купарчи çине лаплатрĕ, ăна этем пек пилĕкрен ыталарĕ, хăлхаран хаяррăн пăшăлтатрĕ: «Туйрăн-и, ясар упăшкамçăм, эпĕ ку – усал карчăкку. Çамрăк чухне туйра Тымар маткипе, Хурăн Ульянĕпе аснăшăн еркĕнӳн шăршлă çăварĕ пек тутуна вĕри турчкапа лăплантарнине мантăн-и? Тата çитмен, аскăнчăкăн хĕрне хăв çумна илентернĕ, намăссăр. Ачу пулать вăл сан, кĕççе пит. Çӳлтен эп йăлтах курап

эс сысна аçи татса илеймен пуçупа мĕн-мĕн тунине. Сăмаххупа эс мана тахçанах çăлтăр та парнелерĕн. Акă эпĕ, сан çăлтăру, Тымар кĕрчĕпе якăлти хĕрне те хампа пĕрле илме вĕçсе антăм. Çиччас сире кăтартап аскăнчăк катаччийĕ. Тамăкалла сирĕн çул...»

«Юратнă карчăкăм, чунăмçăм, тинех тупрăм эпĕ сана, хамăн Çăлтăрăма. Эпĕ... мĕн...» – каçарăвне вĕçлеймерĕ Карачăм, ах-ух! вĕсем çӳл тӳпере – çапçутă çăлтăр çинче. Çăлтăрĕ Анук сассипе калаçать: «Куратăн-и, упăшкамçăм, Çĕр çинче тул çутăлнине? Çитет пуль ман патра хăналанса, вĕçĕр виçсĕр те вĕçсĕр кĕвентепе аялалла. Уфф!»

Темле вăй вĕсене, леш тĕнче хăнисене, тăрук вĕçтерсе ячĕ те, вĕсем çиçĕмле хăвăртлăхпа çĕрелле вирхĕнчĕç. Салакайăк Карачăмĕ икĕ хăватлă хĕрарăмăн пĕç хушшинчен хĕрсе тухакан вăйпа арçын пуçне шантармасăр ĕрĕхет, чĕнтĕрлĕ икĕ кĕпе аркинчен тытса анлă уçлăхра ярăнать те ярăнать. Аялта çĕр çаврăнать, анкă-минкĕллĕ улшăнура пуç çаврăнать. Чĕрĕ чун ясарлăхĕн тĕнче уçлăхĕнчи карапĕ пăтранакан хура пĕлĕтсен ăшне аçа-çиçĕмле чăмса кĕрет те... Çĕр питне самантра çутатса янă çиçĕм куç-пуçа алчăратса янă-яман Салакайăк Карачăмне çут çамкинчен анра-сухрана уçмаллах кăрслаттарчĕ. Тĕлĕк вĕлтлетĕвĕнче каллех Крахьян кĕлетки унăн аллисене пĕçертсе ячĕ, амăшĕ çĕмрен пек аялалла шăхăрттарчĕ. Хĕрарăм хĕрĕвĕ пиçтернĕ алăсем вăйсăрланчĕç, Карачăм сысна курпунĕ тăрăх хыçалалла юхса анчĕ. Çăлтăр çинчен сиксе аннă Анук Крахьяна шăлса ывăтрĕ те, сыснана йĕм кантрипе çăварлăхласа, Çăлтăр ытамнелле васкарĕ. Тĕнче уçлăхĕнче пĕччен тăлăххăн тăрса юлнă Карачăм-космонавт çунатсăр çапкаланса вĕçрĕ-вĕçрĕ те, Çĕр тавра темиçе çаврăм туса, салакайăк хăвăртлăхĕпе Хурăнвар тӳпине çывхарчĕ. Пăхать-пăхать те вăл янкăр тӳперен, кăмăллăн кулса ярать. Асанхăтлă улăхĕ хĕвел шевли вăратнă чечек тинĕсĕнче ăна кĕтсе илме сарнă

кавир пек йăлкăшса выртать. Акă кавир чĕрĕлсе çĕкленет те, Карачăма чĕркесе хăй ытамне çупăрлать. Кĕç чечек кавирĕ аркисене хĕрарăм пĕççисем пек сарать-сарать пек те, чечек чăтлăхĕнче пĕрре Анук, тепре Хурăн Ульянĕ, унпа ăмăртсах хĕрĕ Крахьян тата вĕсене кĕвĕçекен Вăрманкас дикторĕ майлăрах халиччен курман вăр-купарчаллă çамрăк пике, унăн ясарлăх туйăмĕпе йĕме шăтарса çĕкленнĕ шăллĕн çут пуçне черетпе ачашласа йăпанаççĕ пек. Асамлă кавир варринче вĕрекен çăл куçсен ухмаха кăларакан шерпечĕпе чыхăнса кайнă шăллĕ, чăтаймасăр, тĕк тӳшек çине сарнă чечеклĕ çитсăна çине-çине юрату сывлăмĕпе нӳретет.

Хавхаланнă Карачăм вăкăр хăмпине вĕрсе хăпартать те, пӳрт ăш-чиккине шăпăр кĕввипе тултарать. Уçăлса хупăнакан чечеклĕ кавир урайне сарăлать, хĕрарăм ĕмĕлкисем шăпăрçă тавра явăнаççĕ – пурте чĕчĕ ĕмтересшĕн.

Ах, Турăçăм, вĕсен пурин те чĕччи тутлă, хăйне евĕр тутлă пулин те, вĕсенчен пурин тутийĕ те, Карачăм тутанса курма ĕмĕтленекен Вăрманкас дикторĕн кăмăла уçакан сассийĕн-туйăмĕн вăйĕ те, ăна çывăхрах, тутлăрах. Арçынна вĕлерекен çав вăй, акă, шăпăр пулса, мĕнпур ясарлăха çӳп шăтăкне шăлса пуçтарчĕ. Çӳп шăтăкĕнчен ясарсем Карачăма хирĕç кутне уçса тăраççĕ. Ват пăшалăн пĕрне те персе ӳкермесĕр, «Ах, вилеп! Вилтĕм халь» тесе кăшкăрттарса-лăплантармасăр, хĕрарăм гимнне вĕçне çитиччен юрлаттармасăр, алăкран кăларса ярас килмест. Шанать-ха Карачăм хăйĕн пĕç хушшинчи шанма пĕлмен шлепкеллĕ шăлнĕне. Хăй ватăлманнинчен тĕлĕнме пĕлмесĕр вăл кăкăрне çапса илет: «Салакайăк пулсан та эпĕ – арăсланран кая мар!»

2

Арăслан ăр-рлатса хуçаланнă-ши е салакайăк чĕриклетсе явăннă чĕрĕ чун хушшинче, Карачăм

Воробьевшăн вăл – хăйсен вăрман заказникĕнчи пек сĕмлĕх пурнăç – чуна çывăх. Çапах та, хут нумай вĕренейменнине пула, «Шурăмпуçĕнче» илнĕ ял хуçалăх университечĕн дипломĕпех хăйсен йăхĕн юманăнни пек кăк тымарне çĕр тĕпне анса тĕрĕслеймен. Ĕмĕрне çулăн-çулăн явса пынă май çапах та пĕр хăлхинчен кĕнĕ ăслă сăмаха тепĕр хăлхинчен кăларса яма васкаман. Ура айĕнчи хура тăпраллă, тăмлă, чуллă-хăйăрлă çĕр, вăрман, юхан шыв, пĕве-кӳлĕ, улăм-чус витнĕ кил-çуртлă ял уншăн пурнăç хутлăхĕ-хӳтлĕхĕ, хырăм туттийĕ, кĕлетке ăшшийĕ шутланнă. Икĕ ураллă, тăнлă-пуçлă этем çурисем хушшинче вăл та сухалне кăвакартса-шуратса, янраса çӳрет-ха. Мăнукĕпе урок тунă чухне юнашар тăнласа ларать те, пуça çĕмĕрсе тĕлĕнет. Мăнукĕ кĕнекерен тетрачĕ çине куçарса çырнине вулать: «Этем хĕрĕх пин çул каялла Африкăри сĕм вăрманти упăтесенчен пулса кайнă. Ăс-тăнĕ çивĕчленсе пынă май вăл хăйне пурăнмашкăн вутпа усă курма вĕреннĕ, ĕç хатĕрĕсем, хĕç-пăшал тума пуçланă, ушкăнсене пайланнă, çемье çавăрма пуç çитернĕ, хуçасемпе тарçăсене уйрăлнă, патшалăхсем туса хунă. Пĕр-пĕринпе çапăça-çапăçах вĕсем вăйланнă, халăх культурине аталантарнă. Шутсăр ăслă «упăтесем» халĕ те тĕнче анлăшĕнче пуç пулассишĕн çунаççĕ».

Çакă та тăнран ярать ват çынна: нивушлĕ вĕсен Хурăнвар çĕрĕ виçĕ мĕльярт çурă çул хушши çаврăнать Хĕвел тавра? Уйăхĕ те çав, май мар, кĕвентеллĕ сар хĕрĕпе Çĕр тавра якăлтатса чупать. Чăнахах упăте йăхĕнчен-ши эпир тесе вăл тĕкĕр умĕнче пит-куçне хыпашласа, тутине мăкăртса, пăркалантарса пăхса тăрать, анчах хăйĕнче Мускав зоопаркĕнчи упăте сăнне нихăш енчен те асăрхаймасить. Хăй пекех кĕреçе сухаллă Энгельс текен нимĕçпе тавлашма халь тесен халь хатĕр. Çапах та, халăх хушшине тухсан, каснă-лартнă упăте сăнлĕ арçынсемпе хĕрарăмсене тĕсесе пăхать те, шухăшне улăштарать, ĕçсе лартнă ӳсĕр-какăра курать те, «Чăнах упăтеренех пуль эпир –

паянхи ăслă-тăнлă упăтесем, Мускаври пеккисемех, упăте кăмунинчен, сначăт», – тет.

Учитлăра ĕçленĕ, учитлăсен пуçлăхĕ пулнă Числов Петĕрĕ, ялта Твойка Петĕрĕ, шкулта Петĕр Петравч текен ăсчах каçсерен кĕрсе ларма юратать Карачăм мучи патне. Тымар ферминче сысна пăхакан Крахьян туса панă урпа сăрине кăпăклантарса сăрхăнтараççĕ вара вĕсем, хăш-пĕр чухне çурçĕрчченех шахмăтла выляса лараççĕ.

Ăса çивĕчлетме пултаракан çак астармăш вăйă картине Салакайăк Карачăмĕ иртнĕ тĕнче вăрçи хыççăнах айланкаласа, танкăлтатса кĕрсе кайнăччĕ. Ялти çивĕч ăслă маттурсем клубра «ухвицерсемпе лашисене» хура-шурă тăваткалсем тăрăх куç вăйĕпе ташлаттарнине карчăкки патне кайма васкамасăрах пăхса тăркаланă-ха. Акă хайхи пĕррехинче тухăç енчи авалхи вăйă вĕсен пўрт алăкне те яриех уçса кĕчĕ. Ăна çавăтса килекенĕ çар офицерĕ Пушкарев майор пулнăччĕ.

Эх, хальхи Раççей варринчи Чăваш çĕрĕ те ĕлĕк-авал хăрушă çапăçу хирĕ пулнă-çке. Тухăç енĕнчи, анăçри тата Атăл тăрăхĕнчи халăхсем пĕр-пĕрне шелсĕр тўнккенĕ, пĕр-пĕрин çĕрне туртса илсе хуçаланнă. Вĕçĕмсĕр сиксе тухакан вун-вун вăрçăран чăваш арĕ те хупах çулçи айĕнче пытанса юлайман, хăйне сыхласа хăварассишĕн вăйлăраххисен хўттинче паттăрлах кĕрешнĕ, майланкаласа хăйĕн йăх тымарне сыхласа хăварнă. Анăçри Гитлер аçтаха та Атăл енне – Чăваш çĕрĕ çинех – хăйĕн юнлă серепине сарса пыма пуçланăччĕ.

Нимĕç çарĕсем Мускава илессишĕн урса кайса çапăçнă вăхăтра, вăрçă йĕркипе, тăшман Чулхула тата Хусан еннелле талпăнма ан пултартăр тесе, Сăр юхан шывĕ тăрăх виççĕр сакăр вунă çухрăм тăршшĕ хўтĕлев хўми хатĕрленĕ. Ялсенчен пухнă çĕр вунă пине çити çын шартлама сивве çĕнтерсе, 1942 çулхи кăрлаччен пилĕк миллион кубла метр çĕр чавса купаланă: кĕреçепе, кирккапа, лумпа чавса-хăпăтса, наçилккепе йăтса,

лашапа турттарса. Хаяр вăрçă тылĕнчи чăваш халăхĕн пĕрремĕш паттăрлăхĕ ĕнтĕ вăл.

Карачăм карчăкки Анук та Сăр хĕрринче кутĕрленсе çĕр чавнă чухне аллине, сăмсине тăм илтернĕччĕ, колхоз лашине Сергач тутарĕсене вăрлаттарса ярса чĕр нуша курнăччĕ. Çĕрле лашана çывăрма пĕрле пӳрте илсе кĕрейместĕн-çке, хăмаран вăхăтлăха çапса тунă хăлтăр-халтăр витере те унпа юнашар çывраймастăн. Председательте ĕçлекен Нухрат Кавĕрли вĕсене лашашăн тӳлеттерчĕ.

Вăрçă пуçланнă çулах, хăйсем те аран-аран айланкаласа пурăннă вăхăтра, Чăваш Ене выçăллă-тутăллă хĕрарăмсемпе ачапча килсе тулчĕ. Числов Петĕрĕ пĕр калаçура пĕлтернине манмасть ватă çын. Ленинградран, Ленинград, Смоленск, Орел, Мускав облаçĕсенчен, Украинăпа Белоруссирен, Литваран, Латвирен, Эстонирен, Молдавирен, Карелирен, вăрçă пырса çапнă тата ытти çĕртен сакăр вунă пин çынна йышăннă-мĕн Атăл енчи Чăвашстан. Пĕр çамрăк майрапа унăн арçын ачине тата хĕр ачине хĕрхеннипе куççуль кăларсах тăванла туйăмпа йышăннăччĕ Салакайăксем. Амăшне валли ялта тӳрех ĕç тупăнчĕ, учительница шкулта нимĕç чĕлхи вĕрентме пуçларĕ тарăнварсемпе хурăнварсене тата кайриварсене. Ачисем тĕпĕртетсе пӳрте тултаратчĕç, урамра айкашăнатчĕç, тăватă çул хушшинче чăвашла калаçма та, вулама-çырма та вĕренчĕç.

Яшлăх чуна вăхăчĕпе йăпану кирлĕ-çке. Çамрăк учительница та хĕрарăм туйăмне ниçта хураймасăр нушаланса пăркаланнине хĕрĕхсенчи Карачăм хăйсен килĕнче никамран та ытларах туятчĕ. Тĕлĕкре майра купарчи татни те пулкаланă çумри кăтралăхра. Анчах, ялан кăмака умĕнче ăшталанакан Анук аллинчи ухватпа турчкана тата çатма аврине асăрхасанах, чăтлăхри майра купарчипе вĕри çăл куç çинчен манма тиветчĕ.

Мĕтри шăллĕне авлантарнă чухне Тымар шăпăрçисене хăйĕн салакайăклă шăпăрĕпе ăнналаттарса çĕнтернине тата çĕн хăтана кайсан ясар маткапа савăшнă хыççăн карчăккин вăйлă аллинчи хĕрнĕ турчка вĕçне чуп тунине аса илетчĕ те...

Фронтран аманса таврăннă Числов Петĕрĕ çăлчĕ Карачăма, пулăшрĕ ăна шухăша пуçран сирсе ямашкăн. Кăкăрĕ çине Мухтав орденĕпе икĕ медаль çакнă аслă лейтенант, ялан анат вĕçĕнче пурăнаканскер, час-часрах кĕрсе тухакан пулчĕ вĕсем патне. Хăйне шкул директорне лартнă хыççăн вăл хăюлланчĕ пулас, Любовь Львовна Пушкаревана ăсатмах пуçларĕ. Майран летчикĕ фронтран сасă памарĕ, çыру кĕте-кĕте ывăннăскер вăл упăшкийĕ ăмăрт кайăкĕпех леш тĕнчене ўхĕрсе кайнă терĕ пуль, хăйне тăлăх арăм вырăнне хурас терĕ-ши... Петр Петрович та ирĕклĕ кайăк, нимле арăм-парăм çук. Акă чĕкеç çумĕнче тепĕр ăмăрт кайăк явăнма пуçларĕ.

Мускав тупписем те ĕнтĕ сывлăша хаплаттарса вăрçă чарăнни çинчен тĕнчене хыпарларĕç. Çĕнтерўçĕсем хăпартланса та хастарланса тăван кĕтесе, кĕтсе ывăннă кил-йыш ытамне, васкарĕç. Тинех ял урамĕсем арçын сассипе тулчĕç. Кĕçех Хурăнвара ятсăр-шывсăр çухалнă авиаци офицерĕ таплаттарса çитрĕ. Каллех – хĕрарăм куççулĕ... анчах, Пушкарев çемйишĕн ку савăнăç куççулĕ пулчĕ. Фашистсене анăçра тўнккенĕ хыççăн тухăçра яппунсене лăплантарсан тин шыраса тупнă паттăр кайăкĕ вăрçă çăтнă çемйине. Вăл вĕсене курма кăна мар, пĕрле илсе кайма килнĕ-çке. Арăмĕпе ачисене кил ăшши парса юратса пăхса усранăшăн паттăр майор чăваш арçынĕпе хĕрарăмне мĕнле тав тунине сăмахпа каласа пама та май çук. Уйрăлу саманчĕ çитсен, Карачăмпа Анук куçĕсенче куляну тумламĕсем шăрçаланчĕç.

Вăрманти вăр çаврака, яп-яка кăмпа пек майра купарчине ачашласа, çамрăк хĕрарăмăн хура катинче сăмсине чўхейменшĕн Карачăм хăйне хăй ятларĕ. Ара,

Числов Петĕрне кĕвĕçсе те илнĕччĕ вĕт, ухмах. Петĕр Петравчăн ăшĕнче те тăвăл пăтранчĕ пулас Пушкаревсем ялтан тухса кайсассăн. Салакайăксен те йăви пушанчĕ. Анукăн мĕнле те, чиперкке майра калаçни-кулни, купарчине чăвашла мар, урăхларах, артисткăллăрах пăркалантарса-вылятса утни, ăнсăртран мунча умне сиксе тухнă вăрăм çÿçлĕ çаппа-çарамас, авкаланакан йăрăс кĕлетке тахçанччен-тахçанччене х Карачăмăн куçĕ умĕнчен кайма пĕлмерĕ.

Унăн Пушкарева та хĕрхенес килетчĕ. Вăл вĕт, çамрăк, хĕрÿ командирăн, Тăван çĕршыва, совет халăхне, çав шутра Салакайăк Карачăмĕпе карчăккине Анука та фашист эшкерĕнчен чĕррĕн сыхласа хăварассишĕн юнне шеллемесĕр хăватлăн кĕрешекен вырăс пăхаттирĕн юратнă арăмне тĕлленĕччĕ-çке шухăш тĕтринче ĕмĕт пăшалĕпе, ах ку сар кайăка епле майпа персе антарас тесех вăшталанса çÿренĕ-çке. Числов Петĕрĕ вара вĕсен хура мунчинче миçе каç выляман-ши майра купарчипе, паллах, Карачăм пек тăманалла, ухмахла шухăшпа мар, арçыннăн пуевуй пăшалĕпех персе антарнă ĕнтĕ кĕлетке туйăмне пусарассишĕн антăхакан тăлăх арăма, чĕрĕ мишеньре çăмăллăнах «яблочкăна» лектернĕ. Анук вĕсем пирки сахал-и пăшăлтатнă хăлхаран? «Ах, старик, темле йывăр пулсан та, ĕнене усрасахчĕ, тен, «пирĕн кин» пĕчĕк пепке çуратса парĕ те, вара виç ачана мĕнле тăрантарăпăр-ха сĕтсĕр, Числовшăн пулсан уншăн, ухвицер майри пÿрне хуçлатса шутламалли ясар хĕрарăм шутĕнче çеç тăрса юлĕ, унпа вăл пурнăç тăвас çук, унăн авланмалла, хĕрĕ те пур пулас-ха», – тесе кулянатчĕ. Юрать-ха Анук калани пурнăçа кĕчĕ. Вырăс хĕрĕпе чăваш каччи хушшинчи юрату çеç урам тăрăх йăлкăшса çÿрерĕ. Ачасенчен ÿлĕм ăслă-тăнлă, нумай пĕлекен çын пулмашкăн çирĕп ыйтса тăрăшса вĕрентекен Твойка Петĕрĕ тек ĕнтĕ Салакайăксем патне кашни каç тенĕ пек çÿреме пăрахрĕ.

Выльăхсене витене хупса кĕнĕ хыççăн Карачăм офицер парнине арчаран кăларса асăхануллăн сĕтел çине хучĕ, курупкине уçса тепĕр майлă çавăрчĕ, унта палăртнă тĕслĕ тăваткалсене сăнарĕ-сăнарĕ те:

– Карчăк, çывхар-ха çумарах, пăрах чăлха çыхма, кил выляма, – терĕ ачашраххăн.

Анукĕ çыхмалли тимĕр йĕпписене вылятма пăрахса сасă еннелле пуçне пăрчĕ, кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ:

– Мĕн, ясар «кинӳ» аса килчĕ-им шахмăтна алла илсен?

– Ан паврa-ха, ай шахматăн та кин пур? – карчăкки мĕнпе вăлтса айăкран тирнине ăнлансах пĕлмĕше печĕ Карачăм.

– Мана ухмах вырăнне ан хур. Сиртен, Салакайăксенчен, юлсах кайман-ха ăс-тăн енчен. Мана ĕнтĕ, кăмака умĕнчи чăваш хĕрарăмне, çӳçӳ вăрăм та, ăсу кĕске тесе, ним туйманскер вырăнне хурса шухăш-ĕмĕтӳпе улталаса пурăнтăн пуль тăватă çул хушши. Чăтăм хуранне, вĕресе кайсан та, хуппине пусарса сан куç вăййине пăспа пĕçертсе ярас килмерĕ. Асту: икĕ хĕрарăм хушшинче пурăнакан арçын шухăшне икĕ хĕрарăмĕ те тур панă туйăмпа витĕр курса ăнланать. Эпир мар, эсир хăвăр, ухмахсем. Кĕрт шăршине сывласа илсенех пуçусене çухататăр. Çампах эс те çĕркаç тĕлĕкре аташса выртаттăнччĕ, «Люпушка-люпувь, муя кулупушка-пушка» тесех вăранса кайрăн та аллуна эпĕ тăрса кайнă вырăна ятăн. Ах, сана, ясар Салакайăка! Тем тесен те чĕриклетсе илнех эсир иксĕр эп чирлĕ аннене пăхма кайнă хушăра çак чĕриклетекен вырăн çинче. Эй, турăçăм! Пуçран каймать çав шухăш. Кай, сирĕнпе, намăссăрсемпе. Çылăха пĕлменскерсемпе.

– Хамăр ачасем пек чунтан савса, ыр кăмăлпа, çывăхланса пĕрле пĕр çемьери пек пурăннă инкеклĕ çынсене тархасшăн çылăха ан кĕртех, Анукăм. Пустуй пире тарăхса чăкрашланнипе çăвар тутине те ан йӳçĕт.

Шухăшла–ха, эс ху çав ухвицер майри вырăнĕнче пулас пулсан-и, мĕнле явкаланмаллаччĕ-ха тăватă çул хушшинче: явка пулă пек-и е çĕлен пек? Мана ху çумăнта эрне курмасанах выçăхса вилен вĕт? Арçынĕ те, хĕрарăмĕ те пĕрмай пĕр явакра – пĕр вĕренре. Çампа ача туса йăха тăсатпăр, çĕр çинче çын хунаттаратпăр. Чарăнма май çук хăватлă вăл, юрату вăйĕ, карчăк. Пĕтĕм тĕнче çав вăйăра пурăнать.

– Пĕлмес, эп сансăр çулталăкĕ-çулталăкĕпех уйрăм пурăнса курман та, эс кирлĕ чух кĕçеннĕ те пуль, эс те, эп кирлĕ чух, ман çине утланасшăн тапаçланнă пуль. Сан пек нумай вĕренмен те... Юрать эс, килте урлă выртакана майлă çавăрса хума мансах çĕрĕ-çĕрĕпе кĕнеке кăшласа тăранатăн та... Эс çав майра çине иртен пуçласа каçчен çуркуннехи кушак аçи пек пăхнине епле манса кайăн-ха? Мана тĕртсе илесшĕн-ха тата? Эп турă çума пăрахса панă арçынсăр пуçне ку таранччен те хĕрарăм йăпанăвне лăплантарасшăн такам айне кĕрсе выртман. Шухăш вăл пирĕн те пур. Пирĕн те тепĕр чухне алла хăрăк патак вырăнне туйра юман тураттине тытас килет. Намăссăр кĕççе пит эс. Тарăнварти Хурăн Ульянĕпе концерт лартнине ай манса кайрăн-им? Çĕн «кинпе» хамăр вăрмантан карçинкка тулли майра купарчи тултарса килсен те ман чĕре çурăлса каяс патнех çитнĕччĕ. Иксĕр епле хире-хирĕç ларса тасатрăр свешăй кăмпасене?

– Ах... майра купарчине аса илтернĕшĕн тавах сана, карчăкăм, – ихиклетрĕ Карачăм хăй патнелле çывхаракан карчăкне пилĕкрен ачашшăн ытамласа илсе. – Эй, мĕн кулянмалли, хамăн чăваш майрин купарчине те вăрман кăмпи пек хурт çимен-ха.

Хĕрарăмăн ясарлăх туйăмĕ вилес умĕн те арçынна астарма пултарать теççĕ те, çаплах пуль çав, хăйне упăшки купарчаран шăлнипе çемçелнĕ Анук куçĕнче çав туйăм савăшу хĕмне чĕртрĕ, упăшкин куçĕнчи маларах çунма пуçланă хĕлхеме вăйлантарсах ячĕ.

– Юрĕ-çке, старикĕм, – терĕ вара Анук хăйĕн ĕмĕрхи мăшăрне, – Тур çырнинчен иртеймĕпĕр иксĕмĕр, Тарăнвар чиркĕвĕнче венчете тăнăскерсем, пачăшкă умĕнчи хамăрăн тупа сăмахне тытсах пурăнар çут тĕнчерен уйрăличчен. Курак чĕппине хура пулсан та хамăннах тенешкел, эс те ман, чупкăн упăшка пулсан та, хамăннах. Тавах турра, ку енĕпе ман ăша ытлашши çунтармарăн. Тем-çке, эрне курман-ха сан шăллуна. Ху мана выляма чĕнен, пĕлетни-ха мĕнле вылямаллине, ку шăмă татăккисене ăçта-ăçта лартмаллине? – стариккин шакларах пуçне сивĕнмен ал лаппипе ачашланăн хуплярĕ йăл-ял кулкаласа Анук.

– Аптрамалла-ха, карчăкăм, пĕччен, темле-çке. Иксĕмĕр хирĕç ларса йăл кулсан, вăйă пуçланмалла пек те...

Анук чӳречерен пăхрĕ те:

– Старик, авă, пуçану килет. Твойкă Петĕрне хирĕç ларса выля, манпа мар, тен, тӳрех пяттӳрккă илĕн. Эсĕ вылянă хушăра эп «вырăс кин» вĕрентсе хăварнă юрра юрласа ларăп, сире, кастарман качака такисене, çапларах майлаштарса шăрантарăп:

Чечекленчĕç улмуççи те груша.
Юхан шыв çĕклерĕ тĕтрине.
Уçăлма тухать каçпа Люпушка
Чăнкă та хитре çыр хĕррине.
Вăл тухать те пуçарать çĕн юрă
Ăмăрт кайăк евĕр тус çинчен.
Чун çунать-мĕн виç çул çурă,
Чĕререх ятне усрать иккен.
Юхчĕ, юрă! Хĕр юрри вĕç эсĕ
Хĕвелпе пĕрле Хурнвар таран.
Инçетри савни патне çитсессĕн,
Каласам салам Люпушкăран.

Числов Петĕрĕ алăка шаккаса кĕрсен йĕплĕ калаçу чĕлхе айне пулчĕ. Хăна сывлăх сунчĕ, шлепкине хыврĕ те кил хуçи чĕннĕ çĕрелле пырса ларчĕ.

Ч-42359
БИБЛИОТЕКА
ЧЕЛЯБИНСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Сĕтел çинчи тĕлли-паллисĕр сапăнса выртакан шăмă кĕлеткесене Числов пĕрерĕн-пĕрерĕн шахмат хăми çине вырнаçтарма пуçларĕ, çав хушăрах вăйă историйĕ çинчен каласа пычĕ:

– Тухăç енчи халăхсем шутсăр ăслă пулнă. Ак çак вăйăа Инди çĕршывĕнче виççĕмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче шутласа кăларнă, пирĕн пата тепĕр виççĕр çултан тин çитнĕ. Хăми çинче...

– Шутларăм, – хăпартланчĕ кил хуçи. – Хăми çине утмăл тăватă хура-шурă тăваткал тĕрленĕ.

– Малатеццă, Герасим Филиппович, – ăшшăн хавхалантарчĕ учитлă ăна. – Ун çине, пĕр енне, вун ултă хура кĕлетке, шахматла каласан, фигура, тепĕр енне – шурă кĕлеткесем çавăн чухлех лартмалла. Акă пулчĕ те. Малта – икĕ рет пешка.

– Çарти пекех ку, ача, – терĕ ватă салтак. – Эпир, авă, пешкăсем-салтаксем – пĕчĕк çынсем – кунта та малта, ухвицерĕсем – пирĕн çурăм хыçĕнче.

– Вĕсем, тата ыттисем те, эс каланă пекех вăйă фронтĕнче, пĕрне-пĕри пĕтерме-çĕнтерме хатĕрленсе тăраççĕ. Короле, патшана, кашни енĕпех хŭтĕлемелле. Мат памалла хирĕç тăракана – çĕнтермелле.

– Мат тумалла апла, мать-касси, вырăсла-и е чăвашла матлаттармалла пуль пирĕн те.

– Юрататăп тŭрех ăнланакан çынна. Акă, пуçлар, тăванăм. Хура пешкăна малалла куçаратăп. Эсĕ те шуррине малалла сиктер...

Анук выльăхсене шăварма тухрĕ. Шахматистсем пуç çĕклемесĕр мăшăлтатрĕç.

Пушкарев майор каланăччĕ мана çак шахмат курупки ун аллине мĕнле лекнине, – юмахлама пăрахмарĕ Числов Петĕрĕ.

– Ăçтан? Лавккара туяннă пуль? – шахмат хăми çинчен пуçне çĕклерĕ Карачăм мучи.

– Туянман. Генерал парни тет вăл. Авă, фигурисем те пирĕннинчен урăхларах, Инди слонĕн шăмминчен

ăсталанăскерсем. Пушкарев хĕрĕх виççĕмĕш çулта Белорусси партизанĕсем патне хĕç-пăшал, апат-çимĕç тата ыттине те турттарнă, каялла аманнисене, тĕрлĕ япала илсе таврăннă. Пĕр вĕçевре... Унччен партизансен отрячĕ пысăк операци ирттернĕ пулнă, Шульц генерала тыткăна илнĕ. Пушкарев капитанăн «хаклă чĕлхене» тĕрĕс-тĕкел Мускава çитермелле пулнă. Сывлăшра вĕсене нимĕç зениткисем ытама илеççĕ. Хăйне хăйсеннисемех тĕп тума пултарассине сиссе, генерал шурса кайнă. Ăста, паттăр летчик сывлăшри вут тамăкĕнчен самолетне ăслайлăн çăлса хăварнă. Мускава çитсен генерал хăйне вилĕмрен çăлнă Хĕрлĕ Çарăн хастар офицерне тав тума шутланă, пĕрле илме ирĕк панă çак шахмат курупкине Пушкарева парнеленĕ. Çак ăрăмçă курупкăна, Индире служба ĕçĕпе пулнă вăхăтра, Шульц генерала Индин пулас премьер-министрĕ Джавахарлал Неру парнеленĕ тет.

– Пучти патша парни апла Салакайăк Карачăмĕн килĕнче, – хăпартланнипе ура çине тăчĕ кил хуçи. – Пушкарев майри ытти хĕрарăмсенчен ытларах килĕшмен пулсанах пире, карчăкпа иксĕмĕре, ку темрен те хаклă парне Кахал Праски аллине лекетчĕ. Çав уç кут илсе кĕресшĕнччĕ-çке вĕсене хăйсем патне пурăнма. Темпе усратчĕ ĕнтĕ ĕне мар, качака та тытса курманскер. Люпувь Львувна килĕшрĕ пирĕн сĕнӳпе. Ах, епле шалккăччĕ те çав пĕчĕк ачисене те. Мĕн чухлĕ нуша курман-ши вĕсем анăçран Атăл енне çитиччен тесе шутлаттăмăр.

Салакайăк Карачăмне итлесе ларнă хушăра учитлă пуçне ăслă шухăш хускатрĕ пулас, вара вăл çапла каларĕ:

– Шульц генерала та ахальтен мар, ырă ĕçшĕнех лекнĕ пуль ку парне, Пушкарев капитана та – çавăншăнах вĕт. Вăл та ăна сире ырă сунса, хăйĕн çухалнă çемйине сыхласа хăварнăшăн панă шахмат пуххине. Вăрçă вутĕнчен тарнă вăтăр пин хĕрарăма, вăтăр ытла пин ачана

çăлнă-çке вилесрен чăваш халăхĕ. Юлашки çăкăр-тăварне пайласа ура çине тăратнă вĕсене. Чăваш çĕршывĕ, вăрçă фронтне кĕмен пулин те, Выçлăх фронтĕнче Вилĕме çĕнтернĕ.

– Тав хучĕ киле-килех тăрать пирĕн киле, – чун-чĕре хавасне пĕлтерчĕ Карачăм. – Хушăран пусылка та яраççĕ Пушкаревсем. – Акă, пăх-ха, паллатăн-и?

Стена çумĕнче çакăнса тăракан кĕленчеллĕ рама ăшĕнчен Пушкаревсен çемйи вĕсем çине савăнăçлăн пăхать. Нимĕç чĕлхине вĕрентекен учительница Хурăнвара килнĕ чухне мĕнле чипер сăн-питлĕ пулнă, ку сăн ўкерчĕкре те çавнашкалах. Петр Петрович çамрăклăх юратăвне куçĕпе-шухăшĕпе мĕнле кĕтсе илнине, вырăс майрин асамлă туртăмĕпе пĕр вырăнта хытса тăнине Карачăм вăрттăн сăнарĕ, унтан, хăй те «вырăс кинне» туйăмлăн ыталаса, каларĕ:

– Ай-вай, ах, вăрмана майра купарчи татма каяс килсе кайрĕ.

Числов ун çине ăшшăн пăхса кулчĕ те:

– Ватăлас килмест пуль çав çыннăн. Майра купарчи те вăл çамрăкла çеç тутлă çав...

Анук çенĕкре хăлт-халт тутарса пўрте кĕчĕ те тўрех вĕсене ярса илчĕ:

– Выçса вилеттĕр вĕт ку вăйăпа. Çиччас кăмакаран вĕри чукун кăларам. Старик пек ютта чупакан автана пуснăччĕ те, пĕрер тукмак çитерем.

Шахматистсем вăйă кĕлеткисене пуçтарса хăйсен кану вырăнне хупрĕç. Тĕп сакайĕнчен ăсса тухнă урпа сăрийĕ тата кăмака хыçĕнчен «тупса кăларнă» сăмакун четвĕрчĕ калаçăва пушшех хĕртсе ячĕç.

Çав кунранпах вара Салакайăк Карачăмĕ Пушкарев парнеленĕ пушкăсене кирлĕ «позицие» куçарать, «патшине» мĕнле çавăрса илмеллине те пĕлет, хăйпе выляканcене-çапăçакансене «шахпа»-«матпа» пусарма та пултарать. Твойкă Петĕрĕн вĕренекенĕ, Анук каларăшлех, «пяттўрккăсем» те илет. Пĕр çулхине

Вăрманкасра вăл шахматистсем хушшинче район чемпионĕ пулчĕ, «Шурăмпуç çăлтăрĕ» гроссмейстерĕ текен хушма ята чăннипех тивĕçрĕ. Килте хул пуççи урлă «Район чемпионĕ» тесе çырнă хĕрлĕ хăмач çакнă Карачăмне, ун çумне хавхалантарса панă мăйракаллă такана кил хушшинче курсан, Анукăн кăмăлĕ те хĕвел питтинчи сар çу пекех ирĕлчĕ. Хĕпĕртемесĕр ара, Петрав уявĕ ĕнсе çине пуснă тĕле вĕсен така та çуккăччĕ-çке. Халĕ ĕнтĕ хăна-вĕрле валли шӳрпе пулать.

– Куртăн-и, карчăкăм, старикку мĕнле чаплине? – мухтанмасăр чăтаймарĕ кукалесе тăракан Карачăм. – Ахальтен цăпăшă пĕтернĕ-и эпир? Чиркӳ прихучĕн шкулĕнче пире Тымарти Ахванеç атте пĕлĕте çити пĕлӳ панă. Числовăн шахмат акатемине пĕтернине те ан ман.

– Çапла пулмасăр, маттурах, маттурах эс, старикĕм. Ял нуверситетĕнчен вĕренсе тухсан, пĕлĕте шăтарса таврана тĕлĕнтермеллех мăйна каçăртрăн. Халь ку хĕрлĕ ялавĕпе юмахри паттăр пек тĕнче уçлăхне вĕçесси çеç юлать ĕнтĕ. Капла эс Хурăнвар кусмунавчĕ те пулăн-ха. Унччен мана вăрмантан виç машин вутă кăларса пар. Сарайăн та тăрри шăтăк ав. Чăх йăвине çумăр каять. Хăв пĕрмай чĕр çăмарта ĕçесшĕн. Чăххисем унта-кунта сапăтса çӳреме пуçларĕç çăмартисене. Вăрçă çулĕсенче хула майри валли туса панă упурнăйĕ те тепĕр çавра çилпе хăвна аяла тăвать-ха ак. Карта ручкисем çĕрнине куçу курать-и? Çапсан та пăта тытми пулчĕç. Ах, хăçан курăп эп старик пӳртре кутне хĕстерсе ларасса. Пĕрмай ярункара. Пĕрмай тем шырать... Кил хушшине, хапха умне шăлма çулăк çыхаймастăн та. Ял йытти... Тĕнче чупкăнĕ...

Вăрманкасран хĕпĕртӳллĕ туйăмпа килсе çитнĕ шахмат чемпионĕ карчăккине çилленме те пĕлмерĕ, ытамласа, пит-куçне сухал айне турĕ, мăшăрĕн çамрăкранпах пĕрешкел йăлкăшакан куçĕнчен пăхса, лăпкăнах каларĕ:

– Кашкăр Хĕветучĕн ачи мана Вăрманкаса пчелувута вĕренме янăшăн ху та ятламарăн-çке. Кăлхус утарĕнче

ёçё мăй таранах-çке. Юрё, юрё, пурте пулать, кил-çурт çинчен те манмăпăр, Анукăм. Эпир ярункасем мар.

Упăшкин ытамёнче Анукăн та кăмăлё çемçелчё, çавăнпа çамкаран пырса тивнё чёлхе нухайккишён Карачăмăн пуçа усмалла пулмарё.

Тёлёк те, аса илӳ те ватă çынна арпаштарса яраймарёç. Пурнăç вёçнелле çывхарнă май çыннăн ăсё те хухса пырать тенине хăйёнчен аслăрах сухалсенчен тахçан илтнёччё-ха вăл. Анчах Салакайăк ку халапа ытларах карта хумасть. Çук, ун шучёпе пуриншён те мар вăл пётёмлетӳ. Вăхăтсăр йӳтекенён сӳнсе кёлленсе пырать пуль пуç мимийё, тулькăш – унăн мар. Карачăмăн пуçёнчи ылтăн кёмёрккисем тёссёрленмеççё-ха, кунран-кун çёнёлле йăлкăшаççё. Ахальтен сиккелесе çунтармасть пуль пуçа пёр кёмёрккийё. Шăтарса сиксе тухас пек аташать, çёр çывратмасть. Çавна пула ёнтё вăл вăй-хал пур чухне авланса пăрахасшăн, çут тёнчерен уйăличчен савнă хёрарăмпа пурăнса юласшăн, мăшăрпа юнашар ытакланса утасшăн ватă çёр çинче, çамрăкланнă кёлетке хёрӳлёхёнче киленесшён.

Çапла, паян вăл, çуралнă кун, Петрав кунёнче, авланать, çёнё çемье çуратать.

3

Çёр-планетăра ăслăланнă упăтесем хăйсен айёнчи тăпрана çёр теме пуçланă. Çёр ёнтё мёльюн-мёльюн упăтене çёрён-кунён канăç паман. Калаçма, кулма, пёç хушшине намăсран хуплама хăнăхса пынă май, ăслă упăте, хăйне хăй ытти тискер кайăкран, выльăх-чёрлёхрен уйăрса, çиеле тухса пынă. Ăслăлăх тёнчине сарса вăл çут тёнче хăвачё хăйне пусарса тёп тăвасран сехёрленнипе тёрлё хаяр вăйран пулăшу ыйтса хăшкăлнă, ăсчахсем шухăшласа кăларнă юмах тёнчинче пăтраннă, вăйлисем тăнсăртараххисене пуç çаптарса суккăрлатмалли мелсемпе тёллевлё те, тёллевсёр те усă

курнă, Тамăкпа Çăтмах шухăшлавне вĕрентĕве явăçтарнă. Халăхсем чăмăртанса хăватланса, хăйсен туррисене пĕлĕте çĕкленĕ, хура халăха, вĕсене çăлăнăç ыйтса пуç çапмашкăн пусахласа çитернĕ. Çапла Инçет Тухăç халăхĕсен – хăйсен туррисем, Çывăх Тухăç халăхĕсен – хăйсен. Анăçрисен те...

Хăйсен туррисене пуç çапса, хăйсен туррисен ячĕпе вăрçса-çĕнтерме пурнăç пăттинче вĕренĕ этемлĕх хумĕсем халăхсен мăн ушкăнĕсене унталла-кунталла çапăнтарнă. Пурте ырлăх-пурлăх, пурте ирĕклĕх-савăклăх шыранă.

Аслă çĕре çурçĕртен кăнтăралла çурса анакан Атăл çыранĕсене те халăхсен хумĕ чĕлхеллĕ ăслă упăтесене хŭтерсе çитернĕ. Тухăçран хĕвел урипе ŭкнĕ хун йăхĕсем пăлхарсемпе суварсем пулса кайнă, суварĕсенчен – чăвашсем. Хăйсенчен маларах çитсе финн-угор йăхĕсенчен чăмăртаннă пăрттассемпе çармăссене, ирçемăкшăсене ик еннелле улăпла хирсе, ĕмĕрлĕхех ура пуснă Чăваш çĕрĕ-шывĕ текен çĕр çине Салакайăк Карачăмĕсен йăх-несĕлĕсем. Миçе ĕмĕр ĕнтĕ вĕсем çакăнта, Атăлăн сылтăм енче, Сăр вăрманĕ хŭттинче ачапăча хунаттараççĕ, тыр-пул çитĕнтереççĕ, мухтав юрри янраттарса, ура хуçса ташласа лăплантараççĕ чунĕсене.

Хурăнлăх варрине варăннă Хурăнвар ялĕ Чăваш патшалăхĕнчи икĕ пине яхăн ял пекех тĕнче вутçулăмĕнче кĕлленмен, чĕрĕ юлнă. Çичĕ йăх тымарĕ çĕнĕрен-çĕнĕ хунав шăтарса ŭстерет. Çав тымарсенчен пĕрийĕ, чи вăйли ĕнтĕ, – Салакайăк Карачăмĕсен йăхĕн тымарĕ.

Йăхĕ вĕсен сĕм вăрман варринчи тарăн çырма пуçне йăва çавăрнă Салтаккай Чăвашран пырать. Ашшĕ-амăшĕ ывăлне Салтаккай ята ахальтенех паман пуль. Халăхсем хушшинче ĕмĕр-ĕмĕр пынă вăрçăсенче Салтаккай несĕлĕсем сахал мар çапăçнă хăйсен тата такамсен тăшманĕсемпе. Чăвашсене те хытă пусмăрланă Хусан ханствине çапса аркатнă çĕре

Салтаккай паттăррăн хутшăннă, 1552 çулта унăн тĕп хулине Хусана парăнтарнă çĕрте чаплăн палăрнă. Салтаккай вăрçăран чăлах пулса таврăннă, тек вăл сылтăм аллипе хĕç те тытайман, пăшал та переймен. Авланса ачапчаллă пулнă. Çапăçакан арçынсен йăхне малаллах тăсас шухăшпа вĕсем ывăлне те Салтак ят панă.

Çерçи текен вĕт вĕçен кайăк этем çумне хăçан çыпçăннине калама йывăр. Кам илентернĕ ăна? Мĕншĕн вăл кил-çурт, ял çумне çыпçăннă. Ытти вĕçен кайăк пек кăнтăра та вĕçсе кайса килмест. Пурăнать чĕвĕлтетсе кил хушшинче, улăм витнĕ пӳрт е сарай çунаттинче йышне сарать. Ял кайăкĕ, сала кайăкĕ, сала кайăк пулса кайнă вăл этемĕн пахчинчи хурт-кăпшанка пĕтерсе пыракан санитар.

Карачăма мăнукĕ сала кайăксем Хурăнварта кăна мар, таçта та тем тĕрли те пур тесе пĕлтернĕччĕ. Уй-хирте, ту хысакĕнче, айлăмсемпе юхан шывсем çумĕнче, пуш хирте ушкăнăн-ушкăнăн чĕвĕлтетсе пурăнаççĕ. Çапах та пур йышши çерçийĕ те этемрен уйрăлмасть иккен. Карачăм шухăшĕпе, кил хушшине чĕртсе тăракан çак пĕчĕк вĕçен кайăксем хăйсен йăх тымарĕ чĕрĕлнĕ вăхăтранах вĕсемпе ăмăртса пурăнаççĕ. Этеме çыпçăннă çав вĕлтĕр кайăксемсĕр тăрса юлас пулсан-и, Салакайăк Карачăмĕн кил-çурчĕ тăлăх пек, çунатсăр туйăнать.

Хресчен ĕçне кӳлĕннĕ Салтаккайăн шухăшĕ çав-çавах çар йышĕнчен, вăрçă хирĕнчен тухма пĕлмен, çирĕп йĕркерен писмен. Пур çĕрте те камантлама хăтланнăшăн вара ăна хăйсен ялĕсем мăшкăлласа «Салакайăк генералĕ» тесе виртлеме пуçланă. Патшалăх хăйĕн çыннисене шута илнĕ, хушаматсене йĕркене кĕртнĕ вăхăтра, Салтаккая Воробьев тесе çырса хураççĕ каçуннăй хут çине.

Хурăнлăх варĕнчи Хурăнварта Салакайăк генералĕн Салтакĕ ар çулне çитет. Ашшĕ пекех патвар, хăюллă чăваш Çалтак Воробьев вырăс çарĕн салтак тумне тăхăнать. Çапла ачинчен ачине куçса пырать салтак тумĕ Салакайăксен йăхĕнче.

Числов Петĕрĕпе шутланăччĕ-ха Карачăм çĕнтерӳ уявĕ умĕн салтаккай-салакайăксем миçе вăрçăра пулнине. Вăтăр вăрçăра. Тăван çĕршывшăн та, такам ырлăхĕшĕн те çапăçнă, пуç хунă, киле аран-аран таврăннă: аманса е тăр сыввăн. Орденĕ, медалĕ, ятран парнеленĕ хĕç-пăшалĕ. Сыхланса юлнисене Карачăм ял музейне пачĕ. Мĕтрин Хĕрлĕ Ялав орденĕпе хĕрлĕ çăлтăрлă шлемĕ те хутшăнчĕ вĕсен çумне.

Карачăм хăйĕнчен пилĕк çул аслă пиччĕшĕпе яланах халăх çинче мухтаннă. Мĕтри Донбасс шахтинче çĕр айĕнчен кирккапа хăпăтса çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Раççей ĕмперийĕн юлашки патшине Иккĕмĕш Микулая та, çĕнĕ Раççейĕн Пĕрремĕш патшине Улатимĕр Ленина та çывăхран курнă. Ара вăл Петроградри лейб-гвардин Измайлов полкĕнче службăна пуçланă-çке. Патша правительствин чи çирĕп те чи шанчăклă çар чаçĕсенчен пĕринче. Патша, тĕп командующи, вĕсен полкне виçĕ хутчен саламланă. Микулай патшана 1917 çулхи нарăсра ирĕкпе хăй вырăнĕнчен тухтарнă хыççăнхи революциллĕ хĕç-пăшаллă хирĕç тăрусене Мĕтри те хутшăннă. Кĕçех Раççейĕн тĕп хулине Петрограда Ленин килсе çитнĕ. Ăна кĕтсе илме тата сыхлама большевиксен енне куçнă вĕсен чаçĕнчи салтаксене Финлянди вокзалне илсе кайнă.

Хĕрӳллĕ кунсенче хăпартланнă Мĕтри яла васкаса янă çырăва шăллĕ шкул ачи пекех астăвать: «Пĕлетĕр-и, эпĕ Ленина куртăм! Умра, виç-тăватă утăмра, эпир ăна çĕклесе броневик çине улăхтартăмăр. Большевиксен çул пуçĕ мана та алă пачĕ. Сăмах пуçласан, Владимир Ильич рабочисемпе салтаксен мăн йышне революци çĕнтерĕвĕшĕн вĕçне çитиччен кĕрешмо чĕнсе каларĕ. Мĕн тери ăслăн çапать вăл сăмаххисене, çĕре хресченсен аллине памалла, миршĕн кĕрешмелле, тет. Ăнланăр эсир те, кĕçех пирĕн çĕршывра пысăк улшăнусем пулмалла».

Ял тăрăх пиччĕшĕн çырăвне вуласа парса çӳренĕшĕн вун çиччĕри Карачăма староста кантура чĕнтернĕ, халăх

хушшинче пăлхавлă чĕнӳ сарнăшăн айăплассипе хăратнă. Çын çине сăнсăр куçпа пăхса çӳрекен чăкраш Нухрат Çитăрĕ власть хӳттинче ассах кайма пуçланăччĕ ун чухне. Ялта хăта-тăхлачсăр, хурăнташсăр кил çук та, Салакайăксемпе Нухратсене те çыхăнтарнă çав этем ушкăнĕн хутшăнăвĕ. Нухрат Çитăрĕн карчăкĕ Салакайăк Хĕлипĕн аслашшĕ енченччĕ-çке. Ашшĕ-амăшĕ хӳттипе хастар Карачăм мăн инкекрен çăлăнса юлчĕ.

Питĕрпе ытти тĕп кĕпĕрне хулисенче революци аслатийĕн тăвăлĕ кĕрлесе иртнĕ, виççĕр çул хушши Раççейре хуçа пулса пурăннă нимĕç тата такам ют çынни йăхĕн Турă панă хăвачĕ вĕрсе хăпартнă супăнь хăмпи пек шаплатса çурăлнă, Вăхăтлăх правительство патшалăх пуçне тăрсан та, анлă импери хăйĕн урапи куссипех тăнкăртатнă-ха. Империализм вăрçи те виçĕ çулталăк лăскать ĕнтĕ чухăн çĕршыва. Мускавран Атăлпа юхса аннă революци юхăмĕ Шупашкара çитиччен самай тамалнă. Чăваш хресченĕ унччен хăйне аслă пуçлăхсем эртеллешсе ĕçлеме-пурăнма парнеленĕ община йĕркипе ăна-кăна ăнланмасăрах этемле ушкăнланса пурăннă. Хурăнварсемшĕн Христос – çӳл тӳпери патша, Микулай – çĕршыв патши, Нухрат Çитăрĕ – ял патши пулнă.

Çӳл тӳпери патшине ку таранччен никам та курман, чиркӳре те тур кĕтессинчи картинкăра çеç курнă, Питĕрти патшине, нумай-нумай çын вĕлерттернĕшĕн, вăрçă-харçăпа ашкăннăшăн Юнлă Микулай текеннине вара Салакайăк Мĕтрийĕ пăшалпа сыхласа усранă, уншăн вилме хатĕр тесе Турă ячĕпе тупа тунă, «Турă, патшана хӳтĕле» тесе кĕл тунă, юрланă. Акă халĕ ĕнтĕ ăна, вун çиччĕмĕш çулхи пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче, çирĕм виçĕ çул Раççейпе камантласа пурăннă хыççăн, патша пуканĕ çинчен хăйĕн йыттисемех туртса антараççĕ. Ку патши те – влаçсăр. Пĕтĕм власть Хурăнварта – Нухрат Çитăрĕн аллинче.

Салакайăксем те çывăрмаççĕ. Ĕçкĕ-çикĕ мыскарине лекнĕ староста айăк пĕрчи чирĕпе самаях хĕне каять.

Салтаккай йăхĕн нухайкки староста нухайккинчен витĕмлĕреххине хурăнварсем куçăн та, кут хыçĕнче те юмах пушшипе вĕçлеççĕ.

Мĕтри ялти пăтăрмахлă ĕçсене пĕлмесĕрех Питĕрте Хĕллехи керменте пуш пуçлă правительствăна çавăрса илнĕ çĕре хутшăнать, Крыленко прапорщик ертсе пыракан Балти тинĕс морякĕсен хаяр отрядĕнче Корнилов генерал çарĕсенчен тĕп хулана хŭтĕлет, Хĕрлĕ Çар ретĕнче шуррисемпе çапăçать, вун тăххăрмĕш çулхи çуркунне Деникин çарĕсем Мускав патнелле çĕмĕрсе тухасшăн пуçланă анлă наступление хирĕç хĕрĕх пулеметлă салтак ушкăнне камантлать, Славянск патне тăшмана тухма чарса лартмашкăн пулăшать.Батальон командирĕ ултă çул икĕ тăван çĕршыв – патша çĕршывĕпе совет çĕршывĕн салтакĕ – тăван ялăн Тури униче алăкне уçса кĕрет: граждан вăрçине вĕçлесе, Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, çĕнтерŭпе. Нухрат Çитăрĕ вырăнне ун чухне ялта, симĕс сĕлĕ текен хурлăх çулĕнче, староста вырăнне Вилĕм хуçаланатчĕ. Карачăм та вăл вăхăталлах вăрçăран таврăннăччĕ.

Пиччĕшĕ Сĕнтĕрвăррине вĕренме кайрĕ, унăн, кĕçĕннин, йăх тымарĕн çăл куçне ялтах малалла пĕрĕхтермелле килсе тухрĕ. Вăрман техникумĕнчен ăслăлăх хуплашкипе таврăнсан Мĕтрин пурнăçĕ Сăр вăрманĕн ытамне лекрĕ, Улатăр, Кире, Йĕпреç вăрманпромхозĕсемпе вăрман хуçалăхĕсене ертсе пычĕ. Республикипех паллă çыннчĕ. Салакайăк генералĕн йăх тымарне хăй ячĕпе пĕр еннелле сарчĕ. Вăл Тымарти Карăк Ехxĕмĕн çиччĕмĕш ачине Ульки чиперука качча илсе хунав ячĕ. Ывăлĕ, Ваççук, нимĕç фашисчĕсен вут-çулăм кĕлĕ пулчĕ. Унран юлнă пĕртен-пĕр ачи Владик пур. Амăшĕ Чулхула артистне качча тухасшăн Вăрманкасри ача çурчĕ умне пăрахса хăварнă, Кăра Макçăмĕпе мăшăрĕ пăхса ŭстернĕ Максим Максимович Крутов, пур халĕ.

Пиччĕшĕнчен маларах авланмалла пулчĕ Карачăмăн. Чапай çарне Польша панĕсене Украина çĕрĕ çинче тӳнккеме анăçалла сиктерсе кайнă вăхăталла ăна, сусăрланнă хĕрлĕ паттăра, Вăрманкасран малалла ямарĕç. «Ленин панă çĕр çинче салтаксем валли те çавра мăн çăкăр пĕçер», тесе станцире антарса хăварчĕç. Чапай ятлă тур ăйăрĕ çамрăк совет патшалăхне пĕтерсе-çавăрса илесшĕн ăнтăхакан тăшмана таптама ĕрĕхрĕ. Кӳршĕри Тымар ачи Васка Илли каярахпа каласа панăччĕ хăйсен Чапаев ячĕллĕ дивизийĕ Киев таврашĕнче епле паттăрлăх кăтартнине, Карачăм пиллесе парса янă Чапайпа чупса пан-поляксене турани çинчен. Унăн Чапайĕ, çĕнĕ хуçипе Днепр урлă каçнă чухне, çывăхра снаряд çурăлнине пула, сулă çинчен юланутçипе пĕрлех шыва кайнă, анчах путман, çырана ишсе тухнă, хӳринчен тытса пыракан Иллене вилĕмрен çăлнă. Овруч хулине ирĕке кăларнă вăхăтра пĕр атакăра тăшман пулли Чапая хытах амантнă, вара ăна çапăçу хирне пăрахса хăварма тивнĕ. Çав калаçу вăхăтĕнче Васка Илли Карачăма Тымарта хĕр тупса пама пулчĕ. Хĕрĕ, Анук, Васкасен мучăшăсеннех, пит йăрăскер, вăйлă кĕлеткеллĕ илемпи иккен.

Юрать граждан вăрçинчен пуян таврăннăччĕ Герасим Воробьев кавалерист. Хĕсметрен килелле ярас умĕн ăна, юлашки çапăçура та палăрнăшăн тесе, эскадрон командирĕ чаплă трофей, шуррисен складне туртса илнĕ хыççăн хăйне валли çаклатса юлнă офицер аттине строй умĕнче парнелерĕ. Çавăн чухнех ĕнтĕ паттăр салтак хăйĕн ентешне Илья Быстрова Чапай ăйăрĕн чĕн чĕлпĕрне шанса тыттарнăччĕ.

Чăваш туйсăр авланман, качча кайман. Салакайăксем те, чухăнлăха пăхмасăр, ваттисен йăлине турĕç, хĕр илме Тымара вунă урапапа кĕрлеттерсе çитрĕç. Вăй питти Карачăм хăй пекех хĕрӳ Анукпа кĕлетре выляса ял умне каччăран арçын пулса тухрĕ. Юрату тупнă çамрăк çемье

хыççăн салтак калăпларе: Çемен, Йăван, Якку, Çинахван, Микулай, Уртем, Кĕçтук...

Ывăл, паллах, ял çыннишĕн мĕн авалтан савăнăç пулнă. Патша саманинче хĕрарăма шута хуман. Çĕр валеçнĕ чухне арçынна кăна телей лаптăкĕ лекнĕ. Хĕçпăшала та пăхаттир аллине кăна тыттарнă. Çĕнĕ йĕркепе пурăнма пуçласан тин хĕрарăма та арçын пекех çын вырăнне хуни Анука та хĕпĕртеттерчĕ. Тан правапа усă курса упăшкине хăйĕнчен ирттерме шутламан, кирлĕ чухне камантир та пулса пăхнă.

– Çитет шăхрансем çуратса, сан каманту хунасах пырать, пӳрте шăнăçаймасть, уйрăлса тухма тытăнсан ĕнсене кăна мар, кута та лайăх хыçтарĕç-ха. Эс салтаккусемпе мухтаннă пекех манăн та чуна çĕклес килет хам кашни çие юлмассерен пĕр-пĕр Чĕкеçе е Пăрчăкана кĕтсе. Атя ăш мунчана!.. – упăшкин хăлха парапанне çурасла янратрĕ пĕр лăпкă каç Анук кӳршĕрен ĕне ырри çисе каçнă чух. – Хĕрарăмсем пĕр сĕнӳ пачĕç-ха. Итле мана!

Ăш мунчара мĕнле сĕнĕве пурнăçа кĕртнĕ-ши Анукпа Карачăм, ăна хăйсем кăна астуса юлчĕç пуль, анчах карчăкки хĕпĕртесех хыпарларĕ стариккине:

– Ман юлчĕ. Çуралсан Пăрчăкан ят хурăпăр. Анне ячĕпе. Юрать пуль?

Карачăм саккăрмĕш ачи валли шăхăрса юрласах çĕнĕ пукан тума пуçларĕ.

Çук çав, кĕтнĕ кайăк йăвара пулмарĕ Салакайăксен, йăвара пăрчкан мар, каллех шăхлич сас пачĕ. Арçын камантине Хумма хутшăнчĕ.

Арçын каманти ĕнтĕ ашшĕнчен ытла амăшне нушалантарчĕ, ывăлсемшĕн вăрттăн куççуль тăкса чутах суккăр тăрса юлатчĕ Анук.

Вун-вунă пин вăрçă вучĕпе ялкăшса Хĕвел тавра çаврăнакан Çĕр хăйĕн кăткă тĕми пек йăшăлтатакан ăслă упăтисене пĕртте канăç пурнăç парнелемест. Упăтесене пĕрмай тем çитмест. Акă, Анăçра та Гитлер ятлă упăте

çĕнĕ пушар кăларчĕ, кӳршисене ĕнтсе-тĕтĕмлесе аслă çĕршыв çине сиксе ӳкрĕ, пушара тĕнче калăпăшĕпе ялкăштарса ячĕ.

Вăрçă вутне сӳнтерме, Гитлер упăтене тытса хутлатма совет халăхĕ кар тăчĕ. Чăвашсем те фронта пиншер çын ăсатрĕç, вăл шутра – Хурăнварти Салакайăксен виçĕ ывăлĕ. Граждан вăрçинче аманса сусăрланнă ашшĕ строя юрăхсăр пулчĕ, хăйсен авалхи йăх тымарĕнчи Салтаккай пек «салакайăк генералĕ» вырăнне тăрса юлчĕ – хĕрарăм камантин камантующийĕ, хăй каларăшле.

Тăватă çула пынă хаяр вăрçă пушарĕнче Гитлер упăтин эшкерĕсемпе тата яппун самурайĕсемпе çапăçса çĕршывран хĕрĕх миллион, Чăвашстанран тăхăр вунă пин, Хурăнвартан – çĕр çирĕм, Воробьевсен çемйинчен Якку салтак вăрçă хирĕнче пуç хунă. Çемен йывăç купташкапа, хăрах куçпа, виçĕ медальпе таврăнчĕ. Йăван хыпарсăр çухалнă терĕç.

Инкек суранĕ çĕршыва та, Чăваш çĕрне те, Хурăнвара та çĕнĕрен тылларĕ. Империализм, граждан вăрçисем хыççăн сиксе тухнă выçлăх вăрçи чарăннăччĕ, çĕнĕ, тулăх самани пуçланнăччĕ, чăваш та тин ура сырма тытăннăччĕ, çав шуйттан Гитлер упăти пĕтĕм пурнăç уттине чакарчĕ.

Вăрçă хуйхи Анукăн кăмăлне хытарнине, туйăмне пусарнине чунĕпе ăнланса ăшра хуйхăрчĕ Карачăм. Анук пек мĕн чухлĕ чăваш хĕрарăмĕ хытса ларчĕ, савăк пит-куçне хуйхă куççулĕпе çуса пусăрăнчĕ. Çапах та пуçа усса ларма никамăн та майĕ çук. Арçынĕ те, хĕрарăмĕ те кар тăрса вăрçă суранне сиплерĕç, майĕпен сĕтелне тултарса пуянлатрĕç. Ĕмĕчĕпе пурте сарă кун çĕршывĕнче пурăнмашкăн хăпартланса юрларĕç, ташларĕç.

Юрланă-ташланă, тар тăкса колхозра ĕçленĕ хушăра та Анукăн пуçĕнчен хĕр пĕрчи шухăшĕ каймарĕ. Карачăм та ун пирки тем тĕрлĕ те пăтратнă шухăш

авăрĕнче. Ĕмĕт татăлма пуçланă вăхăтрах... Юрату хуранне пăтратнă-пăтратнă май Анук инке те те хăй хĕрарăм ĕмĕрĕнче мĕн кĕтнине тупрĕ-тупрех. Салакайăк йăвинчен те Пăрчăкан вĕçсе тухрĕ.

– Тинех халсăрлантăн пулмалла эс, старикĕм. Те сивĕннĕ кăмака хыçĕнче çывăрни, те ăшши тарма пуçланă мунчара çурăм çутарни юрарĕ хальхинче, турри пачĕ-пачех мана та телей, аннене аса илтерсе, иксĕмĕре савăнтарса чĕвĕлтеттĕр ылтăнран та хаклă хĕр пĕрчийĕм, – терĕ карчăкки.

– Мĕнле тĕл килет вăл пурнăçра, – Пăрчăкана хавассăн сăпкара сиктерет Карачăм. – Асту-ха, аннӳ та сана аллăра çуратнă теттĕнччĕ, хăв та аллăра ман алла хĕр тыттартăн. Вăт телей. Халсăр арçынтан хĕр ытларах пулать тенине илтнĕччĕ эп тахçанах. Тем, тĕрĕсех мар пуль ку. Манран начартарах арçынсен те ывăлсем пур-çке? Кашни каç ăçтан çурхи ăйăр пек кĕçенен-ха? Ĕшенесси те пулать.

– Пулать пуль çав, старикĕм, тем те пулать пуль хушăран, – кăкăрĕпе ĕнсине çунтарса ыталарĕ Карачăма Анук. – Мĕн пуласси пулчĕ ĕнтĕ халь иксĕмĕр хушăра. Пăх-халĕ ăна, епле йăлкăшса выртать вăл пире çăлтăр куçĕпе савăнăç ăшши парнелесе, э? Сухална хырсан, сăнĕ-пичĕ каснă-лартнă санни пек пулмалла, сар çӳçĕ сурăх çăмĕ пек кăтра...

Ку вара упăшкине шухăша ячĕ: «Мĕнле-ха капла, ывăл хыççăн ывăл кун çути кăтартнă çĕртех хĕр хĕрелсе тухрĕ? Чăнах, çӳçĕ те кăтра пек. Пирĕн йăхра та, кӳршĕре те, ялта та кăтра арçын çук. Пастай, пастай, пĕлтĕр Анук ура шăмми ыратнипе Вăрманкас санаторийĕнче сипленчĕ. Нивушлĕ çавăнта тупнă?» Кăшт вăхăт иртсен вăл çавăнта ĕçлекен хăйсен хурăнташĕнчен ыйтса пĕлмесĕр чăтаймарĕ: «Сирĕн унта кăтра тухтăр çуккă-и?» Унашкал арçын санаторире ĕçлеменнине пĕлсен Карачăмăн чунĕ кăшт лăпланчĕ. Ӳсерех пынă май ачин çӳçĕ якалма пуçласан тин лăпланчĕ нумай ачаллă ашшĕ.

Ывăл камантишĕн кулянни те майĕпен тамалса пычĕ вĕсен. Утма-чупма пуçланă Пăрчăкан–Марье кил хушшинче сала кайăксемпе вылянине, пĕчĕк аллипе кил кайăкĕсене тырă пĕрчисем сапса панине сăнаса тăракан ашшĕн чунĕ ăшăнса каять. Ача пĕрре утăм тусан пурнăç каять-çке, вăл малалла тапăлтатать. Пăрчăкан шкултан та вĕренсе тухрĕ, хĕр пулса çитсе Тымара качча та кайрĕ, хăй те амăшĕ пулчĕ: виçĕ ача ўстерет. Арçынпа çеç телей пулмарĕ унăн. Упăшкине уйра тракторпа сухаланă чухне аça çапса вĕлерчĕ. Хĕрĕн ачисене те пăхать Карачăм. Кукашшĕ вĕсемшĕн килти арçын шутĕнче.

Хуйхă-суйхă амантнă чун-чĕре майĕпенех йăшса пырать çав. Ун çумне тата вăрçă хыççăн чылайран тин таврăннă Йăван ывăлĕ хăйĕн ăнман шăпине ашшĕ-амăшне хушса пачĕ. Чир çине чир тата.

Ывăлĕсене Салакайăксем пурне те авлантарнă. Вĕсенчен кĕçĕнни, Хумми тĕлĕнтерчĕ. Арăмĕ унăн хунямăшнех хывнă тейĕн, кашни тăхăр уйăх иртнĕ хыççăнах упăшкине пĕрер салтак штампласа пачĕ. Петĕрĕ машин таврашне юратрĕ – комбайнер. Павăлĕ – трактористсен бригадирĕ, Ваçлейĕ – агроном. Колхозри пур хуравлă ĕçре те – Воробьевсем.

Тымарта çуралнă Васкасен-Быстровсен йăхĕнчен тухнă Анук та ял халăхĕпе пĕрлех сарă кун çĕршывĕнче пурăнса курассишĕн ĕмĕтленсех хавасланатчĕ те çав, анчах кăмунă пурнăçне ас тивсе пăхаймасăрах вăхăтсăр анлă тĕнчене ăсанчĕ, хăй çăлтăр пулса çĕр çине, Карачăмĕ çине йăлкăшса пăхма тытăнчĕ. Миçе çул ĕнтĕ аллине ун еннелле тăсать упăшки. Çĕркаç вара вăл хăй тахçанах палăртса хунă Анук ятлă çăлтăр çинче пулчĕ. Çĕрĕпе карчăккипе айлашрĕ. Анчах вăл стариккипе пĕрле çĕр çине анмарĕ. Çĕр çинче халĕ ĕнтĕ унăн тепĕр çăлтăр – Крахьян çăлтăр çиçет.

Крахьянĕ ĕнтĕ – хăйĕн тахçанхи савнийĕн, Тымарти Хурăн Ульянĕн хĕрĕ. Мĕтри пиччĕшĕн туйĕнчен çĕн хăтана кайсан шăпăр кĕввипе ташлаттарнă тăлăх арăмăн

чĕкеçĕ. Чĕкеç пекех чĕвĕлтетекен вăтам пӳллĕ, арçынла тапчам, пăнкă-пăнкă чĕчĕллĕ, хĕсĕкрех çырă куçлă, мăкăрăлчăк туталлă, йăлттамăн утнă май чăп-чăмăр купарча вăййипе арçын куçне-пуçне астарса яракан, кавча каймасăр тăрса юлнă çуллă хĕр.

Хурăнвартан Тымара кавча кайнă Марье хĕрĕ патне ача пăхмалла тесе вăхăтлăха пурăнма куçсанах Карачăм куçĕ тĕлне пулнăччĕ-ха Крахьян. Арăм çӳл тӳперен сапса паракан çăлтăр йăлтăрккипех тăранса лăпланмасть-çке арçын. Унăн йăлтăркка саппун-кĕпе айĕнче чĕрĕ çăлтăрне хăйне алăпа тытса пăхас килет. Çавăнпах ĕнтĕ карчăка пуçран кăлармасăрах Карачăм хусах хăйне хăй чараймасăр Хурăн Ульянĕсен çулĕпе вăрттăн чупать. Улах ачи еркĕнĕн хĕрне пĕрмай премĕк-канфетпа хĕпĕртеттернĕ. Акă халĕ вăл хăйĕн пылак канфетне ĕмтерсе ас тивтересшĕн. Тек Крахьян та ача мар. Ăна та, амăшне кирлĕ пекех, арçын кирлĕ. Маларах кăна-ха Карачăм ăна фермăра вăрттăн кăна чĕчĕрен сĕртĕнсе е пилĕкрен ярса илнĕ хыççăн, «ват супнă кĕрт» сăмахпа хутăш çупкă та çикелетчĕ унран. Кĕçĕр, акă, никама çывăха яман Крахьян «ват супнă» айне çаппа-çарамас кĕрсе выртма та хатĕр. Крахьян кавча каять. Акă вăл паян Мускавран таврăнать те...

4

Кил картинчи Карачăм, чăланти мишукран кивелнĕ йывăç чашăка тулăултарса тухнăскер, малтан пуçне тӳпенелле каçăртрĕ, кăвак тӳпере тем шыранăн куçне шартарса ячĕ, пӳрт кĕтессинчен вăрттăн пăхакан хĕвел пайăркине тытаслăн унталла утăм турĕ, сарай тăрринчен мусăкпа вĕçсе аннă сала кайăксене тырра сапса пачĕ. Вĕçен кайăк ушкăнĕ – кил ушкăнĕ – чĕриклете-чĕриклете хырăмне тăрантарчĕ, тулли пĕсехепе карта хăми çийĕн ларса тухрĕ.

«Эх, ытла çывăх кайăк эсĕ – сала кайăк. Мĕн чухлĕ вĕçен кайăк этем таврашĕнче. Хура курак, ава, хăй

вăхăчĕпе кăнтăртан вĕçсе килсе хресчене хĕл ыйхинчен вăратать: «кра-ак!» Шăнкăрчĕ те çав вăхăталлах Чăваш çĕршывĕ текен çĕр анлăшне, хатĕр йăвана йышăнса хуçине ыйхăран вĕçтерет, юрă юрла-юрла уялла уттарать. Хыççăнах шăпчăксем вĕçсе килеççĕ те, тырă акса ĕшеннĕ ял çыннине улма-çырла пахчинче тĕлĕнмелле концерчĕпе чунне кантарса хавхалантараççĕ, ĕмĕт картине кĕртеççĕ. Çывăхри вăрман енчен вĕçсе килекен куккук сасси ачалăха аса илтерет: «Куккук, кала, эп тата миçе çул пурнап?» Куккук малалла авăтать, эпир хăлха тăратса итлетпĕр. Этем çумне çыпçăннă сала кайăк çеç ниçта та васкамасть, киле сыхласа, ял кĕввине вĕçлемесĕр хунаса пурăнать. Ытла чаплă-çке эс, сала кайăк. Эх, астăватăп, кăлхус тусан темиçе çултан Мускава кайнăччĕ. Ял хуçалăх выставкине – тырă, махра вăйлă туса илнĕшĕн. Чăваш халăхĕн пуçлăхĕсемпе юнашар мăн кăмăллăн ларнăччĕ хăна сĕтелĕ хушшинче. Мускав юхан шывĕн сылтăм çыранĕнче, Салакайăк сăртĕнче, пысăк концерт вăхăтĕнче, анлă çĕршывран пухăннă халăхсене шăпăр каласа тĕлĕнтернĕччĕ. Чăваш артисткисемпе-шăпчăксемпе пĕрле Хурăнвар Салакайăкĕ те Салакайăк сăртĕнче тĕнче илтĕнмелле янратрĕ. Уншăн илнĕ Хисеп хутне ял музейне памалла-ха. Кайран вăл сăрта Ленин ятне панă терĕç. Лениненĕ те халăх хушшинче сала кайăк пекех чĕвĕлтетнĕ тетчĕ те Числов Петĕрĕ, çампах чыслă ята тивĕçнĕ пуль. Салакайăк-Ленин сăртĕнче вăрçă хыççăн шутсăр чаплă çурт лартнă çĕрте Якку ывлăм та чапа тухрĕ, хваттер илсе Мускаврах тĕпленчĕ. Ашшĕ тунă нуверситетра виçĕ ачи тăн пухрĕ. Ăçта кăна вĕçсе çитмерĕç-ши пирĕн Салакайăк йăхĕнчи салак кайăк чĕписем? Аса илсе те пĕтереес çук пурне те. Тĕнче хушшинче те, ял хушшинче те, кил хушшинче те чĕвĕлтетет сала кайăк. Ĕлĕк хамăрăн çĕр пулнă Салакайăк çучĕ те... Сăртри йĕтемре, çăка, йăмра хăвăлĕсенче, лупас çунаттисенче сала кайăк ĕрчетчĕ. Халĕ те унта, Кашкăр Хĕветучĕн ачи сыхласа хăварнă çил арманĕ таврашĕнче,

сала кайăк сасси çухалмасть. Авă епле вилĕмсĕр иккен эпир: çĕр çинче чаваланаканни те, вĕçекенни те», – тесе ăшĕнче калаçрĕ çамрăкланнă Карачăм.

Кил хуçи чăлантан тепĕр чашăк тырă тултарса тухрĕ те сысна курăкĕ çине сапрĕ. Сала кайăксем каллех çавăрса илчĕç хăйсене тăрантаракана, пĕр-пĕрне сăха-сăха тутлă пĕрчĕсене тăклаттарчĕç, çав хушăрах пĕр-пĕрин çине утланкаласа та илчĕç.

Чĕрĕ чунăн пурин те çав тĕллевех иккен: пĕр-пĕринпе çывăхланасси, пĕр-пĕрне туйăм ыйтнă-хĕтĕртнĕ вĕрилĕхпе канлентерсе лăплантарасси, тĕнче явлăмĕн лаççинче ĕрчев хунавĕн тымарне ярса чĕртесси, хăйĕн йышне хунаттарасси.

Ыр кăмăллă хуçана паянхи çуралнă кунĕ тата туй кунĕпе, Петрав кунĕ ячĕпе саламланăнах, хул пуççийĕсем çине вĕçсе ларнă икĕ кайăк сала кайăк юрри юрласа ячĕ: «чĕр-рик, чĕр-рик, чĕр-рик!..»

Авă епле савăк ир Карачăмăн!

Вырăсла хапха алăкки чĕриклетнине илтсе сала кайăксем вăрр! вĕçсе каллех ушкăнпа сарай тăррине йĕркеленсе ларчĕç.

Улăм шлепке, çăмăл çутă пушмак, яланхиллех якатнă шăлавар, çуллахи пиншак тăхăннă Числов Петĕрĕ сасăсăр куллипе кил хушшине пуянлатса ячĕ:

– Салам сана, Герасим Филиппович! Ой, çав тери пысăк салам çуралнă кун ячĕпе. Çĕр çула ăйăр пек чупсах çитмелле пултăр. Хамăр ял уявĕ – Петрав уявĕ ячĕпе те йышăн тепĕр саламне, – тесе ирхи хăна кил хуçине ытамласа, шăмă шăкăртатичченех чăмăртарĕ те пĕрлех чĕркуççи çýллĕш çĕклесе хуллен ура çине тăратрĕ.

Ырă кăмăллă çын ирпе урам алăкне уçса кĕнĕшĕн тата хăйне ырă суннăшăн çĕкленнĕ чун хавалне тытса чарайманнипе, куççуль витĕр хирĕç тав сăмахĕ аран-аран каласа ячĕ Карачăм:

– Тавах, Петĕр шăллăм, Петĕр Петравчă. Сан та паян манни пекех мăн кун вĕт. Петĕр Петравча – Петрав

эрниллĕх савăк! Ху каланă пекех ман çулах, çĕр çулах çитер-ха ăслă-тăнлă пуçпа. Ват ăслайсем ĕмĕрĕ-ĕмĕрĕпех пулнă пирĕн те, сан пек ăсчах вара, ху мана тăнлантарнă пек, ялта урăх пулман, тен, темле унта, пулĕ-ши тата. Халь вĕренекен нумай, анчах вĕсенчен тĕнче тăнлĕ çавăрттараканни курăнсах каймасть. Пĕлӳ çурхи шыв пек юхать пулмалла. Хыт шухăшлакан, тĕнче картинче çиçĕм çиçтерекен çукрах. Пурте вĕсем хăйсен ĕçĕпе кăна чапа тухасшăн. Турă панă ăс-тăн шухăшне те Çĕр тавра çавăрса илеймеççĕ. Вăл-ку юрĕ-ха. Эс вĕт, Петĕр Петравч, манран кĕçĕн пулсан та, юрать-ха хăйматлăх пулма килĕшрĕн. Сансăр пуçсăр урăх никама та тăвас килмест. Вăт çапла.

– Эп хам та çав ыйтупах килтĕм-ха, – шлепкине хывса сулахай аллине тытрĕ Числов. – Кил майри ман хăна йышăнма-кĕртме хатĕр. Кĕçех вăл кинсемпе пĕрле кунта килсе туй майне хатĕрлеме пуçлать, – терĕ те пулас хăйматлăхĕ, кăххăм-кăххăм туса кулса илчĕ. – Туйĕшĕн кулянса сухална хыптарса ан яр эс. Куншăн ан ятла мана. Сана эп халь унччен урăххипе хавхалантарам. Акă унăн сăлтавĕ. Виçĕм кунах почтăран парса ячĕç. Килте лармастăн та эс, хăçан тĕл пулмаллине те пĕлме çук.

Числов кăкăр кĕсйинчен кăларса тыттарнă хулăн конверта алла илнĕ май, Карачăм шухăшлавлăн хирĕç тавăрса каларĕ:

– Петрав пылĕпе виçĕ кун вăшталантăмăр, тур панине, хурт парнине хамăр майлах пухса илтĕмĕр. Çунатлă çав пĕчĕк хуртсем те пире сывлăх парса тăраççĕ те. Вĕсен пылне вăхăтлах тултартăмăр çăка каткасене. Ват Салакайăк та ративу еннелле хăлхана тăратсах итлерĕ «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхозăн утарçисем çинчен. Хĕ, пирĕн çинчен вĕт вăл. Пире Чăвашратиувĕ мухтанине Анукăм та илттĕрĕ пуль. Пĕрмай эхвир та эхвир, теççĕ те тиктăрĕсем, эхвир хумĕ мана та çӳлерен çӳле çĕклесе çăлтăр патнех çитерчĕ пуль. Вăт тĕлĕнтермĕш шельмăсем.

Петр Петрович хэ-хэ-хэклетсе илнĕ хыççăн пуçне кăшт чалăштарса ăнлантарчĕ:

– Чăвашла вăл эфир тени чăнах та сывлăш, сывлăш уçлăхĕ, авă, пуç тăрринчи тӳпе. Радио шутласа кăларакансем шăпах ĕнтĕ сасса сывлăш уçлăхне кăларса инçете вĕçме, ăна тытса хăлхапа итлеме тăн-пуç çитернĕ. Тахçан-тахçанах пĕлме пултарнă ун çинчен этем, грек текен ăстаçсем эфира йăлтăр хĕвел çутиллĕ сывлăш сийĕ тесе шутланă. Çап-çутă ĕмĕт хумĕ выляна вĕсен ăслă куç-пуçĕнче.

– Тĕрĕсех калатăн пуль эс, шăллăм. Ман та ĕмĕт-шухăшăм çунат сарчĕ Шупашкарпа Вăрманкас ративувĕсем хама эхвир хумĕ çине кăларнă хыççăн. Çавăнпа паян, çамрăклăха аса илсе, хĕр упраç-арăм ăшшине туйса хастарланас килсе кайрĕ. Эс тата ман кăмăла темпе таçталла вĕçтересшĕн мар-и? Уçса пăхар-ха апла.

Хитре-хитре маркăсемпе çыпăçтарса пĕтернĕ хулăн япалана иккĕшĕ пĕрле майлаштарса уçрĕç те, шалтан хулăн çыру, сăн ӳкерчĕксем тата Ленин пуçлĕ хĕрлĕ укçа çирĕм пиллĕк таранах сиксе тухрĕç.

– Эс учитлă, – сĕнчĕ çыруне Карачăм, – вуласа пар, Петĕр Петравч.

Çыруне кам çырнине почтăра адресне курсанах хыттăн тапма пуçланăччĕ-ха Числовăн чĕри. Çавăн хыççăн вăл çамрăклăх шаймăклăхĕн аса илĕвĕпе икĕ каç путлĕн çывраймарĕ, тĕлĕкре Пушкарев офицер арăмĕ тăнран ячĕ. Ачасене нимĕç чĕлхи вĕрентекен Любовь Львовна ăна Карачăм мучисен мунчине илĕртсе кĕртет пек, хăва хулли пек авăна-авăна ун тавра ташлать пек, вĕри лапка тăрне чĕнсе хăпартать пек, чĕркуçленсе выртса çурăмне çаптарать пек. Акă халĕ те куçĕ умне тухса спектакльти евĕр выляма пуçларĕ унăн асĕнчи юратăвĕ. Чăваш каччи салтака кайиччен... Чăваш каччи салтака кайиччен те, фронтра та тытса курман хура

çăмхаллă астару парнине пуçласа ас тивтернĕ вырăс майри ăна каллех çав парнене уççăнах сĕнет...

– Тем, мухмăрла мар пуль те эс, Петĕр Петравч? Аллу чĕтренипе хут вылять...

– Хут мар-ха, кут вылять кунта куç умĕнче, – чĕтревлĕреххĕн сас кăларчĕ Числов.

Карачăм кулса янипе сала кайăксем пăрр! вĕçсе тепĕр çĕре анса ларчĕç.

– Ах-ха-хах! – пуçне чалăштарчĕ кил хуçи. – Эс мар, эп те çĕнĕлле чĕрĕлтĕм Мускав çырăвне итленĕ хушăра. Иксĕмĕре те манман пирĕн Люпка-юпка. Çуралнă кун ячĕпе мана пин салампа икĕ пин те пилĕк çĕр тенкĕ, сана – пин салампа пин чуп-чуп парни ярса панă. Эх! Ма пурнас мар, савнас мар пирĕн, Петĕр Петравч.

– Саламĕпех пурнаймăпăр. Укçи сан вара... Кермен лартмалăх та çитет. Маншăн чи хакли – сăн ўкерчĕкĕ.

– Çаплах пултăр. Чаплă, пит чаплă! Ха, епле ытакланса кулса ларать ватăлма пĕлмен майрушка кăтра пуç хăйĕн енералĕпе? Пушкарь иртнĕ çырурах хăй халь кенштапран канма тухрăм тесе пĕлтернĕччĕ. Маттур, енерал пулкувникне çити хăпарнă ухвицер пусмипе. Аслă ывăлĕ Станислав та енерал. Ашшĕ пекех летчик. Пирĕн сарай çунаттинчи улăм йăвасенчен сала кайăк çăмарти тустарса ĕçме юрататчĕ, манпа питĕ тăнлăн калаçатчĕ, эп юмахланине итлеме юрататчĕ. Салтакла вылятчĕç те, вăл кўршĕ ачисене хăй майлă самай камантлаччĕ, ўссен эп Чапай пек енерал пулап тесе хăпартланатчĕ. Пурте пўрте пухăнсан Анук пиртен кулатчĕ: «Сĕтел тулли кенерал ман: пĕри – сăмса шыв кенералĕ, тепри – сала кайăк кенералĕ. Эсĕр ялта ачапчапа та хĕрарăмсемпе камантланă пек камантласан хрунтри кенералсем, кĕçех Китлĕр açтахин кенералĕсене те тылăпа кантăр çурăмĕ тыллана пекех тылласа пăрахĕç-ха. Хрунтăн тўртĕшĕ тайлăк мар-ха, паттăрах. Çампа сире вăйлă пулма яшкине çăрарах антарса парас-ха», – тетчĕ. Хам ачасем пекех курас килет шăркалчăсене. Ах, туя чĕнме маннă вĕт эп

вĕсене, ала пуç. Хăшĕ те пулин ерçсе вĕçсе килетчех пуль, тен. Эх, вырăс кинĕ, Хурăнвар кинĕ... кинĕ килнĕ пулсан-и, сире уписательнă мунча хутса параттăм...

– Ан та кала-ха, Герасим Филиппович, – ассăн сывласа илчĕ Числов. – Иксĕмĕре те ку çыру асăмпа астарчĕ, пин салам хĕрĕвĕпе çан-çурăма мунчаринчен те вăйлăрах тарлаттарса ячĕ, – тесе вăл шуралнă çÿçне таса тутăрпа шăлкаларĕ.

– Çапла çав, кашни вăхăтăн - хăйĕн мунчи, – çăлтăр пек куçне йăлкăштарчĕ кĕрÿ каччи. – Хăй вăхăтĕнче кĕрсе юлмалла унта. Ман та, авă, паян... Юмах çапма чĕлхе яка та...

– Пирĕн Крахьян хĕрĕм, амăшне хывнă пулсан, ай-яй шутсăр хĕрÿ хĕрарăм пуль-ха, кĕрĕвĕм те туй мунчинче пуçне усас çук пуль-ха, – тесе пулас хăйматлăх ашшĕ ăна чĕлхипе чеен тĕртсе илчĕ. – Тымарсем туя вăйлă хатĕрленчĕç пуль-ха. Эпир те ÿксех юлмăпăр-ха. Тымарсене туй таврашĕнче çĕнтерменни пулманччĕ те эпир – хурăнварсем. Салакайăксем те хăй вăхăтĕнче... Ман-ман-и, Герасим Филиппович? Ялти шăпăр оркестрĕ валли çав сала кайăксене тытса парас мар-ши?

Кулкаласа вĕсем пÿртелле кĕчĕç.

5

Ĕлĕкренпех вырăс патшалăхĕ вăрçăсемпе те реформăсемпе тĕнчене тĕлĕнтернĕ. Тырă ÿстерекен, аш, сĕт хатĕрлекен çын – çĕр çынни – çав реформăсен читлĕхĕнче ĕмĕр-ĕмĕрĕпе нушаланнă. Улпутсен аллинче нимле правасăр, хуçа куçĕнчен пăхса пурăннă хаярлăх йĕркипе, кăкарнă йытă вырăнĕнчех шутланнă. Пĕрремĕш Петĕр патша хĕрĕн Елизавета патшан указĕпе 1760 çулсенче çĕр улпучĕсем хăйсен хресченĕсене ирĕксĕрлесе Çĕпĕре нумай ăсатнă. Улпут хăйĕн хресченне сутса яма та, хĕнесе вĕлерме те пултарнă. Çав хушăрах çĕр çинче пурпĕрех чĕрĕ чун çуралнă, нуша

алăкне уçса кĕнĕ. Хăй çуралнă çĕрĕпе çеç ăна хăй пĕлнĕ пек усă курма чарнă. Акă, Пĕрремĕш Александр патша 1801 çулта çын пурăнман, усă курман çĕр лаптăкне Раççей гражданĕсене пурне те сутăн илме ирĕк панă. Çĕр улпучĕсен çыннисен-чурисен кăна вăл хушупа усă курма май килмен. Çĕр çыннине уйрăм улпутсен аллинче сăнчăрласа усрани çĕршыва малалла кайма чăрмантарнă. Ун пирки сахал мар тавлашнă. Хура халăх пусмăра хирĕç тăнă. Болотников, Разин, Пугачев хресчен вăрçисем патша пуканне силлентернĕ. Çав вăрçăсене чăвашсем те, пĕрлех Вăрманкас тăрăхĕнчи хресченсем те паттăррăн хутшăннă. Федор Иванович патша йышăнăвĕпе 1592 çулта çирĕпленнĕ крепосла право йĕрки йŭтесе çитнĕ. 1861 çулта вара Иккĕмĕш Александр патша ăна пăрахăçламалли манифест кăларнă. Улпут аллинчен хăтăлнă хресчене эртеллешсе ĕçлесе пурăнма май панă. Община çĕрĕпе темиçе ял çынни пĕрле усă курнă. Ку йĕрке те ăнăçсăрри палăрнă. 1906-1910 çулсенче патшалăх хресчене общинăран уйрăлса тухма, хăйĕн çĕр пайне харпăрлăха илме, унпа пĕлнĕ пек усă курма ирĕк панă. Ку Столыпин реформи аграрлă Раççее ура сыртарнă. Уйрăм хуçалăхсем тыр-пул ытларах туса илме пуçланă, ăна патшалăха нумайрах сутнă. Хресчен çаплах ирĕкленсе çитеймен, çĕр ун аллине шанчăклах кĕмен.

Вун çиччĕмĕш çулта патшана çапса антарнă хыççăн, империализм вăрçи хавшатнă çĕршывра влаça Вăхăтлăх правительствăран яланлăхах туртса илсен, Октябрьти социализмла революцире çĕнтернĕ большевиксен влаçĕ «Çĕре – хресченсене!» текен чĕнŭпе салтаксемпе матроссене кăна мар, ял çыннисене те чунтан хавхалантарнă. Çавна май чăваш хресченĕ те куçне чариех уçнă. Патшасăр çĕнĕ влаç улпутсен, патшан, чиркŭпе мăнастирсен çĕрне пурлăхĕпе пĕрле йăлтах туртса илсе патшалăхăн туса хунă, ăна хресченсен хушшинче пайлама хресчен комитечĕсемпе советсен

аллине панă. Раççей хресченĕ 150 миллион теçеттин (пĕр теçеттин 1,09 гектар чухлĕ) çĕрлĕ пулса тăнă. Çĕрпе усă курнăшăн хресченсем улпутсене çулталăкра ылтăн укçапа 700 миллион тенкĕ тӳлесе тăнă. Çав парăм революциччен 3 миллиард тенке капашнă. Ленин патша хушăвĕ çаксене пурне те хăйĕн шутĕнчен кăларнăшăн, паллах, ял çынни савăнмасăр тăма пултарайман.

Вăрманкас енне те çапла уçă сывлăш капланса килнĕ. Ĕмĕрĕпе нушаланса хур курнă Салакайăк, Кашкăр, Карăк, Васка йăхĕсем те хуçалăх турти хушшине çĕнĕ пурнăç урхамахне кӳлсе янă. Çав урхамахлă лавпах вĕсене Сталин патша çĕнĕ общинăна – коллективлă хуçалăх текен колхоза пушăпа кутран тивертсе кĕртсе янă.

Çĕнĕ община ĕнтĕ иртнĕ ĕмĕртинчен чылай уйрăлса тăрать, çапах халăх хырăмне какăриччен тăрантараймасть. Общинин хуçийĕ каллех патшалăх-çке. Волковсем тем пек çине тăрсан та патшалăх пӳлмине хăйсем тĕллĕн тултараймаççĕ. Хальхи йĕрке харам пыр колхозсем хунаттарса ячĕ. Вĕсене ачашлама Мускав мĕн кăна шухăшласа кăлармасть-ши?

«Шурăмпуç» колхоз эртелне-общинине ертсе пыма халăх шаннă хыççăн Тельман Федотович вутра та çунмарĕ-ха, шывра та путмарĕ. Вăрçа кайиччен ашшĕ вун ик кăшăлпа кăшăллана халăх пичкине çĕртсе саланма памарĕ. Кашкăр Хĕветучĕн мухтавлă колхозне тата ытларах чапа кăларчĕ. Сысна пуçлĕ Хрущев патшине те чăтса ирттерчĕ, унăн чĕнĕвне пурнăçларĕ. Сĕт тата ашкакай туса илессипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тахçанах хуса çитсе иртсе кайрĕ. Анчах Чăваш АССРĕ те, Совет Союзĕ те çак вăйлă çĕршыв ĕнин хӳринчен те тытаймарĕç-ха çав хĕрлĕ чĕнӳ хыççăн вăтăр çула яхăн иртнĕ пулин те. Малти малах кайса пырсассăн та, Волков та кашкăрла ум пӳлсех пырать укиян леш енчи фермерсене. Тепĕр чухне унăн хăйĕн те, çӳлтен камантласа пыракансене аяккалла сирсе, капитализм

çĕршывĕсенчи пек ирĕклĕн ĕçлесе, ял çыннине пуйтарас килет. Тулккăш чăрсăр шухăшне пуç алăкĕнчен кăларма хăрать. Ирĕксĕрех пăхăнас пулать тахçантанпа çирĕпленнĕ, анчах майĕпен сарăлса пыракан çурăклă йĕркене. Унсăрăн... пуç касăлать. Пуç вăйлă ĕçленĕ вăхăтра вара вăл вĕренме пăрахмарĕ. Мускаври Тимирязев ячĕллĕ академине кайса кĕчĕ, аспирантура пĕтерчĕ, унтах ял хуçалăх наукисен кандидачĕ ятне илчĕ. Тусĕ, Авруй ачи Николай Кириллович Кириллов, ăна хăй патне çавăнтанпах чĕнет, агрономи факультечĕ шанса паратăп тет. «Доктор пулсанах, хама колхоз аттипе кутран тапса кăларса ярсассăнах чупса пыратăп», – тесе лăплантарать вăл институт ректорне. Институтра агрономи енĕпе докторантура уçрĕç. Николай Кириллович вара Волкова унта вĕренме сĕнчĕ. Килĕшмех тиврĕ. Акă, кĕçех унăн доктор диссертацине хŭтĕлемелле. Пушă вăхăтра Тельман Федотович е институтра, е колхозăн вăрманти кану çуртĕнче наука кĕнеки ăшне путать.

Юрать-ха кăмиссарĕ, Крутов, чăн хуçаллах пулăшать. Максим Максимович пулман пулсассăн-и вăл çак пурнăçа та кураяс çукчĕ. Ленька патша саманинче те çухалса каймарĕç вĕсем. Сарлака кăкăрĕ шăнăçайми çăлтăр çакса тултарнă Брежнев генсек-патша Кашкăр Хĕветучĕн ачине те пĕр çăлтăр памашкăн хытса тăмарĕ. Акă паян Волков, ял уявĕн кунĕнче, Социализмла Ĕç Геройĕн ылтăн çăлтăрне тирсе хунă чаплă костюмпа халăх умне вăтанмасăрах тухать.

Ава, Крутов та правление наградисене çаксах килчĕ. Партком секретарĕсенчен Ленин орденне тивĕçнĕ çынна Волков урăх пĕлмест. «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе Максим Максимовича Чулхулана вĕренме кайичченех наградăланăччĕ. Унтан таврăннă хыççăн вăл райкомран колхоза ытларах кăмăл тусан, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне илчĕ. Епле савăк кăмăл хумĕпе уçăлтарса ячĕ вăл ахаль те хĕвел çутиллĕ председатель пŭлĕмне.

– Аван-и, Тельман Федотович? – сывлăх сунса вăл тусне çирĕппĕн алă пачĕ.

– Салам пултăр, праçник ячĕпе, Максим Максимович, – парторгăн çивĕч куçĕнчен ăшшăн пăхрĕ Волков. – Те мана итлерĕç, те сана çÿлти кантурта, уяр та ăшă кун парнелеççĕ пире. Туллин усă курасчĕ çанталăк пилĕпе. Йăлтах хатĕрленсе çитрĕмĕр-ши? Тем те тумалла та. Тĕнчене тĕлĕнтерес терĕмĕр-ши? Герасим Филиппович патĕнче пулаймарăн-и эс çула май?

Крутов хул хушшинчи хут папкине сĕтел çине хурса уçнă май ун енне пăхмасăрах хуравларĕ:

– Кĕрсе тухрăм. Шăпах вĕсем пулас хăйматлăхĕпе туй ыйтăвне сÿтсе яватчĕç. Петр Петрович хăйсен енчен йĕркеллех пулассине пĕлтерчĕ. Выльăх-чĕрлĕх хулинче те пултăм. Тăрантасне тирпейлесе капăрлатнă, ураписене тикĕтпе сĕрнĕ, виçĕ лаши те сып-сывах, ямшăкĕ пур.

– Апла тăк юрĕ. Ĕнер каçалапа хам та тĕрĕсленĕччĕ-ха вĕсене. Клуб лапамĕнче, ял варринче, стадионта карусельсем лартнă. Сцена хатĕр. Милов суту-илÿпе тивĕçтерет.

– Шупашкартан «Уяв» ансамбль килетех.

– Вĕсене илме пĕр автобусне ятăм-ха. Тепри – Вăрманкас футболисчĕсем валли. Тымара çăмăл машинăсем каяççĕ. Урхамахпа-и е çăмăл машинăпа? – теме ĕлкĕрчĕ кăна председатель, алăкран райкомăн пĕрремĕш секратерĕ яланхилле çăмăллăн кĕрсе тăчĕ. – Акă пирĕн туй пуçĕ çитрĕ те.

Быстров вĕсене хăвăрт алă тытса тухрĕ те хăлтăртатса кулса ячĕ:

– Район пуçĕ тĕк эпĕ, ма паян ман сирĕн ялта туй пуçĕ те пулмалла мар-ха, э? Уççăнлăх саманин чаршавне яриех уçса пачĕ вĕт пире пĕлтĕрех çĕнĕ генеральнăй секретарь Горбачев. Мĕнрен, камран хăраса тăрас пирĕн хамăрăн авалхи йăлапа пурăнма пуçланăшăн. Уншăн выговор та памĕç, партирен те кăларса çапмĕç пуль

тетěп. Çитет хăравçă мулкачла тěм айěнче пытанса ларса. Хамăр ял хěрне илме хамăннах ертсе каймалла ěнтě сире, хурăнварсене. Туй репетицине Числовпа эпир малтанах ирттернě. Ун пирки эсир хăвăрах лайăх пěлетěр. Атьăр, вěçтертěмěр Воробьевсен килне!

Максим Максимовичпа Шмыков «Шурăмпуçěнче» çамрăк председателе комсомолла туй туса авлантарнăччě. Волков Салакайăк Йăванěн тăван мар хěрне Венерăна качча илчě. Унăн амăшě Крахвине, упăшки фронтра хыпарсăр çухалнă хыççăн, колхоз председателěпе Трахвин Йăванчпа çуратнăскере, хăйсемпе урам урлă пурăнакан чиперккескерне.

Шмыков, вăрçăри суранне чăта-чăтах, ял пурнăçне илем кěртессишěн питě хыпса çунать. Клубě ěнтě унăн Мускава çитиех палăрнă. «Советская культура», «Сельская жизнь» хаçатсенче ун ěçě çинчен мухтав статйисем пичетленчěç. Хурăнвара нумай çěртен вěренме çýреççě. Курăмлă семинарсен «хули» пулса кайрě ěнтě «Шурăмпуç» унăн пултарулăхне пула. Пусма вěçне уççăнлăх хěвел пайăркийě ýкнě хыççăн вăл та ěç мелне улăштарчě. Малашне мěн-мěн тума палăртнă чухне клуб заведующийě партком секретарěн пуçне те самаях хыçтарма пуçларě. Унччен тутăхса пыракан читлěхре асапланнă шухăшлавран хăтăлма çăмăлах марçке. Тăрук йăнăшма та пулать.

Акă, Салакайăк Карачăмне авалхи йăлапа авлантарасси те Трахвин Йăванч пуçěнче çуралнă. Ун пирки Максим Максимович райкомра та калаçса пăхрě. Семен Ильич уншăн вěсене хăй ырларě те, Числовпа Шмыкова туя тěплěн хатěрленме хушрě. Волковпа иккěшě туйне Петрав уявěнче кěрлеттерме килěшрěç.

Тымарти Хурăн Ульянне Крутов çывăхах пěлмест. Иртнě вăрçăра пуçне хунă салтак арăмě тăлăха юлнă ытти салтак арăмěсем пекех пěрешкел нушапа пурăннă: колхозра ырми-канми ěçленě, кил-çуртне пěччен тытнă, ачине ýстернě, çума çулăхнă нушаран пěр талăк та

уйрăлайман. Йăрăс пӳллĕ хитре хĕре тымарсем Хурăн Ульянĕ тесе ахальтен каламан пуль çав. Ытла ытарлă пулнă вăл. Крахьянĕ те хăйне майлах. Хĕр пӳне çитсен ун тавра сахал мар хăюллă каччă явăннă. Анчах пĕрне те вăл хăйĕн хурăн вулли пек чăп-чăмăр кĕлеткине нихçан та ыталаттарман, хурăн шерепи пек çивĕчĕпе никама та выляттарман, хурăн шывĕ пек тутлăхне пĕрне те активтермен. Унăн çав тери юратнă, нихçан асран кайми каччи пулнă. Вăл хĕрĕ патне Çурçĕр флотĕнчен час-час савăк çырусем ярса тăнă, анчах... вĕсен юратăвне анлă укиян çăтнă. Каччи службăра тăнă шыв айĕпе çӳрекен кимĕ Североморск базине каялла таврăнман.

Çавăнтанпа пусăрăннă та Крахьян, куляннипе ухмаха тухас патнех çитнĕ. Пуçа чиксе фермăра ĕçленĕ. Сысна пăхса чапа тухрĕ ĕнтĕ. «Шурăмпуçпе» «Çăлтăра» пĕрлештеричченех паллашнăччĕ-ха унпала Максим Максимович. Ăна вăл партие кĕме хăй хатĕрлерĕ-çке. Мухтавне кура – чысĕ те. Амасенчен сысна çури илессипе ăна çитекенни районта çук. Миçе çул ĕнтĕ чи çӳллĕ вырăнта унăн ячĕ. Чăваш АССРĕн аслă канашне депутата суйланчĕ. «Хисеп Паллипе» Октябрь революцийĕ орденсем, икĕ медаль Крахьянăн кăвакарчăнăнни пек кăкăрĕ çинче. Салакайăк Карачăмĕн алли хăюллăнах çитмелле çав асамлă кăкăр – тулли телей патне кĕçĕр.

Ава, туй халăхĕ хăвăрт пуçтарăнать. Хапха патне «тройка» кĕрлеттерсе çитрĕ. Тилхепине Карачăм мăнукĕ Андриян тытнă.

Районпа колхозăн аслă çыннисене хирĕç пӳртрен Числов сиксе тухрĕ, вĕсене шалалла иртме васкатрĕ. Сухалне яп-яка хырнă Герасим Филипповича вĕсем пит тĕлĕнсе сăнарĕç, ара вĕсенчен пĕри те ăна кунашкал çамрăк сăн-питпе курман-çке. Сухал ӳстернĕрен ялан Карачăм мучи шутланнă вăл пуриншĕн те.

Çын килсех тăчĕ. Чĕннĕ хăнисем пухăнса çитрĕç пулас. Туй халăхне кил картинче ятарласа хатĕрленĕ

вăрăм сĕтел хушшине лартса сăра ĕçтерме, апат çитерме пуçларĕç. Пӳртре Карачăм каччăн тăванĕсем, хăйматлăхĕсем тур кĕтессине çурта çутса ваттисене асăнчĕç. Кĕлĕ калакан та тупăнчĕ.

Акă, туй пуçĕ Семен Быстров, ашшĕсен Тымарти килĕнчен кӳлсе килнĕ ятарлă тăрантас çине арăмне лартса, çула тухрĕ. Ун хыççăн çамрăк мăшăрăн ашшĕн туй халăхне Тымара ертсе пымалла. Числов Петĕрĕн хуçайкки Сар Верук, хăйматлăх амăшĕ, юрă пуçларĕ:

Хурăнварăн ваттисем,
Халалласах ярăпăр
Сĕт çулпала каймашкăн,
Çу çулпала килмешкĕн.

Туй арăмĕсем харăссăн уçă сасăпа ун çумне хутшăнчĕç:

Шăнкрав сасси, çинçе сас,
Янра юлтăр картишне.
Сыв пулăр та пур пулăр,
Пуртан çука ан юлăр.
Эпир каяс çул çине
Курак-чакак ларминччĕ.
Эпир каяс кил-йышне
Курайман тăшман пулминччĕ.

Виçĕ параппан тӳнклетнипе туй кил хушшинчен шавласа тухрĕ.

Сарлака кӳмере – кĕрӳ, сулахай енче – хăйматлăх амăшĕ, сылтăмра – хăйматлăх ашшĕ. Ямшăк тилхепипе çурăм тăрăх вылятнине туйнă варринчи йăм хура ăйăр кĕçенсе пуçне вылятрĕ, çумри тур лашапа çӳрен лаша унпа пĕрле ăмăртмалла малалла юртрĕç.

Туй пуçĕсем – хăтасен ялĕнче. Орлов рысакĕ кӳлнĕ кӳмеллĕ çăмăл урапа Хурăн Ульянĕсен чул çурчĕ умне чашласа çитсе тăрать. Туй пуçĕсене сăрапа кĕтсе илеççĕ, пӳртре кĕрекене кĕртсе лартаççĕ, сăрапа хăналаççĕ. Васка Илли ачисем Быстровсем те хăйсене парса янă

пĕчĕк пичкене васкасах уçаççĕ, кил хуçисене сăра ĕçтерсе пушăт кушелри апат-çимĕçпе сăйлаççĕ.

Хапха умĕнче – кĕрӳ кӳми. Туй каччисем кĕрĕве мухтаса та хурласа такмак шăлаççĕ:

Атте лаши – тур лаша,
Шурăм пуçпе кĕçенет.
Пирн Карачăм, сар ача,
Шурăмпуçпе вăранать.
Вырăн пур та, мăшăр çук,
Мăшăр илме килтĕмĕр.

Атте лаши тăхăр çулта.
Тăхăр вунна çитмесĕр,
Эпир матка тупас çук,
Тен, Тымарта тупăпăр.

Пур сар кайăк картара,
Пур хитре хĕр çак ялта.
Хĕрне пирĕн илесчĕ,
Çак ял кĕрӳш пуласчĕ.

Хапха алăкĕ – сыхă хуралта. Калăм тӳлемелле. Карачăм кĕрӳ хăй тахçан Мĕтри пиччĕшĕ авланнă чухне тымарсене шăпăр çумне сала кайăк çыхса чĕриклеттерсе улталанине аса илех каять, вара хăйсен шăпăрçине кăчăк туртать, хăлхинчен пăшăлтатать. Акă Мулла Микушĕн ачи хапха хуралçисем сисиччен карта урлă ялт! сикет те... Мунча тăрринчен шăпăр ăнналатнине тата хăмпă çумне çыхнă сала кайăк хăлхана çурасла чĕриклетнине курса илтнĕ халăх тĕлĕнсе унталла пăхать, пĕрлех – алăк хуралçисем те мăйĕсене каçăртаççĕ. Хурăнварсене çавă çеç кирлĕччĕ. Тымарсем сиссе те юлаймаççĕ кĕрӳ тăрантасĕ кил хушшине ним чăрмавсăр кĕрлеттерсе кĕрсе кайнине. Ун хыççăн – туй халăхĕ. «Хăйматлăх. Ай ман ăслă та чее Петĕр Петравчă, маттур аталăх, – тесе иккĕшĕн хушшинчи калаçăва аса илчĕ кĕрĕвĕ. – Сала кайăкпа тымарсене чике тăршшĕ лартассине манман».

Кĕрӳ хăйматлăх ашшĕпе амăшĕ хушшинче мăн кăмăллăн ларать. Акă вăл анас тĕле çĕр çине пĕчĕк кавир сарса пачĕç. Кавирĕ – килте тĕртсе тунăскер. Ульян тухсан тин Карачăм улăм шлепкине хывса пуç тайрĕ те тăрантас çинчен сиксе анчĕ, сĕннĕ çăкăр-тăварне ас тивсе пăхрĕ, сăрине тутанчĕ, авалхи савнине Ульянана вăрттăн куç хĕсрĕ те хăйматлăхĕ хыççăн пӳртелле таплаттарчĕ. Вĕсен хыçĕнчен хăйматлăх амăшĕ йăкăртатса пычĕ. Шалалла кĕрсен виççĕшĕ те тур кĕтессинелле пăхса сăх сăхрĕç. Числов Петĕрне кĕрекене чĕнчĕç. Кĕрӳпе хăйматлăх амăшĕ тепĕр пӳлĕме кĕрсе хĕр çумĕсен хушшинчи пĕркенчĕк айĕнчи пăлханулла çĕнĕ çын çумне икĕ енчен ларчĕç. Çĕнĕ çынна Карачăм сылтăм аллинчен тытса лăплантарчĕ.

Тулта туй кĕрлет. Çав вăхăтрах унта туй кĕлли турĕç. Хĕр туй каччисемпе арçын туй каччисене сĕтел хушшине лартрĕç. Апат хыççăн каллех юрă-ташă малалла тăсăлчĕ. Хурăнвар шăпăрçисем пиллĕкĕн ăмăртса авалхи чăваш кĕвви янратаççĕ, хальхи кĕвĕ çеммипе те кил хушшине илем кӳреççĕ. Параппанĕсем панлатса урасене ташлама вăй кĕртеççĕ. Купăсçисем тата... Карталана-карталана пĕтĕм туй халăхĕ ташша илĕнтерет.

Пӳртре туй арăмĕсене апат çитереççĕ. Хĕр туйĕ саланиччен, кацча каяс хĕр Крахьян, пулас упăшкине шӳтлерех каларĕ:

– Сана ĕнтĕ, сухалсăр Карачăм мучи, хамăр килте упăшка вырăнне хурса йышăнатăп. Халĕ эсĕ туй карти варрине тухса хĕр çумĕсене кĕпе тăхăнтарт-ха.

Кĕрӳ хăйне мĕн хушнине хăвăрт пурнăçлать, çынсемпе перкелешсе илнĕ хыççăн, пулас арăмĕ патне васкать. Унтан кĕç вăл хул хушшине четвĕрт лавкка эрехĕ хĕстерсе тухрĕ. Туй каччисем ăна пукан çине лартса виçĕ хутчен çӳлелле вĕçтерчĕç. «Капла ку маттурсем мана Анук çăлтăрĕ çинех улăхтарса яраççĕ вĕт», – шухăшласа илчĕ четвĕрте тата хытăрах тытнă май, Карачăм.

Апатран тухнă туй арăмĕсем кил картинче юрла-юрла, карталанса ташша ячĕç. Тин кăна хĕр çумĕсене çухăрта-çухăрта аташакан туй каччисем туй арăмĕсем тавра хăйсен картине çавăрчĕç, туй арăмĕсене хирĕçле майлă çаврăнса ташлама пуçларĕç.

Хăйматлăх ашшĕпе амăшĕ пурне те черетлесе эрех ĕçтернĕ хыççăн туй пуçĕсем киле кайма хатĕрленчĕç. Вĕсем алăкра курăнми пулсан хĕр япали кăларасси пуçланчĕ. Хăйматлăх ашшĕ Числов Петĕрĕ уçă сассипе янраттарса ячĕ:

Тухать-и те тухмасть-и,
Тухать-и те тухмасть-и?
Эпĕр киле каятпăр,
Эпĕр киле каятпăр.
Тавай пире япала
Трантас кашти авниччен,
Трантас кашти авниччен.
Ах, кинĕм-пукани,
Пĕчĕк кинĕм пукани,
Çавах илсе каятпăр,
Ай-яй-яй-яй-я-я!

Акă япалисене тиесе ăсатнă хыççăн хĕр кайма хатĕрленчĕ. Амăшĕ ăна ыталаса йĕрсе ячĕ:

– Тăр пĕччен тăрса юлатăп-çке ватлăхра...

Çĕнĕ çынсене пĕрле уйрăм сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕç, пуçласа пĕрле апатлантарчĕç. Хĕрĕн тăванĕсем сĕтел хушшинче лараççĕ. Крахьянпа Карачăм вĕсен умне тăрса амăшĕнчен каçару ыйтрĕç, турăш умне çурта çутрĕç, унта тĕрленĕ ал шăлли çакрĕç. Ун хыççăн амăшĕпе тăванĕсене парне пачĕç. Вĕсен енчен хирĕç парнесем пулчĕç. Çакăн хыççăн амăшĕнчен пил илме çĕнĕ çынсем сĕтел умне чĕркуçленчĕç.

Пил илсе тепĕр хут каçару ыйтсан çĕн кĕрӳ пулас арăмне хулран çавăтса пӳртрен илсе тухрĕ, ăна тăрантас кӳмине аран йăтса лартрĕ, хăй сылтăм енне

вырнаçрĕ. Вĕсен ямшăкĕ Андриян Воробьев туй ачисемпе пĕрле хурăнваралла вĕçтернĕ ĕнтĕ. Халĕ – Числов Петĕрĕ ямшăк. Ун арăмне çĕнĕ кин çумне лартрĕç. Ытти урапасем çине вырнаçнă туй арăмĕсем, çамрăк мăшăрăн хăйматлăх амăшĕ юрă çавăрса панă-паман, ял çурасла янраттарса ячĕç:

Пирĕнех те кинĕн, ай, мĕнĕ пур? –
Алăкран тухайми те арчи пур.
Алăкран тухайми те, ай, арчинче
Вун икĕ те тĕслĕ кĕпи пур.
Вун икĕ те тĕслĕ кĕпи айĕнче
Ĕмĕр ирттермелĕх ăсĕ пур.

Юрăпа пĕрле Хурăн Ульянĕн килĕнчен туй халăхĕ майĕпен саланчĕ. Хăйĕн хăнăхнă чун савнине çавăрса илнĕшĕн, ватăлма васкаман чипер карчăк хĕрне кĕвĕçсе юлчĕ.

Тĕлĕнмелле туй пулчĕ ку. Çĕнĕ çынсене Салакайăксен килне мар, шавлă стадиона илсе кайрĕç. Вĕсене унта Волковăн пулăшаканĕ Максим Крутов кил хуçи вырăнне кĕтсе илчĕ, капăр сцена çине çавăтса хăпартрĕ, мала, чаплă хăнасем хушшине кĕртсе лартрĕ. Шупашкарсен «Уяв» ансамблĕ туй юрри шăрантарать. Хăна-артистсене туй арăмĕсемпе туй каччисем пулăшаççĕ. Параппан сасси, шăпăр юрри тата купăс-баян çемми пĕр кĕвве куçса туй илемне таврана сараççĕ, халăх кăмăлне çĕклеççĕ. Ял кĕрекинче çĕнĕ мăшăра парне хыççăн парне параççĕ. Сысна пăхса Чăваш çĕрĕнче мала тухнăшăн Крахьяна ял хуçалăх министрĕ Хурхух «Нива» çăмăл автомашинăн уççине, профсоюз обкомĕн пуçлăхĕ Большаков тĕрлĕ тĕспе кăтартакан яппунсен мăн телевизорне, районтан Быстров – холодильник, Волков – кĕпе çумалли машина тата такам та тем те пĕр пачĕç.

Çапла Петрав кунĕ, вуншар çул пытанса нушаланнă хыççăн, çăра тĕтре хыçĕнчен купăс-параппан сассипе

хавассăн сиксе тухса уççăн ыталарĕ ял халăхне, никама та намăс-пăтăрмах тумарĕ, пурин чун-чĕрине те ăшшăн кĕрсе юрлаттарчĕ, ташлаттарчĕ. Çав савăклăх хумĕнче малашне çĕнĕ çемье те хăйĕн сăпкинче ярăнĕ.

Салакайăксен тĕп килĕнче авалхи çурт-йĕртен сыхланса юлнă икĕ хутлă ампар пур. Тăррине виçĕ хутчен те витнĕ: малтанхи улăмне сӳсе – чус, йывăç хăма çĕрсе кайсан – шифер. Ашшĕ, Хĕлип, ăна кĕске юман юпасем çине лартнă. Ампар айне сурăхсем кĕрсе тăнине тата вĕсемпе пĕрле Хураçка ятлă йытă пурăннине астăвать Карачăм. Никĕс юписем тайăлма пуçласан Карачăм вĕсене тимĕр-бетон юпасемпе улăштарттарчĕ. Ампар умĕнче ларса-выртса канма та пит вырăнлă. Аялти хутĕнче ĕмĕрĕпех тырă, апат-çимĕç, аш-пăш, кил-çурт хушшинчи ĕç япали-хатĕрне усранă. Çулла çӳлти хутĕнче вĕсем çывăратчĕç. Карачăм унта малтанхи туй каçне Анукпа ирттернине аса илчĕ. Анук та арçын айне пĕрремĕш хут лекнĕччĕ. Карачăм та хĕрарăм çинче пуçласа туй пылакне тутанса пăхнăччĕ. Хăйĕн шут-ĕмĕчĕпе кĕçĕр те ăна çав телей кĕтет-çке. Ун шухăшне сиссех-ши, туй Петрав уявĕнчен кĕрлесе çитсен, хăйматлăхĕ ывăлне аякран кăлт тĕкрĕ те кулкаласа çӳлелле тĕллесе кăтартрĕ:

– Иккĕмĕш хутне йăтса антармастăр-и кĕçĕр?

Крахьянăн хăлхипе чĕлхи такамăннинчен те çывăх çав, упăшки çăвар уçма ĕлкĕриччен кулăшласа та илчĕ:

– Çӳле улăхса çитиччен картлашкаран шуса ӳкмесен пырĕччĕ те сĕм авалхи кăвалери кавалерĕ. Çавăнпа çавăтсах хăпартса хăварăр-ха умăмри юратнă хăйматлăхсем. Унта çитсен эпĕ ăна çумран вĕçертмĕп. Ак çапла.

Арăмĕ халăхран вăтанмасăрах тытса чуп тунăшăн вăтаннă пек пулнă упăшки хĕрелсе кайрĕ, кăххăм! туса хăйне те çавăрса тытрĕ.

– Йӳçĕ! Йӳçĕ! Йӳçĕ! – янăратрĕ туй карти.

Туй йăли-йĕрки вĕçĕнче Числов Петĕрĕпе хуçяйкки çĕнĕ çынсене чăнласех кĕлете питĕрсе илчĕç.

Ватта пуса пуçланă Карачăмăн нимрен те мар, хăйне пуçламан хĕр лекесрен сехри хăпнăччĕ. «А тăрук усечка парсан ват пăшал. Çамрăк арăма хăть вара ял вăраниччен Тымара ăсатса яр».

Кил хушши шăпланнă ĕнтĕ. Пĕчĕк чӳречерен шурăм пуç çути сăрхăнса кĕрет. Салакайăк йăвана вĕçсе кĕнĕ Пăрчăкана ачашлать, ун çийĕнчи капăр тума хăшăлтата-хăшăлтата хывать. Пăрчăканĕ те ĕнтĕ унăн туй тирне сĕвет, вĕттĕн чĕтресе туртăнакан çепĕç кĕлеткине явкалантарса хатĕр тӳшек çине çурăмпа сĕвенет, çирĕп пĕççисемпе арçынна туртăмлăн явса илет. Пăлханни ахалех пулнă иккен Карачăмăн. Вăл çурхи ăйăр паллине çухатман. Акă унăн çамрăкланнă урхамахĕ хура вăрманти çул варрине ĕрĕхсе тухрĕ те хăй айне пулнă вĕри çăл куçа чăмрĕ, кĕçенсе янă кĕсре сассинче «а, ай-ай, а-а-аах!» тесе нăйкăшнине илтсе пушшех хастарланчĕ, чуппине вăйлатса, вăйлатса пычĕ, канлĕх таппинче халран кайса вăрăммăн ахлатса ячĕ. Арçын ĕçне ятламалла мар туса ирттернĕ çамрăкланнă упăшка хăй айĕнче сарăлса выртакан арăмĕн пушанман чĕчĕ пуçĕсене хăвăрт-хăвăрт чуп туса, çирĕп кĕлеткине тăрт-тăрт сиктерсе илчĕ. Çунакан вут пулени пек вĕри кĕлетке ытамне кĕрсе ӳкнĕ Карачăм аран-аран сывлăш çавăрса ячĕ. Крахьян, сылтăм пĕççине ун пĕççи çине хăпартса хурса, ачашланса, куççуль витĕр калаçрĕ:

– Кĕтменччĕ санран кунашкаллине, Караська. Пултараймасан старикĕм, пульницана кайса уçтармалла пулмĕ-ши юрату алăкне тесе шухăшлаттăм туйччен маларах. Хĕр ватăлса пынă май хытса пырать теççĕçке ăна, çав пирĕн чаркăç çурхахне. Епле маттур пултăн. Салакайăк Карачăмĕ мар, Карачăм-пăхаттир тетĕп ĕнтĕ сана кĕçĕртен.

Упăшкин чунĕ те хăйĕнни пекех савăннине туймасăрах калаçрĕ, калаçрĕ телейлĕ хĕрарăм, сăмах май чи кирли патнех çитрĕ, вара, ассăн сывласа, пĕлтерчĕ:

– Ман, Карачăмçăм-Пăхаттирĕмçĕм, юратнă Караськăçăм, пĕлетĕн-и, кашни хĕрарăм пекех ачапчаллă пулас килет. Упăшкам ватă тесе никамран та намăсланмастăп. Пирĕн чăваш ухмаххисем анчах кут хыçĕнче кулма хăнăхнă тан мар мăшăрланушăн. Пĕлтĕр эпĕр Англире пулнă чухне экскурсовод каласа тĕлĕнтерчĕ. Вĕсен унта çитмĕл-сакăр вуннăра кăна мар, тăхăр вуннăра авланасси те арçынсен хăнăхнă йăли иккен. Пĕркун телевизорпа кăтартрĕç. Тĕнчере çĕр çул иртсен авланни те, качча кайни те темĕн чухлех. Пирĕн те йĕркеллех.

– Сывлăх пултăр.

– Вăй пултăр, старикĕм. Тавай-ка ача çапма пуçлар кирпĕч çапнă пек. Кĕçĕртенех пуçлар. Ял халăхне, таврана тĕлĕнтерер. Ак çиччас машинпа чупма вĕренетĕп, вара хамăрăн аравăна лартатпăр та кăнтăра, Хура тинĕс хĕрне хĕртĕнме, канма шăхăрттаратпăр. Тайха тепре чуп тăвас сана сывлăш тухми пуличчен. Ах!..

Хĕвелпе пĕрлех çитнĕ Числов Петĕрĕ ампар урисене пĕшкĕнсе пăхнине уçă чӳречерен курнă мăшăр хавассăн кулса ячĕ:

– Пĕрне те хуçман, çирĕпрех пусарса лартнă çеç.

6

Салакайăк Йăванĕ, Герасим Филиппович Воробьевăн иккĕмĕш ывăлĕ, Тарăнварта Мулла Микушĕн ачин çĕнĕ пӳртне тунă çĕрте эрне ĕçлет ĕнтĕ. Арăмĕпе çураçуллах мар та, хушăран Хурăнвара та таврăнмасть, хăйпе тантăш платник патне каласма юлать е сава турпасĕ çинче çывăрса çĕр каçать. Апат енчен кулянмалли çук, Микуш матки вĕсене тутлă тăрантарать. Ун пек чухне вăл, ирех

тăрса, ытти платниксем çитиччен мĕн те пулин каскаласа е саваласа маçтăрлать.

Пĕр каçалапа ун патне председатель ямшăкĕ Кĕркури Афанасьев, Гриша-Гриль текенскер, кĕчĕ, кĕсйинчен çур литр шурă эрех кăларса лартрĕ те Йăванпа çурçĕрчченех пакăлтатса ларчĕ. Ыран ман хуçапа каймалла тесе-тесех стакан пушатассипе платникрен юлмарĕ. Чĕлхе-çăвар çемçелсен калаçу тĕнчери таçти шăтăка та кĕрсе йĕпĕлтетет çав.

– Кала-ха чунна уçса, Йăван, эпир пĕрне-пĕри усал туман. Иуда Христоса сутнă пек виçĕ пусла та пуçлăха сутса яман, эс вăрçăра чăнах сутăнчăк пулнă-и? – ыйтрĕ Кĕркури.

Кĕтмен ыйтăва илтнипе Йăван чалт! сиксе тăчĕ, кăххăм! туса ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ, пуçне чалăштарчĕ те, ăна хăйне хирĕç ыйту пачĕ:

– Эс çын сăмаххи хыççăн шарлаттарса юхакан шыва сикме хатĕр-и, ачам?

– Çу-ук. Малтан шухăшлас пулать, вара тин...

– То-тă, фронтовик юлташ. Эс ху та, фашистсемпе хирĕç тăрса çапăçсах орден-медаль илнĕскер, вăрçă мыскарисене пит лайăх пĕлме кирлĕ. Унта... астăватăн пуль... Халь вăл вăрçă чарăннă хыççăн киле таврăннисем пурте паттăр, пурте фрица вĕри çатма çинче ăшаланă тесе мухтанать. Пурте çĕнтерӳçĕ. Салакайăк Йăванĕ çеç сутăнчăк, власовец, тăван халăх, тăван çĕршыв тăшманĕ. Çапла пакăлтатаççĕ вĕт ман çинчен?

– Çаплах, Йăван, унтан та хаяртарах паврaççĕ.

– Эх! – икĕ аллипе те пуçне çавăрса тытрĕ Йăван. – Курас, чăтас пулсанччĕ ман пурнăç шăпине вĕсем... Никама та ку таранччен калас теменччĕ эпĕ хамăн тертĕм çинчен – виличчен те. Темшĕн кĕçĕр чун уçăлса кайрĕ сан умăнта. Юрĕ эппин, итле. Астăватăн, салтака пĕрле, пĕр уйăхра, хĕрĕхĕмĕшĕнче кайрăмăр. Эсĕ Киев енне лекрĕн, эпĕ – Брест çывăхне. Тĕнче кĕселĕ мĕнле

вĕренине, паллах, чикĕре эпĕ кăна мар, эсĕ те чикĕрен аяккарахра хăвăн куçупа курса çар ĕçне вĕреннĕ.

– Фин вăрçинчен тĕнче вăрçи пулса каясси пирки пытармасăрах калаçатчĕç.

– Вăрçи вăл çуралакан ача пекех хăй вăхăчĕпе тухрĕ. Хамăра тапăнасса кĕтмесĕр çывăрман, хытă хатĕрленнĕ, кĕтнĕ усал тăшмана, ăна чарса лартма хамăрăн çар хăвачĕпе хастарланнă. Пехотăпа танк дивизийĕсем, авиаци пĕр харăс пирĕн хŭтĕлев линийĕ çине вут-çулăм сапса хăпарса выртрĕç те, чĕрĕ-сывă юлнисем Вилĕм айĕнчен хăтăлса тухса хыçалалла, тухăçалла тарчĕç. Чарăна-чарăна фашистсене чарма та хăтланаттăмăр. Белорусси çĕрĕ çинчи Березина юхан шывĕ урлă каçармалла мар тăшмана! текен приказ илнĕ терĕç пирĕн полк. Эпĕ пулеметчик пулнă. Хăвах пĕлен пулемет-миномет е тупă таврашне тăшман та, хамăр та чи малтан тĕп тăвасшăн çуннине. Хура тĕтĕм, тусан мăкăрлантарса пирĕн паталла çывхаракан фашистсен танкĕсене сулахай çыранран артиллери ăшалать. Эпир пехотине çулатпăр. Вăйсем тан тетĕн-им? Хĕç-пăшаллă саранча хуп-хура хум пек шавласа килет. Ротнăй, Çĕмĕрле вырăсĕ Валерий Сурский капитан, салтаксене камантлать: «Малалла!» Атакăна аран-аран çĕкленнĕ хĕрлĕ армеецсем вилĕме хирĕç ирĕксĕррĕн талпăнаççĕ, сахалланса пыраççĕ. Эпир те, Элĕк енчи Чăваш Сурăм ачипе Çтаппан Шуркинпа, пулемета куçарса меллĕ вырăн йышăнтăмăр, каллех перетпĕр. Командир хăйĕн аманса-вилсе пĕтеймен ротине виççĕмĕш хут атакăна хăвалать: «Коммунистсемпе комсомолецсем, малалла!» Пирĕн взводра Патăрьел чăвашĕ Пахом Баранов пурччĕ. Калаçăвĕ те, çынпа хутшăнасси-мĕнни те унăн темлерех, ыр этемлех марччĕ. Пиртен çирĕп ыйтакан ротнăйне вăл унччене курайматчĕ. Хăюллисем нимĕçсене хирĕç ыткăнчĕç, Баранов кукленсе ларнă та пуçне аллисемпе хупланă. Çакна асăрханă Сурский ун патне чупса пычĕ те хăравçа тапкă çитерчĕ. Лешĕ тин тăрса ыттисем хыççăн

мĕшĕлтетрĕ. Ротнăй ăна хыçала хăварса малалла чупрĕ. Баранов винтовкине тӳрлетрĕ те, тăрса тĕллесех командира çурăмран хаплаттарчĕ. Сурский такăннă пек умалла ӳпĕнсе çĕре пуçĕпе тăрăнчĕ. Баранов, уксаклана пек туса каялла, çыран хĕрнелле лăкăштатрĕ. Тĕлĕннипе эпир Çтаппанпа иксĕмĕр пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр те... пулемет та шăпланчĕ: патрон пĕтнĕ. Шуркин арканнă тепĕр пулемет расчечĕ патĕнчен пĕр диск тупса килчĕ. Каллех ăшалатпăр фрицсене, каллех диск пушанать. Пăшалра та юлашки обойма. Пирĕн еннеллех танк кĕрлесе-шалтăртатса çывхарать. Юнашарах çурăлнă снаряд хумĕ мана траншейăна сирпĕтсе янă иккен, çавăнпа гусеница айне пулайман. Нимĕçсем калаçнипе тăна кĕтĕм. Сывă юлнисене, аманнисене пĕр çĕре пуçтараççĕ. Эпĕ хам плена лекнине тин хăраса туйса илтĕм. Çтаппан Шуркин та салтаксен ушкăнĕнче пуçа чиксе тăрать. Хамăр телейсĕр ушкăнра эпĕ Баранова асăрхаймарăм. Çапла вăл çапăçу... Эх, эп мар та çав, анатри чăваш Баранов сутăнчăк та. Вăл вĕт харăсах икĕ хут айăпа кĕчĕ: пĕрре – командира персе вĕлерсе, тепре – çапăçу хирне хăй тĕллĕн пăрахса хăварса.

– Унашкаллисем вĕсем пирĕн те пулнă. Алăри пӳрнесем те тан мар та, – аяккалла сурнă пекки турĕ Кĕркури. – Вăрçи вăрăма тăсăлчĕ те, ăçта та пулин хуса çитнĕ пуль-ха çав путсĕр такана та Вилĕмĕ.

– Эх Кĕркури, Кĕркури. Хăйĕн Вилĕмне вăл ротнăйне парнелесе хăварнă çав. Чĕрĕ юлнă. Ман пекех. Сан пекех.

– Эс тата ăна ăçта курнă?

Стаканри эрехе тепĕртак ĕçсе антарнă хыççăн Салакайăк Йăванĕ, çиллине шăнараймасăр, умри пĕрене пуçне тапса вăркăнтарчĕ, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе пуçне сулласа илчĕ, лăпланса пынă май, тата калаçса кайрĕ:

– Тыткăнри концлагерь пурнăçне эс курман, кино та кĕнеке тăрăх çеç çиелтен пĕлетĕн пуль. Манăн вара тӳссе, Вилĕме хирĕç çапăçма тиврĕ. Чăн-чăн каторга

мĕнне пĕлмен пулин те эпир хамăрăн тыткăнри пурнăçа каторгах теттĕмĕр. Тарма май çук. Пĕринче лагере «РОА» офицерĕсем пычĕç. «Российская освободительная армия» текен çар пухаççĕ-мĕн. Вăрçă пуçлансанах хăйĕн пĕтĕм çарне пăрахса хăварса нимĕçсен енне куçнă Власов генералăн çĕнĕ çарне. Хамăр кӳршех пулнă иккен вăл йĕксĕк – Чулхула енчен. Тыткăнри Хĕрлĕ Çар салтакĕсемпе офицерĕсене Хĕрлĕ Çара çапса аркатмашкăн фашистсем майлă çавăрасшăн иккен пире. Пурне те строя тăратса тухрĕç те, йĕркипе ыйтса пыраççĕ. Кам килĕшет – пĕр енне йĕркелесе тăратаççĕ, кам хирĕç – тепĕр енне. Хăратмалла тесех пулас, вĕсене тӳрех автоматран персе пăрахрĕç. Черет ман пата та çитрĕ. Пуçра хăвăрт шутласа тавçăртăм: «Ним усăсăр пуçа çухатиччен, килĕшес, майлă самант тупăнсан, тен, çăлăнса юлма та пулĕ вилĕмрен». Çапла эп Власов çарĕн пĕр полкĕпе вырăс фронтне мар, Франции лекрĕм. Турра пуç çапатăп, юрать эс мана хамăн юратнă Тăван çĕршыва хирĕç çапăçма илсе каяссинчен хăтартăн, Хĕрлĕ Çара хирĕç пăшал тытса тăратмарăн, тетĕп. Францире пире Хирĕçтăру юхăмĕн партизанĕсемпе çапăçнă çĕре хутшăнтарчĕç. Пирĕн часть, хĕрлĕ армеецсенчен тăратчĕ пулин те, йĕрке тата кăмăл-туйăм енчен хамăрăн унчченхи çар ушкăнĕ марччĕ çав. Такамшăн çапăçса ют çĕрте пуçа хуратпăр... совет патриотизмĕ аякра тăрса юлнă та фашистсем йăвантарнă чикĕ юпи хыçĕнче, пире кунти пропаганда ухмахлантарса ярать, мĕнле çăлăнса юлмалла-ши тесе тăнран тухасла шухăшлаттаратчĕ. Çавăн чухне эпĕ каллех плена çаклантăм. Унта, французсен аллинче, фашистсен лагерĕнчи марччĕ ĕнтĕ, пурăнма çăмăлрахчĕ. Вĕсен тыткăнрисене темле йĕркепе, тĕнчери конвенци пули вăл, çав майпа хуптĕрлесе усраççĕ тенине илтнĕччĕ вĕреннĕрех салтаксенчен. Вăрçă чарăнса пырать, иккĕмĕш фронт уçнă американецсем берлиналла тапаçланаççĕ, эпир те вара вĕсен аллине лекрĕмĕр. Германи месерле çаврăнса ӳксен

те, унăн алли-ури наркăмăшлă эрешмен пек юн ĕçме пăрахманччĕ-ха. Çав усал картана касса татнă хыççăн тин совет çарĕсем Власов генерала штабĕпе пĕрле хăйне те, çарне те тĕп тунă. Ах, тепĕр хут калатăп сана, Кĕркури, Прага çывăхĕнче пулнă пулсан-и, эпĕ те совет салтакĕсемпе офицерĕсенчен хăшне те пулин тĕп тăваттăмччĕ-çке. Вĕсене хирĕç пурпĕрех хŭтеретчĕç-çке пире персе пăрахассипе хăмсарсах нимĕç офицерĕсем. Французсем çапах та вырăссене ытлах нушалантармарĕç. Вăрçă пĕтсен пире Болгарие хуса кайрĕç, Бургас портĕнче тинĕс паромĕ çине лартса, Одессăна çитерчĕç.

Тăван çĕршыв çыранне лексен пирĕн НКВД али витĕр тухмаллаччĕ. Шуйттан тĕллесе янă пуль мана чăваш Усалĕ тĕлне. Тĕрĕслŭ пŭлĕмĕнче Баранов лейтенант лара парать. Ентеше, вăрçă пуçлансанах пĕр взводра çапăçнă чăваша курнипе эпĕ, хавасланса: «Салам, Пахом, иксĕмĕр те чĕрĕ-ха апла», – тесе аллăма тăсрăм. Вăл, çумра ларакан начальникĕ умĕнче ырă пулса мухтав илес шутпах пуль, таплаттарса пычĕ те ман пата, алă парас вырăнне мана питрен вирлĕн çупса çутăлтарчĕ, хаяррăн каларĕ: «Сутăнчăк! Власов йытти! Подполковник юлташ, ирĕк парсамăр пĕлтерме. 1941 çулта Воробьев сержант тăшмана Березина юхан шывĕ урлă каçма чарса тăнă çапăçура рота командирне пулеметран персе вĕлерсе ман куç умĕнчех фашистсен енне тарчĕ». «Эп мар, эс ху персе вĕлертĕн ăна çав çапăçура, пире вилме хăварса, нимĕçсенчен мулкач пек тартăн. Эп мар, эс ху – сутăнчăк, совет тăшманĕ. Эп ку таранччен çĕршыва та, хамăр халăха та хур туман, тыткăна эп контузи пулнипе лекнĕ, хам ирĕкпе мар», – тесе эсреле урайне çапса антартăм та аяк пĕрчийĕсене шутлама пуçларăм. Часах ак хамăн хулсене пăрса туртса çыхрĕç те... Маншăн çурçĕрти Колыма çулĕ яриех уçăлчĕ.

– Авă мĕнле власовец, сутăнчăк иккен эсĕ, Йăван тусăм, да-а, – хамăн таса аллăма парам-ха апла

сана, – тесе Кĕркури кайма хатĕрленчĕ. – Шупашкар пички те типрĕ, авă. Ыранччен. Вăрçă юмахне кайран итлесе пĕтерĕпĕр. Лайăх юл. Ирпе ман каллех хуçа тарçи пулмалла.

– Итле-ха, Кĕркури, ыран Вăрманкаса-мĕне каяс пулсан, мана та хурса каймастăр-и? Милицие те чĕннĕ мана, военкомата та. Ровăтăна мĕншĕн йыхравланине пĕлеп. Военкоматне мĕн тума кирлĕ-ши? Салтака юрăхлă мар эп тек.

– Юрĕ, – сыв пуллашса алă тытрĕ Афанасьев. – Тельман Федотовича хăлхаран суйăп кĕрĕвӳ Вăрманкас хупахне ăшаланă сысна çури çиме каясшăн тесе...

Ирпе Салакайăк Йăванĕ, платниксемпе калаçса татăлнă хыççăн килне каймасăрах, машинăсен паркне уттарчĕ. Пуçлăхсене шанса пулас çуккине пĕлсе, Вăрманкаса пĕр-пĕр машинăпа çакланса çитме шутларĕ. Туйăм улталаман иккен ăна. Кĕркури пиллĕкрех Волковпа Шăхрана çул тытнă. Ăна хăйсен тăванĕ Павăл Фомич аякранах асăрханă пулас та, уазикне чарса, кăшкăрса чĕнчĕ:

– Вăрманкаса пымастăн-и, Йăван пичче?!

Воробьев сылтăм аллине çӳлелле çĕклесе пĕлтерчĕ:

– Пырап! Ай, спаççипах сана, шăллăм. Мана кĕтнĕ пекех. Чуну сиснĕ пуль сан.

– Часрах! Паврама вăхăт çук. «Сельхозтехникăна» васкап. Ман паян юлашки икĕ комбайнне те сыватса çитермелле.

Çул çинче шӳтлĕ сăмах-юмах хĕрсе кайрĕ. Ялан çапла, кам та пулин айванлăхпа палăрать е капашсăр аташма тытăнать, чĕлхе маçтăрĕсем вара ăна шăммитирĕпех кăшлаççĕ. Теме пула хальхинче Кĕркури Афанасьев кун йĕркине çакланнă.

Кĕркури хĕрĕ Мускавра некăрпа паллашнă та, унпа ерсе, ача çуратнă, упăшкипе иккĕшĕ те университетсенчен вĕренсе тухиччен тесе хура ӳтлĕ пĕчĕк некăра ашшĕ-амăшĕн килĕнче хăварнă. Станюкович писателĕн

кĕнекинчи тата кинори пек кăтра çăмламас пуçлă Максимка çапла кукашшĕпе юнашар ярăнса çÿресех ÿсрĕ. Некăр ачи карап çинчи юнга майлах, мехпаркра шоферсемпе трактористсен тăван ачи пекех пулса кайнăччĕ. Чăвашла сутса ярать. Парк çумĕнчи тирексемпе хурăнсем çине упăте пек хăпарса каятчĕ. Йăхташĕсен вĕри юнĕ вĕрет мар-и ача ăшĕнче? Лаша утланса чупма хăех вĕреннĕччĕ. Ĕне купарчи çинче кутăн тăрса чупнине пĕррехинче Йăван та курнăччĕ. Асăрхаса кăна çитер. Ăçта унта?

Воробьевпа юнашар ларса пыракан Мулла Микушĕн Тимуххи çаптарать:

– Хайхи-вайхи Кĕркури çĕрле нателă тиенсе таврăнать те мухмăрне ирпе те пушатаймасть. Ĕçе васкакан арăмĕ кравать çинче çывăракан Максимкăпа кукашшĕне шанчăклах пăрахса хăварать. Ача вăранать те, кукамăшĕ çуккипе усă курса, урай варрине вут пуленисем урлă-пирлĕ хурса, хутпа-хăйăпа вут чĕртет. Кукашшĕн туя каймалли мăн параппанне туртса кăларать те кăвайтă урлă сике-сике панлаттарать: пам-пам! там-там! Туйра кукашшĕ хĕрарăмсемпе ташланă чухне астуса юлнă такмака ахăлтатсах шăрантарать: «Эс те мана ыталан, эп те сана хыпалап, эх, хамăр пулсан тĕнчере, çулăм тухĕ кĕпçерен!..» Вут вăйланса-вăйланса пырать, çывăхри тÿшеке ярса илме пуçлать. Тĕлĕкре еркĕнĕпе аташса выртакан Кĕркури, çара кутне çулăм çулланине чăтаймасăр пусма çыхса пăрахнă качакалла çухăрса ярать те, ăна-кăна ăнкарса илеймесĕр йăшăлтатса тăма хăтланать, анчах мухмăрпа йывăрланнă пуçĕ çĕкленмест, вара вăл юлашки вăйне пухса çаврăнать те çунакан вут çине тĕклĕ хырăмĕпе хаплатать. Хăй кукамăшĕпе чăх тукмакки ĕнтнине аса илнĕ Максимка, ĕнĕк шăршăпа хавхаланса, параппанне тата хытăрах тÿнклеттерет: пам-пам! там-там!

– Юрать-ха вăхăтра асăрхаса тухăмрах çитсе сÿнтертĕмĕр некăр пушарне, унсăрăн Кашкăр ямшăкĕ, хăй

ёмётленнё пек, çулăм хёрёвёпе вашкăртса вёçсе тӳрех рая лекмеллискерччё, – хă-хă-хă турё ывăçёпе çăварне хупласа пушар деповён шоферё Паюç Куçки. – Халь те çёр грамм ёçтермест хăйне вилёмрен çăлнăшăн.

– Çав Куçкă шăл йёрене-и, пурпёр тавăрап хам виличчен, – тесе тулхăратчё-ха вăл иртнинче пёрле стограмланă чухне, – хушса хучё Тимухха. – Вăл хăналасса кётсе çăвару типсе ларать.

– Мёншён кураймасть вăл мана?

– Хушма хушамат çамки çине çаптарккăланăшăн. Эс кăлартăн вёт çав пушар хыççăн Гриша-Гриль тенине?

Чăтаймасăр пурте ахăлтатса ячёç.

Ялта хушма хушамат памасăр никамах та хăварман Паюç Куçкин вёсене тата ытларах тёлёнтерес килчё-ши, çулташёсем кулма чарăнсан вăл юмах çунаттине вёçтерчё:

– Кукашшёне пӳртри кăвайт çинче ёнтсе тётёмленёшён Гриша-Гриль матки лавккара хам куçумра мăнукне шăкăлат илсе çитерчё. «Сăпаççипах çак Кункă шёвёрккине. Ман Кёркури халь, пульницаран хырăм тирне сӳтерсе килнё хыççăн, вёре çёлен Вир Верукё патне тинех анкарти хыçёпе шуса тарми пулчё, «Пирён пурнăç пыл та çу, хырăм тăрăх шу та шу» юррине те манса кайрё», – тесе ахăрттарать пире. «Апла хăвăн хырăму та мăкланса ларё», – тесе персе ятăм та, «Маншăн ан кулян, Куçкă, Тимухха тарăн сухалаканччё-ха, пёр мăк та хăвармасть», тесе ман карттуса сăмса çинех антарса лартрё.

Пиçнё палан пек хёрелсе кайнă Тимухха пăк-пак тукаларё те, кулă хуранне лекнёскер, машина ланкашкара сиктернипе, чёлхине çыртрё.

– Гриша-Гриль Африкăра негр еркён тупнине пёлетёр-и тата? – тёлёнтерсе пăрахрё Паюç Куçки.

Павăл Фомичсăр пуçне пурте пушар хуралçи еннелле пăхрёç.

– Эп суймасп, матки хăй каласа пачё. Гриша-Гриль кёрӳшё Конгăри Патрис Лумумба ленинец ачи-çке.

Университет пĕтернĕ хыççăн кĕрӳшĕ Максимкине Мускава машинпа килсе лартса кайрĕ-çке. Амăшĕ те пурччĕ. Арăмĕ чирлĕ пирки Гриша-Грилĕн хăнана пĕчченех каймалла пулчĕ. Унта вăл Максимка мăнукĕпе кăна мар, некăр майрисемпе те Конгă юхан шывĕ хĕрринче там-тамлатса ташланă. Хĕрарăмсем ăна ятарлă вăрăм наçилккепе йăтса çӳренĕ тет. Лумумбăсен пĕр хурамкка шеплешкине чăваш сăмси кăмăла кайнă тет. Упăшки хыççăнах Афанасьевсен килне Африкăран хитре конвертлă çыру килет. Матки те, хăй те вулайман. Матки шкула илсе кайса вулаттарнă та... Акăлчанла çырнă тет: «Ай лав энд кис ю. Айл кам сун. Увейт. Эмера».

– Эс чăвашла кала пире, – ыйтрĕ Тимухха. – Мăнукупа акăлчанла вĕренеп тесе...

– Чăвашла çапла пулать: «Эп сана юратап. Чуп тăвап. Пыратăп, кĕт». Упăшка еркĕнне кĕтсе илме хатĕрленеп халь, тет Гриша-Гриль матки, телевизор илмелли пăрăва пустарас пуль, тет.

– Эс кумĕ те, Гриша-Гриль туйĕнче те ташлăн, пире, темле, те чĕнет... – иккĕленчĕ Тимухха. – Патрис Лумумба Конгă патши те, тăванĕ те темле пуянскер-ха.

Паюç Куçки хушса каларĕ:

– «Африкăран таврăнсан темле улшăннă пек ман Кĕркури, – тет матки. – Хирĕçме-чăркăшланма пуçларĕ сĕтел çинчи апат енчен те, утиял айĕнчи апат кăмăла уçманнишĕн те, ыттипе те, аптрашки, те çĕлен, те слон çитерсе усранă ăна некăрсем, тем хурамкки шăршлаттарнă, пĕрмай тиркет, хирĕç сăмах та чĕнтермест, пĕркун ӳсĕрпе «Эп мăнук патне Конгăна каяп, мана унта йăтса çӳреççĕ» – тесе мухтанчĕ. Эмери-чĕмерипе лартсах ярап-ха. Эп Тимухханах юрату катаччийĕ чуптарать», – терĕ.

Пурте ахăлтатса ячĕç.

Шӳтпе-кулăпа çул кĕскелчĕ, сисмерĕç те вĕсем Вăрманкас урамне кĕрсе кайнине.

– Йăван пиччe, сирe хăш кантурĕ кĕтет? – ыйтрĕ Павăл Фомич.

– Военкомат.

– Апла пулсан, анса юлăр. Акă, çитрĕмĕр.

Вăрçăчченхи кĕтеслесе тĕксе тунă пĕр хутлă йывăç çуртра хăçан пулнине те астумасть Салакайăк Йăванĕ. Шала кĕрсен, тăрăхла коридорта калаçса тăракансенчен пĕри ăна малалла ирттерсе яма пăрăнчĕ, çийĕнчех ăнлантарчĕ:

– Чĕннипе килнĕ пулсан, юлташăмăр, авă çавăнта хăвăр пирки евитлĕр. Кĕçех çар комиссарĕ хăй патне чĕнет.

Чăнах та вĕсене кăшт вăхăтранах йăрăс пӳллĕ йăлттам хĕрарăм, аллине сулса, «Малалла!» терĕ. Камантă панă пекех туйăнчĕ ку Йăвана. Вăл йăнк! тӳрленсе салтак уттипе малалла иртрĕ.

Анлă пӳлĕмре тăрăхла сĕтел хушшинчен васкавлăн тăрса тухнă хĕрĕхелле çывхаракан вăтам пӳллĕ подполковник кĕнисене пурне те алă парса тухрĕ, леш хĕрарăм-лейтенантран «Пурте килнĕ-и?» – тесе ыйтрĕ, хăйне пăхăнаканĕ пуçне лăнк тутарнипе килĕшсе, вăл чĕннĕ çынсене пукансем çине вырнаçса ларма сĕнчĕ.

– Эсир, хаклă юлташсем, пурте фронтра çапăçнăскерсем, пĕлетĕр вăрçăри лару-тăрăва. Штаб хучĕсем çунни те, шыва путни те, çар канцелярийĕсенче çĕтсе кайни те сахал мар пулнă. Паттăрĕсем, медсанбатсемпе госпитальсенче сывалнă хыççăн, урăх чаçсене куçни тата темле кĕтмен лару-тăру та сиксе тухни пулнă пуль. Çав инкексене-пăтăрмахсене пула пурне те хăй вăхăтĕнче орден-медальне те парайман. Акă ĕнтĕ халĕ вăл çав наградăсем хăйсен хуçисене шыраса тупрĕç. Вĕсем – эсир.

Воробьев сержант куçĕ умне, çар комиссарĕн сăмахĕсене итленĕ хушăра, 1941 çулхи Березина юхан шывĕ çывăхĕнчи эрнене яхăн тăсăлнă хаяр çапăçусем вут-çулăмлăн эрешленсе тухрĕç. Ку хутĕнче вара унăн награди мар, вăл хăй çĕтнĕ. Çавăнпа хыпарсăр çухалнă

сержант награди хут тĕрки айне выртса юлнă. Акă вăл халĕ çиеле тухнă, аслă офицер унăн кăкăрĕ çине çакса янă «Паттăрлăхшăн» медаль кĕмĕл тĕспе пӳлĕме çутатать. Вăрçă тухни хĕрĕх ултă çул иртсен тин çапăçусенчи паттăрлăхшăн, Тăван çĕршыва фашистсенчен хӳтĕлесе çапăçнăшăн тивĕçлĕ пĕрремĕш наградăна илчĕ Иван Воробьев. Вăрçă чарăннă хыççăн пĕр салтак юлмарĕ пуль кăкăрне тивĕçлĕ-тивĕççĕр орден-медальпе капăрлатманни. Гитлеровецсемпе куçа-куçăн тытăçни те, нимĕç салтакне кинора çеç кураканни те халĕ – фронтовик, вăрça хутшăнакан. Пурне те çулсерен мĕнле те пулин çар награди парса пыраççĕ. Вăрçă инваличĕ тата хурт пек хунаса кайрĕ. Юрать, фронтра аманни чăннипех вăрçă инваличĕ. Çав вăхăтрах вăрçăра пулнисене пульницасене выртта рса ирĕксĕр тенĕ пекех вăрçă инваличĕ туса хураççĕ-çке. Вăрçă чарăннă хыççăнхи çулсенче вĕсем чирлемесĕр пулман ĕнтĕ, анчах мĕншĕн-ха Тымарти «Çăлтăр» колхоз председателĕ пулнă, районти ял хуçалăх управленийĕн кадровикĕ Маминов, фронт тылĕнче эрех валеçсе пурăннăскер, вăрçă инваличĕ. Яла килсен ун пирки Карачăм мучи мĕнле кăна сăмахсемпе янрашмарĕ пуль иртнинче. Çавнашкаллисене çăмăллăх туса панишĕн вăл патшалăх çыннисене ятлать. Маминов йышшисемшĕнех халăх куçĕ чăн-чăн инвалидсене те сив куçпа пăхакан пулчĕ. Раççейри нумай-нумай вăрçă хыççăн ĕмĕрне пулман вăл унашкал танмарлăх, мăшкăл. Халăха пĕр-пĕринпе юри хирĕçтерсе çапăçтарасшăн-ши? Воробьев çак спектакăле курнипе урса каять, ниçта кайса кĕрейменнипе вăл пĕррехинче вăрçăра пăшал персе курман Нухратова, «Отечественнăй вăрçă» орденне илнĕ хыççăн мухтанма тытăнсан, фермăра сысна пăх-шăкĕ пухăнакан вырăна çапса сирпĕтнĕччĕ. Вăл ордена фронтовиксем юн юхтарса, пуç хурса тивĕçнĕ, на сана халĕ кашнине валеçсе тухрĕç. Пурте паттăр! Унăн

«Паттăрлăхшăн» медалĕ вара – совет салтакĕн чи чаплă награди.Ăна вăл командир приказне пурнăçласа, йышăннă позицирен утăм та чакмасăр, фашистсене тĕп туса, çĕнтерсе илме тивĕçлĕ пулнă.

Награда илнисене паллă кун ячĕпе сĕтел хушшине лартрĕç. Подполковник, йăл кулса, шӳтлерĕ:

– Эпĕ ĕнтĕ паян, Хĕрлĕ Çар главкомĕн вырăнĕнче пек шутланса, сире «Сталинăн çĕр грамне» тĕппипе ĕçме сĕнетĕп. – Паттăрлăхшăн! Çĕнтерӳшĕн! Ура!

– Ур-ра! – салтакри алюмини куркасем вырăнне хаклă йышши черккесем илемлĕ сасăпа янăрарĕç.

«Нарком нормине» хушса, хушса пычĕç. Пĕри персе ячĕ:

– Эрехĕ шыв пекех юхатчĕ çав хушăран, уйрăмах, наступлени умĕн. Çĕршывĕ нушара, тылри халăхĕ выçăллă-тутăллă, ăçтан çитернĕ тулĕк спиртне фронт валли. Пирĕншĕн хăть «нарком норми» кăна пулнă, командирсем вара, паллах, пурте мар, эрех ĕçнĕ чухлĕ шыв та ĕçмен пуль.

– Çампа ӳсĕрле приказ парса салтаксене усăсăр пĕтеретчĕç çав, – илтĕнчĕ чӳречe енчен.

Военком ку тавлашăва çапла вĕçлерĕ:

– Салтаксене хастарлантармалли мĕн те пулин ĕçтересси е парасси вăрçăра авалтанпах пырать. Нимле çар та усă курмасăр юлман унпа. Пулăшатех пуль çав, унсăрăн ăна тахçанах сивлемелле. Сире те, Гитлера хирĕç, пире те «Афганра» панă мĕн памаллине. Сталин ĕнтĕ çирĕп йышăнупах йĕркелесе тăнă ăна, вăрçă тухнăранпах. Фронта кашни уйăхра хĕрĕх пилĕк чукун çул цистерни шурă эрех ăсатнă. Икĕ миллион та çĕр аллă пин литр. Чăтнă мăнтарăн совет халăхĕ. Пирĕн тыл çирĕп пулнă çав. Çавăнпа эпир çĕнтернĕ. Тепĕр хут саламлатăп, çирĕп сывлăх сунатăп сире, фронтовик юлташсем! Ырă канăва – шагом марш!

Хастарланса та хавхаланса военкоматран тухнă Иван Воробьев сержант урампа утнă май йăлт-ялт пăхкаласа

илет кăкăрĕ çинче силленсе пыракан «Паттăрлăх» паллине. Çăвар уçса пăхтăр-ха паянтан кам та пулин унран шăл йĕрсе «сутăнчăк-власовец» тесе... Ним хĕрхенмесĕр таптаса çăрса пĕтерет унашкал путсĕре.

Çак хаярлăх туйăмĕпе кĕчĕ вăл районти милици уйрăмĕн хăлтăр-халтăр йывăç хăмаллă, çĕр çумне лăпчăнса ларнă авалхи çуртне, коридорта сулахаялла пăрăнса, йышăну пӳлĕмне çитрĕ. Дежурнăй Кайривар ачи Матвей Тугаев аслă лейтенант, унпа алă тытсах калаçрĕ, Хурăнварти Салакайăк Йăванĕ ялти клуб хуçинчен Шмыковран мĕнле мăшкăлланине унччене пĕлекенскер, Воробьева кирлĕ çĕрелле çул кăтартса ячĕ. Урам енчи пӳлĕмсенчен пĕрин алăкне хуллен шаккана май, вăл алăк уççи çăрарах çакăнса тăнине çивĕч куçĕпе асăрхаса юлчĕ.

Пӳлĕме кĕрсен Салакайăк Йăванĕ шаках хытса тăчĕ. Сĕтел хушшинче Патăрьел «таки» Пахом Баранов сулахай ывăçĕпе янахне тĕкĕлесе лара парать – алăк тул енне фанер татăкки çине çырса çапнă «Старший оперуполномоченный» .

– Ну, салам, бандит, – тесе пӳлĕм хуçи самăр кĕлеткине йывăррăн силлентерсе ура çине тăчĕ, тепĕр сĕтел çине шурă хут листисемпе авторучка хучĕ. – Ну-ка, ху чĕлхӳпе каласа пар-ха эс, калмăк, мухтавлă фронтовика, вăрçă инвалидне Трофим Иванович Шмыков юлташа мĕнле майпа вĕлерме пуçланине? Лар! Лар та кала. Кала та çыр ăнлантару!

– Старава, çын вĕлерен. Ӳссех, чаплансах пыратăн, путсĕр, нимпе çуса тасатма май çук тискер ĕçӳпе. «Мусăра» çитнĕ-ха. Пĕлетĕн-и мусăра – çӳп-çапа ăçта тăкнине? Свалкăна – шăршлă шăтăка. Ах, шутсăр чаплă вырăн шыраса тупнă-çке – эсрел шăпин кутне тĕкмелли вырăн. Çав шăршлă вырăнтах вĕçлессĕн туйăнать-ха эс хăвăн суя пурнăçна. Халăх ылханĕ сана пурпĕр çĕр айне чиксе тĕп тăвать, тискер кайăкла «мусăра».

Хĕремесленсе кайнă Барановăн пичĕ кĕç-вĕç çурăлса каясла хăмпăланчĕ, куçĕ сиксе тухасла мĕлтлетрĕ, вара вăл каллĕ-маллĕ ик-виç утăм турĕ те, сассине пушшех хăпартрĕ:

– Влаç ячĕпе чĕннĕ сана кунта, тискер каскăнça. Влаça хуравла!

Тарăху сăмахĕсем Воробьевăн та хăйсемех сирпĕнсе тухрĕç:

– Шмык-жмыхпа манăн хамăн личнăй калаçу. Виличчен пыракан хирĕçŭ-кĕрешŭ. Ăна никам та мар, хам кăна татса пама пултаратăп. Эп фронтра чухне вăл ман арăмпа якăлташнă, ман арăма ача тутарнă. Халь те чарăнмасть, каçтака. Каллех вăл ман арăм патнех йăрккать. Платникрен ĕçлесе таврăнсан тытрăм иккĕшне. Шмыкăн ун, сулахай урисĕр пуçне, пурте старавах. Массаж тумалла пулчĕ вара чăсмак кĕлеткине, çăмартипе ăйăрне сŭс çиппипе туртса çыхса ятăм. Пĕлтĕр терĕм малашне ют кĕсре хŭри айне çут пуçне мĕнле чикмеллине, ловелас. Ку таранчченех пульницара пытанса пурăнать терĕç-ха манран. Мĕнпур мыскари те çавă çеç. Эп Березина çыранĕнче тăшмана тытса чарнă, ялта арăм еркĕнне ашкăнма-асма чарнă. Çĕнтернĕ. Паттăр пулнă. Мĕн кирлĕ тата сана урăх?

– Вĕçлерĕн-и бандит юррине, э? Ма суян?! Экзекуци туни çитмен, эс ăна пĕвене тытса пенĕ. Уксахскерне путарасшăн пулнă. Эс ун пŭртне чĕртса яма пуçланă. Эс ăна хăвăр пŭрт умĕнчи хурăн тураттинчен кутăн çакнă. Ак çак папкăра йăлтах пур свидительсен кăтартăвĕсем. Тĕрĕссине кала, сволочь. Пурпĕрех айăплă пулса юлатăн, пурпĕрех эп сана сакăр çуллăха кирпĕч шутлама ăсатап. Панятнă, ултавçă? – тĕссĕр куçĕпе хаяррăн пăхса аслă следователь чĕннĕ çын патне хăвăрт çывхарчĕ, унăн кăкăрĕ çинчи медале асăрханипе, шартах сикрĕ. – Ку тата мĕскер?

– Паттăрлăхшăн панă «Паттăрлăхшăн» медаль.

– Палтун. Салтакрах йăлăхтарнăччĕ пакăлтатса. Камăнне пĕçертрĕн-ха е такамран сутăн илтĕн? Мухтанас

килчĕ-им халăх умĕнче? А ну-кă вĕçертсе пар?! Сан пăхлă «делу» ăшне хурап. Эп пĕлнĕ тăрăх, санăн патшалăх каградн ним те пулма кирлĕ мар.

– Куратăн? Сначăт, пур.

– Эп, калап – çук. Суя медаль вăл сан. Памасан ху ирĕкӳпе, хам тăпăлтарса илеп, ак, çапла...

«Ак çапла» тесе Воробьев сержант милици капитанĕн тăснă аллине вăйпа сирсе ячĕ.

– Аха, эсĕ влаça хирĕç, да? Çиччас кăтартап эп сана тепĕр хут Колыма ракĕ ăçта хĕл каçнине, – тесе Баранов тимĕр ещĕкрен наручниксем туртса кăларчĕ, хăйне хирĕçлекенĕн аллисене сăнчăрласшăн хыпăнчĕ.

Курайманлăхпа тата мăшкăлпа тулса çитнĕ хăватлă вăй вулкан пек сирпĕнсе тухрĕ Салакайăк Йăванĕн ăшĕнчен, ăна вăл ниепле те тытса чараймасть ĕнтĕ. Акă, акă чышкă чăмăртанчĕ, мускулсем тулса хытрĕç. Пĕррех сулса ячĕ вара хăйĕн пăтавккине Воробьев. Следователь ураран çавапа çулнă пек йăванчĕ хăма урай çине. Сержант тытрĕ те капитана хăйне наручникĕпе тимĕр ещĕк хăлăпĕнчен çаклатса лартрĕ, тăна кĕрсен ан çухăртăр тесе сĕтелĕ çинче выртакан хĕрарăм йĕмĕпе (такама тĕпченĕ хыççăн выртса юлнă вещдок пулчĕ пулас) çăварне мăкларĕ, вара алăкран хуллен тухрĕ те коридор пушшипе усă курса алăка тул енчен питĕрчĕ, уççине шăлавар кĕсйине чикрĕ. Темле арçынпа тăрăшсах калаçакан дежурнăй офицерпа сыв пуллашса урама тухрĕ. Хăйпе малашне мĕн пуласси пирки ним шухăшламасăрах вăл чукун çул вокзалĕ еннелле васкамасăр уттарчĕ. Ăна хирĕç шăпах тата фронтри юлташĕ, хăйĕн отделенийĕнчи Çтаппан Шуркин пулеметчик вашкăртса пырать. Элĕк ачине вăл ыталаса илчĕ. Лешĕ, тĕл пулнă ятпа, çур литр пушатасшăнччĕ, фронтри тусĕн медальне çăвасшăн пулчĕ. Воробьев ку ыйтăва кăшт каярахпа татса парăпăр тесе ăна лăпланма ыйтрĕ те юлташне кĕскен хăйĕн пурнăç шăпипе паллаштарчĕ, ун хыççăн пĕрле район прокуратурине çавăтсах илсе кĕчĕ.

Район прокурорĕ Долгов вĕсене хаваспах йышăнчĕ, мĕн сăлтавпа килнине ыйтса пĕлчĕ, сĕтел хушшине лартса иккĕшĕн умне те шурă хут листисем хурса пачĕ, шкулта ачасене диктант çыртарнă пек каласа пулăшрĕ.

– Сирĕн ыйтăвăра Мускавах, Çар прокуратуринех çитерме тăрăшăпăр, – лăплантарса ăсатрĕ Василий Ефремович фронтовиксене. – Хуравне пĕлтерĕпĕр. Яла çитсен Волковсемпе Крутовсене манран пысăк салам калăр.

Çур литр эрех çапăçури юлташсене чăтăмсăррăн кĕтсе ларнă иккен, хăйпе вăй виçме хаярлăхне пытармасăрах чĕнчĕ. Вокзал çумĕнчи столовăйĕнче унран аран-аран уйрăлнă хыççăн хăйсен автобусĕсемпе Шуркин – Элĕке, Воробьев – Тарăнвара ларса кайрĕç.

Платниксем саланнă ĕнтĕ. Ултавçă ясар матки патне чун туртмарĕ, утнă май Салакайăк Йăванĕн урисем Шурăмпуç урамĕнчех тăлланчĕç. Вăл темшĕн-çке Волковсен умĕнче чарăнчĕ. Венери хăйĕнчен мар, Шмык-жмыхран çуралнă пулин те, вăл ăна пăхса ўстерме пулăшнă, таçтан аякран алимент укçи ярса парса мар, ашшĕ-амăшĕ килĕнчех. Пиччĕшĕнчен, Ваççукран, пĕртте уйрăммăн юратман, пĕрле, пĕр ытамра юратнă. Венера ăна ашшĕ вырăннех хисеплет, авă вăл, тулли сĕт витри йăтса сарай пуçĕнчен тухрĕ, аслă ывăлĕн Петĕрĕн кĕçĕн ачи йывăç курка йăтса ун çумĕнче пырать. Пĕчĕк Лев асламăшĕ сĕт сунă чухне куркине ĕне чĕччи айне тытса кăпăклă ăшă сĕт ĕçме хăнăхнă. Халĕ те пулăшнă пулмалла асламăшне, хырăмĕ пăнкă-пăнкă.

– Аванах-и, атте?

– Сывах-ха, хĕрĕм.

– Апла юрĕ, эс шалти пўртелле ирт, эп сĕтне сĕрсе майлакалам. Унта Максим Максимович та пур. Вĕсем яланхиллех Тельманпа шахматла çапăçаççĕ.

– Эп те кукаçипе кĕреп, – тесе Арăслан ум пўлсех шалалла чăмрĕ, хăйсем патне кам килни çинчен пурне те пĕлтерме ĕлкĕрчĕ.

Хăнана иккĕн харăс ыталарĕç, кăкăрĕ çинчи медале курнă хыççăн Салакайăк Йăванне тупăннă наградăшăн саламларĕç. Кил хуçи тӳрех буфет патнелле утрĕ , унтан капăр кĕленче кăларса сĕтел варрине лартрĕ, каласа тĕлĕнтерчĕ:

– Пĕлетĕр-и, Гитлер путвалĕнчен пĕринче пытанса юлнă коньяк ку: «Золото Рейна». Анне! Кил хĕрĕхĕмĕш çулсенчи эрехе ĕçме?

Çав вăхăтрах çĕнĕ халат тăхăннă Нинук инке хыçал пӳлĕмрен кăштăртатса тухрĕ.

– Калап çав хăта килчĕ пуль тесе. Ирт, ирт эс, хăта, хăюллăрах пул. Ютра мар, – тесе вăл Йăвана алă пачĕ. – Хăçантанпа хирĕç тăрса та, ларса та каласман санпа, хăта, ма кĕркелесе тухмастăн ара...

– Эс те мана аслă кукаçипе кукамай патне илсе каймастăн, – ватă çын куçĕнчен чăрр пăхрĕ мăнукĕ. – Кукамайсен çĕмĕрт нумай. Ман çĕмĕрт çиес килет.

– Юрĕ, юрĕ, илсе кайăпăр, аслă кукаçу та кунтах, хул пуççи çине хăпартса лартать те ак... – авалхи кӳршин медалĕ енне куç хӳрипе пăхса илчĕ Нинук инке. – Сан, хăта, кун пекки çуккăччĕ-çке?

– Паян пачĕç, тăхлач, военкомата чĕнсех. Çухалнăскер – тупăннă та, – терĕ хăтийĕ.

– Ах турă, – сăх сăхса илчĕ тур кĕтесси еннелле çаврăнса аслă кил хуçи. – Наградисем тупăнсах пыраççĕ те çав... Пирн Хветутсем хăçан тупăнĕç-ши? Пирн упăшкасем вырăнне ма тӳрех Гитлер açтахине çĕр çăтман-ши? Леш тĕнчене кайсан шыраса тупасси çеç юлать ĕнтĕ савнă упăшкамçăм чунне. – Чăтаймарĕ салтак арăмĕ, халат кĕсйинчен кăларса шурă тутăрпа шăлса типĕтрĕ нӳрленнĕ куçне. – Кусене те пулин турă ырă сывлăх патăрах. Ăçта-ха ман пĕчĕк паттăрĕ?

– Асанне, эпĕ, тискер кайăксен патши, çĕр çинчи мĕнпур усал-тĕселе çĕнтереп, юмахри пекех ак çапла хӳрепе çавăрса çапатăп та... – диван çинче выртакан чĕн пиçиххине илсе çапкаланчĕ Арăслан.

Калаçăва Крутов хутшăнчĕ:

– Халь тин куляннипе те тавăрса килеймĕпĕр ĕнтĕ вăрçă хирĕнче çапăçса пуç хунă миллионшар совет çыннине, çĕршер пин чăваша, хамăр ялти вуншар çынна, çав шутра – аттесене те.

– Çавсене пурне те асăнса ĕçĕпĕр паян Гитлер эрехне Кашкăр Хĕветучĕн, фронтовикăн кĕрекинче, – илтĕнчĕ сĕтел çине апат-çимĕç лартма пуçланă Тельман Федотовичăн сасси. – Акă, хуçяйккă та кĕчĕ пирĕн. Пулăшу вăхăтра çитрĕ.

Кĕтмесĕрех-сисмесĕрех пуçланчĕ акă пĕчĕк ĕçкĕçикĕ. Волков, кăштах хĕрсен, иртнине аса илсе мухтанма та ухутах. Ялан мĕн те пулин çĕннине тупса калатех вăл. Акă, хуннĕн «Паттăрлăхшăн» медальне чи малтан çунă хыççăн, вăрçăран таврăнайманнисене асăнса ĕçрĕç. Тăхтав вăхăтĕнче кĕреке пуçĕ юмах миххин çыххине салтса ячĕ:

– Эрех историйĕ черккере ан путтăр тесен, итлеме ыйтатăп. Хам тахçан Аслă Канаш депутачĕ пулнă чухне Совет Союзĕ шайĕнчи делегаципе Берлина тухса кайрăмăр. Демократиллĕ Германи Республикин пуçлăхĕ Вальтер Ульбрихт йышăнчĕ совет парламентарийĕсене. Банкет вăхăтĕнче вăл анчахрах эп каланă эрех историне уçса пачĕ. Адольф Шикльгрубер та çамрăк чухне çын çиен пулман. Ӳнер искусствине те, музыкăна та хытă юратнă иккен. Австри тĕп хулинчи чаплă опера театрĕнче нимĕçсен Рихард Вагнер кĕввине итлеме ытларах кăмăллана. Юратнă оперисенчен пĕри уншăн «Золото Рейна» пулнă. Швейцарири Альп тăвĕсем çинчен шăкăртатса юхса анакан тап-таса шыв, çыранĕсене аслăлатса, Германи витĕр Çурçĕр тинĕсне васкана – мĕн авалтанпах. Çав юхан шыв Вагнер композитора та çĕклентерсе хавхалантарнă, ăслă пуçĕнчен вара опера шăранса тухнă. Адольф, Гитлер хушма хушамат илнĕ хыççăн, политика хуранне чăмнă, усал шухăшпа пуçне минретнĕ, тĕнче аçтахи пулса тăнă. Унăн тарçисем,

пуçлăхне ырă тăвас шутпа, мĕн кăна шухăшласа кăларман пуль. Çапла Гитлер юратакан иçĕм çырли эрехĕ те путвалсенче хаярланма пуçланă, Вагнерăн Адольф Гитлер юратакан, этем кăмăлне уçакан вилĕмсĕр юррикĕвви ячĕпе таврана сарăлнă. Ак тамаша, кайран пăхатпăр та, пире пурне те пилĕкшер кĕленче «Золото Рейна» чĕркесе панă парне вырăнне. Каçпа «Золот Рейна» опера итлеттерчĕç. Хуннĕм, пĕр кĕленчи, авă, сан ятупах сыхланса юлнă вĕт, ку енчен телейлĕ эс.

– Ах, ачамсем, – хаяр эрех пуçа пынине туйса асăрханарах каласçĕ Нинук инке, – черккине те тытас килместчĕ те, юн ĕçенĕн юнне ăша та ярас мар тенĕччĕ те, ку Гитлерăн наркăмăшлă юнĕ мар пуль-ха, пирнешкел прустуй çынсем тунă эрехех пуль-ха терĕм те, тутанса пăхнă хыççăн умлă-хыçлах тĕппипех ятăм-ха. Тавах, ывлăм, ытла тутлăскерне, хаярскерне таçтан аякран илсе килсе пире ĕçтерсе хăналанăшăн. «Рейн ылтăнĕ» тесе ахальтенех каламан пуль. Тепĕр чух радиора та Вагнер тени хыççăн хитре кĕвĕ янăраса каять те, юрласа та илеп вара артистсемпе пĕрле хутăшса, хам майлăн çыпăçтарса. Эх, ылтăн пурнăç пулатчĕ те пирĕн те хамăр Атăл тăрăхĕнче, çав усал тапăнман пулсан...

Тăхлачне пӳлсех каласма пуçларĕ Салакайăк Йăванĕ:

– Тавтапуçах, хаклă кĕрĕвĕм, ман «Паттăрлăхшăн» медале Гитлер путвалĕнчи хаяр эрехпе хăналаса хаярлатнăшăн. Хаярлăхпах шăлнă-çке вăрçинче фашист текен эсреле, хаяр куçпах хире-хирĕç тăрса тулласа тăкас пек пăхнă пĕр-пĕрне хирĕç. Кам шутланă тăшман коньякне çур ĕмĕр иртсен хамăр патра тутанса пăхасса, – хĕрнĕ хăна хурланнипе те, саваннипе те пуль, арçынла нăшăкласа илчĕ. – Ĕмĕтленме те пултарайман эпĕ ун чухне çак кĕрекере тăвансемпе юнашар ларасса... Эх, я помню тот Ванинский порт...

Арăслан ун чĕрçи çине чалт! сикрĕ те, ăна майĕнчен ыталаса, ача чĕлхи-ăсĕпе ыйтрĕ:

– Ан макăр, кукаçи. Ак каллех. Ма эс, кукаçи, «Ваня портне» аса илсе юрлама пуçласанах куççуль кăларан? Пул ман пек арăслан! Эп килти такаран та хăрамасп, кутран хулăпа çаптарсан та макăрмасп. Анне аттене каланă пек, арçын пуль эс? «Ваня порчĕпе» «Байкал бродягине» упалла мĕкĕрсе яран та, урăх эп те ним те пĕлмесп сан юррусем çинчен.

Салакайăк Йăванĕ пĕчĕк мăнукне пуçран ачашласа куççуль витĕр калаçрĕ:

– Пĕчĕк мăнукăмçăм, ăслă ача эс, пуçу пур – малашлăху та пулĕ аçу-аннӳне хывсан. Ак çакăнта капланать те, пыртан урăх пĕр сăмах та тухмасть, çăмах çăтса ярсан та. Хăть касса яр. Юрĕ, эс чупкаласа çӳреха, ачамккă.

Йăван калаçнă вăхăтра Волковсен хĕрĕ Шăпчăк Шупашкартан çитсе кĕчĕ. Ун хăлхине кĕнĕ пулас калаçу хумĕ, вара вăл, «кăштах тăхтăр» тесе, çул çинчен хăйне тирпее кĕртрĕ те, ашшĕнчен магнитофон яма ыйтрĕ, ирĕк илсен, аппаратурăна майлаштарса кассета лартрĕ – «Америкăра кăларнă компакт-диск. Сăвви те, кĕвви те – ятсăр. Александр Склярпа Михаил Кассиров вăйлатса илемлетнĕ» – ăнлантарчĕ вăл пурне те.

– Сăвви те, кĕвви те пирĕн вăл – зэксен, – ассăн сывласа ячĕ Салакайăк Йăванĕ. – Ах, итлес-ха, манса та кая пуçларăм пуль хамăрăн кимăна.

Çав самантрах уçă сасă хурлануллă кĕвĕпе хутăшса янăраса кайрĕ, пӳлĕме урăхла сывлăшпа тултарчĕ:

Я помню тот Ванинский порт
И шум парохода угрюмый,
Как шли мы с этапом на борт
В холодные мрачные трюмы.
От качки стонали зэка,
Обнявшись как родные братья,
И только порой с языка
Срывались глухие проклятья.

А утром растаял туман,
Утихла пучина морская.
Восстал на пути Магадан –
Столица Колымского края.
Пятьсот километров тайга,
Качаются люди, как тени,
Машины не едут сюда,
Бредут, спотыкаясь, олени.
Будь проклята ты, Колыма,
Что названа черной планетой.
Сойдешь поневоле с ума,
Отсюда возврата уж нету.
Я знаю, меня ты не ждешь
И писем моих не читаешь.
Встречать ты меня не придешь,
А встретив, меня не узнаешь.
Я помню тот Ванинский порт
И шум парохода угрюмый,
Как шли мы с этапом на борт
В холодные мрачные трюмы.

– Çак нуша-терте мана Гитлер анчах мар, хамăрăн аçтахасем те тӳссе ирттерме пӳрнĕ, – куçне шăла-шăла каларĕ Воробьев сержант. – Тыткăнран мĕнле таврăннине пĕлетĕр халь. Малалла вĕт эпĕ хамăрăннисен тыткăнне çаклантăм-çке. Власов генерал çарĕнчен французсене парăннă пиншер совет салтакĕсене Францин Хирĕçтăру çарне хамăрăн хĕç-пăшалпах куçарнăччĕ. Нимĕç фашисчĕсене эпир те унта самаях тӳнккесе илме ĕлкĕртĕмĕр. Мана тăван çĕршыва таврăнсан тӳрех ирĕке хăтармалла пулнă. Çав паçăр каланă Пахом Баранов пĕтерчĕ. Хăйĕн сутăнчăк-çын вĕлерен ячĕ тĕп пултăр тесе мана Колымана ямалли камантăна чиксе хунă.

Уйăх çуртан тин çитрĕмĕр таварнякпа Хабаровск крайне, Амур юхан шывĕ урлă каçсан, Тутар проливĕн Ванино порчĕ пăрахутсен сассипе хăрушшăн кĕтсе илчĕ пире. Поселокĕнче тавраллах йĕплĕ пралукпа

карса çавăрнă çурт-йĕр. Зэксен перевал бази иккен. Вуншар пин çын хăйсене тинĕспе ăсатасса кĕтет. Пире тахçан яппун салтакĕсем пурăннă пĕр казармăна чыхса тултарчĕç. Тепĕр уйăх пысăк пăрахут çине япала, апат-çимĕç, бензин тултарнă пичкесем тиерĕмĕр. Вăхăт çитсен... Тарăн трюмсенчи хăмаран çапса тунă нарсем çине икшерĕн вырнаçтарчĕç. Кам выççа, чир-чĕре, хуралçăсем хĕненине чăтаймасăр кăнса выртать, вĕсене борт урлă укияна ывăтаççĕ. Пулăсене тăранмашкăн – чĕрĕ апат.

Хăлха тăратса итлекен Лев кукашшĕн тута хупаххинчен пӳрнепе пусса хуйхăрчĕ:

– Эх, сана мĕнле переймен укияна çав усал хуралçăсем. Пенĕ пулсан-и, пулăсем кăшласа янă пулсан-и, пирн аслă кукаçи те пулас çукчĕ. Ай-яй, эп сана шутсăр хытă юратап-çке, юрать пулă çимен сана, кукаçи. Ыран çĕмĕрт çиме те илсе каяймастăнччĕ вĕт. Юрать çăлăнса юлнă эс açтахасенчен. Вăйлă пулнă-и эс? Эп те сан пекех вăйлă пулап. Арăслан пек...

Максим Максимович тухса кайсан та Тельман Федотович хуннĕшĕпе чылайччен калаçса ларчĕ. Венера Ивановна ашшĕне раскладушка çине вырăн хатĕрлесе пачĕ. Арăслан кукашшĕн хырăмĕ çинче вылясах çывăрса кайрĕ, аслашшĕ ăна хăйĕн кравачĕ çине йăтса кайса хучĕ.

Пурте çывăрма выртсан та Нинук инке хăйĕн пӳлĕмĕнче çурçĕр иртиччен те куç хупаймарĕ. Куçĕ умĕнчен юратнă Хĕветучĕ çухалмарĕ. Юланутпа чупакан упăшки чарăнман ăйăрне ташлаттарса ун тавра кула-кула çаврăнать. Акă Нинук ун умне сиксе ларать те, урхамахăн çилхинчен çавăрса тытать. Пĕрле уй урлă, вăрман тăрăх тапăртаттарса пыраççĕ кăна. Умра вăйлă çунакан пушар курăнать, лаши такăннипе Нинук çĕре ӳксе юлать. Хĕветут ахăракан çулăма урхамахĕпе кĕрсе кайса çухалать. Кăтăш пулнă хушăри тĕлĕкпе вăранса каять те тăлăх арăм чĕри чиксе килнине аран-аран ирттерсе ярать, хуллен ахлатса илет.

7

Ял хуçалăх ĕçĕ-пуçĕ вĕçленнĕ хыççăн, çĕр пуянлăхне кĕлете кĕртсен, чăваш хресченĕ ĕмĕр-ĕмĕр тăршшипех кĕр мăнтăрне кĕтнĕ. Тыр-пул уявĕ ячĕпе юпа уйăхĕнче, уйăх таврăнсан, эрне кун тăван-пĕтенне, хурăнташ-пĕлĕшне хыпарласа чĕннĕ. Кĕрекере кăпăклă, çăра урпа сăри ĕçнĕ, пыл пуррисем хаяр кăрчама куркисене пушатнă, автан е чăх йĕтесĕ туртнă, тулăх апат-çимĕçпе тăранса, хăпарнă кăмăлĕпе савăнса юрланă, унтан урай варрине тухса тапăртата-тапăртата ташланă. Кĕр сăри иртсен кил-йыш, карта пăттисем тунă, чӳк чӳкленĕ. Унтан вара кĕлле çӳреме пуçланă.

Авалхи йăла ламран лама куçса ку таранччченех халăхра майĕпен вăй илсе пырать. Вак хуçалăх çыхăнăвĕсенчен колхоз ĕçкисем таран хăйне евĕрлĕн аталаннă, районсемпе Чăваш çĕршывĕн çулленхи пысăк уявĕсем патнех çитнĕ. Çĕлен шуса тухайми тырă вырса çапнă-и е мăян вăрри пуçтарса кĕртнĕ, пурпĕрех кĕр сăри тумасăр, ытакланса хастарланмасăр пĕр çул та иртмен.

Семен Ильич Быстров та, ял çăрăлчăкĕнче кун курнă йыт пулли, кĕр сăрин тутипе, шавĕпе ӳссе çитĕннĕ. Çав савăк кун вĕсене, шĕвĕрккесене, хушăран чăх урипе çунатти те, хăнасен шушкă-пĕремĕкĕпе канфечĕ те леккеленĕ. Васка Илли фронтра тахçанах вилнĕччĕ-ха ĕнтĕ. Вăрманти ялта та вăл пурăннă вăхăтра унни пек мăн пӳрт ялĕпе те темиçен çеç пулнă. Çур ял ытла мунча пек пӳртре йышлăн нушаланатчĕ. Ик çĕр аллă киллĕ Тымарта мунчи те çирĕм пиллĕкрен ытла пулман. Пуçпа кута хупламалăх, çумăртан, сивĕрен çурăм ăшши тытмалăх ларткаланă хӳтлĕхсĕр пуçне совет хресченĕн урăх мĕн пулнă-ши чăваш ялĕнче? Юрать унăн ашшĕ вăр-вар пулнă çав, патшалăха çаратмасăр, колхозăнне хапсăнмасăр хăй пултарнă таран тĕрмешсе, Иллесем валли хăтлă çурт лартса хăварнă, пӳрт-çурчĕ вара хăй вилсен те унăн йăх палăкĕ вырăнне юлнă.

Хăйсен тăрăхла, аслă пӳртĕнче колхоз ĕçки тунине астăвать-ха Семен Ильич. Бригадăн-бригадăн уявлатчĕç кĕр мăнтăрĕн кунне. Васка Иллисен енчи урам çыннисен камантирĕ Тан Ваçличчĕ. Тан Ваçли танĕсем-колхозникĕсем, чăвашла капăр тумланса пынăскерсем, тăм чашăкран йывăç кашăкпа типтерлĕн така шӳрпи лĕрплеттеретчĕç, ашшĕн çăка вуллинчен тунă пĕчĕк каткаран салтак куркипе ăса-ăса илнĕ кăпăклă сăрана стаканран черетпе ĕçетчĕç. Эрех-сăмакун таврашĕ курăнман. Ирхи сала кайăк чăмăркки пек шавласа каятчĕç вара. Авалхи хурлăхлă юрăсене васкамасăр, пĕрне-пĕри пӳлмесĕр ытакланса шăрантаратчĕç. Ура тупанĕ хĕрнисем таса урайне сиксе тухатчĕç те, Карачăм мучи шăпăрĕн кĕввипе ăмăртмалла ташша çапатчĕç. Шăпăр сассине хĕрнĕ хĕрарăмсен кăмака питлĕхĕн чанклатăвĕ вăйлатса тăратчĕ. Сĕтел хушшинчен черетленсе тухнă май, çисе ярайман хура е шур çăкăр татăкне никам та сĕтел çине пăрахса хăвармастчĕ, «ку хамăн чĕл-ха» тесе ăна хĕве е шăлавар кĕсйине чиксе хуратчĕç. Мĕн тери хаклă пулнă вăл çăкăр татăкки е тĕпренчĕкĕ!

Пурнăç пăтăрмахĕнче кĕр сăрине коммунистсем массăллă ĕçкĕ кунĕ туса ячĕç. Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунĕ çулсерен район, республика ĕçкипе вĕçленет. Кашни пĕрлешӳллĕ хуçалăх ун валли мĕн чухлĕ ыйтнă, çавăн чухлĕ укçа куçарать Вăрманкаса, районсем – Шупашкара. Укçи-тенки – пĕтĕм ĕç халăхĕн, кĕрекийĕ – пуçлăхсемшĕн.

Кун пирки Семен Ильич сахал мар шухăшланă та, уявĕ сăмса умне çитнĕ тĕлелле çултан çула куçса пыракан йăлана пĕччен халлĕн ниепле те хирĕçлеймест, хăй те кашни ĕçкĕрех юлташĕсемпе саркаланса юрлать, ăмăртса ташлать, мухмăра кайичченех эрех-сăрине мехлет.

Акă ĕнтĕ вăл ирех вăранчĕ, паянхи район ĕçкине мĕнле курăмлăрах та янравлăрах, нимле çуйхашусăр,

кăлтăксăр ирттерсе ярасси пирки пуçне çавăрттарать. Шупашкартан парти обкомĕпе Министрсен Канашĕн элчисем пысăк ушкăнпа мăн сумкăпа килмелле. Хăйсемпе ăмăртакан Шăхран районĕн Юлдашев ертсе пыракан делегацийĕ артисчĕсемпе персе çитмелле. Ăмăрту паттăрĕсене парнесем памалла. Парнисене туянма хăйсен хуçалăхĕсемпе организацийĕсемех укçине куçарнă. Район ячĕпе çеç ултавлă парне пулать вĕсене. Ăна вĕсем ăнлансах пĕтмеççĕ, хăть камран пулсан та – парне пултăр. Илекеншĕн пурпĕрех мар-и? Савăнăçлă сăмах-юмах-салам хыççăн хуçасен ячĕшĕн концертра пулмалла та... район кĕрекине васкамалла. Хăнана чĕннисем район пуçлăхĕсемпе пĕрле пĕтĕм савăклăхне çак анлă кĕрекере чунĕсене уçса палăртаççĕ. Вăрçă хыççăнхи Васка Иллисен пӳртĕнчи кĕр сăри кĕрекийĕпе хальхи анлă кĕрекене танлаштарма май та, виçи те çук ĕнтĕ. Çыннисен те кăмăл-туйăм шайĕ вăл вăхăтри чухăнлăх пусарăвĕнчи мар. Ашкăнчăк хăмпи пĕлĕте çити вĕçет. Уяв кĕрекинчи пек пуян сĕтел хăçан пулĕши хресчен килĕнче? Хамăр асатпăр-асатпăр, çав хушăрах хамăра астаракансен хырăмне этемле тăрантараймастпăр, ыр пурнăçне те туса параймастпăр тесех вăл акă паян те черетлĕ кĕр сăри ашкăнчăклăхне темле çав тери чаплă куна кĕтсе илнĕ пекех ăнтăлать. Чунĕ унăн халех пĕтĕмпе çав савăклăхра.

Райкома хăвăртрах çитес тесе Быстров шоферĕ илме килмелли вăхăтран маларах хăйсен умĕнчи кану паркĕ витĕр сукмак тăрăх чупнă пек вашлаттарчĕ. Тӳрĕрен пĕр кана утмалăх çеç.

Большаковпа калаçса татăлнă тейĕн, вĕсем иккĕшĕ те харăсах чукун çул урлă каçрĕç. Райĕçтăвком пуçлăхĕ сехечĕ çине пăхса, пĕрремĕш секретаре алă пачĕ:

– Аван-и, Семен Ильич? Васкатпăр пать?

– Хăвăра та салам, Альберт Григорьевич, хăнасенчен маларах çитесшĕн-çке, çавăнпа сирĕн пекех пăравусла

хашлаттарса пыратăп. Пĕрремĕшĕ хăех килет-ши? Шупашкартан ытла уçăмлах каламарĕç те. Çапах та ĕнер хамăрăннисене пурне те ура çине тăратрăм, – тесе хăлтăртатса куланçи пулчĕ Быстров.

Урам урлă каçсан райпопа ресторан çурчĕ çумĕнче – Коммунистсен партийĕн Вăрманкасри комитечĕн икĕ хутлă штабĕ. Ăна ĕнтĕ çирĕм çула яхăн КПССăн ашшĕ çĕрĕн-кунĕн хураллать. Бронзăран шăратса тунă мăн кĕлетке çумĕнче те, умĕнче те епле хăпартланса тăнă пуçлăхсемпе пĕрле Быстров та аслă уявсем вăхăтĕнче. Райкома кĕрес умĕн вăл чи малтан Ильич умĕнче çĕлĕкне е шĕлепкине хывнă, çул пуçа, аттене сывлăх суннă. Акă, халĕ те вăл сăмсасăр пухчине пуçĕнчен вашт илсе аллине çĕклерĕ, çăварне уçнăскер, ним калаймасăр хытса тăчĕ. Хыçаларах пыракан Большаков ăна кӳлепипе пырса çапрĕ.

– Мĕн темрен тĕлĕнсе пат чарăнтăн?

– Пăх-ха эс çӳлелле? Мĕн хăтланаççĕ ăрсурниксем?

Çав самантрах вĕсем патне обкомăн хура «Чайки» чарлаттарса çитсе чарăнчĕ. Машинăран тухнă пĕрремĕш секретарь те вĕсемпе пĕрлех Ленин палăкĕ еннелле тинкерчĕ. Владимир Ильичăн мăйĕнчен сеткăласа çыхнă çĕр улми миххи çакса янă. Миххинчен батон, çăкăр татки, сурăх пуçĕ, сысна хăлхи, пăру хӳри, темле шĕвек тултарнă четвĕрт кĕленчи курăнать. Миххипе юнашар çыпăçтарнă картун татăкки çине хĕрлĕпе çырнине вĕсем виççĕшĕ те сасăпах вуларĕç: «Вăрманкас ыйткалаканĕсен кучченеçĕ».

Хăш вăхăтра сиксе тухрĕ çывăхри редакцирен райхаçат фотокорреспонденчĕ, пуçлăхсемпе çул пуçа çатлаттарса илме те ĕлкĕрчĕ. Быстров ăна çанăран çатăрласа тытасшăнччĕ, анчах Шупашкар хăни аллисене сулса чарчĕ:

– Хăтлантăр-и? Уççăнлăх самани. Çавна асра тытмалла, юлташсем. Анчах та ку çывăрса лармаллине

пĕлтермест. Ыйхăран вăранмалла! Мускав юрттипе хăвăртлăха ўстермелле! Вун пĕрте, «Шурăмпуç çăлтăрĕнче» пуçланмаллаччĕ-и-ха сирĕн уявĕ?

Быстровпа Большаков пуçĕсене сĕлтрĕç.

– Çитетĕп. Вăхăтра. Эпĕ халĕ Улатăра васкатăп-ха. Камитне курсах кайрăм ĕнтĕ, – пуçа пăркаласа «Чайки» патнелле васкаса утрĕ обком пуçлăхĕ Павлов.

Ним калама аптăраса юлчĕç район хуçисем. Большаков милици çурчĕ еннелле вĕçтерчĕ. Быстров пўлĕмне хăшăлтатса кĕчĕ те хĕрринчи пукан çине лак! ларчĕ. «Акă мĕн патне илсе çитерчĕ пире ку Горбачев юлташ уççăнлăхпа хăвăртлăх çĕмренне çĕршыв çийĕн вăшлаттарса вĕçтернĕ май, – çамки çинчи тарне çанăпах шăла-шăла илчĕ район «кĕпĕрнаттăрĕ». – Пирĕн парти ĕçне, район ял хуçалăхĕн ĕçне мăшкăл палли лартса паракан чее оппозиционерсем вăрттăн кăтартаççĕ хăйсен вăйне, Ленин аллипех питрен çутăлтараççĕ кăçал пĕлтĕрхинчен начартарах ĕçленĕшĕн. Пилĕк çуллăх заданийĕсене тырă тата аш-какай туса илессипе тултараймарăмăр-çке. Ку обком секретарĕ трибуна çинчен вăрăм пушă вĕçĕпе кутран çатлаттарнинчен те вирлĕрех. Малашне те каплах пулса пырсан, çĕнетў юхăмĕн хумĕ хама та пурнăç çулĕн айккине шăлса ывăтать вĕт. Чукун çул çумĕнчи авалхи юман тăрринче ларакан çăхан та тинтерех кăна хăрушă сассипе кранклатрĕ. Хамăр ял кўрши Карачăм мучи каларăшле, район каланчи силленмеллипех силленет, çавра çил çавăрса çапасран тек ăна аслă çул пуç та хăтараймĕ. Большаков та анăçран харпăрлăх çути каялла ўксе хамăр тăван çĕр çинче аваллăх хĕвелне ялкăштарса ярасса кĕтет. Тем тесен те эпĕ хам вырăнта марах, район «кĕпĕрнаттăрĕсем» малашне Альберт Григорьевичсем пулаççĕ пуль, пирĕн хăрăк тăрăллă юман çинче «Пире хальхи пекех хавассăн хĕвел çутатмĕ ĕмĕрне» тесе юрласа ларасси çеç юлать», – тесе хуйхăрнă май вăл стена çумĕнчи сейф умне тăрса

пычĕ, алăкне йывăррăн уçса пуçланă кĕленчерен эрменсен коньякне пĕр тулли çăвар сыпрĕ, юнĕ вĕриленсе кайсан сылтăм ывăç тупанĕпе сĕтеле хытах шанлаттарчĕ, сассине хăйăлтирех кăларчĕ:

– Пуç усма иртерех-ха.

Акă алăкра шофер пуçĕ курăнчĕ:

– Эп çитрĕм.

– Салам, тепĕр икĕ минутран тухатăп.

Райком умне машина пухăнса тăнă. Пурте пĕрремĕш секретаре кĕтеççĕ. Быстров сылтăм аллине Ленин пек малалла тăсса саламларĕ те хăйне пăхăнакансене, машинăна, сылтăм енчи хыçалти ларкăча кĕрсе сĕвенчĕ. Ку вăл аслă пуçлăхсен сыхлав манерĕ. Çапăнас-мĕн пулсан та капла чĕрĕ юлма пултарать-çке пуçлăх текен хăравçă çын. Чи аслисене пăхса Быстровсем те çав йăлана пăхăнса çÿреççĕ. Василий Михайлович «Атăлне» тапратрĕ. Ун хыççăн Большаков машини тата ыттисем те мăн çул çине тухрĕç.

Унченхи пĕрремĕш секретарь Яков Сидорович Мургаев пекех Быстров та тем пулнăн пит васкаса çăвар вучахне чĕртсе ячĕ. Пăлхар табакĕн сăмсана кăтăклантаракан шăрши машинăна тулчĕ. Шофер тÿрех сулахай енчи пĕчĕк чÿречене уçса ячĕ те, хăй майлă мăкăртатрĕ:

– Вăрманкасра чухне çуран чупса çÿрени сывлăхшăн начар мар пуль, халăх умĕнче те авторитетлă. Çапах та калас пулать ăна хăçан шуç чуманпа, хăçан çил çунатпа çÿрессине. Атту пĕрмай шыраса çÿре сирĕн хыççăн, паян та хăвăр çурт патне пустуй кайса килтĕм.

– Уншăн вилмерĕн пуль-ха, юрĕ-çке, каçар мана, тулăксăра, кĕçех хамăн хваттер çывăхне гараж ларттарăп, Василий Михайлович, – тесе халĕ те кăмăлĕ уçăлсах çитейменнипе пăркаланса илчĕ Семен Ильич.

Василий Михайловичăн çынна хăй вăхăтĕнче хăйĕнле сăнăласа илес йăла пур, акă типпĕн ÿсĕрсе илнĕ май вăл лăхлатрĕ:

– Мĕн, Миловсем Ленина ресторан номенклатурине кĕртнĕ-им? Ильич çĕр каçиччен четвĕртне самай пушатнă вара, ай маттур, çапах тайкаланмасть те. Ах, закуски вăйлă-çке. Эп çитнĕ чухне михĕ шăтăкĕнчен милици начальникĕн пуçĕ çине ливер кăлпассийĕ шап татăлса анчĕ те çав хушăрах ăна хыткан анчăк каплаттарса йăтса тарчĕ. Беспартийнăй йытă пулчĕ пулмалла...

– Çитет! – чарса лартрĕ ăна хуçа. – Сана – кулă, мана – кутран хулă. Милов, тетĕн. Миловсем... Тытман вăрă – вăрă мар, ăрсурник та çавнашкалах. Такам хăтланнă. Такам уçса ĕçнĕ сăмакунне Ильичăнне. Хамăр та массăллă мухмăра тухса пыратпăр та, Вăрманкасĕнче те алкашсенчен хăть пĕве пĕвеле. Темскер, ытла хытă ятăнçке ăйăрна. Ан ĕрĕхтер. Мĕн пулчĕ сана паян?

– Умра çул уçă та, хăвалас теп. Ум пӳлекен çук чухне ярăнса юлар, Семен Ильич, Мургаевла. Манман-ха ун чуппине. Хăй умĕнче кам та пулин пулсан-и, ай-яй мĕнле чĕтренетчĕ. Сисетĕп те, хăвалатăп машинăна, ирттерес темен шофера та хыçала хăваратăп. «Во, маттур!» тетчĕ те вара «Беломор» пирусне тӳрех туртса яратчĕ. Малта пулас килет-çке пурин те... Тĕрĕссипе, хисеп ĕнтĕ. Парти халăха, пире ертсе пыраканĕ те, пĕрремĕш секретарĕн тата мĕншĕн кайра пымалла?

– Юри ырă тăвас тени, Василий Михайлович, пурпĕрех мĕскĕнлĕх шутланать. Мĕскĕн çын вăл хевтесĕр. Машинăсен колоннинче ум тытнипех эпир пурнăçра малта пыраймăпăр çав. Пуçу пулмасан хăть те хăш вырăнтан та хӳрене куçатăн. Урăх унашкал ан хăтлан. Кам малтан каяс тет, яр ирттерсе.

Шофер кула-кулах «Атăлне» майĕпен чарма пуçларĕ. Хыçалти, райĕçтăвком шоферĕ те, хăвăртлăхне чакарчĕ. Василий Михайлович чарчĕ те, вăл та чарăнчĕ. Семен Ильич алăк уçса вĕсене малалла иртме паллă пачĕ. Большаков машини куçмарĕ. Быстровсем вара хăйсемех тапранчĕç.

– Куртăр-и, иртмеççĕ вĕт? Иртме хăяймаççĕ. Хăй тахçан сирĕн вырăнта ларнă çын, Альберт Григорьевич,

паллах, манман çирĕпленнĕ йĕркене. Ман салтакра чухне çамрăк хастар генерал пурччĕ, дивизи командирĕ. Пĕррехинче арми командующийĕ пынăччĕ. Чаçсене каятпăр. «Хăвала, Вася, çиччас кăтартатпăр вĕсене çилтăвăл!» – тет мана хамăн хуçа. Ман, мĕн, хушнине итлес пулать. Командующи машинине пылчăкпа сирпĕтсе çеç хăвартăмăр, пĕрмай малта пытăмăр. Ну, шутлатăп, лекет çитсен. Сехĕрленни кăлăхах пулчĕ, командующи ман генерала кула-кула пўрнепе çеç юнарĕ, хăйĕн шоферне тăн пачĕ: «Акă камран вĕренмелле машинăпа çўреме!» – терĕ. Эпĕ ни чĕрĕ, ни вилĕ тăратăп. Ăшра хамăн çапах та савăнăç кулли. Лайăх çынччĕ манăн генерал, кăмăллăччĕ, хăюллăччĕ, çынна пустуйран кўрентерместчĕ. Темшĕн эсир мана хушăран çав генерала аса илтеретĕр, Семен Ильич.

– Юрать, юрать хуçана мухтаса пыма, Василий Михайлович. Пирĕн кулăш кустăрми мĕнле куснине сиртен, ямшăксенчен ытла никам та курса пĕлес çук, – тепĕр пирус чĕртрĕ пĕрремĕш секретарь, тĕтĕм ăшĕнче шухăша путрĕ.

Тымарти Васка Илли ачи пурнăçра ашшĕ пекех таçта васкать. Илле те васка-васкаx вакка чăмнă. Вăрçăра вăл артиллери дивизионĕн обозĕнче пулнă. Лашапа тупă, снаряд турттарнă. Вĕсен юхан шыв урлă каçмалла пулнă. Пăр хулăнлансах хытса çитмен. Быстров командиртан пăра тĕрĕслесе пăхма ыйтнă. Командир килĕшнĕ. Салтак ут утланать те пăр çине кĕрсе каять. Вăл çыранран уйрăлсанах леш енчен нимĕçсен миномечĕсем пеме тытăнаççĕ. Минăсем çурăлса хăрушă сасă кăлараççĕ. Лаша чĕвен тăрса унталла-кунталла çапăнать, мина алтнă вакка сирпĕнсе каять, хăйпе пĕрле пăрлă шыва юланутçине те путарать. Дивизион командирĕ Смелов майор яла янă çырура çапла пĕлтернĕччĕ. Çырăвĕ хальччене тур кĕтессинчи сентре çинче упранать.

Семен Ильич шутланă тăрăх, ашшĕне никам та хăваламан, хăй васканă артиллеристсене кирлĕшĕн,

çирĕпленсе çитмен пăр çине тупăсене кĕртсе ярассинчен хăтарнă, паттăрла ĕçех тунă, васканă – пуçсăр тăрса юлнă. Çапла тулăксăр ĕçсем пулса иртеççĕ хушăран Васкасен йăхĕнче. Çунса тăракан чунлă çуралнăскер ĕнтĕ Илле ачи Çемен те йăх йĕрĕпех чупать. Васкасах улттăра шкула кайнă. Амăшĕ хăйне пăхса пурăнма ялта хăварасшăн пулнă пулин те, малалла вĕренес килнĕ хевтипе шупашкаралла çул тытнă. Чăваш педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ачасене чăваш чĕлхипе литературине нумаях та вĕрентеймен, комсомол ĕçне кӳлĕннĕ. Комсомол картлашки тăрăх чупса хăпарнă, Вăрманкас райкомĕн пĕрремĕш секретарьне çитнĕ. Çеменĕн тата çӳлерех, обкомаллах хăпарас килетчĕ те çав, анчах ун валли унта вырăн пушанмарĕ. Халăх тĕрĕслевĕн комитечĕсем туса хурсан ăна Мургаев сăмсаран шаккасах вĕрентрĕ: «Шупашкарта унта хăв майлисем хушшинче çухалса кайма пултаран, эп сан пирки калаçса татăлнă çӳлтисемпе, кандидатсем татах пур, ман аякри ют йытта çумра вĕртерес килмест, сирĕн ĕçĕ çынна тулласа тăкассипе çыхăннăскер пулать, хамăр ӳстернĕ Муськах çывăхрах мана, васка çĕн вырăнна йышăнма, эс унта ху хуçа пулан».

Хуçан та аслăрах хуçасем пур. Кирлĕ самантра кирлĕ çĕртенех паклаттарчĕç ăна хĕрсе кайса ĕçленĕ хушăра: районти пуçлăхсене хĕрхенмесĕр тапăннăшăн. «Партин аслă шкулне вĕренме каяс кăмăл пулмасан, сан валли ман райкомра та, райĕçтăвкомра та çуллă-пуллă вырăн çук, республика комитечĕн председателĕ те хăйĕн тусне Милова ура хунăшăн сана пуçранах шăлмарĕ курăнать, учитлăна вырнаçсан çеç», – каллех васкатрĕ пĕрремĕш секретарь. Васкасах вĕренчĕ вăл Чулхулара, райкомра та васкасах ĕçлерĕ. Мургаев çунса кайрĕ. Район «кĕпĕрнаттăрĕн» вырăнĕ пушанса юлчĕ. Альберт Григорьевич килĕшмен пирки çеç суйларĕç вĕт ăна район парторганизацине малалла ертсе пыма. Максим Максимович Крутова та çав вырăна лартма хатĕрленĕ

пулнă. Хăйĕн хирĕçес килмерĕ, маршал пулас ĕмĕтпе пурăнакан салтак пек пĕр хирĕçле сăмахсăрах килĕшрĕ Быстров район лавĕн тилхепине алла илмешкĕн. Васкасах. Иккĕленсе тăрсан, çиччас унта Большакова е Крутова суйлаттараççĕ те... тахçанхи ĕмĕт урăх нихăçан та пурнăçланмĕ терĕ.

Акă халĕ вăл – КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ. Çĕнĕлĕх йĕрки аталанса пуç илнĕ вăхăтра та райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ пурпĕрех районта иккĕмĕш çын кăна шутланать-ха. Советсене анлă, пысăк правасем парас пирки пĕрмай пакăлтатаççĕ пулин те.

Большаков хăйĕнчен ăслăрах та вăйлăрах çын тата ертӳçĕ пулнине Семен Ильич ăнланать, ĕçĕпе курать, вĕчĕрхенет те тепĕр чухне унăн ят-сумĕ халăхра хăйĕннинчен иртсе кайнишĕн. Çапах та... хальлĕхе вăл мар, Быстровах чи асли. Ава епле малалла ĕрĕхсе каяймасăр пырать Большаков машини унăн çурăмĕ хыçĕнче? Быстров васкать. Большаков васкамасть, номенклатура субординацийĕн йĕрĕпе пырать. Быстров мар, Большаков ертсе пынă пулсан çак çулсенче района, пилĕк çуллăх планĕсем, тен, йĕркеллех пурнăçланатчĕç пуль, халĕ вара район Быстровшăн намăс курать. Пур ĕçе те васкаса тутарнипех чылай пăтăрмах пулчĕ унăн. Вăл хăйĕн айăпне туять, çапах та хăйĕн мăн кăмăллăхне пусараймасть, хăй шутланинчен чакмасть. Унăн районта пĕрремĕш çынах пулас килет. Вăрманкасра та ăна чи малтан алă тытаççĕ, ава. Большакова – ун хыççăн тин.

Кĕвĕçӳ кашни çын ăшĕнчех хăй вырăнне йышăннă. Чун чирĕ камăн мĕнле шайра, мĕнле хăватпа аталанса пурăннинчен çеç килет. Пĕрле çуралнă тăк вăл, ăна этем хăй çумĕнчен виличчен те уйăраймасть. Вăл çĕнĕ чунра, ачинче, сыхланса юлать, этемлĕхре йăшăлтатать, кашни çын ăшĕнче сисĕмсĕр такама кăшлать. Апла пулин те Быстров ăшĕнчи кĕвĕçӳ тăшманла ăмсану мар, хăйĕн чунĕнчи лăпкăлăха хушăран хумхантарса канăççăрлантараканни кăна. Çавăнпа Семен Ильич

хăйĕнчен маттуртарах Большакова пĕртте курайманлăх туйăмĕпе хурламасть, унăн ăслă сăмахĕсене пуçа хывать, унпа халăхпа ĕçлеме вĕренесшĕн ăнтăлать.

Кĕр сăри мĕнле палăртнă, çавăн пекех иртсе кайрĕ. Улатăртан персе çитнĕ пĕрремĕш секретарь плансем тулни-тулманни çинчен асăнманшăн Быстров лăпкăн сывласа ячĕ. Атту Ленин мăйĕнчен çакса янă мăшкăл мишукĕ – кĕлмĕç хутаççи – хăйĕн мăйĕ çинче çакăнса тăнăнах туйăнатчĕ-ха. Мала тухнă çынсем – ял çыннисем – пысăк хăна аллинчен хисеп паллисем, хаклă парнесем илчĕç. Çапах та ку вăл – уяв палли кăна. Семен Ильич пĕлет, туять хăйне, ытти пуçлăхсене те хăçан пĕçеркĕ лекессине. Перестройка пушшине обком каткинчи шывра хытах шăршăнтарса хунă.

Тĕнче вăхăчĕпе пĕрлех Вăрманкас районĕ те малалла шăвать. Кам мĕн ĕçе кӳлĕннĕ, çавă хырăм тăрантармалăх, çи-пуç туянмалăх, пӳрт-çурт лартмалăх, ăс-тăна аталантармалăх тата канса вăй пухмалăх укçа, пурлăх пухать. Кĕр кунĕсем çумăрпа исленсе пынă май пурте хĕл çывхарасса кĕтме хатĕрленеççĕ. Ĕмĕт-тĕллевĕ пурин те – пуçра. Быстровăн çулталăк вĕçнелле тата тепĕр пысăк ĕç туса иртермелле.

Районти коммунистсем, сахалăн мар вĕсем, пин те улт çĕрĕн, виçĕ çынран тытăнса, пуçламăш организацисене пĕрлешсе тăраççĕ. Аллă коммунистран иртсен, вĕсене штатра тăракан парторгсем ертсе пыраççĕ, вĕсем райкомран укçа илеççĕ. Унашкал секретарь пĕрре – вăрманпромхозра, пиллĕк – ялсенче. Пуçламăш парторганизацисем кашни пилĕк çуллăх район комитетне суйлаççĕ. Суйлавĕ районти партконференцире пулса иртет. Вырăнти парторганизацисем суйласа янă делегатсем иртнинче те аллă виçĕ çынран комитет, конференцисем хушшинче ăнсăртран комитет членĕсене улăштармалли райком членĕн вун çичĕ кандидатне суйларĕç. Çак комитет вара ăна, Быстрова, пĕрремĕш секретарь – аслă ертӳçи пулма тата иккĕмĕшпе виççĕмĕш

секретарьсене, район комитечĕн пленумĕсем хушшинче ĕçлекен бюро членĕсене тăхăр çынран суйларĕ, район комитечĕн йĕркелӳ ĕçĕн, пропагандăпа агитаци, пĕтĕмĕшле ĕç пайĕсен пуçлăхĕсене тата район хаçачĕн редакторне çирĕплетрĕ. Конференци çавăн пекех ревизи комиссине суйларĕ. Ревком район комитетне мар, тӳрремĕнех конференцие – коммунистсен аслă органне пăхăнать, кирлĕ чухне пĕрремĕш секретаре те пĕр-пĕр кăсăклă, усал ĕçпе, парти енчен итлеме те пултарать. КПСС Уставĕпе килĕшӳллĕн партконференци кашни пилĕк çулта, райком пленумĕ виçĕ уйăхра пĕрре, райком бюровĕ уйăхра пĕрре-иккĕ пухăнмалла. Конференципе конференци хушшинче парти ĕçне район комитечĕ, комитет пленумĕсем хушшинче райком бюровĕ ертсе пырать. Бюро пуçĕнче Быстров хăй ларать. Патша пек, никама пăхăнман хуçа пек. Бюро çапах та ăна хирĕçлеме те, унпа килĕшмесен те пултарать, хăй майлă татса пама та вăй çитерет.

Большаковăн та унăнни майлах служба пусмийĕн картлашкисем пур. Ăна та район совечĕн-канашĕн депутачĕсем палăртнă вăхăта суйлаççĕ. Унăн та сессипе сесси хушшинче камантлама ĕçтăвком, ĕç тăвакан пайсем пур. Çав ĕç тăвакан комитет пуçĕнче Альберт Григорьевич Большаков ларать, анчах вăл район комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пек районта никама пăхăнман хуçа мар, Быстровран нихăш енĕпе те иртеймен, ăна пуç çапакан иккĕмĕш çын. Ăçтан пулма пултартăр-ха ĕнтĕ пĕр çĕршывра икĕ патша?

Акă кам вăл Быстров! Район «кĕпĕрнаттăрĕ»! Пĕрремĕш секретарьсем – хăйсене 1927 çулта совет патшалăхĕнче уессем вырăнне районсем туса хунăранпах çапла шутласа пурăннă-çке общество тытăмĕн юн тымарĕпе пыракан хăватлă тапă хуçисем. Çав тапă темле çирĕп кăмăллă çын ăш-чикĕнче те усал йăва çавăрать, пуçлăхăн чунне майĕпен-майĕпенех улăштарать. Мургаевăн ĕç меслетне хăй ăна пăхăнса

ёçленё çулсенче сивленё Семен Ильич та çав чирпе чирлесе пырать. Ёçре те, халăх хушшинче те, урампа иртсе пынă чухне те унăн ытттисенчен ăслăрах та пултаруллăрах, вăйлăрах туяс килет. Пуху-канашлура та хăйён сăмахне пуринчен те витёмлёрех, ёнентерўллёрех, тёлёнтермеллерех калас килет.

Большаковăн та, паллах, çирёп хуçа пулас шухăшах ёнтё, анчах район пуçёнчи хутлă-хутлă кăткăс икё организаци пурри, Быстров учитель шучёпе пăхăнуллă хутлă предложени пек туйăнать ăна. Горбачев çёршыв пуканё çине кёрсе ларнăранпа ытла та çивёччён каса пуçларё халăх сави.

Влаç вăйёпе хăпартланса тата пуласлăха тётреллён курса ларнă вăхăтра алăка хыттăн шак-шак-шак! çапнипе вăл шартах сикрё, «Акă сан влаçна туртса илме килчёç!» тенёнех çине-çине янрарё тул енчи сасă. Быстров хытах кăшкăрчё:

– Кёрёр?! Кам çёмёрсе çўрет унта?

Икё хутлă алăкран кёрсе тăнă Кукша Куçкине хирёç пукан çинчен йывăррăн тăрса тухрё те пўлём хуçи, ытахальтен тенё пек аллине тăсса пачё, ăна хăй сётелё умёнчи пёчёкрех сётел хушшине ларма сёнчё:

– Тархасшăн, мён çăмăлпа? Мён хыпарпа?

Вăрман хёрринчи Çиçём ялёнчи Кукша Куçки, Константин Плешаков, хёрёхсенчи тăлпан кёлеткеллё, кук тёрриллё, лапчăк сăмсаллă, сарлака туталлă, хёп-хёрлё пит-куçлă вăр-вар арçын, пёчёк пир хутаçне сётел çине печё те, сайра шăлёсене йёрсе, мухтанчăклăн евитлерё:

– Акă пирён парторганизаци, Вăрманкасри цёкан пёрремёш секретарё Быстров юлташ. Пеме пултаратăр авă çав пушă хут карçинккине. Урамра та Ленин ури айёнче такамăн партбилечё выртать, тухса илёр качакасем кăшласа яриччен.

– Мён ухмахланан эс кунта, райкомра? Çиччас сана...

Хытă ўкнипе саланса кайнă хутаçран яка сĕтел çине вун пилĕк партбилет юхса тухрĕ. Хăйĕн хăпартланăвне ниçта хума пĕлеймен Плешаков куçне мăч хупса секретаре сăнсăррăн йĕкĕлтерĕ:

– Çиçĕмпе Юманлăх ялĕсенче те, «Çиçĕм» колхозра та ĕнертенпе анархи хуçаланать, правлени пулнă çуртра большевиксен пуçлăхĕн Ленинăн портречĕ вырăнне анархистсен пуçлăхĕн Кропоткинăн сăнĕ йăлкăшать. «Анархия – мать порядка» чĕнӳ çакрăмăр алăк тăррине. Пĕр Савели Савваттийĕ çеç, сирĕн пĕчĕк парторчик, пире хирĕç тăчĕ. Тăм пуç ĕмĕрне пуртăпа пĕрене чутласах, фермăра сысна апачĕ пĕçерсех ирттерчĕ, колхоз парторганизацине вунă çул ертсе пычĕ, çапах ни мăка чĕлхине якатаймарĕ, пирĕн пуçра, халăх пуçĕнче, вунă чĕптĕм ăс вĕретеймерĕ. Тăм писмен неуч. Вăл анчах мар, мĕн чухлĕ-ши тата унашкал неуч парти пуçĕнче? Эсир те, Семен Ильич, Ильич пулсан та, парти учителĕ мар, ачапча учителĕ. Сирĕн вырăн кунта мар – шкулта. Мускаврисемпе шупашкартисем те – выскăчкăсем. Сталинăн, тĕрĕссипе, Христос тĕнне халăх хушшине сармалла, турра ĕненекенсемпе ĕмĕрне ирттермелле пулнă, мĕншĕн тесен вăл духовнăй семинари пĕтернĕ. Хрущевĕ те пĕли-пĕлми пуçпа поляр унки леш енче кăнтăр ўсен-тăранне кукурузăна приказпа-указпа актарса сысна кăнтăрли пулса юлчĕ, халăх валли лавккасенче сутма хăйĕнни пек сысна пуçĕ кăна хăварчĕ, салăллă ашне Африкăри коммунизм сĕтелĕ çине ăшаласа лартрĕ. Брежневĕ тата пĕлсех тытса пычĕ-им çĕршыва вун сакăр çул? Виличченех ылтăн купи айне пулчĕ. Пĕлетĕр-и унăн маршал кителĕ миçе кило туртнине?

– Ултă килоччĕ пулас, – хаярлăхĕ сĕвĕрĕлсе пынă май лăпкăн хуравларĕ Быстров.

– А унăн миçе ылтăн «Çăлтăр» пулнине пĕлетĕр-и?

Семен Ильич хул пуççийĕсене сиктеркелерĕ те тăнлă пуçне сулахаялла пĕксе каларĕ:

– Совет Союзĕн Геройĕ ятне ăна икĕ хутчен, Социализмла Ĕç Геройĕ ятне виçĕ хутчен панине астăватăп...

Хăй райком пуçлăхĕнчен те нумайрах пĕлнине кăтартасшăн пулса, Плешаков хăрах ури çинче çаврăнса илчĕ:

– Костюм çинчен костюм çине илсе çакасси чăрмав пулнăран пилĕк хутлă паттăр валли герой çăлтăрĕсен дубликачĕсене туса хатĕрленĕ тет, чăн ылтăнранах: соцĕç геройĕн вун виçĕ, совсоюз геройĕн çирĕм пĕр çăлтăрне. Вăтăр тăхăр ылтăн çăлтăрлă патша тĕнчере пулман.

– Владимир Ильичăн сатту пĕр ылтăн çăлтăр та пулман, çапах вăл халăхшăн – ылтăнран та ылтăн. Леонид Ильич патшара ларнă вăхăта халăхра ахальтен мар социализмăн ылтăн ĕмĕрĕ теççĕ-çке?

– Суя юмах вăл, – аллине ласт сулчĕ Плешаков. – Пире, ял хурчĕсене, Микулай патшасем те, шакла пуçлă çул пуçĕ те, хура мăйăхлă аттийĕ те, Леонид Ильичĕ те, вĕсем хыççăнхи Черненко хут шĕккипе Андропов разведчик та рай туса паман...

– Çавăнпа ĕнтĕ халĕ пирĕн çĕнĕ пурнăç туса парасса Горбачевран кăна кĕтме пулать пуль, юлташăм. Ку хăть суха касси хушшинчен шăтса тухнăскер, вун виççĕрех комбайнера пулăшма пуçланă, вун пиллĕкчен çĕр ĕç техникумĕнче ăслайлăн вĕреннĕ, вун çиччĕре хăй те штурвал умне ларса Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме пултарнă. Ставрополь крайĕнчи пĕртен-пĕр комсомолец, вăл кăна тивĕçнĕ çав наградăна. Ман шутпа вăл, Михаил Сергеевич, хăйĕн пурнăç кассине ăнтарсах хывнă, анлă паккус хăварать хăй хыççăн. Партие те, совет халăхне те пĕрле çав хастарлăхпах ертсе пырать пуль тетĕп...

– Ах, Илле ачи эсир, Илле пророк пекех ăслă-çке, эпир те, халăх пĕрчисем, çул пуçсен çулĕпех пыратпăр пать-ха. Эпир Ленин партийĕнчен хăтăлса йăнăш утăм

туман. Пире ял çыннине çывăх, халăх кăмăлне уçса хавхалантарма пĕлекен çĕнĕ çул пуç тахçантанпах кирлĕччĕ. Вăл пирĕншĕн çĕр çине анчĕ – Турă панă Михала патша. Çавăнпа эпир çĕнĕ парти туса хутăмăр. Вăл «Чăваш хресченĕсен Михаил Горбачев ячĕпе хисепленекен революцилле коммуни» ятлă. Пуху протоколне Мускава ирхи пуйăспа ăсатрăм. Шанатпăр, демократи – халăх влаçĕ вăй илме пуçланăскер, чăваш кăмунин те вăранса çĕнĕрен аталанмалла. çĕнетмелле халăх пуçĕнче тăракан авангарда. Атту ытла асса кайрĕç коммунист ячĕпе витĕнсе. Ытла пĕве тулли явăнакан йыт пулли кĕтĕвĕ пек хунаса кайнă партийĕ. Эпир хамăр ялсенчи çĕр аллă килтех вун улттăнччĕ, халĕ пĕри çеç юлчĕ-ха, салтаксăр камантир. Çĕршывĕпе çирĕм миллионран иртрĕ те «эп кам!» текенсен кĕтĕвĕ... Ăçта кайма хунаттарса яратăр! Суймасăрах калатăп, ан кӳренĕр те, коммунистсен ячĕ-сумĕ çуккă халь халăхра. Сирĕн те, пуçлăхсен, çавнашкалах, хăвăр пĕлместĕр пуль кăна. Çĕрсе çитнĕ хăмпийĕ пушанса пырать вĕт сирĕн...

Чăтăмлă итлекен Семен Ильич хăлтăр куллипе аслати кăларчĕ, харсăр Кукша Куçки умне хăвăрт çывхарчĕ, чăмăртанă чышкине сăмса умне илсе пычĕ те:

– Çак мĕн тути каланине пĕлетĕн-и эс, сысна?! Çиччас милицине тыттарса яратăп, Шупашкара хăрушсăрлăх комитетне шăнкăравлатăп каскăнла, политикăлла хирĕçле ĕç тунăшăн, – терĕ хаяррăн.

Плешакова та çара алăпах тӳрех илейместĕн иккен. Вăл чĕрĕп пекех йĕпписене тăратрĕ, куç шуррипе çавăрттарса сывлăшне ăфф! туса кăларса ячĕ те ăшĕнчен, Быстрова алăран тытса хăйĕн ĕç пуканĕ çине тапăлтаттарса кайса лартрĕ.

– Чăн-чăн арçын пулсан, шăлна çыртăр та малалла камантлăр райкомупа. Çĕршывра çĕнетĕве епле майпа аталантарса тарăнлатмалли патриотла юхăм паянхи пек тепре питрен пырса çапиччен генсек мĕн каланине

пуçăрта лайăхрах асра тытăр. Советсемпе хуçалăхсен ĕçĕпе чакаланса лариччен, парти ĕçне вăйлатăр. Хальлĕхе парти сывлăшра çапăнса çӳрекен кĕтӳ вырăнне çеç тăрса юлнă. Çĕнĕ кĕтӳç пушши лекиччен... Хăвăрăн обкома леçсе памалла ан пулса тухтăр партбилетна – чăнлăха сивлесе уççăнлăхпа демократие кăгăбăсен вăйĕпе пусарма хăтланнăшăн. Çитет пуль сирĕн юмах лекцийĕсене итлесе, эпир те пуçсăр мар, малашне пирĕн лекцисене тăнлăр... Çапла эпир, хăвăр каланă пек «ахаль коммунистсем» – Кукша Куçкисем... – кала-калах вăл алăк хыçĕнче курăнми пулчĕ.

Райкома пĕр хутаç КПСС членĕсен партбилечĕсене йăтса килнĕшĕн Быстров «Çиçĕм» колхозри Плешаков коммуниста ла-айăх тăн кĕртесшĕнччĕ те çав, анчах ăна итленĕ май унăн чĕлхи çĕтме пуçларĕ, çурăмĕ çине сивĕ тар тапса тухрĕ. Партие шалтан аркатма тытăнни политика преступленийĕ туни пулать вĕт-ха. Кун пирки прокурорпа калаçса пăхма шутларĕ, çапах та унччен ку ыйтупа унăн райсовет ĕçтăвкомĕн пуçлăхĕпе Большаковпа тĕл пулмалла. Ун патне «район генсекĕ» çуранах кайрĕ.

– Парти пурнăçне те, çĕршыв аталанăвĕн тапхăрĕсене те эпир иксĕмĕр шутсăр лайăх пĕлетпĕр, – терĕ Альберт Григорьевич ăна лăплантарса. – Ку вăл ачалла хăтланни кăна-ха. Çĕнетӳ шăв-шавĕ мана темшĕн çывхарса килекен хăрушă тайфун пек туйăнать. Çав тайфун килсе çапсан партие те, парти лидерне те çапса хуçма, шăлса ывăтма пултарать.

– Ман та апла пурнăç тинĕсĕнче ишме çĕнĕ кимĕ хатĕрлес, – ахăлтатсах кулса ячĕ Быстров. – Унччен мĕнле чăтас-ши? Шупашкарĕ те хытă пусать, Кукша Куçкисем те ыраттармаллах йĕплеççĕ.

– Халăх вăранчĕ ыйхăран, юлташăм. Ах, хытă сывлать вăл, сывлăшĕпе вăйлă хум кăларать. Хальлĕхе çав хум пуçĕнчех тăмалла-ха пирĕн. Чăтмалла. Итле-ха, райком пленумĕ пирки калаçасшăнччĕ эпĕ, анчах вăхăт тупăнмарĕ.

Быстров ку каласушăн хавасах пулчĕ.

– Доклад хатĕр-и? – секретарь куçĕнчен чăрр пăхрĕ ĕçтăвком председателĕ.

– Паян-ыран вĕçленет, пайсем мĕн хушнине турĕç пулас.

– Ман вара çапла тăвас шухăш пур, Семен Ильич. – Хатĕр доклада райком бюровĕнче пăхса тухса çирĕплетер те, пуçламăш парторганизацисене ярса парар пĕрер копи. Вулаччăр, канашлаччăр хăйсем пĕлнĕ пек. Эсĕ пленумра доклад тумастăн, доклад хыççăн тухса каласма та унченхилле çын хатĕрлеместĕн, вăл мĕн калама хатĕрленнине пай пуçлăхĕсене тĕпчеттерместĕн, камăн мĕнле шухăш-кăмăл пур, айта яра паччĕр. Эсĕ итлекенни, ну, вĕçĕнче пĕтĕмлетсе калаканни кăна пулатăн. Эпĕ хам çапла тукаласа пăхнăччĕ те... Мĕнле, килĕшӳллĕ пек-и, Семен Ильич?

Быстров ун пирки хăй те шухăшласа çӳретчĕ-ха, тахçанах туса пăхмаллаччĕ çапла. Халĕ вăл мар, Большаков пуçару турĕ, райком ĕçне çĕнĕлле йĕркелемелли хаклă сĕнӳ пачĕ. Хĕреле-хĕрелех алă тытрĕ вара райком секретарĕ ăшă куç куллипе председателĕн кăмăлне уçса.

8

Чарăнмасăр шаккакан тĕнче сехечĕн сасси Вăрманкас ен çыннисене те хăй вăхăчĕпе ыйхăран вăратрĕ. Кашни ял-поселок халăхĕ хăйĕн тĕминче кăткă пек йăшăлтатма пуçларĕ. «Шурăмпуç çăлтăрĕ» те пĕрлешӳллĕ ушкăнпа кĕр ĕçне тытăнчĕ. Çĕр хĕвел тавра çаврăннă хушăри черетлĕ тапхăрта хресченĕн кун çутипе туллин усă курса юлмалла-çке. Хĕвелĕ кунне хĕстерсе пырать.

Пурте хăйĕн ĕçĕ-ĕмĕчĕпе унталла-кунталла васкать. Колхоз пуçлăхĕ Тельман Федотович Волков та правление çитрĕ, камăн мĕн-мĕн тумалли çинчен радиопа

наряд пачĕ. Çав хушăра партком секретарĕ Максим Максимович Крутов пӳлĕме кĕчĕ. Сывлăх суннă-сунман вĕсем паянхи лару-тăрупа пĕр-пĕрне паллаштарчĕç. Волковăн Шупашкара каймалла иккен. Ял хуçалăх институчĕн ученăйĕсен канашĕ пулмалла. Вăл иккĕмĕш çул ĕнтĕ çав канашра тăрать. Ял ĕçĕпе вĕрентӳ çыхăнăвĕ çĕнетӳ тапхăрĕнче мĕнле улшăнса пымалли тĕллевсем çинчен вăл каласа панине итлеççĕ. Ларăва республикăри чылай пуçлăх, специалист хутшăнать.

– Райком пленумĕнче те каламалли пухăнса çитнĕччĕ те, – васкаса хатĕрленме пуçларĕ председатель. – Юрĕ ĕнтĕ, хамăн шухăшăма Шупашкарта анлăрах уçса парăп. Эсĕ, Максим Максимович, вăтанса ан тăр Быстров умĕнче. Темскер, ытлашши улшăннă пек туйăнмасть парти ĕçĕ. Самаях тарăна кайнă сирĕн чир. Капитальнă операци тумалла. Юрĕ, пусахламăп, эсĕ ман шухăша хăваннипе пăтратса йӳçĕт те, шампань эрех кĕленчи пăкки пек шаплаттар райком маччине. Пĕтĕм çĕршыв кисреннĕ чухне вĕсем те вăранччĕр ĕлĕкхи бюрократи ыйхинчен.

– Хам та тахçантанпах пуçа çĕмĕретĕп-ха кун пирки, – терĕ Крутов. – Юлташ тесе Семен Ильича куçран пăхса тăмалла мар пуль, чуна уçсах каласас.

Крутов никама та уяса тăмарĕ вара, çивĕч чĕлхипе пурне те шăлчĕ пленумра:

– Пирĕн колхозăн та, районăн та хальлĕхе мухтанмаллиех çук-ха. Пире те ытлашши чаплантараççĕ. Тыр-пул, аш-какай, сĕт пĕлтĕрхинчен сахалтарах туса илнĕшĕн-ши? Тĕш тырă, пахча çимĕç, хăмла, çăм патшалăха сутассипе пилĕк çуллăх заданийĕсене пурнăçламаншăн панă-ши района республикăри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава? Парти обкомĕпе Министрсен канашĕн награди вĕт вăл! Акă епле пăхатпăр эпир хамăрăн ĕç çине: формалист куçĕпе – кивĕлле. Район пире панă ялав та, республика района панă ялав та ячĕшĕн мухтани вырăнне кăна. Парти обкомĕпе райкомĕ те хальлĕхе ывăннă лаша пуçа чиксе утнă пек сулланса

пыраччĕ-ха. Уччăнлăх саманинче уччăнах калама тивет парти ĕçлевçисен суккăрлăхĕ пирки. Хŭрере пыракан хуçалăхсемшĕн кам айăплă? Чи малтан – райком. КПСС çĕршыва ертсе пыракан вăй пулсан, Быстров юлташăн мĕншĕн хăйĕн аппаратне çĕнĕлле ĕçлеттерсе ямалла мар-ха? Хуçалăх расчечĕ, коллективлă подряд, чек йĕркипе ĕçлесси, продукци хăй хаклăхне чакарасси, перекетлĕх пирки мĕн чухлĕ павратпăр, пурпĕрех вĕсене пур хуçалăхра та пурнăçа кĕртмен. Кам хурав тытать куншăн? Паллах, райком. Çав вăхăтрах – район канашĕн ĕçтăвкомĕ те. Ячĕ мана мар, чи малтан обкомран пĕрремĕш секретаре тивет тесе Быстров çурăмĕ хыçĕнче пытанса лармалла мар пуль райком бюровĕн членĕн Большаков юлташăн та. Халĕ пурне те ирĕклĕн ĕçлемешкĕн çул уçса панă чухне Советсен уйрăмах çуркуннехи сĕткенпе яшланмалла. Çапла пуль, юлташсем?

Алă çупни илтĕнми пулсанах трибуна умне Вьюнов сиксе тухрĕ. Районти агропромышленность пĕрлешĕвне ертсе пыраканскер, вăл хăйсене тивнĕ ята йăлтах хуçалăх пуçлăхĕсемпе парторганизаци секретарĕсем пуçаруллă пулманни çине йăвантарчĕ.

Пурне те чăтăмлăн итлесе ларнă обком секретарĕ Павлов никама та ятламасăр, кŭрентермесĕр калаçрĕ, çапах та вĕçнелле вăрăм пушшине кĕтŭç пек тăсса ячĕ те, хăйĕн кĕтĕвĕнчи курăмлисенчен пĕрне, Быстрова айлатмаллах тивертсе илчĕ: район комитечĕ кадрсемпе начартарах ĕçленĕшĕн, хăйĕн йышăнăвĕсене вĕçне çитерейменшĕн, хуравлă коммунистсене, парторгсене, райком членĕсене çĕнетŭ чуппине хăвăртлатма васкатайманшăн...

Семен Ильич çамки çине пăчăртанса тухакан тар пĕрчисене тутăрпа шăлса типĕтме ĕлкĕреймест, ŭте çĕçĕпе чикнĕ пек йĕплекен ыйтусем çине хуравласа çитереймест. Вăл Крутов çине ытларах тарăхрĕ, «маншăн эс малашне юлташ мар» тесе те вĕлтлетсе

илчĕ пĕр шухăш ухмахланнă пуç самантĕнче, кĕç ун çинчен манса кайрĕ, пĕрремĕш секретарь каланине тăнларĕ: Иван Павлович ăна çирĕпрех пулмалла, пуçа хастартарах çĕклемелле, парти ертӳçин тивĕçне манмалла мар тесе ăс парать.

Райком пленумĕ хыççăн Павлов бюро членĕсемпе уйрăммăн канашларĕ, малашнехи ĕçсем пирки уççăн, çирĕппĕн калаçса, кăмăллăн алă тытса уйрăлчĕ.

Хăнана ăсатса янă хыççăн район пуçлăхĕсем поселок паркне кĕчĕç, кĕрхи çулçă кавирĕ тăрăх васкамасăр утрĕç. Таврари шăплăха Большаков хускатрĕ:

– Паянхи кун пирĕншĕн, Семен Ильич, паллă кун пулма кирлĕ.

– Ăнлантăм, Альберт Григорьевич, – шлепкине куç патнерех пусарса лартрĕ Быстров. – Пленум хыççăн райкомăн ĕçе тĕпрен улăштармалла, ĕç йĕркин меслечĕсене çĕнетмелле, критикăпа самокритикăна вăйлатмалла, уççăнлăха уяр çанталăк пек уçăлтарса ямалла тата...

– Çак куна паллă тумалла. Кĕрсе тухар-ха ман пата, Семен Ильич, – тесе Большаков ĕçтешне райĕçтăвком çурчĕ еннелле çавăрчĕ.

Райком пленумĕ вĕсене паян КПССăн çĕнĕ генсекĕ чĕртнĕ вутта ялкăштармалли çĕнĕ вăй пачĕ. Сĕтел хушшинче вăй илмесĕр вĕсем ăшри вутта вăйлатаймаççех.

9

Салакайăк Карачăмĕпе Хурăн Крахьянĕ авалхи икĕ хутлă кĕлете уйăх çуттинче ташлаттарма пуçланăранпа тăхăр уйăх çитсен Вăрманкас районне тепĕр суха пуç тытакан хутшăнчĕ.

– Караçкă, – тухман куççульне ал тупанĕпе сăтăрса илчĕ çамрăк арăм çуратмалли çуртран таврăнсан. – Ма тĕл килмерĕ-ши ман тĕлĕк, кала-ха?

– Мĕнле тĕлĕк пирки çĕтен эс, Крахьян-чунăм? – мăшлатса чĕчĕ ĕмекен ачи çине хĕпĕртӳллĕн пăхса илчĕ ашшĕ.

– Ват пуçран хĕрех пулать пуль тенĕччĕ, тĕлĕкре пĕрмай пӳрт умĕнчи хурăн тавра чупаттăмăр, ташлаттăмăр тутăр çыхнă пуканемĕмпе... Вилеп кулянса... Шутласан, ку шăхличшĕн те савăнатăп, упăшкам арçын хурминчех-ха тетĕп сан çине тинкернĕ май. Çапах мана хĕр пĕрчиех кирлĕччĕ.

Упăшки иккĕшне те ачашлать:

– Аннӳне тав туса, пăхаттир пулса, кăшла-ха чĕчĕ пуçĕнчен. Турра шĕкĕр мана ывăл пӳрнĕшĕн, Салтаккай ăраттине малалла тăсса пынăшăн. Ан хуйхăр сывă ачашăн. Патшалăха яланах салтак çитмест. Ава хамăрăн Павăл ачи те таçти мурти Ахканри тусем хушшинче пуçне çирĕ тушмансемпе-тăшмансемпе çапăçса. Ленька патшан вăйă вăрçи вунă çул хушшинче шутсăр нумай çынна çăтнă терĕ хăйматлăх, хамăр Чăвашранах – ик çĕр салтак тет. Çут тĕнчерен çухални вырăнне çĕнни çуралчĕ акă пирĕн. Салтаксăр çĕршыв та тытăнса тăраймасть. Тавралла тапăнакан тăшмансенчен кам сыхлать? Ильич çул пуç каланă пек, «патшалăха тытса тăракан кухаркăна» ăна наччасрах майлаштарса хуратпăр. Никĕсне пӳртрех хывар пуль, туй хыççăнхи ампар пире ывăл урăх ан патăр тесех...

– Сан ялан ихĕресси, ват супнăн, лĕпĕртетсе тăриччен пулăш мана, хурана шыв тултар та вучахха çакса яр. Ача япалисем çумалла.

Павăл Фомичăн паттăр ывăлне асăнса Виктор ятне хучĕç Салакайăксем ачине.

Тепĕр кунне Карачăм Ваççа мăнукĕпе Вăрманкаса çакланса çитрĕ.

– Ухутсуюс тĕлĕнче антарса хăвар-ха эс мана, – терĕ вăл поселока кĕрсен. – Каялла мĕнле те пулин айланкаласа çитĕп.

Унăн пăшал пулккисем пĕтнĕччĕ. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче утара упа çитсе çапăннăччĕ. Кам вăратнă ăна

тутлă ыйхăран иртерех? Чăрсăрскерне хăратмалла персе пĕтĕм запасне пĕтерчĕ ун чухне. Вĕлерме юрамасть. Шутри, хаклă тискер кайăк. Икĕ вĕллене тӳнтерсе хăварчех мушальник. Кунта тата телей пулмарĕ, хатĕр патронсем пĕтнĕ те, пулккисемпе тарне уйрăммăн туянмалла пулчĕ. Пурне те вăл хутаça тултарчĕ.

Вăрманкасра чылай хушă пулманскерĕн унта-кунта çитсе курас кăмăлĕ çĕпрепе йӳçĕтнĕ кăвас пекех тулса хăпарса кайнă. Чукун çул хĕрринчи сукмакпа вăл вăтам шкул патнелле çывхарчĕ. Çывăхри ватă юман çинчи хура çăхан ун çине пуçне пĕксе пăхать. Ку юмана вăл хăçантанпа астăвать ĕнтĕ. Муркай кăмуниста район патшине лартнăранпа унăн тăрри хăрма пуçланăччĕ. Çапах кашни çул йăвара çăхан чĕпĕ кăларатчĕ. Çăхан та вăл – хăй таврашĕнчи патша. Ытти çăхансене çывăха ямасть. Хăй ĕмĕрĕнче сахал курнă-и Салакайăк Карачăмĕ вĕсене? Çăткăн, чее, усал кайăк. Вăрманти кайăксене кăна мар, мулкача та, çамрăк путеке те çурса тăкма пултарать. Уссийĕ те пур-ха унăн: шăши нумай тытать, вилĕ чĕр чуна пуçтарать. Шăрша пит сисет. Куçĕ те... епле сăнать авă иртен-çӳрене? Турă усалтан сиртĕрех тесе-ши, вăл нихçан та пăшалпа пемен çăхана. Ку – аçи ĕнтĕ, ами çăмарта туса пĕтернĕ те пусма ларнă пулас. Аçи – сыхă хуралçă.

Шкулпа хирĕçех – райком. Тӳпери ăмăрт кайăк йĕрĕ хыçĕнчен шурă пир тăсăлса юлнине сăнаса пынă май, мучи икĕ хутлă чул çурт тăрринчи хура кайăка асăрхарĕ. Ара, çăхан вĕт ку? Çӳллĕ радио мачти çинче чиперех ларать. Çывхаракан çын çине пăхса кранк! турĕ. Салакайăк Карачăмĕ хăй тахçан райком çуртне хăрăк юман тăрринчи çăхан йăви тесе шӳтленине аса илчĕ те, карттусне хывса ăслă кайăка саламларĕ: «Шутсăр ăслă çынсен çурчĕ тăрнех йăва çавăрасшăн-ха эсĕ те, тен, çăхан кайăк кăмунин пуçлăхĕ эс, мур илесшĕ, тен, мана, йӳтенĕ ку тесе, леш тĕнченелле çул кăтартасшăн, тен, Мускаври Курпун сысна кăмуни пăчланасса кĕтсе халăха пĕлтерсе ларан?.. Эй, кай санпала, хăрушă

кайăкпа, ытла пуçна çĕрелле ăмсанса пăхан, мана анчах мар, тата темскер шыран унта, тен, йĕке хŭре куртăн, э-э-э, чăнах та пĕр вăр-вар арçын, хул хушшине хĕрлĕ папка хĕстернĕскер, кутран хулăпа хŭтернĕ пек вĕтеленсе кĕрсе кайрĕ мăн алăкран. Э-хе-хэ, Тымарти Васка Иллин ачи пулчĕ-çке ку? Çавă ăшă йăвине васкать-çке? Çĕрле хăйĕн патшанни пек мăн пуканне такам йышăнма пултарасран сехĕрленсе ŭкнĕ пек». Çăхан çаплах аялалла пăхать, таврана сăнать...

Салакайăк Карачăмĕ те вăл пăхнă тĕлеллех пăхать. Паттюшки! Мĕнле тŭрех асăрхаман-ха? Вăл шутлакан хăрăк юман тăрринчи çăхан йăвин сылтăм кĕтесĕ катăлнăçке ара. Никĕсĕ путать тем. Вăл хутаçне çĕр çине хурса шăтăкалла пуçне чикнĕччĕ кăна, хыçран такам ярса илнипе йăнках тŭрленсе тăчĕ. Куçне шăлса пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ. Хăй тахçан сысна ферминчи кăмакара çунтарса янă çул пуç атте сăнлĕ, хура мăйăхлă, хурмăллă хĕрлĕ пакун ун сумкине шăршласа тăра парать çумра.

– Лекрĕн халь тинех, старик пулса çŭрекенскер, – тесе вăл мучин сухалĕнчен хытах туртрĕ. – Экстра çилĕмпех çыпăçтартăн-им? Уйрăлмасть. Çиччас тăпăлтаратпăр. Теракт тăвасшăн, райком çуртне сирпĕтесшĕн, да?!

Милиции çитсен вăл начальникĕ умĕнче мухтанмасăр чăтаймарĕ:

– Тытрăм преступника, подполковник юлташ. Тем тесен те Ленин мăйĕнчен кĕлмĕç хутаççи çакса яраканĕ те çаках. Пĕр алăпа тунă ĕç.

Начальник ерçмест те, аллипе çеç сулчĕ:

– Допроса! Ху пултарнă таран чĕкĕрсе ямалла хăрат та ăна, айăпне йышăнсан террорист, кĕçех Баранов капитан пулса тăратăн.

Хĕпĕртесе ŭкнĕ Баранов аслă лейтенант террорла ĕç тума хатĕрленнĕ вăхăтра вещдокпа (вещественнăй доказательствă) ярса илнĕ паллă мар çынна тĕпчеме пуçларĕ. Милици офицерĕ хăйĕнчен уне-куне ыйтса пĕлнĕ вăхăтра Салакайăк Карачăмĕ аса илсех кайрĕ пĕр телефон номерне, вара вăл хăйне пусахлакана евит турĕ:

– Хисеплĕ ухвицер, манран эсир вĕлерсен те пурпĕрех нимĕн те пĕлеймĕр. Эп вилĕмрен те хăрамас, ман хуçа пур, унран ытла пĕлекенни те Вăрманкасра урăх çук.

Террорла ĕç тăвакансен йăвине аркатма тинех çул уçăлнине туйса илнĕ Баранов мучи панă номерпе васкавлăн шăнкăравларĕ Лерен влаçлă хулăн сасă вĕçсе килчĕ, вăл Карачăм хăлхине те кĕчĕ:

– Большаков итлет. Кам, мĕнле ыйтупаччĕ?

Райĕçтăвком хуçин сассипе анраса ўкнĕ аслă лейтенант чĕтревлĕн калаçрĕ:

– Каçарăр, Альберт Григорьевич, телефон йăнăшрĕ пулас, ялан çапла ку техника тени. Сирĕн номер... Эпир хайхи, Ленин палăкĕнчен мăшкăлланă террориста арестлерĕмĕр. Ăçта, тетĕр-и? Райком умĕнче. Райком çуртне сирпĕтме хатĕрленнĕ вăхăтра. Боеприпасĕ те пур. Ăçтискер, кам тетĕр-и? Хамăр патранах, Хурăнвартан тет. Воробьев Герасим Филиппович.

Леш пуçĕнче телефон аврине хучĕç пулмалла. Çав самантпа усă курса аслă лейтенант хăй умĕнче ларакана ыйту çине ыйту пачĕ:

– Сухална кăкличчен тĕрĕссине кала, кам сирĕн чи асли? Кам хушнă сана террорла ĕç тума? Теракт тунăшăн мĕн пулассине пĕлетĕн-и, ват супнă?

– Эп сирĕн тер-ур-акт мĕнне те пĕлмесп, хам умра тăр-ух-мах ларнине çеç курап. Асли камне ăнлантăн пуль?

– Кам?!

– Мăн Альпă.

– Аха, Мăн Альпа ятпа витĕнсе çўрет-ха апла сирĕн аслă хуçи. Ăçта вăл?

– Район каланчи çинче.

– Так, так, каланча... Пушар деповĕнче апла. Альпов майор-и? Каланча пек чăсмакскер-и?

– Так тучнă.

– Аха, пушарниксен начальникĕ. Ахальтен ун-кун пăхкаласа çўремест иккен вăл. Хамăр йăваранах иккен...

Çав хушăра алăкран кĕрсе тăнă Степанов подполковник ăна хăтăрса тăкрĕ:

– Çапла, хамăр йăвари пиçмен йăвах эс, Баранов тăм пуç, аçу пекех. Хăвăрт ăсатса янă пултăр Воробьев гражданина райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ патне! Сирĕнтен эпир, хамăр тĕрĕс мар хăтланнăшăн, каçару ыйтатпăр. Сывлăхлă пулăр, Герасим Филиппович.

– Пыл çиме пырăр пирĕн вăрмана. Пыл хурчĕпе сăхтарса сиплемешкĕн ку пуевуй-нулевуй ухвицерне те илсе пыма ан манăр. Чĕр куçпах сыхлăр халăх канăçне, – тесе пукан çинчи йывăр сумкине хул пуççи урлă ячĕ читлĕхрен хăтăлнă Салакайăк Карачăмĕ.

Хĕвел ури ирпе чӳречерен Крахьян пичĕ çине мар, хăй çине ӳкнине аса илсе вăл кĕлеткине çарти строй йĕркине тăратрĕ, кăххăм-кăх! туса илчĕ те салтак пек утса тухрĕ ментсен çуртĕнчен, алăкне уçса хунă машинăна чинлăн кĕрсе ларчĕ, «Пуехали», – терĕ.

«Ха, епле пысăк çын эп паян ешелĕ район каланчин тăрринче ларакан Мăн Альпă хăйĕн йыттине мана илме кăларса янă пулсан, ха, милицинчи пек пĕр вĕрмесĕр хуçин алăкĕнчен йăпшăрт кăна кĕртсе ячĕ мана шукăль арçын. Çынах иккен эп, темле терурлахманĕ мар», – текенлĕ шухăшĕпе çĕтсе илчĕ вăл пĕр хушă.

Мыскаран сăлтавне пĕлсе пынă май Альберт Григорьевич çăвар туллин кулса ячĕ те ватă çынна çăмăллăн ытамларĕ:

– Мана эсир паян, Герасим Филиппович, калама çук вăйлă кун сунса хавхалантартăр. Ёнер Шупашкарта мунча кĕрсе килнĕ хыççăн халĕ те тасалмасть çумран усал сĕрĕм. Атя-ха иксĕмĕр малтан чĕртер манăн пĕчĕк мухмăра, ун хыççăн – чунтан калаçар, – тесе вăл икĕ хутлă сейфĕнчен майрасемпе капăрлатнă тăваткал кĕленче, икĕ черкке, тĕтĕмленĕ чăх кăларса сĕтел çине хăвăрт майлаштарчĕ.

Питĕ тутлă заморски эрех Карачăмăн пуçне тӳрех кайрĕ. Большаковăн та пуçĕ этемĕннех те, коньяк тени ăна те çемçетсе ячĕ.

– Те ман ăс ытлашши, те такамсен çитмест ăс тени, вăт тем пăтранать ват пуçра, пĕрмай мана пурнăç пăрнăçĕ çакăнтан пăркăчпа çапать, – кăкăрне аллисемпе сăтăрса илчĕ Воробьев. – Хăйматлăх, Числов Петĕрĕ, тип турат пăрахса пырать тата манăн çунакан шухăш вучахне. Пĕркун, шахмăтла выляна чухне, тăрăшсах вĕрентет çав: «Корольна сыхă тыт, атту мат парап». Ман та парăнас килмест вĕт, мать-касси. Çамка тирне тарăнрах хĕстертĕм, хăйĕн корольне хуптĕрлесе лартрăм.

– Ара, вăйăин çавнашкал йĕрке-çке. Çапăçура, вăрçăра ялан короле, патшана хŭтĕлесе хăвармалла пулнă, унсăрăн вăрça та выляса янă, çавăнпа ăна пит хытă сыхланă – ертсе пыракана, – терĕ пŭлĕм хуçи черккене çĕнĕрен тултарнă май.

Хаяр кучченеçе сухаллă çăвара силленĕ хыççăн мучи уф-уфлатса чăх тукмаккине тутлăхлăн якатса пычĕ, «тавтапуç» тесех пуçне пăркаласа калаçрĕ:

– Çаплах пуль çав, Тымарти Васка Иллин ачине Çемене те ухвицерĕсем хытă сыхлаççĕ вара. Çурчĕ тăрринче – çăхан хураллать, çурчĕ умĕнче – Ула тимĕр, пŭрт кĕтессинче – мильтун. Вăт мĕнле хŭтлĕхре вăл – район королĕ. Каккуй мат пама, çывăха пыраймастăн, çиччас çухаран çулса илеççĕ. Аптрашка мар-и...

Ирех ниçта та васкас çукчĕ те, Большаков хăйне ирĕке ярсах хавасланса ларчĕ Хурăнвар çыннипе. Лешĕ, хĕрелнĕ питне шăла-шăла халапне шăлать:

– Вăйă та пурте тĕрĕс мар пек туйăнать мана, хисеплĕ Альпă. Çак хамăр вылякан кăмунă вăйăи те вăл шахмат вăйăи майлах. Çĕнĕ вăйă мар. Эпĕ ĕнтĕ – ĕмĕр çынни. Пурнăç вăйăине куçпа курса, чун-чĕрепе туйса пытăм. Пĕрмай патшапа тарçă вăйăинче. Патши те парăнасшăн мар, халăхĕ те. Эпĕ вун çиччĕре чухне, астăватăп, Мĕтри пиччесем Питĕрте патшана трун текен çемçе пукан çинчен сирпĕтнĕ çĕре хутшăннă. Сыхласа хăварайман хаяр хуралçисем те виççĕр çул халăх юнне ĕçсе пурăннă Романовсен йăхĕн несĕлне. Çапла пуль?

– Тӗрӗсех, Иккӗмӗш Николай патшаран влаça туртса илнӗ.

– Ун хыççăн влаçшăн мӗнле хаяр хирӗç тăру, кӗрешӳ пулнă? Пирӗн Мӗтри унта та Ленина хӳтӗленӗ, халăхпа, пӗр вăйпа. Ах вăл влаç, влаç, Ильичне те пӗтерчӗç, кăмунă керменне купаласа лартма памарӗç пулас, шеремете. Нумай ватнă эп хамăн ухмах пуçăма ун пирки. Влаçшăн çунниех пуçне çинӗ ӗнтӗ унăнне те. Эх, мӗн çитмен ăна, тӳре çыннине, пирнешкелсене саккунпа хӳтӗлес, пурăнас хырăма шăлса. На сана, тӗнче прулетарийӗн пуçӗ пулмалла. Амăшӗ енчен юхакан юн хистенӗ пуль çав. Кукамăшсем турă çыннисем пулнă ун тетчӗ Числов Петӗрӗ. Турă çыннисем вӗсем хăйсем турă пуласшăн иккен. Ашшӗне хывманах вăл Улатимӗр. Эп Колчак аслă патшана пурнăç вăййин хăми çинче матлаттарса кӗтессе хӗстернӗ чухне пирӗн Чапай кăвалеринче Чулхула вырăсӗ пурччӗ. Çав калани аса килчӗ. «Ленин ман чăн-чăн тăван пулать», – тесе мухтаннăччӗ çав йӗтӗн сӳс пек çӳçлӗ ача. Те юмах, те...

Альберт Григорьевич сылтăм куç тăррине хыçса пуç кунтăкӗнчен ылтăн арпа пӗрчисем кăларчӗ:

– Пулма та пултарать аслă-аслă аслашшӗсен енӗпе. Эпӗ пӗлнӗ тăрăх та çаплах пулма кирлӗ. Ленин аслашшӗн аслашшӗ Никита Григорьевич Ульянин Чулхула наместничествинчи, Сергач округӗнчи, Андросово ялӗнчи Мякинина помещицăн крепостла хресченӗ пулнă, 1711-1779 çулсенче пурăннă. Ульянинсен çемйинче Василий çуралнă. Унăн виçӗ ывăл пулнă: Самойло, Порфирий тата Николай. Ленин аслашшӗ Николай Васильевич пусмăрла пурнăçа чăтаймасăр Açтăрхана çитнӗ. Унта вăл патшалăх хресченӗ пулса тăнă, ирӗклӗх илнӗ, ремесленниксен цехӗнче ӗçлеме пуçланă, çапла вара мещенсен шутне кӗнӗ. Açтăрхан мещенӗн Алексей Смирнов вырăсăн хӗрӗпе Аннăпа çемье чăмăртанă. Вӗсен икӗ ывăл, икӗ хӗр çуралнă, кӗçӗн ывăлӗ – Илле. Хушамачӗ Ульянинран Ульянинова, унтан Ульянова çитнӗ. Кил хуçисӗр тăрса

юлнă Ульяновсен çемйинче çăмăл пулман. Сахал мар нуша курнă вĕсем. Ашшĕсĕр ўснĕ Илья Николаевич çамрăклах йывăрлăхсем тĕл пулнă, вĕсене çĕнтерме хăнăхнă. Çине тăнипе вăл Хусан университетне пĕтерет, ун хыççăн математикăна, физика предмечĕсене вĕрентет.

1863 çулта Ульяновсем аслашшĕ çуралса ўснĕ çĕр çине, Чулхулана çитеççĕ. Илья Николаевичăн арăмĕ Мария Александровна Бланк, турă çыннисен ангелĕ. 1869 çулта Илья Николаевича Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторне лартнă. Çакăн хыççăнах Ульяновсен çемйи пăрахутпа çĕнĕ вырăна тухса кайнă. Тепĕр темиçе уйăхран вĕсен Владимир çуралнă...

– Апла-çке, – терĕ пит чăтăмлăн итлесе ларакан Салакайăк Карачăмĕ. – Ĕçне кăшт каярахпа тупса панă пулсанах Иллине, ывăлĕ Чĕмпĕре мар, Чулхулана тĕнче картине кĕртсе хăваратчĕ. Юрĕ-ха, пирĕншĕн, хура халăхшăн, çавах. Н-та, патшара нумаях лараймарĕ тулĕк, хăвăртах мат пачĕç ăна та. Хура мăйăхлă круçинĕн те Кавкас тăвĕ тăрринче «Ăçта-ши ман Сулику» тесе ĕнĕрлесе ларас килмен пуль çав, куруле кĕрсе кайрĕ. Шахмăтри никам çĕнтерейми тĕнче чемпиунĕ пекех ларчĕ, турă çынни пулман пулсан та – турăран та турă пекех. Мĕн виличченех. Курск шăпчăкĕ те йăва çавăрса курчĕ Кремĕль тăррине. Ăна та мат пачĕ Ленька каманти. Манашкал йўтĕксем черетленсех çапăçрĕç влаçшăн. Ку хайхи пирĕн сакасникри пек Курпушка хăçанччен тытăнса тăрĕ-ши? Тем, ытлашши çăмăлттай пек курăнать. Мухтанчăк мул пухайман тет. Амерĕк ратиуне вăрттăн итлекен ман хăйматлăх ун пирки те, хамăр патшалăх пирки те ырă мар, кулянмалли хыпар кăна чикет хăлхама. Тымарти Васка Çимунне те влаç кирлĕ пулнă. Вăт çавăнта, ун вырăнне кĕрсе ларнă пулсанччĕ эсир, Альпă юлташ, тен çăхан та райкум çуртне хураллама кĕрĕшейместчĕ пуль, э? Мĕнлерех пек... Влаç чирĕ ĕнтĕ вăл сирĕн хăвăрăн та пур-ха та... Эсир

те вĕт акрунумра ĕçлесех манни пек сухал ўстерес темен. Влаç картлашкинчен çакланса çўлелле улăхнă. Тĕрĕсех калатăп-и эп?

Большаков кулмасăр чăтаймарĕ, вăлтса-шахвăртса ларакан аксакала, тăма пуçланăскерне, пусарсах лартрĕ:

– Шухăшу сирĕн пит ăслă, сăмахху шутсăр йĕплĕ, халăх шухăш-туйăмлĕ. Тĕрĕсех, ман та хама майлă, пуçлăхах пулас килетчĕ çав. Мĕн тăвăн ĕнтĕ этем чунне. Унăн, этемĕн, ялан малта, ялан çўлте чапланас йăла ĕмĕчĕ йăшăлтатать ăшĕнче. Вăл та, ĕнтĕ эпĕ те, ăна-кăна ăнланса çитмесĕрех ăшри туйăма шухăшлав, тĕллев туса хуратпăр, хамăр камне пăхмасăрах, хамăрăн пултарулăха тараса çинче виçмесĕрех çăмăллăн сикетпĕр тарăн пукан çине, унта йăнăш лекнине туйсан та хамăр ирĕкпе унтан тухса тарма, нушаран хăтăлма шутламастпăр. Кăларса сирпĕтсен çеç...

– Кутран тапса вăркăнтарсан е кăнса выртсан тин, – хушса хучĕ Воробьев старик. – Çак Васка ачи Çимун та çавна кĕтет пулас-ха. Ахальтен ишĕлме тытăнман çăхан йăвин çурчĕ. Çавăнпа сирпĕтесрен хăраççĕ: тавраллах хуралçă аллинче. Тĕлĕк тĕлех килекенччĕ-ха ман. Вăрманкасри хăрăк тăрăллă юмана аça çапрĕ те çĕркаç, вăл тĕпĕнченех ялкăшса çунма пуçларĕ пек. Эй, Турă усалтан сиртĕрех пире, çылăхлă этемсене. Милицире çупкă та, сирĕн патра тутлă апат та çирĕм, чаплă эрехне те ĕçрĕм. Тавтапуçах хăналанăшăн. Чи ирхи таса пыла эп утарта ятарласа сирĕн валлиех тултарса хурап-ха çăка чĕресе. Район каланчи силленмест курăнать-ха. Сывлăхлă пулăр, чипер ĕçлесе пурăнăр.

«Каланча королĕ» Салакайăк Карачăмне хăйĕн хура тĕслĕ çăмăл автомашинипех ялне çитиччен ăсаттарчĕ.

10

Çĕнетў кавалерисчĕ Горбачев çĕршыва çĕнĕ çĕнтерўсем патне хăвăртлату маршĕпе ертсе кайнă

тапхăрта куçа курăнакан-курăнман çухатусем пурнăç çулĕ çинче умлă-хыçлăнах сике-сике тухаççĕ. Кашни çул пуç, кашни патша патшалăх тилхепине ярса илнĕ-илмен хăй умĕн ĕçленĕ аслă пуçлăха тиркешме тытăнать. Совет влаçĕ çĕнтернĕренпех пыракан кĕвĕçŭ çемминчен ку генсек та хăтăлса юлаймарĕ курăнать. Уйрăмах вĕсем ял хуçалăхне сысна апачĕ пăтратнă пек пăтратаççĕ. Реформа çине реформа.

«Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз председателĕ Тельман Федотович Волков ял хуçалăх министерствисене пĕтерсе агропромсем туса хунине пĕртте чунпа кĕтсе илмерĕ, ку тĕлĕшпе пыракан парти политикине ырламарĕ. Ялпа, ял хуçалăхĕпе çыхăннă мĕнпур организацие пĕрлештерсе пĕр комитет туни Никита Хрущевăн камичĕ пекех туйăнать. Вăл, аптранă кăвакал кутăн чăмнă пекле ухмахланса хăтланса, крайсемпе облаçсене икке пайласа тухрĕ. Пирĕн те Чăвашра промышленнăçпа строительствăна, транспорта пĕрисем, ял хуçалăхне теприсем ертсе пыма пуçларĕç. Виçĕ район çĕрне Вăрманкас производство управленине пĕрлештерчĕç. Тŭрех ăнкарса илме май çук арпашура çынсем тăнран кайса унталла-кунталла кускалатчĕç. Пĕтĕм анлă Совет Союзĕпех бюрократи пăтти лĕкĕртетрĕ. Çутă малашлăх керменĕ, сăмах юптарăвĕн çав çулĕсенче, тем тесен те çŭлелле шит та хăпарайман, паллах. Тĕнче ухмаххи мари çакă? Пĕр облаçра – партин икĕ обкомĕ! Пĕлеймесĕр хавшак япаларан калăпланă кирпĕчĕ, купаланă май, йăшса пынă ĕнтĕ. Çав ванчăкран каллех унченхи кирпĕчех çапма пуçларĕç. Коммунистсен партийĕн промышленноçпа ял хуçалăх обкомĕсене, хула комĕсемпе парткомĕсене пĕтерсе, пĕр пĕтĕм влаça 1965 çулта çĕнĕрен тавăрчĕç. Ял районĕсене нумай пĕтернĕ май, хуравлă çĕрти пултарулла ертŭçĕсемпе специалистсене мĕн чухлĕ аяккалла тартса пĕтерчĕç. Çав районсене çĕнĕрен тунă хыççăн вара кадр ыйтăвĕ питех те çивĕчленнĕччĕ. КПСС Тĕп Комитечĕн çав

çулхи ака уйăхĕнчи пленумĕн вăйĕпе тин çĕршыв ял хуçалăхĕ, вăл шутра «Шурăмпуç» колхоз та çĕнĕ кун акине тухрĕ. Çирĕм çула яхăн пĕр алăра тытса пынă парти суха пуçĕ Леонид Брежнев вилнĕ хыççăн «çамрăк комбайнер» аллине куçрĕ.

Ватă лаша касси килĕшменрен пуль ĕнтĕ, çамрăк ăйăр хăй çĕнĕ касă турĕ. Çав касăра шăтса тухнă Апат-çимĕç программи республикăра чăхăмланине парти обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Иван Павлов ĕнерхи пленумра куç кĕретĕнех унта пухăннисене евитлерĕ, Чăваш АССРĕн патшалăх агропромышленность комитетне ертсе пыракансене ятранах вĕри çатма çинче ташлаттарчĕ. Вăрманкас районне пленумра пилĕк хутчен япăххипе асăнчĕç. Çавăнта Волков та, Быстровпа Большаков хушшинче лараканскер, питне самаях хĕретрĕ, хăйшĕн мар, паллах, вĕсемшĕн, район пуçлăхĕсемшĕн.

Çĕнетӳ сăмахпа пĕлĕте çити капланса хăпарать, çав вăхăтрах апат-çимĕç ыйтăвне татса парасси вăраха кайса пырать, халăхăн пурнăç шайĕ лайăхланни курăнмасть. Пленумра пĕрне-пĕри тӳсе кӳпкелесе иленçи турĕç те саланчĕç пысăк-пĕчĕк пуçлăхсем, усал сăмах кирĕкне хупахсенче хаяр шĕвексемпе çуса тасатрĕç, тепĕр пленумччен каллех лăпкă ыйха путсан та юрать. Сăмах купи обком архивне пуянлатать.

Горбачев хăйĕн малашлăх политикине анлă пухура шавласа совет халăхĕн программи вырăнне çирĕплетесшĕн коммунистсене Мускава йыхăрать. 1988 çулхи утă уйăхĕн 28-мĕшĕнче КПССăн Пĕтĕм Союзри XIX конференцийĕ пулмалла. Ĕнер пленум вун тăхăр коммуниста – хуравлă çынна унăн делегачĕ пулма суйларĕ.

Волков та кайса килчĕ вĕсемпе пĕрле тĕп хулана, Михаил Сергеевич Горбачевăн пысăк докладне темиçе сехет итлерĕ, ун хыççăн тухса калаçакансене тăнларĕ, çĕршыври паллакан колхоз председателĕсемпе тĕл

пулчĕ. Аслă трибуна умĕнчи ăслă сăмах купи халăх хаярлăхĕн тăвăл хумĕ айне пулса путассăн туйăнни çинчен никамран хăрамасăрах, уççăн калаçççĕ вĕсем те. 1980 çул тĕлне Хрущев тăвайман коммунизма Горбачев перестройкăпа тăваймасси паллă ĕнтĕ. Тарăн чире кайнă совет обществине революцилле çĕнетӳпе операци туса сыватма пурпĕрех КПСС пултарассăн туйăнмасть. Маларахах сиплеме тытăнмалла пулнă обществăна. Халĕ халăхра, ертсе пыракансем хушшинче, урăхла революцилле вăйсем çуралса пуç çĕклеççĕ. Çак конференцире палăртнисем: çĕнетĕве аталантарасси тата тарăнлатасси, политика йĕркине улăштарасси, КПССăн ертсе пырас ĕçне тата шалти пурнăçне халăха майлăрах тăвасси коммунистсен черетлĕ спектаклĕ пек туйăнса хуплать. Мускавран самолетпа таврăнсан вăл ял хуçалăх институтне тусĕ патне кĕчĕ. Кириллов шăпах лекцирен таврăнать. Унăн пӳлĕмĕнче сăмах-юмах тӳрех Мускаври анлă пуху пирки пуçланчĕ.

– Мĕн чухлĕ йышăну кăларса купаламарĕç пуль ĕнтĕ Кремль кил хушшине, – терĕ Николай Кириллович. – Çапах хура тăпраллă мар тăрăхне те симĕслентереймерĕмĕрха, çутă керменĕнче те çуталса лараймарăмăр. Камăн мĕн ыратать тенĕ пек, манăн агропромышленность комплексĕ валли кадрсем вĕрентсе кăларас ыйту пуçа касать. Çав зонăна кĕнĕ май, пире, чăвашсене, укçа ай мĕн чухлĕ уйăрса пачĕç республика уй-хирне пуянлатмашкăн. Çав вăхăтрах... çак укçапа мелиораци организацийĕ иккĕ туса хучĕç.

– Таджикистанран туртса килнĕ техникăпа тюбетейка тăхăннă «чурккăсем» чăваш çĕрне тĕпне çитиччен акаласа тухрĕç, тарăн çырмасене пĕвелерĕç те... Вăрăм пĕвесем çуркунне татса кайрĕç, миллионсем Атăл тăрăх Каспи тинĕснелле юхрĕç. Пирĕн те. Хамăрăн алпастисен хӳтлĕхĕнче çак йĕксĕксем Мускавран вакунĕпе килсе тулнă укçаран кашни район центрĕнче мелиораторсен урамĕсене уçрĕç, – терĕ тарăхса Волков. – «Шурлăхлă

çĕршыван» хурлăхлă камитне лартрĕç обкомпа совмин тата унăн Агропромĕ. Ун пирки эпĕ Шупашкарта миçе тăшман тупмарăм-ши? Ывăнтăм ĕнтĕ яла илем кĕртессишĕн, ял çыннине чăн-чăн çĕр çыннин, пуян çын ятне илттерессишĕн çапăçса вăтăр çул хушшинче. Çитет пуль çынсене кĕвĕçтерсе те. Мĕн чухлĕ нумай ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ тăшман купалатăн пуç тăрне. Мускав туса çитерейменнине эпир туса çитереес çук.

Кириллов, сĕтел тавра кускаласа çаврăнчĕ те, хыçлă пуканне куçарса, Волков умне ларчĕ, «ах эс ĕнтĕ, «йŭтенĕ председатель» тесе, ăна кăкăрĕнчен тĕртрĕ:

– Йăлтах Мускав çине шансан хамăр та çурхи вăрман чечекĕ пек час шанатпăр ак. Эпир, мĕн, вĕсенчен, мускавсенчен начар-им? Ĕçлетпĕр, çĕмĕрттеретпĕр. Студент ĕçре пурнăç тытăмне ытларах вĕрентĕр тетпĕр-çке. Вĕрентŭпе çĕр ĕçĕ – ял ĕçĕ вĕрен явнă пек явăнтăрччĕ. Кăçал хамăр района анчах мар, ытти çĕре те студентсен механизациленĕ отрячĕсене ятăмăр авă. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче вунă отряд ĕçлет. Районсен çĕр лаптăкĕсене тара илсе хамăр вăйпа тыр-пул, çĕр улми çитĕнтеретпĕр.

– Маттур ĕçлетĕн-ха эс, тусăм. Пирĕн патра уçнă пек наукăпа производство комплексĕ тата миçене çитертĕн-ха?

Кириллов пŭрнисене хуçлатса тухрĕ?

– Тата тăхăр хуçалăхра йĕркелерĕмĕр. Тăхта-ха эс, арăмна валли та вырăн тупăнать. Венера Ивановнана эпĕ зооинженери факультечĕн ял хуçалăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхе тăрантарса ŭстерес енĕн кафедрине ертсе пыма шанасшăн. Çитес уйăхра ученăйсен канашне пухатăп. Çавăнпа ăна, ял хуçалăх наукисен кандидатне, шăпах доцент вырăнне те парăпăр. Эс ăна кала-ха, сысна йăхне çĕнетнĕ пирки доктор диссертацине ним мар хŭтĕлеме пултарать вăл. Хир сыснипе Çĕрпŭ сыснине пĕтĕлентерсе çĕнĕ ăрат ŭстерни пулман-ха пирĕн патра. Раççейре темиçе тĕслĕх пĕлетĕп. Эпĕ, ветеринар пулнă май, хам та тĕлĕнтĕм ун çинчен пĕлсен. Ай маттур-çке сан матку,

Тельман. Тата темскер хăтланатчĕç-ха сирĕн фермăра пирĕн ученăйсем.

Ăна илтнипе Волков сиксе тăчĕ, куллине чараймарĕ:

– Электроматкăпа аппаланаççĕ-ха вĕсем. Шилов доцентпа фермăра çывăрса пурăнманни çеç. Çĕрле те час таврăнаймасть. Çитсе пĕрре тĕрĕслеймерĕм-ха.

– Çапла çав, асту, тусăм, арăмун та чĕчĕ пур, ытти те пур. Шиловсем вĕсем – пăшатансем... Александр Васильевич та чĕчĕ тытма манман пуль-ха, ĕçре юнашар тĕккелешнĕ чухне унта...

Иккĕшĕ пĕрне-пĕри тĕккелешсе ахăрса илчĕç те вĕсем каллех ĕç пирки хĕрсе кайрĕç.

– Наука енĕпе пирĕн ĕç сахал мар. Раççей Федерацийĕнче те, Союз калăпăшĕнче те палăратпăр. Шыраса тупнă çĕнĕлĕхе пурнăçра усăллă тăвассишĕн пулăшу кураймастпăр-ха Агропромран. Çĕнĕ техникăна ĕçлеттерсе кăтартмалли полигон туса параймаççĕ те...

Институтран тухсан çул тăршшĕпех куç умĕнчен кайма пĕлмерĕ ректор сăнарĕ. Сăр вăрманĕн анлă уçланкинче сыхланса юлнă Авруй ялĕнче мăн çемьере çуралса ўснĕ ăслă чăваш, ветеринари наукисен докторĕ, профессор, Чăваш Республикин наукăпа искусствисен наци академийĕн академикĕ, Раççейĕн ветеринари, гигиена тата экологи канашĕн членĕ пуласса кĕтмен те пуль малтанах. Пурнăç йĕркине çирĕп пăхăнса, нумай вĕренсе вăл майĕпенех çўл тўпенелле тапаçланать. Тăван çĕр ăна вăй парса тăрать. Авруйне манмасть. Волков çул çине асфальт сарса панă хыççăн ялне канма килет, унпа пĕрле ухутана çўрет.

Николай Кириллович ашшĕ-амăшĕн кивĕ кил-çуртне çĕнетрĕ: чăрăш пĕренерен шатрун пўрт, çăка пĕренерен мунча лартрĕ. Тельман Федотович чи ăста платниксем ячĕ вĕсене тума.

Çăкалăх, хурăнлăх Авруй тавра. Ĕлĕкрех лаштра юмансем пăхаттирле сыхланă чăваш хресченне. Пурăна киле вĕсене каснă, кирлĕ çĕре янă. Вĕсем вырăнне

лартнисем, туйра юмансем, ытти йывăçсенчен чалăш майлăрах çеç тăррисемпе кăнтараççĕ пĕлĕтелле. Ял çĕрĕнчен, вăрман йывăçĕнчен илнĕ авруйсем сывлăх сипетне – техĕмлĕ сывлăша. Вăрман сипетлĕхех Кириле хресчен ывăлĕн аллине юман туратти тыттарса вăйлă пулма пӳрнĕ пуль. Патвар çитĕннĕ Микулай Тельман пекех вăтам шкулта вĕреннĕ, салтака кайса килнĕ. Вăрманкасри зооветеринари техникумĕнчен те, Хусанти ветеринари институтĕнчен те чи лайăх паллăллă, урăхла каласан ылтăн дипломсем илсе тухнă. Ахальтен хăварман пуль çав ăна Н.Э. Бауман ячĕллĕ аслă вĕренӳ шкулĕн ăслăлăх канашĕ аспирантурăра.

Тĕп ĕçне çамрăк специалист хăйсен «Çăлтăр» колхозĕнче веттехникран пуçланă. 1980 çултан пурнăçне Чăваш ял хуçалăх институчĕпе çыхăнтарнă. Ăслăлăха туптанă, вĕреннĕ çынсем хушшине доцент пулса кĕрсе кайни хăех вăл çамрăк ученăйăн пултарулăхĕ пуррине пĕлтернĕ. Çавăнпах пуль шаннă, ĕненнĕ Николай Кирилловича ĕçтешĕсем, кĕçех ăна зооинженери факультетне ертсе пыма шаннă. Унта ултă çул ĕçленĕ хыççăн вăл вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен проректора суйланнă, часах конкурсра институт ректорĕн ятне тивĕçлĕн çĕнсе илме пултарнă.

Тусĕ института мĕнле хастарлăхпа ăслайлăн ертсе пынине, Вăрманкас ачисене юратса хăйĕн хулĕ хушшине хупма тăрăшнине, тăван республикăшăн, чăваш халăхĕшĕн епле чунне пама хатĕррине Тельман Федотович аван пĕлет. Чăваш Республики аслă шкулĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята ăна пур енчен те шута илсех пачĕç пуль.

Сипетлĕ, уçă кăмăллă, типтерлĕ, культурăн çӳллĕ тӳпинчи интеллигент. Çын нушишĕн чĕрипе хыпăнать. Хĕрĕх хут ытла юн пачĕ ĕнтĕ вăл. Нумай çын пурнăçне çăлса хăварма пулăшрĕ Раççей Федерацийĕн хисеплĕ донорĕ.

Ырă чăвашсем хушшинче çывăх тусĕ пулнишĕн Волков мухтанать, мăннисен ушкăнĕнче те, ачасем хушшинче те Кирилловăн ырă ятне асăнмасăр иртеймест.

Мускавра туяннă япалисемпе кучченеçĕсене киле кĕртсе хăварнă-хăварман председатель уйсене пăхса çаврăнчĕ. Хăй вырăнне хăварнă партком секретарĕ Крутов кулленхи ĕçе пĕлсе, лайăх йĕркелени курăнать. Пур бригадăра та утă çулаççĕ, силос хываççĕ, кăшман анисенче çум курăкне тĕп тăваççĕ. Çĕр улмине кăпкалатса имçамланă.

Арăмне вăл Тымарта тĕл пулчĕ. Венера Ивановна фермăра Хурăн Крахьянĕпе тăрмашса тара ўкнĕ. Волков вĕсен ĕçне хутшăнмарĕ.

Ĕнер аслатиллĕ вăйлă çумăр çуса иртнĕ иккен, таврара çиçĕм тытакан пур çинчех витене аça çапнă, Крахьянăн сысна амине вĕлернĕ, вун пилĕк çура тăлăха тăрса юлнă. Акă вĕсем, Крахьянпа унăн арăмĕ, пĕчĕк хрюшкăсене апат çитереççĕ.

– Пирĕн ку, тимĕр ама, вунă чĕчĕллĕ çеç те, ыттисене черетпе сĕт ĕçтеретпĕр, – хаваспа каласа парать Карачăм мучи матки. – Венера Ивановна шăпах вăхăтра килчĕ те фермăна, уйрăлмасăрах пулăшать мана.

– Çурисене пурне те сыхласа хăвартăмăр-ха. Юрать трансформатор чăхăмламарĕ. Кунта пирĕн, Тельман, наччасра ток пĕтсе ларать. Çамку çине картса хур-ха çак ыйтăва. Тахçантанпах каласшăн сана кун пирки, хыпăннипе манăça тухать. Енчен те электричество килме пăрахсан, капут çурасене, – упăшкин куçĕнчен ăшшăн та ыйтуллăн пăхса илчĕ зоотехник. – Экскурси тусан та пăсмасть пуль фермăна хушăран, унсăрăн хуçана сыснасем паллами пулаççĕ. Шилов та иртнĕ эрнере райэнерго бюрокрачĕсен хытнă çамкисене шăтарса тухса кайрĕ те...

– Ун хыççăн икĕ хутчен светсăр лартăмăр, – пĕлтерчĕ çивĕч чĕлхеллĕ Крахьян. – Тем, урăххисене шăтарма часрах чупрĕ пулас.

Хăйне куçран каланă сăмахшăн шăрчăкланас вырăнне Волков сысна çурисем патнелле пĕшкĕннĕ хĕрарăмсен купарчи-пĕççи çине ытарлăн пăхса илнĕ май, Кириллов ректор сăмахĕсене аса илчĕ: «Асту, тусăм, арăмун та чĕчĕ пур, тата тем те пур...» Ава, темĕ те вăр çаврака Венерăн, кĕпи арки туртăннипе çаралнă пĕççийĕ те чăп-чăмăр, чуна туртăмлă. Пĕрмай ĕç çинчен шухăшласа çунса çÿренипе юлашки вăхăтра унпа çывăхланма та маннă-çке ара. Арăма хушăран аякран пăхса хаклани те усăллă иккен. Ытти арçынсем те çаплах куç хываççĕ пуль Венерине те. Вăл вара тĕлĕнмелле электроматка-сысна ами тавра пăхса çаврăнчĕ те, кайма хатĕрленес умĕн каларĕ:

– Венера, ытлашши çĕрлеччен ан юл. Эп мунча хутатăп.

Тÿрленсе тăнă арăмĕ упăшки енне ăшă куç хĕлхемĕ сирпĕтрĕ. Крахьян пулмасанах ăна ыталаса чуп тăвĕччĕ, хăйĕнчен хăй вăтанса, сăмаха пăрса ячĕ:

– Хут-ха, хут килти мунчине, малтан ку мунчине кĕрсе тухам. Ытлашши ан васка, паллаштарар сана электроматкăпа. Большаков çине тăнипе институтăн вĕренÿ хуçалăхĕнчен туртса илсе килнĕ вĕт ăна.

– Вăт мĕнле пуçаруллă вăл Мăн Альпă, – çийĕнчех кирлĕ сăмах тупрĕ каллех Крахьян. – Хир сысни açипе шур сыснана, шур сысна açипе хир сысни амине ерттернине те килсе курма вăтанмасть...

Нăйкăшакан-çухăракан сысна çурисене пăхса тăракан председателĕн чăннипех пĕлес килчĕ çак тимĕр аман вăрттăнлăхне, вара вăл арăмĕн лекцине студент пекех итлеме пуçларĕ:

– Тÿрех калатăп, Совет Союзĕнче ниçта та çук «сысна амипе» паллаштаратăп сана, юратнă упăшкамçăм-экскурсантçăм. Чăваш институчĕ пĕрремĕш хут пурнăçа кĕртекен эксперимент. Тĕнчере сысна ашĕ тăвакансен умĕнче пĕр тĕллев – çуралнă кашни çурана сыхласа хăварасси, кашни амана çулталăкра иккĕ

çăвăрлаттарасси, ама пуçне вăтăр çурaран ытла илесси. Мĕн чăрмантарать-ха çав тĕллеве пурнăçламашкăн? Акă мĕн. Чĕчĕ ĕмнĕ вăхăтра çурасем нумай вилеççĕ. Мĕншĕн? Хăш-пĕр амасен сĕт çитменнине пула. Çăвăрлас умĕн тимлĕ пăхман амасем сĕт çителĕклĕ таран антармаççĕ.

– Ун пекки килсе тухсан, çурасене ют ама çумне ярса пайтах хăшкăлнă-çке, – ласт сулчĕ аллине Крахьян. – Лайăх ĕмекенни юлать, ĕмейменни – пĕтет.

– Хĕрарăмсен те, сысна амисен те пулать вăл çуратнă хыççăн сĕт анманни, – кĕвĕллĕн тăсрĕ хăйĕн лекцине ял хуçалăх наукисен кандидачĕ. – Ачипчи те, çурисем те вĕсен нишлĕ ўсеççĕ. Çавăнпа сысна ĕрчетекенсем тĕнчипех çĕнĕлĕх шыраççĕ, хĕрĕх-вунă кунри çурасене амăшĕсенчен уйăраççĕ, сĕт ĕçтерсе ўстереççĕ. Ĕне сĕчĕ вырăнне тутлăхлă урăх шĕвек ĕçтерме пуçланă меслетĕн те халĕ хăйĕн çитменлĕхĕ пур. Ама çурисене сехетсерен ĕмĕртет, çав вăхăтра çура хăйне кирлĕ чухлĕ сĕт ĕçет. Суя шĕвекпе унашкал тăрантарма май çук, çура сахалтарах та, ытлашши те çиет, ун хырăмĕнче апат кирлĕ пек ирĕлмест, вара вăл хĕне каять, вилет. Çак ама-робот чĕрĕ амана улăштарать те. Машина хырăмне вунă литр шĕвек кĕрет, аялта, авă, вунă резина çинче пăрăх-чĕчĕ. Автомат çурасене сысна ами пекех кашни сехетре çителĕклĕ апат парса тăрать. Тин çуралнă çурасене...

– Вăт халь ман та тăлăх пепкесене тăватă кун ĕне ыррипе сăйламалла пулать, тепĕр вун икĕ кун – ĕне сĕчĕпе, вăтăр пилĕк кунччен суя сĕтпе тăрантарса ўстермелле, тин вара, ама-роботран уйăрса вăлашкаран апат çитерме пуçлатăп, – чăтаймасăр пўлчĕ Венера Ивановнана сысна хуçи. – Тўрех персе хыпаççĕ тетĕр пуль çурасем резинка чĕчче, виç сехет аппаланатпăр ют чĕчче ĕмтерме. Ача та соскăна сурса çеç кăларать те... Вăт сире мунча, Тельман Федотович. Халĕ ĕнтĕ эпĕ хамах айланкалăп. Мускавра майра тупаймарăр пуль, ял майринех лартса кайăр, мунчине пĕрле хутса кĕрĕр.

Ман та утартан Караська кĕçех çитмелле-ха. Пĕрле мĕшĕлтеткелĕпĕр.

Чăнах та саралнă ыраш уйĕ витĕр кукăрăлса выртакан урапа çулĕпе вăрман енчен вĕсем патнелле сухалсăр Карачăм мучи яшлăн вашлаттарса çывхарчĕ.

11

Салакайăк Йăванĕпе Пахом Баранов капитан хушшинчи мыскарана никам та курман. Ун çинчен Матвей Тугаев аслă лейтенант кăна чухланă. Дежурнăй пулнăскер вăл Воробьева следователь алăкĕ еннелле тĕллесе янăçке. Салакайăк Йăванĕ ун патĕнчен хăш вăхăтра тухса кайнине «курман». Кайран, Баранов пулăшу чĕнсе çухăрнине илтсен, саппас уçăпа алăка уçса ăна инкекрен çăлнă. Начальник патĕнче Тугаев шат та пат туннă: Хурăнвар çыннине Воробьева вăл паян курман. Степанов подполковник та пит чее, «шурăмпуçсене» лайăх пĕлекенскер, чрезвычайлă ĕçе хуллен сӳнтерме шут тытнă. Иван Воробьев милицире пулни уншăн паллă, вăл ăна ĕç пӳлĕмĕнчи чӳречерен курнă-çке хăйсем патне кĕрсе кайнине. Воробьев камне те, унăн ялти ăнман пурнăçне те пĕлет Виталий Артемович. Колхоз председателĕ патĕнче черкке те сахал мар шаклаттарнă унпала. Волковăн хуннĕ-çке вăл, Тельман Федотович вĕсен хĕрне Венера Ивановнана качча илнĕ. Венера Ивановнан ашшĕ Шмыков пулнине те астăвать. Чунĕ кӳтсе çитнĕ вăхăтра Воробьев хăйĕнчен мăшкăлласа пурăнакан клуб хуçине самосуд тунăшăн арçынла туйăмпа ăшра ăна ырлать çеç. Тугаев аслă лейтенанчĕ Иван Воробьева мĕншĕн хӳтĕлесе курмăш пулнине те чухлать. Вĕт Матвей Тугаев – Хурăнвар кĕрӳшĕ. Салакайăксен Роман Фомич хĕрне качча илнĕ.

Кама хӳтĕлемелле-ха, паллах, Воробьева. Баранов капитан уншăн – ютă. Çынни те путсĕрскер. Вăрманкассен кăмăлне юрайман вĕчĕх, ирсĕр элекçĕ. Ывăлĕ те, аслă

лейтенант, ашшĕнех хывнăскер. Тахçанах хăпасшăн та унран начальник, анчах сăлтавĕ тупăнмасть-ха, чуна хытарса пурăнать. Ашшĕне ĕçрен хăтарма çăмăлрах, тек ăна вăл тытмасть хăй патĕнче. Баранов капитана вăл, следовательсем çитмен пирки çеç, тивĕçлĕ канăва тухнăскерне, вăхăтлăха пулăшма чĕннĕччĕ.

Службăра тимлĕ, асăрхануллă пулманшăн, Баранов капитанпа Тугаев аслă лейтенанта начальник асăрхаттарчĕ, калаçу вĕçĕнче следователе юлма ыйтрĕ.

– Капитан юлташ, – сассине хулăнлатрĕ Степанов подполковник. – Ман пата Долгов прокурор кĕрсе тухрĕ. Сирĕн уголовнăй ĕçе вĕçленĕ. Тымар заказникĕнче хир сысни аçипе икĕ амине лицензисĕр тытнине тĕрĕслесе çитернĕ, сунар йĕркине пăсакансен Шупашкартан килнĕ ушкăнне эсир ертсе пынине çирĕплетнĕ. Ĕçе суда париччен Василий Ефремович сире хăй патĕнче пулма ыйтрĕ. Маларах пĕлтерейменшĕн каçарăр, вăл вăхăтра эсир хăвăрăн пӳлĕмре читлĕхре пулнă иккен.

Кĕрхи палан пек хĕрелсе кайнă Баранов ура çине сиксе тăчĕ, мăк-мак тукаларĕ те, чĕлхи уçăлнă май, ыйтрĕ:

– Кайма юрать-и, подполковник юлташ?

– Тархасшăн, капитан. Малашне ĕçре сисĕмлĕрех те çивĕчрех пулма тăрăшăр.

Вăл тухса кайсассăнах Степанов прокурор патне Баранов пирки шăнкăравларĕ.

Хурăнварти пуçанасен хĕрарăм сутти-камичĕ те Шмыковăн пĕç хушшинчи пăшалне пульницара юсаса янă хыççăн мирлĕ майпах вĕçленчĕ. Салакайăк Йăванне милици айăпламарĕ. Хир сыснисемшĕн район прокурорĕ патĕнчен тарласа тухсан, Баранов капитанăн та чĕркуççийĕсем чĕтреме часах чарăнмарĕç. Хăйĕнчен мăшкăлласа куласран сехĕрленнипе вăл Воробьева хальлĕхе тапăнма тăхтас терĕ, ун пирки шалти ĕçсен министерствине пĕлтерме шухăшланă пулин те, çăвара шыв сыпрĕ. Хăй пĕччен çĕнтерессе шанмарĕ. Ывăлĕ райком çурчĕ çумĕнче тар хутаççипе тытнă

Воробьев старикпе Воробьев сутăнчăк-власовец та пĕр çыхăрах пулнине тавçăрса илчĕ. «Мĕншĕн çав ват супнă террориста хŭтĕлерĕ-ха райсовет пуçлăхĕ Большаков?» – тесе вара хăй тĕллĕн çĕмĕрчĕ ăс кĕрсе çитеймен шĕвĕр тăрăллă пуçне.

Теме сиснĕн вара анатри чăваш чĕппин ăш вăркама пуçларĕ. Тĕлĕкре хăйсен рота командирĕ час-час аса килсе тăнран ярать. Йăрăс пŭллĕ тăлпан командир акă ăна, пуçне икĕ аллипе те çатăрласа тытнăскерне, ăшăх окопран туртса кăларса кутран тапа-тапа атакăна хăвалать. Фрицран хăранипе сысса янăскер вăл пĕççисем лăчăр-лăчăр исленсе кайнăран хытă чупаймасть, вилнĕ салтак хыçне выртса юлать. Атака путланнă хыççăн хăра-хăрах каялла шăвать, чĕрĕ юлнă хĕрлĕ армеецсем хушшинче командир кăшкăрса пырать: «Марш, марш малалла!» Рота виççĕмĕш атакăна çĕкленет... Баранов винтовкине майланçи туса ыттисенчен юларах парать, командир çитсе тапнипе тăрса мĕшĕлтетет, каллех капитанран тăрса юлать, эрех ĕçнипе хастарланнăскер, пăшалне нимĕççем çине мар, ротнăйне çурăмран тĕллет, пŭрнине курок çине пусать те...

Вилĕме хирĕç куçа курсах чупиччен вилĕмрен ура тупанне кута çаптарса тарни Баранов хăравçă мулкачшăн телей çулĕ çине тухнă пекех пулчĕ. Чее путсĕрсенчен илтнĕ сăмаха вăл чăнлатса хурать. Пĕр çапăçура хăйне хăй хулĕнчен амантать те медсанбата, сывалнă хыççăн ятарлă батальона лекет.

Вăрçă çулăмĕ алхасса кайнă 1942 çулта çĕршыв умне çав тери пысăк хăрушлăх тухса тăнă. Тухăçалла чакакан çарсене епле йывăр лару-тăрура та чарса лартмалла, Гитлер фашисчĕсене аркатма тытăнмалла, тĕп тумалла! Çав тĕллевпе СССР оборона халăх комиссарĕ И.В. Сталин çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕнче 227-мĕш номерлĕ приказ кăларнă. «Пĕр утăм та каялла чакмалла мар!» – фронтсем тăрăх саланнă хăрушă хушу. Ăна пурнăçласа, пурне те, туппа, танка каялла

çавăрмалла. Кам чакма шутлать, ăна пулемет шăлса тăкать. Çапла çуралнă каялла чакакансене чарса лартмалли чаçсем-отрядсем. Вĕсенчен пĕринче «çапăçнă» та Пахом Баранов. Хăй пек миçе çĕр «хăравçă мулкача» леш тĕнчене ăсатнине шутлама-и унта. Тискер кайăк хаярлăхĕпе хĕрӳленсе, хавхаланса шăлнă вăл пулеметĕнчен е автоматĕнчен вăрçă вутĕнче ниçта кайса кĕреймен çар çыннисене. Малалла талпăнсан та, каялла чаксан та вилĕм кăна кĕтнĕ шереметсене.

Фронтра Хĕрлĕ Çар майлă улшăну пулсан, чарса лартмалли чĕрĕ хӳме ишĕлет. Барановсен «вилĕм батальонне» те чăн-чăн çапăçу хирне ăсатаççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа пĕр фрица тĕп туман Баранов ефрейтор «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медаль – пĕрремĕш награда илет: нимĕç çарĕсем хӳтернине чараймасăр çăлăнăç шыракан хĕрлĕ армеецсемпе офицерсене ним хĕрхенмесĕр персе вĕлернĕшĕн. Пурнăçпа вилĕм ăмăртса кĕрешекен малти рете мар, хыçала, тыла лекет «хăравçă мулкачсене» шĕкĕлчесе «паттăрлăх кăтартнă» чăваш хăйĕн батальонĕнчен юлсан. Кĕске хушă вĕрентнĕ хыççăн вĕсене вăрçăри ирĕке кăларнă вырăнсенче диверсантсене тытма яраççĕ. Çапла çăмăллăн вĕçлет Патăрьел чăвашĕ Баранов лейтенант Тăван çĕршывăн аслă вăрçине. Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн (НКВД) ретĕнче вăл тепĕр «паттăрлăх» кăтартать: хăйсен отделени командирĕ пулнă Иван Воробьев сержанта Тăван çĕршыв сутăнчăкĕ, власовец тесе аслисене ĕнентерсе «тăрă шыв» çине кăларать. Хăйĕн ăшĕнче тăшман чунĕ, хăравçăлăх, курайманлăх пытанса пурăннине туймасăрах.

Вăрçă хыççăнхи служба картлашкисемпе яртлаттарса хăпарнă май Баранов вĕренесси çинчен те шухăшланă, капитана, аслă следователе çитнĕ. Тĕлĕкĕсенче вăл миçе хутчен курман-ши хăй персе вĕлернĕ Сурский капитанпа тата ытти пĕлмен-палламан салтаксемпе командирсене. Халăхпа халăх, патшалăхпа

патшалăх хушшинчи вăрçă-харçă ытла та кăткăс-çке. Вилĕм юнашарах, хăçан тата кам аллипе кăнса выртассине унта никам та пĕлмест. Çĕмĕрле ачи те, чаркăç отрячĕсен тăхлан çумăрĕ айне пулнă çĕршер, пиншер çар çынни те хăйне кам çут тĕнчерен уйăрнине чухласа илеймен-тĕр. Вĕсен палачĕ вара халĕ те чĕп-чĕрĕ, кăкăр тулли наградăллă фронтовик – вăрçă ветеранĕ. Вăл – милици капитанĕ Пахом Баранов.

Çар прокуратуринчен ярса панă хурава вуласан, çакă паллă пулнă: «1941 çулхи çурла уйăхĕнче Белорусси ССР территорийĕнчи Березина юхан шывĕ патĕнче пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче çирĕп оборона йышăннăшăн тата тăшмана виçĕ талăк малалла кайма тытса чарнăшăн Сурский Валерий Сидорович капитана вилнĕ хыççăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденпа наградăланă. Ăна хăйĕн ротинчи Баранов Пахом Иванович хĕрлĕ армеец атака вăхăтĕнче хыçалтан персе вĕлернине çирĕплетекен нимĕнле факт та çук. Ротăра çапăçнă Воробьев Иван Герасимович сержантпа Шуркин Степан Трофимович хĕрлĕ армеец командира Баранов П.И. вĕлернĕ тесе пĕлтернине шута илме май çук. Унтанпа вăхăт нумай иртнине пула вăрçă ветеранĕ Баранов пирки эсир ыйтнине нихăш енчен те тивĕçтерейместпĕр».

Воробьевпа пăтăрмах пулнă хыççăн милици начальникĕ Степанов Баранов следователе, çамрăкраххине тупсан, ĕçре нумаях тытмарĕ. Анчах та Воробьевпа Шуркин çын вĕлерен ĕçне отставкăна кăларма шутламарĕç-ха.

Вăрçă тухиччен маларах отпускра пулнă Сурский капитан арăмĕпе ачине Василие Çĕмĕрлерех хăварнăччĕ. Василий ўссе салтакра та пулнă, вăрман чунлĕскер, профессионал-сунарçах тухнă. Хăюллă егерь тискер кайăка, вĕçен кайăка шелсĕр пĕтерекенсемпе кĕрешсех пенси çулне çитнĕ, хăйĕн ĕмĕрĕнче сунар йĕркине пăсакансен тăхлан кулачне те пĕрре кăна мар тутанса пăхнă, çапах сывах юлнă. Унăн ачи Валерий те

аслашшĕпе ашшĕнчен кая мар хастар çитĕннĕ, вăл та егерьсен йăх йăлине пăрахман, Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕнче сунарçăсене ытлашши сĕмсĕррĕн аташма паман, асăрхасах тăнă. Вăрманкас егерĕсемпе килĕштерсе пурăннă. Вăрманне вĕсенне вунă чалăш уçлăх çеç чикĕлентерсе тăрать. Унта хурал çук. Тискер кайăкăн унăн хăйĕн чупу çулĕ. Сунарçăсем те вĕсем хыççăн йĕрлесе-чупса чикĕ урлă пĕрисем Çĕмĕрле енне, теприсем вăрманкасалла каçса каяççĕ. Тем мыскари те пулса иртмест-и сĕм вăрманта этемпе тискер кайăк хушшинче? Савăнмалли те, хурланмалли те тупăнать. Карачăм мучин те куçĕ курать, хăлхи илтет вăрман пурнăçĕ мĕнле хумханнине, мĕнле шавланине.

Утара ашшĕ патне кайсан Йăван тĕлĕнсе хытрĕ. Унта вăл фронтри чи çывăх, шанчăклă юлташне Çтаппан Шуркина тĕл пуласса ĕмĕтленмен те, кĕтмен те. Ашшĕне апат хатĕрлеме пулăшас тенĕччĕ кăна, тулта мотор сасси илтĕнчĕ.

– Çĕмĕрлесем çĕмĕрсе çитрĕç, – пĕлтерчĕ ашшĕ. – Каллех егерьпе лесник. Пĕр тăван пек вĕсем. Теприне, шĕвĕр сухаллине, курман. Эпĕ карасĕсене услам çупа çатма çинче тепĕртак ылтăнласа илем-ха, çиччас. Эс тух. Кĕтсе ил хăнасене.

Йăван тулалла васкарĕ. Тамаша мар-и? Сарлака хулçурăмлă çÿллĕ арçынсем хушшинче унăн асран кайми Элĕк чăвашĕ тăра парать.

Сывлăх сунса паллашнă-паллашман вĕсем пĕрпĕрин çурăмĕсене сисĕмлех лăпкарĕç:

– Эс кунта мĕнле лекнĕ?

– Эс ху тата мĕнле майпа вăрман витĕр шăтарса тухрăн?

– Эп утара аттене пулăшма килтĕм.

– А эп сан патна кайма тухнăччĕ. Кĕрÿ мана Нурăс урлă мар, тÿрĕрен вăрманпа каятпăр терĕ те. Авă çав, тельняшка тăхăнни, чи патварри, чи чăсмакки, кĕрÿ пулать ман, десантник. Хĕрĕм ырлăх шыраса хулана кайнăччĕ

те унтах тĕпленчĕ, хĕр ачи ўссе çитсен ак çак пăхаттире кацча патăмăр. Шĕкĕр турра иксĕмĕре çакăнта илсе çитернĕшĕн. Ку тарам-ха. Каласан та ĕненес çук. Ай, пĕлетĕн-и кĕрĕвĕм кам мăнукне? Тепри юмах темелле, – нумаях калаçса кайрĕ Çтаппан Шуркин.

Йăван Воробьев тĕлĕннипе аллисене сарса пăрахрĕ:

– Ăçтан пĕлен?

– Паллах, пĕлес çук ют çынна. Эп паллап та, маншăн çывăх та. Хамăрăн ротнăйăн мăнукĕ вăл – Валерий Сурский. Пăх-ха лайăхрах ун çине: сăнĕ те, кĕлетки те, утти те... каснă-лартнă Валерий Сурский капитан. Кĕç-вĕç пире камантă парассăн туйăнать: «Смирно!» Командирăн тăлăх арăмĕ пурăнать-ха, вырăс тăхлач. Ак ку вара, ха, епле йăлттам вăл – аслашшĕнех хывнă. Аслашшĕ вăрçăра мĕнле вилнине пĕлет вăл. Каласа панă эп пурне те вĕсене. Çампа курнăçасшăнччĕ вăл санпа. Акă халĕ...

Карачăм мучин утар пўрчĕ çĕнĕ хăнасене йышăнчĕ. Эрехĕ те, пыл кăрчами те тухса ларчĕ юман хăмаран тунă сĕтел çине. Ĕçнĕ, сап-сарă, çăпата сарлакăш карассемпе тута хĕррисене çуллантарнă май калаçу хĕрсех кайрĕ, вăрçă хирне те вĕçсе çитрĕ. Систернĕ пекех, вăрманкассен егерĕ те алăкран кĕрсе тăчĕ. Сăлтавсăрах Баранов следователь нушине тўссе курнăскер вăл ун хушаматне илтсенех урмăшма пуçларĕ:

– Эп ăна-и, эп ăна, путсĕре, каçармастăп – виличчен те. Миçе пăши, миçе хир сысни саккунсăр тытса ăсатрĕç ывăлĕпе иккĕшĕ аяккалла, тусĕсем патнелле. Вăрмана чуттах упасăр тăратса хăваратчĕ. Капкăн лартнă çавскер. Эпĕ те, сиссе, капкăнне вăрттăн вăрман пĕвине петĕм. Такам шăрса кăтартнă ун пирки. Пуçларĕ вара тапăнма. Хăй тытнă пăшисемшĕн мана айăпларĕ, икĕ çуллăх чиперех хуптарать. Латнă Долгов прокурор çăлчĕ. Çав упа капкăнне шывран кăларса хăйĕн çулĕ çине лартмалла-ха. Пĕлеп унăн сунар çулĕсене.

Чăтас килмерĕ пулас Шуркин кĕрӳшĕн те, кайăк кăвакалĕн тукмаккипе сулласах ăшра тулнине кăларчĕ:

– Эп Кавказра виçĕ хут çапăçса унти халăхсен хаярлăх кăмăлне-туйăмне куркаласа ăнлантăм. «Юншăнюн» текен тупа пур вĕсен. Сĕм авалтан сыхланса юлнă тавăру хаярлăхĕн тивĕçĕ. Ăна вĕсем ая-яй епле харсăррăн пурнăçласа пыраççĕ: куç кĕретĕн те, вăрттăн та. Çырман саккун ĕнтĕ. Мĕншĕн пирĕн те пулмалла мар вĕсем пек? Мĕн, эпир начар халăх-им? Вĕсенчен кая-им? Ма мăшкăллаттармалла хамăртан? Асаттене тискеррĕн вĕлернĕшĕн ман çав мăкла такана пуçран шăлмалла-и? Çук! Вилĕмшĕн – вилĕм!

Кукăр алăллă анат ен чăвашĕ хăйне турă панă усаллăхне шуйтан хушнипех малалла тăсрĕ пулас. Хир сыснисемшĕн çăмăллăнах çăлăнса юлнине шута хумасăр хăнăхнă йăлипе ухута йĕркине пăснă та пăснă, хăй те сисмен...

Салакайăк Йăванĕ «Хыпар» вулама ларчĕ. Хыçалти страницăра паллана, сăнсăр этем ӳкерчĕкне курнипе вĕриленсе кайрĕ. Вăл Вăрманкасра пурăнакан Баранов Пахом Иванович килтен тухса кайнă хыççăн каялла таврăнманни, мĕнле сăн-питли, мĕн-мĕн тăхăнни тата ăна курнисене милицие пĕлтерме ыйтни çинчен вуларĕ те хаçата лӳчĕркесе çунакан кăмакана печĕ. Çухалнă çын сăнне вут хап! тутарса çулăмлантарчĕ те, кĕллентерчĕ.

12

Совет влаçĕ уйăрса панă икĕ миллиона яхăн гектар çĕр çинче Чăваш çĕршывĕн халăхĕ тĕнче тытăмĕнче айланкаласа пурăнать-ха. Патша саманинче çăпата сырса, çĕтĕк сăхманпа выçăллă-тутăллă тертленнĕ пулсан, 1917 çулхи нарăсра патшана сирпĕтнĕ, тепĕр тăхăр уйăхран хĕрарăм ача çуратнă пек çĕнĕ влаç çуралсан та Нуша унран ку таранчченех шит те уйрăлмарĕ. Ытти нумай халăхсемпе пĕрлех чăвашсене

те вăл хăйĕн армути тутиллĕ кулачне тăранса какăричченех çитерет. Нуша кулачĕ хресчен сĕтелĕ çинчен хăçан тасалассине Альберт Григорьевич Большаков та куçлăх тăхăнса пăхсассăн та курмасть-ха. Нуша ăруран ăрăва куçса, чăваш кил-çуртĕнче хуçаланать. Хресчен тур кĕтессинчи сăваплă таса турă сăнарĕнчен «паян пурăнмалăх çăкăр пар» тесе ирĕнкаçăн кĕл туса ыйтнă хушăра Нуша турă кĕтессинчи сĕтел хушшине шăтăр-шăтăр кĕрсе ларнă, кулачĕ унăн сĕтел çинчен пĕтме пĕлмест.

Çав усал Нушаран хăтăлас тесе кам кăна мĕн тери çине тăман-ши? Мĕн чухлĕ ăслă-тăнлă çын пуçа ватман-ши? Тăван çĕре сыхласа хăварассишĕн вăрçăсенче тăшманпа çапăçса, çĕнтернĕ. Влаçĕ те халăх аллинче шутланать пек, анчах... ячĕшĕн çеç шутланать çав, влаç пушшин аври пурпĕрех Мускаври совет патшисен аллинче. Вĕсенчен пушăпа кам мĕнле шартлаттарнинчен килет те ĕнтĕ халăхăн пурнăç шайĕ. Хуллен-хуллен хăпарать пулин те çав шай, пурпĕрех вăл пурнăç тулăхĕн тӳпине çитеймест-ха. Патшалăх пуçĕнчи ямшăк пушшин вĕçĕ хресчен сĕтелĕ хушшинче ахăрса савăнакан Нуша патне çитеймест.

Вăтăрмĕш çулччен уйрăм хуçалăхпа ĕçлесе çити-çитми пурнăçне майлаштаркаланă хыççăн Çĕнĕ çул пуç пушши хресчене хӳтерсе мăн эртеле хуптĕрлесе кĕртсен, унăн «ыран эп пурпĕрех паянхинчен пуянрах пурăнап» текен ĕмĕчĕ мăрьерен тухса сывлăша саланчĕ. Ĕçченнипе кахалли те пĕр эртелре çăрăлнине пула колхоз кăмакинчен тутлă çăкăр пиçсе тухаймарĕ. Вăрçă хыççăн та çав кăмака хĕрсех çитеймерĕ курăнать. Халĕ вара çав кăмака çурăлса пырать, çурăкĕнчен тĕтĕм йăсăрланса тухать. Уншăн Нуша пушшех савăнать, кăмака анине хупламалли питлĕхе çапса урайĕнче ташлать, ĕçсе лартнă кил хуçине те такмаклаттарсах тăпăр-тăпăр ташлаттарать.

Çуралсанах çав Нуша аллине лекнĕ Большаков та унпа юнашар сăпкара сикнĕ, ўсерехпе сĕтел хушшинче унăн кулачне çисе тăраннă, вĕреннĕ чух та, ĕçлеме тытăнсан та уйрăлман унран эсрел. Вăл ĕнтĕ хăй те алла кĕске пĕчĕк, вăрăм пысăк пушă тытса курнă хресчен ачи. Халăх сĕтелĕ хушшинчен Нушана кăларса сирпĕтессишĕн çине тăнă, халĕ те çавăншăн хытă çунакан пуçлăхсене – вырăнти патшасене нумай пĕлет. Нумай пĕлет те – куçĕпе сахал курать вĕсене. Хăй вĕсен шутне кĕрсе çитеймесĕрех, влаç вăлтине çакланса карьера пусмипе улăхса кайнишĕн аванмарланнăн та туять вĕсен умĕнче.

Хурт вĕлли пек сĕрлекен, вăрманти мăн кăткă тĕми пек йăшăлтатакан ик çĕр сакăр вунă миллион çынлă патшалăхра курăмлă йĕрке тума пуçланă Михаил Горбачев – Михала патша та совет халăхне çĕнĕлле сывлаттарма пуçларĕ, хăйне евĕр революци турĕ. Нумай миллионлă хор Совет Союзĕн Гимнĕ хыççăн ирпе çĕнетў юррине юрлама пуçлать те, çав юрăпах çывăрса каять, перестройка тĕлĕкĕпе аташса пуçне пăтратать.

Общество аталанăвĕн çĕнĕ тапхăрĕнче пур енĕпе те улшăну пулмалли çинчен пуçланнă пĕтĕм халăх калаçăвне Горбачев Компартин вун тăххăрмĕш конференцийĕнче пĕтĕмлетрĕ. Унти шава «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз председателĕ Тельман Федотович Волков та хутшăнчĕ. Унăн ĕçне Альберт Григорьевич та питĕ тимлĕн, хумханса, хăпартланса сăнарĕ, делегатсем каланине хăй шухăшĕпе çирĕплетсе-танлаштарса ларчĕ телевизор умĕнче. Трибуна умне паллана чăваш тухсан унăн кашни сăмахне хăлхана чикме тăрăшрĕ. Ял хуçалăхĕ, ял, ял çынни çĕршывшăн мĕн хака ларни, унăн куççульлĕ нуши-терчĕ кут хыçне юлни, социаллă танмарлăх ытамĕнче ял халăхĕ мĕншĕн паянхи кунченех хĕсĕнсе пурăнни, ăна мĕншĕн тивĕçлĕ шая çĕклеменни çинчен Айдак хресчен туйăмĕпе, çĕр хуçин хăватлăхĕпе, коммунист хастарлăхĕпе чĕрене тивмелле хăюллăн та тарăхуллăн калаçрĕ.

«Эх, пуласчĕ кашни колхоз пуçĕнче Аркадий Павлович пек ăслă, ырă чунлă хуçа. Эпир те тахçанах çăкăрлă, ашлă-пăшлă тулăх пулмалла та çав, – шухăшларĕ вăл йăм çăра çÿçне икĕ аллипе шăлса. – Никам та пырса туса паман вĕт ăна çав паянхи ырлăха: Етĕрнерен те, Шупашкартан та, Мускавран та. Çĕннине вăл хăй шыранă, тупнă, пурнăçа кĕртнĕ çирĕм виçĕ çул хушшинче председательте ĕçлесе. Миллионер-хуçа çĕнĕлĕхĕ халĕ пĕтĕм çĕршывĕпе, тĕнчипе сарăлать. Начар, питĕ начар ĕçлетпĕр-ха эпир хамăра шаннă çĕрте, телей çÿлтен ÿкессе вĕçĕмсĕр кĕтетпĕр. Çĕр туйăмĕ, çăкăр тути, хресчен ăсĕ-чеелĕхĕ çитсех каймасть Айдакăнни пек».

Çавна май унăн куçĕ умне икĕ çул каяллахи тухса тăчĕ. Хисте-хистех вăл колхоз председателĕсене, агрономсене пилĕк автобуспа Вăрманкасран Ачака илсе çитерчĕ. «Ленин хĕлхемĕ» колхоз çыннисем çĕре епле юратса пăхнине, кашни гектар çĕртен мĕнле майпа çуллен хĕрĕх центнер тĕш тырă, çирĕм центнер хăмла (400 пин – хăмла, хăйĕн заводĕнчен сăра сутса 400 пин тупăш илет) пухса кĕртме пултарнине, чăн-чăн çут çанталăк хуçисем пулса тăнине кашнине куçпа кăтартса, пуçпа ĕнентерме шутларĕ. Хими пулăшăвĕсĕр çĕр ĕç вăйне çав шая çĕклениех такама та кăсăклантармалла пек.

Райсовет ĕçтăвкомĕ йĕркеленĕ «катаччи», Айдак шÿтлесе те йĕплесе илни хăлхаран каймасть. «Чĕрĕ театр курма килтĕр-ха апла, Альберт Григорьевич. Курăр, курăр, пурнăç вăййине тÿлевсĕрех кăтартатпăр. Уйра çĕнĕлле выляса ĕнтĕ эпир çулталăкра колхоз кассине виçĕ миллион чикетпĕр. Çĕр çине тарпа çырса юнпа лартма тăрăшăр-ха хăвăр та паянхи пурнăç спектакльне. Режиссерĕсем çеç ан ÿркенччĕр», – тенĕччĕ Аркадий Павлович.

Хавасла туйăмпа таврăннăччĕ Етĕрне енчен. Председательсем – тĕп режиссерсем – çул тăршшипех ĕмĕтленсе килчĕç. Çĕрпе туллин те пулăхлăн усă курмалли, çут çанталăка тимлĕн сыхламалли анлă

малашлăх çирĕплетрĕç районта. Кам мĕн тунипе-туманнине куç кĕретĕн пăхма фотоальбом йĕркелерĕç.

Çук иккен, ăшра çĕнĕлĕх кăварĕ йăлкăшмасан, çынна темлешкел чаплă япала кăтарт, вăл пурпĕрех пулăшаймасть ăна чĕртме. Кам ниçта кайса кĕреймесĕр ăшталанса çÿрет – çавă таврана вут-хĕм сирпĕтет. Ытти председательсем сÿннĕ вучах сĕрĕмĕнче куçĕсене сăтăркаласа лăпкăн выртнă вăхăтра пĕр Тельман Федотович кăна район çийĕн хĕвел пек çиçрĕ. Çапах та ахалех пулмарĕ «Шурăмпуç çăлтăрĕ» хуçишĕн Большаков йĕркеленĕ «катаччи». «Ленин хĕлхемĕ» ун чĕринчи вутта çĕнĕлле чĕртсе ячĕ. Вăл тăван тавралăх илемĕ тăван халăх илемĕ пулнине ăнланса нумай тăрмашрĕ, колхозниксене те хăй хыççăн ертсе кайрĕ. Вăл ĕнтĕ «Вăрманкас Айдакĕ» пулса кайрĕ тесен те йăнăш мар.

Куншăн райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ çав тери хĕпĕртерĕ. Пурпĕрех усăсăр иртмерĕ çĕннишĕн чупнă «катаччи», район пурнăçне илем кĕртрĕ-кĕртрех. Тарăнвар-Тымар енче çÿреме те кăмăллă халĕ. Пĕринче председатель шÿтлемесĕрех каларĕ: «Альберт Григорьевич, ухутана чĕнетĕп, колхоз пĕвисенче хур кайăк нумай».

Большаков, паллах, пăшал çакса «Шурăмпуç çăлтăрне» ухутана каймĕ. Анчах ĕçпе кĕрсе тухма унта яланах кăмăллă: ял пĕвисенче тăп-тăрă шыва ярр уçса ярăнакан вĕçен кайăксене сăнама мĕн пахи. Çуркунне тăрнасем те чĕпĕ кăларса ÿстерме унтах анаççĕ. Темиçе çул каялла вĕсене кунта курма никам та тĕлленмен. Вăрманти Çĕлен юхан шывĕнчи мăн пĕвере кайăк кăвакалĕсем кăначчĕ. Ирĕк панă вăхăтра Альберт Григорьевич хăй те, юлташĕсемпе пĕрле, ухутара, вĕсене пере-пере антарнă. Ухута уншăн – ирĕклĕх чун кантармăшĕ.

Кайăк кăвакалĕпе хурĕ, тăрна Санар тăрăхне явăçни хăех ĕнтĕ Тельман Федотович çут çанталăк чĕрĕлĕхĕшĕн, илемĕшĕн кĕрешнин ырă палли пулса тăрать. Çирĕм пилĕк гектар чухлĕ халĕ вĕсен уйĕсенче шыв сарăлса выртать. Пĕвисене вун пиллĕк таран, умлă-хыçлă пĕвеленĕ. Пурне

те – хуçалăх меслечĕпе – хăйсен вăйĕпе. Вĕсем тавра тĕрлĕрен йывăç лартнă. Шывĕнче пулă, ăтăр ĕрчет.

Пĕр енчен çĕр суранне сиплет Тельман Федотович, тепĕр енчен илсен – çут çанталăка сыхлать. Мĕншĕн мухтамалла мар-ха ăна çак ырă та пархатарлă ĕçшĕн? Етĕрне енчен тупса килнĕ çĕнĕлĕх тымар ярса папкаланчĕ. Районтах пур ĕнтĕ халĕ лайăххи. Ăна таврана сармалла, унпа пурне те тĕлĕнтермелле, пурин чунчĕрине те уçмалла. Ачакран курса таврăннă хыççăн мăкланнисен чĕрине те çĕнĕлĕх кăварĕ çунтартăрччĕ.

Большаков çак Ачак чăвашĕнчен тĕлĕнет. Мĕнле майпа, мĕнле чĕлхепе, мĕнле кăмăл-туйăмпа ĕнентерсе хĕмлентерме пултарнă-ха вăл çĕнĕлĕх чĕрĕлĕхне ял çыннисен чĕринче? Кашни çын çĕр йывăç лартса, вĕсене ӳстерсе вăрман туниех хăйне евĕр паттăрлăх-çке. Аркадий Павловичăн тем тесен те турă паниех пур, çав вăй-хăват ĕнтĕ ыттисене çунатлантарать, çĕклет, вĕçтерет. Хресченпе çĕр, этемпе çут çанталăк уйрăлми çыхăннă. Çав çыхăнура вĕсен пĕр-пĕрне вăйлатса, çĕнетсе, илемлетсе пымалла. Çак çĕнетӳре çыннăн çĕнтерсе хăйне пурăнма, тĕнчене тытса тăма пĕлмелле, çав тĕнчере унăн туллин савăнмалла: хырăм туттипе те, çи-пуç тирпейлĕхĕпе те, çурт-йĕр капмарлăхĕпе те, чун хавалĕпе те. Пĕтĕм тавралăх типтерлĕн, хитрен, сăпайлăн курăнать «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхозра. Пĕр пĕтĕмĕшле культура хăватлăн аталанать кунти ялсенче.

Анчах мĕншĕн вăйлах сарăлмасть-ха, сарăлсан та питĕ хуллен тымар ярать çак ырлăх ытти районсене? Мĕн, уншăн республикăна ертсе пыракансем тăрăшман-ши? Районсенче, çав хушăрах Вăрманкасра та ыйту хускатман-ши? Тăрăшнă пек курăнать те кашни семинар е канашлу хыççăн... Чăваш АССР Аслă канашĕн президиумĕ çут çанталăка хӳтĕлес, çĕре ишĕлесрен сыхлас ыйтусене хăçантанпа ĕнтĕ хăй аллинче тытать. Республикăра, районсенче комиссисем туса хунă. Шупашкарта вĕсенчен тăтăшах отчетсем итлеççĕ, ун

чухне лайăххисене мухтаççĕ, премисем, грамотăсем параççĕ, япăххисене ятлаççĕ. Çулсерен пĕрешкел юрă. Çав хушăрах çĕршер çырма сарăлать, çĕршер-пиншер гектар çинчи тăпра пулăхĕ çуллен шывпа юхса каять, лартнă мĕльюн йывăçран чĕрĕкки те тымар ярса çеçкеленеймест. Äçта, мĕн чухлĕ йывăç çулсерен лартнине шута илес пулсан-и, республика çĕрĕ тахçанах сĕм вăрман пулса тăмалла. Ячĕшĕн тăвакан ĕç пĕтерет пире. Мĕншĕн, мĕншĕн пулса тухать-ха çапла?

Большаков пуçĕнче хуравĕ те тупăнать. Пуçланă ĕçе вĕçне çитерейменни сӳрĕклĕхе аталантарать. Çав хăнăхăва çумран яланлăхах илсе пемесен, пирĕн малашне те нимĕн ырри пулмасть. Чĕресем мăкланĕç. Çав мăк айĕнчен тарăн йĕрсем сарăлса ăш-чике хавшатĕç. Çавна пулах ырă мероприятисенче ирттернĕ çĕршер пуçлăхсен çĕршер-пиншер кунĕ, сехечĕ усăсăр çунать. Çавăнпа Айдак сăмахĕ те, унăн хаклă вăхăчĕ те никамшăн та ылтăнран хаклă пулмĕ.

«Эх, хамăр председательсене тепĕр хут Ачака илсе кайса Айдак çырмисенчи чăтлăха хупса усрăттăм. «Çырма-çатра тĕпне, çыранне çирĕплетме вĕрентĕмĕр», – тесе йăлăнмасăр та кăлармăттăм, унсăрăн вĕсем тăна кĕрес çук. Темшĕн çитмест вĕсен чун-чĕрине çав пурнăç ырлăхĕ», – шухăшлать вăл тарăхнă вăхăтра. Унăн çак шут та пур: «Пуçлăхсен ĕçне палăртнă чухне тăван тавралăха тата çут çанталăка сыхлассипе вăл мĕн-мĕн тунине чи мала хумалла. Продукци калăпăшĕшĕн кăна тăрăшакана мухтама васкамалла мар». Шел те, халлĕхе чи нумай аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, тырă, çĕр улми, пахча çимĕç туса илекен пуçлăхсем ытларах хисепре-ха. Хуçалăха пĕр пĕтĕмĕшле анлăн аталантарнине, халăхăн чун-чĕре культурине ӳстернине ытлах карта хумаççĕ.

Çапах та Аркадий Павловичăн çирĕп те анлă çуначĕ Вăрманкасра пĕр çамрăк çунат хушма пултарнăшăн Альберт Григорьевич хĕпĕртемесĕр чăтаймасть. Халĕ унăн ыттисене те çунатлантармалла. Пур çĕрте те шăтса

сарăлни курăнать-ха çав çунат. Пур пĕрех çӳлтен хистенипе, такам пулăшнипе чĕрĕлекен пулăм. Большаков çын хăй куç уçнине, вăраннине юратать. Чипер çынна икĕ алăран тытса уттарнипе малалла нумай каяймастăн. Апла тăк, вĕсен хăйсен те хуçалăх пуçĕнче тăма юрăхлă çынсене пур енчен те тĕплĕн тишкермелле, ăнсăртран лекнисенчен хăвăртрах хăтăлмалла. Ертсе пыракан çыннăн интеллект шайĕ çӳлте пулмалла. Çакна яланах асра тытмалли çинчен манмасть вăл.

Çут çанталăка сыхласси, çĕре упрасси, таврари сывлăш тасалăхĕшĕн кĕрешесси уншăн, райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕшĕн, пурнăç тĕллевĕ. Хăй кăна мар, кашни çын ăс-тăнĕнче экологи шухăшлавĕ çĕнĕлле аталантăр тесе çине тăрать.

Ялсем тăрăх çӳресе тусан çăтса ывăннă хыççăн ĕç пӳлĕмне кĕмерĕ, чукун çул урлă каçса анаталла васкаса утрĕ Альберт Григорьевич. Темшĕн унăн паян вăрман хӳттинче сулхăнра пулас, пуçри çĕр-пин проблемаыйтусенчен вăхăтлăха та пулин хăтăлас килчĕ. Уçăлма тухрĕ, утакан çул йывăçсем хушшине пăрăнса кĕчĕ. Хутăш вăрман ăна ăшшăн çупăрларĕ, нӳрĕрех сиплĕ сывлăшĕпе кăкăра уçăлтарса ячĕ. Кĕлетке çăмăлланса çĕкленчĕ, пуç тасалса кайрĕ. Пуç тăрринче йывăçсен кашлавĕ кайăксен юррипе хутăшса çут çанталăк кĕвви кăларчĕ. Чăрăш вулли тăрăх йăпăртатса улăхакан пакша тăп чарăнчĕ те этем çине ыйтуллăн пăхса илчĕ. Çăмламас илемлĕ чĕр-чуна пăлхантарса хăратас мар тесе Большаков пĕр хушă сывлама пăрахрĕ. Пакша ылтăн хӳрине пăлтăртаттарса каллех çӳлелле вирхĕнчĕ. Улăха анса вăрăм пĕвере çан-çурăма уçăлтарнă хыççăн Большаков çыранра самай вăхăт шухăша кайса ларчĕ.

Мĕн тери ырă, мĕн тери тутлăхлă вăрман сывлăшĕ. Унсăрăн этемлĕх пурăнаймасть. Çут çанталăк ырлăхĕ – çĕршыв пуянлăхĕ. Совет Союзĕнче тĕнчере ӳсекен вăрманăн чĕрĕк пайĕ пулсан, Чăвашра – 650 пин гектар, Вăрманкас районĕнче – 80613.

Акă мĕнле пуянлăх! Акă мĕнле хуравлăх этем умĕнче, çав шутрах – Большаков умĕнче те! Мĕншĕн тесен вăл – район совечĕн пуçлăхĕ. Советăн район çĕрĕ çинчи симĕс пуянлăха май килнĕ таран сыхласа хăварассишĕн хăйĕн саккунлă вăйне асав шăллĕн кăтартмалла пек. Анчах, кăтартаять-и-ха вăл ăна?

Варкăш çилпе хумханакан вăрман пикисем çине хĕрхенӳллĕ куçпа пăхса илнĕ май Альберт Григорьевич çапларах шухăшларĕ: «Вăрманкас район совечĕ те, республика Министрсен совечĕ те шăлсăртарах-ха ку енĕпе. Вĕсем Мускав хушнине, эпир Шупашкар хушнине хирĕçлейместпĕр. Çӳлти влаç пурне те мĕн хушнине тутарать. Хирĕçлеме пăх-ха унта, мĕн курса ларăн...»

Вăрмана тĕлли-паллисĕр варварла касса пĕтернине пула Вăрманкас тăрăхĕ кăна мар, Улатăрпа Пăрачкав тата Çĕмĕрле çĕрĕ те кукша пуç пек курăнакан пулса юлчĕ. Ӳссе çитнĕ йывăç юлмарĕ те вара, тĕнче кулли мар-и, çырмасене тапăнчĕç. Тункаталлă çара çырмасенчи çăл куçсем çапла майĕпенех типеççĕ, шывĕ хухать, вĕçен кайăкĕ тасалать. Çитĕннĕ юманпа чăрăш, хыр, çăка сайра тĕл пулатăн. Ăвăс та хурăн кăна. Вĕсене те мунча пĕренинчен ытла ӳсме памаççĕ. Кама кирлĕ-ши çавнашкал хăтланни? Кама усă парать-ши вăл?

Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ хăй виличчен Вăрманкас вăрманĕнче курса çӳрени аса килчĕ ăна. Чун хавалĕпе, кӳренсе те тарăхса, куççуль кăларсах çырнă пулас чăваш ăсчахĕ ун хыççăн. Хумханса, тĕлĕнсе вуларĕç очерка республикăра, шавларĕç ун хыççăн. Анчах та çак хурăнсем усăсăр шавланă пек кăна пулчĕ вăл. Нимех те улшăну кӳмерĕ. Çавăнпа-и, тен, шутсăр тарăхнăччĕ Яков Гаврилович. Пĕррехинче Шупашкарта, писательсем хушшинче, вăл Большакова палласа илчĕ те калаçса кайрĕ, юлашкинчен çапла патлаттарса хучĕ: «Начар çынсем эсир, вăрмана куç умĕнчех пĕтерттерсе пынăшăн халăх ячĕпе айăпламалла сире. Вăрман пĕтсен, мĕнпе сывлас теççĕ-ши хамăр республика

пуçлăхĕсем те...» Çавăнтанпа ĕнтĕ халăх поэчĕн приговорĕ хăлхаран тухма пĕлмест. Шăпах çав çулсенче тытăçу пуçланчĕ вăрман комбиначĕн хуçисемпе тата республикăри Вăрман хуçалăх министерствипе. Вăрмана сăтăр тăвакансене пĕтерме имçамсемпе усă курма чартарни çĕнтерӳ пуçламăшĕ пулчĕ. Вăрман касмалли лаптăка чакарассишĕн çапăçни тата... Çук, куçран пăхса, аслăрах пуçлăхсем умĕнче ырă пулас тенипе ĕç тухмасть иккен. Çирĕппĕн, хăюллăн çĕмĕрсе пымалла хăвăн шухăшупа малалла.

Ахальтен пуçланмарĕ прессăра каллех Чăваш вăрманĕн шăпи пирки хаяр каласу. Ăна пуçарма хистекенсенчен пĕри вăл хăй пулнă-çке. Кăштах уссине пачĕ вăл. Республика влаçĕсем йăшăлтатни сисĕнчĕ. Вĕсем ыйтнипе Мускавран план чакарса пачĕç. 1986 çултанпа унченхинчен 220 пин кубла метр сахалтарах йывăç касаççĕ ĕнтĕ, вăл шутра Вăрманкас вăрман комбиначĕ – 24 пин кубла метр. «Сире пула плансене улăштарма тивет пирĕн» текелесе мăкăртатрĕç те совминрисем, анчах Большаков вĕсенчен пĕртте хăрамарĕ. Пуçланă ĕç вырăнтан хускалнăшăн ăшра хĕпĕртерĕ çеç. Савăнма вара халлĕхе иртерех-ха. Вăрман, çĕнĕрен лартса пынине пăхмасăр, çаралать те сайралать, вĕтелет те юрăхсăрланать. Вăрман касакансемпе йывăç лартса ӳстерекенсем хушшинче мĕн тери пысăк уйрăмлăх пур. Касма пĕр минут та, ӳстерме – пĕр ĕмĕр.

Çут çанталăк, этем, тĕнче курăм. Çак çыхăнура советсен, депутатсен тĕллевлĕ ĕçĕ мĕн чухлĕ ытларах вăйлă, çавăн чухлĕ пурнăçра ытларах усă пулĕ тесе шухăшлать Большаков. Пурнăç илемĕ – çут çанталăк – çынна ĕçлеме, канма, хавхаланма, ĕмĕтленме, юратма пулăштăрччĕ. Çут çанталăка, тавралăх илемне упрас ĕçсене вăйлатас енĕпе, çавна май çĕршывăн экономикипе социаллă аталанăвне çĕнĕ шая çĕклессипе партин иртнĕ съезчĕ хыççăн саккунсемпе витĕмлĕ йышăнусем кăларнă. Анчах та вĕсене тивĕçлипе пурнăçа кĕртме халлĕхе

вырăнти советсен вăйĕ çителĕксĕр-ха. Шупашкара тӳррĕмĕн пăхăнакан учрежденисемпе предприятисем район совечĕн йышăнăвĕсене ним вырăнне те хумаççĕ. Çавăнпа та Альберт Григорьевич партин вун тăххăрмĕш конференцийĕн советсен вăйне, витĕмне чăннипех вăйлатма кирли çинчен йышăннине савăнса кĕтсе илчĕ. «Советсемсĕр патшалăхăн, хуçалăхăн е социаллă пурнăçăн пĕр ыйтăвне те татса памалла мар. Хăйсене пăхăнса тăракан территорие аталантармалли ыйтусене татса парас тĕлĕшпе советсем пĕтĕмпех хуравлă пулмалла, ирĕклĕн ĕçлемелле, предприятисем илекен тупăшăн пĕр пайне, вĕсем кама пăхăнса тăнине пăхмасăр, советсен бюджетне хывассине ӳстермелле», – палăртнă М.С.Горбачев хăйĕн докладĕнче.

Çыхса партнă алăсем тинех ирĕкленчĕç, çут çанталăка сыхлассипе Мускавра йышăннине малашне район совечĕ хăй тĕллĕн кăна мар, хăйĕн территорийĕнче вырнаçнă предприятисемпе пĕрле пĕр пĕтĕмĕшлĕ, килĕшсе туса пырĕ. Çакăн пирки ĕмĕтленет райĕçтăвком председателĕ.

Ĕмĕтленет те çав... Вуншар çул хушши çĕршывра хуçаланакан хушу йĕрки çав ĕмĕте уççăнлăх саманинче те хĕвел питтине кăларайматсть. Турта хушшинчен тухса кайма пуçланă, ывăннă Компарти янаварĕ юлашки вăйне пухса та пулин хăй çулĕпех мăшăлтататать-ха. Хăвăртлату каррине яри уçма хăтланнă çĕнĕ генсек хăй те шанчăксăррăн ларса пынă пек туйăнать кĕç-вĕç тайкаланса кайса ӳкес пек пыракан урхамах çинче. Пуçлăх çĕнĕлĕх пушшипе кутран та, пуçран та тиверет. Çапах КПСС янаварĕ çĕршыв лавне хăй палăртнă хăвăртлăхпа туртса каяймасть. Перестройка кутамкки ытла йывăр пулас ăна хăйне те. Вăйĕ çитмен пирки кутамккана халăх çине тиенĕ. Халăхăн чăтас пулать. Халăхăн кăмăлĕ вара чурăсланса пырать. Халăха тухăçран анăçа, кăнтăртан çурçĕре çитиччен сарăлса выртакан патшалăхра кунĕн-çĕрĕн нăйлакан перестройка

кĕвви мар, пурнăç улшăнăвĕ кирлĕ. Ун пирки çынсем кăмăл уççинех кăтартмаççĕ-ха.

Район командировкисенчен пĕринче Альберт Григорьевич Тымар ялĕнче пулчĕ. Ăна культура çуртĕнчен тухакан Каргин, аякранах асăрхаса, кĕтсе илчĕ. Çивĕч чĕлхеллĕ çак çынна райсовет пуçлăхĕ тахçантанпах пĕлет. Унăн пысăк пухусенче калакан питĕ тĕллĕ, тăнлă сăмахне яланах пуçа хывма тивнĕ. Комплексла бригадăри парторг халĕ те сăмахне тарăн шухăшлăн пуçларĕ:

– Вăт Альберт Григорьевич, каçарăр та эсир мана, манăн хамăн юрă, – шукăль тумлă Большакова çивĕч куçĕпе ытарлăн сăнăларĕ вăл. – Эсир тĕрĕс мар ĕçлетĕрши, шăллăм, е эпир ĕлĕкхи пек тар кăларса чаваланма манса кайрăмăр-ши çак çĕр çинче, пачах аптрамалла. Ах, çулĕсем хăваласçĕ. Курманни те юлмарĕ пуль. Паян та ытлашши хĕпĕртесех сикмелли çук. Мускав хушнипе радиовĕ-хаçачĕ туй шавĕ çĕклесен те... ташлас килмест. Пирĕн кăмăл хуçăкрах. Тухăç уçă мар. Уçă çил вĕрмест халăх хушшинче. Тем çитмест. Кĕрхи нӳрĕ çанталăк пек. Юрĕ-ха ку. Кăмăлу пулсан, кĕрсе тухăр пирĕн пата. Эп апата васкаттăмччĕ те...

Альберт Григорьевич хирĕçлемерĕ. Урамра пуçланнă калаçу Каргинсен мăн пӳртнех кĕчĕ. Кил хуçи хăнана типтерлĕн йышăннă май, паçăр каласа пĕтерменнине малалла тăсрĕ:

– Мĕн вăлтмалли унта. Эпĕр, халăх айăплă-и? Эпĕр, хушсан, çӳлтен чип-чипер йĕркелесе пырсан, тем тума та хатĕр. Алăра пĕр ĕç пирĕн. Ан çилленĕр те, ырă çыннăмăр, сире эп кăмăллатăп, эп урăххисене ятласшăн. Ытла улпутланса кайрĕç пуçлăхсем, халăхран уйрăлчĕç. Сăмахĕ вĕсен ĕçпе çыхăнмасть. Хуçа пулнă та – пуçа каçăртнă. Теприн пуçне хăйĕнне арпа çеç тултарнă-ха, пурпĕрех хывăх вĕçтерет. Хывăхпа хырăм тăранать-и? Хамăрăн Васка Илли ачи Çемен те пуç пулса пуçне каçăртрĕ. Каларăм эп ăна, кӳршĕме, сан ĕç мар вăл

района ертсе пырасси тесе. Эс учитлă, вĕрент ачасене, халăха çутта кăлар. Вăл районта пĕрремĕш пуласшăн таçта мура васкарĕ. Халĕ, пашалăвĕ пиçеймерĕ те, аптранă кăвакал кутăн чăмма хатĕрленнĕ пек вăшталанать. Пиçмерĕ влаç кăмакинче пашалăвĕ унăн. Сирнешкел пуçлăх кирлĕ унта, халăх шаннă вырăнта. Мухтани мар ку. Халăх хакĕ. Пиçсе çитмен тачка çăкăра та, икĕ питлĕ çăкăра та çын тутлăхлăн çимест. Икĕ питлĕ çăкăр пек икĕ питлĕ пуçлăхсем выççа тăратса хăвараççĕ халăха.

Хăйсене хăва хуллипех хĕртекен хресчен ăшĕнче тарăху тăкăнса кайнине туйса илнĕ Большаков кил хуçине хирĕçлеме шутламарĕ те, унпа килĕше-килĕшех калаçрĕ:

– Тĕрĕслĕхе эпир те хитре сăмахпа хуплаймăпăр ĕнтĕ, Моисей Семенович, чăнах та эпир тăрлавлă ĕçлейместпĕрех хамăр вырăнта. Çырма тĕпне анса ларнă пуçлăхсене çырана туртса хăпартаймастпăр. Пирĕн район çеç анаталла кусать-и? Юрĕ, кунта хăйăрлă, вăрман çĕрĕ нумай, тейĕпĕр. Патăрьел, Каçал, Елчĕк, Вăрмар енче.. хура тăпраран ылтăн илеймеççĕ вĕт. Патшалăхĕ çав вăхăтрах укçине лавĕ-лавĕпе тăкать.Эпирех айăплă – пуçпа пĕлсе ĕçлеме пултарайман район, республика пуçлăхĕсем. Мускаврисем те çавăн йышшисемех-çке.

Кăххăмлатса илнĕ Каргин хăна сăмахне таптаса хăйĕнне каласа юлма васкарĕ:

– Ку сăмахпах хырăм тăранмĕ. Сĕтел хушшине ларарха часрах. Кăмака яшки сăмсана кăтăклантарать. Атту иртенпе çăкăр тĕпренчĕкĕ хырăма яман. Тӳрех парторганизаци секретарĕсен семинарĕнчен яла çитнĕччĕ те. Канашлуран канашлăва çеç ярăнса çӳретпĕр, пире эртелпе пухса пĕрмай çаран ути çулма, тырă вырса çапма, тислĕк тăкма, уя юр тытма тата тем амакĕ те вĕрентет райком. Туршăн та Быстровсен ĕçĕ мар çакă. Кутран тапса кăна салатмалла та çав вăрттăн йăвана?..

Кăна илтнипе Большаков чăтаймасăр кулса ячĕ:

– Эх-ха-хай, улшăнаймастпăр çав эпир тахçантанпа асаплантаракан усал чиртен. Парти ячĕпе хистесе

партине ятлаттаратпăр çеç. Пире те ĕçлеме ум памаççĕ. Пур çĕрте те ялан райком та обком хуçаланать.

Пуç хултăрчне çавăрттарма пăрахман Каргин хушса хучĕ:

– Çапла, эпĕ сире пĕрлех пĕр пушăпа çатлаттартăмха, каçарăр ĕнтĕ. А вĕт килте те икĕ хуçа пулсан... Ĕлĕкхи пекех пĕр патша кирлĕ пулас пире. Çапла мар-и? Эх, ку пăрнăç пурнăçа...Мĕнле пурăнса ирттерĕпĕр ĕнтĕ. Этем вăл çăкăрпа çеç... Этем çăкăрпа çеç тутă мар тенине те тахçантанпах пĕлетпĕр ĕнтĕ.

– Тĕрĕс, канăçлăх та, чун кантармăш илем-силемĕ те кирлĕ çынна хăй вăхăтĕнче. Ăнланатăп сире.

– Ăнланатăр пулсан апла юрĕ-ха, Альберт Григорьевич. Вĕт чи малтан... пурте алла тӳрех кашăк тытасшăн. Чи малтан эппин çынна çăкăр-тăварах, ашпăшах кирлĕ. Çителĕклĕ, ытлă-çитлĕ кирлĕ. Çăкăр пур – пурнăç пур. Çăкăр çук та – эс ху та çук тĕнчере. Хамăр хырăма тăрантармалăх та туса илейместпĕр ăна, пурнăç пуçламăшне. Ылтăнпа улăштарса ют çĕртен сĕтĕретпĕр. Намăс мар-и? Эх турă, тем çăраççĕ, тем пăтратаççĕ сысна вăлашкинче апат пăтратнă пек, тем эксперименчĕсемпе çăрăлса хăтланаççĕ ял хуçалăхĕнче. Çук, ырă çыннăм, улшăнмасть пурнăç: хресченĕн те, рабочин те, интеллигенчĕн те. Акă, тутанса пăхăр-ха çак кăлпассине. Шупашкарта ĕнер сехет çурă черет тăрса туянтăм. Киловĕ тăхăр тенкĕ. Пĕр-икшер татăк лекет-ши пире. Кĕпĕртеттерсе яратпăр та, алю, ыран каллех ил. Мĕнпе? Пилĕк тенкĕ ĕçлесе илеетпĕр-и-ха кунне е ĕçлесе илейместпĕр. Аш-пăш, сĕт юр-варĕ çеç мар, стройматериалĕ те, тумланмалли те, пурте капашсăр хаклă пирĕншĕн, ял çыннишĕн, укçа çитмен чухăн халăхшăн. Мăнтарăн хула çыннисем те «хут татăккипе» тăранса пурăнаççĕ. Ашĕ, кăлпассийĕ, сахăрĕ, ташĕ кальсонпа хĕрарăм йĕмĕ те – талонпа. Юрать мана хулара пурăнакан тăван хăйĕн кăлпасси талонне пачĕ те. Пирн те кăлпасси тутанса пăхас килет. Эх, кĕçех çак

сывлăша сывлама та, çак çĕр çине пусма та талон кирлĕ пулать пуль, тупата. Кам айăплă-ши уншăн?

Ку сăмахсем Альберт Григорьевич чĕрине йĕппе тирнĕ пекех ыраттарчĕç. Района ертсе пыракансенчен пĕри-çке вăл. Апла пулсан, çĕнетӳ тапхăрĕн паллисем район совечĕн ĕç тăвакан комитечĕн кулленхи пурнăçĕнче палăрчĕç-ши? Ун пирки халăхпа канашласа пăхнăччĕ-ха вĕсем, сесси умĕн хăйсен ĕçĕпе çыхăннă вун çичĕ ыйту çине хуравлама ыйтнăччĕ «Колхоз хаçачĕ» урлă. Район çыннисен хуравĕсене пичетлесе кăларнăччĕ. Вĕсенчен пĕри уйрăмах асра юлнăччĕ. Çиçĕм ялĕнчи Константин Плешаков хуравĕ халĕ Большаков пуçĕнче çĕнĕлле янăрарĕ:

«Район пуçлăхĕсем юлашки вăхăтра, шупашкарсем кутран вĕри пăшатанпа ăшаланипе, халăхпа ытларах тĕл пулса совет обществин хальхи тапхăрĕнчи пурнăçне тĕрлĕ енлĕн уçса пама тăрăшни аван. Çапах та ĕç майĕсемпе меслечĕсем райĕçтăвкомпа райкомăн та палăрмаллах улшăнчĕç тесе калаймастăп. Райсовет ĕçтăвкомĕн, пайĕсен, уйрăмах агропромышленнăç пайĕн ĕçĕнче нимĕнле çĕнĕлĕх те палăрмасть. Райсовет ĕçтăвкомĕ лайăх ĕçлет тени паянхи кун тĕрĕс те, сăпайлă та пулман пулĕччĕ. Мĕн пытармалли, экономикăра, социаллă пурнăçра мĕн чухлĕ çитменлĕх куратпăр. Районта халăха кирлĕ таварсем кăларасси çĕнетӳ тапхăрĕнче пушшех анса ларнине, япали пахалăхĕ чакнине ма курмасть-ши Большаков юлташ? Суту-илӳри çĕнетӳ пирки калаçмалли ыр сăмах чĕлхе çине килмест. Аш-пăш, кăлпасси, шăратнă, типĕ çу, кĕрпе, тăхăнмалли кирлĕ тавар ниçта тупса илме çук. Ĕмĕтленсен те, тĕлĕкре лавккаран лавккана чупсан та – кĕсьере укçи çук. Пирĕн те виличченех нуша сумкки çакса çӳрес килмест. Хупăлла уммапа шĕв уйран çисе уйăх пурăнса пăхăр-ха? Хытăрах та ăслăрах шухăшлама пулăшать хресчен апачĕ. Акă ман тĕп сĕнӳ», – тесе чеен кулать вĕсенчен Кукша Куçки.

Нумай-нумай ялта пулса иртме пултарать Тымарти пек каласу. «Халăх чухăнлăхĕшĕн кам айăплă-ши?» текен ыйтăва ăна çеç мар, аслăрах ытти пуçлăхсене те такам та тӳрремĕнех пама пултарать. Е ку каласу уншăн тĕлĕкри пек кăна пулчĕ-ши? Пултăр-и, çапах вăл – тĕрĕс каласу. Пурнăç каласăвĕ. Ял нуши-ырлăхне çителĕклех чăтса-тӳссе ирттернĕ ватă Моисей Семенович та ăна ăсатнă чухне çаплах каларĕ: «Çĕршыв пăтранăвĕнче, аталанăвĕнче эсир те, Альберт Григорьевич, кӳренмелле ан пултăр та, ку таранччен ял çынни умĕнчи парăма татайманах».

Каргинсем патĕнчен аш яшкипе хырăма шăлса тухнă хыççăн Большаков тарăн шухăша путрĕ. Халăхăн пĕр пайĕ, Тымар çынни ăна, район пуçлăхĕсенчен пĕрне, икĕ тутлă апатпа какăричченех тăрантарчĕ.

11

Ура айĕнче кăна мар, хăйĕн иккĕмĕш çамрăклăхĕн керменĕ-ампарĕ айĕнче те çĕр чĕтреннине Салакайăк Карачăмĕ Тымарти Хурăн Ульянĕн хĕрĕпе Крахьянпа пĕрлешнĕ хыççăн тем вăхăтран туйрĕ. Анчах яшлăх хăвачĕпе вашкăртса кăна çӳретчĕ-ха хăйĕн савăнăçне ниçта хума пĕлейменскер. Ватă ампар никĕсĕ çинче майлаштарса никĕсленĕ Салтаккай йăхĕн тĕпкĕчне те кĕтсе илчĕç арăмĕпе иккĕшĕ. Крахьян машинăпа чупма вĕреннĕ хыççăн старикĕн те ал-ура урапалланчĕ. Ирпе фермăна кĕрлеттерсе çитеççĕ те... Унтан утара çитиччен пĕрре сывламалăх çеç. Каçпа каллех киле пĕрле таврăнаççĕ. Пасара-мĕне е Шăхранпа Шупашкара кайма та çул кĕскелчĕ. Мĕн ырлăх мар. Çĕрле упăшкине тĕнче уçлăхне вĕçтерсе яма хатĕр Крахьян хĕрарăм савăкĕн райĕнчех киленет-ха. Пĕрлешнĕренпе кашăк-тирĕк шакăртатни урама тухман.

Арăмĕн тепĕр ача çуратас умĕнхи кану вăхăчĕ çитсен Карачăм вăрмана пĕчченех утма пуçларĕ. Хушăран вăл утар пӳртĕнчех çывăрать е Тымара мăнукĕ патне тухать.

Шупашкар артисчĕсем килнĕччĕ. Калаçса татăлнă пекех, концерт курма Хурăн Ульянĕ те вĕçсе çитнĕ. Çамрăклăх туйăмне çухатма пĕлмен хĕрӳ хĕрарăм ун çумнех кăшăрт кĕрсе ларчĕ, никам сисмелле мар мăйкăчласах илчĕ авалхи савнине ясар куçĕпе, япшар чĕлхипе пăшăлтатрĕ:

– Сана курманни-ыталаманни, кĕрӳ... Вилеп пĕччен тунсăхра.

– Савăн халь, культура керменне культурăланмах килтĕн пуль, мана манман тющă, – Карачăм та куç айĕн вăлтрĕ ăна хирĕç.

– Тĕнче чĕрĕлнĕ чух ма савăнса юлас мар, юратнă кĕрӳçĕм.

Вĕсен калаçăвне юрă хупласа хучĕ:

Юратсассăн шăпчăк пек юрлать чĕре,
Сансăр пурăнма май çук-çке тĕнчере...

Вăрттăн туйăм вăрă туйăм çав. Вăл арçынне те, хĕрарăмне те ухмах чирĕ ертет. Туртăм вăйĕ Карачăма та сысна курăкĕ пусма пуçланă ĕлĕкхи çулпах танкăштарчĕ.

– Килнĕ майăн, алла лекнĕ чухне сана халь, савниçĕм-кĕрӳçĕм, хĕвел тухиччен те ытамран вĕçертместĕп, – сивĕнмен чун улах ачине вĕрилентерсе яшлантарчĕ.

Карачăм хирĕçлем пекки тукаларĕ:

– Хĕрӳнтан хăра, тющă-аннем, хĕрӳнтан намăс капла хăтланма пире.

– Крахьянтан-и? Кĕрте, эп ăна, кăшласа яма хатĕр. Ман мар намăсланмалла ун умĕнче, унăн, питне кĕççе çĕленĕскерĕн, ман юратăва туртса илнĕшĕн. Ых, тем туса хурăттăмччĕ, анчах хĕрĕм хамăн. Хам кутран тухнă хĕрĕм сана кутпа савăнтарать-ха та. Тĕнче намăссăрри вăл. Амăшĕнчен кулнăшăн киле кĕртместĕп эпĕ ăна качча панăранпах. Эй турă, ма ăна урăх арçын тĕлне мар, уписательнă сан шур сухалу айне тумалла пулчĕ. Йĕрес те килет. Халĕ тата, сана

çаклатса килнĕ чухне, юрлас та килет. Эх, Карачăм, тыт та чăм хăвăн юрату кӳллине. Унта пире ĕмĕрĕпех пĕрле ишме савăк пулнă... Атя, сăмакунне ĕçер те, автан яшки çиер те, майĕпен аса илер çамрăклăха...

Сĕтел çине хăна апачĕ-çимĕçĕ тухса ларнине те сиссе юлаймарĕ Карачăм кăштах телевизор пăхса илнĕ хушăра. Апатланнă хыççăн епле аташассине хăпартланса та, хăраса та кĕтсе ларакан улахçă амăшĕпе упăшки мĕн хăтланнине Крахьян курас пулсассăн мĕнле асар-писер çанталăк килсе тухассинчен шикленсе те илет-ха. Çапах та вăл варлине хирĕçлеме вăй çитереймест. Унпа чылай вăхăт хушши йăпанманнине пула тата хăйĕн те Ульяна паракан канлĕхпе ырă курас килет.

– Эсир утарта унта тунă-и перестройка, туман-и, эп пĕлместĕп, анчах...

– Тунă, тунă, Ульяна, – шӳтлерĕ Карачăм. – Упа тӳнтерсе хăварнă вĕллене карта çумĕнчен шаларах куçарса лартнăччĕ.

– Ан пӳл-ха эс мана хăвăн хурту-хартупа, – терĕ малалла Ульяна. – Настуящи перестройка пирки эп. Сирĕнне пĕлместĕп, анчах... иксĕмĕрĕн юратура тумаллах çав Мускаври курпун патша хушнă пек перестройка. Пĕлетĕн-и, эп Вăрманкас пасарĕнче алăран юри туянтăм ак çакна. Акă, кур, – тесе Ульяна çытар айĕнчен илемлетнĕ пĕчĕк кĕнеке туртса кăларчĕ. – Кантăка килсе тӳнлеттерекен такам ӳсĕр-какăрĕ валли мар, тулькка сан валли. Вулатăп-вулатăп та ăна, асса кайнипе ним тăваймасăр нушаланатăп та, сана хам çума пăчăртаса йăпаннă пекки пулатăп та, аран-аран çывăрса каятăп. Атя, тӳшек çинче вулар. Хывăн часрах, йăшăлтаткала. Ух, сана, çара паккана...

Çарамасланнă Ульяна радиола ячĕ, «линкка-линкка авкаланма» юрă кĕввипе варлийĕ тавра йăкăш-йăкăш шукаласа çаврăнчĕ. Нимсĕр-йĕмсĕр тăрса юлнă Карачăм кĕнекере мĕн çырнине вулама пуçларĕ:

«Арçынпа хĕрарăм юратăвĕ». «Хĕрарăм арçын валли çуралнă, вăл – унăн шанчăкĕ».

– Çак юрату кĕнекине иксĕмĕр вуласа тухмасăр та кăларса ямастăп сана, пĕрре читлĕхе лекнĕ ăмăрт кайăкăм, – ыталаса çыпçăнса ларчĕ ясарланса çунакан Ульяна Карачăм çумне. – Унччен иксĕмĕр пĕр майлă, хамăр майлă кăна савăшнă пулсан, кĕçĕр вун икĕ майпа аташса ыр куратпăр. Тавах çав Михала патшана ирĕклĕх панăшăн халăха. Уççăнлăх хĕрарăм тĕнчин чаршавне те яри уçса ячĕ. Эпир те çĕнĕлле юрататпăр, савăшатпăр-савăнатпăр тинех. Сывă пултăр утиял айĕнчи перестройка!

Перестройка питĕ йывăррăн пурнăçа кĕрсе пырать тенине Герасим Филиппович Воробьев хăйĕн ачисенчен те, колхоз хуçинчен Тельман Федотовичран та, райкома ертсе пыракан Семен Ильичран та, район каланчи хуçинчен Мăн Альпăран та пĕрре кăна мар илтнĕччĕ. Ирччен, хăваласа ĕшентернĕ ăйăр пек çăвартан кăпăк кăларнă хыççăн, хăй те пĕтĕм халĕпе туйрĕ çĕнĕлĕх нуши мĕнне. Хут çине çырни пĕç хушши çырни мар çав. Ар часрах ывăнать. Хĕрарăм вăл ялан чăтнă, чăтать те. Хĕрарăма ăна турă çут çанталăк тĕнчи тытăмĕн вăйне панă. Уншăн перестройка канлĕх сăпки кăна. Арăн вара пурне те чăтмалла, тар тăкмалла. Хуняма епле ирхи шăпчăк пек юрласа çÿрет, кăмака умĕнче тем пĕçерсе-ăшаласа тутлă шăршă кăларнă, ава. Уншăн перестройка чăннипех революциллĕ çĕнĕлĕх. Вăл утиял айĕнчен улшăнса, хĕрсе, хĕмленсе, хĕвелленсе, илемленсе тухнă, йăлт-ялт тукаласа çурхи çамрăк кĕсре пек ихĕрет:

– Караська, кил часрах ман пата? Чуп ту хытăрах – паянхи иртен пуçласа тепĕр ирччен. Эх, епле юрлать ман чунăм. Ямастăп ак сана, лартатăп та кăкарса...

– Йытă пек-и? – ачашшăн çупăрлать Карачăм канлĕхпе ирĕлсе кайнă еркĕнне.

– Йытта кăкаракан сăнчăрпа мар, хамăн юрату вĕренĕпе мăйкăчлатăп ак çапла, çапла... çапла...

Пĕтĕçӳ шăршипе сурăх илĕртсе кайнă така та киле хăй тĕллĕн тавраннаймасть те, этемĕн те çăмăллăнах уйрăлас килмест пуль çав юрату ирĕклĕхĕнчен. Карачăм та, утарта кун каçнă хыççăн Хурăнвар çулĕпе мар, хăйĕн тахçантанпа такăрлакан сукмакĕпех анкарти хыçнелле тăклаттарчĕ. Инди çыннисен авалхи юрату кĕнекине тата малалла вулас та малтанхинчен те туйăмлăрах кантарас килсе кайрĕ çан-çурăмне хальччен хăтланса курман аскăнчăк вылявра. «Крахьянăм ку енĕпе пур пĕрех канура-ха, эп Тымарта çывăрса пурăннăшăн нимех те пулмĕ ăна, хуралçă чирленĕ те, утар сыхларăм тесе тыттарма та пулать. Ку вăйăа эп шутласа кăларман, вăй пур чух ыр курса юлас-ха. Эх, «маншăн пулсан хĕрĕ лайăх, амăшĕ тата лайăхрах», – тесе юрла-юрлах çитсе кĕчĕ вăл тепĕр кунне те варлийĕн пӳртне.

Кĕнекере сĕннĕ юрату майĕсене виçĕ каçра майлаштаркаласа тĕрĕсленĕ улах каччи тăрансах çитмен туйăмлă вĕри хĕрарăмран аран-аран уйрăлчĕ. Ульяна хăйĕн хĕрĕ пирки çăвар те уçтармасть, хăнăхнă вăйăа Карачăмпа татах та малалла тăсасшăн. Асап мăйкăчне татмах тиврĕ улах каччин.

Киле çитсе хапха алăкне уçсанах Карачăм ăшне урăхларах сывлăш кĕрсе кайрĕ, ăша вăркаттарса ячĕ. Хăравçăлăх туйăмне парăннă ури унăн чĕтревлĕн туртса килчĕ. Кĕлетре тем шăлт-шалт тунипе вăл шартах сикрĕ. Шалта арăмĕ тем тăвать-ха тесе унталла утрĕ. Крахьян чăнах та иккĕмĕш хутра чакаланать. Карачăм хуллен картлашкапа хăпарчĕ, пĕшкĕнсе урай сĕрекенскерне сарлака купарчипе мăн хырăмĕнчен ыталаса илчĕ: «Крахьянушка, эпĕ ку». «Караська, ку та эпех-ха, кута кайнă упăшкамçăм, – тесе тӳрленчĕ те арăмĕ çиллес сăнне ялкăштарса йĕпе ластăкпа яра пачĕ ихĕрекен упăшкине питрен. – Ăçтан килнĕ – çавăнта кай». Ку çитмерĕ-ха тата кăтăрса кайнă Крахьян кăмака умĕнче ларакан авăрлă çатмапа çатлаттарчĕ çийĕнчен. Питне-

куçне хупласа тытнă кил хуçи пусма картлашкисене шутламасăрах хырăмпа аялалла шуса анчĕ.

Ял куçлă та, хăлхаллă та иккен. Сарафан радиовĕн çĕнĕ хыпарне хăлха тăратсах итленĕ иккен çамрăк арăм. Пиччĕшĕн туйĕ хыççăн çĕн хăта ĕçкинче ют саппун айне лексе малтанхи арăмĕнчен Анукран вĕри турчка вĕçĕ тутине пĕçертнĕ майлах çĕнĕ арăмĕнчен те вĕри çатма тутанса пăхмалла пулчĕ шухă Карачăмăн. Йăлтах Хурăн Ульянне пула, кĕçенме пăрахман Тымар кĕсрине пула.

Çак камит хыççăн Салакайăк Карачăмĕ, халăх çинче намăс тесе, катăк тутана хупламашкăн каллех сухал ўстерме пуçларĕ.

Хĕрĕпе амăшĕ хăйсен юратăвне мĕнле пайласа çураçнине хăйсемсĕр пуçне никам та тĕплĕн пĕлеймерĕ. Тымарпа Хурăнвар тĕнчинче вăл хĕрарăмпа арçын хушшинче ĕмĕр-ĕмĕр пулса иртекен çемье мыскарисен шутне çеç кĕрсе юлчĕ. «Кашни кĕсре валлиех ятарлă ăйăр çук. Çуркунне лашасене яланах ăратлă ăйăрпа черетлесе ерттернĕ. Хастарлăха хавшатас марччĕ çеç. Улаха кайман арçын таврара та сахал пуль. Ма ман ар кĕтĕвĕнчен уйрăлса сăмса усса лармалла-ха, турă панă хăватпа, май килнĕ чухне, йыт пуллисемпе выляса юлас», – тесе шухăшларĕ Карачăм арăмĕн çил-тăвăлĕ лăпланса пынă кунсенче.

Салакайăк ами чĕпĕ кăларсан йăвара урăх сасă янăрама тытăнчĕ. Хĕр савăнăçĕпе кĕвĕçў хăр-харĕ те урăхла кĕвве куçрĕ, кĕлет пуçне хăма çапса тунă йăвана та кăçал сала кайăк вырăнне кăвакарчăн килсе йышăнчĕ, чĕпĕ кăларчĕ. Пурнăç каллех çурхи кĕвве куçрĕ.

Ара кил, çемье чĕтренĕвĕ çĕр чĕтренĕвĕ мар-иç? Тĕнчере çулталăкне çĕр пин çĕр чĕтренĕвне палăртаççĕ пулсан, Салакайăк Карачăмĕсен пусма картлашки чĕтренĕвне Крахьянсăр пуçне никам та туйман, ун пирки ĕмĕрсен кĕнекине çырса хуман. Çĕр тытăмĕн çав инкекне пула вуншар-çĕршер пин çын тĕнчерен уйрăлать пулсан, вĕсен юрату чĕтренĕвĕнче Карачăм

çеç хур курчĕ. Çапах та чĕтренӳ Крахьян ăшĕнче чарăнсах пĕтмерĕ, хушăран чуна силлесе илет те, упăшки кăшт айăпа кĕнĕ самантра чĕлхе çине ташласа тухать. Акă хальхинче те... Туйрĕ-ха арçын, хĕрарăмĕ унăн кăвакарчăн юррине итлесе тăранаймарĕ курăнать те пĕррехинче çĕрле, ирех хăйĕн юррине тăсса ячĕ:

– Эп ача çуратиччен те виç каç килте çывăрмарăн та, вăрман тилли хăй сукмакĕпе вăрттăн юртса ĕшеннĕ пулас. Арăму çинчен те манса ан кай. Эп те, ачаллă пулнă хыççăн, ытти хĕрарăмсем майлах çĕнелсе кайрăм пулас. Иксĕмĕр хушăра та хăвăртлăх, çĕнетӳ кирлĕ пек туйăнать. Эс ман аннепе аташни темшĕн ырра мар пек. Тĕлĕкре эп Хуйхă пирĕн паталла васкаса утса килнине куртăм. Турă инкекрен çăлтăрах. Епле пулсан та пепкемĕрсене чир-чĕртен, инкекрен сыхласа ӳстересчĕ.

– Перестройка пирĕн киле те çитрĕ-иç, – текелесе уйрăлчĕ Карачăм вырăн майласа пуçтаракан вăйлă арăмĕн кĕлетке хусканăвĕсене шеллĕн пăхса илнĕ май.

Çиллине шăнарайман Крахьян вăрт çаврăнчĕ те чечеклĕ халатне ик еннелле яри уçса ячĕ:

– Уççăнлăх тĕкĕрĕ те уççăнлăх тĕкĕрĕ тесе шавлаççĕ те ирĕн-каçăн, ме, пăх арăмун уçă тĕкĕрĕ çине. Пăх та, суйла: ман ытларах туртать-и сана хăй патне е аннен тĕкĕрĕ? Пуçне уснă киккириксĕр автан... Çумри чăхха пусайман айван.

Арăмĕн уççăнлăх тĕкĕрĕ умĕнче Карачăм куçне мăч хупрĕ. Самантрах унăн куçĕ умне Хурăн Ульянĕн уççăнлăх тĕкĕрĕ сĕмлĕхе йăлкăштарса тухса тăчĕ.

Вăт пурнăç вăл мĕн тери тем тĕрлĕ. Крахьянăн тĕлĕкĕ епле тĕл килчĕ. Салакайăксен Хурăнварти йышне анăç енчен чăнах та мăн Хуйхă утса мар, вĕçсех çитрĕ. Павăл Фомичăн ывăлĕ Сергей, хĕсметри салтак, сарăмсăр вилнĕ иккен.

– Хĕрарăм вулканне пусарайманскерне сана, ват качака такине, вăн атом аçтахине пусарма ямалла, – çивĕч чĕлхипе çуллаpĕ тепĕр каçхине те «пораженени

тӳснӗ» Салтаккай йăхташне Крахьян. – Чернобыль электростанцийӗ мӗнле алхасни çинчен илтрӗн пуль радиопа? Хăпарса пăх халь те йăтăнса анман пушар каланчи тăрне. Унтан курăнать пуль. Павăл хăтасен Серушӗ те çав вут ăшӗнче çуннă тет. Авă, хăйматлăх атте лайăх вуласа парать ак лекци. Вашкăрттарса килет. Кӗтсе ил.

Хăйматлăх хӗрӗ ыйтмасăрах чӗлхе йӗрне çавăн енне ӳкерчӗ Числов Петӗрӗ пӳрте кӗрсе сывлăш çавăрса янă хыççăнах, мӗншӗн тесен «Чернобыль» сăмах иртнӗ талăксем хушшинче Африка кут шăтăкне те кӗрсе там-там шавӗпе сиккелекен некăрсене çурçӗрелле пăхтарчӗ пуль.

– Ай, тамăкран та тамăка лекрӗ пирӗн çӗршыв. Пӗрремӗш тамăкне эпӗ революцисемпе империализм, граждан вăрçисен вăхăчӗпе, иккӗмӗш тамăкне Гитлерпа Сталин вăрçипе танлаштараттăм. Иккӗшӗ те тӗнчене кисретрӗç. Гитлер пире те, амерӗксемпе акăлчансене те атом бомбипе пăчлантарма патнех çитнӗччӗ çав... Американецсем нимӗç атомщикӗсене илсе кайнă хыççăн хӗрӗх пиллӗкмӗш çулта, çав хаяр хӗç-пăшалпа вӗсем Японие чӗркуçлентерсе лартрӗç. Хиросимăпа Нагасаки инçет хӗвелтухăçӗнчен икӗ хӗвел пек ялкăшса çуталчӗç американецсем атом бомби çурнă хыççăн. Яппунсем тӗнчере чи малтан тамăкра пулса курчӗç. Халӗ анăçра çавнашкал тепӗр хӗвел ялкăшрӗ, – терӗ вăл васкамасăр.

Хăйматлăх кӗрӗвӗпе хӗрӗмӗ çăвар карсах итленипе хавасланса, вăл умри сăра куркине тӗппипех çавăрса хучӗ те, стена çумӗнче çакăнса тăракан СССР картти умне пырса тăчӗ.

– Хăш вырăнта-ха вăл Чернупăль текенни? – тесе ура çине тăчӗ кил хуçи. – Пурне те çутă кирлӗ-çке, çвет тени. Хӗрсе те çутăлсах пурăнасшăн. Çампах лартрӗç пуль те ӗнтӗ ăслă çынсем çав электрустанцисене, атăма кӳлчӗç. Эх, çӗн япала вăл ялан хӗн кăтартать этем хăйне йăлтах çӗнтериччен. Сан пуç пӳрнӳ тӗлӗнчи-и, хăйматлăх?

– Ак çакăнта, – Киевран тăварах Припять юхан шывĕ Днепра хушăннă вырăна сăмсипе тĕллеттерчĕ стариккине Крахьян. – Украинăра.

Кулмасăр чăтаймарĕ хăйматлăхĕ Карачăм лапчăннă сăмси тăррине пўрнипе тўрлетсе каялла чакнине курнă май, вара вăл хăйĕн пуçĕнче мĕн пуррине вĕсен умне кăларчĕ:

– Капашсăр тĕлĕнмелле вăл, тĕнче курăм. Ăна йăлтах пĕлсе çитерекен этем те тупăнас çук çĕр çинче. Çапах та пайăн-пайăн хăпăтаççĕ унăн вăрттăнлăхне, Çĕр тытăмне, çут тĕнчене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çиллентерсе вăрçтараççĕ. Тахçан çирĕпленнĕ ăнланса пĕтме май çук йĕрке пире хушăран самаях тăн кĕртсе илет. Акă, Çĕр хăйĕн пурнăç çаврăмĕнче вунă çулта пĕрре чĕтренсе этеме шăртса-сыстарса ярать. Ăна никам та тытса чарма пултараймасть. Этем, çут тĕнче тытăмĕн капашсăр хăватлă курăнман пайне тытса хупса лартнă хыççăн, ăна атом ят парса, унпа пурнăçра усă курма пуçларĕ. Тĕнчери вăйлă çĕршывсем атом электростанцийĕсем ăçта кăна лартмарĕç пуль. Чернобыльте те ĕçлет-ха вăл. Тăваттăмĕш блокĕ вара... этеме итлеми пулнă, çилленнипе-ши, ун аллинчен вĕçерĕннĕ. Ĕнер Киевран самолетпа çемйипех тарса таврăннă шăллăмăн ачи Никăн каласа пачĕ. Вĕсем çав таврашрах пурăнаççĕ-çке. «Ĕçрен çĕрлехи сменăран таврăнаттăмăрччĕ, – терĕ вăл. – Ман ырантан отпуск пуçланмаллаччĕ. Çурçĕр иртни пĕр сехет ытларахчĕ пулас, сасартăк Чернобыль хули çийĕн пĕлĕте шăтарса тем анлăш вут-çулăм хăпарса кайрĕ, çути сўнмерĕ. Ăна-кăна пĕлмесĕрех киле çитсе çывăртăм. Ирпе тин мĕнле тĕлĕнтермĕш пулнине пĕлтĕмĕр. Хăрушă халь унта пурăнма. Радиаци кĕлеткене витĕрех тирсе илчĕ пуль ĕнтĕ. Мĕн кĕтет-ши пире халь?»

– Паллă ĕнтĕ, – хуйхăрнăн хаш сывларĕ Крахьян, сăпкине сиктернĕ май. – Хамăр пата та çитĕ-ха вăл усал, американецсем яппунсене парнеленĕ пайăрка чирĕ.

– Эп хăть ĕмĕре ирттертĕм темелле, леш тĕнчене улăхмалли пусма картлашки çине хăрах урапа ярса пуснă, сире, çак ывăлăмпа хĕре шалккă, пурне те. Çав инкеке лекнĕ çынсене, шутсăр шалккă, – хуçăк сасă кăларчĕ Карачăм. – Амерĕксем тĕнче халăхне хĕвел тухăçĕнчен пĕтерме пуçларĕç те, халĕ хамăрах хамăра тĕп тăватпăр-ши, вăрçă-харçăсăрах. Тĕнче пĕтессе пуль ку. Турă та тытса чараймасть-çке мушельник атăмне. Библире çырнă пекех килсе тухать-ши?

Хăйматлăхĕ хушса каларĕ:

– Хиросимăпа Нагасаки хулисем çине американецсем пăрахнă атом бомбисемпе танлаштарсан, Чернобыль станцийĕнчен çавнашкал тăхăр вунă бомба çурăлнă хăват сиксе тухнă, вун çичĕ облаç, çывăхри ют патшалăхсен çĕрĕ, пирĕн Чăваш çĕрĕ таранах алхасать радиаци, пĕлетĕр пулсан.

– Иксĕмĕр хушăра та аташать пулмалла радиаци – перестройка радиацийĕ, – айăкран сисĕмлех тĕртсе илчĕ упăшкине Крахьян.

Кăххăмлатсах ирттерсе ячĕ чĕрене пырса тивнĕ радиаци атомне Карачăм.

Числов Петĕрĕ аслă пӳлĕме хутлама тытăнсан паллă вăл, ĕмĕрхи учитель, пуçне ыраттарса тăракан темле шухăша çын патне çитересшĕн, çаплах, акă вăл, ăсне хăйматлăх кĕрӳшĕсем валли ятарлăн çивĕчлетрĕ:

– Итлĕр-ха, армути ĕлĕкрен, хальхи пек усăсăр тухтăр кĕтĕвĕ йăшăлтатнă саманаринчен, чи вăйлă эмел шутланнă. Çĕрĕн кашни тăнлă хурчĕ валли сыхланса аталанмалăх ура айĕнчех эмел ешернĕ. Сиплемеллипе хутăш анратмалли те ӳснĕ, халĕ те ӳсет. Славянсенчен такăш ăслă этемĕ, çăлтăрсене ят хунă чухне, пĕр çăлтăрне Армути ят панă. Хура эрĕм. Хура çăлтăр йӳççи. Хура эрĕм çăлтăрĕ çинчен эпĕ Евангелире вуланăччĕ. Малашлăха пĕлме пултаракан Иоанн Богослов ăсчах унта çырса кăтартни аса килчĕ халь. «Виççĕмĕш ангел

çӳл тӳпене уçса янӑ та, таврана ялкӑштарса пӗлӗтрен пысӑк çӑлтӑр юхан шывсен пӗрре виççӗмӗш пайӗ, шыв юххи пуçланакан çӑл куçсем çине ӳкнӗ. Çӑлтӑрӑн ячӗ Армути пулнӑ», – тенӗ тӗн кӗнекинче.

– Халӑха авӑ мӗнле пӗлтернӗ ӗлӗк-авалах Хура шур вырӑнӗнче Хура эрӗм çӑлтӑрӗ çӗнӗрен ялкӑшса таврана çунтарасса. Мӗн эпӗр, пӑх та пӗлместпӗр тӗнче вылявне. Чӑннипех турӑ ячӗпе систерсе хунӑ вӑл Йӑван текенни. Турӑ кӗнекинче калани тӗп-тӗрӗсех пулса пырать-ха апла, хӑйматлӑх. Каплах ирӗке ярса аташтарсан ку атӑма, чисти тӗнче пӗтесси патне пырса çапӑнатпӑр. Ялти атӑмӗ те хаяр çав, тухха́мрах ураран ӳкерет манерсӗр ӗçекенсене. Шӑлать вӑй питти халӑха.Хура эрӗм çӑлтӑрӗ чӗрӗлсе çӗре чӗтретнӗ пекки урӑх пулман пуль.

Пуçне пӑрса тутине мӑкӑлтаттарчӗ те Числов Петӗрӗ çийӗнчех хӑйматлӑх кӗрӳшне хуравларӗ:

– Пулнӑ. Китайра. Вун улттӑмӗш ӗмӗр варринче. Сакӑр çӗр пин çын вилнӗ. Ку Хура армути миçе мӗльюн çынна тӗп тӑвассине калама та хӗн. Ытла хаяр вӑл, вӑрттӑн кӑшлаканскер. «Амерӗк сассинчен» пӗлкелерӗм-ха çав аçтахана чарса лартма миллиона яхӑн çын хутшӑнать тенине, вӑл шутра - виççӗр аллӑ пин çар çынни. Çар çыннисенчен пӗри – Павӑл Фомич ывӑлӗ, ман кума ывӑлӗ, сирӗн мӑнук Сергей.

– Ан та кала-ха, ӑш çунать ахаль те, – чӗрине хыпашларӗ ватӑ çын. – Хамӑрӑн Хура шурӗ те ырринех кӑтартман халӑха. Хайхи Хура эрӗм çӑлтӑрӗн çунакан ванчӑкӗ çитсе ӳкнӗ пулас вӑрманти çӑл куç çине. Çавӑнпа шывӗ те хура ун, вырӑнӗ те – Хура шур. Вӑт вӑл инкек тени епле сарӑлать.

Кунпа çӗр иртнӗ май хуйхӑ-суйхӑ та манӑçать. Хӗвел ӑшшинче кӑмӑл-туйӑм çӗкленет. «Шурӑмпуç çӑлтӑрӗ» колхоз та хӑйӗн çутӑ урисене Чӑваш çӗрӗ тӑрӑх ярса халӑхра йӑлкӑшрӗ. Сысна ашӗ туса илессипе

республикăра вĕсенчен иртсе каяканни тупăнмасть-ха. Венера Ивановна Волкова зоотехник ячĕ таврана сарăлчĕ. Чăваш ял хуçалăх институчĕн Тымарти кафедри, вăл ертсе пынипе, хир сыснисемпе шурă сыснасене пĕтĕлентерсе кăларнă ашлăх çĕнĕ ăрат пысăк тупăш парать. «Тымар» ăратлă сысна çурисене таçтан та килсе туянаççĕ.Фермăра ĕçлекен Крахьяна та мухтаççĕ. Ăна иккĕн пĕрле канмалли путевка пачĕç. Мăшăр вăрăм çула хатĕрленет. Ачисене Крахьян машинăпа амăшĕ патне кайса ячĕ. Хăйсене Хура тинĕс кĕтет.

– Салакайăк хăй ĕмĕрĕнче пуçласа сарлака çунатлă тимĕр кайăк çине ларса вĕçет, – йăл кулать Карачăм Симферополе каякан самолет çине ларнă май.

– Эп те пĕрремĕш хут вĕçетĕп, ўкмесен пырĕччĕ, – шикленерех ярса тытрĕ упăшки аллинчен Крахьян.

Акă вĕсем ўхĕрсе çўлелле хăпарчĕç. Лăпкăн вĕçме пуçларĕç. Вĕсен айĕнче – çăра пĕлĕт ушкăнĕсем. Карачăм куçне хупнă та, шухăша кайса ăшĕнче калаçса пырать: «Кунтан Анукăм, сан патна çитме те çывăхарах вĕт. Çамрăк арăм юнашар пулсан та, чунăм сан паталлах туртăнать-çке, карчăкăм. Ытла ир тартăн эсĕ манран, ярапланпа вĕçсе курмасăрах. Манса кайрăн-и эс хамăрăн «пушкарь кинĕме?» Ачи, хамăр пăхса ўстернĕ Станислав, пире иксĕмĕре те çар ярапланĕпе вĕçтереп тĕнче тавралла, тесе çырнăччĕ. Килеймерĕ хăйĕн ракет кайăкĕпе. Халь эп çапах та, Анук, санран инçех мар пек, сан чуну пулăшнипе малалла пынăн туйăнать. Пичи туйĕнче эп сана хытă кўрентертĕм. Хурăн Ульянĕ айăплă уншăн, ху та – пĕрлех, Тымара пĕрле пыманшăн. Хусах шăпăрçăн мĕн тăваспаччĕ-ха? Эс мана виличченех Хурăн Ульянне ача тутартăн тесе тĕксе пурăнтăн, эп чĕркуçленсе пуç çапнине те шута хумарăн Крахьян ман ача мар тесе тăнлантарнă чухне. Крахьян вăл – Тан Ваçлин хĕрĕ. Ульяна мана хăй каларĕ. Бригадир пўрт умĕнчи йăрăс хурăна ытакласа авнă хыççăн шăтса тухнăскер. Так шту, хам ачана кацча илмен эп, çылăха

кĕмен, хама савнă хĕрарăм хĕрне, тăлăх арăм хĕрне илсе пынă киле. Каçар та, ăна иксĕмĕр эс виличчен выртса тăнă йывăç кравать çине çывăрма выртăрнă. Тĕлĕксенче эп санпа пăтранатăп. Пĕринче эс Усал пулса вĕçсе аннăччĕ, эпир çывăракан кĕлете йăтса антараслах силлерĕн. Тепринче пирĕн хушша кĕрсе выртрăн та ман çăмартасене касса, кăмака умĕнче ăшалама пуçларăн... Мана сĕтел хушшине туртса лартса хамăр юрра юрлаттартăн:

Вун ик юман пĕр кăкран та
Вун ик юман пĕр кăкран,
Харăс тăрса,
Харăс тăрса касар-и?
Эпĕр иксĕмĕр пĕр мăшăр та
Эпĕр иксĕмĕр пĕр мăшăр,
Харăс ларса,
Харăс ларса юрлар-и?»

– Эй, Караськă, Караськă? Мĕн аташан çак эс? Халь мар, Ялтăна çитсен юрлăпăр тинĕс хумĕн кĕввипе, – хуçлатнă пÿрнипе сăмсинчен кăт тĕкрĕ упăшкине Крахьян. – Вăрантăн-и? Кур-ха, пăх куçна чарирех уçса? Пĕлĕтсене шăтарса епле аялалла юхтаратпăр... Ух, çÿçентерет.

Халиччен тинĕс курман чăвашсем тĕлĕнчĕç те, çынсене те тĕлĕнтерчĕç. Салакайăк Карачăмĕ хăварман çав хăйĕнчен юратнă тусне – вăкăр хăмпине. Канакансемпе сипленекенсен ăмăртăвĕнче вăл шăпăр каларĕ, арăмĕ ун çеммипе чăваш юррисене шăрантарчĕ. Крахьян ферма сыснисем çинчен, Карачăм утарти пыл хурчĕсем çинчен мансах хăйăрлă çыранра хĕвелпе хĕртĕнчĕç, ача чухнехи пек шывра вĕçĕмсĕр шампăлтатрĕç, тавралăха курса çÿрерĕç. Темлешкелех савăк та çав канура, çапах юлашки кунсем тĕлнелле иккĕшне те кил, ача шухăшĕ çавăрса илчĕ.

Хурçă кайăк çул çÿревçĕсене каллех сывлăша çĕклесе хăпартрĕ. Шупашкара çитсен, çунаттисене сулса ăсатрĕ.

Колхоз председателĕ Волков ял хуçалăх институтне пынă пулнă та, Воробьевсем малтан Ялтăран ун патне шăнкăравланине астуса, аэропорта пырса вĕсене яла лартса килчĕ.

Канури канлĕ пурнăçа хăнăхнă Крахьян ĕçе тухичченхи кунсене ялти ырлăхра усă курса юлма шутларĕ, машинăпа Тымара кайрĕ, пĕчĕк Викторĕпе Венерине, хăйсене ан кансĕрлеччĕр тесе, амăшĕ патĕнчех хăварчĕ. Кăнтăр хĕвелĕн пайăрки пĕç хушшине хĕртсе вăратнă ясарлăх туйăмĕ ăна вăхăтăн-вăхăтăн арлăх сăпкинех чĕнчĕ-ха. Упăшки Ялтăра хăй çине ялт! кăна сикнĕ чухнехи савăшу канлĕхĕ чăматанра Хурăнвара çити пытанса килмен-çке, ăна, йăшăлтатса чăтма май çук саманта çитерекен кĕртлешӳ вăйне, ар хăвачĕ кăна пусарма пултарассине чечек саракан хĕрарăм пĕтĕм чунчĕрипе ăнланать. Çавна пулах вăл упăшкине вăрмана ямарĕ, кĕлетелле кăчăк туртрĕ.

Ак тамаша! Хура тинĕс хĕрринче хур курман Салакайăк тăван çĕрте маххă пачĕ. Тем пек мекĕрленсе кравате чĕриклеттерсен те арăмĕн «ах-ах-ах!» юррин «ах, вилеп, ах, вилтĕм халь» текен канлĕх вĕçне кăлараймарĕ. Хĕрсе кайнă кĕлеткине çĕлен пек явкалантаракан арăмне хĕрхеннипе вĕри çăл куçне пуçне те чиксе пăхрĕ вăл. Ы-ы-ыхх! тесе кăрт! сиксе çурăмпа çаврăнса выртнă Крахьянăн чĕччинчен çупăрларĕ, вăр-çаврака купарчинчен ачашларĕ, канлĕх илĕртекен вырăна та пускаласа пăхрĕ. Мĕн тăвăн ĕнтĕ хăвăн пуçу усăннă пулсан...

– Караська, – куççульне ал тупанĕпе шăлса илчĕ Крахьян. – Ах, туяс пулсанччĕ эс мана çак самантра мĕн тери йывăр пулнине... Ма кайрăмăр ку Ялтăна. Тем тесен те эс тинĕсрен атăм çаклатса килнĕ. Хура армути наркăмăшĕ Припять шывĕпе Днепр тăрăх Хура тинĕсе ишсе тухнах пуль çав. Çавна ĕçсе килтĕмĕр ĕнтĕ эпĕр, ик ухмах. Хăть те мĕнле тăрантар мана.

Чисти ӳсӗр çын пек халь эп. Пуç кашлама пуçларӗ. Тасал ман çумран луччăкăн, – тесе Крахьян упăшкине пӗррех тапрӗ вăйлă урипе. Карачăм çавăнтах урайне хăлтăр-халтăр персе анчӗ.

Тепӗр кунне Салакайăк Вăрманкаса вӗçсе çитрӗ, пульницара хăйсен ялне, Нухрат Кавăрлин ывăлне шыраса тупрӗ, унпа хăйӗн нуши пирки пуплешкелерӗ.

– Çулу та самаях пур-ха сан, Карачăм мучи, – шӳтлеме пуçларӗ Валерий Гаврилович. – Ват çерçин аптрасан та хашкамаллах мар пек те... Эпир Чернобыль радиацийӗ Хура тинӗсе те вараланине пӗлетпӗр. Сан хавшама пуçланă шăм-шаку ăна парăнма та пултарнă. Çапах та хуйхăрса ӳкер мар, ак çак таблеткăсем сан «атăмна» пăчлантарма кирлӗ. Малашне вара... эс, утар хуçи, пыл каткине кӗрсе сипленме те, арăмна пыл хурчӗн сăннипе йӗплесе те лăплантарма пултаратăн.

Тухтăр сӗннӗ эмел Карачăма та хастарлантарчӗ, Крахьяна та унченхи пекех «ах, вилеп, ах, вилтӗм халь» тесе çухăртма пуçларӗ.

Совет Союзӗн тӳпийӗ анлăшӗпех уçăлса кайрӗ пулас. Халăхӗ те уççăнлăх шырать, пуçлăхсене тустарать. Кӗрлет, хумханать халăх тинӗсӗ. Çав самантпа усă курса ылтăн пулă тытса юлакансем хунаса кайрӗç.

Украинăри Хура шур – Хура армути таврашӗнчи Брянск вырăс облаçӗнчен Шупашкара ик çӗр хӗрӗх тонна аш тата сакăр тонна выльăх ăш-чикӗ вăрттăн кӳрсе килнине Чăвашстанра пурăнакансенчен пӗлекенӗ те сахал пулнă. Пайăрка чирӗ лекнӗ аша, унран тунă кăлпассие лавккасенче сутма пуçланă. Аш-пăш çитмен пирки ăна та, ăш-чик таврашне те çынсем чăл-пар туянса пӗтернӗ.

Уни-куни çинчен шутламасăрах мӗшӗрттерсе ларатчӗ-ха Карачăм сӗтел хушшинче арăмӗ ӗнер Вăрманкасран туянса килнӗ çуллăрах кăлпассие ыхра шăлӗсемпе çыртса. Тем хушăра телевизор янрама пуçларӗ.

– Халăха радиаципе тăварланă аш-пăш çитернĕшĕн республика пуçлăхĕсене суда памалла, ĕçрен хуса ямалла, хăйсем кӳпчĕр вилĕм кăлпассийĕсене! – кăшкăрать Шупашкарти Хĕрлĕ лапама пухăннă халăх умĕнче тăлпан арçын. – Çитет мăшкăлласа пиртен. Уççăнлăх саманинче тĕкĕр çинчи пек уççăн курар ултавçăсене...

Ку ĕнтĕ Салакайăксен йăхне кăна мар, пĕтĕм Чăваш çĕршывне пăтратса ячĕ. Ара чăваш çулталăкра аллă-утмăл пин тонна пахалăхлă аш сутать те патшалăха, Раççей агропромĕ вĕсене Брянск облаçĕнчи пăсăк ашпа тăрантарать.

Ăна-кăна чухлакан, пĕрмай радио итлекен, телевизор куракан, хаçат вулакан Карачăм çакна илтнипе пăлхансах ӳкрĕ, çыртнă кăлпасси татăккине ывăçа кăларса çӳп шăтăкĕнчи витрене печĕ, ăшри хирĕç тăрăва лĕкленсе аран ирттерсе ячĕ, картишĕнчен выльăх пăхса кĕрекен арăмне хаяррăн тĕпчерĕ:

– Эс ку кăлпассие ăçта туяннă?!

– Райкомра ĕнтĕ. Лавккара мар. Урăх ăçта илен кăлпасси тавраш хальхи саманара. Çынсем пуйăспа Мускавран сĕтĕреççĕ. Юрать-ха ерçӳ тупса райком пленумне кайрăм, унсăрăн... Унта мĕн кăна сутмаççĕ. Хăвах пĕлен хальхи пурнăçа. Унашкал тавар Вăрманкасри те Шупашкарти пуху-канашлура çеç лекет пирнешкеллисене. Ай тутлă мар-им? Хам тутанса пăхмасăрах сана хурса патăм та... Атя, çи, çи, вăйлă пулăн.

Аллине кăлпасси патакки тытнă упăшки ура çине сиксе тăчĕ те:

– Э-э, ăнлантăм, эс ху çийиччен мана испытăвăть туса пăхасшăн пулнă-и-ха? Пĕлетни мĕнле кăлпассине?

– «Московски». Чи лайăххи. Райкомра ливер сутмаççĕ. Мĕн, кăлпассипе хутăш кикен вăрри çирĕн-им? Хăвăн ливер кăлпасси патаккуна тĕрĕсличчен вăхăт пурха. Каçчен кан хырăмна тăрантарса.

– Тăрантартăм ĕнтĕ. Эс кĕриччен анчах телĕк пĕлтерчĕ. Хура армути çăлтăрĕн самăртнă сысна, ĕне выльăх ашĕнчен Шупашкарта тунăскер вăл. Пирĕн, анра сухрасен хырăмĕсене, ратиаци текенскерпе улталаса тăрантараççĕ.

Крахьян кăмака умне вутă пуленкисене шарт! пăрахрĕ те:

– Ан лĕпĕртет пустуй. Вилсех кайрăн пуль. Чăваш хырăмĕнче тимĕр пăта мар, атом та çĕрет, акă çиччас пĕр салтак курки килти атома ярса паратăп та, хура эрĕм те наччасрах симĕсленсе каять.

Сăмакунккă ĕçнĕ хыççăн кăлпассинех çăвар тулли çыртса илчĕ-ха Карачăм. Ларсан-ларсан унăн чĕлхи çаплах çав ыйтупа çĕтрĕ.

– Крахьян?

– Мĕн амакĕ пулчĕ тата Караськă, мĕн, каллех чĕлĕм паклаттарма пуçласшăн мар пуль те? Эс хăçан арăмна вăйлăрах паклаттармаллине ан манса кай.

–Эх, Крахьянăм, эс мана ялан чĕлхŭ айне тăван, ик чĕлхŭпе те тарлаттаран. Ыйтасшăнччĕ...

– Мĕн? Ыйт?

– Вăт эс, манпа пĕрлех çăвăнтăн Хура тинĕс хумĕпе, сан çумна лекмен пулмалла Хура армути атăмĕ, лекнĕ пулсан, кăшт лăпланмаллах.

– Пире, хĕрарăмсене, ним те çулăхмасть арçынсăр пуçне. Нимле атăмран та, нимле хура армути йŭççинчен те парăнмастпăр. Атя, кил çумарах. Ыталаса юлам сывлăшу тухса кайиччен...

Пурнăç насусĕ каллех нăчлатса-хăшлатса кайрĕ, кивĕ кĕлет урисене ташлаттармаллах ар хăватне çĕклерĕ.

12

Çын çумĕнчи çŭппе курма хăнăхнă Йĕксĕк вăранса кун çути курнă хыççăн мĕн çывăрса кайиччене хура çĕлен наркăмăшĕпе кама та пулин асаплантарас

шухăшпа айланать. Уççăн каласа çĕнетӳ тăвас ытарлă шухăшпа вăл такама та çупкă çитерме хатĕр. Горбачев шыв айĕнчи юшкăнран çиеле туртса кăларнă Йĕксĕк йĕке хӳре хунанă пек пĕтĕм çĕршывĕпе йышланчĕ. Вĕсем паттăрсен йышне кĕчĕç. Унччен кĕсьере, кăкăр çумĕнче КПСС членĕн суя билетне чиксе çӳренĕ генсек хыççăн икĕ питлĕ параппан çапса тĕнче шавĕ çĕклерĕç. Перестройка спектаклĕнчи тĕп роле Çĕпĕр енчен Мускава çитнĕ Йĕксĕк ай-вай курăмлăн та тыткăнуллăн выляма пуçларĕ, хаяр сассипе пĕлтерчĕ: «Эпир хуçа пулатпăр Раççейре!» Патшалăх ялавĕн аври еннелле ултавлă аллипе кармашакан карма çăвар стройка ĕçлевçине-прораба халăх ушкăнĕсем комбайнер помощникĕн Перестройкинăн пуш сăмах пакăлтатăвĕнчен ытларах хăлха тăратса итлеме пуçларĕç. Урамра Йĕксĕк революци тăвать.

Çĕнĕ Йĕксĕк халăх тинĕсне пăтратнă хумра, ава, пирĕн республика пуçлăхĕсем те «Перестройка» караппа пăхлă шывра ишеççĕ. Вăл камантăра Вăрманкас райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Семен Быстров та пур. Васка Илле ачи шавлакан тинĕсе васкасах пуçĕпе сикрĕ. Райĕçтăвком пуçлăхĕ Альберт Большаков ăна чарма хăтланчĕ, çук, Ильич итлемерĕ, ĕç пӳлĕмĕнчи Ильич сăнĕ çине çеç пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ: «Ильич пире ĕçе яланах çĕнетме хушать. Перестройка».

Йĕксĕк пуçĕ тĕнче çаврăмĕнче явăнать, çав çаврăмри вăйра хăй аллине çавăрса илнĕ çав тери пысăк патшалăх тавра çаврăнать, анчах та алли, кĕске пирки, ăна пăхаттирле çавăрса тытаймасть, инçет тинĕс енчен тăснă алла çăмăллăн ярса илет, çав алă пулăшнипе хашах сывласа ярать: ывăç тупанĕнче унăн – ылтăн мăкăрлчăкĕ йăлкăшать.

Хĕрарăм-арăм хыççăн кайса тĕнче касса çӳрекен, Кремĕлте пуш параппан çапса ларакан икĕ питлĕ Йĕксĕк, лачакана кĕртсе лартнă çĕршывне Çĕпĕр упи пек мĕкĕрекен çĕнĕ Йĕксĕк аллине парас

мар тесе тапаçланать. Патша пуканĕшĕн пуçланнă кĕрешӳ вăй илсе пырать.

Утартан чупса таврăнса Крахьян йĕмĕ çинчи утмăл турат чечекне шăварма ĕлкĕрнĕ хыççăн Салакайăк Карачăмĕ хăйматлăхĕ патне хăшăлтатрĕ. Числов Петĕрĕ, сыснисене апат парса ирĕкленнĕскер, ăна вите умĕнче кĕтсе илчĕ. Хаш та хаш сывлакан хăйматлăх кĕрӳшне алă пачĕ те вăл ăна сарай çумĕнчи сак çине ларма пулăшрĕ.

– Эх, хăйматлăх, пета...

Ăнлансах çитеймен кил хуçи ун куçĕнчен тĕсесе пăхрĕ те:

– Мĕн амакĕ пулчĕ çак? – терĕ тĕлĕннипе.

– Итлерĕн-и ративу?

– Улттăранпах тăнлап.

– Мĕн япăлтатрĕ вăл?

– СССР президенчĕ Михаил Горбачев: «Халĕ малашне кам мĕнле пултаратăр, çавăн пек пурăнăр», – тесе такăна-такăна пĕлтерчĕ пире.

Карачăм мучи кĕлеткине хытарса хаярланчĕ:

– Авă мĕнле сӳсленчĕк иккен патша текенни. Йĕксĕк. Фу, сурас килет унăн пĕреçитент текен ячĕ çине те, ăçта килчĕ унта çапса тухнă сăнĕ çине те. Ĕлĕкхи патшасем çапла нишлĕ пулнă-и? Вĕсем, нимĕç такамĕнчен тухнă пулин те, Раççейшĕн, пирĕн патшалăхшăн çуннă, терĕнçке эсĕ мана пĕр юмахра?

– Çапла, çаплах, хăйматлăх кĕрӳçĕм, – унăн ăнлавĕ çумне пĕлӳ йĕрки хушрĕ Числов Петĕрĕ. – Раççей патшисем çĕршыв тавра юман вăрманĕ пек çирĕп карта çавăрнă, кӳршĕри ют халăхсене хăйсене пăхăнтарнă. çавăнпа Раççей хăватлă пулнă. Çавăнпа Раççее нихăш вут-çулăмлă тăвăл та вырăнтан тайăлтарайман.

– Пирĕн ку Йĕксĕкĕ вара – пуш параппан сасси. Ун сассипе халăх хырăмĕ тăранмасть. Эп ăна тахçанах хам майлă ăнланнă. Хĕрарăм пуçĕпе ĕçлекен арçын

хăйĕн тăнлă пуçне те çухатать. Çампа халь çĕршыв çийĕн çил-тăвăл алхасать. Ненай, пулсах пĕтмест пуль хĕрарăм кĕпи айĕнчен патшалăх пулитикине туса пынипе. Кĕпе айĕ вăл... Апчхи!

Хĕрарăм кĕпи айĕнчи патша саманинче те этем пурнăçĕ пĕр вырăнта чарăнса лармасть. Горбачев президент влаçне алăран вĕçертесшĕн мар кăрккалла хăлтăкланнă вăхăт та пурнăç аталанăвĕнчен пăрăнса юлмасть. Вăрманкас район канашĕн пуçĕнче тăракан Большаков та, хăйне панă правасемпе усă курса, халăх пурнăçне çĕнетме тăрăшать.

Юлашки икĕ-виçĕ çул хушшинче экономикăри, социаллă пурнăçри, этем ăс-хакăлĕнчи революциллĕ улшăнусене районта идеологи витĕмĕ кӳрес тĕллевпе вăл та сахал мар ыйхă катрĕ пуль. Партин область комитечĕ, Министрсен канашĕ экономикăри тарăн реформăна мĕнле майпа ăнăçлăрах та усăллăрах пурнăçа кĕртмелли çинчен паракан кăтартусемпе сĕнӳсене шута илсе пынă хушăра çĕршывра пулса иртекен тĕлĕнмелле çĕнĕлĕхсене пичетпе телевидени, радио урлă сăнасах тăрать. Пушă вăхăтра ялан алла кĕнеке, хаçат-журнал тытать. Питĕ нумай вулать. Пурте вĕсем ăна ĕçре пулăшаççĕ. Анчах çĕнĕлĕхсем те хăш-пĕрисем тĕлĕнтерсех пăрахаççĕ.

Патшалăхĕ пур-çук укçи-тенкине, пурлăхне ял хуçалăхĕшĕн хĕрхенмест темелле. Çут пăр çине сарăлса ӳкнĕ лаша пек тапаланакан хуçалăхсене те хăй вăйĕпе тăратассишĕн çунать, вĕсене продукци сутнăшăн çĕр процент хушса тӳлет. Патшалăх ĕнси çинче ларма хăнăхнисем вара çав ырлăхпа усă курса та пуçĕсене çĕклесшĕн мар. Çак ырлăх вĕсене ĕçченлĕхе мар, юлхавлăха вĕрентет. Пурпĕрех тупăш пур-çке вĕсен, çавах укçине те, премине те малта пыракан хуçалăх пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен шайĕнчех илеççĕ те... Çĕнетӳ тапхăрĕ çак танмарлăха пĕтерменшĕн хĕрӳ председательсем сӳрĕксене ылханса вăрçнине илтмест

мар Большаков та, пуçпах тăнлать, чĕрепех туять вĕсен хуйхине, анчах пĕрре çавăрттарса янă та кăлтăрмача Мускавра, çаврăнать те çаврăнать вăл пушăлла. Патшалăх укçине кахал хуçалăхсене пустуй парса пĕтерни тыр-пул тухăçне те, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине те ўстерме пулăшмасть, вĕсен хăй хаклăхне çеç хăпартса ярать. çав хуçалăхсем кая юлнишĕн, паллах, вăл та, райĕçтăвком пуçлăхĕ, ытларах – шупашкарсемпе мускавсем айăплă. Вĕсене пулах çынсен сĕтелĕ тулли мар.

Хуçалăхсем вăраххăн аталанни, халăх укçа-тенкĕ сахал ĕçлесе илни, ĕçлеме, пурăнма, канма тивĕçлĕ майсем çукки ял çыннине хуланалла тартать. Ĕçлекенсен йышĕ колхозра чакать. Ялсем ватăлаççĕ. Вун пилĕк çула çитменнисен йышĕ Вăрманкас енче çирĕм пилĕк процент сахалланнă. Вун сакăр çултан пуçласа çирĕм тăватă çула çитиччен кашни пин хĕрарăм пуçне пин те тăват çĕр арçын тивет.

Хăрушă цифрăсем вĕт кусем! Уяр кун аслати авăтнă пекех янăрарĕç вĕсем район канашĕн иртнĕ сессийĕнче. Çыншăн, унăн пуласлăхĕшĕн ытларах та ытларах тăрăшмаллине, унран хаклăрах та кирлĕрех ĕç халлĕхе районта çуккине палăртрĕç депутатсем.

Чăн та район канашĕ, унăн ĕçтăвкомĕ, ял совечĕсем ялсен социаллă аталанăвне вăхăтра кирлĕ хак паман. Ялтан çуллен ытларах та ытларах продукци ыйтнă, ял çынни мĕнле сывлăшпа сывлать, мĕнле савăнса пурăнать– халăхăн çак нушисем хыçала тăрса юлнă.

Патшасем Мускавра влаçшăн çапăçнине пăхмасăр, хресченĕн çут çанталăкпа çапăçса ура айĕнчи çĕрпе туллин усă курма тивет. Пурин те хырăм выçать. Шеремет хресченĕ хăйĕн пурнăçĕ мĕнлине пăхмасăр çĕршыв халăхне тăрантарать. Унăн влаçшăн çапăçма кирлĕ мар. Унăн влаçĕ – Çĕр турри. Вăл ăна пуç çапать, çўлтен мĕн парасса шанчăклăн кĕтет.

13

Пĕр райкомран тепĕр райкома куçни Пантелеймон Христофорович Омановшăн хуйхăрупа пĕрлех телейĕ те пулчĕ.

«Пире пĕрремĕш класранах турă çуккă, тĕн вăл суя тесе тăн парса пурăннипе çын пуçĕнче пăтрану тунине тин туя пуçларăм. Çав шухăша пуç тавра çавăрттарма мана кам чарса тăнă-ха? Паллах, марксизм-ленинизм идейисен йĕплĕ пралук ăшĕнчи КПСС çурчĕ. Пĕтĕм çĕршывĕпе пĕр калăппа туса лартнă икĕ-виçĕ хутлă чул çуртсем, вĕсен çумĕнче е умĕнче хурал тăракан палăкĕмĕлки урăхларах шухăша пусарнă-çке, анăçри философсен шухăшĕпе кăна пурнăç пăттине пуçса çиме хушнă. Совпартшкул мана çав пăтта çиме йывăç кашăк тыттарчĕ, парти райкомĕ çут хурçă çăпала парнелерĕ. Халĕ манăн çав çăпалана туртса илсе урăх коммуниста пачĕç. Мана, ылтăн кашăк тытма патне çитнĕскерне, парти керменĕнчен вăрçăчченхи кулакăн йывăç çуртĕнче вырнаçнă ДОСААФăн район комитетне хуса кĕртсе ячĕç. Район халăхĕ умĕнче намăс куртăм. Çарпа флота пулăшакан ирĕклĕ общество КПССăн ертсе пыракан, пурне те тĕпĕртеттерекен райкомĕ мар-çке. Мĕнле питпе çŭрес? Ай мăшкăл», – тесе хуйхăрса ларчĕ те вăл ирхи хаçатсене иле-иле пăхрĕ.

Райкомра ялан штатри çыннисене те, районти идеологи активне те телефонпа тарлаттарма хăнăхнăскершĕн халĕ çĕнĕ çĕрте алă усăнчĕ. Вăл – ДОСААФ райкомĕн председателĕ, ăна пăхăнакан пĕр инструктор, вăлах – шофер. Икĕ çынран тăракан кантур. Юрать-ха çăмăл автомашина пур, кивĕскер пулин те, чупать. Ĕçĕ вара мăй таранах. Шупашкартан парса янă ДОСААФ лотерейине сŭрĕклĕхне пулах сутса пĕтерейменччĕ. Пĕр пачка сейфрах выртса юлчĕ. Уншăн шупашкарсене укçа тŭлемелле. Акă, «Совет патриочĕ» хаçатра çак лотерея вылявĕн таблици пичетленнĕ.

Марксизм-ленинизм пăтранăвĕнчен тăрăла пуçланă пуç миминче тăрук çиçĕм çиçсе илчĕ: «Тĕрĕслесе пăхам-ха сутăнмасăр канса выртакан билетсене».

Мухмăрпа чĕтрекен аллине хаçат страници тăрăх шутарса пынă май унăн куçĕ чарăлса кайрĕ: «Жигули» автомобиль çине ларать пĕр номерĕ!»

Йĕркеллĕ сăх сăхма пĕлменскерех вара вăл сылтăм аллине кăкăрĕ умĕнче урлă-пирлĕ çавăрттарса илчĕ те пӳлĕм тулли янраттарчĕ: «Турă, эс пурах иккен! Тавах сана, çӳлти хăватăм, мана парти райкомĕнчен ДОСААФ райкомне килсе лартма пулăшнăшăн. Унта эп выговăрсăр пуçне мĕн выляса илеттĕмччĕ-ши? Кунта... Ăнать Ăмансен йăхĕн те пурнăçра...»

Машинине иличчене вара Оманов Шăхранта хăвăрт майлаштарчĕ унпа чупмалли правине. Районти потребительсен канашĕн председателĕ Тит Нилович Милов тусĕн телейне çума ресторанта пĕчĕк компани йĕркелерĕ. Çавăнта вăл ăна ăслă канаш пачĕ:

– Пантюшка, итле, эп сана валли кучченеç хатĕрленĕ. Паян Шупашкартан илсе килтĕм.

– Мĕнле кучченеç? Ăçта вăл? Пар часрах, – хыпăнса ӳкрĕ Оманов.

– Ташла, тусăм. Паян сан – икĕ уяв.

Ăнлансах пĕтмен Пантелеймон Христофорович тапăртатса çаврăнса та илчĕ:

– Кĕтетĕп.

– Куçа курăнман кучченеç ку, – хăнчăр куçне мăчлаттарса илчĕ Милов. – Чĕлхе кучченеçĕ. Тăнла, глобус-пуç. Епархире те кирлĕ çынсем пур пирĕн. Асаттесен ятне манмаççĕ унта. Атăл шывĕпе Саратовалла юхтарасшăн эпĕ сана, урăхла тăн илме. Тĕн семинарине. Куратăн-и тӳпе уçăлса пынине коммунизм сĕрĕмĕнчен? Кайса пер райком умне, Ленин ури айне, партбилетна. Сан валли вырăн хатĕр вĕренмешкĕн. Во мĕнле парне!

Оманов Тит Ниловича итленĕ хушăрах урăлса пычĕ, унччене иккĕленӳллĕ шухăшпа минрекен мăн пуçне

ывăçĕсемпе хупларĕ, унти тăнне-тăмне кăштах пăтратнă хыççăн, сылтăм урине тăрст! тапрĕ:

– Пурпĕрех эпир çĕнтеретпĕр! Пар аллуна, тусăм? Килĕшетĕп.

Пурнăç кустăрми çаплалла тепĕр çулпала кăлтăртатса кайрĕ Омановăн. Унăн ыйтăвне парти райкомĕнче ытлашши тавлашмасăрах татса пачĕç. Ленин сăнне ўкернĕ хĕрлĕ пĕчĕк кĕнеке-билета макулатурăна яма, хăйсен ирĕкĕпе пама кăмăл тунисем Вăрманкасра çеç мар, Мускавра та йышлансах пыратчĕç-ха. 1960 çултанпа хăйне пурнăç çулĕ уçса пынă партбилетран уйрăласси халĕ уншăн райком çурчĕ урлă чăрт сурнă пек çеç туйăнчĕ. Районти коммунистсем тата халăх хушшинче çеç ку сас-чĕв ырă мар туйăм çуратрĕ: «Вăт ĕнен вĕсене, пире коммунизм патне илсе пыракан тирне улăштаракан калтасене».

Милов Оманова, телей уççи пăрахса паракансемпе паллаштарма тесе, Шупашкара хăйĕн «Атăлĕпе» лартса кайрĕ. Введенски собор настоятелĕ вĕсене килĕнче кĕтсе илчĕ. Машина багажникĕнчен кăларнă çимелли-ĕçмелли тата хальхи вăхăтра лавккара тупма май çук дефицит япаласене йышăннă хыççăн аслă пуп сăх сăхам пекки туса тем мăкăртатрĕ те, Оманова ура тупанĕнчен пуçласа пуç тўпи таран тенĕ пек йĕрлесе тухрĕ çивĕч куçĕпе, унтан тин ăшшăн пĕлтерчĕ:

– Турă чури Пантелеймон, иксĕмĕрĕн экзаменсене хатĕрленмелле пулать.

Çав кунах Миловпа Оманов ДОСААФ обкомĕнче пулчĕç, уйăхлăх отпуск майлаштарчĕç.

Мускав çумĕнчи Загорскра тĕн академине пĕтернĕ аслă пуп ай-яй тарлаттарчĕ Оманова. Славян чĕлхипе такăнмасăр вулама тата вырăсла йăнăшсăр çырма вĕрентрĕ, çирĕм ытла кĕлĕ пăхмасăр калама хăнăхтарчĕ. Вăйлă философ, теолог иккен чиркў пуçлăхĕ.

Çапла вара Пан Христос, Милов тата собор настоятелĕ пулăшнипе, семинари алăкĕнчен алла хĕрес тытса кĕрсе кайрĕ. Ах пултарать-çке унăн уйрăлми шанчăклă тусĕ. Тит

Нилович семинари пуçлăхĕсен кăмăлне те уçса яма ĕлкĕрнĕ. Ахаль сĕннĕ янтă укçа-тенке хура тум ăшне пытарма вĕсем те турăран хăраса тăмаççĕ иккен.

Ирĕке хăнăхнă Омановшăн Саратов тамăкри пекех. Çирĕп йĕркене кĕрсе ўкрĕ. Пăхăнмалла та итлемелле. Пиллĕк çурăра ирхи кĕлĕ пуçланать. Сакăр сехетре – ирхи апат. Эрех-сăра ĕçесси тата мухмăр чĕртесси çинчен унченхи пек ан та шухăшла. Апат сĕтелĕ хушшине лариччен те, тăранса кашăк хурсан та кĕлĕ тумалла. Тăххăртан кăнтăрла иртни иккĕ çурччен уроксем. Кăнтăр апачĕ хыççăн хăйсем тĕллĕн ыранхи занятисене хатĕрленеççĕ. Пăхăнса пурăнма, аслисене итлеме хăнăхаççĕ. Хорта юрлаççĕ. Каçхи апат вăхăтĕнче тĕн кĕнекинчи пĕр-пĕр сыпăка сасăпа вуламалла. Каçхи кĕлĕ... Вун пĕрте пурте пĕр харăс çывăрма выртаççĕ. Салтакри казарма йĕрки пекех.

Партипе совет шкулĕнче вĕренни, райкомра ĕçленĕ вăхăтра семинарсенче, курссенче пулни, алла кĕнеке тытма пăрахманни самай пулăшу пачĕ ăна семинарире. Кунтăк пек мăн пуçĕнче унăн та паха тĕшĕ пуррине вăл туйса илчĕ. Тăрăшмалла кăна. Унсăрăн... Вĕренĕвĕ те кăмăла кайрĕ тата. Унччен алла пĕр тĕн кĕнеки тытса курманскер, майĕпен вĕсен вăрттăнлăхне татах та татах тарăнрах пĕлес киле пуçларĕ. Ăс-тăнĕ хăйне майлăрах, урăхларах улшăнса пычĕ чăваш семинарисчĕн.

Йăхĕ вĕсен йăраланчăк çынсенчен тăнăран-ши, çĕр-тислĕк ăманĕ пек шăтарса пурăнма вĕреннĕ этемсем пулнăран-ши, хурашурсем вĕсене авалтанах хушма хушамат тупса панă. Ашшĕ те, Христофор, вăрман хуçалăхĕнче лаша пăхаканскер, виличченех тислĕкрен хăпăнса-тасалса пĕтейменскер, халăхра ырă, чаплă ят илеймен. Вăй питти арçынсемпе тан вăрман касма та, каснă йывăçа лашапа чукун çул хĕррине турттарма та ўркеннĕ. Лаша хуçи пулса ĕçке ернĕ, ялан тислĕк купи çинче ăшăра каннă. Ăман Христофорĕ ĕмĕрне ăман купи çинчех вĕçленĕ.

Ачи ашшĕнчен правуртарах çитĕннĕ. Йăх тымарĕн наркăмăшлă вĕçĕпе темиçе çынна сăнăласа парти активисчĕсен йышне кĕрсе кайнă. Унăн «ăман патриотизмне» асăрханă райком пуçлăхĕсем малашлăхлă çамрăк коммуниста Шупашкара вĕренме янă. Совпартшкулта та, парти райкомĕнче те таса çынсен ăш-чикне ăманла шăтарса пурăнчĕ вăл. Акă халĕ таса чунлă турă çыннисен шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ.

Оманов Саратовран хастарланса таврăннă тĕлелле çĕршывра пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Горбачевăн çĕнетӳ пушшийĕ хăйне те кутран вирлĕн пырса çапрĕ. Çĕнĕ вăй хумĕсем ăна типĕ çыраналла хăваларĕç. Хум пуçĕнчи карап капитанĕ Борис Ельцин улталаннă халăха мухмăрла сассипе кĕрешĕве чĕнет. 1990 çулхи утă уйăхĕнче партин юлашки çирĕм саккăрмĕш съездĕнче хăй КПСС ретĕнчен тухни çинчен хавхаланса хыпарлать. Тепĕр çултан вăл, Раççей Федерацийĕн Аслă канашĕн председателĕ, ятарлă указ-хушупа Коммунистсен партине малалла ĕçлеме чарса лартать. Генаральнăй секретарĕн тулли влаçĕ тинех пĕтет. Горбачев-Перестройкин тек ĕнтĕ партин чи аслă хаяр йытти мар, СССР президенчĕ кăна. КПСС тытăмне саккун йĕркипе аркатма пуçлаççĕ, укçи-тенкине, пурлăхне вăрттăн та, уççăн та пайлаççĕ, çаратаççĕ. Çирĕм миллион коммунист демократи централизмĕн читлĕхĕнчен ирĕке тухать. Патша пусмăрĕнче нушаланнă халăх кĕрешӳçисем калăплана, СССРта аталаннă социализм тунă, коммунизм тăвакан хăватлă парти пĕр Çĕпĕр упи хут çине алă пуснипе тăрук такăнчĕ те вăйсăррăн месерле кайса ӳкрĕ. Çийĕнчех ăна ютри тăшманĕсем тата хăй ӳстернĕ тăшманĕсем таптама пуçларĕç. Пĕлĕт карри уçăлнă хыççăн йăлкăшакан хĕвел питтине çĕлен-калта, ăшă çумăр хыççăн ăман таврашĕ йăшăлтатса тухрĕ. Вăрманкас ăманĕ те тăван çĕршывне уярла çитрĕ.

Оманов Шупашкарта ĕçне майлаштарчĕ. Ăна Чăваш çĕрĕнчи чиркӳсен чи аслă пупĕ Варнава хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче

самай хăпартлантарчĕ, вăхăтлăха Введенски собортах ĕç тупса пачĕ, малашне çĕнĕ чиркӳсем уçма хатĕрленни çинчен пĕлтерсе савăнтарчĕ. «Пире пулăшас текен ырă çынсем тупăнсах пыраççĕ, сирĕн Миров господин та хăйсен ялĕнче кивĕ чиркӳ çуртне çĕнетесшĕн, кăмăл пулсан, унăн настоятельне лартăпăр сире», – тесе ырă сунчĕ.

Шупашкартан автобуспа Вăрманкаса çитсен хура тум тăхăннă Оманов, акă, райком вырнаçнă урампа килĕ патнелле пырать. Шăп çав хушăрах çӳллĕ алăкран Крутов тухрĕ. Çывхарса, пĕр-пĕрне алă пачĕç.

– Партбилетна пама килтĕн-им? – шăлне йĕрчĕ Оманов.– Макăрмарăн-и?

– Эс мана хăçан ӳленине курнă? – терĕ Крутов кăмăлсăррăн. – Хамăр парторганизацин документĕсене килсе патăм. Билетĕнчен уйрăлас килмест те, килтех хăварас терĕм. Эс семинари пĕтерсе килтĕн пулас-ха. Саламлатăп.

– Тавтапуçах. Турă пулăштăр. Ĕçе те вырнаçрăм. Варнава çумĕнче. Тавах турра.

– Эс ачи пултаран-ха, таçти çĕртен те шăтарса тухан кирлĕ вăхăтра.

– А якшĕ. Ăмансем вĕт эпир. Шăтарма пĕлес пулать. Сан, ава, халь мĕн? Совпартшкулпа партшкул, институт пĕтерни те сысма тăмарĕ. Тапаçлантăн-тапаçлантăн, вăрçтартăн-вăрçтартăн çынсене... Вăйлă карьера тăваймарăн. Пăчлантăн ялта. Кам халь эс?

– Çын.

– Ĕçсĕр çын эс – пушăсăр тăрса юлнă кĕтӳç. Куртăн-и халь камăн пуçĕ çинче мĕнле çĕлĕк ларнине? Быстровсемпе пĕрлешсе райкомран хирнипе мана пĕтеретпĕр терĕр пуль. Эп мар, хăвăр йĕмсĕр тăрса юлтăр халь. Сире тавăрас тесе тахçантанпах шутласа çӳреттĕм-ха. Сăпаççипах ăшĕсене шуйттан кĕрсе ларнă Ельцинпа Горбачева ман хута, пирĕн хута кĕнĕшĕн. Такăр çул уçса пачĕç. Сывă юл!

Хăй çумĕнчен пăркаланса утса каякан хура тумлă, хура ăш-чиклĕ этем ĕмĕлки çине пĕр хушă пăхса тăчĕ те Крутов хăй çулĕпе вашлаттарчĕ.

Этемлĕх ăсĕн пĕр хăватлă юхăмĕ юмахланса та, тĕлĕкленсе те, çĕнĕ хĕвел пек йăлкăшса та илчĕ ĕмĕрсен кисревĕнче. Анăç енче вăйаннă шухăш тытăмĕ, анăç халăхĕсен пуçĕнче çирĕпленейменнине пула, лăпкă çилпе хĕвеле хирĕç - тухăçалла юхрĕ. Анăç ен çав шухăшлава хăйĕн килне кĕртме васкамарĕ-ха. Ăна чухăнлăхпа асапланакан Раççей империйĕн йышлă халăхĕсен «ухмах» пуçне кăна вăлтса кĕртмеллине ăслă нимĕçсем Карл Маркспа Фридрих Энгельс, этемлĕх ăсĕн илĕртӳллĕ шухăш юхăмне урлă-пирлĕ çавăрса пăхма пуçланă философ Георгий Плеханов вырăс тата Атăл тăрăхĕ çуратнă Владимир Ульянов юрист, малашлăха витĕр пăхса ăнланнă. Плехановпа Ленин халăхсене чухăнлăхран çăтмаха куçармалли тĕп шухăша пĕр чăмăра пухма пултарнă. Вăхăт иртнĕ майăн çав вăйпа – коммунистсен большевикла партийĕпе – тĕнчене кисретсе янă. Парти ертсе пынипе Çĕр çинче çĕнĕ шухăш-йĕркеллĕ совет патшалăхĕ çуралнă. Раççее ытамланă вун пилĕк совет республики ăслăлăхăн çав пайĕпе çут малашлăхлă юмах тĕнчинелле ăмăртса утрĕç. Çав çутта кансĕрлекен ăслăлăх пайĕ те çуралчĕ Анăçра. Унăн пуçне лартмалли хаяр çул пуçĕ те тупăнчĕ – Гитлер. Фашизм пуçланă кĕрешӳ марксизм-ленинизм вăйне çĕнтереймерĕ. Вăл вăй, тĕнчери ытти вăйсемпе пĕрлешсе, фашизма пусăрăнтарчĕ, Анăçри çĕршывсенче анлăн сарăлчĕ, пусахласах социализм – халăх демократи çĕршывĕсем çуратрĕ. Анчах та юмахланса та тĕлленсе çĕнĕ хĕвел пек йăлкăшакан ăслăлăх юхăмĕнчи хĕрнĕ савăла хĕрлĕ мăлатукпа тем пек çапсан та, Анăç çыннисен пуçне варăнтараймарĕç. Нумай ĕмĕрсем хушши пурнăçне тăнăçлатса çитернĕ халăхсем хăйсен енченех тухнă коммунизм хĕвелĕн ăшшине туясшăн пулмарĕç, унран зонтпа хӳтĕленме пуçларĕç. Ăслăлăх пайĕн пайăркисем Анăçра сӳнчĕç. Тухăçра та çав пайăркасем майĕпенех

сивёнсе пычёç те... Куç хупса илнё çёре – куç умёнчен йăлтăрт çеç çухалчёç. Виççёре яхăн миллион çынлă совет халăхё хăйён çăлтăр çутийёсёр тăрса юлчё.

Çапла шухăшласа Быстров КПСС Вăрманкас райкомён анлă пўлёмёпе сыв пуллашрё те урама тухрё, Ленин палăкё çумёнче чарăнса тăчё, ăшёнче унпа калаçрё: «Эх, Улатимёр мучи, Ленин атте, тёнче ăсчахё, тухăçаллах пăхатăн та çав, анчах хёвелў сан ытла та хăвăрт анма пуçларё-çке, анăç философёсен пёрлёхлё ăс юхăмне ленинизм ячёпе тёнчене хумлăн-хумлăн салатрăн, нумай-нумай халăхсен пуçёнче малалла аталантаракан асамлă шухăшна чёртсе пушар кăлартăн пулин те, çав пушар тёнче аталанăвён çирёпленсе çитнё тарăн никёслё çуртне çунтарса яраймарё. Пирён çёршывра та халё, хăв пек ăслă çул пуç çуралайманнине пула, коммунизм çути çутатаймарё. Санăн вăйлă шухăшусене, чăн-чăн ленинец текен суя шухăшлă, хăйсен ырлăхёшён çунакан генсексем-патшасем, пăхлă пушмакёсемпе пылчăка таптаса çăрчёç. Эх, юмахри паттăр майлă тăрса юлăн-ши шухăшупа вăйлă, влаçупа нишлё хăварнă хыççăн çакăнта, эпир юнашар пёрле, пёр тёллевпе районти коммунистсене, Вăрманкас халăхне ертсе пынă хыççăн? Эпё те ёнтё тек район хуçи мар. Эпё те, çёршыври çёршер пин партёçлевçипе пёрлех, паянтан ёççёрсен шутёнче. Марксла Энгельс хевтийё те, санăн вилёмсёр шухăшу та мана малашне пурнăç тилхепине ниçта та тыттармасть. Парти гимнёнчи «Интернационалри» чёнў юрăра çеç юлчё. Ылханлă пусмăра никёсне хăвармиччен те ватаймарăмăр, çёнё тёнче туса çёр çинче те хуçа пулаймарăмăр. Марксизм-ленинизм юхăмне хирёçле хăватлăн çапакан юхăмсем пирён çёршыв çийён те кăпăкне сапса салатрёç. Мён тăвăн ёнтё санпа, чунсăр чул кёлеткепе. Эсё хăвăнне май килнё таран туса çёр çинчен леш тёнчене тивлетлён ăсаннă, пирён, сан ачусен, вёренекенўсен, халё Турă ачисем вырăнёнче юлса, урăх çулпа утмалла пулать. Сывă юл».

Быстров нумаях та каяймарĕ, ăна кĕтнĕ пекех, райпо çуртĕнчен хуçи Милов саркаланса тухрĕ, кĕске аллине çӳлелле çĕклесе, Семен Ильича сывлăх сунчĕ:

– Хаклă хамăрьяла хĕрӳллĕ салам!

– Тымар ачине курма яланах хавас! – пĕтĕм кĕлеткипе силленсе алă пачĕ Быстров хăйсен ял кӳршине.

– Кама сутса хăвартăн-ха çупкă-тапкăпа выговор çуртне? Е урамри хăйĕн хуралçине парнелерĕн? Чӳречерен асăрхарăм та сана аçупа-çул пуçупа пуçна хыççах мĕскĕннĕн мăнкăлтатса тăнине, хыççăн унран, Ула тимĕртен, пулас тимĕр пăхĕнчен ытла хурлăхлăн уйрăлнă пек туйăнчĕ те...

– Ан епре, Тит. Райком çурчĕ – ман çурт мар. Унпа мĕн тăвассине мансăрах татса парĕç. Музыка шкулĕ куçать унта, пĕлесех килсен.

– О-о! Ленин аттене Бетховенăн хăй юратнă «Аппасионатине» итлесе савăнма аван пулать.

– Ачасем пианинăпа нимĕçсен чаплă композиторĕн романтикăллă аппасионатисене ытти сонатăсемпе пĕрлех çĕкленӳллĕ туйăмпа янраттарма вĕренччĕр. Владимир Ильич вĕсен хăватлă, çĕкленӳллĕ вăрттăнлăхне чунтан туйма пĕлнĕ пекех, Вăрманкас çыннисем те вĕсемпе киленме пултарччĕр музыкăна халăх хушшине анлăн сарнă май. Парти çурчĕ халăх керменĕ пулĕ. Эсĕ ăна, КПСС пăчланасса кĕтсе, хăвăн ална çавăрса илесшĕн хыпăннине лайăх пĕлетпĕр-ха.

Милов кулса ячĕ:

– Хэ-хэ-хэх. Нумай пĕлсен час ватăлатăн. Нумай пакăлтатсан чĕлхӳ тăрри хăвăрт якалать. Итле-ха, мухмăрла мар-и эс? Пăхатăп та, калаçнĕ май çăвару типсе пырать. Атя ресторана, хамăн ятарлă экстра-хупаха? Тута-çăвара кăштах йĕпетер. Эс халь район хуçи мар, урамри чупкăн йытă та çыртма хăрамасть сана. Хăвăн та никамран та сехĕрленсе пытанмалла мар. Сана та шупашкарсем кутран пушăпа тивермеççĕ, мана та эс хăратаймастăн. Тăнла, эп усал кăмăллă мар. Каçаратăп

эс мана хурăнташла хăтланса хаяр выговорпа пĕрле ĕçрен кăларттарасшăн пулнишĕн те. Выговорне те снимать тума ĕлкĕреймерĕн, ĕçрен те кăларса çаптараймарăн. Райком хурларĕ – шупашкарсем ырларĕç. Центросоюзăн куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавне ахальтен памарĕç пуль Вăрманкас райпоне. Кам чапа кăларчĕ пирĕн суту-илÿçĕсене? Райком пулăшнипе-и е райпо правленийĕ тăрăшнипе? Кала-ха?

– Правлени пуçлăхĕ Милов юлташ пултарулăхĕпе, – кулса ячĕ Быстров. – Ăнлантăм халь сан вăрттăнлăхна. Эс халь мана эрех кÿллинче иштерсе хăвăн мухтаву айне тăвасшăн. Юрĕ, эс ман шухăш-туйăма аякранах ăнланнă. Пĕр кÿршĕ темерĕн, ăслă. Апла тăк, хуйха эрехпе пусарас. Атя, уттартăмăр сан хупахна.

Калаçăвĕ-тавлашăвĕ вĕсен апат сĕтелĕ хушшине те шăнăçаймарĕ. Темле хĕрсе кайсан та çапах вĕсем пĕрне-пĕри кÿрентермерĕç. Сăмах май Милов, сехечĕ çине пăхса илнĕ май, каларĕ:

– Каçар та, Семен Ильич, вăхăту пулсан, атя кăштах уçăлма тухар? Ман Шупашкар хăнине кĕтсе илмелле. Иксĕмĕр пĕрле алă тытсассăн ăна, тен, саншăн та çанталăк улшăнса ăшăтĕ.

Вĕсем ресторан хыçĕнчи алăкран урама тухнă çĕре райпо умне хура «Атăл» çитсе чарăнчĕ. Машина алăкĕнчен мăнаçлăн тухнă Паева курнă Быстров лайăхмарланса кайрĕ. Çавна сиснĕ Милов ăна чавсипе айккинчен сисĕмлех тĕртрĕ, пăшăлтатса каларĕ:

– Малтан вĕсем сан пата кĕмесĕр ман пата пымастчĕç, авă халĕ епле?

Быстров тутине çеç пăркаласа илчĕ, киккирикĕ хĕрнĕскер, хирĕç иккĕшĕ илтмелле çеç кÿреннĕреххĕн тавăрчĕ:

– Мухтанах ĕнтĕ, паян эс – хуçи, эп – тарçи.

Мĕн тăвăн, кашни вăхăтăн – хăйĕн йĕрки. Чăвашпотребсоюз председателĕ Паев та, Вăрманкас райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Быстров та КПСС Чăваш обкомĕн членĕсем пулнă, парти йĕркинчи пĕр шайри

çынсем. Малтан райкомах кĕмелле пулнă. Унччен вĕсен калаçăвĕ яланах парти йышăнăвĕсен чиккинчен тухман пулсан, халĕ вара чăн-чăн этемле, уççăн юхрĕ. Паевăн та чунĕ уçăлнă, чĕлхи çивĕчленнĕ, авă епле кастарать:

– Район «кĕпĕрнаттăрĕсене» эпĕ, вун-вун çул хушши тăрантарса пурăннă май, ăнлантăр пуль, халь эп Чăваш «кĕпĕрнаттăрĕ» пулнă партократран та чĕрне хури чухлĕ хăрамастăп, ирĕклĕнех калаçма хал çитеретĕп. Маншăн халĕ вĕсем, ман шутра эсир те, Семен Ильич, мĕскĕн вырăнĕнче çеç. Çĕршыва ертсе пыракан парти тесе хăмпăланса пурте эсир ман умра, Миловсен умĕнче, хăвăрăн этем чысне вараланă, хăвăр çав вăхăтрах массăсене, ухмах халăха таса чунлă пулма коммунизм тăваканăн мораль кодексĕ умĕнче кĕл тутарса, ман умра чуралла чĕркуçленнĕ. Хура халăх тутанса пăхайман апатран чи тутли, тăхăнса çýреме чи чаплă тумтир тата мĕн кăна чи-чи лайăххи те пахалăхли, капăртараххи кирлĕччĕ хăвăр валли кăна мар, арăмусем, ачу-пăчу, тăвану-пĕтенý, юлташу-тусу валли те. Аслă пуçлăхсен арăмĕсем, упăшкисен катаччи машинисемпе кашни эрнере килĕсене мĕн-мĕн чухлĕ мĕнле-мĕнле дефицит турттарнине пĕлеймен çав ахаль коммунистсемпе хура халăх. Эпир, суту-илý çыннисем, хăвăр ирĕк парса пусахланипе, хăратнипе сире райкомран пуçласа Цĕка таран туса панă коммунизм ырлăхĕ. Сехре хăпатчĕ те ĕнтĕ сиртен, çав хушăрах вăрттăн кулаттăмăрччĕ те. «Хăçан та пулин шалчи тулатех-ха ку выçлăх çăхансен», – тесе турра кĕл тăваттăмăрччĕ. Акă халĕ турă сире, çылăха кĕнĕскерсене, айăпларĕ, сирĕн çăхан йăвине аркатма пулăшрĕ. Юмахри пек çаппа çарамаслантарса, йĕмсĕр тăратса хăварчĕ сире пурнăç таппи.

– Пире çĕнĕ, ирĕклĕ пурнăç таппи ылтăн пиçихиллĕ йĕм парнелерĕ, – йăх-йăх туса йĕп чикрĕ калаçу хушшине Милов. – Çавăнпа та Семен Иьич, çут пăр çинчен мекеçленсе тăмашкăн, сана эпир кача пýрне тăсса паратпăр.

Паев мăн кăмăллăн пĕлтерчĕ:

– Хам пата илесшĕн эпĕ сире ĕçлеме, Быстров юлташ. Мана сирĕн пек хастар та çаврăнăçуллă сылтăм алă кирлĕ. Килĕшсен, господин пулатăр. Мĕнле пек? Манăн сылтăм алла тытса сылтăм аллăм пулас кăмăл çук-и?

– Васка, Васка Илле ачи, умăнти ылтăн купине çавăрса тытмашкăн, – хэхэхлетрĕ Тит Нилович. – Паев господин патнелле туртăнакан санашкал «кĕпĕрнаттăрсем-паттăрсем» кĕпĕрленсех тăраççĕ.

Районти пур пуçлăха та выговор хыççăн выговор парса хăратса, тарăхтарса çитернĕ хыççăн ăна никамах та хăй патне алăк уçсах кĕртсе ярас çуккине ăнланакан Быстров, куçне мăч-мăч тутаркаласа илчĕ те, аслатиллĕ халтăртатупа пÿлĕме янратса, Паева сылтăм аллине пачĕ:

– Килĕшетĕп.

– Ыран хам патра кĕтетĕп, – терĕ шанчăклăн Паев. – Обкомра номенклатура али витĕр аланса тухас çук халь. Хамăрах татса патăмăр Миловпа. Вăл – сире сĕнекенни, эпĕ – ĕçе илекенни.

Паян виççĕшне те пĕр çĕрте тĕл пулма тÿр килни тĕнче сехечĕн тепĕр вăхăчĕ пулчĕ.

15

Хурăнварти Нухрат Кавăрлипе Тымарти Тан Ваçли – аякри тăвансем. Çулталăкра пĕрре-иккĕ тенĕ пек вĕсем çемйисемпе пĕр кĕреке хушшине лармасăр иртмен. Нухрат Кавĕрли те паян, Аслă сăпас кунĕнче, колхоз председателĕнчен Тельман Волковран ферма лашине çыртарса илчĕ те, килĕнче сыхласа хăварнă урапа çине карчăккине лартса, çула тухрĕ. Тан Ваçлин мăнукĕ, Макçăм, тин кăна авланнăскер, Мускавран майрипе килмелле тенĕччĕ ăна тăванĕ.

Ваçли куккăшĕпе инкĕшне мăн хапха алăкне уçсах кĕтсе илчĕ Тан Ваçлин кĕçĕн ывăлĕ, кил картинчи пĕр шĕвĕрккене шак хурсах каларĕ:

– Лашана çĕр каçмаллăх Çĕлен улăхĕнчен утă тиесе килен!

– Сăпас тăк – сыпас, пан улмипе сакусить тăвас, – текелесе Тан Ваçли хăнасене пӳртелле чĕнчĕ.

Вĕсене хирĕç пӳрт ум алăкĕнчен йăм хура çӳçлĕ патвар йĕкĕт кулкаласа тухрĕ, ватă куккăшне ытама илсе çĕклерĕ, инкĕшне алă тытрĕ:

– Курманни сире... ой, хăçантанпа? Мĕнле чуптаратăр?

Ун хыçĕнченех кăтралатнă çӳçлĕ, вăр-çаврака пит çăмартиллĕ, çӳхе кĕпе тăхăннă чиперкке курăнса кайрĕ, вăл çинçе сассипе хăнасене вырăсла сывлăх сунчĕ.

– Ачасем килнĕ ятпа хĕл каçнă пăрăва пусрăмăр та, шӳрпе пĕçертĕм-ха, – хыпăнса ĕçлет кăмака умĕнче Тан Ваçли матки. – Хăнана хăтасене, Мулла Микушĕпе Укахвине те, чĕннĕччĕ-ха. Сирнпе пĕрле килеймерĕç курăнать.

Апат хушшинче шăкăлтатса калаçса ларнă хушăра Кавĕрле Ваçли мăнукĕ еннелле çине-çине пăхрĕ. Темшĕн ăна çак ача утмăл тăваттăмĕш çулта хăйсен ялне райком ярса панă партком секретарĕ Крутов манерлĕрех курăнса шухăшлаттарчĕ. Макçăм сылтăм куçĕ çине усăнса аннă çӳç пайăркине вăхăтăн-вăхăтăн аллипе шăлса илет, кулнă май унăн сулахай пит çăмартийĕ кăштах чалăшса туртăнать, куç харшийĕ çăп-çăра, сăмси каçăртарах, тути хĕррисем хулăнрах, сарлака та çӳллĕ çамка. Сăмахсене пăтăр-пăтăр татса, уçăмлăн калаçать: тап-таса чăвашла. Район çар комиссарĕн Вячеслав Васильев подполковникĕн ачи ватă çынна тахçанхине аса илтерчĕ. Макçăм сăнлăрах Максим Максимович пайтах силлерĕ ун чунне хăй вăхăтĕнче: пăрça çулнă кунхине тупăк тума чартарнăччĕ, партбилетсăр тăратса хăварса сысна фермин заведующинчен, каярахпа утарçăран кăларттарнăччĕ. Мĕн чухлĕ хур тунă вăл хăйпе хирĕç кăмăллăн шӳрпе çисе ларакан ним айăпсăр ача çинчи

сăнар ĕмĕлкийĕ. Аса илнипе вăл хăй сисмесĕрех сăх сăхса алла часрах йывăç кашăк тытрĕ.

Сăра-эрех тутанса пăхнă хыççăн Макçăм хăйсен пурнăçĕ çинчен кĕскен мухтанса илчĕ.

– Тĕкĕ пулман пулсан-и, – терĕ вăл. – Ман пурнăç йăлтах урăх еннелле сулăнатчĕ. Тит Нилăчсен ачи çĕклерĕ мана тӳпенелле. Алексей Титович çулла отпускне ялта ирттернĕччĕ. Эпĕ вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтернине пĕлнĕскер вăл мана хăйсен радиотехника, электроника тата автоматика институчĕ çинчен каласа парса питĕ хавхалантарса ячĕ. Техника наукисен докторĕ иккен вăл, профессор. Ялтан кайичченех мана çур экзамен тыттарчĕ. Çапла студент пулса тăтăм. Хĕрлĕ диплом илтĕм. Мана вăл аспирантурăна хăварчĕ. Хăй сĕннĕ темăпа техника наукисен кандидачĕн диссертацине хӳтĕлерĕм. Пĕрле вĕреннĕ хĕрпе Евăпа пĕрлешрĕмĕр. Ашшĕ унăн – Ельцин тусĕ. Свердловскра пĕрле ĕçлесе пурăннă: пĕри – парти обкомне ертсе пынă, тепри – «Уралэлектроаппарат» завод директорĕ пулнă, халĕ Совмин председателĕн заместителĕ. Пирĕн туя Борис Николаевич та мăшăрĕпе пычĕ. Хуннĕмпе иккĕшĕ ура хуçсах ташларĕç. Евăн ашшĕпе амăшĕ те еврейсен йăхĕнчен.

– Турă çыннисемпе ерсе кайрĕ ваçка ман мăнук, – тутине чалăштарса илчĕ Тан Ваçли. – Ăслă халăхпа çывăхланчĕ. Еврей вăл çĕр чăмăрне тытса тăрать.

– Хамăр та ухмах мар-ха, – терĕ сăра куркипе хуçине тав туса Кавĕрле. – Ава епле ăслă-тăнлă мăнуку. Тит ачи те ăçта çити хăпарса кайнă.

– Хăвăн та ывăлу район тухтăрĕсенчен чи асли-çке, – арçынсен калаçăвне хутшăнчĕ Тан Ваçли арăмĕ. – Начар йăхран пулман эпир – чăвашсем.

– Çапла, тан эпĕр, çĕр çыннисем, турă çыннисемпе те, темле халăхпа та – пĕр тан, – калаçăва пат татрĕ кĕреке хуçи. – Кин те, Мулла Микушĕсем те çитрĕç, ава. Славика тата мĕн пулнă-ши, курăнмасть. Карчăк, йăраланкала!

Хăнасем йышланнине туйса, урай хăмисем чĕриклетсе илчĕç: «Ку таранччен чăтнă – чăтатпăр та».

Максимкăпа Ева, мăн хуларан ашшĕ-амăшĕн килне çитсессĕнех ваттисемпе пĕрле алă тытнăччĕ: «Атьăр эпир кайиччен шăплăхра пурăнар – радио та, телевизор та ямастпăр. Вăл вăхăтра çĕр те тепĕр майлă çаврăнма пуçламĕ-ха, тĕнче те кисренмĕ, атом бомби те çурăлмĕ».

Çапла лăпкăланса пурăнма пуçланă виççĕмĕш кунне, акă...

Хурăнварсене сĕтел хушшине лартсан, Тан Ваçлисен кинĕ Елена Сергеевна тур кĕтессинелле пăхса, сăх сăхрĕ:

– Эй турă, мĕн патне çитеретĕн эс пире, ухмахсене. Мускавра революци пуçланнă вĕт...

Тан Ваçли сăмакун тултарнă стопкине тути умĕнчен уйăрса сĕтел çине лартрĕ, унтан хăвăрт илчĕ те янк тутарчĕ:

– Каллех революци апла. Малтан ĕçсе юлас. Кайран тем пулса тухĕ. Тем те курса ларăн ку пăтрануллă пурнăçра.

– Ухмахланакан, вĕрекен влаç хуранĕнче тесен те йăнăш пулмасть, – кăххăмлатса илчĕ Нухрат Кавĕрли. – Халăх уйра тырă панче тар тăкнă вăхăтра ĕçсĕр аптăракансем те тупăнаççĕ иккен. Октябрь революцийĕ пулнăранпа çитмĕл пилĕк çул тултарнине мекĕрленсе кĕтсе илме хатĕрлеттерекенсем тата мĕн революцийĕ шутласа кăларнă-ши?

Васкаса калаçнипе пӳлĕннĕ Славик арăмĕ, сывлăш çавăрса янă хыççăн, пĕлтерчĕ:

– Горбачева, СССР президентне, Хура тинĕс хĕрринчи Форосра, хăйĕн пĕр йăвинче, хупса лартнă.

– Хăçан? – тĕлĕнчĕ Максим Васильев. – Пирĕн хăйматлăх атте Борис Николаевич хăтланман пуль те? Çавă пит вăйланса пырать пуçлăхсем хушшинче. Унран, хуннĕмрен илткеленĕ эп унăн мыскарисем çинчен, унран тем те кĕтме пулать.

– Ельцин мар. Урăххисем аташнă. Ёнер вĕсем Мускавра ГКЧП туса хунă – Чрезвычайлă йĕркепе ĕçлекен

патшалăх комитечĕ. ГКЧП çĕршыври пĕтĕм влаça хăйĕн аллине илни çинчен пĕлтерчĕç радиопа. Славик çавна пула килеймерĕ. Ăна шупашарсем военкоматран тухма чарнă.

Тан Ваçли йăпăр-япăр кĕреке пуканĕ çине кĕрсе ларчĕ те, калаçăва кулăшлантарса ячĕ:

– Килте те революци тухма пултарать-ха. Карчăк аллине парас мар кĕрекене. Тав сире пурне те. Ман пек ак çапла тĕпне çитиччен пушатар та, мăнук илсе килнĕ ак çак пилĕк çăлтăрлă куньяк текен хаяр эрекине тутанса пăхар та, юрласа савăнар. Хура тинĕсе путтăр-и мускавсен революцийĕ. Тав сана, карчăк!

Ашшĕ эрех черетленĕ хушăра Макçăмпа арăмĕ сĕтел хушшинчен тухса вĕсенчен уйрăлчĕç:

– Пака. Эпир вăрмана кăмпана кайса килесшĕн-ха. Хура кăрăç карти-картипехчĕ заказникре.

Кĕреке юрласа ячĕ:

Алран кайми аки-сухи...

Мускав революцийĕ сасартăк çĕршыва çĕр чĕтреннĕ пек кисрентерсе илчĕ те, майĕпен лăпланчĕ. РСФСР Аслă канаш председателĕ Борис Николаевич Ельцин влаça çавăрса илчĕ. Хаярланнă халăх вăйĕсем унченхи йăлăхтарнă пусмăрла йĕркене малалла тăсма килĕшмерĕç.

16

Çĕрпе шыв тӳпинчи аслă вăй никама та пăхăнмасть. Унăн хăйĕн космос çиппи, чупăвĕ, çирĕп йĕрки. Курăнман, алла тыттарман юхăм этеме, этемĕн кашни клеткине уйрăлми çыхăнăва пĕрлештерсе чĕрĕлтерет, ăна Çĕр-планета çинче хуçаланма ăс-хакăл парса тăрать. Ăслăлăх тинĕсĕ ытла та хирĕçӳллĕ, хăватлă. Çав хирĕç тăрура этемĕн çĕнтерсе пурнăç тумалла, пурнăçра савăнмалла, малашлăха пăхса утмалла. Этем вара, ытти хурт-кăпшанкă, чĕр-чун пекех, хăйне хистесе тăракан вăйне каппайчăк ĕмĕтлĕн хĕмлентерсе, пуç пуласшăн кĕрешет. Чĕппи этемĕн çуралсанах хăйĕнчен хавшакраххине

йĕртет, ӳссе аталаннă май, унăн пуçĕ çине хăпарса ларать. Этем, халăха куçсан, пушшех тискерленет. Ăна çут тĕнчере, пурнăçра нихçан та нимĕн те çитмест. Ăна пуринчен те ытларах кирлĕ. Унăн пуринчен те пуян, пуринчен те чаплă пурăнас килет. Хăй пăхăнтарнă çынсене хăйшĕн чуралла ĕçлеттересшĕн. Хăш çĕрте çуралнине, хăш наци пĕрлĕхне кĕнине пăхмасăр, Çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсем, пысăк пăтранусенче пĕрне-пĕри вĕлерсе пĕтерсе, çиеле тухаççĕ, ыттисен шухăшлавне сивлесе хăйсен шухăшлав сăннине вĕсен пуçне çапса кĕртсе, чун-чĕрине улăштарма хăтланаççĕ. Çав хирĕç тăрура Раççей халăхĕ те, Раççей тавра чăмăртаннă ытти халăхсем те, хăйсен пуçлăхĕсен тĕрĕс е йăнăш çулĕпе çĕнĕ пурнăç хĕвелне тытасшăн тапаçланаççĕ. Анчах та... хĕвелĕ çӳл тӳпере кăна-çке. Çĕр çинче шухăш çутийĕ, хĕлхемĕ çеç.

Тухăçран хăпаракан хĕвел пайăркисем, мал енчи чӳречерен кĕрсе, тĕлĕк курса çывăракан этеме – Вăрманкас район совечĕн председательне Альберт Григорьевич Большакова – ăшшăн ачашласа вăратрĕç.

Тула тухса кĕнĕ хыççăн вăл мухмăрла пуçне Кавказ шывĕпе чӳхерĕ те тепĕр хут вырăн çине выртрĕ. Ĕçе кайма иртерех-ха. Унченрех кăна-ха унăн пур тĕплĕ ыйтăва та чи малтан КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе Семен Ильич Быстровпа татса памаллаччĕ, вăл мĕн хушнине тĕпе хурса ĕçлемеллеччĕ, унран иртсе каймалла марччĕ. Шутласан, пĕр енчен илсен, лăпкăн кăна хӳтĕленсе пыма пулатчĕ пĕрремĕш секретарĕн çурăмĕ хыçĕнче. Райĕçтăвком пуçлăхĕсенчен миçе çынна пĕлмест пулĕ вăл унашкал лăпкă хумра ишекенсене. Район мала кайсан, председатель те малта, уксахлама пуçласан, секретарьпе пĕрлех вăл та начар пуçлăх. Шалкăм çумăрĕ те чи малтан секретарь пуçĕ çине шапăртатать, чăваш область парторганизацийĕн пуçлăхĕн йывăр аттийĕ те чи малтан секретарь кутĕнчен пырса тивет. Хăй пĕрремĕш секретарьте чухне тӳссе курнисене аса илчĕ халĕ Большаков: орденне те,

медальне те тивĕçнĕччĕ, çав хушăрах парти енĕпе обкомра пилĕк выговор туяннăччĕ. Секретарĕн те хăвăн шухăшупа-çунатупа çÿлелле вĕçме мачча лутраччĕ. Пусара-пусарах робот пек ĕçлеттеретчĕç.

1990 çулта çĕршыври халăх депутачĕсен виççĕмĕш съезчĕ советсен хапхинчен уçă сывлăш çавăрттарса кĕртнĕ пекчĕ, СССР президентне суйланăччĕ. Акă халĕ Михаил Сергеевич Горбачева та нимĕн вырăнне хумасăр, унăн патша влаçне туртса илесшĕн.

Халĕ ĕнтĕ, тепĕр енчен шутласан, çапах та Большакова КПСС пушши кутран-пуçран лекмест. Вăл районта хăй хуçа – пĕр хуçа. Мĕнле ĕçлес килет, çавăн пек çĕмĕрттер. Районшăн вăл хăй пĕччен хуравлă, никам çурăмĕ хыçĕнче те пытанса юлма май çук. Унăн районти аллă пин çынна çăкăрлă тумалла. Унăн, агрономăн, район калăпăшне кĕрекен утмăл пин гектар çĕре тупăшлантармалла. Мĕн тери ăслă, тарăн пĕлÿллĕ специалистсем вĕрентнĕ ăна институтра ытти студентсемпе пĕрлех. Çав профессорсен шанăçне хăçан туллин тивĕçтерĕ-ши вăл? Хăй шутланă тăрăх – ăна вăл пурнăçлатех. Пурнăçламашкăн майĕ те, ĕçĕ те пур. Çине тăрасси кăна юлать.

Çĕрĕ вара... Хырăма тăрантарса çурăма хупламалли пуянлăх, тĕнчери, таврари нимле хирĕç тăрăва та, вăрça-харça та пĕлмест, кашни çул çуркунне ăшăнса çĕнĕрен чĕрĕлет те, кĕркунне хăйĕн пуянлăхне этеме парнелесе, канма тарăн кĕрт айне юрпа витĕнсе выртать. Ăна юратса лăпкама çеç пĕлмелле, пултармалла çĕр хурчĕн – этемĕн, ун пуянлăхне илме ăсталăх çитерсе хĕпĕртемелле кăна.

Çĕрĕн хăйĕн çут çанталăк саккунĕ. Халăх йăлипе, вăл Турăпа çеç пĕр майлă е Турри хăй çав саккунпа пĕрлĕхлĕ. Турă панинчен иртеймĕн, Турă панипе çырлахас пулать тесе хăйне хăй лăплантарса пурăнма хăнăхнă халăх. Альберт Григорьевич, атеист, унашкал хăнăхуран чылай çÿлерех хăпарма пултарчĕ ĕнтĕ хăйĕн пурнăç

картлашкийёпе. Унăн Турă панипех çырлахса лармалла мар, наука çитĕнĕвĕсем пулăшнипе çут çанталăк пăтăрмахĕсене те çĕнтермелле. Ку енĕпе хăй Вăрманкас енче мĕн-мĕн тума пултарнине аса илчĕ. Ĕмĕчĕ пуçра явăнса чуна канăçсăрлантарма чарăнмасть-ха.

Райком вĕçĕмсĕр ирттерекен канашлусенчен хăтăлчĕ вăл. Хăйне пăхăнакансене халăх хушшине ытларах хăвалать. Калаçу-канашлу ял ĕçченĕсемпе пĕрле ĕçлĕн, пулăшу майлĕн иртмелле.

Хăйне йĕркене кĕртсе хăвăрт апатланнă хыççăн Большаков ĕçтăвкома кайрĕ, шоферне чĕнтерсе çула тухрĕ. Унăн çулĕ паян – район çулĕ.

Ĕнер Шупашкарта, Советсен çуртĕнче, райĕçтăвком председателĕсене черетлĕ мунча кĕртрĕç. Альберт Григорьевич вĕри лапка тăрне лекеймерĕ те, йĕплĕ милĕк туратти ăна та самаях кăтăклантарса илчĕ. Патшалăха сĕт сутассипе унăн та план çунма пултарать.

Халь кăна-ха район пуçлăхĕсем пулса тăнă хăш-пĕр председательсем çине хĕрхенӳллĕн пăхса ларчĕ вăл. Вĕсенчен çуррине яхăн – штрафниксем. Пĕрремĕш секретарьте ĕçленĕ, анчах хăйсен районĕсене аталантарайман пултарусăр «кĕпĕрнаттăрсем». Унашкаллисене ĕçрен хăтарса район совечĕсен председателĕсем пулма суйлаттарас йăла пурччĕ обкомăн. Мĕнех, вăйлă секретарьпе вĕсем ытлашши пуç çĕмĕрмен. Акă халĕ пиçмен пашалусем хăйсем район пуçĕнче чапланса юлчĕç.

Мунча кĕрсе таврăннă чух Шăхран районĕн пуçлăхĕпе Юлдашев юлташĕпе Большаков паянхи тата ыранхи ĕçпуç пирки калаçса çăвар тутине пĕтернĕ хыççăн, вĕсем Кӳкеç хупахĕнче коньяк ĕçсе, тĕтĕмленĕ кăрккапа çăвара тутлăлантарчĕç, пуç кунтăкĕнчи шухăш пĕрчисене пушшех çил-тăвăллатрĕç. Альберт Григорьевич шăхрансемпе малашне те ăмăртма çирĕп сăмах пачĕ. Юлдашев юлташĕ унăн КПСС пушарĕнче те çунмарĕ, райком секретарĕн пушшине райĕçтăвком пушшипе çеç

улăштарчĕ. Республика пуçлăхĕсем ăна шанчĕç. Пултаруллă «кĕпĕрнаттăрах» çав вăл.

Халăх тăвăл вăхăтĕнчи тинĕс хумĕ пек пăтраннине курать район пуçлăхĕ Большаков. Мĕнле кăна ыйту çине хуравлама тивмест кун каçиччен. Хăйсен аллипе вуншар çул хушши тунă аталаннă социализм стройĕ ял халăхĕшĕн те питĕ çывăх-çке. Кисренме пуçланă çĕршыва, халăх пурнăçне майĕпен «реформăлакан» Горбачев хăравçăллăн, мулкач пек тĕм хыçне пытанчĕ. Перестройкăна хăвăртлатма хистекен Ельцин каманти çĕнĕ ăнлав юмахĕпе халăха çавăрма пултарчĕ.

Вăрманкас районĕ иртнĕ çулхи ял хуçалăх ĕçĕсене чи аван вĕçлерĕ. Чӳк уйăхĕнче, республика кĕрекинче, ăмăртăвăн тăватă енĕпе пĕрремĕш преми илчĕ. Тельман Волков колхозне вĕр-çĕнĕ «Беларуç» трактор парнелерĕç.

Малашне тата хытăрах ĕçлемешкĕн халăхăн хавхаланăвĕ çĕкленчĕ. Çĕр çынни ĕнтĕ вăл çĕрелле пуçа чикнĕ те сурăхла, ним çинчен те пуçа çĕмĕрмесĕрех ĕçлет. Уншăн шухăшлаканĕсем колхозра та, районта та, Шупашкарта та, Мускавра та тăп-туллиех. Вăл çав шухăшлавçăсене, хăйне кĕтӳç пушшипе шартлаттарса хуптĕрленине чăта-чăта, хăра-хăра тăрантарать. Вĕсем мĕн каланине пĕр пăркаланмасăр итлет, суйлавсенче вĕсемшĕн сасă парса хăйĕн пуçĕ çине хăпартса лартать. Çав пуçлăхсем вара, влаç пайласа, пĕр-пĕрне кăшласа пурăнаççĕ, нихçан никам тăрантарайман хырăмĕсене шăлса, пуçĕсене каçăртаççĕ, уççăн та, вăрттăн та патшалăха тустараççĕ, хавшатаççĕ.

1922 çулта Раççей кӳршĕ республикăсемпе килĕшсе Советлă социализмла республикăсен союзне туса хунăччĕ. СССР утмăл тăхăр çул пурăнчĕ. Тĕнчере хăйĕн ятне-хăватне уçăмлăн кăтартрĕ, анчах тĕнче аталанăвĕн юхăмĕнче вăйланса пыракан хумсем айне пула пуçларĕ. Хавшак рулевойсем çĕршыв киммине хăйсем палăртнă çулпа тытса пыраймарĕç. Çĕнĕлĕх палкавĕн хумĕнче «СССР» текен мăн карап малалла ишейми пулчĕ. Çавна асăрхаса пурăнакан çĕнĕ вăйсем Курпун сысна влаçĕшĕн

çунма пăрахмарĕç. Раштав сиввине чăтайман карап капитанĕ патшалăх штурвалне хăй ирĕкĕпех алăран вĕçертрĕ. Патша штурвалне мухмăр-сухмăрпа анрасухраланнă Ельцин карма çăвар çавăрса тытрĕ.

Çав улшăнусенче хресчен çĕтĕлнĕ атă-пушмакĕпе харăс пуссах утать-ха. Вăл çĕртен илнĕ тупăша шутлать.

Кăçалхи ўсĕмсемпе малашлăх пирки эртелпе канашламашкăн Большаков халăх хуçалăх ертўçисен, мала тухнă ĕçченсен, халăхпа хытă ĕçлекен активистсен пухăвне ирттерчĕ. «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхозран унта Хурăнварти агитатор-пропагандиста Петр Петрович Числова та чĕннĕччĕ. Хаклă парнесем панă вăхăтра унăн хушамачĕ те тухрĕ. Райĕçтăвком председателĕн аллинчен вăл алла çыхмалли ят çырнă ылтăн тĕслĕ сехет илчĕ.

Хăйматлăх кĕрўшĕ утартан таврăннине пĕлнĕ Числов тепĕр ирпе-ирех Воробьевсем патне васкарĕ. Хăйматлăх кĕрĕвĕпе калаçманни чылай пулатчĕ-ха унăн, шахматла та тытăçса илес килчĕ унпа.

Карачăм мучи хăйматлăхĕ çитнĕ тĕлелле вырăн майласа тăрать. Арăмĕ машинипе фермăна тухса вĕçтерме те ĕлкĕрнĕ.

Сăмах-юмах пуçарнă май, Числов шўтлерех ыйтрĕ:

– Мĕнле те пулин улшăну туйрăн-и, кĕрў?

– Ăнланмарăм-ха сана эп, хăйматлăх, – тĕлĕнчĕ кил хуçи. – Крахьян кĕрчĕ ихĕре-ихĕре сухалран туртса чуп туса хăварнисĕр пуçне нимех те туймарăм-ха.

– Историе кĕрсе юлнă кун паян, тăванăм,– сылтăм аллине çĕклесе лăшт тутарчĕ Числов. – Ĕнер эс социализмра çывăрма выртнă пулсан, паян капитализмра вăраннă. Ăнланмалла-и?

– Çук, – аллисене саркаларĕ Карачăм.

Числов вара ăна çакна пĕлтерчĕ:

– Ĕнер Белоруссири Шурă чăтлăх вăрманĕнче пирĕн Ельцин, Украинăпа Белоруссии пуçлăхĕсем Кравчукпа Шушкевич 1922 çулхи Совет Союзĕн килĕшĕвне пăрахăçласа, никама пăхăнман патшалăхсен союзне туса хунă. Çапла вĕсем кăçалхи пуш уйăхĕнче мĕнпур совет

халăхĕ СССРа сыхласа хăварассишĕн сасăланине нимĕн вырăнне те хумарĕç. Вĕсемшĕн СССР килĕшĕвĕ те, конституцийĕ те, Раççей, Украина, Белорусси конституцийĕсем те саккунлă мар. Паянтан Ельцин Раççейре капитализм тума тытăнать.

– Патюшки, – тур кĕтессинелле çаврăнса сăх сăхса илчĕ ватă çын. – Патша самани каялла таврăнса килет-и çак? Тĕлĕнтерсех пăрахрăн капла эс мана, хăйматлăх. Арăм сухал туртнă хыççăнхи кăмăла пĕтертĕн. Нивушлĕ истори урапийĕ каялла çаврăнса кайрĕ? Чаркăчне тытакан çирĕп алă пулаймарĕ-шим çак мăн çĕршывра? Каллех чура пулса тăратпăр-ши?

– Эпĕ шухăшланă тăрăх, çавăн патнелле пыратпăр. Советсене аркатаççĕ...

– Чăнах-и? – тарланă çамкине шăлса илчĕ мучи. – Мăн Альпăн каланчи те райком каланчи пекех ишĕрĕлсе анатьши? Ытла лайăх çын вăл - Пульшаков. Хамăр кăлхус мусейне те аркатас-мĕн пулсан çав ар çурисем... Ах, паянах кайса илес Мĕтри пичин хĕрлĕ çăлтăрлă шлемне. Вăл та, эпĕ хам та çав путеннăвкăпа пуянсенчен, шур енералсенчен совет влаçне хŭтĕленĕ. Килте ман ухвицер хурми, пăшал пур. Çар тумĕпе, çав шлеме пуç çине лартса хŭтĕлеме хатĕр эп паян та хамăрăн совет влаçне. Çапла мар-и?

Аптранă енне Числов кулса ячĕ:

– Эх-хэ-хэ. Пулмарĕ ĕнтĕ иксĕмĕртен те халь тин вăрçăлла вылясси. Пĕтрĕ совет влаçĕ. Çĕнĕ влаç аллинче ташлама тытăнатпăр. Шăпăрпа.

«Анăçран вĕçсе килнĕ пылак шухăш Раççей утарĕнче кăммунисăм вĕллине сĕрлеттереймерĕ. Халăх унăн пылне çисе тут илеймерĕ. Хура чунлă ултавлă патшасен хура пылĕ халăх çине çума пуçлать ĕнтĕ, сăрă хурт ĕрчет», – тесе Тымар вăрманĕ еннелле тăклаттарчĕ колхоз утарçи Числов Петĕрĕн усал хыпарĕпе хыпăнса ŭкнĕскер. Чăрсăр ухутниксем ăшă ыйхăран вăратнă упа вĕллесене тапăнасран унта та канăç çук. Мускавĕнчи Çĕпĕр упийĕ те халĕ уншăн хăрушă тискер кайăк пек туйăна пуçларĕ: «Раççее тŭнтерсе ярĕ те?»

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

I

Хăть те хăш революци те çĕршывăн тĕп хулинче пулса иртет. Çĕнĕ вăйсем патшалăх тытăмĕн пуçĕнче тăракансене пусараççĕ те, хăйсем вĕсен вырăнне йышăнаççĕ. Революци пулса иртни çинчен çĕршывăн аякри кĕтесĕнче тепĕр чухне каярахпа тин пĕлеççĕ. Юрать-ха хальхи саманара радио-телевидени вăйлă: хыпара тухăмрах тĕнчене сараççĕ.

Чăваш çĕрĕ çийĕн те революцин вăйсăрланнă хумĕ юхса иртрĕ, халăх питне çуса уçăлтарса хăварчĕ. Шупашкарти Чăваш пуçлăхĕсем, пухăнса павраса илнĕ хыççăн, Мускав мĕн хушнине пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама пикенчĕç. Мускав революцийĕ Чăвашстанра нимĕн те аркатмарĕ, никама та леш тĕнчене ăсатмарĕ, çĕнетнĕ саккуна пурне те чуп тутарчĕ çеç. Хура халăхăн пуçлăх мĕн хушнине итлемеллех, унăн куçĕнчен ирĕксĕрех чуралла пăхмалла. Хушăвĕ лайăх-и, япăх-и, çырлахтарать-и, тарăхтарать-и, ăна салтакра командир панă приказа пурнăçланă пекех пурнăçламалла. Ирĕклĕх тени хут çинчен çĕкленсе тухаймасть-ха.

Вăрманкас районĕн пуçлăхĕ Большаков та, районти хуçалăхсен пуçлăхĕсем те Мускав енчен капланса килнĕ аслатиллĕ çумăр хыççăн тăна кĕрсе çитеймеççĕ-ха. Шурăмпуçсен председателĕ Волков, республикăри хресченсен канашĕн членĕ, пухура çур кун тавлашса тар кăларнă хыççăн, Шупашкартан шутсăр кăмăлсăр тавраннĕ. Унччен парти обкомĕ, райком тухăçлă пултарса ĕçлеме ура хурса пырать, камантлать те хĕстерет тесе нăйкăшса пурăннă хăш-пĕр пуçлăхсем, парти чуралăхĕнчен хăтăлса тухнă хыççăн та, тислĕк нăрри пек йăраланаççĕ-ха. Вĕсем валли те патшалăхĕ пыл çулĕ уçса панă.

Тельман Федотовича 1992 çулхи кăрлач пуçламăшĕнче Мускавра кăларнă указ палач пурттипе

мăйран каснă пекех туйăнать. Ăна пурнăçласа унăн 1986-1992 çулсенче туса илнĕ ял хуçалăх продукцийĕн пĕтĕм калăпăшĕнчен шутласа патшалăха тырă вăтăр пилĕк, сĕт-çу, аш-какай хĕрĕх пилĕк, пахча-çимĕçпе çĕр улми çирĕм пилĕк процент ытларах, пасар хакĕпе сутмалла. Енчен те çавăн пирки килĕшӳ тумасан е килĕшсе татăлнă продукцие парса татмасан, унран патшалăх пасар хакĕпе укçа шыраса илет. Килĕшӳре палăртнă продукцие вилсен те, çурăлсан та парса татмаллах.

Вăл ĕнтĕ, Ельцин хушăвне шута илсе, хатĕрлевçĕсемпе пур енĕпе те килĕшӳ турĕ. Хĕллех. Çавна май колхоз кăçал тырă пилĕк çĕр аллă, çĕр улми пин те виççĕр, сĕт пин те çĕр, аш-какай тăват çĕр аллă тонна сутать.

Хресченсен канашĕнче вăл республика пуçлăхĕсене питĕ тарăхсах питлерĕ:

– Эпир хамăр сăмаха сирнешкел çилпе вĕçтерместпĕр, – терĕ вăл. – Эсир ăна тырă яман пуш арман чулне халтăртаттарса ларатăр. Хресчен хăй туса илнĕ продукцие мĕнле тата ăçта вырнаçтарни, ăна мĕн хакпа сутни пирки пуçпа тарăнрах шутлатăр-и хăть хăçан та пулин? «Давай-давай» музыка кĕввипе банкетсенче ура тупанĕ хĕриччен ташласах савăк пурнăç тăвасшăн.

Ял çынни хăйĕн продукцине кăшт хаклатса сутма пуçларĕ те, хула çыннисем епле кĕрлесе кайрĕç? Ял хуçалăх продукцийĕн хакне кама мĕнле килĕшет çапла тутарасшăн. Çав вăхăтрах промышленнăç таварĕсен хакĕсем çĕр хут ӳсрĕç.

–Хаксен политикине эпир тумастпăр, – сиксе тăчĕ ял хуçалăх министрĕ Хурхух. – Унпа Мускав камантлать.

– Министр калпакне пуç çине пусса лартрăр та, хăвăр колхоз председателĕнче чухне мĕнле нушаланнине ытла час мантăр-çке эсир, Хурхух хаспатин? Юрĕ, Раççей правительстви çĕр çинче нимĕн усăлли шăтмасан та хăнк та тумасть, çимелли-тăранмалли ют çĕршывран туянса халăха выçă вĕлермест, тейĕпĕр. Эсир вара çав йывăр

лару-тăрупа усă курса ассах кайрăр. Хресчене ним вырăнне те хумастăр. Эсир, вилме патне çитнĕскерсем, сирĕн хăвăрăн таварна татах та йӳнетсе сутмалла тенĕ пекех пулса тухать.

Чĕре çурăлать паянхи пурнăçра. Эпĕ ăçта, камăн мĕнле хакне лайăх пĕлетĕп. Çак юпа уйăхĕнче Мари республикинче колхозсенчен ĕне выльăхĕн пĕр килограмм чĕрĕ виçине хĕрĕх тенкĕпе туяннă, ун çумне Раççей дотацийĕ вун сакăр тенкĕ тата вырăнти бюджетран вун çичĕ тенкĕ хушса тӳленĕ. Мордва республикинче, Ульяновск тата Чулхула облаçĕсенче те бюджет укçинчен çирĕм пилĕк-çирĕм сакăр процент хушса панă. Марисем, акă, сысна ашĕн пĕр килограмм чĕрĕ виçине çитмĕл виçĕ, мăкшăсем тăхăр вун виçĕ, чăвашсем хĕрĕх виçĕ тенкĕпе туяннă. Чулхуласем пĕр килограмм сĕте çирĕм икĕ тенкĕпе, пирĕн тăхăр тенкĕ те хĕрĕх пуспа илеççĕ.

Ял хуçалăхне çĕклеме мар, ытларах парад тума каять пирĕн республика укçи. Çавăнпа та сирĕн, Хурхух хаспатин, кӳршĕсенчен вĕренмелле е, колхозах каялла таврăнмалла. Ытла мăн хăмăт мăя шăйăрать сирĕнне.

Пурте пĕлетпĕр, хресченĕн пурнăçĕ питĕ йывăр. Ăна камăн çăмăллатмалла-ши? Унăн ыранхи шăпи пирки паян тарăнрах шухăшламалла: пирĕн, сирĕн, Мускав бюрокрачĕсен. Хресченшĕн чунтан кĕрешмелле.

«Хыпар» хаçатра тепĕр кунне Волков каланă çак сăмахсене те вуларĕçех пуль Чăваш çĕршывĕнчи çынсем. Тельман Федотович Тымара çитсен тӳрех сысна фермине кĕрсе тухас терĕ. Председателе чӳречe витĕр асăрхаса-ши чул çуртран ăна хирĕç Людмила Павловна Каргина-Белова тухрĕ. Вăл комплекслă бригадăн бригадирĕ, çав вăхăтрах зоотехник та. Алексей Моисеевич Каргинпа виçĕ ача ӳстереççĕ. Людмила Павловна пусма картлашкисем тăрăх çăмăллăн сиккелесе аннă-анман çирĕп аллине тăсрĕ:

– Аванах пурнатпăр-ха, сывах. Хăвăр тата мĕнле чуптаратăр? Килменни виçĕ кун çитрĕ те...

– Вăхăт çук, Людмила Павловна. Институчĕ, Хресченсен канашĕ. Те ĕçлесе пĕтерееп ку çула, – терĕ ассăн сывласа Волков. – Кириллов васкатать. Декан тăвасшăн-çке манран вăл. Те пултараятăп аслă шкул факультетне ертсе пыма. Колхоз мар та унта. Кунтан та каяс килмест. Çитес вĕренӳ çулĕччен пурпĕрех ĕçлес тетĕп-ха. Сире тăнчă-тăнчă тарăхтарса çитериччен.

– Ун пек ан калаçăр-ха. Сире ялтан ярас текен те çук пуль.

– Тупăнаççĕ, – алă сулчĕ председатель. – Пурин тутине те пылпа сĕреймĕн. Пушă та лекет-çке хăшне-пĕрне. Çапла, Людмила Павловна, ĕçсем ăнсах пыраççĕ-ха сирĕн. Тарăнварсемпе кайриварсене те, хурăнварсене те хыçала тăратса хăвартăр ăмăртура. Астăватăр-и?

Мĕн калать-ши ку Волков тесе пуль хĕрарăм ăна куçран чăрр пăхса ыйтрĕ:

– Мĕн? Мĕн пирки эсир, Тельман Федотович?

– Ăмăрту пирки. Хавхалану-хавхалантару пирки. Епле чуптарнăччĕ эсир пире ĕнесем валли çуллахи лагерь тунă чухне вăрман уçланкинче?

– Э-э-э, астурăм. Карачăм мучи чемпион пулнă чухне.

– Çавăн чухнех ман пуçа пĕр шухăш савăлланса ларнăччĕ.

– Мĕнле шухăш-ши?

– Сиртен вăйлă, пултаруллă ертӳçĕ пулать, тени. Миçе çул хушши ĕнтĕ эпĕ çав шухăша вăйлатса пыратăп. Акă халĕ паян пуçран кăларса яратăп. Шăп та лăп манăн хамăн вырăна лармалли хастар та ăслă çынсем пур. Вăл – эсир.

– Ой, – пуçне аллисемпе çавăрса тытрĕ Людмила Павловна. – Мĕн эсир ытлашши ӳстерсе калаçатăр çак ман пирки? Ăçтан пултарап эп çак пысăк хуçалăха тытса пыма?

Волков ăна хулĕнчен çаклатса утрĕ, мухтама пăрахмарĕ:

– Пултаратăр. Пăх-халĕ епле тулăх кĕр килчĕ кăçал сирĕншĕн? Колхозра та, районта та ĕмĕрне пулманни. Пирĕн хĕрӳ чунлă Людмила пикен çур пин гектар çĕр çинчи тыр пул тухăçĕ аллă пилĕкшер центнер пулчĕ. Çĕр аллă гектар çинчен виççĕршер центнер çĕр улми, çĕр гектартан ик çĕршер центнер выльăх кăшманĕ, аллă гектартан пилĕк çĕр аллăшар центнер сахăр кăшманĕ, вăтăр гектартан сакăр вуншар центнер сухан туса илчĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче Кульцаври звеньевойсене ушкăнĕпех Социализмла Ĕç Геройĕн ылтăн медалĕпе Ленин орденне парса тултарнă. Звенори вунă çынпа вунă гектар çинче тырă вăйлă туса илнĕшĕн. Çав вăхăтри пек пулсан-и, çак пике те Герой пулатчĕ пуль. Халĕ – вăхăчĕ урăхларах. Çапах та... Большаковпа калаçнăччĕ-ха, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕн документчĕсене хатĕрлесе Шупашкара ячĕç пулас. Фермăра ĕçсем мĕнлерех тата?

Людмила Павловна тӳрех хуравларĕ:

– Йыш ӳсет. Икĕ пине хăвалатпăр. Çĕнĕ çулччен тепĕр çĕр сысна сутма пултаратпăр патшалăха.

Председатель ăна çĕнĕ шухăш пĕлтерчĕ:

– Çитет йӳнĕ хакпа такама ырă тума. Кăлпасси цехĕ уçас килет. Тарăнварта çурчĕ пур. Машини-хатĕрĕ пирки эпĕ Мускавра калаçса татăлнă. Маçтăрĕсем те тупăнаççĕ. Вăрманкасри аш-какай комбиначĕ пире пулăшма хатĕрех. Укçи-тенки енчен... Сысна фермин тупăшĕ çитмелле пек-и? Мĕнлерех?

Тутине мулкачла мĕкĕлтеттерсе ăшра шутларĕ пулас та Белова, унтан хавасах тавăрса каларĕ:

– Ытлашшипех юлать тупăшран, Тельман Федотович. – Тымарта кăларма тытăнсан та начар марччĕ те кăлпассине...

– Тарăнвартах тăвар-ха аш-какай комбиначĕ. – Унта ĕне выльăх нумай. Сурăх кĕтĕвĕ те йышланать. Çынсем пек сысна, ĕне ашĕнчен мар, сурăх ашĕнчен чăн-чăн

шăрттан, шашлык хатĕрлесе сутма тытăнатпăр. Во, пуятпăр. Мухтанса та, мухтаса та çитĕ. Хĕрарăм влаçĕ пирки шухăшлама ан манăр, Людмила Павловна.

Каласу çакăнпа вĕçленчĕ. Председатель ферма хуçалăхне тĕплĕн пăхса çаврăнчĕ, сысна пăхакансемпе, апат турттаракансемпе ăшшăн калаçса чунне кантарчĕ.

Шупашкар «чирĕ» тинех иртсе кайрĕ тăван çĕр сывлăшĕпе. Ĕлĕк-авалтан тăсăлакан йăла-йĕркепе хăйне ўстернĕ çĕрĕ-шывĕ, хăнăхнă çак иксĕлми шăпа çыхăнтарса тăрать мал ĕмĕтлĕ хресчене – Кашкăр Хĕветучĕн ачине. Механизаторсен «хулинче» тата ытти çĕрте пулса ял çынни шанăç çухатми хăватлă туртăмлă, пĕр тĕллевлĕ, пĕр ĕмĕтлĕ пурнăçра пурăннине туять-курать хуçалăх пуçлăхĕ.

2

Тĕнчере «Российская Федерация» текен çĕнĕ патшалăх çуралнă хыççăн патшийĕ те тупăнчĕ. Борис Ельцин президент хушу хыççăн хушу кăларать. Совет влаçĕ вăхăтĕнче пуç çĕклейменнисем çĕнĕ патша арки айне ретĕн-ретĕн пуçтарăнаççĕ. Чăваш патшалăх университетĕнче наукăллă коммунизм предметне тăрăшсах вĕрентекен ученăй, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чуралькасси ачи Николай Васильевич Федоров аслă преподаватель те халăх палкавĕнче хăй камне кăтартма пултарчĕ. Авă мĕн тери талантлă çынсем уççа тухайман КПССăн мăн чулĕ айĕнчен. Унччен ниçта та аваллăх хăвачĕпе палăрман чăваш çемйинчен шăтса тухнă ăслайçă Раççей депутачĕ пулса тăчĕ. Вăл ирĕкленнĕ ăслă чĕлхипе тĕнче илтмелле янраттарать Мускавра. Çĕнĕ правительствăра юстици министрĕн пуртвĕлне шанса пачĕ ăна Ельцин.

Такана çинчи хум пекех хумханчĕç тăхăр вуннăмĕш çулсем. Çĕнĕ демократсен кимми çав шыв çийĕн унталла та кунталла ярăнчĕ, аран-аран хăйĕн тĕп йĕрĕпе-

çулĕпе – капитализм çыраннелле ишрĕ. Кимĕ каманти вĕçĕмсĕр улшăнса пынă хушăра такана тăвăлĕнче Федоров министр та хăйĕн пуртвĕлне улăштарчĕ. Çухалса кайман юстицин арми генералĕ стратегилле шухăшпа тăван çĕрĕ еннелле талпăнчĕ. «Президент чирĕ» Раççей çийĕн алхасса кайнă вăхăтчĕ. Çав «чир» Чăваш енне те ернĕ. Чăвашсем те урнă йытă вĕрнĕ пек «Пире патша кирлĕ!» тесе улама тытăнчĕç. 1993 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче вара Николай Федорова патша тронĕ çине лартрĕç те, пĕлĕте çити вĕçтерчĕç. Патшийĕ пит ăслăскер пулчĕ, хăй çумне тутара, Энвер Азизович Аблякимова лартрĕ. Ĕлĕк чăваш ялан тутар куçĕнчен пăхнă, ачисене те, тăванне те тутар ларнă сак çине саваламасăр ан лар тесе вĕрентнĕ пулсан, паян чăваш хăй тутара чăваш куçĕнчен пăхтăр, чăваш тарçи пулса куртăр тесе чееленчĕ-ши, темле шухăшпа хăтланчĕ президент... Чăваш патшин, Пĕрремĕш Микулайăн тарăн шухăшне халăх ăнланма пултараймарĕ. Çапла, патшалăх йĕрки улшăннă май, патша самани хыççăн çуралнă советсем вырăнне администрацисем туса хучĕç.

Акă Вăрманкас районĕн администраци пуçлăхĕ пулма халăх «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз парткомĕн секретарĕнче ĕçленĕ Максим Максимович Крутова суйларĕ те лартрĕ. Пĕр хирĕçле сăмахсăрах. Вăрманкас районĕнче унăн ят-сумĕ çирĕпленнĕччĕ çав.

Пĕр хушă килте тĕлли-паллисĕр пурăнса ăшри вутă çулăмне ниепле те пусарайманччĕ-ха Крутов. Тымарти Тан Ваçли унччен шăл йĕрни куç умĕнчен каймасть:

«Парти билечĕн хакне пĕлетĕн-и халь, тăванăм? Эпĕр иксĕмĕр пĕр ратнерен пулнине ан ман. Эпир çак таврашри ялсенче, ĕмĕр-ĕмĕр хушшинче, йăлт хурăнташланса пĕтнĕ. Тур саккунĕпе пурăннă чухне пĕр çăвартан çинĕ, пĕр кĕреке хушшинче, хамăрăн хресчен патшалăхĕн тĕп кантурĕнче татса панă кулленхи пĕтĕм ыйтăва, пĕрне-пĕри çисе кăшламан. Пирĕн кăкăр çумĕнче нимле хĕрлĕ билет та пулман, хура тăпраллă çĕр билечĕ

кăна пулнă. Эх, ку пурнăçа... Вăл билетпа эпĕр, çĕр хурчĕсем, хресченсем, ĕмĕр-ĕмĕр çĕр партийĕнче тăнă – тĕнчере çук чи хăватлă партире, пурте пĕр тан пулнă. Çав парти членĕнчен чапли тĕнче пĕтиччен те пулмасть. Парти билечĕн хакне пĕлтĕн-и халь? Кăмунăсен партийĕ мĕн вăл? Çĕр сывланă чухне ăфф! туса кăларса янă сывлăш хумĕ çеç. Эх, çав сывлăшпа антăхса хĕне кайрĕ те ĕнтĕ халăх. Ман та çав сывлăшпах ăш-чике уçмаллаччĕ. Эп те çав сывлăшпах сывласа пурăнтăм, эс те. Анчах кăмунă партийĕн билетне манне эсĕр туртса илтĕр, санне – пурнăç кăвайчĕ çунтарчĕ. Эс те ĕçсĕр, эп те ĕçсĕр. Иксĕмĕр те пĕр тан – пĕр тăван. Халь тин ĕнтĕ мĕн тăван? Партие е турра кĕл тăван? – тесе ун тавра ташласа çаврăнчĕ вăл. – Эп ялта... кĕçех уйрăлса тухатпăр та тарăнварсенчен... эп ял çĕрĕ çинче кооператив йĕркелетĕп. Агронома пыратăн-и? Ман тĕкĕ вăйлă. Макçăм мăнукăм хăйматлăхĕ камне пĕлетĕн-и? Ельцин. Пире, тымарсене кам пулăшнине пĕлетĕн-и? Миров хаспатин. Хамăр ял чĕппи. Пурте тан эпĕр – Раççей патши те, Америка миллиардерĕ те, пурте пĕр тан, Турă панă хăватпа тан. Çут тĕнче çуратнăскерсем».

Пуç тавра çаврăнакан шухăшсем Максим Максимовича пурнăçра тĕлĕрме памаççĕ. Парти ăна ĕç парса савăнтарчĕ. Парти унăн ĕçне пĕтерсе кулянтарчĕ. «Усăллă ĕçех турăм-ши эпĕ вăтăр çул хушшинче е КПСС юмахне ярса ирттертĕм-ши вăхăта? Ĕнтĕ эпĕ халь 1964 çулхи хĕрлĕ сăмсаллă корчагинец мар, тарпа ĕнсене пиçĕхтернĕ коммунист. Партийĕ вăйлă шывпа юхса кайрĕ пулин те, эпĕ халăх çыранне çапăнса юлтăм. Апла тăк манăн çав халăхпах малалла ĕçлемелле. Çынсем пек билета çунтарса та, пылчăка таптаса та, çӳп шăтăкне персе те партирен хăтăлман. Чунăм манăн, пурнăç улшăнăвĕнче, пĕртте улшăнман. Эпир, коммунистсем, ялан халăх ырлăхĕшĕн çуннă, кĕрешнĕ пулсан, малашне те коммунист хастарлăхĕпех ĕçлесчĕ-ха. Урăхла, кутăнла, ĕçлеме пултараймастăп эпĕ. КПСС вырăнне

йĕркеленĕ Раççей Федерацийĕн компартине кĕмесĕрех пур манăн пĕртен-пĕр идеал – КПСС».

Хурăнварти Нухрат Кавĕрли клубра çынсем умĕнче намăслантарасшăн пулчĕ ăна, епле шахвăртрĕ:

– Йĕмсĕр тăрса юлнă вут-çулăмлă ленинеца хĕрӳллĕ салам! Эс пирĕн яла килни турă панă телей пекех пулчĕ. Тупăк нимине чарса ларттартăм, терĕн пуль. Пăрça çулса таврăннă чухне ниме ачисем шăм-шака çемĕçтерме ман патах кĕчĕç. Пыл кăрчами мехле-мехлех вĕсем тата тепĕр пысăк тупăк турĕç. «Ку кам валли? Кунта пĕтĕм ял вили шăнăçать», – тесе шăлне йĕркелерĕ те Салакайăк Йăванĕ, эпĕ ăна çапла тăн патăм: «Ку тупăк Крутов парторгсем валли – парти валли».

Вăрманкасра кӳршипе шахматла выляса ларнă чухне пĕррехинче Нухрат Кавĕрлин ывăлĕ питĕ ăслăн персе янăччĕ: «Çивчĕ скальпель кирлĕ, операци тумалла партие».

Авӑ епле вăл халăх шухăшĕ. Вăхăтра сыватайман пирки йывăр чиртен, партие пурнăç ракĕ шалтан кăшларĕ-кăшларĕ те, тухxăмрах пĕтерсе хучĕ.

Крутовсене, халăха пăсăрлантаракан парти халĕ тĕнче масарĕнче ĕнтĕ. Халĕ унăн Раççей президенчĕпе Чăваш президенчĕн хушăвĕсене пуçа хывса, пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла, район çыннисене каллех малашлăхалла, коммунизм çулĕнчен пăрса, капитализм çулĕпе уттармалла.

Çак шухăшпа анра сухрана уçса ларнă вăхăтра йышăну пӳлĕмĕнчен секретарĕ телефонпа систерчĕ:

– Максим Максимович, сирĕн пата Воробьев Герасим Филиппович кĕресшĕн. Черетре...

– Черетсĕрех йышăнатăп.

Утарта виличченех ĕçлетĕп тесе хăпартланакан ватă çынна Крутов хăйпе хирĕç лартрĕ. Лешĕ сĕтел çинчи кĕнеке купи çине пăхса илчĕ те:

– Ĕмĕр пурнатпăр, ĕмĕр вĕренетпĕр, ачам. Пирĕн ăратра сан пек нумай вулаканни аçу та пулман пуль. Ак

çакă çур чалăш çўллĕш купари тăна та хыватăн пуль пуçна. Атя, атя, çĕмĕрттер. Усса пултăрччĕ çеç. Ман та куç вăйĕ пур-ха, вулакалап. Илтнĕ-и эс, Шупашкарта акатемĕксем ака тĕмĕ пек хунаса кайнă тет. Ман та çавсен кумпанине лекес шухăш пур. Тен, мана пурнăç акатемĕкĕн ятне парĕç те. Унпала леш тĕнчере карчăк умĕнче мухтанас. Унсăрăн вăл «Мансăр çăпата туса сырайман эс, наян», – тесе тĕкме пултарать.

Кула-кулах калаçрĕ хăйĕн мăн аслашшĕпе Максим Максимович. Карачăм мучин сăмахĕ пĕтме пĕлмест.

– Халь эс, ачамккă, Вăрманкас юманĕн вырăнĕнче апла. Райкум çумĕнчи юман тăрăран хăрчĕ. Унта халь çăхан та йăва çавăрмасть. Райун каланчи тăрринче пĕр çăхан та кранклатмасть.

– Унта халь, асатте, шĕвĕрккесем кĕвĕ ĕнĕрлеççĕ, чўречерен илем сасси чуна çĕклентерсе тухать.

– Юрать-ха эс Мăн Альпă пўртне кĕрсе лартăн, хăрăк юман тăрринчи çăхан йăвинчен тартăн. Унсăрăн, сана юратмастăмччĕ те. Мăн Альпă халь тата çўллĕрех Альпă тăррине улăхрĕ пуль?

Крутов ăнлантарчĕ:

– Альберт Григорьевич ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен профсоюзне ертсе пырать, хресчене хўтĕлет.

– Апла-ха, юрать, юрать, патшасем çумĕнче çампек ăслă-тăнлă, халăхшăн чунне пама хатĕр, халăхăн нушитертне хўтĕлекен мушиксем кирлех çав. Унсăрăн пире – каюк. Пулăштăр патшисене-хуçисене те, хресченне те. Çăкăр çитерччĕр пире. Хырăма тăрантарччĕр. Кунта, ун вырăнĕнче, эсĕ те маххă памăн-ха. Тулккăш, район каланчине ан чалăштар, ан силлентер. Эп кун пирки мар кĕрсеччĕ-ха сан патна.

– Мĕн тумалла? Мĕнпе пулăшмалла?

– Нимпе те, – алă сулчĕ мăн аслашшĕ. – Ватта пуснă май вăйĕ те хавшать, пуç кунтăкĕ те типет пулас. Çын, ватăлнăçемĕн, шухăшпа чухăнланса пырать-ши, сувсем аптрамалла.

– Мĕн, чирлемерĕр пуль те?

– Чир-чĕр ман çума çыпçăнма хăрать-ха. Тĕлĕксем анратма пуçларĕç. Вăранса каятăп та, вĕсем чăн-чăн пурнăçри пек асра юлаççĕ. Çĕр каç та пĕр тĕлĕк тĕлĕнтерчĕ.

– Каласа парасшăн-и?

– Çампа сан пата васкарăм. Итлесем, апла тăк. Крахьян инкӳ ман вилет тĕтĕмленĕ пулă çиесшĕн. Эпĕ ăна хамăр утар пĕвинче тытнă ылтăн тĕслĕ çăпата пек карассене вучах тĕтĕмĕнче сăрласа та панă, тем тĕрлине те çитернĕ, вăл пур, мана çу ăшĕнче тĕтĕмленĕ скумпри кирлĕ, тет. Вăрманкасран туянса пынине тиркет, не то, райкумпа упкум буфечĕсенче туянни мар, тет. Çилампах Шăхрана хăвалать. Унта çитме ман çул укçи песплат, кайкаласа килетĕп.

Çав килти пăтрану тĕлĕк пăттине кĕрсе ӳкнĕ пуль çав. Хайхи Шăхрана автопуспа мар, темле çĕмрен вăйĕпе персе çитрĕм пек. Крахьян фермăра кун кунланине пула каçпа та, ирпе те пăрça яшки тултарнăччĕ выçнă хырăма. Вуксал патĕнче пĕр хутаç туянтăм çамрăк матка юратакан шултра çуллă пулла. Çула тухиччен хырăма пушатас тесе вуксал çумĕнчи çăмăлланмалли çурта васкарăм. Хутаça мăйран çакса лартăм кукленсе канлĕленме. Унччен те пулмарĕ, тилĕ пуçлĕ упа вăркăнса кĕчĕ те часрах ман çумри шăтăка кучĕпе хупларĕ: шăтăр-шатăр! чăкăр-чакăр! тутарчĕ. Хыççăнах виçĕ кашкăр хашлатса çитрĕ: пĕри тилĕ-упа çумне сулахая, тепри сылтăма, виççĕмĕшĕ ума тăчĕ. Чăкăр-чакăр, чăрт-чарт тутарнă май, тилĕ-упа шăтăк тĕпнелле сăмсине чиксе пăхрĕ те, хăпартланса калаçрĕ: «Ой, муй нарут, тутах пурнан-ха, выçă хăвармастăп, тăрантарсах тăратăп, сире те, чăвашсене, манмастăп. Пĕрле пурăнар, пĕрлĕхре - вăй!» – тесе тепĕр хут чакăртаттарчĕ.

Ай-вай-вай, хырăм сарячĕ ман та патне çитнĕскер, эпĕ те аялалла вăрăммăн кĕрслеттертĕм пăрça шрапнелĕпе. Пуça чиксе пăхрăм та, аялта, анлă чул

куритере, тилĕ-упа наручĕ кĕшĕлтетет. Мана ăман пăттине урăх пăхма памарĕç, ик хăлхаран çулса тытрĕç те: «Ах, эс теракт тума-и, пирĕн вăрман патшин пуçне персе шăтарма-и...» тесе вуксал умĕнчи лачакана кăларчĕç те печĕç. Шăлавара нахуту туртса хăпарта-хăпарта тартăм вара «муй нарутсен» тилĕ-упа кашкăрĕсенчен. Юрать-ха хутаççа туртса илмерĕç. Пулăсăр таврăннă пулсан, килте Крахьянран тапкă çиеттĕмччĕ. Сехре хăпнипе хырăм та юсанчĕ, хам ку таранччен çăвартан кăларман маттăллă сăмахпа хăрушшăн кăшкăрса вăранса кайрăм. Çав самантрах пĕрене ративĕ каласма пуçларĕ, çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ: «Ĕнер Раççей преситенчĕ Пурис Ельцин Çĕпĕре кайнă чухне çула май Чăваш республикинче пулнă, Шăхранти ĕç çыннисемпе курса каласнă».

Ăнлантар-ха эс, ачамккă, нарут тени вăл чăвашла халăх тенине пĕлтерместчĕ-и-ха?

– Тĕрĕсех, асатте, народ вăл – халăх, эпĕр.

– Ăнта, – пуçне пăркаларĕ калавçă. – Юмахри тилĕ-упан та хăй шучĕпе кут айĕнче нарут пур иккен. Тепре утара хăнана пырсан тилли-упи таранах ыйтатăп-ха наруту мĕнпе тăранса пурăнать, тесе. Ах, эпир те çав, нарутсем, навус хурчĕсем, пурнатпăр-ха юмахри тилĕ-упа çÿлтен мĕн пăрахса панипе тăранса. Камсем пулчĕç çав тĕлĕкри паттăрсем, халь те ăнкарса илейместĕп. Шăхран станцийĕнче шуса ÿкнипе кутана шăммине тата аяк пĕрчине ыраттарнине çеç манаймастăп. Сана эп çакна çеç калатăп. Икĕ сăнлă тилĕ-упа ан пулах. Мăн Альпă пек маттур пул. Халĕ мана теракт мĕн акчĕ пулнине ăнлантарса пар та, тек урăх чăрмантармастăп. Ĕçле.

Ăсра мĕн пуррине пуçран кăларса хумаллах пулчĕ ватă çын сăмси умне Максим Максимовичăн:

– Политиксем пĕрне-пĕри пуçпа е урăхла майпа çĕнтерейменнине пула хĕç-пăшалпа тĕп тума хăтланнине калаççĕ ăна террорла акт, кĕскен теракт тесе.

– Эп пулитикăпа пăтă пĕçерсе çимесп. Тиллине те утарти чăхсене йăкăртнăшăн пăшалпа персе вĕлермен, капкăна çеç çаклатнă. Тирĕнчен Крахьяна кĕрĕк çухави туса панă. Тилĕпе пирĕн яланах расчут пулса пынă пĕрпĕрин хушшинче. Упине вара вĕллесене тустарнăшăн та каçарнă. Вăрман патшине тытма хушман та, персе вĕлермен, чăтнă. Вăрманăн ун хăйĕн саккунĕ. Упаран иртекен çук чĕр-чун, тискер кайăк тĕнчинче. Тĕлĕкри тилĕ пуçлĕ упа вара... Хирĕлсе кайнă хырăмне çумрах канлĕн пушатса лараканскерне, тĕлĕкре те пуçласа куртăм. Пета, этем тĕнчинче ваçка Çĕпĕр ен чăрăшĕ айĕнчен сиксе тухнă Тилĕ-Упапа тĕл пулнă иккен эп такамшăн та шутсăр кирлĕ çĕрте. Çумĕнчи кашкăрĕсем пирн сакасникри кашкăрсенчен те хăравçăрах. Ват çын пенĕ пăрça шрапнелĕнчен сехĕрленсе ўкнĕ, мана террур тăвакан тесе хуçинчен шăмă татăкки ĕçлесе илчĕç пуль. Ах, тем те пулĕ ку асар-писер пурнăçра.

Крутов чее аслашшĕне куçĕпе ытарлăн пăхса ăсатрĕ.

3

Çĕршыва, халăха тĕрĕс çулпа илсе пырас тĕп шухăш çĕрнĕ вĕрен пек пат татăлнă хыççăн яланах ун вырăнне тепĕр вăйлă шухăш кĕрсе вырнаçать. Шухăш хăмпинче нихçан та пушă вырăн юлмасть. Марксизм-ленинизм шухăшлавĕ халăхра шăнăçаймасăр çил-тăвăл юхăмĕпе вĕçсе кайнă май, ют халăхсем хушшинче вăйланса çитнĕ Христос тĕнĕн шухăшĕ-шухăшлавĕ çынсен ăс-тăнне хăвăрт кăшăлларĕ. Хĕрес çакнă шĕвĕр тăрăллă илемлĕ чиркў чанĕсем кўтсе çитнĕ çынсен чунĕсене ăша çĕклентерекен кĕмĕл сассипе хăйсен çумне асамлăн туртаççĕ. Иртнĕ вăрçăчченхи çулсенче, каярахпа та коммунистсем варвăрла та, вандалла та аркатнă кĕлĕ çурчĕсем Турă вăйĕпе çурхи калча пек чĕрĕлсе çĕкленме пуçларĕç. Халăх кăмăлне уçма хатĕр чăваш ачисем укçи-тенкине шеллемесĕр, хавхаланса пурнăçра кирлĕ ĕçе кўлĕнчĕç.

Акă, тымарсемшĕн те çуркунне çĕнĕлле чĕрĕлчĕ. Тахçанах хупнă чиркӳ çурчĕ тавра капăр тумлă виçĕ арçын кускаласа çӳрет. Вĕсенчен пĕри, вĕрсе хăпартнă вылямалли мыскара резинка тетте пекки, мăйĕ хуçланманнине пула, пĕтĕм кĕлеткипе çӳлелле кармашса калаçать:

– Тăрăсем хăпартсан, таврара çук чиркӳ пулать. Çав Каргинсен йăхĕ пĕтернĕ пирĕн храма. Атте каланине астăвап. Ял совет хуçи, Семен Кирилч, никам та килĕшменнине кура, хăй туртса антарчĕ тет вăрăм вĕренпе çыхса тăрăсенчи хĕрессене, ун хыççăн çара кут петняксемпе чанĕсене çĕре сирпĕтрĕ тет. Колхоз тунăранпа паянхи кунченех склад вырăнĕнче çак çурт. Халĕ, ава, минерал чыхса тултарнă. Сывлама çук.

– Ан кулян, Тит шăллăм, мăн асаттесен кив çурчĕпе аппаланмастпăр, çĕнĕрен тăватпăр. Чиркӳ аркатакансен шалчи тулчĕ вĕсен, суя кăмуна кăмиссарĕсен. Пурнăç урапи каялла çаврăнчĕ, ава, çĕнĕ вăй илчĕ те малалла кусса кайрĕ пирĕншĕн те, халăхшăн та. Раççей хăйĕн малтанхи аталанăвĕн урапи çинех сиксе ларчĕ, каллех капитализм çулĕпе ĕрĕхет. Ямшăкĕсем камсем? Эпир. Мул тĕнчи пирĕн çĕршыва та ылтăн картапа картласа çаврăнчĕ. Сăмах паратăп, кĕçех хамăр таврара каллех чиркӳ чанĕн сасси янăрĕ. Маншăн чиркӳ тăвасси чăрт сурмалăх та çук. Пантелей атте, Шупашкара çитсен пĕлтерĕр Владимир Викторовича, Миров господин Сăшаран кĕçех долларсем куçарса парать. Мана вăл, Рязань вырăсĕ Кедров, малтанхи тĕл пулурах килĕшрĕ. Митрополита та, хамăр тăван халăха та, пиртен парне пулать. Вăл сире кунта ĕçлеме ярас кăмăллăччĕ.

Хура тĕслĕ манти текен тум тăхăннă Пантелей Христофорович Оманов, чиркӳ йĕркин чинĕпе Пантелей иерей, çунакан кадилине сулласа кĕлĕ тума хатĕрленнĕн, пĕтĕм кĕлеткипе çĕкленсе илчĕ:

– Турă ячĕпе тав сире, Аполлон Нилович, аякри тинĕс леш енчен тăван ял халăхне алă панăшăн. Хамăр чиркӳ настоятелĕнчех ĕçлес пулсан-и, чи малтан сирĕн

вилёмсёр чунушăн кёл тăвăп. Сăпаççипах ман çула уçса пынăшăн сире, шăлнупа иксёре те, ак çапла пуç таятăп.

– Çемье ыйтăвне татса парас пулать чи малтан, ăнлан çавна, Паня. Чиркӳ картишне пачăшкăна арăм çине утланмасăр кёртмеççё.

Пан Христос ку ыйтăва татса пама та малтанах хатёрленнё пулас, хура пёлёт хыçёнчен сиксе тухнă хёвел пек йёпёл çиçсе илчё те ывăç тупанёсене темле мăн ёç тăвас умёнхилле сăтăрчё:

– Уншăн кулянмалли çук пирён, Тит тусăм, пур ман матушка, хама пулăшмалли тияккăн пуласси. Так шту Пан Христосăн та таса Мария çумрах.

– Мухтанан пуль, Панька. Илтменччё-çке унашкал хыпар санран?

– Васкаса вакка сикес темерём, ачамккă. Шупашкар чиркёвёнчи Мария игумен, Хурăнвар хёрё вăл – ман пулас мăшăрăм.

– Камсен? – тёлёнчё Тит Нилович.

– Салакайăк чёппи, – чеен кулса ячё Оманов. – Вăрăм Ваççана пёлетён пуль? Хăвăр ялти Васка Çимунне турттарса çӳрерё. Эппин, парти райкомён юлашки хуçин Быстровăн юлашки ямшăкё. Пёр хушă эсё ăна хăв патна илесшёнччё вёт. Епле мухтаттăн.

– Э-э, мур, аван ача вăл. Халё те каях мар-ха, ват лаша йёрпе тӳрё утать.

– Сурăх эс, бэ-э. Çав Ваççан чиперкке хёрё вăл Мария игумен. Пиччу Вашингтона вёçсе кайиччен туй пекки те кёрлеттерсе пăрахар мар-ши? Хăйматлăх пулма килёштерсенччё Аполлон Нилович...

Вёсен калаçăвне тăнлакан Миров хăй еннелле тăсса панă Пан Христос аллине çирёппён тытса чăмăртарё. Çак килёшӳ хыççăн туйне ăçта тăвасси пирки калаçса татăлчёç: Шупашкарти «Раççей» ресторанта. Тăкаксене Миров миллиардер саплаштарать.

Çакăн хыççăнах сас-хура таврана радио хумё пек хăвăрт саланчё. Салакайăксен йышлă йăхё туя хатёрленме пуçларё. Марья та яла килчё.

Ашшĕ-амăшĕ ăна вăтам шкул хыççăн малалла институтра вĕрентесшĕнччĕ. Хĕрĕн тухтăр пулма кăмăл пурччĕ. Кăмăл вăл кăмăл та, анчах вăл уншăн тырă хăмăлĕ вырăнне кăна пулчĕ. Конкурсра такăннăскерĕн инкек çине синкек сиксе тухрĕ. Юратнă каччи, Мулла Микушĕн кĕçĕн ывăлĕ Арçук, Афганистан паттăрĕ, вăрçăран сулахай алăсăр, сылтăм урасăр, суккăр таврăнчĕ те тăван çĕршыва, Мускав госпиталĕнчен Хурăнвара çитеймерĕ. Савнисĕр тăрса юлнă Марья çакăн хыççăн хуйхăпа асапланнă. Хуларах юлнă. Вĕренейменшĕн вăтаннипе яла таврăнмашкăн намăс пек туйнă. Хваттер хуçи хĕрарăмĕ, пĕчченех пурăнаканскер, тур саккунне хытă тытаканскер, мĕскĕне питĕ хĕрхеннĕ, хăй ĕçлекен Введенски собора иле-иле кайнă, майĕпен унтах ĕçе вырнаçтарнă. Çеттуй сывлăшĕпе пурăнакансем хушшинче вăл та хăйне унччен хинчен урăхларах туйнă, хăнăху вăй илсе кулленхи пурнăç шухăшĕнче çирĕпленнĕ. Манашкăсен çемйинче унăн вăхăт питĕ ырă туйăмлăн иртнĕ. Кĕçех пачăшкăна пулăшма пуçланă. Мария игуменăн, турă çырнипех-ши, хăйсен çывăхĕнчи Хурашур ялĕнче çуралнă, çемйипе Вăрманкаса куçса кайнă Ăман Христофорĕн ачипе Пантелей иерейпа паллашмалла пулса тухнă, унпа туслашса ентешле çывăхланнă. Ват хĕр çулнелле çитнĕскерĕн шалти туйăмĕ кĕлеткене канăç паман. Хĕрарăм пулса унăн та ача çуратас ĕмĕт вăйланса пынă. Акă халĕ телей çăлтăрĕ ун умĕнчех йăлкăшать. Туй хыççăн вăл та арăм пулса тăрать-çке. Арăм пулнă хĕрарăмăн упăшкипе юнашар этемлĕхе малалла тăсасси çеç юлать.

Туя хурăнварсен ратни вунă çăмăл машинăпа тата колхозăн тин кăна туяннă автобусĕпе кĕрлеттерсе çитрĕ. Марьян пиччĕшĕ, Мускавра инженера вĕренсе тухнă хыççăн Андриян Николаев космонавт Байконура вырнаçтарнă Андриян Воробьев майор та, Шупашкара самолетпа вĕçсе килнĕ.

Мировсен миллион-миллиард тĕнчинче нимле чикĕ те çуккă-çке, унта йăлтах доллар-евро полицейскийĕсем хуçа. Миров господина Чăваш Республикин хуравлă çыннисем йышăнни, вĕсем туслă çыхăну юххинче пĕр карап çинче ишме килĕшни тата чăвашсене кивçенле укçа нумай тупса пама пултарни, çав укçана ăçта-ăçта расхутламалли çинчен пĕлтерни пичетленнĕччĕ хаçатсенче çав кун.

Туй çыннисемшĕн çак пĕлтерӳ пичетленнĕ хаçат татăкки кут шăлма та каймарĕ ĕнтĕ, чăваш та халĕ пăхлă кутне унченхилле хупах çулçипе те симĕс курăкпа мар, çемçе хутпа шăлса тасатать, цивилизаци текен сăмаха та словарьсĕрех пĕрремĕш класс ачи пек вулама хăнăхать.

Миров господин Америкăран пĕччен килмен иккен, унăн супруга текен майри мăнукĕпе хăналанать Атăл çыранĕнче. Туя Мирова госпожа чăваш хĕрарăмĕн авалхи тумĕпе капăрланса пырсан, тĕлĕнсе-тĕлĕнмесĕр те куçа-пуçа чарса пăрахакансем пулчĕç. Ĕçкĕ-çикĕпе çывăхланакансен пуплевĕнчен паллă пулчĕ. Елиана госпожан кĕлеткинче чăваш юнĕ те акăлчан юнĕпе парăнмасăр тапать-мĕн. Ашшĕ унăн Вăрманкас енчи Хурăнвартанах иккен. Гитлерпа Сталин харкашăвĕ пăтратнă этемлĕх тинĕсĕн хумĕ унăн ашшĕне, Числов Петĕрĕн пиччĕшне, вăрçăччен пульницара фельдшерта ĕçленĕ Яков Петровича, Власов генерал сутăнчăк çарĕнче айăпсăр плен нушине лекнĕ медицина службин лейтенантне, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ют çыранне пырса çапнă. Çыранри этем-пулă шывсăр пăчланман, унта ырă çынсен ытамне лексе, хăйĕн пултарулăхне кăтартса, медицина наукисен докторĕ пулса тухнă, анчах та... чăваш пулăшмасăр мар.

Врангель çарĕн хастар офицерĕ Миров подполковник, çар командующийĕн Ивановский генерал-лейтенантăн адъютанчĕ, граждан вăрçинче хĕрлисемпе, тăван çĕр хастарĕсемпех, унччен ют çĕршыв тăшманĕсемпе çапăçнă пекех çапăçса паттăрланнă. Салтакăн, вăрçă

ачин, вăрçăра çĕнтермеллех-çке. Тĕнчипе палăрнă вырăс çарĕн патриочĕ яланах çĕнтерсе пынă вырăссен ăслă генералĕсене шанса, вырăс салтакĕн чысне чунĕпе парăнса, Раççее хŭтĕленĕ. Çапăçма пĕлсех кайман хĕрлĕ армеецсен ур-ра ушкăнĕ вĕсемшĕн, вăрçăра пиçĕхнĕ хастар офицерсемшĕн, ача вăйăи вырăнне çеç шутланнă. Шуррисем хĕрлисене тăшман вырăнне хурса ним шелсĕр пĕтернĕ. Хĕрлисем те, хăйсене сутăннă патша çарĕн офицерĕсем ертсе пынипе, парăнма шутламан, çĕршер-пиншер çухатусене чăтса ирттерсе, вăй илсе пырса, пурпĕрех шуррисене тинĕселле хĕссе çитернĕ. Революцичченхи Раççей çарĕн мĕн чухлĕ хастар вăйне чикĕ леш енне шăлса ывăтнă. Вĕсен шутĕнче генеральнăй штаб академине чи ăслăн вĕренсе пĕтернĕ Нил Миров подполковник та пулнă.

Вĕреннĕ, ăслă çын çĕр çинче ниçта та çухалса каймасть, пĕтмест. Академире нимĕç, акăлчан чĕлхисене туптани вырăс-чăваш чĕппине пĕлĕтелле вĕçме пулăшать. Унта унран эсĕ мĕнле партире тăнипе тăманнине те, сан аçу-аннŭ кам пулнине те çине тăрсах тĕпчемеççĕ иккен. Санран хăюллăх, çаврăнăçуллăх ыйтать пурнăç тĕрĕслевçи. Вĕсенчен маларах йăва çавăрнă раççеянинсем вĕсене, хĕрлĕ кăмуна пуртти айне пулма пуçланăскерсене, Раççей патриочĕсен вырăнĕнче май килнĕ таран пулăшаççĕ. Миров Англири Оксфорд университетне лекет, хăйĕн ăс-тăн вăйĕпе унти йывăр вĕренŭрен экономист-менеджер специальнăçне илсе тухать. АПШна таврăнать. Англири пĕр пуянăн хитре хĕрĕпе пĕрлешсе çемье чăмăртанăскерĕн, сиккипех каять вара унăн пурнăçĕ бизнес çулĕпе.

Хăвна çутă çул уçса пама пултаракан тупăнсан, хăв вутра та çунмасан, шывра та путмасан, эсĕ капитализм çĕршывĕнче пултаруллă та пуян çын пулса тăратăн. Миров та карьера картлашкипе пуянлăх тĕнчине таплаттарса хăпарать, ачисене те чапа тухнă аслă шкулсенче вĕрентет, ачисем хăй майлах ĕлкĕрсе

пынишĕн савăнать. Эмигрант Чăваш çĕршывне çеç çитсе кураймасть. Ывăлĕ, Аполлон, Яков Числовăн хĕрне качча илет. Çапла Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен гражданинĕсен ачисем те ĕнтĕ АПШ çыннисемех пулса çитĕнеççĕ. Юн таппинчи чăваш юнĕн пĕр пайĕ вĕсен чĕрисене тапăлтаттарать. Авă çав чиртен кăштах та пулин сывалас ĕмĕтпех килсе çитнĕ Аполлон Нилович Миров господин Раççее чиперкке майрипе. Акă халĕ вăл «Раççей» хăна çурчĕн кĕрекинче кăмăллăн, хăйне мăнна хумасăр, чăваш манерĕпе хуçаланать.

Чăвашăн çĕнĕ пуянĕсемпе те паллашма ĕлкĕрнĕ иккен пурне те майлаштарма маçтăр американец. Ашшĕн Атăл тăрăхĕнчи тăван çĕршывне курма анчах килмен-çке вăл, пĕр вăхăтрах усламçă ĕçне те тăвать.

Туйăн савăк саманчĕсем пур çĕрти майлах пулса иртрĕç: мăшăра пĕрлешнĕ хутсем çине алă пустарчĕç, чуп тутарчĕç, саламларĕç, парне пачĕç, телей сунчĕç, пĕр кĕтӳ ача çуратса ӳстерме пиллерĕç. Чи пуян та курăмлă парнине Марийăпа Пантелеймон Омановсен çамрăк çемйине аякри ентешĕ, хăйматлăхĕ Миров господин пачĕ: пилĕк пӳлĕмлĕ хваттер тата «Ролл-ройс» çăмăл автомобиль уççисене.

Хăни-вĕрли пĕрлешекенсен икĕ енчен те туллиех. Кам кăна çук пулĕ унта. Сăмах-юмах ваклавĕнче, юрă-ташăра кашни хăйĕн пултарулăхĕпе чапланасшăн. Карачăм мучин те вĕсенчен юлас килмест çав. Кивелме паман шăпăрне тăхăр вун пиллĕкри мучи çумран хăварман. Африкăри хура этемсен параппан пăн-панĕпе, тăн-панĕпе хăлхана хупласа йĕрĕнтернĕ сасăран тăрук хăтăлнă туй çыннисем сывлăша çурса аслă пӳлĕме сарнă тĕлĕнмелле çинçерех те, хулăнланса асса пыракан сасса хăлха тăратсах итлеме пикенчĕç.

Миров господиншăн ку тĕнчере пуçласа илтекен тăван ен сасси пулчĕ.

Çамки çине тар кăларса, çурăлса каясла хĕремесленсе кĕвĕ шăрантаракан вăрăм сухал умне пырса тăчĕ те Миров ăна тав туса пуç тайрĕ, кĕсйинчен пĕр пачка доллар

каларса сĕнчĕ. Кĕвĕçĕ пуçне пăркаласа аллипе укçана каялла сирсе яма пуçланине асăрханă Крахьян пачкăна алла çулса илчĕ те тăван американеца ыталаса чуп турĕ. Алă çупнипе тата тем тĕрлĕ чĕлхепе кăшкăрни савăнăç хумне пушшех вăйлатса ячĕ. Оркестр чăваш ташшин кĕввине янратса ячĕ: «Линкка-линкка авкаланма...»

Ĕçкĕ-çикĕ, юрă-ташă мыскари вăхăтĕнче Пантелеймон Христофорович Максим Максимовичпа куçа-куçăн тĕл пулчĕ.

– Во! – сылтăм аллин пуç пўрнине маччаналла кăнтарчĕ Пан Христос. – Камăн пуçĕ çинче паян мĕнле çĕлĕк ташлать, э? Пурăнма пĕлес пулать...

– Да! – терĕ хыттăнах Крутов. – Пурăнма пĕлесех пулать çав, Пан Христос. Анчах... санашкал йыт пуллилле-явкалла мар, халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешсе.

– Эпир те халăхшăн ĕçлетпĕр. Халăх пурпĕрех пирех пуç çапать.

– Эй Турăçăм, паян пурăнмалăх çăкăр пар, тесе-и? Анчах Христос та, унăн тарçисем эсир те халăха паян пурăнмалăх та, ыран валли те тĕпренчĕк çăкăр параймастăр. Унăн çăкăршăн çўл тўпене мар, ура айĕнчи çĕрех пуç çапма тивет. Пирĕн вара ăна çав çĕртен çимĕç, пурлăх, пуянлăх туса илмешкĕн йĕркелесе, пулăшса пырасси юлать.

Кăштах ĕçсе хĕрнĕ Миров господин Тельман Волкова та пулăшма пулчĕ, анчах мĕнле тата мĕнле майпа – тĕпне-йĕрне тухасси-качки пулмарĕ, «Пурăнакиле куç курать» тесе ахăлтатса кулса усламçăсен ушкăнĕн ытамĕнче çухалчĕ.

Каярахпа Хурăнвара арăмĕн тăванĕсем патне курма пырсан та Миров господин Волковпа тĕл пулмасăрах Шупашкара таврăннă. Тельман Федотович хăлхине çак сасă пырса кĕчĕ: Петр Петровичăн Мускавра çын патĕнче хĕсĕнкелесе пурăнакан мăнукĕн çемйи валли кĕçех шикарнă хваттер пулать.

4

Этем текен ăслă чĕр-чун вăл хăй валли çул та уçать, çав çул çинче хăйне валлиех шăтăк та алтать: ухмахла мар, ăспа-пуçпах. Уншăн хăй тăвакан ĕç никамăннинчен те чаплăрах, сулăмлăрах пек туйăнать, ун умĕнхисен ĕçĕ ăна пĕртте килĕшмест. Анчах та тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле тет çав. Тĕнчере ĕмĕрсен ĕмĕрĕнче аталану çиппине татмасăр унран çирĕп вĕрен явакансем несĕлсен çулне ăслăн такăрласа пынă, вĕсем тунă ырă ĕçпе усă курса, вĕсен ĕçне малалла аталантарнă. Ертсе пыракансем çапла хăйсен патшалăхĕсенчи халăхсене чухăнлăхран пуянлăха куçарса пынă.

Вăйлă çĕршывсем пайласа илессинчен большевиксем хăтарса хăварнă Раççей империйĕ Микулай патша чавнă шăтăка сикеймерĕ. Ăна хистевлĕн влаça пама сехĕрлентернĕ ертӳçĕ-пусмăрçăсем те çĕрсе татăлнă тимĕр читлĕхе çĕнетеймен. Чухăнлăхра, вăрçă-харçăра анраса çитнĕ хура халăх хăйне ĕмĕр-ĕмĕр пусмăрласа хытарнă сăнчăра хирсе татрĕ, ăна Романовсен династийĕн пусмăрлăх шăтăкне персе çĕрпе витсе хучĕ, таптаса хытарнă, вăрçă юнĕпе шăварнă çĕрĕ çинче çĕнĕ пурнăç турĕ.

Халăх аран-аран уççăн сывласа яма пуçланăччĕ кăна, ун çулĕ умне калама çук аслă, тарăн шăтăк алтса хучĕç совет влаçне хăйсем те тарăннăн ăнланса çитеймен, коммунизм шухăш-туйăмĕн ыйхинчен те вăранса çитеймен чухăн чунлă демократсем. Унченхи нихçан арканми республикăсен варрине тăлăххăн тăрса юлнă Раççей куççульне чараймасăр йĕрсе ячĕ. Укиян леш енчи тăнлă политиксем пирĕн çĕршывăн çурхи шапа пек ахăракан демократсене чике тăршшĕ лартрĕç, малтанах хатĕрлесе хунă хăйсен анлă та тарăн шухăшлă стратегиллĕ планне питĕ тĕплĕн пурнăçласа пычĕç, малтанхи мĕнпур влаç тытăмне, халăх хуçалăхне, культурине кула-кулах йăшкаттарса

аркатса ячёç. Колхоз-совхоз йёрки пăчланчё. Тин кăнаха пысăк тупăш панă ял хуçалăхё ют патшалăхсен ял хуçалăхён айне пулчё. Тарăн шăтăкри пуçлăхсем пуçа каçăртса кёлле ячёç: «Америка туррисем, паян пурăнмаллăх çăкăр парăр пире...»

Чăваш Республики ял хуçалăх ёçченёсен профсоюзён обком председателё Альберт Григорьевич Большаков хăйён ёмёрёнче те кунашкал сутăну политикине астумасть. Мён тери вăйлă колхозсем куç умёнчех хăйăр купи пек юхса саланаççё вёт. Ăна тытса чармашкăн вёсен вётё ала çук. Унашкал алине Мускавра та, Шупашкарта та çыхмаççё. Кам мёнле хăтланма пултарать, çавнашкал аташать. Пуриншён те ирёклёх кунё çитрё. Анархи текен вăй хăватланчё. Хăй Вăрманкасра ёçленё чухне «Çăлтăр» колхоз коммунисчёсем, Кукша Куçки хётёртнипе партирен тухса, «Чăваш хресченёсен Михаил Горбачев ячёпе хисепленекен революцилле коммуна» туса хунăччё. Райком секретарё Быстров ăна шупашкарсем урлă пётерттернё хыççăн, арканнă колхоз вырăнне Константин Плешаков «Кукша» ятлă ял хуçалăх кооперативё туса хунă. Пёрлешӳллё хуçалăх «Анархия – мать порядка» ялавё айёнче те хăвăрт аталанса кайнишён Большаков тёлёнмерё. Ёçё кунта ячё çинче мар, çынна мёнле тата мёнпе хавхалантарнинче. Пёр чёлхе тупнă Çиçём ялён «анархисчё» Плешаков чухăнлăхран тухма ёмётленекен хресченсемпе. Чухăнлăхран тухма укçине те тупнă.

Çирёп влаççăр арпашура халăх, ирёклёхе туйса, çённине, лайăххине, усăллăраххине, ёçлеме, пурăнма чунне кантараканнине шырать. Ăнланмасăр, хăйне ура сыртарнă, ырлăх панă телей керменне çунтарсах. Республикипе чапланнă хăйён «Октябрь» колхозё те виçё пая пайланнине пёлсен вăл вăрттăн куççуль кăларса та пăхрё.

Çёршывăн агропромышленность комплексёнче татăклă улшăну тăвас тёллевпе ял хуçалăхне

концентрацилесе специализацилессишĕн укçине патшалăх хĕрхенмерĕ, республикăра выльăх-чĕрлĕх самăртмалли, кролик, чăх-чĕп, хур-кăвакал ўстермелли комплекссем шăкăри ўссе ларчĕç. Анчах-ха вĕсем тухăçлă ĕçлесе кайнăччĕ. Çўлтен çирĕп камантласа халăха канмасăр хытă ĕçлеттерни йăлт харама кайрĕ. Ял хуçалăх министерствин влаçĕ те, вăйĕ те çитеймерĕ вĕсене малалла ăнăçлă тытса пымашкăн. Юрать-ха Куславкка комплексĕнчи аллă пин сыснана патшалăх шутĕнчен тăрантарса усрамаллаччĕ. Патшалăхĕ СССР кўллинче путрĕ те, куславккасене те ниçтан апат килми пулчĕ.

Юхăнсах каяйман комплекссене мĕнле те пулин сыхласа хăварассишĕн Большаков та темле те шухăшлать. Канашлусем те пухать ку тĕлĕшпе, кулленхи ĕçре аслисене те пулăшма хăтланать, хăйне пăхăнакансене те тустарса илет, пурпĕрех юхха йĕркине чарса лартма вăй çитереймест. Унăн влаç çитмест. Ку çеç-и, çĕршывĕпе пуçланнă аркату юхăмĕ çурхи хăватлă шыв пек унченхи пĕтĕм ырлăх-пурлăха тĕпсĕр шăтăка хăвалать.

Кăштах кăмăла уçас тесе Альберт Григорьевич çак шухăшпах районсенче пулса курас терĕ, вара тўрех Шăхран еннелле çул тытрĕ. Унта унăн хăйĕн тахçанхи юлташĕпе Юлдашевпа курса калаçса чунне уçăлтарас килчĕ. Егор Васильевича район халăхĕ хăйĕн пуçлăхĕ пулмах суйласа хăварнă, халĕ вăл район администрацине ертсе пырать.

Кирек-ăçта ярăнкаласа çўренĕ чухне Большаков нихçан та район пуçлăхĕсене хăй пырасси çинчен пĕлтерсе хумасть. Астунă май, унченхи çулсенче КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ е республика министрсен канашĕн председателĕ çула тухас умĕн райкома икĕ-виçĕ кун маларахах пĕлтерсе хуратчĕç, Мускав хăнисем çитиччен – эрне малтан. Вĕсем валли курмалли, мухтамалли кашни районтах пĕр-ик вăйлă хуçалăх пулнă.

Вĕсем район çитĕнĕвĕсене çав хуçалăхсен шайĕпе хакланӑ. Юлса пыракансем патне хăнасем валли çул уçăлман. Хальхи ял министрĕ Хурхух та çав чиртен сывалаймасть. Хăйне Шупашкара куçарсан малтанхи кунсенчех Большаков ĕç мелне хăй шутланӑ пек пуçларĕ. Ĕç катаччине хăть те хăш района çитсен те хŭрери колхозран тытăнать – аслă хуçасене евитлемесĕрех. Вĕсемпе кайран тин тĕл пулса ĕçлĕ калаçу ирттерет. Тип мунча кĕртнĕ хыççăн кăшт та пулин улшăну пулатех.

Акă, хальхинче те вăл район администрацине çитиччен сысна самăртакан «Туслăх» комплекса кĕрсе тухма шутларĕ. Çавал айлăмĕнче сарăлса ларакан мăн ял патнелле çывхарнă чухне Большаков Шăхран енчен килекен хура тĕслĕ «Атăл» автомобиль чарăннине тата сылтăм енчи хыçалти алăкран палланӑ çын тухнине асăрхарĕ те, ямшăкне тилхепине хытăрах туртма хушрĕ. Вăт ку тĕл пулу! Калаçса татăлнă пулсан та лăп çав вăхăтра тĕл пулас çук вĕсем. Машинăран тухнă Большакова хирĕç çирĕппĕн утса, кулкаласа Юлдашев çывхарать.

– Ырă сунса кĕтсе илетпĕр сире Шăхран çĕрĕ çинче, хисеплĕ Альберт Григорьевич. – Чунпах туйрăм пулас эсир килессе. Çавăнпа çак çул юппине васкарăм.

– Турриех пулăшса пырать пуль пире, Егор Васильевич. – Юлдашевăн çирĕп аллине мăн ал лаппипе шăнăрласа илчĕ Большаков. – Шăхрансем шăхăрса кăна пурăнаççĕ тенине илтнĕччĕ эпĕ тахçан хама ку тăрăха ĕçлеме ярсассăн. Эпĕ те сирĕнпе шăхăркаласа Шăхранти юлташсемпе кăштах канашласшăн-ха. Ăçталла çул тытаттăрччĕ çак?

– Эсир ăçталла васканӑ – эпир те çавăнталлах, – шŭтлĕн тавăрчĕ район хуçи.

– Ай-вай-вай, Егор Васильч, ăрăмçă та ăрăмçах иккен эсир. Ман шухăша та аякранах пĕлме маçтăр.

– Вун-вун çул хушши районсене ертсе пырса вĕренсе, ăнланса çитнĕ ĕнтĕ аслă хуçасен шухăш-туйăмне. Эсир

хăвăр та вăл енчен юлсах каякан марччĕ-ха. Атьăр апла, ман шофер хыççăн шăхăрттарар шăхранла.

Шупашкар машинине хăнапа юнашар кĕрсе ларнă Юлдашев малалла калаçрĕ:

– Шăхрансем совет влаçĕнче вырăсланса кайрĕç пулас та хула çывăхĕнче пурăнса, çамрăкраххисем, хăйсене шăхрансем тесен, ма пиртен мăшкăллатăр, тесе тарăхма пăхаççĕ.

– А мĕн кулмалли пур вара унта? Шăхран, шăхран... Фу, тĕрĕссипе каласан, эпĕ хам та пĕлсех каймастăп шăхран сăмах вăрттăнлăхне. Пур сăмахăн кăк-тымарĕ патне пуç çитеес çук. Каккуй унта, хĕрарăм пĕç кăкне тĕрĕслеме те вăхăт юлмасть. Пĕлетĕр тĕк, тăнлатăп сире.

– Курасса курман эп хам та шăхранне, анчах ун çинчен ватă çынсенчен илтнĕ. Чăвашсем ĕлĕк-авал тар тата сăмсана туртмалли тапак енчĕкне шăхран тенĕ. Тар упрамашкăн ăна выльăх мăйракинчен е тиртен çĕлесе тунă, вĕтетнĕ тапак тултармашкăн – хурăн хуппинчен, така шăхчинчен ăсталанă. Выльăх, тискер кайăк амисен чĕччине те шăхран-соска теççĕ иккен.

– Пĕчĕк арçын ачан шăмалли хатĕрне те шăхран тесе шӳтлетпĕр-çке, – кулса ячĕ машина хуçи. – Çынран нимле мăшкăлламалли сăмах та мар пек.

– Çыннисем тарпа нумай усă курнăшăн-ши е тапак хытă туртнăран-ши, Шăхран ялĕ те шăтса тухнă авă чăваш çĕрĕнче. Мускав енчен Рязань урлă чукун çул хывсан, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче станци уçнă ялран Çĕрпӳ уесĕнчи Шăхасан вулăсне кĕрекен Шăхран поселокĕ пулать, унтан хула ятне илет вăл. Çирĕм пиллĕкмĕш çултанпа – районăн тĕп хули. Çавнашкал вăл Шăхран историйĕ. Çавнашкал эпир, шăхрансем: тарлă та, тапаклă та. Хаяр халăх. Çиччас кĕрслеттерсе илетпĕр. Анчах... соска, чĕчĕ сахалланса пырать-ха «Туслăхра». Çав ыйту çĕр çывратмасть.

– Ăнлантăм, сысна ами чакса пырать. Çапла-и?

– Çаплах, Альберт Григорьевич, мĕн тумалла, пуçпа çавăрттарса илейместĕп. Акă, çитрĕмĕр Ушанара. Пушатар машинăна.

Çывăхрах аслати кĕмсĕртетсе илчĕ. Вĕсем Шăхран еннелле тинкерчĕç. Çавал çийĕн йăмăхланса асамат кĕперĕ карăннă. Тачка пĕлĕтсен хушшинчи йăлтлата-йăлтлата илекен çутă хыççăн вăйсăрланса пыракан сасă вăраххăн вĕçсе килет.

– Эх, ку аслати сасси темшĕн мана хамăрăн çакăнти пурнăç сасси тамалса пынăн туйăнать. Начар, начар пирĕн пурнăç! – тесе сылтăм аллине ласт! сулчĕ Юлдашев. – Пирĕнпе юлташлă мар, тăшманлă. Çĕнтерсе малалла каяс вырăнне... Юрать çумăрĕ пирĕнтен пăрăнса тармарĕ. Пулăшас терĕ пулмалла çӳлти аттемĕр. Çĕр типсех кайрĕ, авă. Атьăр, иртĕр малалла. Сысна хули халлĕхе сысналла кĕтсе илмĕ-ха пире.

«Туслăх» комплексĕн «Репродуктор» цехĕн пилĕк мăн вити тавра çамрăк ешĕл вăрман çумăр çилĕпе кашласа хăйсене саламланăнах туйрĕ Шупашкар хăни, вара вăл çамкине хупласа тăракан хурарах çӳçне сылтăмалла шăлкаларĕ те, юлташĕнчен ыйтрĕ:

– Мĕншĕн тирек анчах кунта? Ытти йывăç...

Ăна пӳлсех хăвăрт хуравларĕ Юлдашев:

– Тиреке шутсăр юратать ку çĕр. Леререхре улмуççипе чиесем те лартнăччĕ. Субботнике райкомпа райĕçтăвкомра ĕçлекенсене мăн эртелпех илсе килтĕм. Усси пулмарĕ, каймарĕç улма-çырла йывăççисем. Кунта ушах вырăн пулнине шута илекен тупăнман. Ушанарсем нихăçан та вăхăтра сухаласа, акса-лартса хăвараймастчĕç ку лаптăка. Çавăнпах çырма хĕрринчи çирĕм гектар япăх çĕре «аш-какай фабрики» тума уйăртăмăр. Районти хуçалăхсем эртеллешсе ют çĕршывсенчи пекех промышленнăç никĕсĕ çинче сысна ашĕ туса илмелли предприяти лартрăмăр. Вун тăватă колхоз пĕр-пĕринпе килĕштерсе пĕрлешӳ йĕркелерĕç, стройка валли укçа уйăрчĕç, ĕçлеме техника тата çынсем ярса тăчĕç. 1976 çулта республикăра чи малтан хута кайрĕ вăл. Эсир ун чухне хăвăр патра колхоз председателĕччĕ вĕт.

– Çапла. Хуçалăхăма вăйлатса çитернĕччĕ. Сирĕн «Шăхран» колхоз председателĕпе Дмитриевпа танлашма пуçланăччĕ. Килсе унран вĕренни те пулăшрĕ шăхрансем пек шăхăрма. Эпир те хамăр сасса таврана янраттараттăмăрччĕ. Районта сысна комплексĕ турăмăр. Чăваш çĕршывĕнчи çĕнĕлĕх ял хуçалăх кооперацине вăйлăрах аталантарассине шаннăччĕ... – ассăн сывларĕ Большаков.

Тарса пыракан çумăр пĕлĕчĕсем хушшинче тĕсне çухатакан асамат кĕперĕ çине ăмсануллăн пăхса илнĕ хыççăн, Юлдашев пуçне пăркаларĕ, вара хурлăхлăн сăмахларĕ:

– Асамат кĕперĕн пĕр пуçĕ пирĕн еннех ура янăччĕ, тепĕр пуçĕ – колхозăн çĕрĕ çине. Çав кĕпер манăн куç умĕнчен кайма пĕлмен. Туслăх кĕперĕччĕ вăл. Тулăх, ăшă çумăр хыççăнхи хĕвел кĕперĕ чуна хĕпĕртеттерсе килентеретчĕ. Колхозсемпе «Туслăх» кĕперĕ çирĕпленсех пыратчĕ çке. Пĕрлешӳре икĕ пин çурă ама тытнă, çирĕм пин çура илнĕ, патшалăха çирĕм пилĕк пин сысна самăртса панă, миллионран кая мар услам илнĕ. Кашни çулталăкрах. Районăн патшалăх панă çур планне туслăхсем тултарса пынă. Хĕвеллĕ ăшă çумăр хыççăн çĕршыв тӳпине капланнă хура пĕлĕтсем Чăваш енне те хупласа килсен, хура çумăр çума пуçларĕ, асамат кĕперĕ те халăх куçĕ умне йăлкăшса тухми пулса пычĕ. Чи малтан колхозсен енчи пуçĕ шывсăр тăрса юлчĕ. Хуçалăхсем вакланма тытăнсан, малтанхи килĕшӳсем çурхи шывпа юхса кайрĕç. Комплекса унччен колхозсем çĕр пин центнер фураж парса тăраканччĕ. Майĕпен вăл чакса-чакса пычĕ. Апатсăр выльăх – аш-какай мар. Ах, ку «Туслăхпах» кăвакарса лартăм ĕнтĕ. Ăна йĕркелесе сысна самăртма пуçличчĕнех, каярахпа такăр çул çине кăлариччĕнех сахал мар ыйхă, сывлăх çухатнăччĕ те... Ун ăнăçлăхĕшĕн чи малтан манран ыйтнă-çке.

– Халĕ те çаплах ыйтатпăр, – çирĕппĕн каларĕ Большаков.

– Ыйтăр, ыйтăр, усси пулсан. Анчах, пирĕн такăр çула мускавсем тарăн канав чавса ишĕлтернĕ хыççăн, мĕн усси. Пиртен мар, хăвăртан, тата аслăраххисенчен, пысăк пуçлăхсенчен ытларах, хаяртарах ыйтмалла паян халăхăн хăйĕн тарĕпе чыхăнса, мекеçленсе йĕркене кĕртнĕ ял хуçалăх лавне уçăмлăн малалла чуптарас чухне ухмахла чаркăçланăшăн, хăйне выççа тăратса хăварнăшăн. Итлĕр, авă епле «Выçлăх» симфонийĕ янăрать «Туслăх» ансамблĕн концертĕнче. Хурхух министăра анчах мар, унран аслăраххисене те хăйсен чаплă концертне билетсăрах кĕртеççĕ республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕсем Нуф-нуф, Наф-наф тата Ниф-ниф.

Çурăк сасăпа нăйкăшакан «Туслăх» сысна кăмунинчен вĕсем тарăннăн сывласа тухрĕç. Шăхран çулĕ тăршшипе икĕ пуçлăх хушшинче пăк-пак калаçу çеç пулса пычĕ.

– Нда, – терĕ хулана çитсен Большаков. – Мускав пуртти хăмăт пăявĕсене касса татнипе тăварăннă ял урхамахне кӳлмешкĕн никамăн та мар, хамăрăннах çĕнĕ, çирĕпрех пăяв явмалла пулать, Юлдашев юлташ.

– Кашни реформа ял хуçалăхне лачакана кăна путарнă, – йăлл кулчĕ Юлдашев. – Хресчен ĕмĕрте путман лачака-шурлăха. Тухатпăр, ку шурлăхран та çăрăлса тухатпăр эпир – çĕр хурчĕсем.

– Хо-хо! Шурлăха мар, тĕпсĕр мăн шăтăка сиктерчĕç пире, ял çыннисене, çĕнĕ патшалăхăн кавăн пуçĕсем...

Паллана сасса илтнипе кăртах сиксе илнĕ Большаков хăйсен умне килсе тухнă тăлпан арçынна алă пачĕ:

– Шăхрансене салам!

– Салам, салам, – терĕ лешĕ ун çине куç айĕн чеен пăхса. – Тин кăна-ха, пĕрле ăмăртса ĕçленĕ çулсенче, пирĕн пата курма, çитĕнӳсемпе паллашма килсе çӳреттĕрччĕ Вăрманкасран, халĕ салампа хутăш йĕплĕ салма çитерме килтĕр пать, Альберт Григорьевич. Сылтăм хăлхаран кĕчĕ те лачака юрри, ман та ĕнĕрлес килсе кайрĕ хамăн шухăшăмпа сирĕн пуçлăх кĕвви

сулахай хăлхаран сывлăша тухса шăхăриччен. Нумай павратăр эсир. Çапах сирĕн пуш сăмах арманĕ халăх валли çăнăх сахал юхтарать. Унăн çуррине те шайккалăх хăвăр хырăма тултаратăр. Халăхшăн, хресченшĕн ĕçлемест çĕнĕ власть, хăйĕн ырлăхĕшĕн кăна аçа-çиçĕм çиçтерсе тăвăл кăларать, çав тăвăлра хăй ылтăн юпа вырăнне тăрса юлать. Хитре те, хаклă та, анчах – чунсăр юпа. Нуша кулачĕ çисе тăраннă çын текен чĕрĕ чунсем ун тавра пур-çук вăйĕпе ташласа çаврăнаççĕ, ылтăн юпана пуç çапаççĕ...

Юлдашев итлесе пĕтереймерĕ «Шăхран» колхоз председательне, ăна çăвар хуплас пекех чарса лартрĕ:

– Пĕрмай сан пĕр юрă, Долгов. Ятламан пуçлăх та юлман пуль.

Большаков çак тăлпан кĕлеткеллĕ, çивчĕ чĕлхеллĕ, ăшă кăмăл-туйăмлă, аслă пĕлӳллĕ, тавçăруллă йĕркелӳçĕ-пуçлăха тахçантанпах пĕлет. Дмитриев вăхăтсăр вилнĕ хыççăн пĕрлешӳллĕ хуçалăх çыннисем хаваспах суйланăччĕ ăна хăйсен ертӳçи пулма. Хăй умĕнхи чапа тухнă вĕрентекенĕн ĕçне малалла хастаррăн та ăслăн çĕклентерсе пычĕ. «Шăхран» пек хуçалăх кашни районта пĕрре-иккĕ кăначчĕ. Вĕсен шутĕнче Большаковăн колхозĕ те пулсаччĕ. Вăрманкасра ĕçленĕ чухне вĕсен «Шăхран» шайĕнчи хуçалăх çуккăччĕ. Ăмăрту уявĕсем ирттернĕ кунсенче вăл çак Долговран пайтах сĕнӳ-питлев илтнĕ, унăн сĕнĕвĕсене те пурнăçлаттарма тăрăшнă юлхав председательсене. Анчах сĕнӳ вăл, темле хаклă пулсан та, ăна ăша хываканни тăнсăр е юлхав шухăшлă тăк – пуш сăмах вырăнне çеç тăрса юлать. Акă, каллех хĕрӳ председатель хĕçĕ айне пуça чикме тиврĕ. Кӳтсе çитнĕ шухăш кӳллине Долгов вĕсен умĕнче сарлакан татса ячĕ, авă, чарăнма пĕлмесĕр шавлать:

– Мĕнле майпа тапаçланса тухăпăр-ха, юлташсем, пĕтĕм çĕршыв чăмнă тĕттĕм шăтăкран? Кам пулăшĕ пире? Мускаврисем те, эсир те, Альберт Григорьевич, Шупашкарти аслă пуçлăхсем те, пăх та шугламастăр уççа

тухмалли çутă пирки. Ăна хăвăрах сӳнтерсе, хупласа пыратăр. Тăнлăр ăслăраххăн. Эпĕ мĕн кăна курмарăм пуль вун пилĕк çул хушшинче хамăн колхоз çыннисемпе пĕрле. Район, республика пуçлăхĕсем харăслатса пуçран мăн мăлатукпа тӳнккенине те, çут çанталăк хаярлăхне те тата ытти нумай-нумай инкек-синкеке те тӳссе ирттертĕм, колхозран ял хуçалăх кооперативĕ те туса куртăм. Мĕнле кăна эксперимент тутарса кăтармарĕç пуль пире асфальт çинче ташлакан пуçлăхсем. Пур çил-тăвăлтан та эпир çĕнтерӳллĕн тухса, ĕçчен халăх аллипе çĕнтерӳ ялавне çӳле çĕкленĕ, чи малтисен ретĕнче пынă, паян та – çав ретрех. Мĕн туса илме пултаратпăр эпир çак çĕр çинче, çав пурлăх пирĕн ялан ыттисенчен лайăхрах та пысăкрах. Мĕншĕн тесен пирĕн, шăхрансен, шăхранра яланах типĕ тар упранать, çав тар пире вăй парать, хресченĕн ӳт-пӳ тарĕпе хутăшса, тулăх пурнăçшăн пыракан кĕрешӳрен çĕнтерӳллĕ тухма пулăшать. Шăхранти тапак шăрши те сăмсана кăтăклантармасть, чуна уçать. Халăх чунĕ вăл питĕ туйăмлă, пур шăрша-марша та витĕмлĕ уйăрать, сирĕн, пуçлăхсен шăршине те, хăйĕнне те ăша хывать. Калăр-ха, Альберт Григорьевич, пирĕнни пек кашни гектартан хĕрĕх пилĕк центнер тĕш тырă туса илнĕ хуçалăх республикăра миçе?

Большаков куçне мăчлаттарса çамкине картлантарчĕ, яланхилле пуçне вашт çĕклерĕ те, ăшра тем шутласа, тути хĕррисене мăкăлтаттарчĕ, унтан тин хуравларĕ:

– Пĕрре. Эсир çеç.

– Тоттă çав, – хастарланса ӳкрĕ Долгов. – Çапах та пирĕн пурнăç – чухăнлăхра. Пахалăхлă, экологи енчен таса продукцишĕн пире йӳнĕрех те йӳнĕрех тӳлесе пыраççĕ, ют патшалăх продукцине маларах хураççĕ. Пире мар, вĕсен фермерĕсене ĕçлĕ тăвать, тулăх усрать патшалăх. Акă, пиртен сĕт литтăрне тăхăр çĕр тенкĕпе туянать, бензин литтăрне пин те улт çĕр тенкĕпе сутать. Тинĕс леш енчен кӳрсе килнĕ пылак шывăн литтăрĕ виçĕ

пин тенкĕ тăрать. Патшалăхăн ял хуçалăх политикин хакĕ çакăнта мар-и? Кунашкал политика вăл ял халăхне мăйкăчлакан, вĕлерекен политика. Мĕнле улăштармалла ăна? Камăн çине тăмалла уншăн? Политиксем, Аслă канаш депутачĕсем урса кайнă йытăлла пĕрне-пĕри туртса çурас пек тавлашаççĕ – ял хуçалăхне çÿллĕ шая çĕклессишĕн. Çав хушăрах хăйсем çĕр сутмалли саккунсем кăларса ĕлĕкхи помещиксем пулса каясшăн тапаçланаççĕ. Сутса янă çĕр çинче ĕçлекен хресчен Октябрь революцийĕчченхи майлах чура-хресчен пулса юлать. Эсир хăтарма пултараятăр-и çав инкекрен пире, ял çыннисене, хисеплĕ Егор Васильевичпа Альберт Григорьевич? Калăр-ха тархасшăн чунăрсене уçса?

– Шала кĕрсе, пÿлĕмре татса парăпăр ку йывăр ыйтăва, – тесе Юлдашев хĕрсе кайнă председателе хулĕнчен тытса уттарчĕ. Мĕн ыйтупаччĕ?

Долгов мăкăртатрĕ:

– Виç сехет кĕтетĕп сире. Эпĕ те хамăн ыйтăва урамра мар, сирĕн ĕç пÿлĕмĕнчех хускатасшăн. Ах, пуçлăхсем, яматсăр путсĕрсем.

1991 çулччен, Ельцин революцийĕччен, ĕне сăвакансемпе механизаторсем манран нумайрах укçа ĕçлесе илетчĕç. Халĕ те эпĕ вĕсен шайĕнчен кăшт кăна иртнĕ. Хулара вара... хуçасем рабочисенчен çĕр, пин хут ытларах чикеççĕ хăйсен нихçан тулма пĕлмен тĕпсĕр кĕсйисене. Тан марлăх халăхра хăрушă шухăш çуратать. Хăçанччен пусахласа пирĕн юна ĕçсе пурăнĕç-ши çав çăткăн çăхансем, тени илтĕнет халăх хушшинче.

Егор Васильевич председателе çурăмĕнчен лăпкарĕ:

– Лăплан, эпир татса памалли ыйту мар вăл. Большаков юлташран та килмест ку. Эс хăвăнне кала.

Кантур пÿлĕмĕнче уçă калаçу пулса иртрĕ. Долгов кÿршĕри юхăнса пыракан кооператив çĕрне вăхăтлăха усă курма илесшĕн-мĕн. Эп аччасемпе катексене те çăкăр çитерме пултарап, тет. Ăна вара пуçлăхсем ырларĕç, ыйтăва пур енĕпе те татăклăн татса пама

шантарчĕç. Чăмнă шăтăкран тухмалли улăм пĕрчи сăмса умне вĕçсе аннăнах туйрĕ Долгов ăслă сăмахсемпе-сĕнӳсемпе хавхаланнă хыççăн.

Профсоюз пуçлăхĕн маршручĕ Вăрманкас еннеллеччĕ, çавăнпа та вĕсем виçĕ хура «Атăлпа» Шăхранран тухса кайрĕç. Юлдашев, хăнăхнă йăлапа, пĕрле ăмăртнă район пуçлăхне Большакова икĕ район чиккине çитичченех ăсатма шутларĕ. Çула май Мăкăр ялĕ енче Долговпа сыв пуллашнă хыççăн, икĕ машина малалла ĕрĕхрĕ.

– Мĕнле, хамăр йăлана çĕнетер-и? – тесе Юлдашев ĕçри юлташне чикĕ юпи çумĕнче канса илме ыйтрĕ.

Вăрманкасра ĕçленĕ вăхăта, шăхрансене шăхăрса юрласах ăсатнине аса илсе пыракан Большаков, кăмăллă сасса илтсен, чунне уçса ячĕ:

– Юрать, хамăн та ыталас килсе кайрĕ çак туслăх чиккинчи юпана. Тунсăхласа кӳтнĕ пуль, парса хăварар хамăр чун ăшшине.

Аса илӳ юмахĕ кунта унченхилле вăраха тăсăлмарĕ, ячĕшĕн сыпкаланипех иртрĕ. Ĕçлемелле-çке, нумай-нумай ыйту явăнать вĕсен пуçĕнче, васкавлăн татса парасса кĕтсе ларать ĕнси çинче.

Чикĕрен инçех мар вырнаçнă «Хĕвеллĕ ир» комплекса Большаков апат вăхăчĕ тĕлнелле çитрĕ. Ăна хуçи, малтан Вăрманкас райкомĕн иккĕмĕш секретарĕнче ĕçленĕ, сысна кăмуни тунă Майлов яланхилле усăк сăнпитлĕ кăмăлĕпе кĕтсе илчĕ. Хăйпе калаçакана хирĕç куçран пăхма шутламан е юри тăвакан унашкал çынна Альберт Григорьевич нихçан та юратман, вĕсен ăшĕнче вăл яланах вăрттăн пытанса ларакан усал шухăша туйма хăнăхнă. Тӳрккеслĕхĕ те çителĕклех Геннадий Васильевичăн, хушăран шӳтлеме те пултарать.

Большаков тӳрех тĕп ыйтуран пуçларĕ:

– Ĕçсем мĕнлерех? Комплекса сыхласа хăварма пулать-и?

Хăна ыйтăвне Майлов çӳхен кулса аяккалла пăрса ячĕ:

– Сысна патшалăхне çитрĕр пулсан, вĕри çатма çинче Нуф-нуф хрюшкăпа Хиркас ташшине кăмăллăн ташламасăр, манран пĕр сăмах та илтеймĕр, хисеплĕ Альберт Григорьевич. Ырă сунса кĕтсе илетпĕр, хаклă хăнамăр?

Комплексра унсăрах тепĕр хăна пур иккен, аш-какай комбиначĕн директорĕ Попов. Юрий Васильевич комплекса хăй аллине илмешкĕн килĕшӳ тăвать.

– Колхозсем арканчĕç. Вăйлисенчен уйрăлса тухнă кашни пĕчĕк ял хуçалăхĕ малалла каяймасть. Выльăх йышĕ чакрĕ. Уйрăм çынсен сысни-пăруне тутарсемпе чулхуласем хаклăрах хакпа сăптăрса каяççĕ. Выльăх сутми пулчĕç пире. «Хĕвеллĕ ир» те тĕттĕмленме пуçларĕ: ялсенчен апат килмест, сысна шучĕ чакать... Крутовпа пĕр шухăш тупрăмăр та... Малашлăх шурăм пуçĕ çуталнăн туйăнать. Халлĕхе ман вăй пур: комплекса ура çине тăратма та, чухăн ялсене пуянлатма та. Эсир унта президентпа çывăхарах. Çак пирĕн шухăша çитерĕр-ха ун патне. Хурхух çине шансан, пулмасть. Эпĕ ăна ку ыйтупа чăрмантарни çур çул ĕнтĕ. Ман шутпа эпир малашне укçа-тенке, тĕп производствă хăвачĕсене, çĕре, ĕç вăйне – ял хуçалăх кооперативĕсемпе вĕсем туса илнĕ продукцие тирпейлекен предприятисенне ĕнтĕ, пĕр çĕре чăмăртамасан, пĕтетпĕр. Ăслăн алла-аллăн тытăнса ĕçлесен тин вăй илетпĕр, ак çапла хырăма та тултаратпăр, «хырăм панк-патак танк» тесе шӳтлеме те пултаратпăр», – тесе вăл сарлака çутă ывăс çинчи тĕтĕмленĕ сысна çурине ăслайлăн вакласа, пысăкрах татăккисене Майловпа Большакова тыттарчĕ. – Хуçаланнăшăн каçарăр: эпĕ мясник та, повар та.

Шăхран хыçĕнчи «Туслăх» сысна комплексĕ сысна пăхĕ ăшне путнине курса чунне ыраттарнă хыççăн, Вăрманкасри шаритленĕ сысна çури апачĕн сĕтелĕ хушшинче Альберт Григорьевичăн хаваслăх туйăмĕ вăйланчĕ. Ял хуçалăхĕн пĕр шăтăкĕнче симĕс калча шăтса çитĕнет. Пур-ха пуçаруçăсем, ăслă хресчен ачисем.

Çапах та, Вăрманкас район администрацийĕнче çав кăмăл кăштах хуçăлчĕ. Максим Максимович ăна «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхозран «Шурăмпуç» тата «Çăлтăр» ял хуçалăх кооперативĕсем пулма пултараççĕ, терĕ. Куншăн вăл такам çине тарăхнă пек пулчĕ, анчах кам çине – палăртаймарĕ. Айăпĕ хăй çинче те, Крутовра та, тымарсем «революци пуçланинче» те пулнине ăнланать-ха. Тĕп айăпĕ вĕсенче те мар, çĕршыв калăпăшĕпе кĕрлекен çил-тăвăлри ахăр самана политикинчен килнине те пĕлет. Пуçри тем тĕрлĕ хирĕç тăрура суйласа илмелли, суйласа илнинчен кирлĕ çирĕп шухăш çирĕплетмелли пăнча лартма васкамасть-ха.

Совет влаçĕ Мускав демократĕсен пушарĕнче çунса кĕлленнĕ хыççăн ял хуçалăхĕнчи совет хуçалăхĕсем те пăчланчĕç. Вăрманкасран Шупашкар çулĕ çине тухсан, Большаков вĕсем хăш-хăш районта хăш отрасльте мĕнле аталанса пурăннине аса илсе пычĕ. Шухăшлавра Ункă кĕперĕ урлă каçнине те сисмен.

– Альберт Григорьевич, манса кайман-и эсир ирпе мĕн каланине?

– Мĕн пиркиччĕ?

– Ишлее кĕрсе тухмалла теменччĕ-и?

– А-а, тавтапуç сана аса илтернĕшĕн. Кĕретпĕр, кĕретпĕр.

Ишлее çитиччен вара унăн куçĕ умне иртнĕ вăхăт саманчĕсем тухса пычĕç. «Чувашхмельпром» пĕрлешĕвĕн ертӳçинче ĕçлеме пуçласанах вăл «Ишлейский» совхоз директорĕпе Юрий Никоалевич Машановпа тĕл пулса калаçнăччĕ. Вăл хăмла плантацийĕсем сарма, çĕнĕрен тума шантарнăччĕ.

– Хăвăрах пĕлетĕр, Альберт Григорьевич, хуçалăхĕ пирĕн районта чи пысăкки те сапаланчăкки, çирĕм икĕ ялтан тăрать, – терĕ директор. – Çурран утса çаврăнма мар, машинăпа чупсах ывăнатăн. Виççĕмĕш уйрăма çитмешкĕн миçе çухрăм пуль тетĕр? Унта пирĕн çирĕм гектар хăмла. Çитсе курар.

– Пиллĕк-улттăран ытлах мар пуль, – кăштах аса илнĕн персе ячĕ Большаков.

– Асăрханăччĕ, пур пуçлăх та, килес-тăвас пулсан, çаплах шутлать, мĕншĕн тесен йĕркеллĕ хуçалăхсенче таçта та ялсем тĕп усадьбăран ытла аякра мар. Пирĕн çеç Вăрманкас Тăрăна Ишлейрен вун сакăр çухрăм пулать. Юрать-ха Вăрнар-Çĕмĕрле çулĕ çинче, çŭреме ансат.

Большаков директора тŭрлетрĕ:

– «Ишлейский» совхоз республикăра чи пысăкки, Шупашкар районĕн çур пайне йышăнать вĕт. Авă епле паллă хуçа эсир – совет хуçи. Пултаратăр çавăрттарма.

– Пултарни качки. Министерство лартнă та, шанăçа тивĕçтермеллех.

Çула тухсан, Машанов радио ячĕ.

– Пĕрмай ĕç çинчен шухăшлар мар-ха, музыка итлер, кантарар кăштах пуç мимисене, – терĕ вăл тĕрлĕ каналсем тăрăх мĕн те пулин чуна кантармалли шыраса, чăваш передачине тытрĕ.

«Пурăнмашкăн пурнăç тулăх, юрлама та пит аван...» тесе шăрантаракан Тамара Чумакована пулăшнă пекех, вĕсем харăсах ун çумне хутшăнчĕç: «Советсен çĕршывĕ тăрăх кайтăр юрă, юрă кайтăр ян та ян...»

– Иван Ивникпе Григорий Лисковăн халăх юратнă юрри, вуншар çул хавхаланнă унпа чăваш, халĕ те чуна çĕклентерет, – терĕ Большаков, юрласа пĕтерсен.

– Пирĕн совхоз хорĕ пĕр çулхине ку юрăпа республика акатуйĕнче пĕрремĕш диплом илнĕччĕ», – тесе Машанов радиоприемникре тата тем шырарĕ. Сасартăк паллă юрăçăн уçă сасси янăраса кайрĕ: «Миллион, миллион, миллион алых роз...»

Аслă çулпа вĕçтерекен «урхамахăн» тилхепине çирĕппĕн те лăпкăн тытса пыракан Юрий Николаевичăн сăнĕ юрă вĕçлениччен пĕртте улшăнмарĕ. Хĕрĕхелле çывхаракан вăтам пŭллĕ, тăлпан кĕлеткеллĕ, кăшт тăрăхларах питлĕ, çивĕч куçлă, хĕрŭ кăмăллă çак çын мĕн çинчен шухăшларĕ-ши? Çуралса ŭснĕ Çĕмĕрле

тăрăхĕнчи çамрăклăх юратăвне, ял хуçалăх институтĕнчи шавлă çулсене, вун икĕ çул каялла совхоза килнине аса илчĕ-ши? Ăна пĕлме пултараймарĕ Большаков. Шухăшне вăл хăех уçса пачĕ:

– Кирек мĕнле ĕç те ăстаçăран хăрать иккен, – радионе чарса лартрĕ Юрий Николаевич. – Шухăшпа шурă пўрт, канашпа картиш çавăраймăн тенине илтнĕччĕ халăх хушшинче тахçан. Çамрăклах лартрĕç директора. Мĕн тăвас тетĕн, хуçа пултăн тăк - хуçалла пăх мăн хуçалăху çине. Çак туйăмпа тытăнтăм çĕнĕ ĕçе. Анчах хамăн пĕр пуç шухăшĕпех инçене кайма май çуккине ăнлантăм. Халăх çине тухрăм. Калаçмасăр сăмах пулмасть, каскаламасăр турпас тухмасть, тенĕ пек чĕлхе уссине курма шутларăм. Йĕрке çукчĕ, дисциплина япăхчĕ. Нимрен, никамран хăраса тăмасăр айăпларăмăр хăйсене тивĕçсĕр тытакансене, ял уссине курса хула шучĕпе пурăнакансене. Совхозра пин çурă вăй питти çыннчĕ. Вăрăм укçа шыраса, хаклă пурнăç урапи хыççăн хăваласа чупакансем Шупашкара тарса пĕтрĕç. Тăхăр çĕр çын юлчĕ. Кусем – чи шанчăклисем. Вĕсен вăйĕпе халĕ эпир малтанхи йышпа ĕçлесе илнинчен икĕ хут ытларах ял хуçалăх продукчĕсем тăватпăр. Рабочисен ĕç условийĕсене çăмăллатса пыратпăр, вĕсене пурăнма, канма, сипленме çĕнĕ çуртсем, керменсем, ача сачĕсем, магазинсем, профилакторисем, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен йышăну пункчĕсем туса паратпăр. Чечек, кактус, юрлакан кайăк, аквариум, сауна-мунча, апатланмалли-канмалли таса пўлĕмсем, тухтăр, фельдшер пункчĕсем – пурте вĕсем илемлĕх тĕнчине пуянлатаççĕ. Алла Пугачева шăрантаракан миллион-миллион йăм хĕрлĕ роза та юрăри пекех асра, куç умĕнче вĕсемшĕн. Çулсерен ферма картишĕсенче пиншер, совхоз кантурĕ умĕнче çĕршер роза чечекĕ илем салатаççĕ ĕçлекен çын енне. Пĕлетĕр-и, пĕрле юрă итленĕ вăхăтра эпĕ те савăнса юрăçпа пĕрле ĕнĕрлесе пытăм.

Юрий Николаевичăн чунĕ юрлани совхоз çыннисен чунĕ пĕр аслă хорта кĕрленĕ пекех туйăнчĕ юнашар ларса, итлесе пыракан Большакова. Илемлĕх курăмĕ, ырă йăла хăвачĕ малашне те совхоз ĕçченĕсен кăмăлне татах та çĕклессе шанать ĕнтĕ мăн ĕмĕтлĕ хĕрӳ пуçлăх. Ăна Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят панине аса илчĕ те вăл, шухăшларĕ: «Машанов – ялти тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ те. Пултарать.»

Пулнăччĕ çапла темиçе çул каярах. Шупашкар çывăхĕнчи хресчен те çĕр çине пуçа чиксе тулăх пурнăç сывлăшĕпе телейлĕн сывлатчĕ. Вăл вăхăтра ĕнтĕ юхăнса кая пуçланă колхозсенчен совхозсем туни, пĕтĕмĕшле илсен, ытлах уссине паманччĕ. Вĕсене тытса тăма патшалăхăн укçа нумай тăкакланатчĕ. Анчах çынсен кăмăл çĕкленĕвне «Ишлейский» совхоз директорĕ пек ăста йĕркелеме пултаракан пуçлăхсем хăйсен хуçалăхĕсене пурнăç шайĕнчех хăватлантаратчĕç.

Совет влаçĕ совет хуçалăхĕсене те – совхозсене – хăйпе пĕрле историе илсе кайрĕ. Çирĕп йĕркепе чăмăртанса вăй илсе пыракан ялсем хăйсем тĕллĕн уйри тырă çĕмелĕсем пек усал çил çине тăлăххăн тăрса юлчĕç, айланкаласа çыннисем тĕрлĕрен кооперативсене пĕрлешрĕç, хăйсен çĕнĕ хуçалăхĕсене çĕнĕлле, пасар-рынок йĕркипе майлаштарма пуçларĕç. Вуншар çул пухнă пурлăх – халăх пурлăхĕ – харама кайрĕ.

Унченхи совхозăн капăр картишне мăян пусса илнĕ. Кантурĕнче те чечек ӳсмест, кайăк юрри илтĕнмест, аквариумра пулă вылямасть. Çилпе шăхăрса ларакан икĕ хутлă чул çуртран сивĕ çапнине туйса, Большаков çӳçенсе илчĕ. Машанова вăл урăх çĕрте, пĕчĕк ял кооперативĕнче шыраса тупрĕ.

– Вăтăрмĕш çулсенче вак хуçалăхсене пĕрлештерсе çĕршыв пуянланма пуçланă. Сакăр вуннăмĕш çулсенче пысăк хуçалăхсене аркатса вак хуçалăхсем тума тытăннипе çĕршыв хăвачĕ каялла чакма пуçларĕ. Малалла утма тытăнатпăр-ши? Калăр-

ха мана, Альберт Григорьевич? – пусăрăнчăк кăмăлне пытараймасăр ыйтрĕ унран, вилес умĕнхи çын пек йывăррăн сывлакан республика ял хуçалăхĕн хуравлă патшалăх çыннинчен, малтанхи пек хĕрӳлĕхпе çиçекен мар, чылай ватăлнă пĕчĕк пуçлăх.

Темле ăнлантармалла калаçсан та, ӳкĕтлесен те, Альберт Григорьевич унăн тарăн куçĕнче хăй вăхăтĕнчи хĕвел йăлкăшăвне асăрхаймарĕ. Ухмахла йĕркепе пыракан пурнăç авă епле юсать иккен çынна, халăха, тесе çитсе кĕчĕ Большаков Шупашкар хапхинчен. Паянхи çул çӳрев ăна, пысăк хуравлă пуçлăха, хресчен çĕнĕ куçлăх тăхăнтартрĕ. Унран та пысăк пуçлăхсене - ял хуçалăх министрне Хурхуха та, республика президентне Федорова та çав куçлăхах сĕнчĕ пуль хресчен çĕр çийĕн хура тĕтре йăсăрланнă вăхăтра.

Хăй куçĕпе курса пĕтĕмлетӳ тунă май, Большаковăн халĕ министра кăна мар, президента та мĕн усаллипе ыррине каламалли пур. Вăрманкассен пуçарăвне республика ял хуçалăхне малалла аталантармалли тĕп тĕллев туса хумаллах. Айдаксен, Давыдовсен, Долговсен, Волковсен, Машановсен тертлĕ çулĕ çине хăюллăн тăнă Поповсене те ум памалла. Альберт Григорьевич кун пирки йăнăшмасть.

5

Аслă, хаяр вăрçăн тепĕр тăлăх арăмĕ çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлчĕ. Çамрăклах упăшкасăр тăрса юлнă Нинук, Кашкăр Хĕветучĕн юратăвне хĕврен кăлармасăр çĕр çинче хĕрарăм тунсăхне чун-чĕрипе чăтса, асаплă пусăрăнса ют арçынсăр, телейлех пурăнчĕ. Телейĕ ĕнтĕ унăн колхоз ĕçĕнче – халăх хушшинче, килĕнче – ывăлĕпе кинĕн, мăнукĕсен йăпанăвĕнче пулнă. Салакайăк Йăванĕн кĕртлешке арăмĕ Крахвине упăшки вăрçăран таврăниччěнех колхоз председателĕпе Трахвин Йăванч Шмыковпа çуратнă Венери амăшне хывмарĕ. Таврара ырă

ятлă кин пулса савăнтарчĕ ăна. Виçĕ мăнук çуратса пачĕ. Амăшĕпе ашшĕ ялан ĕçре, нихçан ерçеймен пирки Нинукăн икĕ ывăлпа пĕр хĕр пĕрчине ытларах пĕччен пăхса ўстермелле пулчĕ. Вĕсемпе айлана-айлана унăн вăхăт иртни те сисĕнмерĕ, Вилĕм алăкран сасартăк килсе те шаккарĕ. Колхоз ĕçĕнче тем те курса тўснĕ çав. Кăнтăрла та, каç та выçăллă-тутăллă, шăла çыртса ĕçленĕ, пур-çук тумпа шăнса аптăранă, ывăннине туймасăр пĕрмай тар тăкнă, çапах килти пўлмене те, сум хутаçне те тултарма пултарайман. Тўлевсĕр майлах пилĕк авнă çĕршыври мĕльюн-мĕльюн хресчен пекех – вăл та. Ывăлĕ ял хуçи пулсан тин Нинук та ял çыннисемпе танах ура сырчĕ, ун чўречинчен те савăнăç, телей хĕвелĕ кĕчĕ.Тельман колхоза мĕнле йывăрлăхпа пуянлатма пултарнинчен тĕлĕнсе амăшĕ турра вăрттăн кĕл тунă ывăлĕн сывлăхне упрассишĕн. Пурте çителĕклĕ пулса çитнĕ вăхăтра ыр пурнăçран уйрăлса кайма вăхăт çитнишĕн çĕрлесенче куççуль кăларнă. Анчах Вилĕмрен тарма та, пытанса юлма та, ăна улталама та, мулпа сутăн илме те май çук. Нумай нушалантарса пăхтармарĕ Нинук хăйне. Чĕре чикнипе аптăрама пуçланăскер, эрнене яхăн вырăнпа выртрĕ те, каçпа чипер çывăрса кайнăскерех, хĕвел урине ирпе урăх тытаймарĕ. Хĕвел кунпа каçа унсăрах малалла шутласа кайрĕ.

Хăйсен хыçĕнчи анлă масар вăрçă çулĕсенчи тыл ветеранне хăйĕн ĕмĕрхи сăваплă хўтлĕх ытамне илчĕ. Автансăр Хурăнварта тепĕр чун хутшăнчĕ. Крутовăн асламăшĕпе Ульки аккапа кўршĕллĕ ĕнтĕ.

Волковсен яланхи шавлă килĕнче ăнланса пĕтермелле мар тунсăх хуйхи çавăрса илчĕ пурне те. Вилĕм кунĕсене эртелпе асăна-асăна пынă май кил ăш-чикки ерипен улшăнса пычĕ пулин те, çывăх çынсăр тăрса юлнă ывăлĕпе кинне те, вĕсен ачисене те амăшĕ, асламăшĕ кĕç-вĕç алăкран хуллен кăштăртатса кĕрсе тăрассăнах туйăнать. Вăл хăйсемпе ăшшăн та çемçен калаçнă пек...

Тельман Федотович колхоз ĕçĕнчен ирĕкленсе Шупашкара ĕçлеме кайнă хыççăнхи мăн хуйхă пулчĕ ку Венера Ивановнашăн. Упăшки ял хуçалăх институтĕнче ăнтăлсах ĕçлеме пуçлани вăл хăйĕн пултарулăх картлашкине уксакламасăрах ярса пуснине чунĕпе туять.

«Упăшкам та, хам та, ачасем те тĕнчери чи кирлĕ ĕçпе пурнăçа çывăхлатнăшăн, çыхăнтарнăшăн ма хĕпĕртес мар. Çĕр çинче çуралнă этем хăйне тăрантармашкăн, тĕнчере хăйне сыхласа хăварассишĕн ăсне ниçта хума пĕлеймесĕр нушаланать, пĕлӳ тĕнчинче чи ăслă вăй пулса юлассишĕн юмахри пек хăлаçланать. Шухăш-ĕмĕчĕпе çаврăнать-çаврăнать те Хĕвел тавра, çăлтăрлă тӳпе айĕнчи тăван ял-хула, тăван хурăнташ ытамнех кĕрсе ӳкет, этемлĕхрен çĕр сĕткенĕ витĕр шăтса тухакан çурхи чечеке ыталаса чуп тăвать: салам, тăванăм!

Çапла тăвансемпе пĕрлех ĕçе кӳлĕнетпĕр, пурнăç майлашăвĕнче-шайлашăвĕнче тупнă хамăрăн юрату ытамĕнче урай тулли чупакан-вылякан ачапчапа киленсе савăнатпăр, вĕсем валли тĕнчене тухмалли çул хыватпăр, çав çул çине тухма ыттисене те вĕрентетпĕр. Тутă хырăм çулĕ суйласа илнĕшĕн пĕртте кӳренместпĕр. Çав çул вăл – этемлĕх çулĕ-çке», – тесе шухăшласа Венера Ивановна çемçе креслă çинчех тĕлĕрсе илчĕ. Ĕне му-улатса сасă панипе сасартăк куçне уçрĕ, вара васкасах тулалла тухса чупрĕ. Кĕтӳрен таврăннă хура-шурă ĕнине кил хушшине кĕртсе ячĕ, ăна малтанах хатĕрлесе хунă çăнăхлă шыв ĕçтерчĕ, суса тулли витрепе пӳртелле кĕчĕ. Сĕрнĕ ăшă сĕте сыпса кулач çирĕ те хырăмне тăрантарчĕ. Вĕри апат пĕçерес килмерĕ. Пĕччен чухне пӳлĕмсенчи тирпей-илем ĕçĕ те алла кĕмерĕ. Ним тăвас килменнинчен хăй те тĕлĕнет. Ава епле иккен вăл – хăраххăн пурнăç. Тельмансăр эрне хушшинчех алă-ура çыхланать. Хунямăшĕ çамрăк упăшкине хĕрĕх пĕрремĕш çулта вăрçа ăсатнăранпах мĕн виличчен тунсăх ытамĕнчен уйрăлайман. «Мĕн тери йывăр пулнă пуль ăна, тăлăх арăма, çав нушана чăтса

ирттермешкĕн. Эпĕр халĕ темиçе куна чăтаймастпăр. Манăн хуняма пекех мĕн чухлĕ хĕрарăм асапланман-ши çав нуша аллинче вăрçа пула».

Пуçра вĕлтлетсе илнĕ çак шухăш урамра машина пиклеттернипе вĕлтĕрт çухалчĕ. Сиссе те юлаймарĕ вăл кил картине ывăлĕ васкаса кĕнине. Амăшĕ, хыпăнса, хирĕç сиксе тухрĕ, вăйлă ытама кĕрсе ўкрĕ.

– Ах, Петĕр-Пĕрремĕш Петĕрĕм, ывăлăм, сире кĕтни... Куç чўречерен каймасть. Ĕçўпа килтĕн-и-ха хамăр тавраша? Кинпе ачисене те питĕ курас килет те çав. Ах, ку сапăнчăк пурнăçа. Мана тăлăха тăратса хăвартăр пать эсир, чупкăнсем.

Тельманпа пĕрлешсен тепĕр çулнех кун çути курнă малтанхи ачине, ывăлне, вĕсем шўтле-шўтлех Пĕрремĕш Петĕр тесе унпа йăпанатчĕç те, ўснĕ май хастар та çирĕп кăмăллă Петĕр, чăваш патши пулаймарĕ пулин те, хăйĕн ĕмĕчĕн патши пулчĕ-пулчех. Вăл вĕт, ашшĕ пекех, çĕр тухтăрĕ пуласшăнччĕ-çке, çавăнпах ĕнтĕ ашшĕн Авруйри юлташĕн Николай Кирилловăн ял «академине» кайса кĕчĕ, унта вĕреннĕ чухнех наука вăйăипе аташса Мускав таран çĕнтерўллĕ утăмсем турĕ, хĕрлĕ диплом илсен те хăш-пĕрисем пек пуçĕ тăрринче мухтав хĕрлĕ ялавне вĕлкĕштерсе çўремерĕ, пылчăклă çĕртен уйрăлмарĕ, çамрăк чух пуçра мĕн пуррине пурнăç никĕсĕ туса хăварас-ха тесе çăмăллăнах, хăй каланă пек «вылясах», ял хуçалăх наукисен кандидачĕн дипломĕпе кил тĕпелне ашшĕпе хирĕç хăюллăн кĕрсе ларчĕ. Тек ĕнтĕ ăна ашшĕ пурте пĕрле чухне Юман шăллĕпе те Шăпчăк йăмăкĕпе аташкаланă хушăра çамкаран йывăç кашăкпа ачашланă пек ачашламасть, вăл амăшĕ лартса панă апат чашăкне ывăлĕ мĕнле пушатнине сăнать.

Тара илнĕ чухне ĕлĕк пĕр хуçа хăйĕн пулас тарçине чи малтан сĕтел хушшине лартнă тет те, ăна чи тутлă апат чашăкки лартса панă тет те, хăйĕн ĕçне кĕрĕшекен çын чашăка мĕнле хăвăртлăхпа пушатнине сăнаса ку этеме хăйĕн патне илмелле-и е илмелле мар-и тесе

шухăшласа ларнă тет. Апата ытлашши васкамасăр, выçлăхла çăтса ямасăр, вăхăтпа çисе янине хуçа кăмăллана, нише кайнă сысна çури пек сăрхăнтарса мĕшĕлтетсе çиекеннине алăк еннелле çул кăтартнă тет.

Тельман Федотович хăйĕн ывăлĕн сĕтел чашăкĕ хăйсене майлă хăвăртлăхпа тасалнишĕн ăшĕнче хĕпĕртенĕ, ку ачаран çынах пулма кирлĕ-ха тесе ĕмĕтленнĕ.

Амăшĕ те ĕнтĕ ачи-пăчи сĕтел илемне пăсманшăн, кил-çурт тирпейлĕхне тытма вĕренсе пынăшăн упăшкинчен те ытларах хăпартланнă пуль. Венера Ивановна ывăлне яла илсе килесшĕнччĕ, анчах та пĕр хуçалăхрах ашшĕпе юнашар икĕ çĕр кандидачĕ пĕр чĕлхе тупаяс çуккине ăнланса, Петĕре хăйĕн ĕмĕчĕн урхамахĕ çинчен туртса антармарĕ, малаллах сиккипе чупма пил кăна сунчĕ.

Вăрманкас касси кăна мар-çке Чăваш çăрĕнче. Муркаш районĕнче те йăмра ўсет. Хурăнварти хресчен йăхĕн чĕппи валли те Панкли ялĕнче йăмра айĕнчи пĕр хўшĕ тупăнчĕ. Давыдов «помещикĕн» «Ударник» хуçалăхĕн сарай çунаттинче Петĕр йăва çавăрчĕ. Платон Павловичпа Тельман Федотович пĕр-пĕрин ĕçне-хĕлне ăмсанса, пĕр-пĕринчен мĕнпе те пулин иртсе каяс шухăшпа туслăн, ăмăртуллă-çĕнтерўллĕ ĕмĕтпе пурăнаççĕ ĕнтĕ. Петĕр мăшăрне те Муркаш «ударницинех» тупрĕ. Кинĕ хăйне майлă кăмăллă хĕрарăм пулнăшăн Венера Ивановна чунĕпе канлĕ. Мăнукĕ Лев-Арăслан, икĕ йăх ăратнех хыврĕ пать, вĕренĕве пуçне чикрĕ те Мускаври тĕпчев институтĕнче кибернетикăпа тĕнче саккунĕсене уçса халăха усă парассишĕн чунне кантараймасăр ăшталанать.

Петĕр пичче, эпĕ сан пек патша пулма ĕмĕтленместĕп тесе шăлне йĕрекен Юман Сăр вăрманнех тымар ячĕ. Атăл леш енне ишсе каçса Йошкар-Оларан аслă пĕлў дипломне илсе килчĕ те, хыр-чăрăш йывăççисем хушшинчех сăмалаланса ларчĕ, çапах та халĕ,

пиччĕшĕпе тĕл пулнă вăхăтра, «Эпĕ – вăрман патши» тесе мухтанса илме те хăюлăх çитерет.

Хĕр пĕрчийĕ, вĕсен ытарайми Шăпчăкĕ, Хурăнвартан вĕçсе тарчĕ пулин те çулне улăштарса таçталла вĕçмерĕ, тăван çĕршывĕн тĕп ялнех анса ларчĕ, чăваша кăна мар, такама та хăйĕн тĕлĕнмелле сассипе тыткăнларĕ. Мускав консерваторийĕнчен вĕренсе килнĕ чăваш хĕрне таçти вăтам шайри консерваторисенчен направленипе хŭтерсе тултарнă çерçисем хушшинче те ай-яй пыра хыртарма, чĕлхене якатма тиврĕ, мĕншĕн тесен çав çерçисен Мускавра кăна мар, Шупашкарта та çăханĕсем пур-çке. Çав çăхансенчен аслăраххи пĕрре кранклатсанах çерçи тава тивĕçлĕ артистка ячĕпе сцена çине чĕриклетсе тухать, çăхан тепре кранклатать те – çерçи чăваш халăхĕн артистки. Вăл – сцена çинчи «шăпчăк», чăваш çăлтăрĕ.

Хурăнвар Шăпчăкĕ вара, пултарулăхне кура, чăваш театрĕн сцени тавра ăшă йăва çавăрнă çăхан «шăпчăкĕсене» хăйĕн ытарайми сассипе хупласа хума пултарчĕ – пĕлтĕр Чăваш халăх артистки ячĕпе ялта пысăк концерт пачĕ.

Вĕçрĕ-вĕçрĕ те амăшĕн Шăпчăкĕ – чăн-чăн Чăваш шăпчăкĕ, Мускавах анса ларчĕ, Максим Максимович Крутовăн Чулхулара çуралнă Лариса йăмăкĕн мăнукĕпе Артур Артуров юрăçпа пĕрлешсе, тĕнче тавра вĕçме пуçларĕ. Ашшĕ унăн, Олег Артуров, тĕнчипе паллă дирижер-музыкант.

Асламăшĕ ячĕпе ят хунă Нинук Артурова, Шăпчăк, Мускаври Пысăк театр солистки, пĕрле ĕçлекен, Раççей халăх артисчĕпе Артур Артуровпа Италири Ла-скалăра, Австрири Венăра, Германири Берлинра, Чехословакири Прагăра, Америкăри Нью-Йоркра, Японири Токиора тата ытти нумай çĕршывсенчи опера театрĕсенче илеме юратакансен,илем тĕнчийĕнче кăна хăйсен телейне тупнă тĕрлĕрен халăхсен ăс-тăнлă çыннисене хавхалануллăн алă çуптарнă. Концертсенче хушăран чăваш юррисене

шăрантарма та манман Хурăнвар кĕрӳшĕпе Шăпчăкĕ. Кĕçех вĕсем Шупашкара килмелле. Унта тĕнче халăхĕсен сассинче Поль Робсон некăрпа ăмăртмалла илем хумĕ çĕклесе хăватлă тинĕсре ишнĕ Максим Дормидонтович Михайлов 1994 çултанпа ĕнтĕ операпа балет театрне чи вăйлă артистсене йыхравласа пухать. Чăваш патши Пĕрремĕш Микулай ун ячĕпе пуçарса янă ăмăрту-фестиваль ĕмĕрте те ниçта пулман-çке. Çавăнтанпа ĕнтĕ Чăваш çĕршывĕ тĕнче лирин çӳл тӳпине çĕкленчĕ. Унччен музăн ют çĕршывсенчи кĕвви аякра кăна илтĕннĕ пулсан, паян çав кĕвĕ пĕтĕм чаркăç витĕр Атăл çыранне те çитсе çапăнчĕ, опера театрĕн алăкĕнчен шаккамасăрах кĕрсе анлă сценăпа мăнă зала çавăрса илчĕ. Янăрать халĕ вăл тĕнче хăлхине çурасла!

– Анне, тăхта-ха, тăхта, – амăшне ытамран вĕçертсе ячĕ Петĕр. – Итле-ха, итле? Мана йăмăкăм юрăпа кĕтсе илет.

– Ман хăлхана та кĕрет-ха вăл чуна çывăх сасă. Килте чухне радионе юри чармастăп хĕрĕм юрланине итлетĕпех-ха тесе. Шупашкарĕнчен те, Мускавĕнчен те вĕçсе килет хушăран хамăрăн Шăпчăк сасси. Хамăр çеç унпа шăпчăк чĕлхипе калаçаймастпăр.

– Манса кайрăн-им, анне? Хăвăн менелник савăкне магнитофонпа çырса илнине? Лева кассетине Мускава илсе кайнăччĕ. Сана саламланă пурин сасси те, пурин юрри те пурччĕ вĕт унта. Нинук ун чухне опера юрăçисен тĕнчери фестивалĕнчен Венăран тарса килеймерĕ-çке. Тăван чĕлхепех калаçатпăр, анне, пуринпе те, тăвансемпе – тăванлах.

Венера Ивановна ывăлне алăран çавăтса пӳрт алăкĕ патнелле уттарчĕ, çав хушăрах ыйтса пĕлесшĕн пулчĕ:

– Нумайлăха-и-ха? Ай яланхи пекех пуçна кăтартатăн та хӳрӳне тыттармасăрах тухса шăвăнатăн?

Петĕрĕ утма чарăнсах, сассине улăштарсах, куçран ăшшăн пăхсах амăшне савăнтарса ячĕ:

– Яланлăхах, анне. Паянтан çак тăван килтен те, çуралнă ялтан та нихăш еннелле те вĕçсе тармастăп. Асатте, атте тилхепине тытатăп. Ял хуçи пулас тетĕп.

Çакна илтнипе амăшĕн пит-куçĕ çур сăнĕ çапнă пек сасартăк улшăнчĕ, куçĕ шывланчĕ, вара вăл ывăлĕн сарлака хул пуççийĕсем çине çемçе аллисене хучĕ те, ăшран тухакан сассипе каларĕ:

– Килĕшрĕн апла хăвна ыр сунакансемпе. Ют çĕрте çеç мар, хамăр таврарах пур-çке вырăнĕ тем тумаллăх та. Хамăр халăхпах çывăхланмалла, хамăр халăхах пуйтармалла.

– Çавăнпа парăнтăм та ĕнтĕ, анне, тăванлăх вăйĕ чуна çĕнтерчĕ. Шупашкарта ял хуçалăх министрĕ патĕнче те, Вăрманкасра Макçăм пичи патĕнче те пултăм, пуринпе те килĕшрĕм ĕç пирки. Ял халăхĕ шансан, эпĕ ырантанах ĕçе тытăнма пултаратăп. Крутовсем ыран пуху ирттересшĕн.

– Çынсем сана яла илсе килесшĕннине эпĕ аçу председательте чухнех ăша хывма пуçланă. Тымарти Люда Белова та хастар хĕрарăм, ĕçне те пĕлет, пултаруллă, ĕçке ермен. Çапах мăн хуçалăх уншăн шăл витмен мăйăр пулчĕ пек туйăнать мана. Çав мăйăра катса ултă ял халăхне ун тĕшшипе тăрантараймарĕ. Паллах, хăйсен ялĕпе çавăрттарма пултарать. Ăна бригада, ферма çеç кирлĕ. Сысна ферминче ăнать унăн. Председательне суйлансан, специалистсемпе хăв пĕлнĕ пек çавăрттарăн. Ман шутпа, çапах та, районта халлĕхе Хумма Петĕрĕн хĕрне çитекенни сахалтарах. Аçу колхоз шучĕпе вĕрентсе кăларчĕ ăна. Анна Петровна ял укçи-тенкине çилпе вĕçтермерĕ, ĕçлесе ял халăхнех тавăрса пачĕ. Беловапа пĕр чĕлхе тупаймарĕç те... Ах, хĕрарăмăн ун нихçан та пуçлăх пулмалла мар та çав. Турă пиллемен ăна çав лава туртма. Хĕрарăмпа хĕрарăм хушшинче ытла кĕвĕçŭлĕх, чăкрашулăх, курайманлăх нумай.

Ывăлĕ кулса ячĕ:

– Ан тĕлĕнтер-ха, анне. Санра та пур-и вара çав усал енсем?

– Пур, пур, ачам. Хĕрарăма ăна пĕрне ырласа теприне хурламалли çук. Пурте пĕр чустаран эпир, хĕрарăмсем. Кăмака умĕнче те ачапчапа ытларах камантламалла пирĕн тата çăмăлтарах ĕçре. Ара, ик хĕрарăм пĕр кăмака умĕн хуçи нихçан та пулайман пуль. Турчкапа ухватне те, çатма аврине те иккĕн пĕр харăс тытаймастăн. Яшка çине те иккĕн тăвар ярасси пулать. Максим Максимович вăхăтра хăй патне куçарчĕ Анна Петровнана.Тĕрĕс турĕ. Анчах... хальхи пурнăç тытăмĕ таканари шыв пекех пăтранать те, министерствăри йĕке хŭресем те пĕлсех, те пĕлмесĕрех хăтланаççĕ: улшăну та улшăну. Нумай пулмасть-ха эпĕ ăна Вăрманкаса кайсан тĕл пултăм та, калаçуран ăнлантăм: шухăш çилĕ унăн ялаллах вĕрет. Эс яла ĕçлеме килессине пĕлнĕ те вăл санпа курса калаçас пекчĕ.

– Юрĕ, юрĕ, анне, калаçăпăр. Аттен шанчăклă зоотехникĕ мана та пулăшасса шанатăп.

– Ĕç-пуç пирки сăмах пуçарнă май, эпĕ сана çакна та систересшĕн. Куна-çĕре Тымарта ирттернĕ май ман хăлхана та тем тĕрлĕ сас-хура хумĕ пырса çапăнать. Тымарсем вĕсем, вăрман çыннисем, ытла та хăйсене майлăскерсем-çке. Халăхĕ унта мĕн авалтан таçти муртан пухăннăскер, хăйсен тахçанхи тымарне татса вăрман уçланкинче çĕнĕ тымар янă халăх. Пирнешкел мар. Пурнăç тымарĕ пирĕнни пек тарăн кайса тĕрекленсе çитеймен. Пирĕн çума çĕнĕ тымар яраймарĕç. Кацча кайнă хĕр юратман упăшки çумĕнче ĕмĕрлĕх çирĕпленсе тымарланайман майлах ку. «Шурăмпуçпе» пĕрлешсен эпир вĕсен тымарне мĕн чухлĕ шăварман пуль? Пĕрлешŭ çилĕмĕ пурпĕрех хытса çитмерĕ. Авă халĕ çав çилĕм пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех шăтăртатса хăпăнасшăн. Пирĕнтен уйрăлас текенсен ушкăнĕн пăшăлти пăттийĕ вĕреме кĕресшĕн. Пăтă хуранĕ айне вут хуракансем йышланаççĕ. Вутти вĕсен пур – кут хыçĕнчех. Çав инкек-синкек сана та пăтăрмах тăвассăн туйăнать, ачам. Ку ĕнтĕ – усал

сăмах. Сăмахĕ-юмахĕ тĕп пултăр. Атя часрах пӳрте. Сĕтел хушшине. Пакăлтатса выçтарса вĕлереп сана.

Амăшĕ апат хатĕрленĕ хыççăн ывăлне хыçлă пукан сĕнсе пачĕ те, шӳтлекелерех:

– Аçун халĕ çĕнĕ сĕтел. Николай Кириллович пире хваттер туса панă хыççăн вăл хула сĕтелĕн хуçи пулĕ. Эпĕ те ĕнтĕ йĕппи хыççăнах унталла йăкăштатăп. Сан пулмалла пулать сĕтел пуçĕ, – терĕ. – Пĕлетĕн, пуканĕ – аслаçун. Аçу та ун çинче кил тĕрекне тытса пычĕ. Эс те çирĕп лар.

Петĕр кĕреке сĕтелĕ умне лариччен тур кĕтесси еннелле пăхса сăх сăхрĕ, вара амăшне тав сăмахĕ каларĕ. Кил сĕтелĕ хушшинче кил сăмах-юмахĕ чылайччен тăсăлчĕ.

6

Çил-тăвăллă, аслатиллĕ пăрлă çумăр этемĕн кил-çурт таврашĕнчи ăпăр-тапăра пĕлĕт шывĕн юххипе анаталла юхтарса кайнине Пантелеймон Христофорович Оманов Тымарти çĕнĕ пӳрт чӳречинчен вăрахчен сăнарĕ. Çиçĕм ялтлатса илет те, Çĕлен улăхĕ самантлăх яп-янкăр куç умне тухса выртать, çӳл тӳперен хăрушла кăрслаттарсан, тавралăх тĕттĕмлĕхе куçать. Витререн тăкнă пек лӳшкекен çумăр тавралăха уçăлтарса, çĕре шăварса пĕлĕтрен юхать те юхать.

Ачаран курнă çак ӳкерчĕк, аçа çапасран пĕрмаях сехĕрленсе пурăннă Паньккăшăн халĕ типĕ тăнă çу кĕтнĕ имлĕхне антăхса кайса ĕçнĕнех туйăнать. Çак çумăра кĕтсе çăварĕ типме пуçланă хресчен çут çанталăк хăватне – Турра кăкăрĕ çине виçĕ пӳрне хурса та сăх сăхнă, ăшĕнче кĕл туса та пăхнă пуль. Паян, акă, çакă вăйлă çумăр ăна тинех çăкăрлă тăвать, хырăма тăрантарать. ыран та ирпе ирех тухăç çăмхине пуç тайтарать. Хăй мĕн шухăшлама, шухăшне хăй майлă çавăрттарма пултаракан хăйĕн çил арманне авăрма

чарса лартнăшăн Оманов ăшри тăшманне – компартине хирĕçлеме пăрахмасть, пуçне коммунистсем ирĕксĕрлесе пусса кĕртнĕ коммунизмăн ют ĕненĕвне хирĕç талпăнса çĕкленет, таса Туррăн сăваплă сăмахне чĕри çумне çывхартать.

Ăслайлăх çитейменнине пула вĕренӳре çак хăватлă вăй этеме мĕнле çавăрса илме пултарнине ăнланса çитереймесĕрех Панхристоф та, парти ĕçĕнче унашкал вуншар çул вăхăта усăсăр çунтарнă пин-пин тăм писмен те халăха пăтратнă, ăна никам пурăнса курман юмах тĕнчине ĕнентерӳллĕн утма хистенĕ, пушăпа хăваланă.

Оманов компарти райкомĕнче хăй камшăн мĕнле уссăллă ĕç тунине тарăннăн чухласа илеймесĕрех ăнсăртран сăмси умне тухса выртнă пурнăç картлашки çине ăссăрах ярса пусрĕ, Саратоври тĕн семинарийĕнче тин тăна кĕчĕ, Христос тĕнĕн алăкĕнчен хура тум тăхăнса кĕчĕ, урăх тĕнчере пурăнма пуçларĕ. Ку тĕнчере вара никам та никама пусахламасть, хĕстермест, уççăнлăх кашнийĕн ытамне валли те çителĕклех – чун хăвачĕ çитнĕ таранах.

Çиçĕм кашни ялтлатмассерен Пан Христос кăкăрĕ çине хĕрес хурса илет те «Туррăмçăм, сыхлах» тесе мăкăртатать. Явкаланчăк шывĕ кăна мар, тахçан Сăссăссăр тенĕ çĕр татăкĕ тăрăх юхакан çĕршер шыв арканнă марксизм-ленинизм карапĕн ванчăкне этемлĕх тинĕснелле хăваласа кайнăн туйăнать.

Этемлĕх тинĕсĕ халăхсен ăс-тăн хăвачĕпе пăтранать. Вăл тинĕсре чăн-чăнни, этем чунĕнчи чи витĕмлĕ ĕненӳлĕх, çут çанталăк çыхăнăвĕн вăй тымарĕлли, темле çил-тăвăла та парăнмасть, хăйĕн парăсĕпе ĕмĕрлĕх çыраннелле ишет. Тĕнче явлăмĕнчи куçа курăнман çав асамлă вăя хирĕçлекен шухăшласа кăларнă вăй, ăна çĕнтереймесĕр, майĕпенех сӳнет.

Ава, çут çанталăк вăйĕ, Турă панă вăй, чăваш пуçĕнчен те ют шухăшлава Çĕлен улăхĕ тăрăх епле хăвăртлăхпа хăвалать. Улăх та, ял урамĕ те çӳп-çапран тасалать,

халăхăн пуçĕ те панхристофсем чыхса тултарнă арпаран хăтăлать. Пушаннă кунтăка вăл, Пантелеймон иерей, Вăрманкас ен çыннисем тахçантанпа кĕтсе пурăннă Турă хăвачĕн тĕшшине ĕненекенсен ăшне варăнтарма пуçлать. Компартипе пĕрле тарнă шухăш вырăнне пачăшкă пуçĕнче Турă шухăшĕ пăтранать.

Акă, хăрушă çумăр майĕпен иртсе кайрĕ те, çӳлти Хăват çуса тасатнă Тымарта ир кӳлĕм çĕнĕ чиркӳ чанĕсен кĕмĕл кĕвви Сăр вăрманне тахçанхи ыйхăран вăратрĕ, таврари халăха хăй патне курăнман вăйпа туртрĕ.

Вун тăххăрмĕш ĕмĕр вĕçнелле çĕр чăмăрĕн çак вырăнĕнче янăрама пуçланă чун уççиллĕ сасă, çирĕммĕш ĕмĕр вĕçнелле янăраса кайнă çĕнĕ сасăпа пĕрлешрĕ. Çĕр çул ытла – пĕр ĕмĕр унăн хушши. Çапах та чансен кĕмĕл кĕввийĕ, Тымар çывăхĕнче, унăн сывлăшĕнче сыхланса юлнăскер, çĕнĕлле илтĕнчĕ. 1822 çулта никĕсленĕ Çимĕк чиркĕвĕ ватăлман, хăрман тымартан çут çанталăкăн çурхи чĕрĕ хăвачĕпе вăрман çумĕнчи Тымар ялĕнче юман калчи çунат кăларнă пек сывлăшалла туртăнчĕ.

Çĕр çинче этемлĕхе малалла тăсма çуралнă Чулхула çывăхĕнчи вырăс йăхĕнчен тухнă Мировсем ура ярса пуснă хыççăн, хăватлă юмансемпе ăмăртмалла пĕлĕтелле кармашнă чиркĕвĕн юппийĕсем те. Юман пекех виççĕр çул та, пин те виççĕр çул та сыхланса лартăр тесе Мировсем чиркӳ çурчĕн пурине те юман пĕренерен тутарнă, купаласа пĕтерсен, унăн чи çӳллĕ тăррийĕ Христоса пĕлтернĕ, ыттисем Симон, Андрей, Иоанн апостолсен ячĕпе пулнă. Мировсен йăх тымарĕ шăпах ĕнтĕ çав апостолсен ячĕпе никĕсленсе тăнă. Атăлăн сылтăм çыранĕнчи Макарьевкăра, каярахпа Чулхулара суту-илӳпе пурнăçне тăснă вĕсем. Вырăссен тĕнчипе паллă ярмăрккине аякри арабсем те Атăл тăрăх шыв юхăмне парăнтарса тăвалла хăпарнă-çке. Вĕсен хушшинче Çурçĕр Африкăри Нил юхан шывĕн улăхĕнчи Нил ятлă купца та пулнă. Макарьевкăри Мировсем те

вĕсемпе çывăхланнă. Çимĕк умĕн çуралнă пĕр ывăлне вара аякра пурăнакан, хăйпе çывăх араб ятне панă.

Ўссен Нил ашшĕсен-аслашшĕсен йăхне малалла тăснă, суту-илў енĕпе çавăрттарнă. Таврара Нил-Мил ятне илнĕскер, вăл Сăр вăрманĕ витĕр чăвашсен çĕршывне шăтарса тухнă, Сăр юхан шывне пуянлатакан вăрман юхан шывĕ çумĕнче юманлах тымар янă. Çĕлен улăхĕнчи чăвашсемпе çывăхланнă, Тымар хĕрне качча илнĕ, çемье çавăрнă, вĕсемпе пĕрлех ялта чиркў лартнă.

Аякри Нил купцан ачисем чĕннипе Тымар Нилĕ Çурçĕр Африкăна çитсе курнă, суту-илў ĕçне майлаштарнă. Унта кăнтăр хĕвелĕпе хĕртĕнсе савăннă хушăра вăл çакна пĕлнĕ. Вăтаçĕр тинĕсне юхса кĕрекен Нил тĕнчери юхан шывсенчен чи вăрăмми иккен. Мĕн чухлĕ халăха пурнăç сĕткенĕ парса тăрать. Ахальтен ачисене çав ятпа хунă-и арабсем? Ашшĕн тусĕ араб купци те, вăл хăй те вырăс купци – Нил. Мĕншĕн парас мар-ха ывăлсен ачисене те çав ята? Çак вăрăм юхан шыв пек вăрăма тăсăлтăр пирĕн йăх та, тĕнчери чаплă йăх пултăр тесе хăпартланнă вăл. Аслашшĕн чаплă ĕмĕтне тăсас тесех пуль вара Мировсен икĕ ывăлĕ те ачисене Нил ятпа ўстернĕ. Пĕр Нилĕ, Титăн ашшĕ, кулак ячĕпе Çĕпĕрте çĕре кĕнĕ. Аполлонăн, Раççей офицерĕ, ют çĕршыва лекнĕ. Шурă гвардеецсем совет çĕршывĕн тăшманĕсем шутланнă пирки, Титпа Аполлон Ниловичсем пĕр-пĕринпе çыхăну часах тытайман.

Ватă Нилăн мăнукĕ мăн аслашшĕсен тивĕçне çухатман. Аполлон Нилович, ашшĕн тăван çĕршывне курма тахçантанпах ĕмĕтленнĕскер, тăванлăх асăмне чĕртмех шут тытнă, ĕмĕрсем хушши тăсăлакан тымарсен çумĕнче парне турĕ. Нил купца лартнă йывăç чиркў çумĕнче çапла кирпĕчрен купаланă çĕнĕ çурт ўссе ларчĕ. Ял администрацийĕ ун валли çĕр хĕрхенмерĕ. Колхоз председателĕ Волков чиркў складне пушатса, тасатса пачĕ. Вăл ĕнтĕ çĕнĕ чиркў аллине куçрĕ.

Ялти чи çӳллĕ, карап евĕрлĕ чул çурт, ылтăн тĕслĕ мăкăр çи виттиллĕ, хĕреслĕ пуçĕсемпе таврана çутăлтарса, тинĕс пек хумханакан пурнăçран Çӳлти Патшалăха сире Чиркӳ анчах сыхă илсе çитерме пултарнине ĕнентерсе, тымарсене хĕпĕртеттерсе, мăнаçлăн ларать.

Мировсен çуралнă ялĕнче те Çимĕк-Троица чиркĕвĕ вырăссене Атăла хуса кĕртсе тĕне ĕнентернĕренпех ĕçленĕ. Çавăнпа вĕсем те çĕнĕ çĕрти чиркĕве Троица ятнех парас тенĕ.

Хăватлă темле-темле ăслă чăн е суя шухăша та халăх хушшине сармашкăн çăмăл мар. Христос тĕнĕ те халăхсен ăшне пит йывăррăн варăнса пынă. Ăна чăнласах ĕнентерме мĕн кăна шухăшласа кăларман пуль турă çыннисем. Акă, çĕнĕ ĕнентерӳ тăрăх, Иисус Христос, турă çинчен вĕрентекенсенчен, шанчăклă вун икĕ апостолран пĕри, Иуда текенни, хăйне тăшмансене сутса янă хыççăн, пăталанă хĕрес çинче асапланса чунне Пĕлĕте парас умĕн, мăнкун хыççăнхи хĕрĕхмĕш кунне вĕренекенĕсемпе сыв пуллашнă. Халĕ эпĕ çĕр çинче халăха ырă туса çитертĕм, вилĕме çĕнтерсе, Çӳле вĕçсе каятăп, этем тĕнчине те пĕрле илетĕп, мана ĕненекен кашни çын чунне Атте турă çумне çывхартăп, çветтуй сывлăш пурне те пулăшĕ. Çав сывлăшпа эпĕ чĕрĕлсе çĕр çине анăп, тесе шантарса хăварнă.

Иисус чĕрĕлсе тăнă хыççăн аллăмĕш кунне ирхи кĕлле пухăннă Христос вĕренекенĕсене çветтуй сывлăш кĕрет, вара вĕсем ку таранччен пĕлмен тĕрлĕ чĕлхепе калаçма пуçлаççĕ, Христос тĕнне тĕнчене сараççĕ. Çакăн ячĕпе троица уявĕ ирттерме пуçланă, мĕншĕн тесен çветтуй сывлăша виçĕ сăнлă пĕр Турăран килет: Турă ашшĕ тĕнчене пултарнă, Турă ывăлĕ Христос çынсене шуйттанран хăтарать, Çветтуй сывлăш ĕненекенсен чунне тасатать. Çавăнпа Таса виç йĕкрешлĕх кунне христиансен Чиркĕвĕ уçăлнă кун теççĕ. Мухтав Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех. Аминь, тесе кĕл тăваççĕ.

Ытти чăвашсемпе пĕрле тымарсем те, авруйсемпе хурашурсем те троицăна-çимĕке хăйĕн йăли-йĕркине пăхăнса, ака-суха ĕçĕсем туса пĕтернĕ хыççăн, мĕнпур çут çанталăк ешернĕ вăхăтра, мăнкун иртсен çичĕ эрнерен виçĕ кунччен уянă. Хĕрсем вăрманта хурăнсем тавра карталанса юрланă, пĕрне-пĕри чуп туса ырă суннă. Пӳрт-çурта кашни кил симĕс йывăç тураттисемпе илемлетнĕ. Ваттисене тăван-пĕтенĕпе пуçтарăнса асăннă, юрласа-ташласа савăннă. Леш тĕнчене уйрăлса кайнисемпе калаçма сăваплă вырăна – масар çине кайнă.Чиркӳ пур чухне – унта пухăннă. Чиркӳ хупăннă хыççăн халăх савăклăхĕ майĕпенех куç умĕнчен çухалса, коммунизм çути хыçне – тĕттĕмлĕхе пытаннă. Уççăнлăх саманин хĕвелĕ çĕршыв çийĕн ăшă пайăркисене сапса ярсан, халăх пит-куçĕ те ăшăнса кайрĕ, тутийĕ те кулса ячĕ: «Тавах Турра!»

Авалхи чиркӳ чаплăн уçăлнă кун Тымар ялĕн пĕрлĕхĕ еплерех кăмăл-туйăмлă пулнине никам та пĕлекен çук, ун пирки никам та хут çине çырса хăварман. Вăрçăччен чиркӳ чанĕсемпе хĕресĕсене пĕр шелсĕр туртса антарнине тата тăррисене пăснине çеç астăвакансем пурăнаççĕ. Вĕсен хушшинче тымарсен аякри йăхташĕсем те пур-ха. Вĕсенчен пĕри, тăхăр вунналла çывхаракан Марья кинемей, Чулхуларан хаклăран та хаклă парнепе килнĕ. Тымар чиркĕвĕн юлашки пачăшкин, Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ Михаил Нилович Мировăн, Михала аттен пулăшаканĕ, кил тыткăçи, юратнă арăмĕ ватă çулĕсенче те пĕкĕрĕлмен, пуçне тӳрĕ тытакан, Васка Иллипе пĕр тăван çирĕп хĕрарăм.

Кăçалхи çĕртме уйăхĕн малтанхи кунне, çимĕк уявне, Виç апостаçлă Таса Турă чиркӳ уçма хĕвелпе пĕрле уяр кун илсе килчĕ пуль. Тавралăха ирех ăшă çавăрса илнĕ. Чиркӳ лапамĕнче – виçĕ ял халăхĕ. Чăвашла-майралла капăр тумланнă хĕрсен аллинче лантăш, сирень, çĕлен куçĕ чечекĕсем. Авалхи йăлапа çуркуннене ăсатма тата чиркӳ уçнă çĕре хутшăнма ватти-вĕтти те пухăннă.

Чиркӳ вăл – Турăшăн лартнă çурт, пур çынна та ытларах илтекен, этем чунне канлĕх паракан, таса чунран ыйтса кĕлĕ тумалли, çылăх каçарттармалли хисеплĕ таса вырăн.

Асфальт сарнă такăр çулпа çи виттийĕ çине йăлтăркка хунар лартнă милици машини, хура мăнтăр лимузинпа Чулхула «Атăлĕ» кĕрлеттерсе çитрĕç. Мăнтăр иномаркăран вăр-вар арçын сиксе тухрĕ те сылтăм енчи хыçалти алăкне яриех уçрĕ. Халăх умне йăлтăрккаллă илемлетнĕ, сарлака çанăллă вăрăм хура тумлă, икĕ еннелле усăнса тăракан ал шăллиллĕ, варрине хĕрес ӳкернĕ тăваткал шурă калпак тăхăннă, майĕнчен капăр мăн çаврака çакса янă ватă тухрĕ, кăкăрĕ çине хĕрес хурса пурне те пуç тайрĕ,Турă ячĕпе сывлăх сунчĕ. Хыçалти машинăран тухнă Крутов унпа юнашар утрĕ. Вĕсене кĕл тумалли ылтăнланă тум тăхăннă Пан Христос – Пантелей иерей кĕтсе илчĕ. Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава çумне малтантарах яла килнĕ Аполлон Нилович Мировпа мăшăрĕ Елиана, Тарăнвар чиркĕвĕн игуменĕ пулнă Мирова тата хăнасен ушкăнĕ хутшăнчĕç.

Варнава митрополит, чиркӳ çуртне Турă шывĕпе сирпĕтнĕ хыççăн, хулăн сассипе уçăмлăн калаçрĕ:

– Халăха вуншар çул хушши хĕсĕрлесе Турăран тата Чиркӳрен уйăрса нушалантарчĕç. Совет влаçĕ çулĕсенче Чăваш çĕршывĕнче тăват çĕре яхăн чиркӳпе мăнастире аркатнă, çав шутра – сирĕнне те. Чун ĕненĕвне çĕнетессишĕн Турă панă пилпе усă курса эпир вĕсенчен çуррине юсама май килтертĕмĕр, çĕнĕрен çĕр аллă чиркӳ уçрăмăр. Акă паян Тымарта тепĕр храм ĕненекенсене йышăнма пуçларĕ. Уншăн тавах Турра.

Ĕлĕк аркатнă сăваплă вырăнсене таса вăй кĕртессишĕн чунне парса тăрăшакансем йышланса пынишĕн эпир хĕпĕртетпĕр. Вĕсен хушшинче сирĕн ял тымарĕнчен шăтса ӳснĕ Миров господин та пур. Вăл авалхи грексен халапĕнчи турăсен туррин Зевсăн усалтĕселпе кĕрешсе этеме ырă тунă асамлă Аполлон ывăлĕпаттăрĕ пек туйăнать. Аполлон Нилович та Турă умĕнче

халăхшăн паттăрла ĕç турĕ, сире чиркӳ çурчĕ лартса парса кăна мар, пирĕн епархине нумай пулăшрĕ. Çав пархатарлă ĕçшĕн ăна Сăваплă Синод Сергий Родонежский Таса аттен орденĕпе наградăланă. Турă умĕнче мухтав илнĕ Миров господина эпĕ ĕненекенсен умĕнче çав ырăлăх паллине паратăп.

Таса чиркӳ яланах çын пултарулăхне пилленĕ. Пултарулăх вăл вăхăтлăх тата ĕмĕрлĕх пулăма, çĕрпе пĕлĕт çинчине пĕрлештерет, вăл çынсене ырăлăх, юрату парать. Сăваплă вăй, ĕненӳ никĕсĕ халăх пурнăçĕнче çирĕпленсе пырать. Турă каланине асра тытăр: «Ĕмĕр вĕçленичченех эпĕ сирĕнпеле кашни кунах пĕрле. Манăн саккунсене упрăр, вĕсене пурнăçлăр, вара çĕр çинче лăпкă пурăнма пуçлăр».

Пуп таврашĕ турăшсемпе, хĕрессемпе тата ĕненекенсем хисеплекен ытти япаласемпе те усă курать. Турă ӳкерчĕкĕсем вĕсем – турăсемех, тесе ĕненсе пурăнаççĕ хăш-пĕр çынсем. Турăшсене пуç çапасси христианствăра иккĕмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче пуçланса кайнă, чиркӳ кĕллинче, христиансен кулленхи пурнăç йăлине кĕрсе çирĕпленнĕ. Христос Туррăн, Мария тур амăшĕн сăнне этемле ӳкерсе ĕненекенсен хушшине сарнă. Ĕненекен халăх чун-чĕрепех турăша пуç çапать, унран пулăшу ыйтать, унпа калаçса хăйне хăй лăплантарать.

Анчах халăхсем хушшинче турăшсене хисеплеменни те палăрнă. Акă, Греци патшалăхĕнче темиçе пин çул каяллах, Феофил текен патша вăхăтĕнче, сăваплă турăшсене хирĕç усал ĕç пуçарнă пулнă. Турăшсене хисеплекенсене асаплантарнă, тĕрмене хупнă, вĕлернĕ, турăшĕсене храмсенчен-чиркӳсенчен кăларса пăрахса çунтарма пуçланă. Çапла пĕр хĕрарăмăн Турă амăшĕн сăвап тăвакан турăш упраннă. Çак тĕлĕнмелле асамлă таса сăна вăл хăй çумне йышăннă, хăйĕн ирĕкĕ ун çинче, унăн вăйĕнче кăна тесе ĕненнĕ.

Турăша хирĕçлекенсем çитеççĕ те пĕррехинче ун патне, сăнарлă турăша çунтарса яма хушаççĕ, ун пек

тумасан, вĕлерессипе хăратаççĕ. Хĕрарăм килĕшмест. Пусахлакансенчен пĕри тытать те турăша хĕçĕпе çурмаран касать. Сасартăк таса чун чĕрĕлсе тăрать, унран чĕрĕ ўтрен тухнă пек юн пĕрĕхме пуçлать. Турă амăшĕ умĕнче ирсĕр ĕç тăвакансем тухса çухалаççĕ, ыран каллех таврăнатпăр тесе кил хуçине хăратса хăвараççĕ. Хĕрарăм аманнă таса сăн умне чĕркуçленсе ларать, куççуль юхтара-юхтара кĕл тăвать. Унтан вара вăл турăша майласа пуçтарать те тинĕс çыранне тухса калать: «Канлĕ кун-çул паракан, ырă кăмăл парни тăвакан Хĕр-Патшаçăм! Эсĕ, Туррăн Таса Амăшĕ, Турă пултарнă этемрен усал сывлăшсене хăваласа кăларма панă хăватăм, эсĕ çеç мана çылăхлă усалсенчен, хăвăн таса сăнунтан мăшкăллакансенчен хăтарма пултаратăн». Çак сăмахсемпе пĕрле хĕрарăм турăша хуллен тинĕсе янă, анчах та... таса сăн шыва ўкмен иккен, этем сăнарне куçса чĕрĕлсе тăнă, хумсем çинче ишсе çухалнă.

Нумай-нумай çул иртнĕ хыççăн, пĕр лăпкă уйăхлă каç Ивер тăвĕнчи Афон мăнастир манахĕсем тинĕсрен пĕлĕте çити çĕкленнĕ вут çулăмне асăрханă. Вĕсем кĕл тăва-тăва çырана тухнă та пушшех тĕлĕннĕ, çулăм юпи Таса Турă Амăшĕн сăнĕ çинчен пĕлĕтелле çĕкленет-мĕн. Унти ватă Гавриилăна вăл çапла каланă пать: «Эпĕ çак пурнăçра кăна мар, малашне те сире хўтĕлекенĕм пулатăп. Турăран хăраса ырă ĕçпе пурăнакан Афон манахĕсем манăн ывăлăн тата пурне те тытса тăракан Туррăн ырă кăмăлне ĕмĕтленсе пурăнччăр. Акă эпĕ унран ыйтнă тивлетлĕ хăват çитрĕ: манăн сăна тата ман мухтавăм тăракан вырăна курма пăрахичченех ывăлăм хăвăра мĕнле ырăлăх, пысăк шанăç парса тăни сирĕн чунра иксĕлмĕ». Çакăн хыççăн вара чăн Таса Турă амăшĕн мухтавĕ ячĕпе мăнастир умне храм-чиркў туса лартнă, унта тĕлĕнмелле хăват тăвакан унăн турăшне вырнаçтарнă. Çавăнтанпах ĕнтĕ мухтавлă вырăн ячĕпе ăна Турă Амăшĕн Ивер турăшĕ тата Хапха уçакан теççĕ. «Ырă Патшанăн ырă Амăшĕ, рай алăкне

уçаканăмăр, турра ĕненекенсен чунне уçăлтарса савăн» тесе юрласа кĕл тăваççĕ.

Христиан тĕнĕнче çирĕпленнĕ çак сăмах юмах маррине куç умĕнче кăтартнăн, акă Тымар чиркĕвĕнче те Таса Турă Амăшĕн Ивер турăшĕ çĕнелнĕ сăнпа кĕтсе илчĕ, тĕлĕнмелле хăватпа тыткăнларĕ турра ĕненекенсене те, хăна шутĕнчи район пуçлăхĕсене те. Пурте ун умĕнче пуç тайса сăх сăхрĕç, вăл шутра – Ленин антихристăн турра хирĕç кĕрешекен шанчăклă коммунисчĕ пулнă Крутов та. Максим Максимович, пуçласа чиркӳре пулаканскер, турă çурчĕн тыткăнлăхĕпе райком çурчĕн уççăнлăхне ăшра танлаштарса илчĕ. Райком çурчĕ вĕсемшĕн вăхăтлăх кăна пулнине, чиркӳ хăй патне курăнман вăйпа туртакан, халăхшăн ĕмĕрлĕх таса вырăн пулнине туйрĕ, Турăпа унăн Амăшĕ умĕнче урăхла кăмăл çуратрĕ. Ачаран хăнăхнă Ленин сăнĕ уншăн ӳнерçĕн пултарулăх япали пек туйăннă пулсан, çул пуçăннинчен те витĕртерех, çунтарарах, вичкĕнрех куçлă Таса Мария самантрах ăшра вăратнă ăнланайман кăмăл вăйĕ пĕтĕм кĕлеткене вĕрилентерсе ячĕ. Тĕлĕнмелле сывлăш чуна уçăлтарчĕ. Ленин сăнарĕ халăх чунĕнчен майĕпен тухса пырать пулсан, Христос сăнарĕ хăй тĕллĕнех халăх ăш-чикĕнче ĕмĕрлĕх таса вырăн тупать иккен. Çав вăй вăл этемпе пĕрлех çуралнă-ши? Тĕнчере никам та пĕлмест пуль ăна.

Вăрçăччен Тымар чиркӳне аркатнă ăссăр Каргинсен ячĕ халăхра тĕксĕмленсе юлать. Авă, Семен Кирилловичăн ывăлĕ те, Моисей Семенович, кăкăрĕ çине пӳрнисемпе хĕрес палли хурса тăрать. Ашшĕне, тен, чиркӳ хĕресĕсемпе чанĕсене туртса антарнăшăнах вĕлернĕ, тен, урăххишĕн тавăрнă. Сас-хура çук. Ăна асăнса лартнă хĕрлĕ çăлтăрлă палăка та такамсем аркатса тĕп тунă. Унран инçех мар, совет влаçĕ пĕтес умĕн КПСС райкомне ертсе пынă Семен Ильич Быстров та, Марья мăн аккăшĕпе ăмăртмалла тенĕ пек васкаса сăх сăхать. Районта атеизм пропаганди хавшанăшăн,

вăрттăн ачисене чиркӳре шыва кĕртнĕшĕн, венчете тăнăшăн миçе коммуниста ятламан-ши, выговор паманши, партирен кăларман-ши вăл? Халĕ вăл та, Шупашкарта суту-илӳ ĕçĕпе пуйса кайнă Быстров господин, Сăша господинĕпе Аполлон Мировпа епле мирлĕн йăпăлтатса пурăнать.

Мĕнле майпа сыхласа хăварма пултарнă-ха Мария игумен, упăшкине арестленĕ хыççăн чиркӳре тăлăх тăрса юлсан, Таса Турă Амăшĕн Ивер турăшне? Ун пирки вăл никама та каламан, каламасть те. Упăшкине, Михала иерея советсем тĕп тусан, Чулхулана тăванĕсем патне куçса кайнă чухне, вăл турăша пĕрле илнĕ, ку таранччěнех ăна кĕл тунă, пуç çапнă, упраса хăварнă, тăван вырăннех илсе çитернĕ, çĕнĕ чиркӳ хăватне çĕклемешкĕн Тымар прихутне парне тунă.

Çавăншăн ăна Варнава митрополит Турă, епархи ячĕпе тав турĕ, кунашкал турăш Раççейпе те иккĕ çеç, пĕри – сирĕн чунăрсене тасатса тăраканĕ, сире инкексинкекрен сыхлаканĕ, унпа мухтанăр, унпа çывăх пулăр, ăна хăвăрăн таса Мария пекех упрăр, терĕ.

Çимĕк эрни ĕçре малалла тăсăлчĕ. Халăх утта тухрĕ.

Пантелей атте мăшăрĕпе-матушкăпа Марья игуменпа пĕрле чиркӳ кĕллисемпе вăхăта ирттерчĕ. Пурăнма вĕсем валли чиркӳ картишĕнчех çăка пĕренерен пураса ултă кĕтеслĕ пӳрт, çывăхрах мунча, гараж лартса панă. Миров господин-хăйматлăх парнипе, таврара çук автомашинăпа, арăмĕ йăлтăртаттарса çӳрет.

Пантелеймон Христофорович хăйне Турă пăрахса пачĕ пуль ку телее тесе шухăшла-шухăшла тĕлĕнет. Çамрăк чух Шупашкарта хăйĕнчен Пан Христос тесе кулнăшăн Атăла сикме хатĕрскер, халĕ хăйне Пан Христос текен çынна тытса ыталама хатĕр. Хăй ăмсанакан Крутов та, район хуçи пулсассăн та, ăна чиркӳ уçнă кун Варнава митрополит умĕнче Пантелей атте тесе

чённишён мухтаннипе, пёлётри Турă патне çитеслех чунхавалне çёклентерчё.

Крутов вара шухăшла-шухăшла тăнран кайрё. КПСС райкомё пур чухне халăхпа ёçлемелли çирёп йёркеччё, райкомра та, ял-поселокра та уншăн хуравлă çынсем йышлăччё. Вёсем пурте Мускавран, Шупашкартан панă кăтартусене, сёнўсемпе хушусене çирёп пурнăçласа пыма тăрăшнă. Ёçе хавшатсан, вёсене парти пушши самаях çатлаттарнă. Максим Максимович çав çулсенче идеологи ёçёшён пурнăçне, вăй-халне шеллемен. Пионер, комсомол, парти организацийёсем пурте ачаран пуçласа ватă çын таранах коммунизм тăваканăн ăс-тăнне тем тёрлё мелпе те çирёплетме çине тăнă, унăн тёп шухăшён çёнё пурнăç йёркишён, пархатарлăхёшён çине тăнă, суккăр çын çут çанталăк çуттине курасшăн ăнтăлнă пекех, малашлăха пăхса çунатланнă, пурне те компарти вёрентёвён йёркине тытса пыма хистенё. Малашлăхё çеç пуринчен те тарса, тарса пынă.

Халё унăн район администрацийёнче унашкал çирёп вăй çук. Штатра та, культура пайёсёр пуçне, идеолог çук, мёншён тесен патшалăхăн хăйён тёп идеологийё çук, Мускаври паврашу кăна. Чăн идеологи çук пушăлăхра районти виçё чиркў халăх чун-чёрине ăшăтса тасатать, Аслă Турă хăвачёпе хавхалантарать, хăй патне йыхравласа чан çапать. Халăхăн çёнелнё ёненёвё темле шухăш-шухăшлавран та вăйлăрах иккен. Марксизм-ленинизм вырăнне урăх вăйлă шухăшлав-ёненў хăçан çуралассине Турă çеç пёлет пуль тесе тёв турё. Президент администрацийё, Министрсен кабинечё унран идеологи шайё пирки мар, аш-какайпа сёт, промышленность продукцийё нумайрах ыйтать.

7

Аталаннă такăш çёршывра та пуç пулса тăракан тёп шухăш вăйё политикăри темле асар-писер çанталăкра та

тӗппипе çунса кӗлленмест, пылчăкра çăрăлса путмасть. Историре пулман пуль хăйне хăй путаракан идеологи. Мӗншӗн-ха марксизм-ленинизм пат! хуçăлса аннă йывăç туратти пек тӗпсӗр шăтăка чăмрӗ? Совет Союзӗ çиййӗн кăвак хуппи уçăлсан, никам арканми Союз ваклансан, нумай мӗльюнлă партие ертсе пыракансем хăйсен пурнăç кӗнекисене-библийӗсене-евангелийӗсене – Маркс, Энгельс, Ленин çырнисен тачка пуххисене урамри çӳп-çап карçинккине тухса пăрахрӗç, темиçе пусшăн макулатурăна пачӗç, вучахра çунтара-çунтара кӗллентерчӗç. Хăйсем, ума татăлса аннă ирӗк пурнăçра пулас коммунизм пурнăçӗ çинчен мансах, тупăшлăрах та, майлăрах-шайлăрах та хăватлăрах ӗç вырăнӗсене кӗрсе ларчӗç. Коммунизм вăл идеологи мар – гражданла тӗн тенине ăнланса-ши? Пулӗ, унашкал шухăшлакан ăслайсем те çук мар. Вӗсем, хăйсен пурнăç карьеринче капитализм вăл тӗнчери йăшса пыракан йӗрке тесе хăлаçаннă çӗртех, кут айӗнчи ырăлăх хăйăр пек юхма тытăнсан, çав капитализмăн «хăрăк» тураттинченех ярса илчӗç ултавлă аллисемпе, çиййӗнчех хăйсене пурнăç телейӗ панă социализм-коммунизм тӗп шухăшне хирӗç çаптарма тытăнчӗç.

Тӗслӗхшӗн Крутов аякка каймасть. Тусӗ, Тымар ачи Быстров, ӗнер кăна-ха Компартин Вăрманкасри пин çурлă çарне «Малалла – коммунизм патне!» тесе çырнă хӗрлӗ ялав айӗнче хавхалантарса ертсе пыраканскер, республикăри тӗн тытăмӗн пуçӗнчи Аслă пуппа юнашар сăх сăхса, турра пуç çапса тăчӗ. Вăл та, Ельцин Компартие указпа та тимӗр указкăпа çапса хуçнă пек пӗтерсе хунă хыççăн, ӗç вырăнӗсӗр тăрса юлнă хамăр Чăваш енри вуншар аслă партократ пекех, çухалса каймарӗ, пуçӗнчи ку таранччěнхи вӗрентӳ ылтăнне силлесе кăларса пăрахрӗ те, демократсен пушă лăппинчен юхакан пăх шывне ӗçсе урăлчӗ. Çӗнӗ влаç кантурӗсене, тупăшлă вырăнсене шăтăр-шăтăр кӗрсе вырнаçнă экс-коммунистсенчен, хамелеонсенчен мӗнрен кая вăл, мӗншӗн ылтăн

чăмăрккисĕр тăрса юлас-ха унăн та. Пĕлĕтре вĕçекен хăлатăнни пек çивĕч куçĕ ăçта мĕн чаплăраххине тӳрех тĕллерĕ, шыраса тупрĕ. «Чăвашпотребсоюзра» ăшă, тупăшлă вырăнта пуйса кайрĕ.

– Ухмах пулнă эпир малтан, тусăм, – терĕ вăл Крутова пĕррехинче Шупашкарта тĕл пулсан. – Тĕрĕссипе пире çӳлтен, Мускавран ухмахлантарнă, роботсем пек туса янă. Эпир хамăр «турăсем» мĕн хушнине ним пăркаланмасăр, тĕп-тĕрĕс туса пынă, хамăр валли те, халăх валли те телей сачĕ ӳстереймен. Эпĕ халĕ тин хам тĕнчене мĕншĕн çуралнине, çут тĕнчере мĕнле çутăлса пурăнмаллине туйса илтĕм. Пултар, ăнтар кăна – саншăн пурнăç çулĕ уçă, тап-такăр. Нимле коммунизм шухăшлавĕ те, ĕмĕтленĕвĕ те кирлĕ мар. Ман халĕ хам алăра виçĕ мăн ресторан, «Васка» ятлă магазинсем хулипе, Шупашкар çывăхĕнче сысна, ĕне выльăх комплексĕсем пур. Канма кăнтăрти Канар утравне каятпăр. Тит Миловпа ăмăртатпăр халĕ, совет влаçĕ вăхăтĕнчи пилĕк çуллăха вăхăтчен тултарассишĕн мар, кам ытларах ăнтарасси пирки, – тесе çуркуннехи лăпкă аслатиллĕн кулса ячĕ, хăнана чĕнчĕ.

Ахальтен мухтанмасть иккен Васка Иллин вăр-вар ачи. Икĕ хутлă тăпăлкка çурта вырнаçнă «Васка» ресторан Максим Максимовича тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Мускавра, Чулхулара тата ют патшалăхсенче те курманччĕ-ха вăл кунашкаллине. Хамăрăн тĕп хуларах пур иккен çын кăмăлне тӳпене çитиччен çĕклекен тутлăхлă вырăнсем.

Семен Ильич сĕтел хушшинче те чарăнмасăрах мухтанчĕ:

– Мускавран таврăнни те темиçе кун çеç-ха. Пĕлетĕн-и ăçта лекрĕм эп?

– Эп ăçтан пĕлеп? Вăрманкасрах тăрна пек вĕçеттĕнччĕ те, хамăр патри Тăрна кӳллинче шыв айĕпе иксĕмĕр ишсе тăрна тытасшăн аташнине те манман.

– Вăт-вăт, – урисемпе тăпăртатса илчĕ Быстров. – Ун чухне тытасси пулмарĕ çав капăр кайăка, кăнтăралла

вĕçтерсе тартрăмăр. Анчах та эпĕ ăна тытрăм-тытрăмах. Ахаллине те мар – ылтăннине.

– Ăçта?

– Мускавра.

– Чăнах-и? Мĕнле майпа? Зоопаркра е халăх çитĕнĕвĕсен выставкинче?

Çав самантрах сĕтел çине вăрăм майлă, çӳллĕ тăрна сăмсиллĕ, хаклă йышши кĕленчерен тунă, тавралла ылтăн тĕслĕ тăрнасем ӳкернĕ графин пырса лартрĕç.

– Акă вăл – манăн ылтăн тăрнаçăм, – кăмăлĕ тулса тăкăннипе сăн-питне улăштарчĕ Быстров. – Ай нумай хатĕрленмелле пулчĕ пирĕн ăна вăрăм уринчен çулса илессишĕн. Ăнлантарам. Ресторан ĕçне аталантарассишĕн тăрăшнăшăн панă наци награди, çакă, «Ылтăн тăрна», аллăма хăех кĕчĕ. Раççейри ăмăртнă пине яхăн ресторан хушшинче çĕнтерекенсем эпир вун саккăрăн пултăмăр. Çĕршыври чи чаплă ресторансенчен пĕринче хăналатăп сана, тăванăм, Миловăн Вăрманкасри «Салам» хупахĕнчи пек шыв хушнă шӳрпепе мар. Аса ил-ха ăна çинĕ хыççăн шăлавар пиçиххине çыхмасăр мĕн вăхăт нушаланса çӳренине иксĕмĕр?

– Çур кун ĕçлейменччĕ, хах-хах.

– Итле, кунта ман пата канма, апатланма тĕп хулари пĕтĕм чаплă çын çӳрет. Мускав хăнисем те тухма пĕлмеççĕ. Эсĕ те паян, Вăрманкас патши, вĕсемпе тан, чи чаплă хăна. Францирен ятарласа илсе килнĕ «Лувр» коньяка «Ылтăн тăрна» хырăмĕнчен ярса ĕçер те, алла кашăк-вилка тытар та... Апачĕ тутлă пултăр. Ак çакă «Тропика» салатран пуçлар. Мангоран, авокадăран, тигр креветкинчен хатĕрленĕскер. Ман юратнă закуска.

Апачĕ чăнах та ĕнтĕ мухтамаллиех. Салачĕ Максим Максимовичăн çăвар тутине уççах ячĕ.

– Эп мĕн-мĕн кăмăлланине пĕлеççĕ вĕсем, – йăлкăшрĕ ресторан хуçи. – Патшалла, чăх шӳрпипе пĕçернĕ пулă яшки çиер-ха. Унта, акă, хĕрлĕ вăлчапа хатĕрленĕ салми те кашăк тулли явăнать.

Крутовăн кăркка ашĕ çименни нумай пулатчĕ. Ăна вăл алла тытсанах, Быстров кăмăллăн каларĕ:

– Сан валли унта ăшаланă виçĕ сысна çурипе тĕтĕмленĕ пилĕк кăркка тата тем те пĕр хатĕрлесе хунă. Хамăр ял кӳрши Маруç та ас тивсе пăхтăр Васка Çимунĕн апатне. Аякран туянман, çынăнне вăрламан. Йăлтах хамăн фермăсенчен. Тепрехинче хур-кăвакал илсе пырап. Атту эс, честнăй коммунист, таса патша, карчăккуна шĕв яшкапа та уйранпа хупăллă умма çитерсе начарлатса яма пултаран. Акă, страус та сĕтел варрине килсе выртрĕ. Африкăран илсе килнĕччĕ те, хамăрах ӳстеретпĕр. Куна валли вара – урăх эрех... Нефть королĕсем ĕçекенни.

Сăмах-юмах хĕрсех пычĕ.

– Ылтăн тăрна пирки эп таçта вуланă пекчĕ. Ăçтине ниепле те аса илейместĕп. Чĕлхе çинчех явăнать, – терĕ апат тăхтавĕнче Крутов.

– Тепрер ярсан, куçран-пуçран сиксе тухать, атя, пушатар, – тесе аллине черкке еннелле тăснă май, Быстров ăна çиччас пулăшрĕ:

– Гиляровский çырнă вĕт ун çинчен. Мускав усламçисем «Славян пасарĕ» текен чаплĕ хупаха пуçтарăнма юратнă, тет. Унта вĕсем ĕçнĕ-çинĕ, пĕр-пĕрин хушшинче суту-илӳ, мул килĕшĕвĕ тунă. Коньякне ак çакăн пек ылтăн тăрналлă хаклă йышши кĕленче савăтпа илсе пырса панă вĕсене сĕтел çине. Хăватлă, хаклă коньякĕшĕн хăшĕ тӳленĕ, çавна асăнмалăх ылтăн тăрнана парнеленĕ. Кам ытларах илме пултарнă тăрналлă кĕленче савăта, çавă чи пуян та çавăрттаруçă усламçă шутланнă. Ĕлĕкхи йăлана, ава, паянхи вырăс усламçисем хăйсен пурнăç шайĕн паллийĕ – конкурс парнийĕ туса хунă. Халăхра ахальтен каламан пуль çав йăвари кăсăя пĕлĕтри тăрнаран çывăхрах тесе.

– Тĕп-тĕрĕс, Çемен, – тесе алă пачĕ тусне Макçăм. – Çӳлте вĕçекен телей кайăкне пурте тытаймасть. Эсĕ – пултартăн. Маттур. Ман та вĕçме вăхăт çитрĕ. Тав сана пуриншĕн те. Вĕç. Хӳрӳне çеç никама та ан тыттар.

Быстров кула-кулах тавăрса каларĕ:

– Ăшунта эс мана хамăрăн тĕп идеала-шухăша улăштарнăшăн ятлатăн ĕнтĕ, анчах хăв та çулна улăштартăн.

– Э-э, ку енĕпе тăхта эс. Партипе пĕрлех эп шывпа юхса каймарăм, Çемен, халăх куçĕнчен çухалмарăм. Халăх ыйтнипе, халăх суйланипех халăх тарçи пулса юлтăм.

– Кам пулăшнипе? Хăвăн сумупа-и? Çу-ук. Чăваш патши пулăшнипе. Ăна сан пирки кам мĕнле шăрса кăтартнипе, сана мухтаса пĕлĕте çити хăпартса янипе. Большаков тусăмăр пулман пулсан... Микулай патша хисеплет ăна, ай хисеплет, шанать, вăл мĕнле каланине, сĕннине тăнлать, ахальтен хăй çумĕнче тытать-и, ял хуçалăх министрне лартать-и Альберт Григорьевича. Ухмах мар вăл, Федоров. Совет влаçĕ вăхăтĕнчи чи хастар та пултаруллă, нумай вĕреннĕ, шанчăк паракан ĕçлевçĕсене-йĕркелӳçĕсене хăй патне алăк уçса кĕртрĕ, çав ушкăнра – Большаковпа сана та. Николай Васильевич килĕшсе «добро» темен пулсан, президент администрацийĕ хамăр район пуçлăхĕ пулма урăххине те лартма пултарнă. Халăхран анчах килмест халĕ те, ачамккă. Пĕлетĕн-и халь хăв Вăрманкас патши пулнишĕн кама тав тумаллине? Так шту, пуйса юл пурте хăв аллунта чухне.

– Тĕп шухăш çапах та пирĕн, иксĕмĕрĕн, урăхларах, Çемен: санăн – хăвна ылтăн купи тăрне хăпартса лартас ĕмĕт, манăн – район халăхне пуйтарас шухăш.

– Ĕмĕт вăл – çунатлă. Ăна тытма пĕлес пулать: хамăр пек, хамăр майлă, пурпĕрех хамăрăн ырлăхшăн.

Тĕрĕссипе шухăшласан ĕнтĕ чăнах Крутов хăй те парти арканнă хыççăн юплĕ çул çине тăрса юлнăччĕ. Чăваш патши кантурĕнче патша сĕнĕвĕпе килĕшмен е ăна унта шанман, кайран халăх суйламан пулсан, хăш çулĕпе ăçталла уттаратчĕ-ши вăл? Район пуçĕнче тăма хăй те, арăмĕ те ĕмĕтленмен мар – çав саманта кĕтсе пурăннă. Тинех пурнăçланчĕ ĕнтĕ çав ĕмĕт. Ĕçлесен йĕркеллĕ, районшăн та, килшĕн те усăллах пулĕ-ха.

Халĕ ĕнтĕ унăн район халăхне воспитани памалли ятарлă мăн аппарат çук. Вăл хăех патша та, идеолог та. Пуçлăхсем, шкулсемпе клубсем, библиотекăсем, район хаçачĕпе радиовĕ кăна.

Çынсем вара, хăйсене пусахласа кирлĕ мара вĕрентекен, пуçа кĕрсех çитмен юмахла шухăша ăша хывма пăрахса, урăххине, витĕмлĕреххине суйласа илчĕç. Авă мĕнле савăк хĕвелĕ йăлкăшать вĕсен питкуçĕнче. Тымарта чиркӳ уçнă вăхăтра ăна асăрхамасăр юлмарĕ район пуçлăхĕ. Апла пулсан вĕсем Турă сăмахне ĕненеççĕ, унпа чунне кантараççĕ, унăн сăваплă сăнĕ патнех туртăнаççĕ.

Халăхпа ĕçлетĕн пулсан, халăхран юлаймастăн. Акă, Крутов та çав кун, хăй унччен ăша хывман, ялан сивленĕ тĕн уявне хутшăнчĕ, хăйĕнчен хăра-хăрах, çынсенчен вăтана-вăтанах сăх сăхма та именмерĕ, Варнава митрополитпа, Миров господинпа, Пантелей аттепе мирлĕ, ăнлануллă калаçрĕ, чиркӳ малашне халăх ăстăнне тивĕçлĕ, пархатарлă, сăваплă вырăн пулса тăрасса ĕненме пуçларĕ. Пурин те малаллах пурăнмалла-çке: пĕрпĕринпе килĕшӳллĕн, ырă кăмăл-туйăмлăн, сăпайлăн, пысăк ĕмĕтлĕн. Илемлĕ пурнăç тума халăха чиркӳ хавхалантарса пырĕ. Кашни çыннăн – хăйĕн ĕненĕвĕ, тĕллевĕ, кĕрешӳпе çĕнтерĕвĕ, телейĕ. Çаваннăн вăл çĕр çинче пурăнать, çӳлти Хăвата кĕл тăвать. Тымар чиркĕвĕнче тĕлĕнмелле асамлă турăш умĕнче юрланă пек илтĕнекен кĕлĕ сасси халĕ те асран кайман. Мария Мирова игуменпа пĕрле икĕ сасăпа хăй те пурнăçланăнах туйăнчĕ Крутова çав кĕлле: «Эй мана пăхса усракан чăн Таса Турă Амăшĕ, Хăвăн хăватлă таса кĕллӳпе мана, чуруна, хуйха ӳкесрен, манăça каясран, ăса çухатасран, ӳркенесрен хăтар; пур ирсĕр, усал, кирлĕ мар шухăшсене те манăн пăсăлнă чĕремрен, тĕттĕмленнĕ ăсăмран сирсе яр, манăн чарусăр шухăшсенĕн çулăмне сӳнтер, ăшăма тĕрлĕ усал шухăш кĕрсе ун хыççăн каясран сыхла; усал ĕçсем тума тытăнасран хăтар мана...»

8

Район хаçачĕн юлашки страницинче пичетленнĕ «Шурăмпуç» ял хуçалăх кооперативĕн хурлăхлă хыпарĕпе паллашнă хыççăн, Крутов шухăша путрĕ: «Хамăр яла парторга ĕçлеме пырсанах Нухрат Кавĕрли хĕрӳ ĕç çире арçын нимипе тупăк тутарса тĕлĕнтернĕччĕ. Унтанпа вăтăр çул ытла иртрĕ. Пĕринче Хурăнвара пырсан вăл манран йĕплесе кулнăччĕ: «Виç тупăкран пĕрне, чи аслăраххине, партбилетпа партине те пĕрлех хурса шăтăка чикрĕм...» Хăвна КПСС ретĕнчен кăларнăшăн манпа хирĕлсе çӳреме пăрахмарăн, хатĕр тупăках кĕрсе выртрăн ĕнтĕ, теприне карчăкку валли хăвартăн пуль. Тăпру çăмăл пултăр».

Ашшĕне пытарса таврăннă Валерий Гаврилович Крутовсене хăй патне каçма ыйтрĕ. Нухратов Грета Родионовнапах пурăнать. Шупашкарти тăваттăмĕш пульницан тĕп тухтăрĕ пулма куçарнă хыççăн Горячев майĕпен чун савнийĕнчен сивĕнсе пычĕ пулас, Валерий Гавриловича тăлăха хăвармарĕ, арăмне туртса илмерĕ. Нухратовсен çемйине çавăн хыççăн юрату хĕвелĕ çĕнĕрен кĕрсе, нушаланакан упăшкипе арăмĕн чунчĕрине ăшăтрĕ, каллех пĕр-пĕрне ыталаттарчĕ. Нухратов район пульницин тĕп тухтăрĕнче вăрахчен ĕçлерĕ, виçĕм çул ăна хирурги уйрăмне куçарчĕç. Арăмĕ халĕ канура, мăнукĕсемпе айланса пурăнать.

Ял, вилĕм, виле пытарни çинчен каласнă хушăра Валерий Гаврилович сăмах турĕ:

– Этемĕн пурин те пĕр çул – масар çулĕ. Масара кĕнĕ çĕрте хĕрлĕ çутă çук. Масар пурне те шăппăн йышăнать: лайăх çыннине те, усаллине те, вăкăр пеккине те, уксакчăлахне те, йӳтенине те, тин çуралнине те... Пурăннă чух çеç çав симĕс çул пирки шухăшласах каймастăн. Халĕ, ватă енне сулăннă май, уйрăмах чирлекелесен, тем, пуçра ырă мар шухăшсем явăнкалаççĕ. Тупăка хурса шăтăка чиксен... Çуккă эпир çут тĕнчере. Çĕр айĕнче

çĕрсе урăх материе куçатпăр. Таçта такам шухăшласа кăларнă леш тĕнчере вара – пурте пĕр тан. Çăрăлатпăр çав çак тĕнчере, пĕр-пĕрне вилесле кăшласа. Ма ытла усал-ши, хаяр-ши вăл этем тени?

– Унашкал пулмасан вăл çĕр çинче сыхланса юлаймасть, – терĕ ăна итленĕ май Крутов. – Çавăнпа кĕрешӳре, çĕнтерӳре иртет пурнăç.

Ашшĕне асăнса эрех ĕçнĕ хыççăн Нухратов кӳршипе килĕшрĕ те ăна ыйту пачĕ:

– Хăвăр пурнăçупа кăмăллă-и эсир?

– Малтан та кăмăллă пулнă. Халĕ те. Халăхпа ĕçлессине эпĕ чи мала хунă. Халăх телейĕшĕн тăрăшатăп. Эсир, мĕн, халăхшăн тăрăшмастăр-им? Манашкалах ĕçлетĕр: çынна сыватса телейлĕ тăватăр.

– Вăл çаплах-ха. Эпĕ çакна пĕлесшĕн. Чунна пĕртте улăштармасăрах-и? Пурнăç çулĕ сирĕн те тӳп-тӳрех пулмарĕ-ха, анаталла та тăвалла. Парти ĕçĕнчен администраци ĕçне куçнă вăхăтра та пĕрешкел пулнă-и кăмăлу?

Грета Родионовнапа ачапча хуйхи-суйхине аса илсе ларакан Мария Николаевна, çакна илтсен, Нухратова пӳлсех:

– Мĕн пустуй пакăлтататăр çак? – терĕ хыттăнах. – Ман Макçăма, мĕн, урăх чустаран йăваласа тунă-им? Çав этемех. Хăйсен пурнăçланма пултарайман тĕп шухăшлавĕпе, идейипе тейĕпĕр, пуçĕсене кунтăклантарса янă та, мĕн, пĕрмай халăхшăн тăрăшса çав çулсенче халăхне пуйтарчĕç-ши, халăхне çăтмаха кĕртсе ячĕç-ши. Мана, çемьене ĕмĕрĕпе килте арçынсăр асап кăтартнă партийу-качку юрать саланса кайрĕ. Уншăн ухмах кулянса вилес патне çитнĕччĕ упăшкам. Темме пĕрлех тĕпсĕр шăтăка сикмен. Халь хăть, партисĕр ĕçре. Мускавра çуралнă çĕнĕ партийĕ хут çинчен пуçне çĕклеймен-ха. Турри пĕлет пуль çав хăçан мĕн пулмаллине-тумаллине, хăçан кама хăй вырăнне лартмаллине. Парти мар, Турă çул уçса парать сире, Турă сăвап тăвать. Авă хăвăн ĕçри юлташусем:

шупашкартисем те, вăрманкасрисем те, епле ăш вырăн тупрĕç халь? Быстров çĕрме пуян пулса кайнă. Оманов та... Ун чиркӳне уçма кайса килтĕн. Хăв та халь район хуçи. Эп те савăнап уншăн. Халăхшăн ĕçлен пулсан та, пирĕншĕн пурăннине ан ман. Эпир те, килтисем, халăхăн пĕр пайĕсем. Семен Ильич пек пуйма та манса ан кай. Ман та унăнни пекех кил сĕтелĕ çинче хур-кăвакала та, кăрккапа страуса та ташлаттарас килет, Канар утравĕнче канас та, чунăма кантарас та килет...

Нухратов тăрса каллĕ-маллĕ утрĕ, кӳршине итлесе пĕтерсен, ăна çурăм хыçĕнчен пырса ыталарĕ:

– Ай маттур, Мария Николаевна, епле тăн парать. Тăрă шыв çинех кăларчĕ пулас упăшкине. Çапла, Максим Максимович, халăхшăн та тăрăшар, хамăр çинчен те манар мар. Ăшра пирĕн пурпĕрех хамăршăнлăх тымарĕ чĕрĕлме пăрахмасть. Вăрман çумĕнче, кӳлĕ хĕрринче, камăн икĕ хутлă сарлака керменĕ ӳссе ларчĕ?

Тути хĕррисене якатса, пит-куçне пăркалантарса илнĕ хыççăн, Максим Максимович куланçи пулчĕ:

– Район «кĕпĕрнаттăрĕн», Крутов хаспатинăн. Çынсенчен юлас темерĕмĕр пулас.

– Шупашкарта та хваттер майлаштарнă, теççĕ Вăрманкас район администрацийĕн пуçлăхне Крутова халăх хушшинче.

– Тĕрĕсех, – пытармарĕ Максим Максимович. – Хĕрĕм валли кирлĕ. Анчах... пĕрне те вăрласа туман.

– Тоттă, пурне те кирлĕ çав: хамăра та, ачапчана та... Акă вăл пурнăç улшăнăвĕн телейĕ. Майлаштармасăрах пулман пуль-ха. Иксĕрĕн укçупах... – Нухратов ун еннелле чеен пăхса тутине мăкăлтаттарчĕ: – Эх, коррупци чирне ăна, тĕнчипех сарăлнăскерне, пит хăвăрт ерекенскерне, тĕнче пĕтиччен те тĕп тăваймаççĕ пуль. Ĕçлĕ çынсен сутăнчăк чирĕнчен ман кӳршĕм те хăтăлса юлаймăн.

– Ман вырăнта пулсан эсир хăвăр мĕн хăтланнă пулăттăрччĕ-ши? – терĕ Крутов.

– Тӳссе курнă-çке. Пурте сĕнеççĕ çав, «эс мана, эп сана» йăла пурнăç йăли пулса кайрĕ. Унран пăрăнса юлма никамăн та хал çитмест. Ман та, сирĕн те. Пурин те. Шеллеттĕм сире чухăнлăхра тертленнĕшĕн. Калăр-ха, райком сире çак хваттерсĕр пуçне мĕн панă?

– Виçĕ выговор.

– Хальхи пурнăç вара мĕн пачĕ?

– Пысăк влаç. Патшалăх влаçĕ.

– Телей пачĕ вăл сире компартисĕр çак влаç. Компарти чурисене патша туса хучĕ. Уншăн сирĕн Турра пуç çапмалла. Пан Христос чиркӳне кайса таса Турă сăнĕ умĕнче çурта лартмалла. Çапла мар-и, Мария Николаевна?

Крутовăн арăмĕ, килĕшсе, хушса хучĕ:

– Венчете илсе каясшăн-ха эпĕ ăна юлташĕ патне. Виличчен авалхи йăлапа, турă йăлипе пурăнса юлас. Килĕшетпĕр-и, кӳршĕсем?

– Пирĕн те шухăш çуралнăччĕ-ха ун пирки, – савăнсах пĕлтерчĕ Грета Родионовна. – Чăнах, мĕн хăрамалли пур, Максим Максимович. Уншăн халĕ сире выговор паракан та, ĕçрен кăларакан та çук. Айтăр Турра асăнса ĕçер.

Калаçу шӳтлĕ те, йĕплĕ те, шухăшлаттармалла та пулса тухнăшăн Крутов кӳренмерĕ, ыранхи ĕç-пуç çинчен аса илсен, арăмĕпе хваттерне каçрĕ.

Упăшкине пурнăç вĕçнелле те пулин тăн кĕме пуçланишĕн çĕнĕлле савăнчĕ Мария Никоалевна. Ара, пурте влаçпа усă курса хăйсемшĕн те тăрăшнă вăхăтра унăн Макçăмĕн уйрăммăн тап-таса тăрса юлмалла-им? Çынсем ун пек мар хăтланаççĕ. Упăшки унăн йĕркерен иртмест.

9

Анчах Крутовăн хăй ĕçĕнче йĕрке тумалли калама çук нумай-ха. Ку ĕнтĕ йăлтах çĕршыв çирĕп йĕркене кĕрсе çитейменнинчен килет. Малтан çирĕп палăртса тытса пынă экономика, социаллă пурнăç, культура ыйтăвĕсем

куллен вуншар пушар кăлараччĕ. Тĕнче аталанăвĕн рынок-пасар турти хушшине ниепле те кĕрсе каясшăн мар-ха Раччей. Патшалăх çумăрсăр çу каçнă çĕр пек çăварне карса пăрахнă. Çав çăвара кам кăна шыв тăкмасть-ши? Пурте унпа тăван çĕршыва чĕртсе тăратасшăн. Имлĕ шывĕ çитменнипе патшалăхĕ те, патши мухмăрланине пула, вырăнта кукалесе тăрать. Мускав çилĕ Кремĕлтен вĕçтерсе килнĕ хушу хучĕсем пурнăçланмасăрах сарăхса пăчланаççĕ.

Администраци пуçлăхĕ кашни кун министр хыççăн министр кĕтсе ларать. Президент вĕсене ăш пӳлĕмре шăлавар çĕтсе лартасшăн маррине, вырăна тухса сулнăксене тӳрлеттересшĕн пулнине Максим Максимович ăнланать. Анчах та вĕсем пулăшас чухне, унăн хаклă вăхăтне çунтарса çеç хăвараççĕ. Шупашкарсем сăран пуртвелĕсене тултарса килнĕ ыйтусене татса памашкăн унăн хăйĕн влаçĕ те, хĕрĕвĕ те, ăсĕ те, пултарулăхĕ те пур. Паян вĕрентӳ министрĕ Школьников вуннăра çитмелле.

Унччен.. Тул енчен шаккăнă хыççăн алăкран Попов кĕрсе кайрĕ. Юрий Васильевич вăйлă аллине парса сывлăх сунчĕ те, сехечĕ çине пăхса:

– Каçарăр та Максим Максимович, çил-тăвăллах васкатăп. Вун пĕрте Шупашкара çитмелле.

– Кам патне?

– Ял хуçалăх министерствине, унтан – экономика министерствине. Пирĕн революци Большакова килĕшнĕ.

– Агрохолдинг пирки-и?

– Аха.

– Мана та хыпарланăччĕ пирĕнпе килĕшни пирки. Президент валли ыйту хатĕрлет пулас вăл.

– Тĕрĕс. Ял хуçалăхĕн çав йĕрпе кайса аталанмалла малашне тесе эпĕ ăна тахçанах ĕнентернĕччĕ. Республика программи тума çавăнтан пуçламалла. Пĕрле пыратăр-и? Малтан палăртнисене виçсĕмĕр виçĕ пуç тавра çавăрттарар та, шăл витĕр тепĕр хут кăларар та, çич хут виçсе пĕрре каснă пек пултăр.

– Хавасчĕ те, анчах вăхăт çук. Шкул министрĕ Школьников çула тухнă.

Юрий Васильевич папкинчен хут тĕрки туртса кăларчĕ те:

– Халлĕхе апла иккĕн пĕр куçпа пăхни те çитĕ, – терĕ кăмăллă куллипе пӳлĕме илемлетсе. – Акă... «Хĕвеллĕ ир» таврашĕнчи виçĕ колхозĕ те «хĕвелсĕр каça» кĕрсе кайнă...

– Да, вĕсен хăйсен тĕллĕн хĕвел çути курмашкăн малашлăх çук, – килĕшрĕ унпа Крутов. – Эсир вĕсен хĕвелĕ пулсан çеç.

Попов мăнтăр пӳрнисемпе хут листине тепĕр майлă çавăрса хучĕ.

– Иккĕленмелли çук. Йăлтах ăсра ман вĕсен телейĕ. Çĕрне параççĕ. Экс-колхозникĕсене хамăн эртеле йышăнатăп. Сăрă хуртсем, унччен пĕрлешӳллĕ хуçалăх шучĕпе тăранса пурăннисем, тăрăлса юлаççĕ. Уйра ĕçлеме техника туянма пуçларăм ĕнтĕ. Теприн пирки шухăшлар-ха?

– Э-э, «Пучах» хылчăкĕ чикет-и?

– Çав перестройка палăкĕ пирки ĕнтĕ.

– Мургаев тутарчĕ ăна, вăйлах ĕçлеттерсе янăччĕ. Быстров пĕтерчĕ. Çын ӳстернĕ пучаха та çапса тĕшĕлеймерĕ. Çĕршыв кисренчĕ те, йĕрке сăнчăрĕ татăлчĕ. Колхозсем комплекса апат пама пăрахрĕç. Хупăнчĕ вара сысна кăмуни-2. «Пучахран» сысна кăнтăрли пулса юлчĕ.

– Ман шутпа, иккĕмĕш сысна кăмунине те чĕртмелле, хăвăр ялти Салакайăк Карачăмĕ ĕмĕтленнĕ пек хавхалансах çĕнĕ ĕмĕр сыснисен кăмунине тăватпăрах эпир. Çурт-йĕрĕ аванах. Юсамалла та. Шала йăлтах çĕнĕ оборудовани лартмалла. Ятне те улăштаратăп: «Ылтăн сысна». Пурпĕр ылтăн пĕрчи юхтарса илетĕп çав пулас комплексран та. Та-ак, районăн планне, республика программине кĕртсе хăварар-ха. Иксĕмĕр вара икĕ кăмунинче те нуф-нуфсен хорĕпе пĕр харăс юрлăпăр:

Патша та, турă та, такам та –
Никам та сирмĕ асапа.
Эпир чăн ирĕклĕх тупатпăр
Пĕр хамăр вăйлă алăпа...

– Эпĕ килĕшетĕп, юрлама та хавас. Вăю çиттĕр çеç. Тата мĕн проблеми унта сирĕн?

– Тĕрлĕрен аш-какай юрататпăр-çке, Максим Максимович, – хут çинчен пуçне çĕклерĕ Попов. – Хамăра та хушăран ĕне выльăх апачĕ те кирлĕ. Пирĕн комбината та. Вăрманкас çумĕнчи хресченсем «эпĕр кам, эпĕр кам, эпĕр хамăр хапăссем, никам çĕнми патттăрсем» тесе ыталанса юрласа-ташласах кĕлмĕç хутаççи йăтса çýреме пуçларĕç. Хапăссен анра çарăк пуснă сап-сарă чечек уйĕ витĕр вĕçтерсе килсен, Чăваш патши камăн шлепкине сăмса çине пусса лартрĕ?

– Эх, камăнне пултăр – манăннех ĕнтĕ, – аса илнипе пăравус пек хашлатрĕ Крутов. – Аптрамалла вĕсемпе. Вăй питти çынни Вăрманкасра е таçта хулара, мĕншĕн тесессĕн ялта ун валли ĕçĕ те, ĕçлесен те... укçи çук... Хуçалăхĕ.. каккуй малалла талпăнма... Чапаев ятне тытса пурăнма та намăс. Эсир Чапаев çарне çĕнтерýллĕ çулпа малалла чуптарсанччĕ.

Юрий Васильевич тепĕр хут листине уçрĕ, вăйлă наступлени умĕн Чапаев хăйĕн комиссарĕпе Фурмановпа çапăçу тактики пирки хĕрсе тавлашнă пекех, умра выртакан кăранташсемпе ручкăсене куçаркаласа, кăтартрĕ:

– Ак çакăнта, вĕсен комплексĕ вырăнĕнче, виçĕ пин пăру самăртма пуçлатăп. Хапăссем те малашне комбинат умĕнчен «хапăсла» юрласа иртмĕç тен, вĕсен валли те пирĕн алăксем яриех уçалĕç. – Тăхтав тунă хыççăн, пĕлтерчĕ: – Типĕтнĕ сĕт заводне те хамăн хул хушшинех хýтте илесшĕн те...

Крутов кун пирки ăна васкама хушмарĕ. Попов вара лакса ларнă предприятие ура çине тăратма хăйĕн юлташĕ Волков çеç пултарĕ, каярахпа куç курĕ, тесе килĕшрĕ район пуçлăхĕпе, кĕçех унпа сыв пуллашрĕ.

Хурăнварти Кашкăрсен йăхташне Микулай пиччĕшсен Хĕветĕрне Крутов пĕлет. Мускаври аш-какай тата сĕт-çу промышленность институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарта ĕçлет. Апла унăн сĕт-çу заводĕнчен тăван енне килме кăмăлĕ уçăлнă-ха. Çитес вăхăтрах унпа тĕл пулса калаçмалла.

Аш-какай комбиначĕн директорĕ тухса кайнă кайман кантура Школьников та персе çитрĕ. Хулăн папкинчен вăл та пысăк ыйту туртса кăларчĕ. Министр Тымарта шкул çурчĕ лартасшăн. Тĕл пулăва чĕннĕ вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Числов та ăна тăнласа итлет.

– Ай земляк та янташах сирĕн ку, – пуçне пăркалать Школьников. – Ылтăн палăк лартма та юрать Миров господина. Тăван ялне парне тунăшăн. Сирĕн килĕшӳ çеç кирлĕ. Акă çаксене, проект хучĕсене пăхса тухса депутатсен район пухăвĕнче çирĕплетмелле те, çитес вĕренӳ çулĕнче ял уявне – шкул çурчĕ уçма – пĕрле кайăпăр. Тен, президент та пырĕ хăю касма. Мĕнле пек сирĕн шутпа, Максим Максимович?

Крутов хирĕçлеме пуçларĕ:

– Укçа пани – шутсăр лайăх, Иван Павлович. Аполлон Ниловича эпĕ хăй Сăшана тухса кайичченех хытă тав тунăччĕ. Юрĕ, çуртне каплантарса лартăпăр, анчах... кам валли?

Малтан хатĕрленнĕ пекех, Числов уççăн пĕлтерсе пычĕ:

– Тарăнвар вăтам шкулĕнче ултă ялтан виç çĕр аллă ача вĕренет. Вĕсенчен Тымартан – аллă, Авруйĕнчен – пиллĕк, Хурашуртан – тăваттă. Пĕрремĕш класа пыракансен шучĕ çулсерен вунă процент ытла чакать. Каплах пулса пырсан, Тарăнварта та тулли мар вăтам шкул кăна тăрса юлать. Халăх ватăлать, карчăксем ача çуратмаççĕ, яш-кĕрĕм хуланаллах тапать. Вăл юхăма пĕвелесе лартаймастăн. Çакăн пек статистика пирĕн.

– Кивĕ ĕмĕр парнеленĕ инкекпех çĕнĕ ĕмĕре те кĕрĕпĕр-ха. Вуншар шкул хупăнать. Çапах статистика вăл улшăнма та пултарать. Анчах эсир мана, Юрий

Петрович, арифметика ан вĕрентĕр. Эпĕ хам наука докторĕ. Ку ыйтăва пирĕн урăхла майлă çавăрттарса, шухăшларах татса памалла. Эсир мана ун пек, эпĕ сире кун пек ăнлантарăпăр, вĕçне-хĕрне те тухаймăпăр. Енчен те эсир килĕшмесен, Максим Максимович, мĕн чухлĕ доллар ахалех çунса каять.

– Ачасăр шкул кама кирлĕ? Е Миров господин Сăша ачисене килсе ярать-и вăрмана? – хирĕçлеме пăхрĕ Крутов. – Доллар миххине тытăр та урăххине парăр. Республикăра сахал-и йăхтăр-яхтăр шкул çурчĕ?

– Ман шутпа ача халлĕхе çитет. Çуртне тусан эпир шкулне те уçатпăр. Укçи-тенки, финансĕ... Миров господин ăна хăйсен ялĕнчи шкул валли адреспа кăна парать-çке. Яснă-и?

– Яснă! – çирĕппĕнех пĕлтерчĕ администраци пуçлăхĕ. – Пире кунашкал пулăшу кирлĕ мар. Район пульницин çуртне тума парсанччĕ. Участоксенчи, ялсенчи пульницасемпе фельдшер пункчĕсене хупса пĕтерчĕç те...

– Мана анне ялти ача çуратмалли çуртрах кун çути кăтартнă, – илтĕнчĕ Числов сасси.

– Ял çыннишĕн унашкал кăна ырлăх пулман, кашни пысăк фермăра выльăх-чĕрлĕх пăхакансем валли те, ял халăхĕ валли те вăйлă аппаратура лартнă медицина пункчĕсем ĕçлетчĕç. Пĕтĕм республикипех. Вĕсем те кирлĕ мар пулчĕç аслă хуçасемшĕн, – хĕрӳленсех малалла каларĕ Крутов. – Тымарта сиплевпе кану комплексĕ тумалла пирĕн. Вăт çавна валли пулăшу ыйтатăп унран, паянах, землякла. Министр шкул çурчĕ тума килĕшмест, укçине мана парăр, тесе пĕлтерĕп телефонпа. Юрать пуль çапла, Иван Павлович?

Школьников куçĕнчен вут-хĕм сирпĕнсе тухрĕ, пичĕ пиçнĕ палан пек хĕрелсе кайрĕ, чĕтрекен тути хĕррисене шĕвĕр чĕлхипе якатса илчĕ те, вăл хыттăнах каларĕ:

– Епле хăятăр эсир президентăн вĕрентӳ программине хирĕçле тăма? Шупашкара çитсессĕнех Федоров патне кĕретĕп. Эсир... эсир хăвăр районшăн тăрăшакан патриот

мар. Турă сăмса умне пăрахса панă телее таптатăр. Шутлама пĕлес пулать ăслăрах.

Район хуçи кула-кулах сĕнчĕ:

– Ан кӳренĕр те, Иван Павлович, анчах Школьников министрăн та школьниксене шутлама тĕплĕнрех вĕренмелле пуль.

Тĕл пулу никамшăн та усăллă иртмерĕ. Апат вăхăчĕ те çывхарчĕ. Ку таранччен пулманччĕ-ха шупашкарсемпе мускавсене чаплăн хăналамасăр кăларса яни. Тип çăварла ăсатсан, уяр çанталăкра та аçа çапма пултарать. Вĕсем килес умĕн Милова пĕлтермелле çеç. Райпо хуçи хăйĕн çĕнĕ ресторанне, уйрăмах шалти пӳлĕмне, хăна йышăнма наччасрах хатĕрлеттерет. Пуçлăхсен тахçанхи чирĕ çĕршывĕпех сарăлнă. Ăна никам та пурнăçран уйăраймасть-ха. Крутов та хăй сисмесĕрех чирлесе кайрĕ çав хăрушă чирпе. Райкомра ĕçленĕ чухне ăшра Мургаевсен вăрттăн ĕçкисене хирĕçчĕ. Халĕ, хăй вĕсен пуканĕ çине ларнă хыççăн, хирĕçлесен те унран пăрăнса юлаймарĕ, кулленхи хăнăхнă йăла пулса кайрĕ уншăн та савăк апатлану. Хăнасемпе пĕрле «ăнăçушăн!» тесе черкке çĕклеме те хăнăхрĕ. Парне памасăр пĕр хăнана та Вăрманкас унечинчен кăларса яртармасть Тит Нилович. Хăйне çеç-и, Крутова та тĕп хулара çав «хаклă хăнасенчен» пĕри те, выçса вилеп тесен те, ашсăр пĕçернĕ купăста кукăлĕ те илсе çитермест, арăмĕсем кутлăх çиппипе çĕлесе янă кĕсйисенчен пус та кăлармасть. Мĕншĕн тăкакланмалла-ха? Ирпе е кану кунĕнче вăл командировкăра такам-такам «Атăл» кутамккине тултарса янă кучченеçпе рехетленсе какăрать... Пĕрле апата лекмелле пулсан та, Крутовăннах кĕсье пушатса хăварма тивет. Вĕсене, хăйсен ĕçне тунăшăнах, мĕншĕн ĕçтерсе-çитерсе тăрантармалла-ха? Хресчене тырă вырса çапнăшăн та, аш-какай туса илнĕшĕн те никам та пĕр пуссăр хăналамасть. Мĕншĕн пуçлăхсене çеç мăнтăрлатса ямалла-ха? Шутласассăн, вĕсем йăлтах халăх шучĕпе тăранса пурăнаççĕ мар-и-

ха? Халăх пурнăç тытăмĕн обществи текен йышăн сăрă хурчĕсем вĕт вĕсем?

Паян Крутовăн телей пулчĕ. Институтра пĕрле вĕреннĕ студент-юлташне Ваня Школьникова Юрий Петрович шкул тĕрĕслемелле яла илсе кайрĕ. Ĕнтĕ министр – Числовсен хăни.

Чукун çул çумĕнчи капăр урампа район пуçлăхĕ пĕчченех уттарчĕ, унталла-кунталла пăхкаласа пычĕ. Çак çулсенче район хулине те хула сăнĕ çапрĕ. Ураран çăпата салтса пăрахса кирзă, резина атă тăхăнма пуçланă вăхăтри сăнсăр, пĕр-икĕ хутлă çуртсем вырăнне лартнă пилĕк хутлă кирпĕч çуртсем, тул енчен чаплă илемлетнĕ кантурсем, лавккасем хăйне евĕр мăнаçлă та туртăмлă. «Чĕкеç» ресторан та райком çумĕнчи «Салам» мар ĕнтĕ. Урамран та пăхма илĕртӳллĕ, шалта та кăмăллă туйăм çуратать. Миловăн Чĕкеçĕ, ресторан майра-патши, алăкран кĕрекен пуçлăха ясар куçĕпе илĕртсе тараватлăн кĕтсе илчĕ: «Иртĕр малалла, тархасшăн, Максим Максимович? Тит Нилович сире шупашкарсемпе килмелле терĕ те, мĕншĕн пĕчченех тата?»

«Ах ку йăпăлти Милова, ытла çаврăнăçуллă-çке, каламасăрах апат хатĕрлеттернĕ. Хам çумранах такам ăна вăрттăн пĕлтерсе тăрать пулас. Шпионсăр пуçлăх тĕнчере те çук пуль. Мана та асăрхаса тăракансем пурах», – тесе шухăшлама та ĕлкĕреймерĕ вăл, çурăм хыçĕнче Пантин сасси илтĕнчĕ:

– Сирĕнпех ларса вăрттăн калаçас пуль, Максим Максимович. Иртер-ха хаваспах чĕнекен «Чĕкеç йăвине». «Ах, Чĕкеçĕм-Чĕкеç, сан патнах ман вĕçес. Сим пылна кăшт ĕçес, юрруна та итлес...»

Пурте апатланакан çĕртех хырăма тăрантарасшăнччĕ Крутов, акă халĕ, Чĕкеç чĕвĕлтетĕвĕпе Пантин шӳчĕ унăн шухăшне арпаштарсах ячĕç, вара вăл вĕсемпе пĕрле унченхи хăнăхнă çĕреллех пăрăнчĕ. Сĕтелсем хушшинче ларакансенчен вăтаннă пек пулсах. «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн хуçипе васкавлăн калаçмалли те пурччĕ тата.

Тахçанхи тусĕ Быстров хăйĕн «Васка» ресторанĕпе Шупашкарта ăна тĕлĕнтерсех пăрахнăччĕ. Анчах Милов та пурнăç таппинчен юлмасть иккен. Унăн та пур мĕнпе тĕлĕнтермелли: таврара çук ресторанĕ те, «Париж парни» хăна çурчĕ те, ирччен ĕçлекен сауна-мунчи те. Унта тарлаттарса сиплеме вăл Быстрова тахçантанпах кĕтет.

Акă вăл «ăнсăртран» хăй те персе çитрĕ, таçти хăнавĕрлене те пăхма вĕреннĕскер, вĕсене кансĕрлемерĕ, Крутовран пĕр сăмах çеç ыйтса пĕлчĕ: «Мускав тăрантасĕ хăçан тусан мăкăрлантарса çитет?»

Раççей ял хуçалăх министрĕ Усач республикăна килессине ăçтан пĕлнĕ Милов, паллă мар. Мускав хăни Вăрманкасра та пулассине ĕнер Крутова вăрттăн çеç асăрхаттарса хунăччĕ-çке. Çавăн çинчен вăл апат хушшинче Пантина та хăлхаран шăппăн систерчĕ.

Пантелеймон Михайлович уншăн чĕтресе ўкмерĕ, ним пăлханмасăрах, хавасланчĕ кăна.

– Тахçанах кĕтеп хамăн ял заводне пысăк начальствăна кăтартас тесе. Эпĕ вĕсене кăштах тăн парасшăн, – терĕ Пантин. – Тăрăшсан, тем те тума пулать. Акă, çак тутлă сĕтел çинех пăхар. Милова ятлакан хуçа таврашĕ курман эпĕ хам çакăнта ĕçлеме килнĕренпе. Вăтăр çул хушшинче камăн тути хĕррине кăна çуллаттармарĕ-ши вăл, шеремет. Чăтать. Пĕрмай çĕнни пур ун. Юратап ун пек çынсене. Тутлă тăк тутлă апачĕ.

Вĕсен çумне йăпăшт пырса тăнă райпо хуçи шăппăн каларĕ:

– Министр, паллах, пĕччен килмест, яланхиллех, президент та пулать çумĕнче. Хăрамалли çук, чаплăнах кĕтсе илĕпĕр, пуянах ăсатса ярăпăр пĕрле. Вĕсене тутантарса пăхмалли апатăн презентацийĕ пултăр-и паян. Ятарласа хам шухăшласа кăларнă рецептпа Чĕкеçĕм хăй пĕçернĕ: пăланпа хир сысни тата лосось пулă ашĕнчен. Атьăр-ха кабанолоськăн пахалăхне пăлхарсен «Бренди» çăлтăрĕсемпе вылятса хаклар.

Ресторан ăстаçисене мухтаса шутсăр тутлă апатне пахалăх палли панă хыççăн калаçу малалла кайрĕ.

Крутовăн ытларах Пантелеймон Михайловича итлемелле пулчĕ. Пĕр хĕрсе кайсассăн ăна чарма йывăр. Халĕ те...

– Районсенчи мĕн тери вăйлă «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕсене пĕтерчĕç, – сĕтеле алă тӳртĕшпе шаккаса илчĕ вăл. – Республика «Сельхозтехники» хăй те усламçăсен суту-илӳ кантурĕ вырăнне тăрса юлчĕ. Юрать никама та итлемерĕм, никам хыççăн та шыва сикмерĕм. Ман халь хамăн завод – хам алпа тунă паянхи предприяти. Çуккă Чăваш енче унашкалли. Ман пата хамăр районтисем кăна мар, тутарсем те, чĕмпĕрсем те, ирçе-çармăссем те гусеницăллă трактор тата комбайн чĕрисене сиплеттерме аякран килеççĕ. Пурне те юсаса ĕлкĕреймеспĕр. Çав хушăрах хамăрăн хуçалăхсенчи машинăпа трактор станцийĕсене те ăста пулăшу парса тăратпăр. Тем тĕрлĕ хуçалăх та хунаса кайрĕ те...

– Ку çапли – çаплах-ха. Районта вун пилĕк колхоз вырăнне аллă ултă хуçалăх.

– Ытла вакланса кайрăмăр, çыххи татăлса сапăннă шăпăр пекех. Пурне те çĕр кирлĕ. Ăна çавăрса илсен - техника кирлĕ. Техника паркĕ пуянланать-и?

– Çук. Илме укçа çук. хаклă. Иртнĕ çулта районĕпе те гусеницăллă пĕр трактор, урапалли – иккĕ, пĕр комбайн туяннă.

– Камсем?

– Шурăмпуçсем. «Беларуçне» – Кукша Куçки «кăмунарĕсем». «Кайри – мала!» – тесех мухтанса çӳрет Плешаков.

– Ыттисен мĕн тумалла малашне? Юрăхсăра тухнă техникăна тимĕр-тăмăра ăсатсан? Шурлăх çăтать пире. Волковсем сахалланса юлчĕç. Пурте туянаймасть те, юсаймасть те ăна, техникăна. Юрать Тарăнварăн «сельхозтехники» малтанхи пекех сыхланса юлчĕ. «Шурăмпуçĕнчи» пекки ăçта пур? Çавăнпа ĕлĕкхи майлах, çĕнĕ мăтăссах кирлĕ – машинно-ремонтная станция. Çав мăрăсă хăйĕн техникипе вак хуçалăхсене, фермерсене укçалла сухаласа-акса-вырса парать, ытти хуçалăхсен

трактор-комбайнне те юсама пулăшать. Туса йĕркелесе ярар мар-и çак çĕнĕлĕхе хамăр патра?

Уни-кунине Крутов малтанах хăлхана чикнĕччĕ-ха, анчах халĕ, ăна итленĕ май, хăй те хăпартланса кайрĕ, вара:

– Бизнес-проект тăвăр та, халăхпа сӳтсе явар та, кĕрлеттерер, – терĕ. – Манăçнă кивви – паянхи çĕнни пултăр.

– Ман вăл хут-хĕтĕрĕ хатĕрех. Шăпах çак ыйтупа куçа-куçăн калаçмашкăн кĕтетĕп те ĕнтĕ эпĕ Усач министăра, – пуçне ялт! çĕклерĕ Пантин. – Ман заводра пулнă хыççăн вăл усăк мăйăх вĕçĕсене пĕтĕрсе çӳлелле ятăр, çĕршыв ял хуçалăхĕн малашлăхĕ пирки вĕçевлĕн шухăшлатăр. Чăнах килет-ши?

– Президент администрацийĕнчен вĕçсе килнĕ хыпар суя пулакан марччĕ-ха.

– Апла хамăн тимĕр-тăмăр хуçалăхне тата ытларах йĕркене кĕртес. – Крутов хыççăн ура çине тăчĕ Пантелеймон Михайлович. – Хăна куçне ялан хывăх кĕрекен.

Чĕкеç вĕсене çунаттисемпе сулсах, çумран вĕçертес марла ăшă куçпах ăсатрĕ.

Ĕç кунĕн юлашки пайĕ вак-тĕвек ыйтусене татса панипе тата администраци пуçлăхĕпе кăна питĕ васкавлăн калаçма ăнтăлакансемпе айланкаланса иртрĕ.

Килелле çула май Крутов вăрман комбиначĕн кантурне кĕчĕ. Директорпа бильярдла выляса илес шухăш пурччĕ. Липов хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнчех, темле хутсем çине алă пусса ларать. Бухгалтерĕ тухса кайсан, Юрий Петрович кĕтесселле тĕллесе кăтартрĕ:

– Çак ялавсемпе чĕркенсе çĕр тĕпне анса каясси кăна юлчĕ ĕнтĕ, хисеплĕ Максим Максимович. – Комбиначĕпе пĕрлех. Эх, пурнăç, пурнăç... Вăрманта пурăнатпăр, вăрман кулли пулса юлатпăр. Вăрман хуçалăхĕ алăра чухне мĕн чухлĕ каснă ăна? Çуллен çĕршер пин кубла метр. Эпир ялан малта пынă. Çак ялавсене ахальтен паман пире. Пӳлĕме кĕрсенех макăрас килет. Халĕ –

йывăç памаççĕ. Каснине турттарса тухма та техники çитмест. Кутран йăвантарнă йывăçне çут çанталăкĕ хăйне майлă юрăхсăрлантарать. Пахалăхсăр йывăçăн хакĕ чакать. Чукун çул çумĕнчи эстакада кунĕн-çĕрĕн кĕрлесе тăнă пулсан, халĕ, хăвăрах куратăр, унта шăплăх, çĕклемелли крансем çилпе шăхăрса лараççĕ. Вăхăтра тата çителĕклĕ тӳлейместĕп те, çыннисем тухса кайса пĕтеççĕ. Эх, вăрман хамăр алăра чухнех ыр кураттăмăрччĕ. Вăрман промышленноçĕпе вăрман хуçалăхĕ пĕр чĕлхе тупми пулчĕç те...

– Вăхăтра уйрăлчĕç пулас-ха вĕсем, Юрий Петрович, – терĕ Крутов директор çине чеенрех пăхса. – Вăрман çемйинче те развод пулчĕ. Çав çемьене хăвăрах кутран касрăр. Таврара кукша пуçлă вăрман кăна тăратса хăвартăр та. Улатăра самолетпа вĕçнĕ чухне аялалла пăхса пытăм та, ку Липов вăрмана хăйĕн пуçĕ пекех шаклалла тăратса хăварать-иç, тесе шухăшларăм.

Çакна илтнипе Липов шакла мăн пуçне икĕ ывăç тупанĕпе те шăлса илчĕ, вара Крутова каларĕ:

– Тĕрĕсех кумеккăть тăватăр-ха эсир, Максим Максимович. Хамăн пуçа вăрманпа танлаштарнăшăн пĕртте кӳренместĕп. Чăн та, авă, вăрман промышленноçĕнчен уйрăлнă хыççăн вăрман хуçалăхĕ ӳсекен хĕр пек чиперленсе пырать. Вăрман хăй тĕллĕн те, лартнă калчаран та ӳссе паркаланать. Пирĕн пуçпа ĕнтĕ халь, тăнсăр шакла пуçпа... Çав хĕр-вăрманпа пĕр чĕлхе тупма пĕлекен яш-пуç кирлĕ.Тăрăран хăрса пыракан çăка пекех типсе пыратпăр. Тымар вулă тăрăх сĕткен хăвалаймасть. Çитет, пенсие тухсан кăçал тӳрех уçланкăри утара пурăнма куçатăп. Эпĕ – вăрман çынни, вăрман упи, мана вăрман сывлăшех кирлĕ.

– Хăв тунă пӳрт хăвăн куçу умĕнчех йăтăнса аннă вăхăтра ăна тытса чарма вăй нумай кирлĕ пуль çав, – теме çеç пултарчĕ Крутов.

Вăйă вăхăтĕнче Юрий Петрович мухтаса илчĕ:

– Ытла маттур эсир, хурăнварсем – Салакайăк–Салтаккайсемпе Кашкăрсем...

– Çаплах, йăх тымарĕ хăватлă-çке пирĕн. Кашкăрсем – чи авалхисем. Эпир, чăвашсем, Инçет Тухăç тымарĕнчен, хун текен этемсен, Кашкăр йăхĕсен ачисем, хун ачисем – салтак ачисем. Никамран та парăнманнисем.

– Максим Максимович, туятăп, ăнланатăп эсир мĕн пирки шахвăртнине. Нимĕн те калаймăн, маттур йăхсем. Ахальтен таптамасть пуль мана, ват упана, Кашкăрсен ачи, Тельман Федотовичăн Юманĕ. Хăрать пирĕн Çăка йăхĕ. Упин те тирĕнчен çăмĕ юхать. Авалхи йăла пĕтсе пырать. Упа патшана пыллă çăка тункати çинчен Кашкăр сирпĕтет. Юман – çăкаран çирĕпрех... Бильярд уйĕнче те, çапăçу хирĕнчи пекех, Салтаккайсем çĕнтерчĕç. Парăнатăп, – шĕвĕр туяна сĕтел çине хурса аллисене тăратрĕ кантур хуçи. – Çапах та... кабинет ăмăртăвĕнче сире çĕнтерес пекех-ха. Манăн шутсĕр тутлă эрех пур. хам тунăскер. Йăлтах вăрман пуянлăхĕнчен. Хĕр-вăрман имлĕхĕ. Эсир паçăр каланинчен карт хутăм. Çавна аса илсе ман эрехе «Хĕр-вăрман» ят парар та чуп туса пăхар. Мĕн тути калать?

Килĕшмеллех пулчĕ Крутовăн. Ĕçкĕ сĕтелĕ хушшинче вăл «Хĕр-вăрман» тутипе ăша кантарчĕ, анчах черкке шаклаттарас енĕпе... парăнчĕ. Липовпа сыв пуллашса тухсан, хăйсен умĕнчи вăрман-паркра сукмак тăрăх утса çÿренĕ хушăра аса илсе, шухăшларĕ: «Тĕнчере тем те ватăлать, тем те кивелет, ун вырăнне хунав çитĕнет, киввине çĕнетет. Район пурнăçĕ те çав саккун йĕркипех улшăнса пырать. Унăн куçĕ умĕнчех вăрманпромхоз та хăйĕн ĕмĕрне вĕçлет. Унпа юнашарах хальхи саманари нумай енлĕ хуçалăх вăй илсе аталанать. Юман Волков вăрман хуçалăхне ертсе пынă хушăрах Шупашкартан йывăç касма та ирĕк илнĕ. Çав майпа усă курса Италие, Скандинави çĕршывĕсене юман, чăрăш, хыр, каврăç, йĕлме ăсатать. Хурăнĕпе Сыктывкарти

фанера завочĕ нумай усă курать. Аякран вĕçсе килекен долларпа-тенкĕпе фабрика лартрĕ. Унта мĕн тĕрлĕ кăна сĕтел-пукан, кĕпе-тумтир шкапĕ, диван, диван-кравать, çемçе пукан кăларать. Таварне таçти хулана та ăсатса тăрать. Унăн бизнес-проектне хŭтĕлеме кайсан, тĕлĕнтĕм. Республикăри Министрсен Кабинечĕн инвестици политикин канашĕнче епле ăслайлăн, çулăмлăн ăнлантарса ĕнентерме пултарчĕ Кашкăр ачи хăй мĕн шут тытнине. Хирĕç пулмарĕç. Ырларĕç. Çапла вăл укçа тупма пултарчĕ, тепĕр завод турĕ. Акă унăн «Реал-бизнес-Вăрман» фирмин кантурĕ хăйĕн сассине таçта çитиех сарчĕ. Магнитогорскри металлурги комбинатĕнчен туяннă вăтăр кăмакаран вĕсем сорчĕ те, таварлăхĕ те начар, вутта кăна кайма юрăхлă йывăçран, ĕçлесе хатĕрленĕ хыççăн юлакан каяшран пеллет текен кăмрăк-гранула кăлараççĕ – çулталăкра пилĕк пин тонна. Çĕр кăмрăкĕнчен чылай йŭне ларакан йывăç кăмрăкне нумай çĕрте хапăлласах туянаççĕ. Акă каллех – укçа. Липовăн виççĕр аллă çынлă коллективĕнчен аллăн тăрса юлнă хушăра Волковăн тупăшлă çĕнĕ заводĕнче ик çĕр çын ĕçлет. Аякран килнĕскерсем мар, вăрман комбинатĕнчен куçнăскерсемех. Чăваш çĕрĕ çинчи вăрмансен иккĕ виççĕмĕш пайĕ йышăнакан Вăрманкас тăрăхĕнчи симĕс ылтăн лаптăкĕнчен пурнăç ылтăнĕ аласа илме пултарать шельма ачи. Ашшĕнех хывнă. Пире, кумашшĕпе кумамăшне, ашшĕпе-амăшне юратнă пекех юратса хисеплет. Ĕçри камантă – кĕрешŭ каманти – начар мар-ха ман. Унпа шурлăха путмăпăр. Хими завочĕ, аш-какай комбиначĕ, типĕтнĕ сĕт завочĕ, вăрман хуçалăхĕ тата ытти предприятисем хывнă налукран шкулсенче, медицинăра, культурăра ĕçлекенсене вăхăтра шалу тŭлеме укçа-тенкĕ çитеретĕпех. Вĕсен умĕнче, Чăваш президенчĕ умĕнче намăс курмастăп, усал ят илтместĕп халăхран».

10

Кашкăр Петĕрне тăван йăвара ăшă вырăн кĕтрĕ пулин те, тăван колхоз кил хушшинче аш татăкки пăрахса параканах тупăнмарĕ. Ашшĕ ура сыртарнă колхозăн çăпата кантри пат татăлнă. Людмила Павловна Белова чăнах та, хăйне амăшĕ ун пирки ăнлантарнă пекех, пуçлăх тилхепине хĕрарăмлах лăнчăлатнă. Ямшăк ларкăчĕнче ĕмĕр тăршшипе арçын ларнă пулсан, хĕрарăм купарчи валли çемçе тӳшек çинче те вырăн çителĕклĕ таранах. Халăхпа ĕçлесси пĕр çынпа – арçынпа выляса йăпанасси мар. Тилхепе пушаннине сиссе ял кĕтĕвĕ самаях ирĕке кайма пуçланă. Тарăнвара пухăва пырсан Крутов çакна хĕрӳ калаçура-тавлашура лайăх курса ăнланчĕ.

– Хĕрарăма сурăх кĕтĕвĕ те итлемест, – те шӳтлесе, те тарăхса калаçрĕ Тимухха, Мулла Микушĕн ывăлĕ. – Эпир, техника çăрăлчăкĕсем, хамăрăн королевăна мĕншĕн ухмах курăкĕн йĕплĕ чечекне парнелерĕмĕр-ха? Техника хулине пĕтерме пуçланăшăн! Тĕп инженера, мăтăсă хуçине, аслă техника кăларса, вĕсен вырăнне хăйсен ялĕсене лартнăшăн. Пире ĕçшĕн сахал тӳлеме тытăннăшăн... Кашкăр аллинче ӳснĕ эпĕр, кашкăр хӳттинех кĕресчĕ. Суйлар хăвăртрах та председательне, кĕртер йĕркине Кашкăр йăвинче, кĕтĕвĕнче. Ачи ашшĕ-амăшнех хывнă пулсан... Ашшĕ пире çăкăр çитерчĕ, ывăлĕ кулач çитеретех пуль ĕнтĕ. Тĕрĕс калаппи эп, тăванăмсем?

Шăв-шав пуçланчĕ. Тымарсен ушкăнĕнчен Тан Ваçлин хăйăлти сасси илтĕнчĕ:

– Тĕрĕс мар! Патшалăх ура сыртарнă, çăкăр çитернĕ пире, Кашкăр Хĕветучĕн ачи пĕччен мар. Çитет сирĕн куçран пăхса! Эпир каллех кашкăр çăварне кĕресшĕн мар. Хамăр майлă пĕрлĕх тăвасшăн. Пуху ирттернĕ, евитлă çынсем уйăрнă. Акă протоколĕ. Крутов хаспатин валли те, сирĕн валли те пур. Сирĕнтен уйрăлатпăр. Эпĕр хамăр пĕр тăван – пĕр тан. Атьăр, тымарсем, килелле?

Малтанах калаçса татăлнă тымарсем пĕр харăс кăшăл çĕкленчĕç те пухăва сайратса хăварчĕç. Суйламалли сасă пурпĕрех çитрĕ. Хăрах çунатти хуçăлма пуçланă хăлат çине ларнă пекех кĕрсе ларчĕ Петр Тельманович Волков ашшĕн ĕçри пуканĕ çине. Майра шăрши ан кĕтĕр тесе çиеле пĕчĕк кавир виттерчĕ.

Уйрăлу йĕрки тавлашу-вăрçăра çур çула яхăн тăсăлчĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн пурлăхне судпа татса пачĕç. Тымарсем «Мир» ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ турĕç. Людмила Белова, мăн колхозра тапкă çинĕ хыççăн, урăх пуçлăх пулма килĕшмерĕ. Ылтăн хутаççин хуçи вырăнĕ пушă тăмасть тенĕ пекех, Миров-Миловсен пысăк хурăнташĕнче ăслă çамрăк тупăнчĕ. Питĕрти ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă, Ленинград облĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕнче ĕçлекен Яков Самуилович Милов экономист-менеджер, Тит Нилович мăнукĕ çĕнĕ хуçалăха тытса пымалли бизнес-проектпах çитнĕ мăн аслашшĕсен тăван кĕтесне. Вăрманкасра администраци кантурĕнче паллаштарчĕ те вăл хăйĕн шухăш-ĕмĕчĕпе, Крутова кăна мар, район ял хуçалăхĕшĕн хуравлă ытти специалистсене те тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Çĕршывĕпе алхасакан революци хумĕсем çинче çирĕп караппах ишме хатĕр ăслă çынсем пурришĕн Максим Максимович хĕпĕртерĕ çеç.

Тарăнварсемпе хурăнварсем тата кайриварсем хăйсен хуçалăхĕ çинче ӳсекен çăпанăн парĕ пăчăртамасăрах юхса тухнăшăн хĕпĕртерĕç. Тымарсене тата авруйсемпе хурашурсене йĕркеллĕ ĕçлеттерсе пуйтарассишĕн вĕсен пӳлминчи ырлăх-пурлăх сахал хухнă-и?

Гриша-Гриль та çĕнĕрен çуралнă пекех йăлкăшса çӳрет. Тельман Федотович колхозран кайсан ăна хăйшĕн ютă хуçа пенсие тухнă Паюк Куçки вырăнне пушар депоне куçарнăччĕ, ямшăкĕ пулма хăйсен ялĕнчи Каргинсен пĕр шĕвĕрккине илсе килнĕччĕ. Халĕ Белова ямшăкĕпе пĕрлех Тымара таврăнчĕ.

Хăйне председателе суйласанах тепĕр кунне Волков мăтăсăна пычĕ те:

– Кĕркури пиччe, çитет пуль айăк пĕрчи якатса. Ямшăк ларкăчĕ пушанчĕ. Эсир мана ача чухне пуçласа уазик рульне хăрамасăрах тыттарнăччĕ, халĕ сире эпĕ шанчăклăнах шанса паратăп хамăн машина рульне. Кĕрсе ларăр, тархасшăн, хам çума.

– Каллех курица-гриль кăшласа-çуллама тытăнатăн ĕнтĕ, савăннипе Конгăна, Патрис Лумумба йăмăкĕ патне ан вĕçсе кай...

Гриша-Гриль хăй çине ăмсанса пăхакан Тимухха Муллин шăл йĕрене чышкă муклашки кăтартса хăварчĕ.

Çамрăк Волков çуркунне ашшĕн малтанхи пусă çаврăнăшне çĕнетсе йĕркелерĕ, валеçнĕ хыççăн юлнă техникăна, Пантин пулăшнипе, пурнăç кĕрлевĕпе тан ĕçлеттерсе ячĕ, тупăш пама пăрахнă сыснасен йышне чакарчĕ, ялти аш-какай комбиначĕ валли çеç хăварчĕ, пушаннă витесене пăрусем самăртма хупрĕ, сăвакан ĕнесене йышлатрĕ, сурăх фермине тĕкĕнмерĕ, муркашсенчен ăратлă такасем туянчĕ. Иртнĕ çулта «Шурăмпуç çăлтăрĕ» районта пиллĕкмĕш вырăн кăна йышăннишĕн вăл унчченхи председательрен хăйĕнчен те ытларах кулянчĕ пуль. Çапах Белова колхоз кассине йăлтах пушатсах хăварман. Хуçалăхшăн те тăрăшнă-ха, анчах шăл витменни ăна хăй мĕн палăртнине пурнăçлаттарайман.

Гриша-Грилĕн хăйĕн хуйхи.

– Ман пĕчĕк танка тылласа пĕтерчĕç те тымарсем, – çул çинче тарăхса пычĕ Григорий Афанасьев, – Пĕрре капитальнă юсаманччĕ. Хăнăхнă та эп Чулхула-Чĕмпĕр машинисене...

– Çĕннине илетпĕр, – аллине çеç сулчĕ председатель. – Сĕт тупăш парать. Аш, кăлпасси нумай сутатпăр. Çĕр улмирен те усси пулать. Руле çеç çирĕпрех çавăрттарма пĕлĕр.

– Пурнăç рульне-и? – пуçне хуçи еннелле пăрса каларĕ шофер.

– Çапла, Кĕркури пичи.

– Астăватăп, çуралсанах Пĕрремĕш Петĕр тесе савăнатчĕç те аçупа аннӳ... Аçу Пĕтĕм Союза чӳречене касрĕ – Соцĕç Геройĕ, Мускавра Аслă канашăн депутачĕ пулчĕ. Эсир те...

– Пирĕн, Кĕркури пичче, ал-ура Мускав сăнчăрĕнчен хăтăлнă чухне, çĕнĕ чӳречерен тĕнчене тухмалла. Атьăр-ха, хăвалар хытăрах!

– Аçу тунă, такăрланă çулпа...

Гриша-Гриль хăвăртлăха ӳстерчĕ.

Пĕрремĕш Петĕр те шухăш чуппине вĕçтерчĕ. Унăн кăçалах «Ударникри» майлă, çĕр улмине çĕнĕлле çитĕнтермелле пулать. «Çирĕм çул хушшинче тарăнварсен те ĕç мелĕ кивелнĕ. Нумай хут кăпкалатнине, çырнине, çум курăксемпе кĕрешнине пула касăсем çӳлленсе пысăкланас вырăнне лутраланса пыраççĕ. Муркаш ен Панклинче вара... Çĕр улми шăтса тухнă чухне касăсене кăпкалатса пысăклатаççĕ те, гербицидсем сапса çум курăкĕсене пĕтереççĕ те, хыççăн ретсен хушшине тивмеççĕ. Фитофторăпа тата колорадă нăррипе кĕрешнĕ чухне кăна тепре кĕреççĕ. Капла тухăç ытларах ӳсет. Панклисем пекех сĕт завочĕ тумалла. Аттене Сăша пуянĕ Миров господин пулăшма шантарнă. Ăна кĕтсе илсенех...»

Кадрсем енчен илсен... Волков Людмила Белова тунă йăнăшсене тӳрлетрĕ. Тымар специалисчĕсем Тарăнвартан тасалсан, Павел Фомич Воробьев каллех хăйĕн мăтăссине таврăнчĕ. Микуш ачи Тимухха та аслă механикрах ĕнтĕ. Çĕр ĕç академикĕ Василий Фомич çамрăк Волкова кĕтсе ывăннă. Хумма Петĕрĕн хĕрĕ Анна Воробьева та çĕнĕ председатель хăйĕн ыйтăвне тивĕçтернĕшĕн тем пекех хавасланчĕ. Кайриварсем те вĕсенчен юлсах каймаççĕ. Хуçалăхăн тĕп ветеринари тухтăрĕ, ĕне фермисен пуçлăхĕсем, аш-какай комбиначĕн

директорĕ – вĕсен çыннисем. Пĕр шайлăн, килĕшӳллĕн, никама кӳрентермесĕр ĕçлесе пурăнаççĕ шурăмпуçсем.

Вĕсем каллех мала тухасса шанать Крутов. Унăн çав вăхăтрах ытти хуçалăхсем ыйту паллипе çыхланса ларнă-ха. Хăçан вĕсен аллине кăшкăру палли тыттармалла-ха? Çак шухăша татса пама пулăшаканĕ акă юнашарах тупăнчĕ. Вăрçăчченхи çулсенче ял хуçалăхĕ валли фосфорит çăнăхĕ ытларах хатĕрлес тĕллевпе Вăрманкасра завод лартнă. Вăрçă хыççăн дуст, гексахлоран, тринатрийфосфат тата ытти хими препарачĕ кăларса ывăннă завод, тăрписене çĕршыври çĕнĕлĕх юшкийĕ хупласан, чыхăнса кайнăччĕ. Мускав реформисенчен химипе те сыхланайман вăхăтрах, Мускав енченех çăлăнăç пăравусĕ Вăрманкас станцине хашлатса çитрĕ. Йывăрлăхран тухма пулăшакансем çемçе вакунран васкамасăр мăшлатса анчĕç, хими завочĕн сывлăхне тĕрĕслерĕç те... Çапла Раççей çĕрĕ çинче нумай ĕмĕре çитекен туслăх юпине çапса çуратнă «Август» фирма Сăр вăрманĕ çумне чĕрĕ тымар янă заводра ӳсен-тăрана хими майĕпе хӳтĕлемелли пурушуксемпе шĕвексем кăларма пуçларĕ, кĕске вăхăтрах пуйса кайрĕ. Патшалăха налук нумай тӳлет, Вăрманкасра çурт-йĕр лартать, поселока хулалла аталантарать, района нумай енĕпе пулăшать.

– Пирĕн хуçасем çĕр илесшĕн, – калаçу пуçарчĕ урамра тĕл пулсан завод директорĕ Свешников. – Ыйтăва тивĕçтерме пулать-ши?

Сысна нумай самăртнипе самăрăлса кайнă районти пĕртен-пĕр совхоз патшалăха аш нумай сутса чапа тухнăччĕ. Советсемпе пĕрлех хуçалăхĕ те çуркуннехи Санар шывĕпе юхса кайнăскер, тĕппипех пăчлансан, совхоза кĕнĕ тăватă ял халăхĕ миçе çул хушши ĕнтĕ асат хуçнă сысна пек айланса пурăнать, çаплах район хуçалăхĕн йĕркине кĕрсе çитеймест. Вĕсемпе мĕн тумалла-ши, мĕнле пулăшмалла-ши унти хресченсене тесе пуçа ватнă хушăрах...

– Шăпах çак ыйтупа сирĕн пата пыма тухнăччĕ, – хыпăнса ўкрĕ Крутов. – Эпĕ хирĕç мар. Мускавсем валли çĕрĕ те, çынни те тупăнать. Ăна-кăна ĕмĕт картине кĕртнĕччĕ-ха. Эп шутланă тăрăх та завод генералĕсен пуçарăвĕ вĕсене хăйсене те, пире те, района та, поселок çывăхĕнчи ял çыннисене те самаях усă пама тивĕç.

Çак калаçу хыççăн ĕç сиккипех чупса кайрĕ. «Август» фирма Вăрманкас районĕнче «Санары» агрофирма туса хучĕ. Çĕрĕ-халăхĕ – вăрманкассен, укçи-тенки – мускавсен. Шанчăклăнах алă тытрĕç. Чăваш сăри ĕçрĕç, Турă çĕршывĕнчен илсе килнĕ улма-çырла çимĕçне çирĕç. Хырăма тăрантарчĕç - пур енĕ те. Темиçе ял çыннине пĕрлештерекен фирма ĕнтĕ виçĕ пин гектар çĕр çинче чи лайăх сортлă тĕш тырă, çĕр улми, нумай çул ўсекен культурăсен вăрлăхне çитĕнтерсе сутать. Завод кăларакан çĕнĕ препаратсене чи малтан кунта тĕрĕслесе пăхаççĕ.

Мускавсем техникăпа тўрех йăтăнтарчĕç. Пуçлăхне те вăрманкассем пуçпах шухăшласа тупрĕç. Хурăнвар хуçалăхĕн картишĕнчех. Тарăнвар ялсовет председателĕнче чылай ĕçленĕ, Тельман Федотовичăн шанчăклă, ăслă инженерĕ пулнă Роберт Игнатьевич Петров хирĕçлесе тăмарĕ хăйне çĕнĕ ĕç вырăнĕ сĕнсен. Вăл пултарасса кам шанмĕ-ха: Петров пур çĕрте те çирĕп йĕрке тума, хушнине тĕплĕн пурнăçлама, çĕннине шыраса тупса ĕçре усă курма пултарать. Хастар, хресчен чунлĕ ертўçĕ, шыравçă, пиçĕхнĕ йĕркелўçĕ. Юлашки вăхăтра палăрнă ял улпучĕсенчен нихăшĕнчен те ўксех юлас çук.

Хими завочĕ хăйĕн им-çамĕ пулăшнипех, хуçисем вăй парса тăнипех çĕнĕ хунав кăларчĕ. Ăна вырăнта шăварса тăраканĕ Владимир Васильевич Свешников ăслă-тăнлă, анлă тавра курăмлă, хастар пулнинчен нумай килнине Крутов аван пĕлет. Нумай енлĕ çĕнĕ предприятире ученăйсем хăйсен ĕçне туни те унăн пĕлтерĕшĕ пысăкки çинчен калать. Свешниковăн наука енĕпе ĕçлекен пулăшаканĕ те доктор-химик, паллă профессор.

Крутов района темле майпа та пулин пурнăç хŭтерекен юхăм шайĕнчех тытса пырасшăн ăшталаннă хушăрах, администраци пуçлăхĕ ял çĕрне такама сутса пуять текен сас-хура халăхра çŭрет. Паянхи аталану политикине, рынок-пасар пушарĕнчен мĕнле çăлăнса тухмаллине ăнланман çынсем кураймасăр, кĕвĕçсе кăлараççĕ унашкал сăмах-юмаха. Вĕсене итлес, пăхса тăрас пулсан, администраци кантурĕнчен паянах тух та ут хăв пĕлнĕ çулпала. Шухăшласан, Максим Максимовича унашкал усал ĕмĕлкесем хăратмарĕç-ха. Вăл, ертсе пырас кантурсенче пиçсе çитнĕскер, чăрмавсем урлă ялтах сиксе каçать. Çав çынсене ăслă ĕçĕпе кăтартса пусарас, йĕкĕлтес тесех мĕн те пулин çĕннине шырать. Пысăк колхозсенчен уйрăлнă хуçалăхсем хăйсем тĕллĕн те, Турă пулăшнипе те, Шуйттан хăратнипе те вăй илеймĕç. Вĕсене çĕр çинчи укçаллă, хăватлă турăсем кăна паян пурăнмалăх та, ыранвиçмине çимелĕх те темĕнле апат та пăрахса пама хатĕр. Хăш енчен çил вĕрнине туйса хăçан çăварна карма çеç пĕл. Çилĕ, акă, Крутовшăн Мускавран Чулхула енне çаврăнчĕ. «Газ-автосервис» вăйĕпе «Çăлкуç» агрофирма уçăлчĕ. «Вăрманкас», «Фавн» агрофирмăсем те çĕр туррисен çăкăрнех касса çисе ŭçеççĕ.

Кĕр сăринче район ял хуçалăхĕн уявне ирттерчĕç. Мала тухнă «Кукша» кооператив пуçлăхне пĕрремĕш преми парнине тыттарнă чухне унăн пуçлăхĕ Константин Плешаков Крутов куçĕнчен чăрр пăхса епрерĕ:

– Ай парас килмест пуль сирĕн çĕн «уазике» пире, совет çум курăкĕ пуснă уйсенчен ылтăн тулăллă уйсем тума пултарнă суха пуç аври тытакансене. Аллу ытла чĕтрет. Шурăмпуçсене çеç мухтаттăрччĕ те вун-вун çул путрят. Пирĕн те пуç тăрринче çиçĕм ялтлатсах тăрать. Епле аça çаптартăмăр пурне те çĕнтерсе? Кукшасен çиçĕмĕ та таврана йăл-ялах çутатать. Эпир те халĕ пултаратпăр, кăмунарсем.

– Маттур, чăннипех эсир паянхи паттăрсем. «Çиçĕм» колхоз ĕмĕрне аялти виççĕмĕш вырăнтан çŭлелле

хăпарнине курманччĕ. Акă вăл пирĕн паянхи пурнăç тĕслĕхĕ! Тепĕр хут саламлатпăр сире, «Кукша» кăмунарĕсене. Тĕслĕх илĕр вĕсенчен, тăванăмăрсем. Салют! – терĕ те администратор, урамра салют кĕрлерĕ. Вăрманкас çийĕн тĕрлĕ-тĕслĕ çутă йăлкăшрĕ.

Фермерсем те çурхи ўсен тăран пекех сăмсаланаççĕ. тахçан сысна совхозĕнче ĕçленĕ Алексей Яковлевич Игнатьев ялти вунă гектар çĕрпе пуçласа ячĕ те хăйĕн хуçалăхне, панкрута тухнă хуçалăхăн пин çурă гектар çĕрĕпе тупăшлăн усă курать, «Элекçи помещик» ятне тивĕçлипех илтрĕ халăхран. Справнă техники те çителĕклех, сăвакан ĕни аллăран иртет, çĕр аллă пăру самăртать, сысна ушкăнне те тытать. Ял çыннине вăхăтра, аванах тўлет. Акă паян вăл Вăрманкасран, хăйне ăмăртура мала тухнăшăн панă чаплă парни – «Нива» çăмăл автомашини çине ларса, юрла-юрлах килне таврăнать.

Çапларах йăшăлтатса тухать «çĕнĕ демократсем» сиктернĕ тарăн шăтăкран Вăрманкас районĕн те, пĕтĕм республикăн та ял хуçалăхĕпе ялăн социаллă пурнăçĕ. Хĕвел çути курăнать-ха.

Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç промышленноçĕн министрне Альберт Григорьевич Большакова, Чăваш Республики Министрсен Кабинечĕн председателĕн пĕрремĕш çуммийĕ пулнă май, президент анлă тĕл пулуканашлу йĕркелеме хушнă. Николай Федоров хăй Европа канашне каять. Женевăра унăн Раççейĕн тĕнчери ларутăрăвĕнчи паянхи çивчĕ ыйтăвĕсене хўтĕлемелле. Çавăн пек пысăк права панă ăна, чăваш ачине. Президент хушăвĕсем çумне администраци пуçлăхĕ хăйĕн хушăвĕсене хушрĕ. Ирхи планерка вĕçленсен, пысăках мар çутă пўлĕме иккĕшех тăрса юлсан, вĕсен хушшинче кĕске калаçу пулса иртрĕ.

– Халăх ăслă пулчĕ вĕт, – Большаков мĕн каласса кĕтнĕн чеен пăхса сăнаса илчĕ пўлĕм хуçи, пўрнисемпе сĕтеле шакăртаттарса.

– Мĕн енĕпе? Тӳрех пуçпа çавăрттарса илеймерĕм-ха, Петр Степанович, – тăма пуçланăскер, пукан çине лаках ларчĕ Большаков. – Эсир...

– Тавçăрса илтĕр-çке, Альберт Григорьевич. – Суйлав пирки эп.

– Ăнлантăм.

– Çук-ха, ăнлансах пĕтереймен эсир ман шухăша. Президент суйлавĕнче пирĕн халăх хăйĕн ăсне кăтартма пултарчĕ, тесшĕн эпĕ хам енчен.

– Эсир суйлав ĕçĕпе такамран та ытларах ĕçлетĕр те, çитменнине вăйлă социолог та, пуринчен те ытларах пĕлме кирлĕ ĕнтĕ. Ялан ăслă шухăшлав сирĕн пуçра. Наука кандидачĕн философлах палăртмалла – тупмалла пуль пурнăç чăнлăхне.

Краснов хăвăрт тăрса чӳречерен пăхрĕ. Большаков та унпа пĕрлех çĕкленчĕ. Умра вăрман пек йывăçлă сквер, леш енче – Ленин палăкĕ. Анлă лапампа урам урлă – тинтерех кăна уçнă шĕвĕр тăрăллă, хĕреслĕ часовня. Альберт Григорьевича çак самантра коммунистсен çул пуçĕ Турра пуç çапма васкана пекех туйăнчĕ. Ун пирки çăварне уçма та ĕлкĕреймерĕ, администраци ертӳçи:

– Хĕрлĕ «оппозиционерсем» хыççăн та тапăлтатмарĕ халăх, Чăвашри коммунистсен пуçлăхĕ пулнă, халĕ Раççей коммунисчĕсен партийĕн Чăваш ертӳçи хыççăн та каймарĕ, хăйĕн шухăшĕпе Федоров çулĕпех уттарчĕ, ăна иккĕмĕш хут президента суйларĕ. Мĕншĕн?

– Халăхшăн, республикăшăн нумай усăллă ĕç тунине пула, паллах.

– Ĕненчĕç Николай Васильевича суйлавçăсем. Сăмах парса пуш параппан çапакан «оппозиционерсем» яка пăр çине тăрса юлчĕç. Малашне вĕсем çĕнтерӳ ялавĕн аври вĕçне те кураймĕç. Нихçан та. Вăйлă политик, ăнлавлă, тавçăруллă, мăн малашлăхлă стратег, шутсăр нумай, канма пĕлмесĕр, çĕнĕлĕхшĕн ĕçлекен ертӳçĕ вăл пирĕн президент. Унченхи пуçлăхсем Мускав робочĕсен вырăнĕнче шутланнă пулсан, вăл хăй

мускавсене тёпёртеттерме те, вёсенчен республика валли укçа-тенкипе ыттине те хăпăтса илме пултарать. «Оппозиционерсен» ертýçи президент пуласшăнччё. Ăна суйланă пулсан, республика мёнле аталанатчё-ха?

Большаков аптăраса ýкрё, çапах та, хуравларё:

– «Оппозиционерсем» суйлавччен чăваш халăхне тулăх пурнăç шантарнăччё. Производствăна виçё хут, ёç укçине икё хут ýстересшёнччё...

– Пуш сăмах çаптарни çеç пулнă вăл. Унпа малалла каяймастăн. Хальхи пуçлăхăн ёçё совет влаçё вăхăтёнчи пек пурне те вёрентсе камантласа çýресси мар вёт?

– Ăна ăнланатăп-ха. Пурнăç кăткăслансах пырать. Пурне те вырăнта хамăр пуçпа татса пама тивет.

– Эсир те паян Вăрманкасра ял хуçалăх ыйтăвёсене президент программинчи пекех татса парăр. Ун патне пирён, администраци çыннисен, тепёр хут таврăнмалла ан пулса тухтăр. Кăштах тăхтăр-ха? Çапах сире ман тахçанах ятламалли пурччё.

– Мён айăпа кёнёччё-ши эпё?

– 1993 çулхи раштавра Аграри партийён списокёпе Раççей Патшалăх Думин депутатне суйлансан, депутат мандатне илме килёшмесёр ухмах пултăр. Çаваншăн.

– Мускава кайсан, манăн ёçрен пăрахмаллаччё. Ман хамăр патрах тăрăшса ёçлес килетчё. Палăртнисем...

– Пустуй сăмах. Сирён вырăн Думăра пушă юлмарё. Кайран та сире валли кунта Чăваш область профсоюзёсен совечён пуçлăхёнчен пысăкрах та хуравлăрах ёç тупăнатчё. Çапла ăссăрла хăтланнипе хăвăр суйлавçăсене панă сăмахсем пушă тырă пучаххи вырăнне кăна тăрса юлчёç мар-и? Çитес Дума пирки те тăнлăрах думать тăвăр.

Чăнах та «думать» тумалли пур-ха унăн. Вăл каллех депутат пуласшăн. Суйлавçăсем умёнче хăйён пулас программине сарса çýрет.

Çул тăршшипе шухăшласа пычё кандидат ун çинчен. Дума депутатне суйлансан Большаков кёске вăхăтрах мён

кăна тума ĕмĕтленмест пуль? Унăн ватă çынсене пенси, бюджет тытăмĕнче ĕçлекенсене ĕç укçи вăхăтра тӳлеттерес, халăхран илекен налука пĕчĕклеттерес, хресченсене çăмăллатнă йĕркепе кивçен укçа партарас, ял хуçалăх продукчĕсене патшалăх заказĕпе туянасси çинчен саккун йышăнтарас, апат-çимĕç тирпейлекен предпрятисене пур енлĕн пулăштарас, хресченсене ял хуçалăх техникине кивçенле суттарас килет. Унăн шучĕпе медицина пулăшăвĕ тата пĕлӳ илесси тӳлевсĕр пулмалла...

Сăмах пани – çăмах çини мар. Çăмахне те малтан пĕçермелле. Пĕçериччен – мĕнрен пĕçермеллине хатĕрлемелле. Вăл йăлтах тĕш -тырăпа, аш-какайпа, сĕт-çупа çыхăннă. Вĕсем мĕн чухлĕ ытларах – халăх хырăмĕ те тутăрах. Çавăншăн ĕçлет те ĕнтĕ вăл патшалăх кантурĕнче. Çавăншăн ĕмĕтленет те Патшалăх Думинче яла пулăшмалли саккунсем йышăнмашкăн.

Президент ăна пысăк ыйту хатĕрлеме хушнăччĕ. Нумай ларчĕ вăл унпа, нумай çынна пулăштарса ĕçлеттерчĕ, вара Агропромышленность комплексĕнчи реформăсене аталантарасси çинчен республика пуçлăхĕн указĕ тухрĕ. Çав ыйту тавра виçĕ сехет хушши чăваш ташши ташларĕç районсен пуçлăхĕсемпе вĕсен «ял министрĕсем», хăйĕн тата ытти министерствăсен, банксен явапла çыннисем паян. Реформăсем ăçта мĕнле пурнăçланнине, ял хуçалăх предприятийĕсен финанс лару-тăрăвне, парăмсем татас ыйтусене тавлашса та, çураçса та ăнăçлă татса парасси пирки шавласа илчĕç.

Канашлăва ахальтен Вăрманкасра пухмарĕç. Реформăсем вĕсен республикăра чи малтан пурнăçланма тытăннă-çке. Ытти çĕрте те хускану пурри сисĕнет. Халĕ ĕнтĕ – çулĕ паллă. Вăрманкасри агрохолдинг хуçи Юрий Попов хăналанă хăватпа кĕрлеттермелле çеç.

Агропром реформаторĕсем мĕнле килнĕ, çавăн пек васкавлăн саланчĕç. Большаков Крутов патĕнче тытăнса юлчĕ. Сăмах май вăл администраци пуçлăхĕнчен ыйтрĕ:

– Сирĕн ял кулăшçи еплерех пурăнать?

– Карачăм мучи-и?

– Çавă. Мана Мăн Альпă хушма хушамат парнелени.

– Сире халăхра халь те Мăн Альпă текенсем пур. Çӳрет-ха ман аслă, ăслă тăванăм. Юман пекех çирĕп. Ĕçне те пăрахман. Волков ăна хĕрхенсе çамрăк утарçă тупса панă. Мĕн, курас килет-им ман асаттене?

– Тавай тымаралла вĕçтерер. Мана вăл хăнана чĕнсе çыру янă. Ватта кăмăл тăвас. Пĕрлех «Мир» хуçалăхĕпе те паллашас.

Вăрман çулĕ уя тухсанах чиркӳ тăррисем йăлкăшса илчĕç.

– Тымарта та чиркӳ уçăлчĕ-ха апла, – малалла пăхса тутине ирĕксĕртереххĕн уçса каларĕ Большаков.

Крутов хуравларĕ:

– Америка мулçийĕ пулăшрĕ. Ырă кăмăллă çынах Миров господин. Хăйĕн йăх-тымарне хăртасшăн мар.

– Варнава митрополит каласа панăччĕ мана хăй кунта чиркӳ уçма килни çинчен. Аякра пурăнакан пуян чăваш сахал мар, хамăр патра та пур вĕсем. Хăйсен ялĕсене пулăшас текенсем çеç сахал.

– Хытă эпир, чăвашсем – тимĕр пăрçасем, вăл шутра эсир те, Альберт Григорьевич, эпĕ те. Пĕтĕм халăха хурласа мар, халăхра авалтан куçса пыракан çуклăх, нишлĕх йăли-майĕ юнра сыхланса юлнăран пуль, тетĕп. Миров господин вăл, темиçе халăх юнĕпе пăтранса пĕтнĕ пулин те, хăйне эпĕ чăвашах, чăвашсене юрататăп, вĕсене виличченех пулăшма хатĕр, тет. Волковсене сĕт-çу завочĕ лартса пачĕ. Аслашшĕсен ялне Сăшари пек чаплатасшăн. Чиркӳрен пуçларĕ те... Вăл хушнипе хурăнташĕ Яков Самуилович Милов аслă мучăшĕн ĕçне малалла туса пырать. Çĕлен шывĕ çинче пилĕк пĕве пĕвелеттерчĕ: пĕринче кăвакал, тепринче хур, ун хыççăнхинче пулă, ун çумĕнчинче нутрипе ăтăр, чи тасинче – шыва кĕмелли. Ĕлĕк хăйсен пулнă йывăç заводне çĕнетрĕ. Килнĕ чухне куртăр пуль? Милов патне кĕрер-ха?

Милов господин-хуçа çуккă иккен, ют патшалăха кайнă.

– Аса илтĕм. Министерствăра эпир вун пилĕк çамрăка меценатпа маркетинга тата финанспа кредита ятарласа вĕрентрĕмĕр. Вĕсене Сăшана стажировкăна ятăмăр. Чăн та, Миловчĕ-çке вĕсен асли? Унпа калаçнă хушăрах ăнлантăм: питĕ тăнлăскер, паянхи усламçă.

Быстров райком шоферне Ваçли Михалча, хăйĕнчен ăслăрах пулма хăтланнăшăн, васкавлăн пенсие янăччĕ, ун вырăнне Салакайăк Йăванĕн ачине илнĕччĕ. Тăванне, Вăрăм Ваççана, Крутов «Атăл» çине лартрĕ. Пĕрле кăмăллăн çÿреççĕ. Вăрăм Ваççапа хăйсем хыçĕнчен пĕччен пынă Шупашкар шоферне вăрман хĕрринче хăварса вĕсем çурран утрĕç.

Илем кĕтесĕ вĕсене уçă сывлăшĕпе хăй патнелле туртрĕ. Тымар енчен вĕрекен вичкĕнрех çил ăвăссемпе çăкасене хывăнтарма пуçланă. Çу каçипе шăпăлтатнă çулçăсем, туратсенчен хурланчăклăн уйрăлса, хĕвел шевлипе чÿхенсе хуллен вĕçе-вĕçе ярăнаççĕ. Ланкашкаллă çул хĕррипе уплюнкка карталанса кĕтет. Çерем çийĕн юлнă урапа йĕрри вĕсене шалалла илсе кĕчĕ.

Вĕлтрен кайăкĕсен юррипе киленсе пынă май, вĕсен хăлхине юрă сасси кĕме пуçларĕ:

Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт, ылтăн хурт!
Мĕншĕн эсĕ нăрлатăн, нăрлатăн?
Ах, шухăшăм, шухăшăм, шухăшăм?
Мĕншĕн эсĕ пăтранан, пăтранан?..

Караслă рама тытнă Карачăм мучи, çулçă чăштăртаттарнипе-и, тăрук пуçне çĕклерĕ те, çинçе кĕвĕллĕ сассипе юррине вĕçлерĕ:

Сарă хитре хĕрĕшĕн, хĕрĕшĕн
Мĕншĕн ăша çунтаран, çунтаран?

Ют çынсем çумне вĕлле хурчĕсем сырăнчĕç. Хуралçăсене тивмесĕр, килнисем кулкаласа утарça алă пачĕç:

– Аван-и?

– Сарă хитре хĕр çунтарма пăрахмасть-ха апла яш чĕрӳна? Сывлăх сунатăп.

– Ай-вай-вай камсем килчĕç, паттюшки. Мĕнле çитме пĕлтĕр? Мелиссапа пыл курăкĕнчен тата сар çип утинчен вут çине чей хуранĕ çакса яр-ха, Ваççук? Ай, калап çав паян хĕвел пайăркаланса пит ăшшăн тухрĕ тесе. Тем тесен те сирĕн ятпах пулчĕ ку. Пурнасси.. аванни качки, хамăр майлах. Хĕпĕртетĕп те, хурланатăп та. Пĕртен-пĕр савнийĕм, Хурăн Ульянĕ те вĕçсе тарчĕ манран леш тĕнченелле. Хам унта çитиччен пĕлĕте йăтса антармасан юрать карчăкпа иккĕшĕ тĕл пулсан. Сывлатăп-ха. Хуртсем çывратса ямаççĕ. Хамăр та хурт пекех чакаланатпăр. Хĕле хатĕрленме пуçларăмăр ĕнтĕ, – тулли рамăна ытти рамăсем çумне таянтарчĕ Салакайăк Карачăмĕ.

– Вĕллерен кăлартăр-им кусене? – ыйтрĕ Крутов.

– Янкăр уяр та, хĕвел питтинче типĕтсе юлас тетпĕр. Авă, карас çумне пылĕ те кăштах çыпçăнса юлнă. Сая ярас килмест. Ха, сĕрлеме пуçларĕç, пĕчĕккĕн пуçтараççĕ. Юлашки тунă вĕçев вĕсемшĕн. Атьăр, иртĕр малалла? Тĕпелелле, темелле-и?..

Кăвайтă хуçи, Крутовсен ял кӳршийĕ Ваççук, хуран айне типĕ туратсем пăрахрĕ те:

– Ĕçленĕ хушăрах концерта та хатĕрленетпĕр-çке, – терĕ пурне те илтмелле саспа. – Макçăм пичче пĕлет-ха пирĕн халăх хорĕ мĕнлине: юрăпа ташă ансамблĕ. Кăçал эпир те саркаланса тухасшăн-ха Шупашкар сцени çине республика уявĕнче. Эсир пирĕн репетици вăхăтнех çитрĕр. Карачăм мучи юрлать, эпĕ савни хĕрĕпе ун тавра ташласа çаврăнатăп. Ак çапла.–Утар хуçи хăйĕн пулăшаканĕ вучах тавра епле ăста сиксе çаврăннине хăнасемпе пăхса киленнĕ хыççăн карттусне хыврĕ, шаклаланса кайнă пуçне шалпар çанă вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ.

– Çанталăкĕ пирĕн майлах-ха. Çил Кӳлхĕрри еннелле çаврăнмасан, каçчен рамăсене типĕтсе кĕлете кĕртетпĕр.

Кӳлхӗрри кӳлли час-часах мăшкăллать пиртен, тӗпсӗр тинӗс пекскер. Шывӗ нумай, çапах çумăр шывне таврана пӗрешкел валеçмест. Ах, çанталăка ӗнтӗ ăна... Çапах кăçал пулăшрӗ-ха турри, – хӗвел çине тинкерсе сăх сăхрӗ мучи. – Аптрамарăмăр. Пылӗ пулчӗ. Тонна çурă. Сутмаллăх та, ял çынни валли те, хăйсене хӗл каçмаллăх та. Вӗллен те хӗл хырăмӗ аслă.

Утара çул икӗ пая уйăрать. Большаков унталла-кунталла пăхнине асăрхарӗ пулас та ват сухал, аллисене икӗ еннелле сарса:

– Ак çакăнта пирӗн, Мăн Альпă, – тесе хушса хучӗ ватă, – сакăр вунă çемье. – Ытлашши çӗрме пуянах темелле мар та ӗнтӗ вӗсене, çапах та мухтама пулать. Виçӗ пăта яхăн пыл туса пачӗ кашнийӗ – таса пыл. Кутран тапкă лекменччӗ те ку таранччен хуçасенчен... Çăкалăхпа юманлăхри çакă пысăках мар уçланкă мӗн чухлӗ эмел туса паман-ши? Асрах-ха, пӗрлешӳллӗ хуçалăха кӗрсенехчӗ, Шашка Пашки хуçалла камантласа ялта утар карти çавăрчӗ. Эпир те килти пилӗк вӗллене çемйипе пӗрле патăмăр. Мӗн тейӗн, вăтăрмӗш çулсенче килӗрен тенӗ пекех пыл юхтарнă-çке. Халӗ ăна пирӗн çине шанса ял çыннисем те канлӗн çулласа лараççӗ пыла сӗтел хушшинче. Нухрат Кавӗрли, ялта пӗр хыт кукар, хурт вӗллисене шеллерӗ. Турă пӗлет ăна, шартлама сивӗре хӗл каçаймарӗç пыл çемйисем, вун пилӗк вӗллерен виççӗшӗ кăна чӗрӗ юлнă. Çапла вăл халăхран уйрăлсан, сана накасать тăваканни тупăнатех.

– Ача чухне эпир кунта хамăр ӗнесене кӗтеттӗмӗр, çуркунне ака кăмпи тататтăмăр. Пире Петӗр мучи йыттисем çывăха ямастчӗç, хурчӗсем те сăнăлатчӗç, – аса илчӗ Ваççук.

– Числов Петӗрӗн ашшӗ манашкалах, вилес патне çитичченех айланчӗ кунта. Кашкăр Хӗветучӗн ачи Тельман, хама Шупашкартан хăнана килсен çăкăрпа пуçса çиме пӗр катка пыл пултăр тесе шӳтлекелесех тепӗр утар çавăрчӗ. Кунтах, инçе мар, пирӗннинчен

те анлăрах уçланкăра. Тулĕк колхозсем уйрăлсан ăна тымарсем туртса илчĕç. Ах çав уйрăлу арпашăвĕ-харкашăвĕ вăл...

Пыл-шерпет ялĕнче лăпкăлăха пăсма юраманнине аса илтернĕн чăрсăр хуртсем сăмса умĕнчех нăйласа вĕçеççĕ. Çапкаланма çеç ан пуçла, вара пĕтрĕн. Ырă кăмăл туйăмĕпе йышăннă хуçасем хăнасене савăк кĕвĕпе, тутлă шăршăпа ырă тăваççĕ.

– Чей хатĕр! – салтакла пĕлтерчĕ Ваççук.

– Юрĕ. Хуртсен те хырăм тутă, пирĕн те тутă пултăр. Юмахпах тăрантаратăп мар-и? Кĕрер-ха лупас айне – «Нектар» кафене. Ман пувăр хатĕрлерĕ пулас пире мĕн-мĕн кирлине.

Çăка хăминчен çапса ăсталанă сарлака вăрăм сĕтел ури аванать пуль: мĕн кăна лартса тултарман. Хăнасене чĕнтĕрлесе, тĕрлесе илемлетнĕ чăваш кĕпи тăхăннă Крахьян: «Хăна пулăр, ырă çынсем», – тесе ăшшăн кĕтсе илчĕ те вĕсене çатан пукансем еннелле аллипе сулса кăтартрĕ.

– Хам тахçан, Максим Максимович яла ĕçлеме килнĕ çулсенчех ăсталанă тăм кăкшăмри карчăк тунă «Крахьян кулли» ятлă хвирмăллă шерпетпе уçар кĕрекене, – тесе утар хуçи йывăçран тунă çуллĕ куркасене тултарчĕ. – Çулти таса турă ăнтарса пытăр пире. Тав сире, хаклă хăнасене. Çавăрса хурар хамăрла – чăвашла.

Салакайăк Карачăмĕн хуçяйкки-официантки сĕтел тавра вăшталанса çурет, тутлăран тутлă апат сăйлать:

– Хир сыснипе пăши, куян ашне авăртса пĕçернĕ бифштексне çийĕр-ха. Старикĕм ăсанне тытсанах сирĕн валли типĕттерчĕ, Альберт Григорьевич. Эсир, Максим Максимович, пĕлтĕр пирĕн патра карăк ашĕ пĕрремĕш хут тутанса пăхрăм тенĕччĕ. Халь ăна тĕтĕмлесе хатĕрлерĕм. Пĕрре çийĕр тăраниччен. Вăрман чăххи те тăварланă, акă вăл, тархасшăн. Поросятина по-американски те пур. Миров господин шутсăр кăмăллать

олива çăвĕнче пĕçернĕ сысна çурисене. Хамăр ял хуçалăх пĕрлешĕвĕнчен туяннă сурăхран шăрттан пĕçернĕччĕ. Лавккаринчен пин хут тутлă. Анчах йӳçсе çитнĕ кăрăç, шĕкĕлченĕ мăйăр...

– Тур калашле виççĕ тенĕ пек, виç апустаçлă Турра ыр туса, çавăрса хурар-ха виççĕмĕш куркине те. Ман «Крахьян кулли» ураран ӳкермесен, вăйлă патшасем пулатăр эсĕр малашне те, юратнă ачамккăсем, – тесе çилампах пурнăçлаттарчĕ кĕреке хуçи ваттисен йăлине.

Большаковпа Крутов пылне те, сĕннĕ пур апатне те тутанма тăрăшрĕç.

– Тавах сире пирĕн апат-çимĕçе кăмăлланăшăн, хаклă çыннăмăрсем. Çут çанталăкра ĕнтĕ пĕрне-пĕри тăрантарса усрамалли йĕрке, тĕнче тытăмĕн йĕрки тетпĕр-и, пурах, – хушса каларĕ Карачăм мучи. – Мĕнпур чĕр-чун пĕрне-пĕри çисе тăранса, пĕрне-пĕри аталанма-чĕрĕлме пулăшса шайлашăнса пырать пуль çав.

– Эпир те хурт пăхне çиетпĕр те, – пуçне пăркаласа илчĕ кулач чĕлли çине пыл юхтарнă май арăмĕ. – Çĕр сĕткенĕн чи имлине, чи техĕмлине, чи тутлине пухать вĕт çав пĕчĕк «фабрика»: этем валли, упи-утаманĕ валли чĕрĕлĕх хупса хурать хăйĕн тĕлĕнмелле пӳлмине. Этем геометри палли тенĕ пӳлмесен вăрттăнлăхĕ епле-ха çак пĕчĕк чун ăслайĕпе маçтăрланать?

Вĕсем мĕн каланине тăнлакан Большаков калаçăва хутшăнчĕ:

– Эпир хамăр та Анлă уçлăхри тĕлĕнтермĕшсем. Çак тĕнче тытăмĕнче мĕн пур – пурте пĕр пĕтĕм çыхăнура. Çав çыхăнăвăн пĕр пĕчĕк пайĕ пуль вăл пыл хурчĕ маçтăрлакан карас эрешĕ – пĕр танлăх та пĕр виçеллĕ пӳлме картийĕ.

– Тĕп-тĕрĕс, Мăн Альпă, – пуçне пăркаларĕ утарçă. – Пыл та пирĕн çăвара çумăр пек пĕлĕтрен тăкăнмасть. Эпир хамăр та чечек, çулçă чăмласах пылланаймастпăр. Турă панă çак хаяр вĕçенсем пирĕншĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вĕсемсĕр эпир... çыхăнăвĕ пурах пуль çав, ачамсем. Çав çыхăнуран вĕлер те уйрăлаймастпăр, хурт-хăмăр çĕршывĕнчех пылланса ĕмĕре ирттеретпĕр ĕнтĕ. Этемĕн ĕмĕрĕ, вăтамран çĕр çул, тейĕпĕр. Шутласан, нумай та мар вăл, анчах çуралса ĕмĕр пуçланă пек, çĕрле вăрансан малалла тапăлтатса пăхрăм та, умри çул хĕвелтен çутатаканни, сувçем сахал тăрса юлнă. Хут вĕренме пуçланă вăхăтри пек пӳрне çине пӳрне хурса пăхрăм та... тата манăн...

– Тата тепĕр çĕр çул, асатте! – ыталаса илчĕ ăна Крутов, Салакайăксем пек каласан, Владик Васильевич Воробьев.

– Эс мана, шăллăм, вилĕмсĕр тăвасшăн-ха та... Итлĕр, пирĕн Салтаккай-Салакайăк йăхĕнчен икĕ арçын та виçĕ хĕрарăм çĕр çул ытла пурăннă. Мĕншĕн-ха ман вĕсен ятне çĕртес? Пурнатпăр-ха, Владик–Макçăм, çĕнĕ ĕмĕре çĕмĕрттерсе кĕмесĕр Вилĕме çывăха ямастпăр. Пуçтартăр вăл пĕтĕм йăхтăр-яхтăра. Вĕсем пурпĕрех никама та усă кӳмеççĕ, пурнăç чуппи умĕнче чаркăç тытса тăраççĕ. Нумай пакăлтатнăшăн мана эсир каçарăр. Ыйтмалли пур-ха?

– Мĕн пирки? Мĕн пĕлесшĕнччĕ? – шур сухал патнелле ăмăртмалла чупрĕç ыйтăвĕсем.

– Хамăр Вăлатик, кала-ха, районта миçе çын пур çĕре çывхараканни е çĕртен иртни?

Крутов пӳрне тӳртĕшĕпе сăтăрса çӳллĕ те сарлака çамкинчен пăчăртаса кăларнине пĕлтерчĕ:

– Çĕртен иртни çуккă, çĕрти те курăнмасть, çĕре çывхараканнисенчен пĕрийĕ вăл – ман асатте.

– Мăн Альпă тата мĕн калать?

Большаков та пуç кунтăкĕнчен хаçат хыпарне туртса кăларчĕ:

– Хамăр чăвашсенчен кам мĕнлине пĕлместĕп, анчах Совет Союзĕн юлашки çулĕсенче çĕртен иртнĕ çын виççĕр миллиона яхăн çын çинче те çичĕ пин кăна пулнине ас тăватăп. Хальхи Раççейĕн çĕр хĕрĕх

миллионĕнче тата хамăр Чăваш çĕршывĕнче те миçине татсах калаймастăп. Çын пурнăçĕн шайĕпе эпир африканецсемпе ăмăртатпăр. Унта вĕсен этем ĕмĕрĕ çирĕм сакăр çулпа танлашаканни те пур. Хамăрăн вара... арçынсен ĕмĕрĕ утмăла та çитмест, хĕрарăмсен – çитмĕлелле çеç çывхарать.

– Турă усалтан сиртĕрех, – сăх сăхрĕ Карачăм мучи. – Упа та пĕрре çавăрса илсен утара, вĕлле хурчĕсене йăлтах аркатать, пăсара ерсен – пĕр чăхсăр хăварать, йĕкехўре армийĕ кил-çурта кăшласа ярать. Çавнашкал патшисемех килчĕç пуль çав çĕн тĕнчене. Шалт аптрамалла. Хамăр та пурăнма пĕлместпĕр. Тем ашкăнатпăр. Старав упрăс шиçни кирлĕ. Пыл пĕрмай çимелле те, чăх тукмакки кăшламалла та, хушăран «Крахьян куллине» тутанса пăхмалла та, сурхурире сурăх урипе пĕрлех хĕр урине те тытса ачашламалла та...

Вăр-вар Крахьян, упăшкине мăйран çавăрса тытса, шўтлерĕ:

– Хамăрăн йĕм кантрин тытăмĕ, температури-темпераменчĕ, юн пусăмĕ йĕркеллĕ пулсан – этем те, çемье те яланах сывă.

– Хушса калама юрать-и? – куçĕсене мăчлаттарчĕ Салакайăк.

– Тархасшăн? Итлетпĕр. Типнĕ каска вĕллинчен хытнă карас татăкки кăларса парать пуль-ха... – илтĕнчĕ çумрах.

– Йăлт хамăртан килет. Чăваш хавшак çын – ăвăс пекех нумай çул пурăнаймасть текенсем çине эпĕ лач! кăна суратăп. Çаплах калатăп: чăваш вăл – юман пек çирĕп. Ман пек. Илтрĕр-и, енералсем? Чăваш халăхĕ ман çулсем хыççăн хăвалакан этем йăшăлтатăвĕ пултăр. Çав ыйтăва упасемпе йĕке хўресем татса параймаççĕ, сирĕннех, кăлава нухайккине алăра тытакансен вăшталанмалла, хĕрў çатма çинчи пек ташламалла...

– Ай! – тесе уçă кăкăрĕнчен сăнăланă пĕчĕк хурта çапса ўкерчĕ Крутов.

Сылтăм тăнлавĕнчен сăнăланă хурта ывăçра вакласа пăрахрĕ Большаков.

Вĕсем ăшталаннине пăхса тăракан Карачăм мучи сухал ăшĕнчен куллине кăларчĕ:

– Эхĕ-хĕх! Халăхшăн, халăх ĕмĕрне тăсассишĕн çунаççĕ вĕсем те. Ăнлантăр-и халь пыл хурчĕсемпе утар енералĕн шухăшĕ пĕрешкеллине? Пыл хурчĕ те манран юласшăн мар, анчах унăн, ачаш чунăн, ĕмĕрĕ кĕске. Сахал вăхăт тăрăшса ĕçлет, анчах пире çав вăхăтрах нумай усă парать. Хĕрӳ вăхăчĕ те унăн пĕр уйăх ытларах кăна. Тавралăх пин-пин тĕслĕ чечеке ларсан, çĕртме уйăхĕн варринче улăх-çаран, йывăç-курăк пĕр кĕвве куçать – çĕр пуянлăхĕн кĕввине. Сарă чечек тăрринчи ылтăн хурт хăйĕн кунцертне парать. Пăхатăп та сирĕн çине, вĕлле хурчĕсем пекех юрă кĕвви ĕнĕрлес килсе каять. Унччен, унччен вара пирĕн...

Хатĕрленӳ ĕçĕ мĕн чухлĕ утарçăн! Çăвăр янă амасене уйрăм вĕллене хупасси, çемьене чир-чĕртен хăтарасси, вĕсен пĕр-пĕрин хушшинчи мире сыхласа хăварасси, пухнă пыла вăхăтра уçласси, хĕл каçма вăйлă çемьесем хатĕрлесси, усал-тĕселрен упрасси, çуркунне вăхăтра апат парасси тата тем те пĕр тăвасси йăлтах утарçă ăсталăхĕнчен, вăй-халĕнчен, кăмăл-туйăмĕнчен килет. Кашни вĕллен, çемьен кун-çул шăпийĕ унăн пуçĕнче. Ах, йышĕ сахалтарах-и ку çемьен, чирлĕ мар-и, ами икĕ çултан иртсе ватăлса кайман-и, йышĕ пĕр тăванланман-и, пылне сахалтарах пама пуçламан-и?..

Пуш уйăх вĕçнелле вĕллесене кĕлетрен кăларса сивĕсем çитсе çапиччен кĕлете кĕртсе лартичченех вун-вун ыйту, вун-вун шухăш. Этемĕн, выльăхăн пĕрремĕш пулăшу паракан ятарлă служба пур пулсан, пыл хурчĕшĕн вăл – утарçă. Тем те пĕлмелле унăн.

Хурт-хăмăр вăрттăнлăхĕ ăçта пытанса пурăннине те çут çанталăк ăшĕнче чунĕпе-туйăмĕпе ăнланса, пĕлсе çитнĕ темелле пек ĕнтĕ Воробьев утарça та. Çапах та çанталăк юсаса илет иккен пурне те. Унăн

хĕрхенӳсĕр пушши виçĕм çул Хурăнвар утарне кăна мар, Чăвашри çĕршер утара йĕпе пушшипе тĕп тумаллах туртса çапнăччĕ. Йĕпе-сапара нишленсе юлнĕ çемьесем утарĕ-утарĕпе масар пулса юлчĕç. Салакайăк Карачăмĕн те кĕркунне вĕçсе тухса çӳреймен, ама сапса хăварайман, хĕл каçмалли çирĕп йыш туса çитереймен вăтăр çемье вилнĕ.

– Вĕллене хупнă хыççăн кĕркуннех пĕтнĕ вĕсем, – шанчăксăррăн алă сулчĕ Карачăм мучи. – Малтанах пĕлтĕм, вĕсен йыш пухăнмарĕ. Нумай йышли апат сахал пĕтерет, начарри – тӳрех ĕмсе ярать. Вĕсем упшурниксем – сăрăсем. Çавăнпа çанталăка сăнасах тăратпăр. Çурла уйăхĕн çурринчен пуçласа авăн уйăхĕн варриччен сапнă пыл хурчĕсем самай патвар сыхланса юлаççĕ. Çур çул ытла вĕллере пурăнмалла-çке вĕсен. Унтан тухсан вĕсем, пыл пухса параççĕ те, вăтăр-хĕрĕх кунран пĕтеççĕ.

Утарти кашни утăм, сас-чĕв, тĕрлĕ шăршă-маршă хуртсемшĕн пит сисĕмлĕ иккен. Çывăха килнĕ ют йытă, тискер кайăк, ӳсĕр-какăр этем те çиллентерет пыл тăвакансене. Пĕрре вăрçтарсан, виç-тăват кунсăр лăпланаймасть хурт çемйи. Хăйсем те çавăнпа питĕ тимлĕ, асăрхануллă.

– Эпир те тăрмашатпăр та çынсемпе... эсир вара чăннипех хурт-хăмăр психологĕсем, Герасим Филиппович, – мухтамасăр чăтаймарĕ Большаков.

Мучин ăшра кулни палăрать, унăн куçĕ çивĕчленет, çамкине шăлса илчĕ те вара вăл унпа килĕшрĕ:

– Çаплах та пуль çав, ачамсем-енералсем. – Вĕсен чĕлхине пĕлмесĕр, вĕсене хамăра пăхăнтарса ĕçлеттереес çук. Кашни çемьен уйрăмлăхне туймасан, эпир кунта кирлĕ те мар. Хурта ăна ĕçлеттермелле, хăй вăхăчĕпе унран уссине курса юлмалла.

– Мана радиопа тухса калаçнă пĕр утарçă халапĕ аса килчĕ, – терĕ Максим Максимович. – Вĕлле хурчĕ мĕнле ĕçлет – утарçă та çапла ĕçлет, тесе пакăлтатрĕ вăл...

Аслашшĕ ăна тӳрех пӳлсе лартрĕ:

– Йăлтах урăхла: утарçă мĕнле ĕçлет – пыл хурчĕ те çапла ĕçлет. Нумай ăстаçăсемпе пĕрле канашламалла-тавлашмалла пулнă манăн. Респупликă хвурăмĕсене ай-йай вăйлă утарçăсем пухăнатчĕç. Шел, çав тĕл пулусене йĕркелеме мантăр эсир, енералсем. Иксĕре те пырса тивет ку – çамкаранах. Вăрманкас тăрăхĕнчи утарçăсене пушшех манмастăп, мĕншĕн тесен вĕсем çывăхрах. Вĕсен сĕнӳ-канашĕ мана та ĕçре усă панă. Халь хам та вĕсем пекех ватăлтăм ĕнтĕ. Малашлăх çак Ваççуксенче.

– Ал техĕмĕ пурах çав сирĕн, Герасим Филиппович, – ыталаса илчĕ ăна Большаков. – Сывлăху та. Хĕр шухăшĕ...

Юнашарти арăмĕ пурне те култарса ячĕ:

– Аптрасан та хашкамасть-ха, кив пăравус пекех хăшлатать. Авă эсир килнĕ чухне епле юрласа тăратчĕ сарă хитре хĕршĕн ăшне çунтарса? Вăрçă вăхăтĕнче хăйсем патĕнче ачисемпе пурăннă офицер майри вилни çинчен Мускавран хут илсен, Числов Петĕрĕпе иккĕшĕ чутах утар пĕвине сикетчĕç вĕт. Виçĕ кун çыран тăрăх куççуль юхтарса утрĕç. Пуçанасем пулнă тет-и...

– Ан лĕпĕртет-ха эс пустуй. Пулă тытнă эпĕр. Хĕллене хăвах пĕр катка тăварласа лартрăн. Пурнăç мыскари пăши мăйраки пекех йӳплĕ-йӳплĕ. Эп кунта телă калап, а эс...

– Калаçу хушшинче кăшт кулăш паузи туса илнĕшĕн йĕм кантри татăлмасть. Çапла пуль? Атьăр ташлар! Кăлар шăпăрна, Караська? Эх-х! Ак çапла!

Ăмăртсах ташша ячĕç. Крахьян тапăртатса такмаклать:

Ман старикĕн шухăш пур,
Шухăш пур та – еркĕн пур.
Еркĕн кукăль çитерет,
Пыл кăрчами ĕçтерет.
Ман старикĕн шăпăр пур,
Шăпăр пур та – мусăк пур.
Вăкăр хăмпи вырăнне
Еркĕн хăмпине вĕрет.

Ман старикĕн икĕ куç,
Икĕ куç та – икĕ пуç.
Куç пăхать те – шăл витмест,
Пĕр пуçĕ те çĕкленмест...

Большаковпа Крутов хĕрнĕ инкене икĕ хулĕнчен тытса урайĕнче çаврăнчĕç.

– Çитĕ, атьăр, ларăр сĕтел хушшине. Старик те ĕрĕхсе чупакан ăйăр пек чăм шыва ўкрĕ. Тытса парăр ман коньяка. Вăрманти çитмĕл çичĕ сиплĕ йывăç-курăкпа тунине. Миров господин ăна «Крахьян – пуçра ян-ян» ят парса хăварнăччĕ. Атьăр, шалт ĕçер те, юр-юрлар.

Хурăнварсен юрри те, Хĕрлĕ Сăр енчи чăвашсен юрри те янăрарĕ шăпăрпа вĕлле хурчĕн кĕвви илемлетнĕ утар уçланкинче.

Ташă-юрă хыççăн каллех паçăрхи калаçу çыпçăнчĕ вĕсен çумне.

– Мăн Альпă, утарçăсен ярмăркки пулать текен хыпар илсе килчĕç пыл хурчĕсем...

– Карачăм мучи, – аллине сулса чарчĕ ăна Крутов. – Эпир те хутшăнатпăр унта. Районтан эсир иккĕн каятăр Мускава. Çавăн çинчен пĕлтерсе савăнтарас тесех килтĕм. Хатĕрленме пуçлăр. Хамăр енчен эпир те хатĕрлĕпĕр сире.

– Ай, чун лăштах пулчĕ. Тавтапуçах. Вăрçăччен шăпăр каласа концерт панăччĕ эпĕ Салакайăк тăвĕ çинче. Апла, виличчен тепĕр концерт парса хăварас тĕп хулара. Ку хыпар мана калама çук хĕпĕртеттерчĕ. Крахьян тултарнă черккесене пушатиччен пуплесе юлас-ха. Вăт, Мăн Альпă, сĕнўсем пур ман.

Енералсем салтака итлеме хăлхисене чанк тăратрĕç.

– Пушкăртра çуллен утарçă кунĕ ирттереççĕ, утарçăсен ăмăртăвне малалла тăсаççĕ. Пирĕн те тумалла мар-ши? Вĕлле хакĕ икĕ пине çитрĕ. Ăçта кайма вăл? Утар япалисен хакне йўнетмелле. Таса ăратлă, сивве чăтакан лăпкă хурт ăратне ытларах сармалла. Вăт сире сатани. Çаксене тумаллах. Пыла юрататпăр пулсан, хурт-хăмăрне те юратар. Çакна ыйтса пĕлес килет тата. Хăвăрăн минпатшалăхĕнче пыл тутине манман-и?

– Манман, – кулсах хуравларĕ министр. – Çирĕм çул ĕçлет «Хурт-хăмăр агентстви».

– Пуçласа илтетĕп. Мĕн тăвакан акĕнтсем вĕсем? Утарти хуртран та хаярскерсем-и? Акĕнт тени пире ĕмĕрĕпе сехрене хăпартнă та...

– Хăрама кирлĕ мар, Герасим Филиппович. Усăллă ĕçех тăваççĕ вĕсем те. Сирĕн пекех.

– Ненай, Кантур пылĕ...

– Иккĕленме кирлĕ мар. Ăратлă хурт-хăмăр ĕрчетмелли, пыл нумайрах туса илмелли çирĕп йĕрке тăвассипе, хурт-хăмăр продукцине тирпейлессипе, селекципе ăратлăх ĕçĕпе, утарçăсене вĕренетссипе аванах ăнтарса пыраççĕ пек. Ылтăн медальсем те илкелерĕç-ха агропромышленность выставкисенче. Ачисене ятламастпăр, ырлатпăр çеç.

– Çапах та... усламçăсем вĕсем. Усламăç вăл чи малтан хăйшĕн пуçне ватать. Шупашкара таврăнсан пурпĕрех ял-ялĕнче, вăрманта хурт-хăмăр ĕрчетессипе вăйлатма патшаран та пулăшу ыйтса пăхăр. Пĕлеп эп, ку енĕпе те эпĕр сулнăкра. Крахьян, патша валли те çăка каткана чи имлĕ пылне тултарса хур-ха?

– Çиччас, – хыпăнса алăк хыçĕнче çухалчĕ арăмĕ.

– Мăн Альпă, çапах та пĕр акĕнтне ярăр-ха пирĕн пата. Хамăр пыл хурчĕсемпе паллаштарас ăна. Кантурти тимĕр ещĕкри пыл вăл вĕлле хурчĕн пылĕ мар – хут пылĕ...

Арăмĕ нӳхрепелле чĕннипе утарçă министртан ирĕксĕррĕн хăпрĕ.

Пĕччен юлсан Большаков виçĕм çулхине аса илчĕ. Вăрманкассен ентешлĕх уявне унăн та хутшăнмалла пулнăччĕ. Чăваш операпа балет театрĕн сцени çинче вăл Воробьевпа юнашар тăчĕ. Ăста утарça Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕн хисеплĕ ятне панăччĕ. Президент хушнипе Альберт Григорьевич унăн сарлака кăкăрĕ çине хисеп паллине тирсе янăччĕ, аллинчен грамотăпа чечек

тыттарнăччĕ, министерство ячĕпе велосипед парнеленĕччĕ. Çавăнпа унран ыйтса пĕлес терĕ:

– Герасим Филиппович, мĕнле, велосипедпа ярăнатăр пуль-ха?

– Тавтапуçах сире, чăваш патшипе иксĕре, турă сыхлатăр пурнăçăра. Чупмасăр ара. Крахьянушка чунăм машинăпа лартса килме кăмăл туман чухне велосипедпах ярлаттарса çŭретĕп. Шăм-шак çемĕçет. Майрушка, парнисем хатĕр-и?

Вăрăм Ваççапа министр шоферĕ тата Ваççук утарçă утар çулĕпе йывăррăн уттарчĕç.

– Хам шантарнă пекех, ырă кăмăлтан паратпăр сире ку парнесене. Иксĕр те пĕр пекех тивĕçлĕ: пылне те, кăмпине те – пĕрер çăка катка, карăкпа ăсанне те тата ыттине те. Патша валли те пур. Хамăрăн килти хуçалăхран. Вăрламан. Çиччас илсе кайса кăтартатăп. Унта ман, пĕве çумĕнчи мăн уçланкăра, хамăн курорт. Утар, улма-çырла сачĕ, вун пилĕк вĕлле, кĕрик-мĕн аксалартса ŭстерме вунă соткă çĕр пур. Пŭрт кунтинчен те чаплăрах. Унччен... Куратăр-и? – хĕрринчи вĕлле çинелле тĕллерĕ утарçă сулахай аллине. – Хуртсем епле сĕрлеççĕ-йăшăлтатаççĕ? Паçăр лартнă рамăсем патĕнчен вĕçсе килнĕ ылтăн çунатсем-хырăмсем туй тăваççĕ унта. Пурне те систерме ĕлкĕрнĕ пулас. Йышлăн. Астару ташши тетпĕр эпир ăна.

Чăн та, астару ташшипе хĕмленнĕ хуртсем пыл пĕрчи-тумламне пухма васкаççĕ. Капла çемьесем татах та вăйланаççĕ. Утар пурăнать. Ватă утарçă та старавах. Çав вĕçеве чĕрипе-чунĕпе хутшăнакан Салакайăк Карачăмĕн ăшĕнчен юрă сасси капланса тухрĕ: «Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт...»

Вăрман хĕррине çитичченех ăсатрĕ ватă çын хăнасене. Мишинăна ларма пуçланă Большакова чарса тăратрĕ те вăл:

– Паçăртанпах сăнап сире ларнă-тăнă чухне айлатса пилĕкна тытнине. Юрамасть капла. Сывалмалла, Мăн Альпă. Тайăлнă ту пек патша нумая каяймасть, тŭнет.

– Темле маç та сĕрсе пăхрăм, массаж тутартăм хĕрсене, Хура тинĕс хĕрринчи санаторире те пултăм – иртсе каймасть ыратни. Чикет те чикет. Йĕп пек тирет.

– Итлĕр ман ăслă сăмаха. Вăхăт тупса килĕр кунта. Сыататпăр. Акă, Максим Максимович суйма памасть. Ун кӳрши чаплă тухтăр. Çав Нухрат Кавĕрлин ачипе ман арăм Чулхуларан ятарласа вĕренсе килчĕç. Вĕсен эмелĕ – пыл хурчĕ. Майланкаласа килĕр. Юрать-и?

Альберт Григорьевичăн килĕшни çинчен алă тытса çирĕплетесси кăна юлчĕ.

Çул вăл пуçлăхшăн – кану, шухăшлав. Машинăра кансĕрлекен çук. Хурт-хăмăр ĕçне Чăваш енче начарах мар йĕркеленĕ пекчĕ, анчах та, «Шурăмпуç» утарĕнче пулнă хыççăн, Большаков пуçĕнче урăхларах шухăш çуралчĕ: «Министерство агентстви çине анчах шанса лармалла мар, район пуçлăхĕсемпе те ĕçлемелле. Ахăртнех вĕсем хăйсен вăрманĕсенчи, ялĕсенчи пылпах усă кураççĕ. Пыла хамăр хытă юрататпăр пулсан, ăна пур çын та çиме юратнине манмалла мар. Утар çулне пирĕн, пурнăç тытăмне йĕркелесе пыракансен, такăр тытмалла, хамăршăн анчах мар – халăхшăн та. Астунă тăрăх, утарсăр пĕр колхоз-совхоз та çуккăччĕ. Халĕ мĕн чухлĕ сыхланса юлнă-ши? Эпĕ хам та, министр, лайăххăн пĕлместĕп. Тырăпа çĕр улми те, аш-какайпа сĕт пирки çеç пуçа çĕмĕрмелле мар, пыл пирки те шухăшламаллах. Малтанхи, авалхи йĕркене манмасăр, çак отрасĕле те тата вăйлăрах, тата тупăшлăрах аталантармалла. Алла пыл кашăкĕ тытнă чухне кашни ял пуçлăхĕ утар, ылтăн хурт пылĕ çинчен шухăшлама ан мантăрччĕ. Ку ыйту та маншăн тĕп ыйтусен шутĕнчех пулĕ-ха».

12

Микулнă хыççăнах çанталăк ĕлĕкхи йĕркене кĕчĕ. Лапка-лапка юр çуса уйсене, акса хăварнă кĕр тыррисене, вăрмансене ăшă мамăкпа витсе хучĕ. Раштав варринелле

Хĕл мучи çавăрттарса килчĕ те, аташа-аташах кĕртсем хывса хучĕ. Салакайăк Карачăмне те упа кĕрĕкĕпе çăм атă, кашкăр çĕлĕкĕпе сăсар алсине тăхăнтартрĕ. Каснăлартнă Хĕл мучи. Крахьян та урăх тумпа капăрланчĕ. Пуçĕнче – мулкач çĕлĕкĕ, мăйĕнче – уртса янă тилĕ. Вăрманкасра шашка тирĕнчен çĕлетнĕ кĕрĕкĕ ытла та çыпăçуллă. Вăрман пики.

Картлашка çине тухса тăнă старикки такăрлатнă сукмакпа васкамасăр çывхаракан арăмне ăмсанса сăнать. Крахьян шĕшкĕ тураттисене патакпа çапать те, хăй çине тăкăнакан юрпа выля-выля кулать.

«Эх, мана турă сăмса умне пăрахса панă çак хĕр пĕрчи пулмасан, эпĕ тахçанах Анук патĕнчеччĕ. Крахьянăмçăм, эп вилсен кама ыр кăтартăн-ши? Хĕрӳ кĕлеткене кантарма хастар хĕрӳ кĕлеткех кирлĕ. Манашкал лĕнчĕр-ленчĕрпе асапланиччен.. Вилĕмĕм, ташласа çаврăнать пулин те, хама ыталама васкамастьçке? Ан çывхартăр-и тата усал! Тепĕр ĕмĕрте те пурăнса курас. Çур уйăх çеç юлнă. Тухтăр çумра чухне... Хвельтшăра вĕреннĕ хыççăн Крахьянушкăн та ăйăрăма кĕçентермелли хушма апат тупăнать-ха. Нухрат Кавĕрли ачине пĕрмай тархаслас çук!» – тесе шухăшласаĕмĕтленсе илчĕ те вăл çурăкрах сассине кăларчĕ:

– Эй, Крахьянушка! Чуп кунталла хăвăртрах?

– Ху кил? – кăчăк туртрĕ арăмĕ.

Ват çерçи пусма картлашкисем тăрăх вĕçсе анчĕ те ун патнелле тапăлтатрĕ, патнерех çитерехпе юман тураттинчен такăнса ӳкрĕ.

Крахьян упăшкине тăма пулăшрĕ, кĕç тем пулнăн, тĕртсе йăвантарчĕ, хăй те ун çине хăпарса выртрĕ, сухалĕпе выля-выля питне юрпа çуса ячĕ.

Карачăм Крахьянушка ак чуп тăвать, чуп тăвать тесе куçне хупрĕ, анчах хĕрарăм тутине кĕтсе илеймерĕ, куçне уçрĕ те утар еннелле чупакан арăмне курчĕ. Вăл та вара мекеçленсе тăрса хуллен юрттарчĕ. Ку кĕсрен кĕçенмелли вăхăчĕ çитнĕ пуль-ха тесе хăраса та,

хавхаланса та ўкрĕ. Икĕ каç пĕрле çывăрман-çке. Кĕçтекен вырăн сахал-и хĕрарăмăн? Хавасланса çитрĕ те вăл хывăнма пуçланă арăмне пилĕкĕнчен çавăрса тытса чуп турĕ:

– Эп те çиччас, кĕрĕксенчен хăтăлам...

– Эй, ухмах, кушакран намăс, ват супнă.

– Аçа аçаран вăтанмасть.

– Пĕр кунхи пек купарчу çине сиксе чавасран хăрамастăн-и? Эс ман çинчен мар, вăрман тиллисем çинчен шухăшла-ха. Мана нимле упа-кашкăр та вăрласа каяс çук. Чăхсене... Тилĕ йĕрри пур, сарай хыçнех çитнĕ. Е капкăн ларт, е персе тыт.

– Ах мур илесшĕ тилле ăна, пĕр иленсен. Числов Петĕрĕ килес пек каланăччĕ-ха. Хам хуса çитеес çук, çавна йĕрлеттерес, – лăпланнă Салакайăк çунаттисене усрĕ. – Эс мĕн тата çухалсах кайрăн?

– Ниçта та çухалман, – мăрт-март турĕ Крахьян. – Ĕçре пулнă. Парижран Миров господин вĕçсе килнĕ те, çавна сыватрăмăр. Нухратова та, мана та парне пачĕ. Акă. – Крахьян кĕрĕк кĕсйинчен хитре пĕчĕк кĕленче кăларса упăшкине тыттарчĕ. – Аполлон Нилăчăн Парижра парфюмери фабрики пур тет. Малтан килсен, кунтан Америкăна кайнă чухне вăл унта çĕнĕ йышши духи кăларма хушса хăварнă. Акă халĕ, çула май, ăна кĕрсе илнĕ. Мĕн шăршине туймарăн-и?

– Эй, ват çыннăн ун, шăрша-марша уйăрма тата? Сан шăршу – Крахьян шăршиех кĕнĕ пек. Ятне-шывне пĕлеймерĕм, темле амерĕкле-акăлчанла кукăрткаланă та... Ху та вулаймастăн пуль? Ик талăк хушшинче тем чĕлхи те...

Арăмĕ упăшкине кула-кулах тĕртсе ячĕ:

– Вĕрентĕм, чĕлхе экзаменĕ патăм американеца. Ухмах пуç эс. «Смайл Крахьян» ятлă вăл: вырăсла – «Улыбка Крахьяна», чăвашла – «Крахьян кулли». Болгарире ўстерекен роза чечекĕнчен тунă духи. Панятнă?

Салакайăк çунаттисене çат-çат çапрĕ, хитре кĕленче çине куçне хĕсерех тинкерчĕ те:

– Паттюшки, – тесе ахлатрĕ. – Эсĕ мар-и ку?

– Ай хăвăн юратнă арăмна та паллайми пултăн?

– Палларăм-ха. Эсех шăлна йĕрсе ларатăн вĕт унта? Ăçтан тупнă-ха вĕсем сан сăнна?

– «Америка» журналта Миров господин хăй тупнă. Астăватăн-и Мускавран Сăша корреспонденчĕсем килсе кайнине? Сысна пăхакансене, мана та уйрăммăн мăн куçлă аппарачĕпе çатлаттарса илнĕччĕ. «Сан хитре сăнна эпĕ касса кăларса ылтăн рамка ăшнех хупрăм – духи валли илĕртӳллĕ ӳкерчĕк тупрăм, хăв хăналанă «Крахьян – пуçра ян-ян» чăваш коньякне аса илсе, çĕнĕ духи ятне те «Крахьян кулли» тесе патăм», – ытакларĕ вăл мана парне тунă вăхăтра. Вĕсем хăна çуртĕнче ĕçсе-çисе шавларĕç, мана хуçяйккă-официанткă турĕç. Юрри-ташшинчен, мĕн, эп те аякра юлмарăм. Юлса ĕçленĕшĕн тӳлерĕç, акă, шутласа кăтартап. Пилĕк пин доллар. Хамăрăннипе шутласан – çĕр çирĕм пилĕк пин тенкĕ пулать. Ачасене ура çине тăратмалăх...

Ĕмĕрте алăра тытса курман шăтăркка укçасене ывăç тупанĕнче çавăрттаркаласа пуçне темле ырă мар шухăш пырса çапнипе кăххăмлатса илчĕ те Салакайăк, хыттăнах чĕриклетме пуçларĕ:

– Каплах эс кашни каç пин-пин доллар çапса илме пуçласан, ай мĕнле пуйса каятăн, мана кăмака хыçĕнче усрама тытăнатăн. Старикку шив-старав чухнех...

– Тата çĕр çул пурăнтăр ман старикĕм тесех саншăн та тăрăшатăп ĕнтĕ, ухмах. Патшалăхăн мăшкăл пенсийĕ çумне урăх сумне хушмасăр хăрса ларатпăр ав пӳрт хыçĕнчи чăрăш пек. Сăпаççипă кала турруна вăл килсе тухнăшăн пирĕн тĕле те, хамăр ялсен тымарĕ сĕткен пама тытăннăшăн. Миров господин мĕн каланине пĕлетни?

– Ăçтан пĕлем-ха эп эсир унта мĕн-мĕн пупленине?

– Пăх та пĕлместĕн эс хуртусене хуралласа. Ман сăнпа тĕнчене салатакан духи мана миллионĕ-миллионĕпе

доллар-гонорар парать, терё Апполон Нилович. Шутла, пирён пата чăнах та коммунизм çитрё пулмалла, старикём. Пурте пур. Тата мён чухлё пулать! Тута кулать. Кил çывăхарах? Ах, вёçес килет! Санпах, старикём:

Сана савса,
Ай, савăнса,
Юр хывам-и,
Юр юрласа,
Ай, юратса
Мул парам-и.
Кăшт чуп туса,
Ыталаса
Ай, илем-и,
Чунна уçса,
Савăнтарса
Хăварам-и.

Арăмё хăйне ячёшён кăна тăсса панă тутине тёртсе яма вăй-хал çитереймесёр Карачăм та ăна ыталарё, ун хыççăн, асăрханарах каларё:

– Çурхи пăлан пăрушё пекех пулса кайрăн эс, Крахьян. Алăран вёçерёнтён пулмалла. Юрру услам çу пекех те, шухăшу палан пек. Туту икё тут калать. Миров куспутинсен ытамёнче унта...

Калаçу хăш еннелле сулăннине сиснё Крахьян сылтăм урине кăрст! тапрё:

– Мён юнтарса тăран? Юр юрласа патăм – алă çупмарăн. Тытса чуп турăм – ăшна хывмарăн. Шалт аптрамалла. Ан вёрентнё пултăр мана пурăнма. Çитет сан айăнта айланса-нушаланса выртса. Парас-илес пурнăçра турă панă ырлăхпа усă курса юлас. Кёçех командировкăна каятăп.

Ку сăмахсем Карачăма пушшех пăлхантарса ячёç, вара вăл çине-çине ыйту пачё:

– Ăçта? Кампа? Хăçан? Мён вăхăта?

– Америкăна. Валерий Нухратовпа. Миров господин пульницинче ёçлеме. Заграничнăй паспорт тутаратпăр

та, ют патшалăха кайма виза илетпĕр те... Нумайлăха, тен, яланлăхах.

– А эп тата... Мана ăçта хуран? Ачасем?.. – сехĕрленсех ўкрĕ Карачăм.

– Сан ялта кил пур, вăрманта утар пур. Мăнуку пур. Анюта пăхса вĕлерет. Ывăлăмпа хĕрĕме эп Сăшара та усрама, вĕрентме пултаратăп. Кăтартап эп сана сысна кăнтăрли!

– Ай-вай-вай, ял кулли кăна мар, чăннипех Крахьян кулли пулса юлатăп-иç? Сĕм ватлăхра эс, тăванăм, ешерекен сĕм вăрманта çĕтсе каймăн-ши, тесе ахальтенех шахвăртмарĕ пуль çав туй умĕн хăйматлăх. Ай, пета, пета...

– Ава, хăйматлăх атте çитрĕ те, кĕтсе ил. Хăвăн хвирменнăй «Крахьян куллипе» киленсе, манăн «Крахьян – пуçра ян-янпа» вăрмана ян янратса юрласа ларăр, шахмăтла выльăр. Ман васкамалла, Миров господина тепĕр виçĕ хут пыл хурчĕсемпе сăхтармалла. Сеанс пуçламалли вăхăт çывхарать.

Хăнана хапăлах кĕтсе илнĕ хыççăн хуçяйккă сĕтел çине ĕçмелли-çимелли лартса тултарчĕ те хыпăнсах тухса чупрĕ.

– Килти сеанс çинчен те ан ман эс, чупкăн тилĕ, – теме çеç ĕлкĕрчĕ упăшки.

Çўллĕ куç кĕски айĕнчи духи кĕленчине тытса çавăркаласа пăхнă май, Числов калаçрĕ:

– Ай-яй чапа тухрĕ те манăн хăйматлăх хĕрĕмĕм. Ха, долларсем те купипех сирĕн? Темĕн те пур.

– Манăн арăм та пур, – ун çумне кăштăрт пырса тăчĕ хăйматлăх кĕрўшĕ. – Миров куспутин пуйтарать. Сипленме килнĕ тет-и. Хăйне пыл хурчĕпе сăхтарнăшăн ава мĕн чухлĕ тўленĕ вăл ман Крахьяна.

– Да... Крахьян кулли тĕнчене илĕртет. Ку çумри хурăнĕ хăйсен пўрчĕ умĕнчиехчĕ пулас-ха. Сăша журналисчĕн сăн ўкерчĕкĕ питĕ чаплă тухнă. Район библиотекине кайсан, «Америка» журналра курса киленнĕччĕ. Манса кайман-и çав хурăн шывне ĕçнине, кĕрў?

– Хушăран тĕлĕкре курăнать, мур илесшĕ Ульянĕ. Пĕринче çак хăйсен хурăнĕн хуппине пуç пўрне тăршшĕ

касса çурнă та, хуппине ик еннелле сирсе епресе ихĕрет: «Кил, Караськă, ăшна кантар пылак шыв ĕçсе?»

– Эс телевизор курман-и?

– Тем пăтти те лĕкĕртеттереççĕ те унта. Мĕн?

– Ара, ĕнер кăтартрĕç Крахьян хĕрĕме.

– Тата мĕнпе чапа тухнă вăл?

– Рекламăра. Пĕлтерӳре, эппин. Унăн кулли çиçнипе арăмпа иксĕмĕр те чăтаймасăр ахăрса ятăмăр. Акă, çак «Крахьян кулли» Мускава та çитнĕ. Сутуçăсем ăна тĕнчене сараççĕ.

– Ак тĕнче. Вăт тĕнче кулли.

– Тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле, хăйматлăх кĕрĕвĕм. Пултарать сан çамрăк арăму. Пире пӳртре сыхласа ларнипе мĕн пулать çак. Пенсие тухсан ĕç тупрĕ. Лайăх ĕç. Иксĕр юнашарах. Урăх сире мĕн кирлĕ? – Числов Петĕрĕ кăшт шухăшласа илнĕ хыççăн куçне укçа купи еннелле ывăтрĕ. – Брежнев юлташ пулман пулсан-и, çак долларсем те «Крахьян кулли» çумĕнче выртаймастчĕç.

– Тем çавăрттаран-ха, ак ĕçер те, ăнлантар.

«Крахьян – пуçра ян-ян» туса кайнă хыççăн Числов Петĕрĕ кĕрӳ ачине çапла каласа пачĕ:

– Ку 1978 çулта пулнă. Компартин тĕп пуçлăхĕ, пилĕк ылтăн çăлтăрлă Леонид Брежнев аран-аран калаçакан пулнă. Пичĕ çинчи нервисене шалкăм çапнă тесе чаплă тухтăрсем ăна темле эмелпе те сыватма пăхнă – усси пулман. Вĕсем вара Чулхулари Борис Орлов ученăйран пулăшу ыйтнă. Çынсене чĕр-чун наркăмăшĕпе сиплесе чапа тухнă биологи профессорне Брежнев шанать. Леонид Ильичăн аслашшĕ хурт-хăмăр ăсти пулнă иккен, çавăнпа вăл хăйне вĕлле хурчĕн сăннипе сыватма май пуррине ĕненнĕ. Тĕплĕн хатĕрленнĕ хыççăн, кăткăс операцие тума виçĕ пыл хурчĕ çеç кирлĕ пулнă. Генсек тепĕр куннех яланхилле шӳтлеме те, кулкалама та пуçланă. Эрнерен унăн пичĕ туртăнми пулнă, сăнĕ çамрăкланнă. Кĕçех вăл телевиденипе çĕршыв умĕнче яка чĕлхепе, уççăн тухса каласнă. Кремль тухтăрĕсем тĕлĕнсе хытнă. Орлов

профессор, вĕсене намăслантарса, апитерапи сиплевĕнче тĕлĕнмелле çĕнтерӳ тунă-çке!

Çакăн хыççăн Кремль медицининче пыл хурчĕсене те шурă халат тăхăнтартнă. Çут çанталăк тухтăрĕсем шăмă сыппипе тата нерв чирĕпе нушаланакан парти пуçлăхĕсене тӳлевсĕр сиплеме пуçланă. Орлов профессора патша парни кĕтнĕ. Хăйне хăвăрт, лайăх сыватнăшăн Брежнев юлташ наукăпа техника комитечĕ çумĕнче хурт-хăмăрпа апитерапин наука канашне йĕркелеттернĕ. Апитерапи енĕпе вара пирĕн çĕршыв часах тĕнчипе палăрнă. Çав енĕпе тăвакан ĕçĕсемпе Орлов профессор та чап илнĕ, хурт наркăмăшĕпе сиплĕ курăксене хутăштарса этемшĕн питĕ усăллă эмелсем кăларма пуçланă. Унăн тĕслĕхĕ таçта çити сарăлнă – Чăваш çĕрне те çитнĕ. Çав меслетпе ĕçлесе, Валерий Гаврилович Нухратов медицина наукисен кандидачĕ пулса тăнă, Тымарта апитерапи «пульници» уçнă. Çавăнта ĕçлеме вĕренсе килчĕ ĕнтĕ санăн арăму Орлов профессор шкулĕнчен. Епле вĕçтерет вăл халь сан пуç тăрринче доллар хучĕсене? «Крахьян кулли» пурне те юсать.

Итлесе пĕтернĕ хыççăн Салакайăк кĕлеткине хускатса çаврăнкаларĕ те:

– Хальлĕхе ура-алра та, пилĕкре те шăтăр-шатăр çуккă пек туйăнать. Итле, Мăн Альпăн вара, пĕркун килсе кайрĕ те, ая-яй, Нухратовпа Крахьян ласаретĕнче тӳрлетмелле ун пилĕкне, – терĕ. – Сăмах май каласан, çиер-ха вăрттăн ăна, куçĕ кĕçтетĕр.

– Район пуçĕнче тăнă çынсем нумай пулнă те, анчах та хам астăвасса эп Большаковран вăйлăраххине, аслăраххине курман.

– Эпĕ ун пеккине курнă. Эс çамрăкрах, хăйматлăх, пурне те пĕлеес çук. Михайлă Йăванчă пурччĕ. Вăт вăл та чăннипех çын та çынччĕ. Мăн Альпăпа пĕр чустаранах. Ах влаç... çĕклет те вăл тепĕрне, ракет пекех пĕлĕт тăрне çĕклет, парашютсăр та çĕр çинех антарса тăратать. Таçта вĕçеççĕ. Пĕрне-пĕри таптасах тапаçланаççĕ.

Ылтăн чăмăрккишĕн-ши? Иксĕмĕр мăнкăлтатнă чухне Мăн Альпă эп ылтăншăн мар, халăхшăн Мускавра тумăть тăвасшăн тет те... Уншăн кулянса çĕр çывăраймастăп вĕт. Карма çăварсемпе укçа миххисем хирсе хăвармасан юрать ăна, чухăн кантитата, тумă чуппинче.

«Крахьян куллине» тепре ăша хывсан, Числов Петĕрĕ:

– Альберт Григорьевич хамăр çынах ĕнтĕ – чăн чăваш, чăн хресчен, нумай вĕреннĕ, малашлăха витĕр куракан, инкекре çынна çăлма хатĕр, ытла чапшăн çунакан карьерист мар. Нумаях пулмасть манăн Муркаш енче пулма тӳр килчĕ. Панкли ялне хĕрĕме качча панине эс астумалла, – терĕ.

– Пĕлетĕп. Петрава килсен панклисене хамăр пата та кĕртсе кăларнăччĕ. Хастар çынсем. Çĕн хăтара вĕсене виçĕ шăпăр концерчĕ те панăччĕ.

– Петр Тельмановичпа çакланса кайрăм. Арăмĕ унти председательпе Платон Павлович Давыдовпа хурăнташлă. Çирĕп йĕркепе, культурăллă ĕçлеттерсе усрать вăл халăхне... Хам шутпа эпĕ ăна пирĕн Волковаслипе танскер тесе шутлатăп. Клуба пухăва кайрăмăр. Шăпах тĕле лекрĕмĕр: хăйсен кандидачĕпе Большаковпа тĕл пулу йĕркеленĕ-мĕн. Итлесе, тăнласа лартăм та...

– Вара мĕн? Мĕн юмахларĕ-ха Мăн Альпă?

– Манăн тăван Чăваш Еншĕн ĕçлес килет Мускавра, терĕ.

– Çавна çеç-и?

– Тĕл пулăвĕ ыйтупа хурав майлă, калаçуллă пулса иртрĕ. Вăл малтан хăй камне пĕлтерсе мухтанчĕ, тейĕпĕр. Эсĕ вăл камне манран та тĕплĕрех пĕлен.

– Ыйтăвĕсем мĕнлерех пулчĕç?

– Мĕн кăна ыйтмаççĕ. Хăшне-пĕрне аванах астуса юлтăм. «Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕ пулма мĕншĕн пит çунатăрха?» – тени çине çапла хуравларĕ: «Мускавра эпĕ кунта ĕçленинчен ытларах усă парас пек туйăнать. Мана чăваш

ялĕн шăпи уйрăмах пăшăрхантарать. Çитĕнӳсем те çук мар ĕнтĕ пирĕн, çапах ял хуçалăхне парăм тытăмĕнчен çăлса хăварма май килмест. Шутласан, çут çанталăкĕ те начар мар, эсир те ĕçчен халăх, маттур. Сăлтавĕ акă ăçта? Çĕршывра ку таранччен те ял хуçалăхне йĕркеллĕ тытса пымалли тĕрĕс политика пулман. Ăна аталантарас тĕлĕшпе пуçпа шутламасăр туса ирттернĕ ĕçсем ял çыннине епле нуша кăтартнине эсир хăвăрах тӳссе курнă. Хресченĕн ахаль те тертлĕ пурнăçне вĕсем паян та пушшех йывăрлатаççĕ». «Эсир вара, Дума депутачĕ пулсан, мĕнле майпа кăларма пултаратăр-ха лачакари ял хуçалăхне?» – ыйтрĕ тепри. Хуравне те манман. Ак çапла пулчĕ: «Пире çĕнĕ саккунсем кирлĕ. Хресченĕн ĕмĕт-тĕллевĕ валли çул уçса памаллисем. Техникăпа, çунтармалли-сĕрмелли материалсемпе, минерал удобренийĕсемпе тивĕçтерекен пуç пулса тăракансенчен, хушша кĕрсе хăйсем ним тумасăр пуякансен мăшкăлĕнчен хăтăлмалла. Хушша кĕрекенсен йышлă сĕмсĕр ушкăнне саккунпах ял хуçалăхĕнчен хăтармалла. Ял хуçалăхне йывăрлăхран кăларас тата хресченсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе правительствăна ятарлă программа хатĕрлеме тата ăна пурнăçа кĕртме хушмалла. Çак калама çук анлă ĕçре эпĕ те кирлĕ пулма пултарăп, тесе шухăшлатăп».

Салакайăк хăйматлăх ашшĕне тăнласах итлерĕ. Вăл каланисенчен хăшне-пĕрне ăнланса та юлаймарĕ пуль, çапах хăйĕнчен хушса хучĕ:

– Тума пултарсан пырĕччĕ ку ĕçсене Мăн Альпă. Ĕçченлĕхĕпе те малти çын та çав вăл, тӳрĕ кăмăллăхĕпе такамран ирттерет. Кулли мĕне тăрать, ăш-чике çемĕçтерсе ярать. Çирĕплĕхĕ те çителĕклех. Тĕрĕслĕхшĕн хытă тăнине те пĕлетĕп. Килĕшӳлĕхĕ те палăрчĕ пирĕн патра. Сăпайлăхĕпе те уйрăмах асра юлчĕ. Унран чаплăраххи те пур-ши вара патшалăх ĕçне кӳлĕнес текенсен хушшинче? Тумушкăсем-тилĕшкĕсем, упа-кашкăрсем хушшинче?

– Пур. Темле çĕлен-калта та пур.

– Хамăр хушăрах çав вĕсем – хамăрах сиен кӳреççĕ. Тепре выляса илер-ха шахматла? Кам çĕнтерĕ хальхинче? «Крахьян – пуçра ян-ян» кĕтет çĕнтерекене, выляса яраканнине – «Крахьян кулли». Тав, хăйматлăхăм!

Суйлав асар-писер çанталăк пекех çил-тăваллăн та аслатиллĕн Мускав еннелле кайса çухалчĕ. Пăтранакан халăх тинĕсĕнчен Патшалăх Думин ылтăн калпакне тăхăнса ишсе тухакансен хушшинче Большаков курăнмарĕ. Вăл хăйпе ăмăртнă кандидатне тăватă процент сасă выляса янă-мĕн.

– Ытлашши пуçна ан усăр, – хĕрхенсе лăпланулăн сăмахларĕ Тымара сипленме килнĕ хаклă хăнана Салакайăк Карачăмĕ. – Пĕлеп эп сирĕн пăхлă историне. Мана ялти историк, хăйматлăх шутсăр лайăх тăнлантарчĕ. Ял çыннине ăна ялан пуç çĕклеме паман. Пусарнă. Хут те ун çăкăрнех çиекен те нимле правасăр чура вырăнне хунă. Числов Петĕрĕ сирĕн суперник пирки калани тĕрĕсех пулчĕ иккен. Эс юратакан Мăн Альпăна хирĕç Укçа кĕрешет, тенĕччĕ. Вăл – панккă миххи, Чăваш патши çумĕнче те укçа-тенкĕпе вылякан мĕнистăр. Большаков мат параймаç пуль çав ăна, тесе кулянчĕ. Эй, Туму-тăму качки. Курса ывăннă вĕсем йытăлла-кушакла туллашнине, телĕкпе те пăхас килмест çав айхашăва. Пĕр чеснăй çын çук унта. Эсир те çавсемпе лăпăртатса ларнине сăнаса чуна ыраттармаллаччĕ-и ман? Эй, çук. Шуйттансен йăвине лекменнишĕн таса Турра кĕл тумалла сирĕн. Чăн Турă çăлнă сире çав йăнăш çулран. Мĕн, тепутаци мантатне илейменшĕн сире Чăваш патши хăй çумĕнчен пăрчĕ-и, мĕнистăртан кутран тапса кăларса ячĕ-и? Ĕçлемелле. Тумăсăрах тумăть тумалли нумай хресченшĕн. Хамăр патрах пин-пин ыйту. Çакна пĕлесчĕ, калăр-ха, тархасшăн, мĕнистăр хевтипе Чăвашăн ял хуçалăх лавне тапратрăр-и кăшт та пулин?

Альберт Григорьевич çак аксакала хăйĕнпе чунне уçса калаçнăшăн кăмăллать. Унпа пĕрле чухне вăл хăйне халăх хак панă пек, халăх ятланă пек, халăх шаннă пек

туять. Унăн кашни сăмахĕ хыççăн тарăн шухăша каять, вăл каланинчен мĕн те пулин ырринех сăмсалантарать пуçĕнче. Пĕр суймасăрах, уççăнах калаçса ларчĕ вара тулли сĕтел хушшинче шур сухалпа.

– Виç çĕр пин гектар çинчен патшалăх пўлмине миллиона яхăн тонна тырă кĕртрĕмĕр кăçал. Çĕр улмийĕ те çавăн майлах капашрĕ. Аш-какайĕпе сĕт-çăмартийĕ те – пурте иртнĕ çулхисенчен нумайрах. Пахча çимĕçĕ те, хăмлийĕ те аптрамалла мар. Малаллах утатпăр.

– Ай, маттур апла. Ленька патша «Çăкăр пур та – юрă пур», – тесе ĕнĕрлетчĕ телĕкпе. Пирĕн те сĕтел çинче мĕльюн тонна таякан çавра çăкăр пур. Пурнатпăр. Числов Петĕрĕ каларăшле, кашни çынна çулталăкне пĕр тонна тырă кирлĕ тенине ĕненсен. Апла пирĕн те çăкăр пур та – юрă пур:

Юрламасăр халь ман
Мĕнле чăттăр чун,
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт
Çитсе пынă чух?
Хир-хир урлă,
Садсем урлă
Юхтăр юрă хавасрах,
Пурнăç савăк,
Пурнăç тулăх,
Пуласси татах та савăкрах...

Нухратовсен ласаретне пыл хурчĕпе сипленме кайса килнĕ Большакова утар хуçи хир сысни шўрпипе кĕтсе илчĕ.

– Хир сысни кăмунин патши Пĕрремĕш Карачăм сирĕншĕн те, пирĕншĕн те Турă панă пекех тухăçлă вĕçленекен çул, иртнĕ ĕмĕр пархатарĕпе кăмăллăн хăналать сире, Чăвашăн паянхи чи Аслă хресченне, – ыталарĕ вăл çўллĕ «юман каскине». – Хам пăшалпа персе тытнă вăрман Асавне шăл витерсе пăхтарасшăн-ха сире, Мăн Альпă чăваша. Эсир чăваш хресченне Нуша тăвĕ урлă Суворов енералиссимус ăслайĕпе Телей патне илсе çитерессишĕн пуçна çĕмĕрсе çĕнтерў турăр. Çавна шута

илсе эпĕ сире хамăрăн чăваш халăхĕ ячĕпе хресчен çарĕн енералиссимусĕ ятне паратăп. Акă, мейĕр ун ятне тивĕçтерекен палла. – Юманран чутласа тунă çурлана чуп туса тыттарчĕ Салакайăк министра. – Çак йывăр çурлапа сирĕн халăх ўстернĕ тырра вырма вăй çителĕклех. Хресченсемпе ăмăртса пĕрле вырăр ăна. Савăнтарăр чăваша. Чăваш вăл ахаль те нуша ачи. Çапах чăваш вăл хĕвел пек халăх. Чăваш вăл хăйĕн пултарулăхĕпе, ăс-пуçĕпе мăнă ĕç туса темле йывăрлăхра та куççульпе савăннă: вăрмана çĕнтерсе, тымар кăкласа уçланкăра хырăмне тăрантарнăшăн та, тĕрлĕ сăлтавсене пула пуçланнă кĕрешўре çĕнтерсен те, мур янă выçлăхран чĕрĕ юлсан та, вун-вун пилĕк ача çуратса çемье хĕвелĕпе ăшăнсан та, çемьерен пилĕк-ултă арçынна вăрçа ăсатсан та, çăвартан юлашки çăкăрпа аш-сĕте патшалăх хырăмне тăрантарма туртса илсен те... Пуçа усман. Парăнман. Манăн та ĕнтĕ курманни леш тĕнче анчах юлчĕ. Эпĕ çирĕммĕш ĕмĕре пурăнса сыхласа хăвартăм. Сире çирĕм пĕрремĕш ĕмĕре парнелетĕп. Сыхлăр ăна. Ачасем те, мăнуксем те телейлĕ пурăнччĕр.

Çĕнĕ çул умĕн Большаков туртакан, чикекен пилĕкне сыватса, Вăрманкас енчен чăваш хресченĕн, Раççей салтакĕн Салакайăк Карачăмĕн парнипе, пилĕпе таврăнчĕ Шупашкара – питĕ хавас, хастар кăмăлпа.

Вăрăм çулра «Атăлăн» хыçалти çемçе ларкăчĕ çинче сăпкари пек ярăнса пынă май хăйĕн çуралнă килĕ, Хĕрлĕ Сăр енчен вĕçсе килнĕ сасса, амăшĕн тăван сассине, уçăмлăн уйăрса илчĕ: «Аçу пекех хастар пултăн, салтак та пултăн, вĕренме ўркенмерĕн – ăслă пултăн, çурлапа суха пуçне аллунтан ямарăн, хăвăн аслă хуçупа алла-аллăн тытăнса ĕçлесе, ăна итлесе, ял çыннине аталану çулĕ çине тухма вăй патăн. Хамăр çуратса ўстернĕ ывăлăмăр тăван халăхшăн, тăван çĕршывшăн юрăхлă пулнишĕн эпир аçупа иксĕмĕр те хĕпĕртетпĕр. Сывлăхлă пул».

Çирĕммĕш ĕмĕр, Чăваш çĕрĕ çийĕн те хĕвел пайăркисене али витĕр асаплăн сапаласа, вĕçленчĕ.

ВИҪҪӖМӖШ ПАЙӖ

1

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕр, Раççее хăйĕн тĕнче чаршавне анлăн уçса кĕртсе ярса, этемлĕх цивилизацийĕн сцени çине çаппа-çарамасла тенĕ пекех, хĕвел умне кăларса тăратрĕ.

Унччен кăшт маларахах кăна-ха... Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăр вуннăмĕш çулĕсенче Михаил Горбачев ирĕк панă уççăнлăхпа çĕнĕлĕх саманинче политика уйне артистла сиксе тухнă, хăйне никамран та вăйлăрах демократ пек кăтартма хăтланнă, çĕршыв демократийĕн аслă пĕрлĕх тытăмне – парламента тупăран персе салатнă хыççăн влаça çавăрса илнĕ, каярахпа СССРа аркатнă, ĕçкĕпе те мухмăр-сухмăрпа минресе патшалăха хавшатса пынă, çĕршыв шурлăхĕн тĕпĕнчен, университет кафедри умĕнчен тата ытти шуйттан шăтăкĕнчен çутта сиксе тухнă açтаха путеккисемпе вунă çул хушши «çĕнĕ демократи» ташшинче авкаланса-явкаланса ывăннă Борис Ельцин, кут айĕнче Раççей чĕтренме тытăннине сиссе, путакан карапран таракан йĕке хŭре пек сехĕрленсе ŭкнĕскер, тĕнче илтмелле пурне те пĕлтерчĕ:

«Паян эпĕ сирĕн умăрта Çĕнĕ çул саламĕпе юлашки хут тухса калаçатăп, Раççей Президенчĕ пек юлашки хут чĕнсе калатăп. Паян, çак ĕмĕрĕн юлашки кунĕнче, отставкăна каятăп. Раççейĕн çĕнĕ пин çуллăха çĕнĕ политиксемпе, çĕнĕ çынсемпе, ăслă, вăйлă, хăватлă çынсемпе кĕмелле. Пирĕн вара, влаçра нумай ĕçленĕскерсен, каймалла. Эпĕ каятăп. Эпĕ хам мĕн тума пултарнине пурне те турăм. Раççей Президенчĕн тивĕçĕсене малашне Правительство Председателĕ Владимир Владимирович Путин пурнăçласси çинчен указ кăлартăм. Пирĕн ĕмĕтсенчен нумайăшĕ пурнăçланманшăн эпĕ сиртен каçару ыйтатăп. Телейлĕ пулăр. Эсир телее, тăнăçлăха тивĕçлĕ. Çĕнĕ çулпа, çĕнĕ ĕмĕрпе, хисеплĕ çыннăмăрсем!»

Ку хыпар хыççăн саваннипе, ĕмĕчĕпе Турă патне вĕçсе кайса ăна тав туса килнĕ Владимир Путин çĕршыв халăхне куç кĕретех суйрĕ: «Ельцин йышăнăвĕ маншăн кĕтмен çĕртен пулчĕ».

Компартие эпĕ çамрăкранах курайман, ман ăна тĕп тăвас килнĕ тесе Италире пакăлтатса çÿрекен Михаил Ґорбачев, влаç кĕрешĕвĕнчи тăшманĕ хăй ирĕкĕпех парăннине пĕлсен, çынна вăрттăн сăхакан çĕлен пек наркăмăшне пĕрĕхтерчĕ: «Ельцин отставкăна каясшăн пулмасăр, юлнă мĕнпур вăй-халĕпе хирĕçленĕ. Тĕрĕссипе ăна влаçран сирпĕтрĕç».

Чăваш Республикин Президенчĕн администраци пуçлăхĕ Петр Краснов çак хыпара Шупашкарта кĕтсе илчĕ. «Ельцин хăй вырăнĕнчен иртерех каясси çинчен тахçанах калаçу пырать. Кĕтменлĕх пулмарĕ. Тĕплĕн шухăшласа тунă унăн хастар утăмĕ вăл. Çавна май Владимир Путиншăн çул уçăлать. Вăл вăйлă, çирĕп кăмăллă политик, демократи хакне, пĕлтерĕшне пĕлекен тата хисеплекен çын, çĕнĕ ăру лидерĕ», – тесе пуласлăхшăн черкке çĕклерĕ.

Республика Министрсен Кабинечĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ, ял хуçалăхĕпе хатĕрлев ĕç министрĕ Альберт Большаков амăшĕ патĕнче, ялта, шухăшларĕ: «Питĕрте ÿснĕ Путин, уя тухса курман разведчик, çăкăр шăршине туйĕ-ши? Çапах та çĕнĕ патшашăн урпа сăрине ĕçес».

Çурçĕр хĕвел анăç Африка çывăхĕнчи Канар утравĕсенчен пĕринче, Гран–Канарире лартнă хăйĕн кану çуртĕнче вăхăтлăха пурăнакан чăваш мулçи Семен Быстров, Атлантика укиянĕн ăшă шывĕпе чÿхенсе пĕрле чунне кантаракан «Васка» ресторан Ылтăн Тăрнине ыталаса чуп турĕ те, хумсем çийĕн аслатиллĕ хăлтăртатрĕ: «Демократи çил-тăваллăн çавăрттарать. Мана Ельцин çунатлантарнă. Путин тата çÿлерех вĕçтерессе шанатăп. Иксĕмĕр вара, чун çунтармăшăм, тăрна ташши ташлăпăр».

Вăрманкас администраци пуçлăхĕ Максим Крутов район центрĕнчи хваттерĕнче шухăшларĕ: «Раççее малалла кайма чăрмантарас мар терĕр пуль, йăтенĕ Çĕпĕр упи».

Арăмĕ ласаретран таврăнасса кĕтсе ывăннипе ыйхă çухатнă Салакайăк Карачăмĕ, кăмака хыçĕнче çакăнса тăракан авалхи пăшалне йăтса тухрĕ те пĕлĕтелле умлă-хыçлă кĕрслеттерчĕ: «Шĕкĕр Турра! Халăх чăтăмсăррăн кĕтни тинех çитрĕ. Ытла шалалла кĕтĕн çав вăрман чăтлăхне. Унтан тухма халу çитейменнипе тĕнчене янраттармалла мĕкĕрсе ятăн, çĕршыв сутăнчăкĕ, халăха хăвăнтан пистернĕ Açтаха. Сан сассунтан хăранипе кушак аçи те тухса тарчĕ. Инкек кĕтетĕп: пăрте йĕке хăре ерет ĕнтĕ».

«Кукша» ял хуçалăх кăмунин хуçи Константин Плешаков, Ельцин телейлĕ пурнăç суннине илтсен, тулли сăмакун стаканне çавăрса хучĕ те, сăх сăхрĕ: «Малашне те пулăш эсĕ мана, таса Турăçăм? Çиçĕм ялĕн урамне те праçник çывхарать. Хрущев, Брежнев, Черненко, Андропов, Горбачев лачакара усранă «Çиçĕм» колхозран çиçĕмсен кăмуни туса кам кăмунарсене ылтăнланă калпак тăхăнтартрĕ? Кукша Куçки! Ельцин, çĕршыв экономикине тата политикине йывăр лару-тăрăва лартса хăварса, куян пек аяккалла тапса сикрĕ. Çитес çур çултан Президент суйлавĕ пулмалла. Эпĕ те тăрататăп хамăн кандидатурăна. Тухатăп кĕрешĕве! Ял çиçĕмне çиçтернĕскер, тăван çĕршыв çийĕн çиçĕм çути ялкăштараймастăп-и? Раççейĕн çĕнĕ патши Кукша Куçки! Епле янăрать?»

Тĕнчене, çĕршыва, Чăваш енне, Вăрманкас районĕн çыннисене шухăшлаттарчĕ те, тавлашса калаçтарчĕ те Çĕнĕ çулта сарăлнă хыпар. Кам уншăн хытă кулянчĕ пуль, камăн кăмăлне хуçрĕ пуль вăл. Партократие хирĕç харсăррăн кĕрешсе – хăйпе хăй кĕрешсе – мăнаçланнă, намăсланмалли тĕслĕхсемпе тĕнчене тĕлĕнтернĕ,

юлашки çулсенче патшалăх ĕçне вăйпах хутшăнайман икĕ питлĕ Ельцин халăх ырлăхĕ пирки маннă пулнă. Кремĕле вăйпа çĕмĕрсе кĕнĕ Çĕпĕр упине юрас текен йăпăлтисем сахал пулнă-и? Укиян леш енчи «тусĕсем» ăна ултавлăн хĕтĕртсе тăнă.

Тĕнче вĕçĕмсĕр хумханать. Ельцинăн парăссăр тăрса юлнă кимми те унта хăйĕн ячĕпех ярăнать. Ĕмĕр иртнĕ майăн ыррине те, усаллине те этем чăтса ирттерет. Этемлĕхĕн кăмăл сипечĕпе мораль тĕшшийĕ хăйĕн юххинчех пăтранать.

Çĕнĕ ĕмĕрĕн çĕнĕ ыйтăвĕсем такама та, Вăрманкас çыннисене те çĕнĕлле шухăшлама, çĕнĕлле ĕçлеме хистеççĕ. Хресчен те хăйĕн çулне Христос çуралнă вăхăтран пуçласа малалла шутлать, кунăн-кунăн катса, çуркуннене кĕтет. Хресченĕн тĕп политики – ĕмĕртен пĕр – кашни пусăм çĕртен нумайрах тухăç-тупăш илесси.

Çавăншăн çамрăклăх вăй-хăвачĕпе вăтăр пилĕк çул пылчăк çăрнă, тусан ĕçнĕ, сывлăм шывĕпе питкуçа çуса хавхаланнă Волков менелникне Кашкăр йăвинчех ирттерчĕ: ашшĕ-амăшĕн кил сĕтелĕнчен пуçласа, колхозăн вăрманта хăй тутарнă кану-сиплев ялĕн кĕрекинче.

Кĕрекеçĕ пулса Крутов чăм шыва ўкрĕ. Сĕтел хушшинче сывлăх сунса, черкке çĕклесе ларасси мар. Уяв спектакльне пур хăнана та, хуçисене те килĕшўллĕ лартма пĕлмелле.

Кам кăна çук пуль тусĕн ытамĕнче. Тăванĕ-хурăнташĕ те, кумми-хăйматлăхĕ те, пĕлĕшпе кўршийĕ те, тусĕ-юлташĕ те, ятарлă чинсем те. Тĕрлĕ çулти, тĕрлĕ ăс-тăн шайĕнчи, тĕрлĕ шухăш-кăмăлли... Тĕнче культурине те, чăвашсемпе ют халăхсен аваллăхпа хальхи йăли-йĕркине те, кама хăçан тост калаттармаллине те, кулăш-шўтне те пĕлмелле. Максим Максимович хăйĕн ĕмĕрĕнче ăна-кăна ăнланса, вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Çавăнпа авă Тельман тусĕ кĕреке пуçĕнче ахăрса

кăна ларать. Унăн туслăх хŭтлĕхĕнче те яланхи «парторгĕ» – сылтăм алли пур.

– Тăванăмăрсем-тусăмăрсем! – терĕ сассине хулăнлатса шăв-шава майĕпен пусарнă май Крутов. – Вăхăтлăха канса илер-ха. Юрăпа хыртарнă пырсене кăштах сиплер те, ура хуçса тепре ташлар та...

Ĕçкĕ оркестрĕ васкавлăн хăй вырăнне йышăнчĕ. Салакайăк Карачăмĕ вăкăр хăмпине вĕрсе хăпартрĕ. Крутов баянне хул пуççинчен çакса ячĕ. Типĕтнĕ сĕт завочĕн пуçлăхĕ Волков купăсне чĕркуççийĕ çинче сиктерсе пăхрĕ. Мария Николаевна пианино умне ларчĕ. Аш-какай комбиначĕн директорĕ Попов гитарине пăнтăртаттарса илчĕ. Большаков балалайкине пуç тăрринче çавăрса, камантă пачĕ: «И... раз. Пуçларăмăр!»

Анлă пŭлĕм илемлĕ кĕвĕ сарăлнипе кĕрлесе кайрĕ. Урай варрине йĕркипе тăнă Петĕр, Шăпчăк, Юман харăссăн юрă пуçларĕç:

Вĕç, вĕç, куккук, вĕç, куккук,
Вăрман хĕрне çитиччен,
Вăрман хĕрне çитсессĕн,
Юман тăрне ларса кан.

Кĕреке пуканĕ çинчен Тельман Волков çăмăллăн çĕкленчĕ те, кухня енчен Венера Ивановна акăш пек юхса çывхарчĕ те, çемье ансамблĕ çемье пуçĕн юратнă юррине малалла шăрантарчĕ:

Вĕç, вĕç, шăпчăк, вĕç, шăпчăк,
Вăрман хĕрне çитиччен,
Вăрман хĕрне çитсессĕн,
Çăка çине ларса кан...

Оркестр çийĕнчех юрă-ташă кĕввине куçрĕ. Ĕçкĕ халăхĕ ура çине сиксе тăчĕ:

Линкка-линкка авкаланма,
Юман хăма кирлĕ.
Халь те юман, халь те юман,
Тата юман кирлĕ...

– Çур сехетлĕх – кану! – илтĕнчĕ таматан янравлă сасси.

Арçынсем кĕпĕрленсех тул енчи пӳлĕме тухрĕç. Кунта пукансăр сĕтел урай варринче хăнасене хĕрсе кĕтет. Хăй ларать те, хăни-вĕрлин тавралла йĕркеленсе тăмалла.

Пăчах мар çĕрте пурте уççăн сывласа ячĕç. Туртакансен тута вучахĕсем чĕрĕлчĕç. Хĕрарăмсемсĕр ирĕклĕ, хавас калаçу пуçланчĕ.

– Тин уççăнлăха тухрăмăр, – «Казбек» пирусĕн тĕтĕмне маччаналла ункăлантарчĕ юбиляр. – Ирĕклĕхре ирĕккĕн калаçар. Чăваш та анăçаллах куçать: пурнăçĕпе те, йăли-йĕркипе те. Çакнашкал сĕтел те пирĕн банкетсемпе буфетсенче кăна. Ĕлĕкхи, чухăнлăхри манăçрĕ. Вăл вăхăтра пĕтĕм ĕçкĕ халăхне пĕр стаканран черетпе ĕçтернĕ. Кунта, «шведсен сĕтелĕ» хушшинче, кашнин валли апачĕ-çимĕçĕ, ĕçмелли-çимелли хатĕрĕ. Анăçри çĕршывсенче çӳренĕ чухне...

– Вăхăтлăх правительство ларăвне уçатпăр, юлташсем-тăванăмăрсем. Кĕреке хуçине мар, влаç тытакана итлĕр! – сассине хăпартрĕ Крутов. – Блиц-калаçу пуçланать. Ман ыйту çине çиçĕм çиçнĕ пек хуравламалла. Сирĕн малашнехи ĕмĕт? Хамран пуçлатăп:

– Район халăхĕн сĕтелне çакăнти пек пуян тăвасси.

Ял хуçалăх министрĕ Большаков:

– Чăваш çĕрĕнчен çуллен икшер миллион тонна тĕш тырăпа çĕр улми илесси.

Муркаш ен «Ударник» пуçлăхĕ Давыдов:

– Чăваш патшине «Хресчен çăкăрĕ» орден тутарасси.

Ял хуçалăх академийĕн директорĕ Кириллов:

– Ĕçлекен кашни хресчене вĕрентсе дипломлă аслă специалист туса хурасси.

«Санары» агрофирмăн генеральнăй директорĕ Петров:

– Хамăрăн выльăх-чĕрлĕхсĕр хуçалăхра сысна, ĕне комплексĕсем тăвасси, çĕре минералпа хутăш тислĕкпе те апатлантарасси.

«Шурăмпуç» ял хуçалăх предприятийĕн хуçи Волков:

– Атте колхозне кĕнĕ ялсене вунă хут ытларах пуйтарасси.

Аш-какай комбиначĕн генеральнăй директорĕ Попов:

– Район калăпăшĕпе «Вăрманкас агрохолдингĕ» туса хурасси.

«Вурманкассинский завод СОМ» акционерсен пĕрлĕхĕн пуçлăхĕ Волков:

– Сĕте типĕтмесĕр юр-вар туса кăларма тытăнасси.

«Васка» агрохолдинг ертӳçи Быстров:

– «Юрма» агрохолдинг пуçлăхĕпе Владимир Федорович Ермолаевпа чăваш çĕрĕнче ĕмĕрĕпех хоппалатса ура хуçса ташласси.

Хутăш препаратсен завочĕн гендиректорĕ Свешников:

– Имçампа çĕр тăшманĕсене шелсĕррĕн тĕп туса этеме таса апатпа тăрантарса усрасси.

«Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн директорĕ Пантин:

– Юсамасăр ĕçлекен трактор-комбайн шутласа кăларасси.

Вăрман хуçалăхĕн директорĕ Юман Волков:

– Чăваш вăрманне авалхи сĕм вăрман пек ӳстерсе шавлаттарасси.

«Шурăмпуç» председателĕн ямшăкĕ Гриша-Гриль:

– Конгăри Лумумба йăмăкĕпе тепре там-там ташши ташласси.

Воробьев утарçă:

– Андриян мăнукăмпа тĕнче уçлăхне вĕçсе Уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕрĕн витринчен симпыл ĕçсе ăша кантарасси.

Менелникçĕ:

– Утиял айĕнчи тĕнчере çупкă-тапкă çиес марччĕ.

Пурте ахăлтатса ячĕç, тулли черккесем енне аллисене тăсрĕç.

– Стой! Оправиться! – салтакри пек камантларĕ аслă тыткăч.

Тула тухса кĕнĕ хыççăн «шведский стол» арçынсене каллех хăй тавра çавăрчĕ. Ĕçсе çинĕ хушăрах тамата пурне те кăсăклă ыйту пачĕ:

– Хăвăрпа пулса иртнĕ камитсенчен сире хăшĕ ытларах аса юлнă? Ан вăтанăр. Хушшăмăрта сарафан радиохыпарçи çук. Хĕрринчен, сылтăм енчен, Пантелеймон Михалчран пуçлар. Тархасшăн?

Пурте васкавлăн шухăша путнăскерсем, Пантин мĕн суясса кĕтсе, хăлхисене тăратрĕç.

– Курорта кайма юрататтăмччĕ. Унта куç ăсталла пăхнине хăвăр та манран лайăх пĕлетĕр. Хăйăр çинчи купарча выставкинчен таврăннă чухне киле çитсен хамăр вăрманта мĕнле майра купарчи татас ĕмĕтпе самолетран та çÿлерех вĕçетĕп. Ĕçе тухсан хамăн пулăшаканăм чукун çул леш енне, водокачка пĕви патнелле çавăтса кайрĕ. «Курăр, суйлăр, – тесе шăл йĕрет. – Эсир таврăннă тĕле ятарласа купарча конкурсĕ йĕркелерĕм». Пăхса çаврăнтăм та, чи вăр çавракине, пуринчен те кăмăл туртăмлăраххине куç хыврăм. Паллашас тесе çепĕç сăмах хушрăм. Ман савнă купарча çурăм çине çаврăнса выртрĕ те, мана арăм чĕлхипе хыттăнах ыталарĕ. Питĕме хĕретнĕ хыççăн шухăшларăм вара: «Урăх Хура тинĕс хĕррине каймастăп, хамăрăн купарчасем те тĕнче конкурсĕнче Гран-при преми илме пултараççĕ».

Пантина çумра чавса шĕвĕррипе хирсе тăракан спорт мастерĕ Попов та мухтанса илчĕ:

– Кире пуканĕ кам ытларах йăтассипе çĕршыв шайĕнче ăмăртатпăр. Спортсменсем тавра яланах – чиперкке карти. Мана та пĕр çăткăнĕ-пирĕштийĕ куç хывнă. Сĕлĕх пек çыпçăнчĕ. Кремль çумĕнчи «Раççей» хăна çуртне юмахласа çитрĕмĕр. Ĕçкелерĕмĕр-çикелерĕмĕр. Шухăш ман ăйăрланчĕ. Шăл йĕрен

якăлтатать те шахвăртать, хăйне кура мар, çывăха ямасть. «Çак пукана çĕр хут йăтса кăтарт, вара ирччен çĕр те йăтма хатĕр сана», – тесе мăшкăллать. Эп те çав, ĕмĕтленсе, тăхăр вун тăххăра çитертĕм те, çĕрĕмĕшне çĕкленĕ хушăра пуканĕ-мĕнĕпех кавир çине тӳнтĕм. Ирччен хуп турттарнă. Вăрантăм та, ман красавица та, арăм хăйне валли чаплă кĕрĕк туянма парса янă укçа та çук, çумри икĕ пăт пуканĕ çеç хырăма шăнтса выртать.

Вăрманкассемпе ăмăртакан Шăхран районĕн элчи Юлдашев та хăпартланса пуçне ухрĕ, юмахĕпе хавасланчĕ:

– Атăлпа Урал тăрăхĕнчи облаçсемпе республикăсен зонăри канашлăвне кайнăччĕ. Свердловскра пире «Евразия» хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Хальхи пек йӳтемен ун чухне, Юрий Васильчран каях марччĕ. Апат пӳлĕмех йăтатчĕç. Уралочка чăп-чăмăр ураллă пулнăшăн айăплă-им эпĕ? Вăхăт пирĕнпе ăмăртсах шаккать те шаккать, вĕçĕмсĕрех ача штамплать вĕт. Мускавра, ял съездĕнче, Свердлов облаçĕнчен пынă çынсемпе хутшăнтăмăр. Евразия Егоровна, тесе пит-куçне хам майлах чĕтретсе алă пачĕ мана вĕсен аслийĕ. Тĕл пулу хыççăн ăшри темле вăрттăнлăха астарса яракан вăя парăннипе эпĕ каçченех шухăшласа анраса çӳрерĕм. Ресторанта хире-хирĕç ларатпăр. Кăшт ĕçнĕ хыççăн чипер майран чĕлхи уçăлчĕ пулас та, хăюллансах каларĕ мана: «Эсир паçăр ман ятран тĕлĕннĕ пек туйăнчĕ. Эсир çеç мар, ман ят таçта та такама та кăсăклантарать. Йăлт аннене пула. Анне ман «Евразия» хăна çуртĕнче ĕçленĕ. Çавăнта аттене тупнă. Ăна эп курман. Анне аса илетчĕ: «Вăл анăçран, эпĕ тухăçран. Çĕрĕн пысăк пайне тухăçалла тата анăçалла чикĕ картласа аннă вăрăм ту çинче ларакан çĕрте çуралнăран эпĕ сана Евразия ят хутăм». Мĕнле-ши вăл ман атте? Сирнешкел пăхаттирле арçын пекех туйăнать темшĕн».

Васкакан Быстров черетне аран кĕтсе илчĕ.

– Хусантан таврăнатăп. Çĕнĕ çула кĕтсе илме васкатăп. Çулташсемпе çул кĕскетсе çывăрсах кайнă. Çĕмĕрле станцийĕнче вăрантăм. Мускавран килекен пуйăс çине куçса лартăм. Хусансен парнине чуп туса пынине астăватăп. Проводница Шăхранта антарса хăварчĕ. Çĕмĕрлепе Шăхран хушшинче мĕн вăхăт ярăннине маннă. Капла пулмасть тесе Шăхрантан автобуспа аран-аран çитрĕм Вăрманкаса – кивĕ çула вăхăтрах кĕтсе илтĕм.

Петĕр Волковăн шоферĕ Гриша-Гриль, тем аса илнĕн, мăнтăр пит-куçне упăтелле пăркалантарчĕ:

– Ман хĕрĕм Африкăри Конго патшин тăванне кацча тухнă. Хăнана чĕнчĕç. Арăм пилĕкпе аптранăччĕ те, пĕчченех кайрăм. Конгă юхан шывĕн çыранĕнче вут чĕртнĕ те, тĕтĕмленĕ арăслан ашне кăшласа ларатпăр. Мана пăхма кĕрӳ хăйсен пĕр хурамккине хушнă. Арăм парнине, Тарăнвар атомне янклаттарчĕ те вăл мана мăйран питон çĕлен пек явакласа илчĕ. Тропик вăрманĕнче çара кутăн, пальма çулçипе хупланнă пек пулса çӳретпĕр. Тĕм айне туртса антарчĕ те мана, хура мăйăхăма пĕтĕрет те пĕтĕрет хура красавица. Пĕççисене саркаласа хăйĕн хура чăтлăхне кăтартать. Хура чăтлăхра аташма хăнăхнăскершĕн маншăн мĕн? Тропикăри тропинкăпа ута-ута тупнă çав хура майра шур утаман. Шупашкарта Патрис Лумумба урамне уçнă çĕре вăл манăн Максимка мăнукăмпа тата хăйĕн Африкăри Гришипе килнĕ. Хамăр патра арăм, негритянкăна хăналанă чухне, кула-кулах калать: «Мускаври Лумумба ячĕпе тăракан Туслăх университечĕн филиалне уçрăмăр ĕнтĕ Тарăнварта».

Карачăм мучи ĕнсине хыçса илчĕ.

– Вăрманкас, Çĕмĕрле екĕрĕсем мана та ухута майĕсене-вăрттăнлăхĕсене вĕрентрĕç. Хир сысни – ферма сысни мар. Шутсăр чее – хамран та. Шӳрпе пĕçерсе хума манăн сакас пурччĕ. Кашкăр Хĕветучĕн çурисем сан пата та çитме пултараççĕ тенипе ухутана

тухрăм. Эп вăл вăрăм сăмсаллă асавсем ăçтарах çÿренине пĕлеп. Çапла сасатă турăм. Çывхараççĕ ман паталла: аçи малта, ами хÿри хыçĕнче, тĕрекленнĕ самăр çурисем кăшт юларах утаççĕ. Çамрăкки тутлăрах тесе кĕрслеттертĕм иккĕшне те харăс. Пуç çитмест çав ват ухутникĕн... Аçи хăрт-хартлатма тытăнсанах сăсăл вĕçрĕ, вара ракет стартне патăм. Сисмерĕм те ăçта çити вĕçнине. Вĕрене тăрринчен сăнатăп тăшмана. Урса кайнă ашшĕпе амăшĕ ман çăлăнăç йывăççине тустарма тытăнчĕç. Хытă силленнипе тытăнса тăраймарăм çав, хуçăлнă туратпах сысна аçин каçанĕ çине хырăмпа хаплатрăм. Çухалса каймасăрах урхамахăма ик хăлхаран çулса тытрăм та такăр çул çине тухса ĕрĕхтертĕм. Утар пÿрчĕ умĕнче саркаланса тăракан Крахьян ман хыçа на хуту сиксе ларчĕ те... Çулĕ кунтах илсе çитерчĕ. Акă эпĕ – сирĕн умăрта. Сатание пурнăçланă! Шÿрпе пĕçерме сыснисене тиесе килĕр.

Арçынсен ушкăнĕ шалти пÿлĕме кĕрсен уяв пушшех хĕрсе кайрĕ.

Министр кунта та ĕçлĕ пулса юлчĕ. Платон Павлович Белоруссирен кÿрсе килнĕ ăратлă ик çĕр тынаран сĕт хытă антаракан ĕнесем ÿстерет. Ĕнисем унăн ахаль те пилĕк çĕр ытла. Самăртма хупнă вăкăр – икĕ пин. Кашни ĕнерен çулталăкра çич-сакăр тонна сĕт сăваççĕ. Сысни те тупăшлă унăн.

– Мускав асфальчĕ çинче пиçекен «ăслă экономистсене» итлемерĕмĕр, фермăсене пĕтермерĕмĕр, – ăшă кулăллăн калаçать Давыдов. – Вунă çул хушшинче выльăх-чĕрлĕх йышне чакарман. Эпир тĕрĕс çул-йĕрпех пыратпăр.

– Ăслă çав эсĕ, Платон, – сарлака çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна Большаков. – Аçу-аннÿ ахальтен çав ята паман сана. Авалхи грексен Платон ăсчахĕ вĕрентнĕ пекех хăвна ху ăнланса тулăх пурнăç ăçтине пĕлме, çав пĕлÿпе хăвăн халăхна усă кÿме пултаратăн. Эпир вара çав чăнлăха пуçа хываймастпăрах пулас. Курмастпăр,

пăхмастпăр умрине. Умри чăнлăх халĕ – республикăшăн хурлăх. Выльăх-чĕрлĕх чакать. Вакланнă хуçалăхсем фермăсемпе комплекссем тытса тăраймаççĕ. Аш-пăш çук та – тутлă апат та çук сĕтел çинче. Çĕнĕ çула, çĕнĕ ĕмĕре, эпир темле тăрăшнă пулин те, ял хуçалăх предприятийĕсенчен çурри ытла пысăк тăкакпа кĕчĕç. Иртнĕ вăрçăсен, революцисен кивĕ ĕмĕрĕнчен хăçан маларах утса кайăпăр-ши?

– Çĕр çул хушши Выçлăх танатинче айланатпăр. Кам айăпĕпе-ши? – тесе ласт! сулчĕ те аллине Салакайăк Карачăмĕ, шăпăрĕ патнелле лăкăштатрĕ, çывăхрисене илтмеллех каларĕ: – Кĕвĕ чуна уçăлтарать. Паян эпир юрлама-ташлама килнĕ. Ушкăна, атьсемĕр? Çавракана хупар хамăрăн çăкăр патшине, Кашкăр Хĕветучĕн чăнчăн хресчен чунлĕ ачине!

Хресчен чунлĕ ача хăйĕн аслă ывăлне хăлхаран пăшăлтатма ĕлкĕрчĕ:

– Петĕр, шур вырăссем патне кайма ан ўркен. Сан унта, «Шурăмпуç» енчĕкĕнче, çĕр пăру туянмалăх кăна мар пур укçу. Платон Павловичран ан юл. Хăвна ĕçлеме вĕрентнĕ çыннăн ăслă канашĕсене ан ман. Юлмастпăр эпир те муркашсенчен. Çапла-и?

Çаплах пултăр, тесе ачи ашшĕне менелник картине çавăтса кĕчĕ.

2

Çĕнĕ влаçри «çĕнĕ демократсем» çĕршыв çийĕн хăйсен ялавне вĕлкĕштермесĕр май çуккине туйса илчĕç. Парти ятлă хĕç-пăшалсăр вĕсен те малашлăх çĕнтерĕвĕ курăнманнине тинех ăнланчĕç. Тĕрлĕ енчен вĕрекен çиле, çапакан хума пĕр çил-тăвăла пĕрлештермесĕр вăй пулмастех.

Çĕнĕ ĕмĕр утăм тунă майăн çĕнĕ патша таврашĕ те пуласлăхĕн утăмне турĕ. «Пирĕн çурт – Раççей», «Пĕтĕм Раççей», «Раççей пĕрлĕхĕпе килĕшĕвĕн партийĕ»,

«Халăх патриочĕсен партийĕ» кĕрешӳ пăтравĕн тинĕсĕнче пĕр-пĕринпе çапăнса кăларнă хум кăпăкĕнчен çĕнĕ парти – «Пĕрлĕх» çуралчĕ. Демократилле партин тĕп тĕллевĕ: çĕнĕ влаça патшалăх умĕнчи палăртнине пурнăçа кĕртме Раççей гражданĕсене анлăн явăçтарасси, Президент суйлавне палăртнă шайра иртересси – Путинах президента суйлаттарасси. Парти тĕллевĕсенчен тепри – Раççей хăрушсăрлăхне çирĕплетесси, патшалăх тата унăн территори пĕрлĕхне сыхласа хăварасси, Федераци патшалăх тытăмĕн регионĕсене тата вырăнти самоуправление аталантарасси. Авă епле шăлма пултарать çирĕп хулăсенчен çыхнă шăпăр Раççей урайне. Хирĕçлеме те май çук.

Çав вăхăт хĕрсе хĕмленнĕ кунсенчен пĕринче Шупашкартан хавас кăмăл кутамккине çакса таврăннă Крутов хваттерĕнче арăмĕпе хирĕçес патнех çитрĕ. «Пĕрлĕх» юхăмĕн республикăри канашлăвĕнче панă упăшкин çĕнĕ билетне çавăркаласа ларчĕ-ларчĕ те Мария Николаевна, хăйĕн шанчăклă ленинецĕ çине çисе ярасла пăхса каларĕ:

– Мемме эсĕ, Макçăм, такамăн таса мар чăмлакне те çăвара хыпма пултаратăн иккен. Эсĕ малтан КПСС билетне ăçта илнине эпĕ курман, анчах 1973 çулта билет улăштарнă кун урамран Бориса хул пуççи çине лартса «Интернационал» юрласа кĕнине паянхи пек астăватăп. Мĕн тери çунатлăччĕ эсĕ çав самантра? Халĕ, пăхатăп та, сан куçунта ун чухнехи хĕлхем çиçмест, тем шухăшлавлăн куçна мăчлаттарса çеç ларатăн. Ăнланатăп, ăшунта тăвăл сан. Тăвăннă кăмăл. Кала тĕрĕссине, чун хавалĕпех кĕтĕн-и çак «Пĕрлĕх-Упа» кампанине? Хăвах ăнлантартăн вĕт эсĕ мана вăл – парти мар, пĕрлешнĕ юхăмсем çеç тесе. Кала, кала тĕрĕссине? Эсир вĕт, ленинецсем, хăвăра шеллемесĕр вута кĕме те, вилме те хатĕрччĕ-çке, коммунист сăнарне этемлĕхĕн чи вăйлă сăнарĕ вырăнне хураттăрччĕ-çке. Кинори-кĕнекери астармăш Сăнарĕ мĕншĕн халь сан чи вăйлă сăнару

вырăнĕнче мар-ха? Тылла хăвна, тăну тыллинчен çӳп-çап мар, ылтăн пĕрчи кăлар. Эсĕ вăйлă çын.

Максим Максимович турткаланса ларчĕ-ларчĕ те, нихçан та суйма хăнăхманскер, арăмне уççăнах каларĕ:

– Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн, Маруç? Сан аллунти упаллă хыт хуплашка – манăн ĕç дипломĕ. Унсăрăн эпĕ район пуçлăхĕ те, никам та мар-çке паянхи пурнăçра. Иксĕмĕрĕн пĕтĕм малашлăх телейне çакă кĕнеке татса парать. «Пĕрлĕхе» кĕмесен эпир хамăрăн пулас президентăн пĕрлĕхĕнче те тăраймăпăр. Пире сăмсаран шаккасах каланă ун пирки. Пирĕн Путина президента суйлаттармалла, халăха уншăн сасăлаттармалла. Ăнлантăн-и?

– Санашкал ухмахах тухман-ха эпĕ, – арăмĕ тăрса унăн çурăмĕ çине ӳпĕнчĕ. – Мана санăн пуçунти урлăлла-пирлĕлле шухăшу пăшăрхантарать. Эсĕ ĕнер çеç коммунизмăн чаплă идеалĕсемшĕн, КПССшăн вилме те хатĕрччĕ, Ленин сăнлĕ хĕрлĕ билетна кăкăр кĕсйинчен кăлармастăнччĕ. Паян эсĕ тепĕр билет илтĕн. Кала-ха, мĕншĕн ăна кăкăру çумне хурса килмерĕн? Е ку политика юхăмĕн вăхăтлăх билечĕ кăна тесе пĕчĕк чăматанна пăрахнă. Енчен те «Пĕрлĕх» юхăмĕ мар, коммунистсен юхăмĕ çĕнтерсен, Путин господин мар, Зюганов юлташ президент пулсан, каллех шухăшна улăштарса Раççей коммунисчĕсен партийĕн билетне илетĕн-и? Эх, Макçăм, Макçăм. Партисем улăштаракан упăшкамçăм.

Ĕнси йĕпеннине туйнă Максим Максииович аллисене хыçалалла ярса арăмне мăйĕнчен ыталаса илчĕ:

– Маншăн саванас чухне мĕншĕн йĕрен-ха? Манăн карьера урапи катаччиллех чупать вĕт. Иксĕмĕре унта юнашар ларса пыма япăх-им? Ăнлан, пуçлăхсен унченхиллех пуçлăхсен партийĕнче тăмалла-çке. Нимĕн те тăваймастăн. Мĕн çитмест халĕ сана, чунăмçăм-юратăвăмçăм? Пурнăçа та йĕркелесе çитертĕмĕр. Пурте пур. Ачасем те хăйсем ура çинче

çирĕп тăраççĕ. Пулăшатпăр та вĕсене кирлĕ чухне. Тата мĕн кирлĕ пире, иксĕмĕре?

Иккĕшĕ те хирĕç çаврăнса тăрсан, шывланнă куçĕпе тарăхуллăн пăхса, Мария Николаевна йĕрсе ячĕ:

– Сире, арçынсене, темле партире те аван, партисене улăштарма та ним те мар. Иксĕмĕрĕн вилĕмсĕр юрату партине те эсĕ ултав партийĕ туса хунă, еркĕн юхăмне кĕрсе ўкнĕ. Манăн хĕр-тантăш Лина Маминовапа суя парти туса хунăскер, намăссăрскер эсĕ, Макçăм. Ме, вула! – алăк çумĕнчи пукан çинчен конверт илсе пырса çиллессĕн тыттарчĕ ăна Маруç. – Вула та, ташла!

Арăмĕ чăтайман пулас, конвертне уçнă. Хăй ячĕпе Мускавран янă пĕр листаллă çырура нумай сăмах çук. Макçăм ăна сасăпах, телеграмма пек хăвăрт вуларĕ: «Нихçан курман, пĕлмен аттемçĕм! Сире хĕрўллĕ салам! Анне мана уçса панă сирĕн хушăри вăрттăнлăха тек пытараймăпăр. Манăн сире шутсăр курас килет. Наука докторĕн дипломне илнĕ ятпа хăнана чĕнетпĕр. Максим Васильев».

Çак самантрах аслă Макçăмăн куçĕ умĕнчен Сормово енĕ, кил хушшинчи йывăç тăрне улăхакан пакшана хăй патне кăчăк туртса чĕнекен пĕчĕк арçын ача, капитансемпе пĕр ушкăнра ытама тытса ташланă хушăра куçран чăрлаттарса пăхакан хитре ача тухса тăчĕ.

– Мĕн, аса килчĕ-им ясар еркĕнў?

– Вăл мар-ха. Ачи, – пытарма шутламарĕ вăл.

– Мана та Чулхула аса килчĕ çав. Аннўпе тата савнийўпе трагикомеди кăтартнисем. Виççĕмĕш камитне курма пĕрченех кай. Чармастăп кукалесе тăракан ăйăра. Виççĕр тăвăр «Пĕрлĕх» партийĕ. Тен, унта та тупăн хăвăн телейна, – тесе Маруç электрошăнкăрав сасси илтĕннĕ çĕрелле васкарĕ.

Шупашкартан хаклă хăнасем Урине хĕрĕпе кĕрўшĕ хăйсен автомашинипе килсе çитрĕç. Партисен юхăмĕн хумĕ тăруках лăпланчĕ.

Вĕсем – упăшкин ашшĕ парнеленĕ виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерте, Атăл хĕрринче пурăнаççĕ. Электропромышленность корпорацийĕнче пысăк вырăнта ĕçлекен ашшĕн укçа нумай. Вăл пулăшмасăр вĕсем икĕ тухтăр ĕç укçийĕпе аран-аран кăна тытăнкаласа пурăнмалла. Ывăлпа хĕрне ӳстерме те самаях кирлĕ. Крутов хĕрĕ валли Шупашкарта хваттер майлаштарнă тени такам шухăшласа кăларнă элек çеç. Президент администрацийĕ ку çăхав пирки ятарлă тĕрĕслев тутарнă. Максим Максимович патшалăх умĕнче тасах.

Ачисене илсе килменшĕн Макçăмран ытла Маруç ытларах кулянчĕ.

– Хăвăр пырса курăр, – лăплантарчĕ ашшĕпе амăшне Урине. – Кĕçех хамăр Англие вăхăтлăха ĕçлеме кайсан пăхса та йăлăхăр-ха, тарăхса та çитĕр ак. Борис шăнкăравламарĕ-и?

– Уйăх та çитет сас-хура паманни.

– Эдикĕ Оксфордран виçĕм кун мобильникпе калаçса илнĕччĕ. Волковсен Левипе кибернетикăпа çĕтрĕç те. На отлично вĕренеп, тесе мухтанчĕ-ха. Лондонран кайса килетпĕр-ха ун патне.

Арçынсен хăйсен калаçу йĕрĕ тупăнчĕ.

Борис ашшĕ çулĕпе кайманшăн амăшĕ шутсăр хĕпĕртерĕ. Тымарти Мировсен хурăнташĕпе пĕр класра вĕренчĕ вăл, аттестат илсен, унпа пĕрлех мускавалла тапрĕ. Лешĕ хăйсен тăванĕ ĕçлекен радиотехникăпа электроника тата автоматика институтне, Борис вара Ломоносов университетне вĕренме кĕчĕç. Пултарулăхне кура Борис Крутова аспирантурăна хăварчĕç. Экономика наукисен кандидачĕ пулсан, пĕр хушă университетра студентсене вĕрентрĕ. Ентешсем пĕр-пĕринчен уйрăлман. Тан Ваçли мăнукĕ Максим Васильев Ельцин тусĕн хĕрне качча илсен çӳлелле хăпармалли çул уçăлать. СССР Наука академийĕн Экономика институчĕнче ĕçленĕ вăхăтрах Маруçсен ывăлĕ экономика докторĕн диссертацине хӳтĕлет. Министрсен

Совечӗн председателӗн заместителӗ, Макçăм хуннӗ, Бориса хăй патне сулăмлă ӗçех илет. СССР салансан, Егор Тимурович Гайдар профессор, пултарулăхӗпе палăрнă чăваш ачине Раççей правительствине туртса пырать. Çавăнта, экономика министерствинче тымар ячӗ Борис Крутов доктор, профессор. Хăйсем пекех ывăлпа хӗр ӳсет вӗсен. Эдикӗ Англире, хӗрӗ, Мая, Вашингтонра экономист-менеджера вӗренет.

Крутовсен килти партийӗнче «раскол» пулас хăрушлăх кулленхи лару-тăру ыйтăвне лармарӗ. «Хурăнвар» партийӗн юхăмӗнче Маруçпа Макçăм вăрттăн пухусенче йышăну çирӗплетрӗç: «Килти çӳп-çапа урама кăларса пăрахмалла мар».

Упăшкине Маруç хӗтӗртсе кăштах тӗртсе илчӗ, темиçе каç вăхăтра куç хупман чухне ятларӗ те, кӗвӗçрӗ те, тем туса хума хатӗр пулса та пăхрӗ, çапах шухăш вӗçне пӗр тӗвве тӗвӗлерӗ: «Маншăн Макçăм пек вăйлă çын тӗнчере çук. Упăшкан ӗçӗнче те ӗмӗрте татса пама май çук ыйтусем мансăрах пуçӗ тулли. Ытларах вăл çавсемпе тăнлăн ӗçлетӗр. Ăна чăрмантарас, чăкрашлантарас мар. Килти проблемăна кил политикинчех татса парăпăр».

Килти проблемăн алăкӗ те кӗçех уçăлчӗ. Килӗшӳ тунă тăрăх, вӗсен Мускава пӗрлех каймалла. Çавăнпа Маруç упăшки çине утланса ларчӗ:

– Мана хăвăн личнăй транспортупа пӗрре катаччи чуптармасассăн, эсӗ унта пӗчченех намăс куратăн.

– Намăс курмастăп, Маруç. Санпах, хамăр ачасемпех, санăн хӗр тантăшупах, пӗрле шкулта вӗреннӗ Тан Ваçли ачипех, унăн... унăн мар, хамăн Макçăмпах савăнăпăр, пӗрле пулăпăр, – хавасланчӗ Максим Максимович.

Район администрацийӗн пуçлăхӗ вара, хăйӗн правипе усă курса, тăванне, Вăрăм Ваççана, вăрăм çула хатӗрленме хушрӗ.

Вăрăм çул вӗсене кӗçех Мускава илсе çитерчӗ.

Вĕсенчен Карачăм мучипе Крахьян та юлмарĕç. Вĕсен те Мускавра «вашнăй ĕç» пур. Мăнукĕ, Вăрăм Ваççан ывăлĕ Андриян, вĕсене ача менелникне чĕннĕ. Мучин хăйсем вăрçă вăхăтĕнче ашшĕ вырăнĕнче пăхса ўстернĕ Пушкарев майор ачине Станислав – «Чапая» та курас килет. Пушкарев генерал-полковник, хăй Мускав çар округĕн авиацине тытса пынă чухне, тивĕçлĕ канăва тухас умĕн, Хурăнвара вертолетпа вĕçсе килнĕччĕ, ял çыннисене, чи малтан сухаллă аслашшĕне, хыт шавлакан «шăрчăкĕ» çине лартса вĕçтернĕччĕ. Йăмăкĕпе иккĕшне, амăшне тата нумай-нумай ачапчапа хĕрарăма вăрçă çулĕсенче иккĕмĕш кил, çăкăрпа çĕр улми, сĕт, аш панăшăн, вилĕмрен çăлса хăварнăшăн тав туса чăваш халăхне вертолет парнеленĕччĕ. Хăйсем патĕнче Станиславпа шахматла та выляса илнĕччĕ. «Эп урăх чемпион пулаяс çук, аçун парнине – нимĕç генералĕн парнине – хăй виличчен хуçинех тавăрса паратăп», – тесе Индири паллă çын Джавахарлал Неру хăй вăхăтĕнче кермансен Шульц генералне ырă тунă, вăл хăйне вилĕмрен çăлнăшăн Хĕрлĕ Çар майорне Пушкарева, вырăс офицерĕ хăйĕн вăрçă çулĕсенчи йывăрлăхра ачисен аслашшĕ пулнă чăваш мушикне кăмăлласа сума сунă хаклă парнене Станислав Пушкарев генералăн чăматанне кăмăлтанах хурса панăччĕ. Ватă çын ăнлавĕнче пурнăç шахмат вăйăи пекех туйăнатчĕ. Кам ăслăрах – çав çапăçакан çĕнтерет. çавăнпах пуль вăл Мускавра, слон шăммисемпе шахмат уйĕн лапамĕнче, Станислав – «Чапайпа» та, ашшĕпе те выляса çĕнтерес ĕмĕтпех çемçе ларкăчра мăнукĕпе юнашар ларса пычĕ.

Максим Максимовичăн пуçĕнчен ывăлĕ кайма пĕлмерĕ. Мария Николаевна ывăлĕпе, кинĕпе мĕн-мĕн çинчен калаçмаллине палăртса, хушăран Лина Маминова çине чунтан тарăхса вăхăта ирттерчĕ. Крахьян хăйне Мускав кавалерĕсемпе тата майрисемпе мĕнле тыткаламалли пирки шухăшларĕ.

Вăрăм Ваççа ял хуçалăх выставкинчен инçех мар чапланса ларакан «Космос» хăна çуртне шырамасăрах Горький проспектĕнчен çаврăнса кĕчĕ. Чăваш номерĕнченех пĕлчĕç пулас та, пĕр правур майор вĕсене машина лартмалли вырăн тупса пачĕ. Шукăль тумланнĕ тепĕр çамрăк, пурне те алă парса тухнă хыççăн, «Атьăр, тĕнче уçлăхне вĕçер», – тесе чăвашла каласа тĕлĕнтерчĕ те, хăй хыççăн ертсе кайрĕ. Кашни мăшăра, Вăрăм Ваççана пĕччен, уйрăм номерсене вырнаçтарчĕ.

– Тавах Турра, – ихĕрчĕ Вăрăм Ваççа, – анчахрах килтипе хирĕçкелесе илнĕччĕ те... Ялан тем çитмест хĕрарăма. Ан кил,Мускаврах юл, тесех ăсатрĕ те. Туй тăвасси кăна юлать ман кунта, эсĕр те пĕрле чухне...

– Туй тума пӳртна часрах сутса килмеллеччĕ-ха сан, чăсмакăн. Йĕмна хывса, çăмартуна касса ăшалаççĕ закуска валли якăлти-япăлти уç кутсем, – ихиклетрĕ Крахьян инкĕшĕ. – Арăму валли вилĕм парни те туянса кайма пултаран. Мутри сана! Хурал – çумрах.

Çулран каннă хыççăн, кăнтăрлапа аялти хута, апата чĕнчĕç. Салакайăк Карачăмĕ шăпăрне хăйпех илчĕ. Çакă тĕлĕнтерчĕ: унччен вĕсем патне пĕр çын та хăпармарĕ. Ресторан алăкĕ уçах. Унтан чаплă майрапа тата пĕчĕк арçын ачапа тухакан вăтам пӳллĕ, кăшт тăрăхларах питлĕ, хура çӳçлĕ, çăра куç харшиллĕ, хулăнрах туталлă, сарлака çӳллĕ çамкаллă çамрăк, сăмаххисене пăтăр-пăтăр татса, уçăмлăн чăвашла чĕнчĕ:

– Атте?! Чисти сăн ӳкерчĕкри пекех. Аттех вĕт?

Пăлханакан Крутов хăйне алла илчĕ те, утăм туса, ăна ыталарĕ:

– Ывăлăмçăм, аван-и?

Арçынсем – арçынлах çирĕп. Иккĕшин пĕр тĕслĕ куçĕнчен те пĕр тумлам куççуль тухмарĕ. Пĕрешкел сăнлăскерсем, пĕр юн таппинче пĕр хушă пĕрне-пĕри сăнаса тăчĕç те, ытамран уйрăлчĕç. Паллашу пуçланчĕ.

– Атте, Мария Николаевна, Карачăм мучи, Крахьян инке, Василий Иванович, ку – ман мăшăрăм, – хавассăн пĕлтерчĕ Максим Вячеславович.

– Ева, Ева Адамовна, ку шĕвĕркки, пирĕн ывăл Максимка, – тесе упăшки çÿллĕшех, мăнтăрланман, çирĕп чăмăр кĕлеткеллĕ, илемлĕ пике кашнине черетпе алă тытса тухрĕ. Ун хыççăн арçын ачи те алă парса пычĕ, «Салам, салам, салампа хăналам», – текелесе алăкран кĕрекенсене хирĕç чупрĕ.

– Асатте, асанне, курăр камсем килнĕ? Юмахран çуралнă асаттепе паллаштарас-и? Акă вăл, – аслашшĕпе асламăшне – Вячеслав Васильевичпа Алина Сергеевнана Крутовсем патне çавăтса илсе çитерчĕ Максимка.

«Юнашар тăракан тăлпан арçынсенчен хăшĕ-ши манăн чăн-чăн аттемçĕм?» – тесе шухăшласа, Максим Васильев вĕсен сăнĕнче çывăх паллă шырарĕ, хăйĕн ашшĕн сăн-питĕнче вăл ăна курмарĕ, паян пуçласа ывăлăм тесе чĕннĕ шурăрах пуçлă çынра туйса илчĕ те, чăтаймасăр иккĕшне те ытамласа чăмăртарĕ:

– Эх эсир, манăн аттемçĕмсем, мĕн тăвас-ха манăн сирĕнпе? Атьăр, иртĕр шалалла, пурте утăр паянхи ман кĕреке хушшинелле.

Çав вăхăтрах ушкăна Крутовсен Борисĕпе майри пырса çитрĕç. Каласкаласа хыпăнса ÿкнĕ самантра фильм ÿкерекенĕ те, сăн çапаканĕ те таçтан тупăнчĕç. Каласса татăлнă пекех, Бориспа Макçăм ашшĕне варрине хупса асăнмалăх ÿкерĕнчĕç.

Вăрманкассене ирпе кĕтсе илекенĕ Мускаври чăвашсен ентешлĕх пултаруçисенчен пĕри пулнă-мĕн. Акă вăл, савăнăçлă куна малалла тăсса, Васильевсен уявне пуçларĕ:

– Эпир, чăвашсем, маттур халăх, ниçта та пуçа усмастпăр, паян та пуçа каçартсах хăюллăн калама пултаратпăр: Чăваш пулнă, пур, пулать те! Ура! Ур-ра! Урр-рра! Алран кайми аки-сухи...

Пурте кăшăл тăрса хăватлăн юрласа ячĕç:

Асран кайми атти-анни...
Ай-йай-йай-йа...
Аки-сухинчен уйрăлас çук,
Атти-аннине, ай, манас çук.
Асран кайми пĕлĕш-тантăш,
Пуринчен пахи – ял-йыш, пускил.
Ай ĕçер-и, ай, çиер-и?
Виличчен пĕрле, ай, пурнар-и?
Ай-йай, йай-йа...

Юрă вĕçленсен уяв кĕрекин пуçĕ малалла çаптарчĕ:

– Пирĕн ентешлĕх пĕрлĕхĕнче – вăй! Хамăрăн юлташсен-тăвансен чаплă кунĕсене ялан пĕрле пухăнса паллă тăватпăр. Паян черетре – пултаруллă та хастар чăвашăн, Тымар ачин, техника наукисен докторĕн, профессорăн Максим Вячеславович Васильевăн чаплă кунĕ. Атьăр пĕрле савăнар, чăвашла юрлар, чăваш ташши ташлар. Васильев ученăйшăн!

Ентешлĕх канашĕ ентешлех тăрăшнă иккен. Кама кăна пухман-ши?

Техника наукисен докторĕ Алексей Титович Милов хурăнварсенчен ашшĕсем çинчен ыйтса пĕлчĕ. Вăл отпуск вăхăтĕнче арăмĕпе, ачисемпе Тымарта, Вăрманкасра, Шупашкарта пуласшăн. Ăна, институт ректорне, талантлă чăвашсем кирлĕ. Ял чиркĕвĕ те туртать ăна. Аслашшĕсем Афонран хаклă хакпа туянса килнĕ, аслашшĕне Чулхулара персе вĕлернĕ хыççăн асламăшĕ сыхласа хăварнă Таса Турă Амăшĕн Ивер турăшне чиркӳре курса ăна пуç çапасшăн, унпа хăйĕн ăнлавĕпе чунне уçса калаçасшăн.

Генералсем хушшинче Станислав Пушкарев ашшĕпе юнашар ылтăн пакунĕсемпе йăлтăртаттарса тăрать. Кăкарĕ çинче унăн – Афган вăрçинче панă ылтăн çăлтăр. Карачăм мучине хушша хупрĕç те вĕсем, тем çинчен те çăвар хупмасăр калаçаççĕ.

Вăрăм Ваççа ывăлĕ Андриян Воробьев полковник Улатăр вырăсĕпе Николай Бударин космонавтпа

ашшĕне, аслашшĕне, ытти тăванĕсене паллаштарчĕ. Пĕрле сăн ўкерттерчĕç.

Крутовсемшĕн хăйсемшĕн пĕчĕк уяв – тĕл пулу пекки пулнине кунта пухăннисем, паллах, пĕлеймерĕç. Вĕсем хăйсен кумма хĕрĕпе, Тельман Волковсен Шăпчăкĕпе, унăн мăшăрĕпе тата Максим Максимовичăн ашшĕ енчен тăван мар, амăшĕ иккĕшне те çуратнă тăванĕпе Лариса йăмăкĕпе тата унăн упăшкипе, Раççей халăх артисчĕпе Олег Артуровпа чунтан калаçрĕç.

Ахаль чухне вĕсене, Пысăк театрта ĕçлекенсене тата гастрольсенче çўрекенсене, епле тĕл пулăн-ха? Тăватă талант чăваш халăхĕн ăслă ачисен умĕнче ниçти театртинчен те тăрăшарах юрларĕ пуль. Çав шая танлаштарма чăваш чĕпписен чунĕ – илемлĕх вăйĕ пулчĕ-пулчех. Мускав театрĕсенче, консерваторире ĕçлекен чăваш таланчĕсем хушшинче пулса хăй хăш пĕлĕт çинче ярăннине тин ăнланчĕ Салакайăк Карачăмĕ.

– Эпĕ те хама Чăваш çĕршывĕн ачиех тесе шутлатăп, çавăнпа чăвашсен ентешлĕхĕнче тăратăп. Сирĕнпе пĕрле пулса чуна уçатăп. Манăн асатте Максим Дормидонтович Михайлов сирĕн енче, Кольцовкăра çуралнă, тăван çĕршывне виличчен те манман. Паян эпĕ чăваш аксакалĕпе Карачăм мучипе – Герасим Филиппович Воробьевпа асаттен юратнă юррине юрласа патăм. Хамăн репертуара та кĕртнĕ эпĕ ăна. Тĕнче тăрăх çўренĕ чухне те сирĕнпе пĕрле, чăвашсемпе пĕрле çавă вун ик кăшăллă пичкине пăрса уçмасăр чуна кантараймастăп. Карачăм мучи манăн, юрăçăн чунне, хăйĕн шăпăрĕн тĕлĕнмелле кĕввипе çĕнĕлле уçса ячĕ. Епле ăста калать вăл. Чăн-чăн халăх музыканчĕ. Чăн-чăн чăваш халăхĕн артисчĕ. Сире йăлăхтармарăм пулсан, унпах тепĕр юрă шăратар-ха, Атăл тăванĕсем:

Кăвак чĕнтĕр карнă тўпене çу каçĕ,
Тулли уйăх сапнă кĕмĕл çутине.
Чĕвĕлти чĕкеç пек пикесем тухаççĕ
Ытарма çук ырă Атăл хĕррине...

Раççей халăх артисчĕпе Максим Михайловпа Крутов чылайччен калаçрĕ. Аслашшĕне, СССР халăх артистне Максим Михайлова халаллана Пĕтĕм тĕнчери опера фестивальне Шупашкара пырсан, вăл юлташĕсемпе пĕрле Кульцавра пысăк концерт пама, Вăрманкас шăпчăкĕсемпе юрлама шантарчĕ.

Аякран килнĕ хăнасене унталла та кунталла турткаларĕç, çывăрма хăйсен хваттерĕсене чĕнчĕç. Ывăннăскерсем, ĕçсе-çисе тăраннăскерсем, ĕшенсе çŭрес темерĕç. Крутовсем Бориспа тата кинĕпе хăна çурчĕн номерĕнче вăрах калаçса ларчĕç.

Çĕрлеччен тăсăлнă ĕçкĕ-çикĕре паллашнă çынсене, вĕсемпе пакăлтатнă самантсене аса илсе выртнă май, Мария Николаевна хăпартланчĕ те, кулянчĕ те, тарăхса та илчĕ. Мускавра упăшкипе пурăнакан Лина кашни шухăш çумне çилĕмле çыпçăнса пырать, унăн епре сăмахĕсем хăлхаран тухмаççĕ. «Ачи хăйĕнчен мар пулнине Славик тахçанах пĕлнĕччĕ. Ун пирки Максимкăна калас мар тенĕччĕ. Пирĕн тавлашăва хăлхине чикнĕ те вăл иксĕмĕре те тапăнчĕ, ытларах ман çине сиксе ŭкрĕ: «Тĕрĕссине калăр, кам манăн чăн-чăн атте?» Парăнмалла пулчĕ. Ман ăна курас килет тесе тăнран ячĕ. Акă – тĕл пулу. Маншăн та – çĕнĕ тĕл пулу. «Макçăмупа ташă вăхăтĕнче калаçса чунăма кантартăм. Каçар, тантăшăм, эпĕ Славикрен ытларах ăна юрататăп, курсассăнах кĕлеткем чĕрĕлет», – тесе пушшех уртарчĕ.

Мария Николаевна туртса çурма та хатĕрччĕ Линăна çав самантра, анчах хăйне Бударин космонавт ташша чĕннипе кăмăлĕ улшăнчĕ те, вара вальс кĕввинче унпа юнашар таçта уçлăхаллах вĕçрĕ.

Тепĕр ирпе Борис Максимович правительство машинипе «Космоса» кĕрлеттерсе çитрĕ. Унпа хурăнварсем Çăлтăр хулине кайрĕç. Карачăм мучи Андриянсем патĕнче хăйĕн виççĕмĕш сыпăкри мăнукне курса хастарланчĕ. Хăйсене чĕннĕ керменте шăпăрçă космонавтсене тата хулара ĕçлекенсемпе пурăнакансене

ăсталăхĕпе тĕлĕнтерчĕ. Пĕчĕк концертра пĕрле арăмĕ Крахьян чăваш юррисене шăрантарчĕ.

Мускав çул çӳревĕ тăватă куна тăсăлчĕ.

– Халĕ вилсен те юрать, – хуйхăрмасăрах каларĕ яла çитсен Салакайăк Карачăмĕ. – Мĕн ĕмĕтленни пурнăçланчĕ: Мускавра мĕн тăвассине турăм, кама курассине – куртăм.

Салтаккай–Салакайăк йăхĕн хастар арĕсем хăйсен чи аслă тăхăмçине чаплă менелник туса пачĕç. Уявĕ вăрманта, Салакайăк йăвинче кĕрлерĕ. Саламлама Мускавран мăнукĕ, Андриянпа пĕрле Пушкарев генералсем, Шупашкартан Большаков килсе çитрĕç. Станиславĕн Хурăнварта пĕрле выляса ӳснĕ, шкулта пĕр класра вĕреннĕ ачалăх тусĕсем, «Чапаев çарĕн юланутçисем» – Воробьевсем пур. Вăл вĕсенчен уйрăлма пĕлмест. Ашшĕне Числов Петĕрĕ чăвашсем çинчен юмахласа парать.

Авиаторсен хăлхи пуринчен те çивĕчрех пулас, Станиславпа ашшĕ те хăлхисене чӳречe еннелле пăрчĕç.

– Вертолет сасси, – терĕ аслă Пушкаревĕ.

– Ман вертушкăпа такам ярăнать пуль, – хушса хучĕ кĕçĕнни.

– Вăрман пăхса çӳрекен çав çатăрти «шăрчăксем». Атьăр, ĕçер-ха? – сĕнчĕ кил хуçи. – Карчăкпа иксĕмĕр малтанхи пĕрремĕш юхтарнă пылран йӳçĕтнĕ шерпете. Ураран ӳкерес пĕрре сире, енералсене. Тав!

Станислав йывăç куркана çавăрса хунă хыççăн:

– Ой, вăйлă ку сирĕн, асатта-атте, – терĕ чăвашла. – Йăвантарасшăнах апла? Темле, кунпах урасăр тăваймастăр пуль? Эпир – çунатлă вĕт. Çиччас хамăр вертолет çине ларатпăр та, çав вертолетпа ăмăртмалла вĕçетпĕр ăмăрт кайăкла.

Карачăм мучи кулса ячĕ:

– Хэ-хэ. Ытла ан мухтан, Чапай. – Акă тепĕр йышши саправкă сире, пĕлĕт вĕçевçисене, хаклă хăнасене.

«Крахьян – пуçра ян-ян» пур тата пирĕн. Вăрман йывăç-курăкĕн парни. Черккесене тытса парăр-ха?

Ай хăватлă, ух! – чыхăнса каяймасăр аран чăтса ирттерчĕ чăваш коньякне тутаннă хыççăн ватă генерал-полковник. – Ку заправка хыççăн, ачам, Станислав, нумай вĕçеймĕпĕр. Ирĕксĕр анса лармалли вырăн сасартăк шырамалла ан пулса тухтăр.

Кĕреке куллинче-савăшĕнче вĕсем сисмен те уçланкăна вертолет анса ларнине. Çамрăксем, вăй питтисем пӳртрен хăвăрт сиксе тухрĕç. Станислав Пушкарев малта пырать.

Акă, çунатсем çаврăнма чарăнчĕç те, алăк уçăлчĕ. Çерем çине йăлттам арçынпа тĕреклĕ йĕкĕтсем çăмăллăн анчĕç. Асли йăл куларах, сылтăм аллине карттусĕ çумне тытса, чеç пачĕ:

– Генерал-полковник юлташ, сире Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров арми генералĕ хĕрӳллĕн саламлать. Сирĕн ушкăна хутшăнма ирĕк парсамăр?

– Тархасшăн! – алă пачĕ ăна Пушкарев.

– Тархасшăн, ырă çыннăмăр, патшамăр? Епле килме пĕлтĕр пирĕн пата? Турра шĕкĕр. Кĕрекене чĕнетĕп? – тесе Карачăм мучи президента тулли курка, Крахьянĕ тăвар савăчĕ лартнă çавра çăкăр тыттарчĕç.

Кĕреке варрине кĕртсе лартнă чаплăран та чаплă хăнана ĕçкĕ çыннисенчен кашнийĕ хăй тĕрлĕ куçпа сăнать, вăл мĕн каланине тăнласа итлет. Николай Васильевич васкамасăр, ăшран тухакан сăнарлă та ăшă сăмахсемпе саламларĕ ватă çынна:

– Çĕр çул тӳпине çитес тесе эпир пурте тапаçланатпăр, анчах ун тăррине хăпарса çитсе хамăрăн пурнăç ялавне пурте лартаймастпăр. Унта улăхнă паттăрсенчен пĕри вăл – пирĕн чăваш арĕ Герасим Филиппович Воробьев. Эпĕ Мускавра тĕнчипе чи ватă тухтăра – Гиннес рекорчĕсен кĕнекине кĕртнĕ хирурга Федор Григорьевич Углова курнăччĕ. Вăл манăн пĕр çывăх

çыннăма хăй çĕр çулта чухне операци турĕ, питĕ ăнăçлă сыватрĕ. Унпа каласнă май çакна пĕлтĕм. Вăл табак туртман, эрехпе ашкăнман, ялан утнă-чупнă, хăйне хусканура чĕртсе пынă, ватта пуссан та сивĕ шывпа çăвăннă. Эпĕ ку таранччěнех – арçын, эрнере икĕ-виçĕ хут хĕрарăмпа савăшма нимле таблеткăсăрах пултаратăп, тата аллă çул пурăнма хатĕр, терĕ.

Президент тăхтав тунă хушăра Крахьян стариккине аяк пĕрчинчен сисĕмлех тĕртсе илчĕ:

– Тăнла та, пуçна хыв – ват супнă.

Çивчĕ куçĕпе пурне те хăй еннелле çавăрса илсе, патша малалла тăсрĕ сăмахне:

– Эпир те хамăрăн сывлăх программинче физкультурăпа спорта вăйлатса, урă пурнăç йĕркине кашни çемьен кулленхи йăли пултăрччĕ тесе тăрăшатпăр. Акă паян эпĕ Углов профессор пекех çĕр çулта та сыпсывă, ĕлккен, алăран ĕç пăрахман хамăр чăваша, хуртхăмăр ăстине курса тĕлĕнтĕм. Альберт Григорьевич маттура мĕнле парне панине пĕлеймерĕм...

– «Лада» автомобиль, – илтĕнчĕ ял хуçалăх министрĕн Большаковăн хулăн сасси.

– Аван парне. Тивĕçлĕ вăл ăна. Эпĕ хам енчен, Президент ячĕпе, ĕмĕр çĕнтерӳçине, мухтавлă хресчене, Чăваш çĕршывĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн патшалăх орденĕпе наградăлани çинчен указ кăлартăм.

Кăкăрĕ çине президент орден çакса янă самантра Салакайăк Карачăмĕн йăлкăшакан куçĕнчен вĕри куççуль тумламĕсем пăчăртанса тухрĕç. Вăл вара салтак пек тӳрленчĕ те:

– Рат старатцă тăван çĕршывшăн ĕçлеме! Тавах сире, ырă патшамăр, пире тĕрĕс çулпа ертсе пырăр, халăха телейлĕ тăвăр. Ман пекех, Уклов акатемĕк пекех çĕр çул ытла пурăнăр, – тесе Шупашкар хăнине вăйĕ çитнĕ таран мекĕрленсе ыталарĕ.

– Сире, Карачăм мучи, пылпа хăналанăшăн пысăк тав, пысăк пурнăçушăн – мухтав!

Акă, «Крахьян кулли» Чăваш патшине те савăккăн култарса ячĕ. Темиçе юрă янраттарса илнĕ хыççăн, генералсем те, президент та пŭртри юман хăмана авма пуçларĕç. Карачăм мучи, Крутов баянĕпе ăмăртуллăн, шăпăрне ăн-на, ăн-на, ăн-на-налаттарса ларать. Крахьян та йăкăш-йăкăш шукаласа тухрĕ те, такмакласа ташша ячĕ:

Пирĕн патша Микул пур,
Вăл пирĕншĕн Микул тур.
Халăха вăл юратать,
Юратать те ыр тăвать.
Пирĕн патша пит ăслă,
Йăл кулăллă, хаваслă,
Чăваш ятне тĕнчипе
Мухтать çивĕч чĕлхипе.
Пирĕн патша кăмăллă,
Кăмăллă та сăваплă,
Çамрăкне те, ваттине –
Сума сăвать кашнине.
Пирĕн патша юр юрлать,
Юр юрлать те хыт ташлать
Ĕçкĕ-çикĕ хушшинче
Хăйĕн çирĕп шайĕнче.
Пирн патша та арçынах,
Куçĕ-пуçĕ арçынлах
Шырать вăрттăн хитрене -
Тупма пурнăç илемне.

Патшан ытлашши вăхăт çук. Вăл хăйĕн патшалăх ĕçне пурнăçларĕ те, хăнасемпе пĕрле ĕçкелесе-çикелерĕ те, юрă-ташă хыççăн çула хатĕрленчĕ.

Ăсатма пурте кĕпĕрленсе тухрĕç. Çул куркине тытса парсан президент вертолета кĕрсе ларчĕ. Вăрман çийĕн çаврăна-çаврăна вĕçекен вертушкăна Пушкарев авиаторсем тунсăхлăн та ăмсануллăн сăнаса ăсатрĕç.

Мухмăр-сухмăра чĕртсе ирттерсе янă-яман Карачăм мучи генералсемпе полковнике, Андриян мăнукне, хăйĕн

яланхи тусёсем – егерьсем пулăшнипе, ухутана йыхăрчĕ. «Ухутканаш» панă лицензипе вёсен пăши те, хир сысни те тытма ирёк пурччĕ. Егерьсем пăшалёсене генералсене пачёç. Андриян валли аслашшён саппас пăшалĕ тупăнчĕ. Çухрăма яхăн утсан ухутниксем çырма хёррине çитрёç.

– Çакăнта вёсен килĕ, – аялалла тёллесе кăтартрĕ пёр егерĕ. – Авă, мăн шăтăкра сăмсисене пёрле тёксе çавракан выртаççĕ. Куçĕ вёсен начар курать, анчах пит сисёмлĕ. Сисрёç пире, açипе ами пуçёсене çёклерёç. Амине тивместпёр, çурисемпе юлтăр. Хатёрленёр. Пли!

Тăватă пăшал сасси вăрмана янраттарса ячĕ. Аманнă сысна хăйён сукмакёпе тарма пуçларĕ. Сунарçăсем ун хыççăн чупрёç, тўрёрен ума тухрёç. Каллех тепёр залп. Хыр-чăрăш çумёнче хыçкаланнипе сăмалаланнă тирĕ хытă çав вёсен. Аça кайса ўкмерĕ, малти урисемпе тапăртатса, асавёпе çёре сирпёте-сирпёте, хаяррăн тулхăрса хартлатрĕ те тăшманёсем енне çиçёмле хăвăртлăхпа вирхёнчĕ. Карачăм мучи çумри чăрăш тăрне пит-куçне чиктерсех хăпарса тарчĕ, мăн хырăмлă ватă Пушкарева алă тăсса пачĕ, лешĕ турат çине аран-аран улăхса ларчĕ. Станиславпа Андриян та аптраса ўкрёç. Тепёр егерĕ çётри пăшалне çёклерĕ те, торпеда пек çывхаракан сысна açине ураран ўкерчĕ.

3

Тёнче тытăмён улшăнăвёсем Чăваш çёршывёнче те майлăн пулса пыраççĕ. Турă панă çулне пурăнса ёмёрне, вăрăм-и вăл, кёске-и, вёçленисен вырăнне çённисем çуралса пыраççĕ. Салакайăк Карачăмĕ те хăйён юлашки çулĕ çине кёчĕ. Ун çине тухма ăна çамрăкланса пыракан арăмĕ те ытларах пулăшрĕ пулас. Нухратов «ласаретёнче» çухалса пурăннă Крахьян мёнле эмелпе чёрёлнине туять вăл, вăлта-вăлта хăйёнчен кулнине-мăшкăлланине те сисет. Тымарсен укиян леш енчи мулçи Миров, пилёкне тата шăмă сыппине апитерапи меслечёпе

юсаса кайнă хыççăн, тăван çĕршывне урăх килмерĕ. «Крахьян кулли» вара, Аполлон Нилович шантарнă пекех, духи рекламин гонорар долларĕпе Карачăм арăмне хăйне те хĕпĕртеттерсех ташлаттарчĕ. Пуйса кайрĕ Салакайăк мăшăрĕ. Пуйса кайрĕ те кăмăлĕпе улшăнса кайрĕ. Ватăлнă упăшкине ват каçтака вырăнне те хуми пулчĕ. Тепĕр сăлтав каярахпа палăрчĕ. Карачăм хăйĕн «кăрсавицине» Миров çумне хушни пуçран тухса сĕвĕрĕлчĕ. Аполлон Ниловичăн Елиани пĕр кашăк пылпа çăтса яма ĕмĕтленмелли пикех. Ăна вăл нихçан та Крахьянпа улăштарас çук. Ун шучĕпе, тен, иккĕшĕ аптăранă хушăра юрату вăййинче те аташса илме пултарнă. Пĕринче Крахьян утар пӳртне пилĕк пин долларпа ахальтенех мухтанса килсе кĕрес çук.

Ама açасăр вăрах пурăнаймасть тенешкел, Хурăн Ульянĕн хĕрĕ те шутсăр астармăшлă-çке. Амăшнех хывнă. Вăрманти шăплăхра ĕçлекен Нухратов тухтăрпа унăн пулăшаканĕ Воробьева фельдшерица та пĕр утиял айĕнче хăйсен канлĕхне тупнă иккен. Горячев тĕп тухтăр Вăрманкасра Нухратовсен юрату керменне аркатса хăварсан, Грета Родионовнапа Валерий Гаврилович урăх унта телей вăййинче ырă кураймарĕç. Грета Родионовна, хăй татнă юрату çиппине çыхса лартас тесе, упăшкине венчете тăма та чĕнсе пăхрĕ, анчах Валерий Гаврилович Тымар чиркĕвне кайса Пантелей атте умĕнче те, урăх храмра та Турă умĕнче намăс курма шутламарĕ, хăй çумне ăнсăртран çыпçăннă вĕри кĕлеткене арăмĕн сивĕ кĕлеткинчен хытăрах ыталарĕ. Крахьяна упăшкинчен уйăрттарчĕ. Ачисене пĕрле илсе вара Крахьян çамрăк упăшкапа Миров хăйсене кĕтекен çăтмаха – Сăшана тухса вĕçрĕ.

Карачăм утарта ĕçлеме пăрахни ĕнтĕ виçĕ çул. Вăл хăйĕн вăрманти килĕнче пурăнать. Ялти кил-çуртне Анюта мăнукĕн аслă ывăлне парне турĕ. Хушăран, чун туртнипе, Хурăнвара пыркаласа каять, икĕ хутлă ампар сакки çине ларса шухăшĕпе пăтранать. Куçĕ умĕнче

малтанхи арăмĕ Анук та, çамрăкки Крахьян та картинкă пек йăлтлатать. Çак йывăç кĕлетре ăна икĕ пике хăйĕн хĕрлĕхне хĕретсе савăнтарнă, юнашар пӳртре арăм пулса ачапча парнеленĕ. Тек вĕсем те ĕнтĕ ăна, Хурăн Ульянĕн вĕри мунчинче хурăн милĕкĕпе çапăнса кĕлеткине уçăлтарнă чупкăн упăшкана, хĕрнĕ турчка вĕçĕпе те, вĕри çатмапа та саваймаççĕ. Шахматла выляма çӳрекен Числов Петĕрĕ те автансăр Хурăнварта ял çыннисен вилĕмсĕр чунĕсене тĕнче историне вĕрентет. Кил картинче тунсăх хуçаланать. Ăна хăваласа ярас тенĕнех кĕлет тăрринчен сала кайăк ушкăнĕ вĕçсе анчĕ. Вăл вĕсене кĕсье тĕпĕнчи çăкăр тĕпренчĕкĕсене сапса пачĕ. Сала кайăксем апата хăвăрт сăхса пĕтерчĕç те вăрр! çĕкленсе карта хăмисем çине ретпе ларса чĕрик-чĕрик! юрласа ячĕç. «Пурăнатпăр-ха, эсир те, эпĕ те, килте сала кайăк таппи пур», – текелесе ватă Салакайăк вăрманалла вĕçрĕ.

Анюта кукашшĕне машинăпа кĕпе-йĕм çуса парать, урай сĕрсе, ыттине тирпейлесе хăварать те, ачин пĕчĕк ачине пăхма чуптарать. Пур ĕçне тума та ĕлкĕрет йĕрĕскер. Акă хальхинче те вăл хыпăнсах тухса кайрĕ. Пĕччен юлсан Карачăм мучи вăхăт ирттерме утара каçать, Ваççукпа е утар хуралçипе, Тан Ваçлин шăллĕпе Лексантăрпа, юмах çаптарать. Тан Ваçли ĕнтĕ пуринпе те пĕр тан вырăна – масара кайнă.

Кĕр кăçал ытла ăнланмалла мар килчĕ. Ĕлĕкрех чӳк уйăхĕн вĕçнелле шăнтса лартаканччĕ, юр çăваканччĕ. Раштав çуррине çывхараççĕ – çумăр лӳшкет те лӳшкет. Ку вăхăтра упасем те канлĕхе путаканччĕ. Çанталăк улшăнăвĕ вĕсене те анăраштарса ярать иккен. Çуркуннеччен йăвана çывăрма кĕрсе выртнă пĕр упа-утаманĕ вăхăтсăр вăраннă та хĕл ыйхинчен, хырăм выççине туйса, вăрман тăрăх лаплаттарнă, утар тĕлне пулнă, вĕллесене çапса аркатса пыллă караса ĕме-ĕме чунне кантарнă.

– Вăрă килнĕ! – йытă туллашнине илтсе вăраннă Карачăм сиксе тăрать те, шăлаварне хăвăрт тăхăнса,

çурăм çине кĕске кĕрĕкне уртса, тула сиксе тухать. Карачăм умне ўкнĕ пăшаллă Лексантăр курокне туртать, анчах кĕрслетнĕ сасă илтĕнмест. Пиччĕшĕ пекех мухмăр-сухмăр танатинчен уйрăлайманскер, пăшалне авăрлама та маннă иккен. Йытта хăваласа пыракан хаяр упа, хирĕç пулнă çынсене аяла лутăркаса чикнипе хавхаланса, канлĕн мĕкĕрсе вăрмана янраттарать, ал лаппипе «пука!» тесе хăвармасăрах, хăй çулĕпе чăтлăхалла вашкăртать.

Шывлă канавра выртаканскерсем ирпе ĕçе васкакан Ваççук куçĕ тĕлне пулаççĕ. Лексантăрĕн юн таппи чарăннă. Карачăм мучин пурнăç палли пур-ха. Вăрманкаса машинăпа илсе çитериччен вăл Хурăнвар тĕлĕнче куçне хупать.

Çут çанталăк явлăмĕн айне пулнă Салакайăк Карачăмĕ çапла, çĕнĕ ĕмĕре пилĕк карт хурса панă хыççăн, çут тĕнчерен уйрăлать.

Крутов Шупашкара шăнкăравланăччĕ. Большаков – Мăн Альпă, юмахри Улăп пек паттăра, чăваш халăхĕн çĕр Паттăрне пытарма килеймерĕ. Вăл, пенсие тухнă хыççăн урăх ĕçрискер, Мускав açтахисем ярса илнĕ Шупашкар аш-какай комбиначĕн ĕçне йĕркелесе пыраканскер, хуçисем чĕннипе Мускава кайнă-мĕн. Тĕнче компанийĕсен шĕвĕр чĕрнеллĕ вăрăм аллисем республикăри чи хăватлă пысăк предприятисене çавăрса илме пуçланă вăхăт-çке. Вĕсен талпăнăвне хирĕç тăмашкăн Турă çумĕнчи Шуйттан та вăй çитереймест. Кут айĕнчи ылтăн арчи ирĕклĕн çăткăнсен йăвинелле куçать.

Çав вăхăтрах аякри ылтăн шывĕ те Чăваш çĕршывнелле Атăл шывĕ пекех юхать. Раççей те, рынок-пасар хутшăнăвĕсене кĕрсе пынă май, аталаннă капитализм çĕршывĕсем пекех, кивçенле пурăнмалли çăмăл йĕркене кăмăлласа пăрахать. Пухнă мулĕнчен услам тăвас тесе чикĕ леш енчи банксем, усламçăсем, хушса тўлемелли йĕркепе, мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ укçа сĕнеççĕ. Ăна вăхăтра илсе усă курма кăна ан ўркен тата каялла процентпа тўпелесе, килĕшнĕ вăхăчĕпе

тавăрса памаллине ан манса кай – илнинчен нумай хут ытларах. Вĕсем те тутă, эсĕ те çав вăйăра выляса илетĕн. Анчах параканнине – ытларах, илекеннине – сахалтарах лекет. Тĕнче тăрăх касса çŭрекен Укçа кама пуйтарса, кама ура çине тăратса, тĕнче аталанăвне хăйĕн хăватлă вăйĕпе тытса тăрать. Пурте çав йĕркене, Турра пуç çапнинчен те ытларах, пуç çапаççĕ.

Салакайăк Карачăмĕн хĕрĕх кунне асăннă хыççăн, 2006 çулхи кăрлачра, Тымарта республика шайĕнчи канашлу пулчĕ. Ахальтен мар. Тарăнварсенчен уйрăлса тухнă «Мир» ял хуçалăх кооперативĕ юлашки çулсенче вакланнă хуçалăхсенчен республикăра чи вăйлă аталанакансенчен пĕрин шутĕнче. Авалхи Миров мулçăсен несĕлĕсем, Раççей çийĕн кăвак хуппи уçăлсан, тăванлăх туйăмĕпе аслашшĕсен çĕрĕ çинех ырлăх пулăшăвĕн лайăх вăрлăхнех акрĕç. Аполлон Ниловичĕ хăйшĕн услам тăвас ĕмĕтпе мар, ырă кăмăлтан пулăшу хыççăн пулăшу парса пычĕ шăллĕн, Тит Ниловичăн мăнукне, Яков Самуилович Милова.

Яков Самуилович хăй те таçтан тем тупма, такăш шăтăкран та ылтăн уçласа кăларма маçтăр тăнлă çын. Ленинград облаçĕнче те ял аталанăвĕшĕн мĕнле кăна ырă ĕç туса кăтартман пуль вăл. Область губернаторĕ ыйтнине тивĕçтерсе, Путин президент унăн кăкăрĕ çине орден çакса янă. Гатчинăри селекционерсенчен пысăк тухăçлă, çĕрмен, колорадă нăррине парăнман çĕр улми сорчĕ турттарса килчĕ – пĕр чукун çул вакунĕ. Ăна пĕтĕм район çĕрĕ çине сарма пулăшрĕ. Çавăнпа «Мир» пĕлтĕр, япăх çанталăкра та, гектартан тăват çĕр аллă центнер, район виç çĕр çирĕм центнер çĕр улми туса илме пултарчĕ. Республика кăтартăвĕ вара – çĕр çитмĕл пилĕк центнер. Çĕнĕ хуçалăх та, район та Шупашкарта ирттернĕ кĕр уявĕнче, чи хисеплĕ вырăнта ларчĕç, ял хуçалăх министрĕн аллинчен пысăк преми илчĕç.

Питĕрти тусĕсем Тымар чиркĕвне виçĕ мăн автобус тулли, ятарласа килнĕччĕ. Таса Турă Амăшĕн Ивер

турăшне чиркĕве кĕрсе тута тĕкнĕ, пуç çапнă хыççăн, вĕсем Мировăн хуçалăхĕпе паллашрĕç, тĕлĕнчĕç, Çĕлен улăхĕнче пулă шӳрпи çирĕç, Петр Волков илсе пынă «Шурăмпуç» ял хуçалăх предприятийĕн аш-какай комбиначĕ кăларакан чăваш шăрттанне çисе ырларĕç. Нева çыранĕпе Атăл çыранне çывăхлатмалли килĕшӳ турĕç: Питĕрте «Шурăмпуçпе» «Мир» хуçалăхĕсен пĕрлехи лавккийĕ уçăлмалла, Шупашкарта – питĕрсен.

Пантелей аттен юлашки вăхăтра пĕртте канăç çук. Марья икумĕн Чулхуларан илсе килсе чиркĕве тавăрса панă асамлă турăш ĕненекенсене çĕршывăн таçти кĕтесĕнчен те, анăçри çĕршывсенчен те хăй çумне туртать. Юнашарах – имлĕ çăл куç уçрĕç. Унăн таса, сиплĕ шывне çынсем ĕçеççĕ кăна мар, тулса тăракан пĕвинче шыва кĕрсе усал сывлăшран тасалаççĕ, ӳт-пӳне сиплентереççĕ. Пантелей иерей халĕ хăйне Турăран та аслăрах пек туять. Тымар чиркĕвĕн чан сассийĕ тĕнчене туртăмлăн сарăлать.

Милов та çывăрса лармасть. Питĕ усăллă япаласенчен пуян çĕр имĕпе пуймалли меслет те тупрĕ. «Тымар-Милов» сиплĕ шыв таврана саланать. Усламĕ «Мир» хуçалăхăн укçа миххине тултарать. Çĕлен юхан шывĕнчи пĕвесен ярăмĕ, йывăç тирпейлекен, сĕт-сыр, крахмал, улма-çырла завочĕсем, сывлăхпа сиплев çурчĕ – пурте пĕрле Чăваш çĕршывĕн хăш кĕтесĕнче пур-ши? Сысна ферминчен сарса пысăклатнă – çĕнĕрен лартнă комплекс – «Хĕвеллĕ ир» комплексран темиçе хут иртсе кайнă аш-какай фабрики. Шурăмпуççемпе ăмăртса, района çĕклекен комплекс. Сăшаран кӳрсе килнĕ вĕр çĕнĕ, тĕнче шайĕнчи оборудовани вырнаçтарнă тĕлĕнтермĕш. Совет Союзĕ вăхăтĕнче комплекссене вырнаçтарнă лăпăр-лапăр мар. Вĕсем, ĕçлеме пуçласанах ванма пуçланăскерсем, часах тимĕр-тăмăр купи пулса юлнă. Çавăнпа вĕсене никамах та çĕнетме шутламан, çĕнетме те май килмен. Халĕ çĕнĕ комплекссем тăваççĕ. Раççейре – икĕ пин ытла, Чăваш

енче те – вуншарăн. Вĕсене тăваççĕ çеç, Миловăн вара виçĕ çул вунă пин сысна хуçалăха мул парать. Çав хушăрах республикăра, 1991 çулпа танлаштарсан, сыснасен шучĕ çитмĕл виçĕ, ĕне выльăх шучĕ аллă икĕ процент чакнă çĕртех...

Чăвашра ку таранччен никам курман-илтмен, миллионпа танлаштармалли хăватлă, мă-ăнă-мă-нă комплекс туса лартнă Тымарăн анат енне, Çĕлен улăхне. Сăшаринчен пĕртте кая мар теççĕ Миловсем. Сăвакан çичĕ пин çурă ĕне валли. Мегафермăна Германирен голштинăфриз ăратлă пушмак пăрусем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе тусан мăкăрлантарса килеççĕ – ултă пин таран. Ӳссе пăруласан вĕсенчен кашнийĕ çулталăкра вунă-вун икĕ тонна сĕт пама пуçлать. Пĕр çулта Тымар хăех утмăл пин тонна сĕт пама пултарать халăха, патшалăха.

Хальхи ял хуçалăхне кивĕлле ĕçленипе çӳле çĕклеме май çукки çинчен асăрхаттарса, пурнăç сăмсаран сисĕмлех шаккать. Тавçăруллăрах та çаврăнăçуллăрах тата ăслăрах пулмалла çеç. Яков Милов ку чăнлăха Питĕр енчех ăнланса пуçа хывнă. Тăван çĕре таврăнсан вăл пĕр çĕнĕлĕх пирки Вăрманкасра та, Шупашкарта та шăв-шав çĕкленĕ. Мĕншĕн тесессĕн ăна хăй хальлĕн пурнăçа кĕртме май çук. Патшалăх шайĕнче кăна татса пама пулать. Агропромышленноçа аталантармалли наци программипе килĕшӳллĕн кĕçех «Биопарк» проект çуралать. Голландири «Рослизин Лидерлендн Б.В» компанийĕ лизинпа белок хутăшĕсем кăларакан установка лартса парать. Ăна валли Сăр вăрманĕн хĕрринчи Тымар шăпах юрăхлă пулнине Яков Самуилович пуçлăхсене те, ют патшалăх бизнесменĕсемпе специалисчĕсене те ĕнентернĕ. Акă халĕ вăл республикăшăн кăна мар, Раççейшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ установкăна хута янă вăхăта çитнĕ аслă пуçлăхсен, канашлăва килнисен умĕнче компани директорĕпе пĕрле акăлчанла та,

вырăсла та, чăвашла та хĕрсех калаçать. Пуçлăх та вăл, çав вăхăтрах куçаруçă та.

Тĕнче шайĕнчи малта пыракан технологи – Раççейпе Голланди ученăйĕсен, инженерĕсен пĕрлехи ăсĕпе, вăйĕпе хатĕрленĕ стратегиллĕ, хăватлă технологи проекчĕ пурнăçланма пуçлани Чăваш çĕршывĕнче çĕнĕ çăлтăр çутнă пекех – ял хуçалăхне çÿллĕ шая çĕклемелли шанчăк. Халех вăл вун пилĕк тонна продукци кăларнă. Малашне çулталăкра аллă пин тонна лизин тата ытти хаклă япала та хатĕрлеме пултарать. Ăна валли виç çĕр пин тонна тĕш тырă кирлĕ пулать. Çавăнпа хăватлă элеватор тума тытăннă.

Выльăх апачĕн биологилле активлă хутăш – лизин – паха аминокислота. Унпа усă кураксен сыснисемпе пушмак пăрăвĕсем хальхинчен пĕрре тăваттăмĕш хут хăвăртрах самăрлаççĕ. Ава епле пысăк пулăшу!

Тĕнче шайĕнче ăмăртма пултаракан продукци туса кăларакан «Биопарк» проекчĕ Тымарта тымар яни, унăн çамрăк хунавĕ Çĕлен улăхĕнче ÿссе аталанма пуçлани, паллах, питĕ ырă ĕç, паянхи ялăн пуласлăх тепĕр хăватлă çуначĕ. Çакна ăнланма май пулчĕ Чăваш тата Голланди бизнесменĕсен темиçе чĕлхепе хутăш ăмăртмалла калаçнинчен.

Республика президенчĕ Федоров Тымарта иккĕмĕш хут пулать ĕнтĕ. Çитсессĕнех вăл район администраци пуçлăхĕнчен ыйтса, Воробьев утарçăн шăпипе кăсăкланчĕ. Крутов Карачăм мучи вилни çинчен пĕлтерсен, кулянчĕ. «Паян унпа çак лапамра халăх умĕнче ташласшăнччĕ – хамăрăн калама çук хăватлă ĕç уявĕн кĕввипе – шăпăр сассипе – янраттарса», – терĕ. Акă халĕ Николай Васильевич Республика Президенчĕн сăмахне калать:

– Вăрман хĕрринчи улăхра капăрланса ларакан виçĕ хутлă тăваткал çурт паянхи Чăваш Енĕн улăпла аталанăвне çывăх. Пирĕншĕн, чăвашсемшĕн, юмах пурнăç чăнлăхĕ пулса тăнă пекех ку çĕнĕлĕх. Голландипе

Мускаври партнерсен витĕмĕпе тĕлĕнмелле хăватлă, пысăк технологиллĕ проекта пурнăçа кĕртетпĕр. Ку вăл – Чăваш Енпе Мускав тата Европа хушшинчи туслăх çирĕпленнин ырă тĕслĕхĕ. Хальхи вăхăтра самаях малта пыракан çак проект ял хуçалăхĕн тĕрлĕ отрасльне пур енлĕ ăнăçлă аталанма витĕм кӳрекен, малашне тата пултаруллăрах ĕçлесе пурăнмаллине кăтартакан ырă паллă. «Биопарк» проектпа тăрăшса ĕçлекен инженерсем хушшинче сирĕн ентешĕр, çамрăк хастарçă Святослав Викторович Воробьев та пулнишĕн сирĕнпе пĕрле эпĕ те мухтанам-ха. Чăвашăн ăсĕ – тĕнче ăсĕ. Пултăр малалла та çаплах. Вăл, чăваш патриочĕ, Мускавран куçса килсе, «Биопарк» хуçи пулма килĕшрĕ.

Канашлу канашланса пычĕ. Республикăн çĕнĕ министрĕ, ял ачи, çĕр ĕçченĕ пулнăскер, Михаил Васильевич Игнатьев, малашне ял хуçалăхĕнче тата нумай çĕнĕлĕх тымар ярасси çинчен пĕлтерчĕ. Раççей ял хуçалăх министрĕ Усач, чăвашсемшĕн хăй тем те тума хатĕрри пирки мухтанса илнĕ хыççăн, савăнтарса пăрахрĕ:

– Чăваш Ен – алла-аллăн тытăнса пĕрне-пĕри вăйлатса пуйтарма пултаракансен Раççейри сăнав вырăнĕ. Çав вырăна чаплантарма эпир малашне те пулăшса пырăпăр. Чăваш Енĕн кашни пуçарăвĕ – Раççейшĕн ырă тĕслĕх. Палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртме эпир хамăрăн министерство çумĕнче ятарлă канаш турăмăр. Унта банксен, регионсен представителĕсем, çав шутра çумра тăракан Игнатьев та, кĕреççĕ. Сирĕн министрăн федераци шайлĕ пысăк правасем пур. Унран эсир ытларах ыйтăр. Мускав валли ун урлă çĕнĕ шухăшăра çитерме тăрăшăр. Эпир те ăна çăвара шыв сыпса ыттисене кăна итлесе ларма памăпăр.

Районăн тĕп сельхозтехникĕ Пантелеймон Михайлович Пантин министрăн кĕске кĕрĕк çаннинчен çакăнма ĕлкĕрчĕ, хăй сĕннипе машина-юсав

станцийĕсем йĕркелесе яртарнăшăн, чăваш механизаторĕсен ячĕпе Усача тав турĕ.

Ĕçлĕ хăнасем вăрах тытăнса тăмарĕç. Вертолет вĕсене çŭлелле вĕçтерсе вăрман хыçĕнче курăнми пулчĕ.

Салакайăк ушкăнĕ чĕрик-чĕриклетсе илчĕ.

– Анюта пире апата йыхравларĕ, – чĕнчĕ Василий Фомич, аслăраххи пулса, – Яков Самуилович, Пантелеймон Михалч, юмахласа ларар кăштах тăван Мускавран килнĕ ятпа пирĕн тăван асаттен вăрман пŭртĕнче. Тархасшăн?

Вăр-вар Анюта вут хутса кăларнă. Кăмака яшки шăрши хăнасен çиес кăмăлне татах хăпартрĕ. Алăсене çуса тасатнă хыççăн пурте сĕтел хушшинелле çывхарчĕç. Стена çинчи нумай тĕслĕ ŭкерчĕк пурне те хăй патнелле чĕнчĕ. «Кĕреке пуканне ман валли пушă хăварнăшăн тавах сире, енералсене, çиччас пырса ларатăп, алла пĕрле курка тытăпăр», – тенĕнех куçне чеелентерсе ăшшăн пăхрĕ кил хуçи.

Ŭнерçĕ картининчи Карачăм шăпăрçăн хŭхĕм кĕлетки çанталăк çутинче асра юлмалла палăрать. Сарă-хăмăр, хĕрлĕ-симĕс тĕссен пĕрлешĕвĕнче хăйне евĕр йăлкăшать. Мусăкçăн шăпăр енне кăштах усăннă çăра мăйăхлă, вăрăм сухаллă, хыçалалла тарса пыракан тăпăлкка çŭçлĕ, сарлака çамкаллă пуçĕ, хуллен вылятакан алă пŭрнисем, килти пусмаран çĕлетнĕ сăхман хутламĕсем илемлĕ кĕвĕ тĕнчинелле туртаççĕ. Манăçми сăнĕнче унăн тимлĕх, тарăн шухăш палăрать. Вăл хăйĕн çуралакан кĕввине тăнласа итленĕн туйăнать. Чăваш халăхĕн питĕ ăслă-тăнлă кĕвĕ ăстин сăнарĕ курăмлă та чĕрĕ.

Пŭртре хуçаланакан Анюта кăмака умĕнче кашăк-чашăк шакăртаттарнă хушăра Святослав Викторович стенка ещĕкĕнчен çап-çутă сĕрме купăс туртса кăларчĕ.

– Италисен чаплă купăс ăсти Страдивари ячĕпе тунă çак илемлĕ кĕленче савăта эпĕ, яла ĕçлеме килме хатĕрленнĕ вăхăтра, хамăрăн юратнă, хăватлă

асаттемĕре парне тăвас ятпа туяннăччĕ. Вĕсем ушкăнпа хăнана пырсан та унпа тĕл пулса калаçаймарăм, çакă «Биопарк» ыйтăвĕпе Голландие кайнă вăхăт пулчĕ. Çавна пулах асаттене пытарма та çитеймерĕм. Паян та пулин асăнас ăна сирĕнпе пĕрле чухне, – тесе вăл хурлăхлăн пăхса илчĕ ватăлма пĕлмен аслă тăванĕ çине. – Кил, лар хамăр ума. Эсĕ, асатте, шăпăр кала, эпир – сĕрме купăс. Йышăнсам ман парнене. Çак парне саншăн та паянхи паллă кун тăсăмĕ пултăр. Анюта, кĕленчине уçатăп. Васка!

Карачăм мучие асăнса мăлтавансен иçĕм çырлинчен тунă хаяр эрехне тутаннă хыççăн, Анюта кăмака хыçĕнчен йывăр пăшал йăтса тухрĕ те пиччĕшне, Василий Фомича тыттарса, ăнлантарчĕ:

– Ял хуçалăх кунĕнче Шупашкарта концерт кăтартнă чухне хăй Мăн Альпă тесе кăмăллакан министр кукаçине панă парне. Питĕ паллă кун килсен уçатăп-ха тесе пурăнатчĕ те. Халĕ, шăллăм таврăннă ятпа, парăр салютне.

Крутовпа Пантин хуçяйккăна пулăшма пикенчĕç. Кăмакаран ухватпа йăтса илнĕ сарлака чукунăн чукун çатма виттине уçса йывăç тирĕке ĕне ашне кăларчĕç, тăм чашăксене çăра шӳрпе тултарса сĕтел çине йăтрĕç. Ухутниксен кĕленче пăшал кĕпçинчен хаярланса тухнă шурă эрех сĕтел ушкăнне хастарлантарсах ячĕ.

– Ай тутлă, кунашкал техĕмлĕ купăста яшкине эп ниçта та çисе курман, – йывăç кашăкне çуллаpĕ Святослав Викторович. – Чĕлхене çăтса ярас мар.

Анюта кула-кулах каларĕ:

– Кăмака яшки шăршипе килтĕн пуль, шăллăм. Халь эс, кунта пурăнма куçсан, хăвах манран чаплăрах пĕçерме вĕренĕн-ха. Кăмака яшки кăна мар, шарккуне те, сысна-пăру пуссан – шӳрпине те...

– Ах, шаркку та пур-çке сан, акка?

– Пиçнĕ, хурĕсем какаласа, сăмсисемпе тăм чӳлмек тăррине уçасшăн. Сысна çурисем те тимĕр кăмакара нăриклетеççĕ, ава, – ăшшăн кулчĕ Анюта.

Кĕленче пăшалран тур калашле виçĕ хутчен умлăхыçлă залп парсан, Анюта хĕрринче ларакан Пантина кăчăк туртрĕ. Пантелеймон Михайлович газ духовкинчен кăларнă вăрăм çатмана сĕтел çине пырса лартрĕ. Унта хăяккăн тăсăлса выртакан сап-сарă сысна çури кĕç-вĕç тăрса сĕтел çинче нуф-нуф ташши ăшалантарассăнах туйăнать.

Макçăм пиччĕшĕ вăрăм çĕçĕпе сысна пусма пуçларĕ. Хăлхисене чăнк-чăнк тăратса выртакан нуф-нуфа татăкăн-татăкăн ăста пайларĕ, кашнин тарелки çине хурса тухрĕ. Черккесем, Тымар чиркĕвĕн чан сассипе çыпăçуллăн, сĕрме купăс кĕввине уçăмлăн янратрĕç.

Апат-çимĕç пĕçерме, сăра-эрех юхтарма маçтăр Пантин, çуллă аш татăкне чăмласа çăтнă май, Анюта еннелле йăпануллă куçпа пăхса:

– Ха, епле ăста маçтăрсем пур пирĕн. Маначчĕ кунашкал повар хамăр столовăйĕнче, – терĕ тулли кăмăлтан. – Кун пек тутлă пĕçернĕ сысна çурине сĕтел çинче çухăрттарса курман. Кухарка экстра-класс. Калаха, кĕнеке-хаçат сĕннипе хатĕрлерĕн-и?

Анюта шăкăр-шăкăр уçса пачĕ апат вăрттăнлăхне:

– Хам мĕнле вĕреннĕ – çапла пĕçернĕ. Тельман Федотович мана Шупашкара повăрла вĕренме ячĕ. Макçăм пиччене итлесе. «Раççей» хăна çуртĕнчи ресторанта экзамен панăччĕ. Ун чухне хамăрпа туслă мадьярсем Хевеш облаçĕнчен хăнана килнĕччĕ. Çакăн пек сысна çуришĕн вĕсем те пире хытă мухтанăччĕ. Вĕрентме хатĕрех, песплат. Чĕнсен – ĕçе те пыратăп. Арăму апат пĕçерме кахаллансан, килти кухарка та пулма пултаратăп. Их-ик...

Пăшал персе, сĕрме купăс каласа хавасланнă Пантин ура çине сиксе тăрсах чăп-чăмăр кĕлеткеллĕ хĕрарăма ыталаса илессĕн хăлаçланчĕ:

– Хавасах. Ыранах пыр. Сан валли вырăн пур. Хамăн та вĕренсе юлас.

– Уйрăмах манăн вĕренмелле-ха, – терĕ москвич. – Яков Самуиловичăн сысна çури кĕтӳпех.

– Пашалстă. Паянах пĕр вуннăшне çавăтса килсе паратăп. Хăть пĕçер, хăть ăшала, – сĕнчĕ Милов.

– Чăн та, вĕренсех каяр-ха Анютан ăсталăхне, – сысна çури пуçĕ патнелле аллине тăсрĕ Пантелеймон Михайлович.

– Ак çакна, кăмака хыçĕнче сыхланса юлнă «Крахьян куллине» ăша хывса пăхар та, урока хатĕрленер. Пыл кăрчами никамăн пырне те ларман. Сыппа кайтăр. Вăт çапла, шалт хурăр. Кукаçи те кăмăллă юлать капла.

Ăсталăхĕ ĕнтĕ ман хамăр майлă. Темех мар. Ним пĕлмелле марри те çук унта. Чăтăмлăх çеç кирлĕ. Виçтăват кило таякан сысна çурине çуса тасатса çиелтен тăварпа пăрăç сапатăп, тип çупа-майонезпа сĕретĕп. Шутсăр вĕрипе ĕнсе каясран хăлхисемпе ури тупанĕсене фольгапа е чустапа хуплатăп. Хатĕрлесе хунă виçĕ стакан хура тул кĕрпи, виççĕр грамм çерем кăмпи, шампиньон «Мир» хуçалăхĕнче хĕлĕпех ӳсет, вăтам виçеллĕ тăватă сухан пуçĕ, стаканпа тип çу илетĕп те, кăмпине вĕтĕ тураса тип çу çинче ăшалатăп, вĕтĕ туранă суханне ылтăн тĕсĕ çапиччен, кĕрпине типĕ çатмара вĕтелетĕп, унтан тăварлă шывра пăттине пĕçеретĕп. Çавсене пурне те пĕрле пăтратса, сысна çури хырăмне чыхса тултаратăп, çирĕп çиппе çĕлесе лартатăп. Нуф-нуфа вăрăм çатма е противень çине урисене хуçлатса, хырăмĕ çине майласа хуратăп та духовкăра икĕ çĕр градуслă вĕрипе хĕртетĕп. Кашни çирĕм-вăтăр минутра хăйĕн шăраннă çăвĕпе, шывпа е яшка шĕввипе сирпĕтетĕп. Сехетрен çурана çурăм çине çавăрса хурса хырăмне хĕртетĕп. Тата тепĕр сехет-ик сехетрен кĕлеткинчи хулăнрах тĕлтен çĕçĕ вĕçĕпе шăтарса пăхатăп. Унтан янкăр таса сĕткен тухсан – манăн патша апачĕ пиçнĕ те. Сысна çурине кун хыççăн мĕнле капăрлатса тутлăлантармаллине хăвăр куртăр. Кухньă экзаменне мĕнле тытнине сире кукаçин тепĕр менелникĕнче уценкă лартса паратăп.

Анютан шӳчӗ арçынсен апат çиеслӗхне пушшех астарса ячӗ. Тăм куршукра пӗçернӗ кăркка шарккăвӗ те сивӗнмен кăмакаран кăр-кăрлатса тухса ларчӗ.

Политпăтрав ыйтăвӗсене те тӗкӗнместпӗр, хамăр ӗç çинчен те пакăлтатмастпăр тесе калаçса татăлнă çинчех кашнийӗннех чӗлхе тăрри кӗçӗтме пуçларӗ çав, хăйсем те сисмерӗç...

– Сысна çури те шутсăр тутлă та, ытти аш-пăшӗ те, сӗчӗ-çăвӗ те, çăкăрӗ те... – çӳхе каснă чӗлле çыртса çăвара хыпма тăхтарӗ Василий Фомич. – Куратпăр, хамăрăн сӗт, аш пирӗн яланах тулăх, халăхăн вара... Эпӗ – агроном... Çавăнпа ман чӗлхе çинче – уй, тырă. Наци проекчӗ пирки хытă шавланă хушăрах, ăна пурнăçлас тесе хамăр мӗн тăватпăр-ши? Гектар пуçне çулсерен вун пилӗк – çирӗм центнер тырă туса илнӗшӗн пирӗн министерство хуçисем, эпир хамăр та халăх умӗнче кăна мар, Турă умӗнче те айăплă. Турăран халăх пулăшу ыйтать те, ăна турăран ыйтса илеймесӗр, вăл пирӗн куçранах пăхать. Пирӗннех çыннăн выç хырăмне тăрантармалла – хăйӗн аллипе туса илнӗ тырăпа. Пӗлтӗр Чăвашăн кӗлетне виç çӗр çирӗм сакăр пин тонна кăна тырă кӗнӗшӗн, уншăн хăйсен айăпне туйнă пуçлăхсен, çава патнелле кайса çухалмаллаччӗ. Ун вырăнне вӗсем чăваш халăхӗн çулленхи Аслă кӗрекинче пирӗн малашлăх пысăк, çавăнпа та, «Юрламасăр ман халь епле чăттăр чу-ун» тесе мухтавне тӗнче илтмелле янăратрӗç, ташша çапса çӗр кисрентерчӗç. Хура халăх сӗтелӗ çинче вăл вăхăтра кăмака улмипе шӗв уйранччӗ. Эх, ку мухтанчăксен ӗмӗрӗ... Вӗт эпӗр, чăвашсем, пӗр çулхине тăхăр çӗр тăхăр вунă пин тонна тырă туса илнӗ! Халӗ?.. Ейпух, хам аслă çын пулсан-и? Çук, пăшалпа персен те çӗр çынни умне тухмас. Мухтанчăксем халӗ, республика умӗнче тава тивӗçлӗ ӗç тунăшăн тесе орден-медаль илсе лараççӗ. Пур-ши вӗсен намăс-симӗс?

– Хăвна орден лекменшӗн ан чăкăлташса лар. Хрущевран пуçласа Путин таран илӗпӗр, – пӳрнисене

хуçлаткаларĕ Пантин. – Манăн хамăн статистика министерстви пуçра. Награда панисенчен иккĕ виççĕмĕш пайĕ – тĕрлĕ шайри пуçлăхсем. Хăйсен аллинче те, хăйсемех валеçеççĕ хăйсен хушшинче Мускав уйăрса панă орденне те, медальне те. Эп астăвасса, пĕр колхоз председателĕ те орденсăр юлмарĕ, сельхозтехниксенчен эпир виççĕн медаль илтĕмĕр. Награда хучĕсем çинче чи малти колхоз председателĕн те, чи кайри хуçалăх хуçин те: «Ял хуçалăхне ертсе пынă çĕрте тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн», – тесе çырнă. Тĕрĕссипе, кам банкет сĕтелĕ хушшинче компани, кам çĕр çинче – халăхпа тава тивĕçлĕ кампани ирттернĕшĕн çакса çӳрет наградăна – пурте мухтавлă. Çиçĕмсем тĕнчене тата ытларах тĕлĕнтерчĕç. Константин Плешаков «Кукша кăмунин Капитализмла Ĕç Геройĕ» хисеплĕ ят туса хунă. Хăйĕн сăнне ӳкернĕ ылтăн паллине паçăр халăх çине çакса тухнă. Пирĕннисем те, Мускав министрĕ те хыпашласах пăхрĕç ăна. «Пилĕк çĕр пин субсиди паратăр – тепре килсен сире те çакса яратăп Çĕпĕрти тап-таса ылтăнран тунă ку медале», – тесе шантарчĕ. Лешсем те чапа юратаççĕ, тем, ăнлансах пĕтмерĕм, Усачĕ: «Шухăшласа пăхма юрать кун пирки», – тесе Кукшана ыталасах илчĕ. Вăт çапла кукалетпĕр-ха эпĕр: Нуша умĕнче те, Ылтăн умĕнче те. Пуçа каçăртса утатпăр пуш пучахлă тыр хăмăлĕ çинче.

– Пирĕн хамăрăн та районĕпе гектар пуçне вун çичĕ центнера çитеймерĕ, – ассăн сывларĕ Крутов. – Услам таçта та, сĕтел çинче те кирлĕ. Кĕлете тасатса хунă тыррине йӳнĕ хакпа сутса та пуяймастпăр. Çавăнпа çĕр улми, сахăр кăшманĕ ытларах ӳстерме тивет. Юрать-ха вĕсенчен тупăшĕ кăшт пур: кăшман гектарĕ çирĕм пин тенкĕ услам пачĕ.

Пантин яланхи йăлипе аллине саркаласах каларĕ:

– Намăса тăрса юлтăмăр эпир чăннипех. 1990 çултанпа тракторсен шучĕ ялта çуррине яхăн, тĕш тырă вырмалли тата апат хатĕрлемелли комбайнсем вăтăр пилĕк процент чакнă. Пуррин сакăр вунă проценчĕ паянах

тимĕр-тăмăра каймалли. Çĕннине... Хуçалăхăн пĕр трактор туянма ик çĕр тонна тырă, соляркăн литтăрĕшĕн пилĕк-ултă литр сĕт сутмалла. Пире Усач юлташ ял хуçалăх машинисем юсамалли станци туса пачĕ, анчах юсамалли тракторĕ юлмарĕ. Ĕçсĕр ларатпăр.

– Тĕрĕсех, – унпа килĕшрĕ Яков Самуилович. – Ял хуçалăхĕ валли федераци бюджетĕнче çирĕм тăватă миллиард тенкĕ кăна укçа уйăрнă. Унченхи çулсенчен çуллен вунă процент сахалрах параççĕ пире. Республикăри улт çĕр виçĕ ял хуçалăх предприятийĕнчен çĕрĕшĕ, хăйсене хăйсем тытăнса тăрайманнипе, панкрута тухнă.

– Патшалăхран чăнах та пулăшу сахал, – терĕ Крутов. – Вăйлă çĕршывсем ял хуçалăхне те вăйлах пулăшаççĕ. Евросоюз бюджечĕ тăхăр вунă миллиард евро чухлĕ. Унăн çуррийĕ вара – агропрома аталантармалли. Пирĕн çĕршывра, ял валли уйăрнă пĕр миллиард доллартан çуррийĕ ют патшалăхсем сутакан тырра, аш, сĕт тата ытти продукта туянма каять. Сысна, ĕне ашĕн сакăр вунă процентне эпир хамăр вăйпа туса илетпĕр. Çапах...

«Мускав ачи» Волков ун çумне хушса хучĕ:

– Сахал. Нормăпа килĕшӳллĕн кашни çын пуçне çулталăкра сакăр вунă кило аш туса илмелле. Аталаннă çĕршывсем çĕр кило таран туса илеççĕ. Раççейре вара – аллă виççĕ, Чăваш Енре – аллă иккĕ. Паян эпир Анюта акка патĕнче – хамăрăн Салакайăк йăвинче – сакăр кило сысна ашĕ, виçĕ кило ĕне ашĕ, тăватă кăркка какайĕ мĕтĕрттертĕмĕр. Танлаштарса пăхар та çак цифрăсене, кашăксемпе вилкăсене шакăрт хурса, повара чĕререн тав тăвар. Халăх хырăмне те паянхи пек какăриччен тăрантарма пире ой-йой мĕн чухлĕ аш-какай, сĕт-çу кирлĕ. Апла тăк – Миловăнни пек вăйлă комплекссем пур çĕрте те кирлĕ. Çавăнпа таврăнтăм эпĕ те тăван çĕре, хамăрăн «Биопарк» кăларакан препаратсемпе ял хуçалăхне, тăван чăваш халăхне пулăшма.

Сĕтел ырханланчĕ. Карачăм мучин пăшалĕ залп пама пăрахрĕ – боеприпас пĕтрĕ. Воробьев сĕрме купăсĕнчен юхакан текерлĕк сассиллĕ иçĕм çырли шĕвекне «на посошок» ĕçрĕç те, кашнийĕ хăйĕн шухăшĕ-ĕмĕчĕпе уйрăлчĕ. Карачăм мучи ĕмĕр кĕввине, вăкăр хăмпинчен тухакан ял кĕввине, ывăнма пĕлмесĕр каласа юлчĕ.

4

Турă кăçал авăн уйăхне уйрăмах хакларĕ, хресчен валлиех йĕркелесе тăчĕ пулас. Кĕр тыррисем акса хăварнă хыççăн, çурла уйăхĕн вĕçĕнче, виçĕ кун лĕслеттерсе çумăр çурĕ те тăпрана тăранмаллах шăварса хăварчĕ. Уйсем ыраш, тулă калчисен кавирĕпе витĕнчĕç.

– Яла кайса килтĕм те уçă сывлăшпа чуна кантартăм, – тарăннăн сывла-сывла каласрĕ Волков. – Ывлăм, Петĕр, кĕр тыррисем нумай акнă. Тритикале текенскер пур тата унăн ик çĕр гектар. Ырашпа кĕрхи тулла пĕрлештерсе çуратнă ача. Эп колхозра ĕçленĕ чухне пулман вăл кĕрхи культура. Пусă çаврăнăшне кĕртнĕренпе ман ача савăннă. Тритикале тыррине те, выльăх апатне те нумайлатать, çĕре те пуянлатать. Иксĕмĕр пĕрлех хĕпĕртерĕмĕр. Хĕл мучи ачашласа кукшалантармасан, çак виçĕ культура пуйтармаллах шурăмпуçсене. Ахалех пĕрле пымарăн.

– Каккуй халь ярăнса çýреме. Хăвах пĕлен академири çанталăка. Африкăри пек пăчă. Сывлама йывăр. Мĕнле ирттерсе ярас ку менелнике. Çитмĕл пиллĕке çитрĕмĕр-çке иксĕмĕр çак наука храмĕпе пĕрле. Ун хыççăн Авруйне кайса вăранмасăрах виç талăк çыврап-ха, – çамкине таса тутăрпа шăлса илчĕ Кириллов. – Мĕнле унта сан ывăлу, намăс кăтартмасть-и хăвна?

– Каккуй, хама намăс пулчĕ. Гектартан аллă центнер тулă, вăтăр сакăр центнер ыраш тухнă ун. Эпир унашкалах

ĕçлеймерĕмĕр. Çывăнпа ывăла кĕвĕçсе те илтĕм. Хăйне шарламарăм çеç ун пирки. Ай ăшалантарать.

– Ĕçлер-ха, тăрăшар, тусăм. Эпир вĕренĕве ялпа, хресчен пурнăçĕпе вăйлăрах çыхăнтарсан, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕ Петр Тельмановичсем пек тырă йăтăнтарĕ ак. Хальхи пек çулталăкне виç çĕр-пилĕк çĕр пин тонна анчах мар, миллион çурă тонна таран та пулĕ тухăç. Президент сăмахĕ пирĕн сăмах та пултăр. Тĕл пулнă май, юбилее маларах килнĕ юлташкăпа паллаштарам-ха. Сана вăл шутсăр хытă кĕтет. Тепĕр сехетрен пыр хам пата, – тесе ректор хăйĕн деканĕнчен васкаса уйрăлчĕ.

Лекци вуланă чухне те Кирилловăн пуç ватмăшĕ хушăран-хушă мимене канăçсăрлантарсах тăчĕ, алăри сехет çине пăхтара-пăхтара илтерчĕ, сăмах тĕшшине пĕтерчĕ. Студентсемпе ячĕшĕн тенĕ пекрех калаçса ирттернĕ-ирттермен академи сехетне, профессор коридор тăрăх чупнă пек васкарĕ.

Ректор пÿлĕмĕнче... Алăка уçсанах ăна хирĕç паллана хĕрарăм таплаттапса утса пычĕ те, пÿлĕм хуçинчен вăтанмасăрах, Волкова ыталаса тутинченех çÿхен чуп туса илчĕ: «Тельман, чунăм, хăçантанпа курман сана...»

Кириллов ура çине тăчĕ, вĕсенчен кулса, пуçлăх сассипе каларĕ:

– Юрату хÿхлевне çул урлă, скверти çăкасен айĕнче тăсăр малалла. Ман васкамалла. Вăхăт çук. Президентпа аэропортра ял хуçалăх министрне тата Патшалăх Думин депутачĕсене кĕтсе илмелле, – тесе алă сулчĕ. – Пыма килĕшсен, тархасшăн?

– Пирĕн те вăхăт çук апла. Эпир те Юрату вăрманне васкатпăр, – тесе Волков хăйĕн студент çулĕсенчи юратăвне Маша Машанована çавăтса пÿлĕмрен илсе тухрĕ.

Вĕсем урамра анлă çул урлă каçса ялан васкакан Ильича сывлăх сунчĕç те, йывăçсен хÿттинелле пăрăнчĕç.

– Акă вăл пирĕн вырăн! – хĕпĕртесе ÿкрĕ Маша. – Хамăр лартнă çăкасем?.. Ха, ватăлнă, вуллисем

çуркаланнă. Астăватăн-и, Советсен çурчĕ умĕнчи çак лапама пединститутри студентсемпе пĕрле симĕслентертĕмĕр. Авăк хыçлă тенкелсем вырăнне халь мĕнешкел чаплă, сарлака тенкелсем лартса тухнă. Диван-кравать пек.

– Халĕ ĕнтĕ иксĕмĕре ирĕклĕн чуп тума та, ларса-вырттса канма та пулать кунта. Эс те, Маша, манман пуль иксĕмĕр çакăнта, çак вырăнта, иртен-çӳрен çынсенчен вăтана-вăтанах, ытакланса ларнине?

– Мана эс çакăнта пуçласа чуп тунине те асрах тытатăп, Тельман. Шупашкара çитсенех чи малтан, академине кĕриччен, иксĕмĕрĕн юрату вырăнне чупсах килсе куртăм, çулçă çумăрĕ айĕнче хамăр çумăрпа вылянине аса илсе...

Тельман Федотович вăтансах кайман хĕрарăмăн пит çăмартийĕсем çинчи куççуль тумламĕсене çамки çине усăнса аннă кĕмĕл çӳç пайăркипе шăлчĕ, ытама илчĕ те вара ăна куç курми пуличчен чуп турĕ. Хĕрарăмăн кăтралатнă çӳç тăпăлккийĕпе çара пуç арçыннăн çăра çӳçĕ çине сарă-кĕрен çулçăсем вĕçе-вĕçе анчĕç, савăк пит-куça сĕртĕнсе кăтăклантарчĕç.

– Эпĕ «Раççей» хăна çуртĕнче пурăнатăп. Кăмăлу пулсан, хăнана пыр. Пулмасан...

Тельман Федотович ăна ăшă куç хĕлхемĕпе ачашлантарса, сăмахсăрах унăн кăмăлне тивĕçтерчĕ.

– Вăхăт сахалтарах çав пирĕн, – терĕ Волков. – Кирилловсем аэропортран çитиччен, Маша, Мария Ивановна, хамăрăн тахçанхи манми институт тăрăх чуптарса ывăнтарам-ха сана. Туятăп, сан нумай-нумай çĕнĕлĕх пĕлес килет.

– Тĕрĕсех. Николай Кириллович ахальтен чĕнчĕ-и сана? Эсĕ халĕ, эпĕ кунтан кайичченех, манăн хӳтĕлевçĕ те, экскурсовод та, маншăн чи хуравлă, юратнă çын та.

– Юрату адъютанчĕ-и?

– Çаплах.

– Апла эпĕ сан çума пĕр кавалера та çывхартмăп. Ак çапла, хулран тытсах çӳрĕп.

– Хирĕç мар. Институтăн-академин çав шĕвĕр тăррине те улăхса çапла кăшкăрма пултаратăп:

– Эпĕ хамăн çухалнă юратăва тупрăм!

– Эпĕ кунтах, çӳле вĕçмесĕрех, çумрах пăшăлтатса пĕлтерме васкатăп. Иксĕмĕр уçнă юрату çăл куçĕ умрах тапнишĕн эпĕ савăнатăп, çăлтăрăм. Кăкăру çинчи ку ылтăн çăлтăра эсĕ ăçта çаклатрăн?

– Краснодарта. Харсăр казаксен çемйинче. Мускавран министерство панă хутпа эпĕ ăçталла вĕçнине пĕлместĕн пуль...

Волков пуçне пăркаларĕ:

– Ăçтан пĕлен, санран пĕр хыпар та илменскер. Кăнтăртан çурçĕрелле вĕçекен пĕр-пĕр кайăк çунатти çумне те пулин çыхса ямарăн та хăвăн юрату сăмахĕсене. Мантăн пуль терĕм. Манăн та ялти юратăвăм хĕмленсе кайрĕ те... Венерăпах çемье турăм. Виçĕ ача çитĕнтертĕмĕр. Сан хăвăн тата çемье ыйтăвĕ мĕнлерех, Машанова юлташ? Казахстана çĕнĕ çĕрсем уçма кайсан пĕр анлă утиял айĕнче çывăрнă вăхăтра, мана миçе каç хĕртсе выртрăн? Коммунизмри пек пĕр çемьере пурăнма мĕн тери аван тесе мана çурăмпа, тăн-тăн купарчупа астараттăнччĕ? Сана ыталаса, санăн пăнкă-пăнкă чĕччӳпе вылясах, тем ĕмĕтленсех, тĕлĕрсе каяттăм. Мĕн, хырăмпа çаврăнса выртнине мантăн-им?

– Вăл Каракум пуш хирĕн вĕри хăйăрĕ çинче мар, анлă Атăл çыранĕнче, Юрату сăмсахĕнчи симĕс çерем çинче, тулнă уйăх ирĕк панипе пулнăччĕ. Эсĕ мана тӳперен çăлтăр татса хĕвна яратăп тесе аташнă вăхăтра. Чарусăртан, санран, çерем çĕр хыççăн, хĕрĕн вăрттăнлăхри хĕрнĕ çĕрĕпе вылясси кăна пулчĕ. Эх, çăлтăр, çăлтăр... Ку ылтăн çăлтăр – казак çăлтăрĕ. Астăватăн-и иксĕмĕр Краснодар крайне, Лукьяненко академик шкулне лекесшĕн мĕнле ĕмĕтленнине? Эсĕ хăвăн ялна тартăн, манăн, хырăм юлнăскерĕн, ют

çĕрелле пуйăспа силленмелле пулчĕ. Ырă çынсем тĕнчере вилсе пĕтмен. Мана ĕçе йышăнчĕç, хваттер пачĕç. Ача çуратсан, Лукьяненко патĕнче ĕçлекен Муркаш чăвашĕ Костин профессор юлташĕ, колхоз председателĕ Божко казак, арăмсăр тăрса юлнăскер, мана хăйĕн хул хушшине хупрĕ. Вăйлă арçын.

– Эсĕ ĕнтĕ ăна хăвăн пĕç хушшине хупрăн пуль, – шӳтлеме пăхрĕ Волков.

Хĕрарăм ăна тĕртсе ячĕ:

– Сан ĕмĕрхи куласси. Эп вутри кайăк пек ăшаланнă. Латнă телейĕм йăлтах сана куçман. Михайлă атте, теттĕм хамăн кавалера. Божко мана тĕп агронома лартрĕ. Тырă вăйлă çитĕнет унта. Павел Пантелеймонович Лукьяненкăн «Аврора», «Кавказ» кĕрхи тулă сорчĕсем унти çĕрсем çинче ой мĕн тери пысăк тухăç параççĕ.

– Лукьяненкăн «Безостая I» кĕрхи тулă сорчĕпе эпĕ хам та колхоза мала кăлартăм.

– Тырă йăтăнать. Рекорд çине рекорд. Сан савнийӳ те мухтав çине мухтав купалать. Казачкă пулса кайрăм. Божко-турăпа тепĕр ача çуратрăм. Санран ывăл – Тельман. Унран хĕр – Даша. Пенсие тухрĕ те ман Божко-туррăм, халăх мана председателе тытрĕ те суйларĕ. Лукьяненкăн селекционерĕсемпе питĕ çывăхлантăм. Мускавра, Тимирязевкăра, ял хуçалăх наукисен кандидачĕ, докторĕ те пулса тăтăм. Кĕрлерĕм пĕр хушă. Акă, Ленин орденĕпе çак çăлтăра çакса ячĕç. Халĕ Лукьяненко та, Костин та çуккă ĕнтĕ. Эпĕ Костин институтĕнче ĕçлетĕп. Çĕнĕ вăрлăхсем кăларатпăр. Гектартан аллă центнер ытла паракан кĕрхи тулă пур. Пыр, ачу валли парса яратăп. Хăвăн Тельманна та курăн. Вăл – крайри ял хуçалăх министрĕн заместителĕ. Сан ачуна Петĕре мĕншĕн пĕлетĕп? Академи коридорĕнче шăлне йĕрсе ларать. Кулли санни пекех. Чаплă выпускниксен сăн ӳкерчĕк ретĕнче вăл. Эс те чапа тухнă. Пĕринче «Правда» хаçатра сана куртăм. СССР Аслă Канашĕн депутачĕсемпе кулкаласа тăраттăн. Сессире эс

тухса калаçнине пичетлени пурччĕ. Ăна пăлханса вуларăм. Эх, иксĕмĕр пĕрлешнĕ пулсан, икĕ çăлтăр пĕр çемьере çутăлмастчĕ, – тесе Мария Ивановна Социализмла Ĕç Геройĕн çăлтăрĕсене хăйĕнне те, Волковăнне те те юнашар сĕртĕнтерсе, чĕрене тивекен сасă кăларчĕ. Çапла пурнăç, целинник... Эсĕ капла хăçан экскурсовод ĕçне тума тытăнан?

Ачисем çинчен шухăшласа тăракан Тельман шартах сикрĕ, тин вара Божко госпожана урам урлă хулран çавăтса кайрĕ, çав хушăрах каласа пычĕ:

– Иксĕмĕр вĕреннĕ чухнехи мар халь кунта. Кириллов ректорта ĕçлеме пуçланăранпа, вун пилĕк çул хушшинче, мĕн чухлĕ улшăну пулчĕ. 1995 çулта институтран академи пулса тăтăмăр...

– Пирĕн вăхăтра агрономпа зоотехник, ял инженерĕ кăна вĕрентсе кăларатчĕç, – терĕ Мария Ивановна. – Халĕ вун пилĕк специальность илме май пур тенине илтсе юлтăм-ха сирĕн ректортан. Тата мĕнлисене, пĕлесчĕ?

– Кĕскен каласан, 1931 çулранпа çак çуртран çирĕм пин çын, вăл шутра иксĕмĕр те, аслă пĕлӳ илсе тухнă. Халĕ пилĕк пин студент, эсĕ асăннă специальноçсене те шута илсе, экономист, менеджер, ветеринари тухтăрĕ, ял хуçалăх производствин технологĕ, аграри промышленноçĕнче кирлĕ аслă пĕлӳллĕ ытти специалист, автомобилистпа бухгалтер таранах вĕренет. Вĕсене аллă наука докторĕпе профессор, çĕр аллă наука кандидачĕпе доцент, пилĕк академик вĕрентет. Вĕрентекенсен йышĕ – виç çĕре яхăн. Ултă факультет, çирĕм виçĕ кафедра. Хамăрах наука докторĕсемпе кандидачĕсене калăпласа кăларатпăр. Пурнăç уттинчен юлмастпăр. Маларах та чупатпăр. Çавăнпа – академи! Итле хамăрăн гимна:

Сан ĕмĕтӳ – санăн ăшра,
Тунă ĕçӳ – ялан умра.
Утас вара утман çулпа,
Тухас мала, çамрăк вăйпа.

Вăя хурса, çула курса,
Сума суса ĕмĕр санпа.
Чăваш Ен академийĕ,
Чăвашсен академийĕ.

Пирĕн иксĕмĕрĕн академийĕ те. Сăввине те, кĕввине те Кашкăр çури çырнă, ман тăван Волков доцент. Юрлаканĕ те Кашкăр çури – Марийăн чури...

Çав самантра хыçра хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

– Сывлăх сунатăп! Мĕн концерчĕ кунта?

Паллана сасăпа вăртах сиксе çаврăнчĕ экскурсовод.

– Акă вăл пирĕн пулас доктор, манăн Венера Ивановна, – терĕ чĕтревлĕрех сасăпа Тельман Федотович. – Паллаштарам сире. Краснодарти селекци институтĕнче ĕçлекен пирĕн ентеш, Шăхран районĕнчи Ачча хĕрĕ, ял хуçалăх наукисен докторĕ Мария Ивановна Божко профессор.

– Питĕ хавас аякри хăнапа паллашма. Çывăхри ялсемех-ха апла, Хурăнвартан ултă çухрăмра.

– Пирĕн аттесем сирĕн яла Петрав уявне çŭретчĕç, – çунакан питне сŭнтереслĕн ал лаппипе сăтăрса илчĕ тăрук пăлханса ŭкнĕ хĕрарăм.

– Камсем патне? – кăсăкланчĕ Волков арăмĕ.

– Салакайăк Карачăмĕсем тетчĕç пулас вĕсене. Пĕринче, ача чухнехине астăватăп, сухалăскер вăл пирĕн çимĕк хăнисене шăпăрпа астарса юрлаттарнăччĕ те, ташлаттарнăччĕ те. Çакă асра юлнă тата. «Килнĕ пек чухне мăн асаттесемпе асаннесене масар çине кайса курас-ха, асăнас вĕсене», – тесе аттесемпе чиркŭ еннелле тухса каятчĕ. Ман кукамай сирĕн ял хĕрĕ пулнă вĕт. Салакайăксен енчен.

– Тахçан пирĕн ял Ачча чиркĕвĕн прихутне кĕнĕ-çке. Вилесене чиркŭ масарне кăна пытарма ирĕк панă, – ăнлантарчĕ Волков. – Халĕ ĕнтĕ Карачăм мучи хăй те масарта. Çĕр те пилĕк çул ытла пурăнчĕ.

– Шел пирĕн йăхташа. Кам та пулин юлнă-ши килĕнче?

– Мăнукĕн ачисем пурăнаççĕ, – ăнлантарчĕ Венера Ивановна. – Ой, пирĕн çур ял – Салакайăк. Кам кăна çук йышлă йăхран. Пырса курмаллах. Хăнана чĕнетпĕр, Мария Ивановна. Кĕр сăрине.

Ял хуçалăх академийĕн юбилейне Чăваш çĕршывĕ чаплăн паллă турĕ. Çак аслă шкултан вĕренсе тухнисем ĕçлемен вырăн республикăра сахал пуль. Ку чухнехи ăслă-тăнлă шухăшлама пултаракан нумай ертӳçĕ-профессионал, чăн-чăн çĕр хуçи агропромышленность комплексĕн чи кирлĕ наци проектне ĕçе кĕртессишĕн пысăк вăй хурать.

Уяв шавĕ вĕçленсен, Венера Ивановна академире вăрах тăмарĕ, доктор диссертацийĕпе кăштах лармаллаха тесе, хваттерне васкарĕ. Упăшкине кĕтме шутламарĕ. Упăшки, аякри хăнашăн хуравлăскер, ăна сыхлама «Раççей» хăна çуртнех хăюллăн çитрĕ.

– Тинех эпир иксĕмĕр пĕрле, çырăнман упăшкамçăм,– улăх чечеклĕ халат аркисене ик еннелле варкăштарса çăвăнмалли пӳлĕмрен тухрĕ те Мария Ивановна, маларах тасалма ĕлкĕрнĕ улах ачине çара кĕлеткипе ыталарĕ...

Утмăл пиллĕкри хĕрарăмпа арçыннăн юрату тăвăлĕпе хăна çурчĕ нимĕн чухлĕ те кисренмерĕ.

Эрнери ĕç-пуçа пĕтĕмлетнĕ хыççăн Кириллов Хурăнвар ачине Волкова вăхăтлăха юлма ыйтрĕ.

– Тельман Федотович, – терĕ вăл ăна пĕчĕк хут татăкки тыттарса. – Вула. Милов пире хăнана чĕнет.

Волковăн та унта çитсе курас кăмăл çĕкленчĕ.

– Пирĕн ял та ватăлса пырать. Çитмĕл пиллĕке çитрĕ. Пухăнса пĕрре вăрмана шавлаттарса илес терĕ пуль çав авалхи Мировсен шĕвĕркки. Мучăшĕпе пĕрле Тымара та çĕклерĕ, пире те пурнăç çил-тăвăлĕн айне тăвасшăн мар. Ан кӳрен эс, тусăм. Тĕрĕссипе, эсĕ çăлса хăвартăн çĕршыв пăлханăвĕнче Авруйпе Хурашура. Эс пулман пулсассăн çĕр çинче, пирĕн çак пĕчĕк ялсем те çĕр çинчен тĕппипех тасалатчĕç – Раççейри пин-пин ял пекех.

– Тӗрӗсех, Николай Кириллович. Эпӗ сирӗн ялсене сыхласа хӑварассишӗн партин чи хаяр выговорне илтӗм. Мургаев секретарь мана : «Колхозун ял-хулине Тарӑнвара Авруйпе Хурашур халӑхне пурӑнма куçараймасан, партбилетна сӗтел çине кӑларса хуратӑн», – тесе çухӑрнӑ самантра тутинчен кӑпӑк кӑларни халӗ те куç умне тухса тӑчӗ. Ара, яла хулапа танлаштарас тесе колхозсемпе совхозсен тӗп усадьбисене çав ял çыннисене, кил тымарӗ-мӗнӗпе кӑкласа, кӗтӳ пек пухмаллаччӗ вӗт – Мускавран хушнипе. Билета та памарӑм, никамран та хӑрамарӑм. Хӑйсене, çав пӗчӗк, шанчӑк паман ялсене, хулапа танлаштартӑм. Епле ырӑлӑх вӗсен халӗ унта? Каятпӑр, уписательнӑ çитсе калаçатпӑр сирӗн ялсемпе. Чӗререн. Чуна уçсах.

Çул тӑршшӗпе «Атӑл» чӳречинчен пӑхса пыракан Волков, шухӑша кайнӑ Кириллова айккинчен чавсипе тӗртсе вӑратрӗ.

– Тем каласшӑн? – куçне уçрӗ Николай Кириллович.

– Эп санран аслӑрах, çапах вӑрçӑ хыççӑнхи уйсене хамӑр ялтинчен сарлакан курман. Пӑх-ха эс?

Кириллов, çавра çил пӑтратса пӗтернӗ ыраш, тулӑ пуссисене, анра çарӑк, мӑян, пиçен пусса илнӗ инçете тӑсӑлакан лаптӑксене, совет саманинчен юлнӑ, бомба пӑрахса аркатнӑ хыççӑнхи пек сапӑнса ларакан выльӑх-чӗрлӗх комплексӗсен вӑрӑм çурчӗсене сӑнасан, çулташне каларӗ:

– Çӗр çухрӑм кайса та тырӑ выракан пӗр комбайн, куçа илӗртекен сысна, ӗне вити асӑрхаймарӑм. Мур килсе çапнӑ чухнехи пек шӑплӑх. Мӗн тӑватпӑр эпӗр? Пустуй шавламастпӑр-ши? Чӑваш парламенчӗн депутачӗ чухне, аграри политикипе экологи комитетне ертсе пынӑ вӑхӑтра, ял хуçалӑхне çӗклес пирки мӗн кӑна палӑртмарӑмӑр-ши? Пирӗн ӗç харама кайнӑ-шим? Пире капла хресченӗн çӑкӑр та çитерме юрамасть.

– Выççах вилмӗпӗр-ха, тӑванӑм. Пире Усач министр ют çӑкӑрпа тӑрантарать. Мускав та, хамӑрӑн та пӗр

чĕлхепех ял хуçалăхĕнче татăклă улшăну тумалла тесе миçе çул гимн юрри пек янраттараççĕ. Эх, хăрма пуçланă юман вăрманĕнче пĕр йĕкел çĕре варăнтарса калча кăларнă та, çĕнĕ вăрман кашлать тесе юрлама хăнăхнă. Пĕр калча – пин калча мар. Вăрман мар. Талккăшпе ўстермелле – Чăваш çĕршывĕн калăпăшĕпех çĕнĕ вите, комплекс лартса тухмалла. Çум курăкне пĕтерсе тырă ўстермелле.

– Çитет хуйхăрса та, такамшăн шухăшласа та, – аллинчен тытсах чарчĕ Кириллов тусне. – Вăрманкасран вăрман витĕр ху тахçанах хывса панă асфальтлă яка çулу вĕçленчĕ. Авă пире авруйсем кĕтсе илеççĕ. Сана эпĕ хамăр ял историйĕ пирки тĕплĕнрех пĕлтересшĕнччĕ, эсĕ пур... мана ĕмĕр вĕçленмен ял ыйтăвĕн лачакине тĕртсе кĕртсе ятăн та...

Тимĕр-бетон кĕпер урлă каçса тăвалла хăпарнă çĕре Волков ăна хăйне аса илтерчĕ:

– Çĕмĕрле енчи Вырăс Улхаш ялĕнчен тăсăлать сирĕн ял тымарĕ. Вăрман уçланкинче улхашсем хăйсен телейне тупнă. Вăтăрмĕш çулта вăтăр виçĕ хресчен «Авруй» колхоз туса хунă. Сирĕн пĕчĕк ял наука çыннисемпе мухтанса Гиннес кĕнекине кĕмелли тĕнчери чи мухтавлă ял.

Акă, тăванĕсен, юлташĕсен ытамне кĕрсе ўкнĕ Кириллов вăхăтлăха Волков куçĕ умĕнчен çухалчĕ. Тельман Федотовича хăйне те капăр тумланнă ял çыннисем сырса илчĕç, сăрине те, «хурăн шывне» те, каçунккине те, шăл хушшине хумаллине те сĕнеççĕ. Ырă пулса çитер кăна.

Ял лапамĕнче тăваткалрах вăрăм чул çурт ларать. Ун умне халăх пухăнса пырать. «Мир» хуçалăх пуçлăхĕ Милов:

– Ку çĕнĕ çурт – авруйсен пурнăç комплексĕ. Ялти çĕр çын валли тем тумалăх та вырăнĕ пур, – тесе уяв сăмахне пуçларĕ. – Рай çурчĕ. Пĕр çĕртех – клуб, библиотека, фельдшер пункчĕ, санитарипе гигиена пўлĕмĕсем, спорт залĕ, лавкка, мунча. Хулана тарнă

çамрăксем юлашки вăхăтра яла килсе тулчĕç. Ĕç тупса патăм. Вăрман, шыв, уçă сывлăш. Паян та виçĕ туй пулать. Кунтах. Илтетĕр пуль параппан сассине? Телевидени те персе çитрĕ авă. Тĕнчене сарăлать пĕчĕк ялăн пысăк шавĕ – савăк пурнăç шавĕ...

Ял çумĕнчи улăхра – карусель. Купăс, параппан сассипе унта ватти те, вĕтти те сăпкаллă ларкăчра ярăнать. Хĕрсемпе йĕкĕтсем вăйă карти çавăрнă. Авалхи чăваш юррисем янăраççĕ.

Çĕнĕ çурт лапамĕ аякран килнĕ ентешсене шăнăçтараймасть. Вăтăр киллĕ чăваш ялĕ пурăнать, кĕрлет. Хăйĕн ăслă ывăл-хĕрне мĕн чухлĕ аякка ăсатнă вăл! Авă халĕ вĕсем, тахçантанпа пĕр-пĕрне курманскерсем, епле хавассăн, ăш кулăллăн калаçаççĕ, аса илеççĕ, паллашаççĕ. Виçĕ наука докторĕ, тăватă профессор, пĕр академик тухнă Авруйĕнчен. Хурăнварти Карачăм мучи пекех çĕр çул ытла çĕр çинче пурăннă, Ершепуç ялĕнчен куçса пынă Анисим Ливановăн йышлă çемйинчен çирĕм пилĕк ветеринар тухнă. Вĕсенчен пурте тенĕ пекех аслă пĕлӳ илнĕ. Николай Кириллович та – çав йăх тымарĕнченех.

Пĕтĕм йăхташ пухăннă чух Кириллов академикăн утмăл çулне те савăнăçлăн паллă турĕç авруйсем. Улăхĕ те, уйĕ те, вăрманĕ те ялпа пĕрле халăх уявне илемлетрĕ.

Калаçу вĕçне-хĕрне тухма пĕлмест пуль, тесе Николай Кириллович юлташĕсенчен, пĕлĕшĕсенчен, тăванĕсенчен аран-аран хăпса çуралнă килне ывăнчăклăн таврăнчĕ. Арăмĕ те, ачисем те, мăнукĕсем те тутлăн çывăраççĕ. Унăн çеç ыйхă вĕçнĕ. Канма выртнăскер, диван çинчен тăчĕ те вăл тулалла тухрĕ, сад пахчинчи кĕске сак çине ларчĕ. Улмисен йывăрăшне чăтаймасăр йывăç тураттисем çĕре çити аванна. Кăнтăрла вăл вĕсене тĕкĕ перет, çыхать. Пиçнĕ улмисене татса хурать.

Шăпах уйăх тулса çитнĕ вăхăт. Тавралăх тĕксĕм çутăра. Çывăхри вăрмантан карăш сасси вĕçсе килет.

Урăх сас-чĕв çук. Уçланкăри çĕр авăрлă уй пек курăннăран пуль, ялне те вĕсенне Авруй тенĕ. Çав уйра вăл хăйсен мăн çемйипе килти ĕçне те, колхозăнне те вăй çитнĕ таран тунă. Вăрман леш енчи яла вĕренме çÿренĕ, ун хыççăн Вăрманкасри зооветтехникумалла çул тытнă. Çуран çулран чукун çул çине куçса ларнă та тухăçалла, Хусан хулинелле вĕçтернĕ. Бауман ячĕллĕ ветеринари институчĕ ăна наукăпа çывăхлатнă. Ветеринар ĕçне тăванĕсенчен юратса пăрахнăскерĕн ĕмĕчĕ çунатланнă. Наука докторĕ те, академик та ĕнтĕ вăл. Пурнăçра така çăмарти ăшаласа та хырăма тăрантарнă, пур-çук укçапа тумланкаланă, Пăрачкав районĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» совхозра ветеринари техникĕнче ĕçленĕ, салтакра пулнă, спорт ăмăртăвĕсенче çĕнтернĕ вăхăт аса килчĕ. Сывлăха çирĕплетсе, тĕреклĕ çитĕннĕ вăл.

Такамсем калаçса пыни хăлхана кĕрсе шухăша татрĕ. Çывхарнă май сасăсем палланăскерсемех пулчĕç. Тĕлĕнмелле, хăлхасем сисмесĕрех чăнк тăчĕç.

– Ăçтан тупăнтăн эсĕ, Мария? Сана Авруйĕнче тĕл пуласса шутламан та. Ăрăмçах вара эсĕ.

– Хăй пăрахса тарчĕ те... Халь мăшкăллатăн-и? Эс Кирилловпа ларса кайсассăнах эп ун заместителĕпе Шиловпа хыçалтан хăваларăм. Александр Васильевич Тымара, хăйĕн сысна эксперименчĕсене тĕрĕслеме васкарĕ. Унта эпĕ хуçалăх агрономĕпе тулă вăрлăхĕ пирки калаçса татăлтăм. «Мир» туянма хатĕр.

– Ман Петĕр те çирĕм тонна илет «Шурăмпуç» валли. Ай, чунăм, Мария, ытла маттур-çке эс. Хăнара та бизнес тăван.

– Пĕлĕтелле мар, çĕрелле пăхмалла, Тельман. Ура айне пулнă ылтăн чăмаккине çĕклесе кĕсьене чикме пĕлмелле. Шупашкаралла васкакан Шилов çула майлă кĕртсе хăварчĕ те, эпĕ сана шыраса тупрăм. Ах турă, ма килтĕм-ши Краснодартан? Каллех ăшăм хыпса çунать. «Раççей» хăна çуртĕнчи телей каçĕ хыççăн,

санран уйрăлас килмест-çке, Тельман. Тепре вĕлермелле чуп тăвам-ха сана.

– Ытлашши ан васка. Чăт. Акă, улăха анатпăр та... Унта уяв хŭтлĕхĕ те, ман пуртвĕлте ĕçмелли-çимелли те пур.

– Арăму çухатмасть-и сана?

– Арăм? Венера ман хут ăшне пуçĕпе-кучĕпех путнăха. Шупашкартах юлчĕ.

– Ах, кунтан кайиччен пĕрлех, юнашарах пуласчĕ. Юрататăп-çке эпĕ сана, Тельман. Хĕр чухне пĕрле çывăхланнăранпах манаймастăп. Божко-турăран эпĕ канлĕх тупман. Санран çеç. Эсех, эсĕ кăна кирлĕ мана. Ачуна та çывăхра ашшĕ кирлĕ. Отпуск илсе уйăхлăха пыр. Райри пек усрăп сана – целинари коммунизм пек пĕр утиял айĕнче.

– Вĕренŭ çулĕ вĕçленсен, чунăмçăм Мария...

Калаçу майĕпен улăхалла кайса илтĕнми пулчĕ.

Тĕлĕннипе шалтах хытрĕ Кириллов. Тăрса пŭртелле утнă май, шухăшларĕ: «Ава епле вăрттăн юрату сыхланса пурăнать иккен Кашкăр йăвинче?»

Çын ăшĕнчине ют çын пĕлеймест.

5

Упăшки Шупашкартан мĕн илсе килессе Мария Николаевна савăнса та, сехĕрленсе те чунне лăплантараймасăр кĕтет. «Пĕрлĕх» партийĕн билетне «Пĕрлĕхлĕ Раççей» билечĕпе улăштарсан унран кулса та пăхнăччĕ:

– Ман старик Мускаври революци музейĕн филиалне уçасшăн, тем? Пĕрмай экспонат пухать. Çул пуç пуçĕсене лартма та пуш сентре юлмарĕ, партбилетсем те кĕнеке çŭлĕкне шăнăçмаççĕ...

Акă хальхинче те, кĕтнĕ çывăх çын тул алăкне хуллен уçса кĕрсенех, ăна хирĕç Маруç васкаса утрĕ, хăнăхнă йăлапа Макçăма чуп туса илчĕ. Хывнă пушмакĕсене вырăнне лартма пулăшрĕ те:

– Мĕнле кайса килтĕн? Лайăхах-и? – тесе упăшкин куçĕнчен пăхрĕ.

Алă çуса аслă пӳлĕме иртсен тин арăмĕн ыйтăвĕ çине хуравларĕ Максим Максимович:

– Чаплах мар.

– Мĕн пулса тухрĕ-ха тата? Ялан вилеп саншăн кулянса.

– Мĕн пулмалли – пулчĕ. Макçăм Крутовăн ĕç карьери вĕçленчĕ. Президент администрацийĕнче питĕ культурăллă каларĕç: «Район лавĕн тилхепине Яков Самуилович Милова памалла пулать».

Маруçшăн, паллах, ку хыпар çĕнех пулмарĕ, çавăнпа упăшкин хуйхăллă сăмахĕсем унăн чĕрине сиктермерĕç.

– Сăпаççипă кала президентна хăвна пенси çулĕ çине тухсан та пилĕк çул ĕçлеттернĕшĕн. Ватăлнă ямшăк та çул çинчех ларкăчĕ çинчен тӳнсе кайма пултарать. Юрать Мургаевла ĕçкĕ пушарĕнче çунса халăх умĕнче намăс кăтартмарăн. Ĕçленĕ-çке, çитет. Ман та çынсен арăмĕсем пек пĕрре лăпкă пурăнса юлас виличчен. Шухăшла, çĕнĕ пурнăçа çĕнĕ пуçлăх кирлĕ. Туятăп, эсĕ халĕ Мировсемпе Миловсене малалла утма чăрмантаратăн çеç. Санăн паянхи пуçлăхсеннинчен ăс-тăн шайĕ те катăкрах. Вундеркиндсем тухаççĕ мала. Еплерех çавăрттарма пуçларĕç Яков Самуиловичпа Петр Тельманович? Çавсен, çавсен пулмалла аталану пуçĕнче. Тӳрĕ каланăшăн мана каçар. Ан кулян. Пуçусене кăна ан ус. Иксĕмĕр вара пурнатпăр – пуçсем ĕçлесен. Выçă вилместпĕр. Лар сĕтел хушшине. Кан кăштах.

Иккĕшĕ хирĕç ларса пĕр-пĕрин куçĕнчен шăтарасла пăхрĕç. Макçăм Маруçăн куçĕнче хĕр чухнехи пекех анчах тухакан хĕвел çутине курчĕ. Маруç Макçăм куçĕнче анакан хĕвелĕн йăмшак тĕсне асăрхарĕ.

Пĕрер черкке коньяк ĕçнĕ хыççăн, хырăм пушшех выçса килнипе, Макçăм хăвăртрах аш татăкне ярса илчĕ.

– Кăркка-и ку?

– Аха. Кăнтăрлапа Васка Çимунĕ кĕрсе тухрĕ. Çавăн парни. Вăл сана питĕ курасшăнччĕ. Тымартан çула май кĕме пулчĕ.

– Киле-и?

– Çук. Ĕçе.

– Хăçан?

– Ыран. Унпа эс тĕл пулса калаçăн-ха. Хăв ăшунта тем пытарса тытнă пек туйăнать. Уçса пар чунна, Макçăм? Унсăрăн...

– Пуçа усмастăп халлĕхе, тесшĕн эп. Ĕçсĕр хăвармаççĕ мана, Маруç.

– Ăçта чикесшĕн-ха сана, парти савăлне?

– «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» районти организацине ертсе пыма сĕнеççĕ. Влаç партийĕ. Ытти партисене ума ямалла мар парти. Пĕтĕм пуçлăх унта. Пĕтĕм пуçлăх унпа. Хирĕçлеме памаççĕ. Сталин диктатуринчен те вăйлăрах хальхи демократи. Çынна рак чирĕ пек вăрттăн çиет.

– Килĕшрĕн, парăнтăн, апла?

– Иксĕмĕр килĕшсен, Шупашкара шăнкăравлатăп.

– Хăвăн идеална, шухăшна сутнăшăн мĕн чухлĕ параççĕ?

– Вун пилĕк пин.

– Юрĕ, район çăрăлчăкĕнче тапаçланни мар. Ĕçĕ нервăсене ытлашши çиекенни мар пек те. Эп хирĕç мар. Яра пар. Санран халь тин столичнăй пуçлăх пуласси... пăкки шаннă. Хамăр килтех лăпланса пурăнар. Çапах та, пĕрре чун тăвăлса килнĕ чухне, каласах хăварас килет. Эсĕ те, сан йышши мĕн чухлĕ пăхлă кутлă ленинец, демократсен шăршлă сăпкине кĕрсе ўкнĕ те, ĕнерхине мансах паянхи çул пуçсен кутне çулласççĕ. Иисус Христоса, хăйĕн вĕренекенĕсенчен пĕри Иуда Искариот вĕрентекенне, темиçе кĕмĕл укçапа сутса янă пекех эсĕ те, вĕсем те хăвăрăн Ленин çул пуçне виçĕ пуспа сутса ятăр. Çĕр çинчи хальхи саманари Иудăсем вĕт эсир, тĕрĕссипе. Йывăра ан ил те, çапах халăх умĕнче кăтартрăр эсир хăвăрăн икĕ питлĕ сăнăра – сутăнчăк сăнарне. «Пĕрлĕхлĕ Раççей»

хăвăнтах юлтăр, хамăрăн килти «Пĕрлĕхлĕ Юрату» партийĕн гимнне юрлама манас марччĕ:

Çăхан та, еркĕн те, усал та –
Хушша кĕреймĕ тăшманла,
Эпир чăн савăнăç тупатпăр
Çумри вилмен юратупа.
Кунран кунах хăватлăн
Чĕремĕр хĕмленет,
Пĕрлĕхлĕ çемьере
Чунăмăр хĕпĕртет.

Упăшкипе ăмăртса юрланă хыççăн Маруç йăпăрт уйрăлса тепĕр пӳлĕмрен хитре курупка йăтса килсе уçрĕ те... – Ульки аккан пӳрт умĕнче татса мана парнеленĕ çак чечеке шăварсах, чĕртсех... ах, Макçăм... ман сана çавăн чухнехи пекех юрату çуначĕпе вĕçтерес килет, – терĕ. – Макçăм...

– Ман та санпах вĕçесчĕ-ха, Маруç. Тавтапуç сана пур ырлăхшăн та. Турриех çырнă пуль иксĕмĕре яланлăхах пĕрле пулма.

Апат çисен Маруç çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ:

– Юрату та хăйĕн малтанхи йăвинех манмасть, çавăнтах ăшă, канлĕ вырăн шырать. Çапла-и? Юрĕ, ăнлантăм. Çаплах, тесшĕн эсĕ. Куçунтан паллă. Грета Родионовна та хăйĕн йăвинех тупрĕ. Паян Горячев ăна Шупашкара илсе кайрĕ. Япалисене тиесех.

– Яланлăхах-ши? Унашкалли пулнăччĕ те вĕсен.

– Яланлăхах. Пурăнма. Арăмĕ ракпа вилнĕ тет-и?

– Акă тата. Кӳршĕсемсĕр тăрса юлтăмăр.

– Кӳршĕ вăл тупăнать. Лайăх çын ялан тупăнмасть. Аван кӳршĕсемччĕ, хăнăхнăччĕ. Ай ку пурнăçра. Вуллинчен ик еннелле çурăлнă йывăçа та çыхса-çыпăçтарса ӳстерейместĕн те, Валерий Гавриловичпа Грета Родионовна та пĕр çемье вуллине чĕртеймерĕç.

– Сĕткен типсен, мĕн чĕрĕлĕвĕ унта. Валерий Гаврилович хăй те малтан путсĕрле хăтланчĕ. Ватталла çывхарарахпа ухмахланчĕ, Карачăм мучине те, хăйĕн

арăмне те тăлăха тăратса хăварчĕ. Крахьянне Нухратов Сăшана вăрласа тарман пулсан, вăл тепĕр пилĕк çул ним мар вăкăр хăмпине вĕрсе, вăрмана кĕвĕпе янраттарса пурăнмалли арçынччĕ. Нухрат йăхĕ укçашăн, хăйсемшĕн çунакан йăх пулнă, теççĕ те ĕмĕртен, тымарĕнчен мĕнле çăткăн ўссе çитĕннине куртăмăр ĕнтĕ. Пĕр хушă лăпланнăччĕ те взяткăпа аташма...Манпа дискусси те ирттерсе пăхрĕ те...

– Юнра пурри юн сивĕнсе хытиччен те пĕтмест. Вăрăм укçах вăрăм çула туртрĕ ăна. Çитĕ вĕсем çинчен калаçса. Пире аякран тĕкмеççĕ. Пурăнччăр, пурте ыр курччăр. Эпир те иксĕмĕр ыр курсах пурăнатпăр-ха. Пĕртте кулянмастăп хула майрушки пулайманшăн. Эп – вăрман майрушки... Урам урлă каçсанах çырла, мăйăр, кăмпа...

Кăмăлĕ уçăлнă Макçăм арăмне ачашласа шўтлерĕ:

– Ах ман вăрман майри– майра купарчи...

Президент администрацийĕнче Вăрманкас районĕн çĕнĕ, пулас пуçлăхне пур енчен те чутласа çитернĕ вăхăтра Крутовăннах тапаçланма тиврĕ. Хĕл каçма выльăх апачĕ хатĕрлессипе, кĕр тыррисем акса хăварса кăçалхи тыррине тирпейлесе пуçтарса кĕртессипе, кĕр аки туса хăварассипе, выльăх-чĕрлĕх тупăшне ўстерессипе, стройкăпа, çул-йĕр хывассипе, шкул, культура, медицина енĕпе çĕр-пин ыйту администрацире. Вĕсене пĕр пуçлăхăн пĕр çĕре чăмартаса тухăçлăн ĕçлеттерсе пымалла-çке. Юрать-ха кашни киле, пур вырăна газ çынсенчен маларарах кĕртсе хăварчĕç.

Газификаци историйĕ Чăваш çĕршывĕнче 1958 çултан пуçланать. Октябрь праçникĕ умĕн Шупашкарта Ярославски урамри çĕрмĕш çурта пăрăхсем вырнаçтарса пĕтернĕ те, кăвак çулăм çутса, çынсене тĕлĕнтернĕ. Ун хыççăн газ яла та çитнĕ: баллонсемпе усă курнă. Сакăр вуннăмĕш çулсен пуçламăшĕнче Çурçĕрти Уренгой тăрăхĕнчен Украинăри Ужгород хулине çити газ пăрăхĕ, ун çумне тата пилĕк газ линийĕ хывсан, вăрманкассене çакă шухăша янă: «Вĕт хамăр район çĕрĕ урлă

миллиардшар тонна çут çанталăк газĕ чупать. Мĕншĕн унпа пирĕн те, чăвашсен, усă курмалла мар-ха?!»

Анчах... пуянлăх кут айĕнчех те, ăна тытма алă çитмест. Шухăшланине пурнăçламасăр чунă чăтман хастар та хăюллă çынсен ушкăнĕ тупăнать Вăрманкасра. Çавнашкал ентешсем Мускаври пысăк ĕçсенче те пур иккен. Çитмĕл пилĕк атмосфера пусăмлă тăрпана касса газ юхтарасси вăрман чăтпăхĕнче аташса çӳренĕ пекех пулчĕ вĕсемшĕн. Союз, Раççей, регион, хамăр республика кантурĕ... Вунă организацие çитсе, пуçлăхсене тавлаштарса, ăнлантарса хăшкăлсах çитрĕç. Акă тинех 1983 çулта Раççей Министрсен канашĕ пысăк пусăмлă газ тăрписенчен пĕчĕк тăрпасем тăрăх газ уçласа илме ирĕк парать, вăл шутра Вăрманкас районне те – ятарлăн. Вăрманкассем чи малтан Уренгой хĕрĕвне илчĕç. Мĕнле пысăк çитĕнӳ пулчĕ вĕсемшĕн! Çапла юхма пуçларĕ çут çанталăк газĕ пăрăхсем тăрăх республика çĕрĕнче. Кашни ял çынни халĕ пӳртĕнчи кнопкăна пусать те, хурçă кăмака ăшшине те парать, апатне те пĕçерме пулăшать. Вутă, кăмрăк, брикет хатĕрлесе нушаланас хуйхă тин пĕтрĕ хресченĕн.

Ял çыннишĕн çак телей тахçантанпах хăй килне кĕнĕ пекех туйăнма пуçларĕ ĕнтĕ. Унăн газ ыйтăвĕ кут хыçне тăрса юлнă, тĕрĕссипе вăл ăна нихăш енчен те ыраттармалла пырса тивмен. Пăрăхне хывнă, килне кĕртнĕ, кăмакине тупса лартса панă. Укçине патшалăх, хуçалăх тӳленĕ. Шăрпăк чĕртесси кăна юлнă унăн. Авă епле ырă тăвать патшалăх ял çыннине. Çав ырлăхшăн патшалăх çыннисем, специалистсем, ятарлă организацисене ертсе пыракансем ай мĕн тери пуç ватман-ши, çамкинчен тар кăларман-ши? Крутовшăн та ял-поселока газ кĕртесси тамăк витĕр тухнăн туйăннăччĕ.

Акă халĕ умра – суйлав. Ăна та унăннах хатĕрлесе çитермелле, хăйĕн пуканĕ çине шанчăклă, ăслă-тăнлă, хальхи самана çынни ларма пултартăр тесе вăй хумалла.

Çĕнĕ ĕмĕр пуçланнă çул Раççей Президенчĕн суйлавĕнче аланса юлнă Çиçĕм «демократĕ» Константин Плешаков хăй майлă суйлав юххи пуçланă. Вăл та район самоуправленийĕн-администрацийĕн пуçлăхĕ пуласшăн çунать. Район пухăвĕн депутатĕ-çке. Халăх пĕтĕмĕшле мар, депутатсен пухăвĕ суйлать те халĕ район пуçлăхне, шанчăк пур пек туять ĕнтĕ. Çапла Кукша Куçкипе Тит Ниловичăн мăнукĕ, халăхра «Тымар улпучĕ» хушма ят илнĕ Якку Милов ăмăртăва тухрĕç. Кам çĕнтересси малтанах паллăччĕ. Милов – чи вăйли.

Çапах ку çеç мар, урăххи тăлласа лартрĕ-ха хавхаланса ĕçлемешкĕн Крутова. Маминов, шалкăм çапнине чăтаймасăр, килĕнчех вилнĕ текен хыпар темшĕн пăлхантарса ячĕ ăна. Сăлтавсăр мар. Ашшĕне пытарма хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ Максим Васильев çемйипе килнĕ. Тымара те каяс, те каяс мар тенĕ çĕртех, арăмĕ мăрт-март тукаларĕ те, сиввĕнрех:

– Атя, сыв пуллашупа тĕл пулу пултăр. Пымасан, тем калĕç. Сергей Тимофейч администрацире ĕçлесе пенсие тухнăскер, – терĕ Мария Николаевна, чунне пусарса.

Маминовсем патне такам та килнĕ: Каçал ен тăванĕсем, хурăнташĕсем, ачисем-мăнукĕсем, арăмĕн çывăх çыннисем. Хура тум тăхăннă Елена Сергеевна çумĕнче ывăлĕ Максим тата Сергей Тимофеевичăн кĕрӳшĕ Вячеслав Васильев пуçа чиксе тăраççĕ. Крутовсем кĕрсенех Лина пуçне çĕклерĕ те, хурчканни пек вичкĕн куçĕпе Максим Максимовича пăталаса илчĕ. Ăна хирĕç упăшки те куçне чалăштарса пăхнине сиснĕ Мария Николаевна ăшĕнче тулхăрчĕ: «Ашшĕн вили çинче те ясарланма пăрахмасть йытă ами, ман та ухмаххи, çуркунне йыхравлан ама шăршине туйнă аçа пек унталла ăнтăлать».

Вилнĕ çыннăн пытарас умĕнхи кĕллине тума Пантелей атте килнĕ. Вăл, сасартăк ятарлăн хулăнлатса, вилнĕ çыннăн чунне çăтмах çулне тупмашкăн пулăшмалли сăмах калать.

Çут тĕнчерех ырлăхра – райра пурăннă Сергей Тимофеевич сăнĕ хитрипех. Çăтмах çулне тупмашкăн, вилнĕ çыннăн сылтăм аллине унта кĕме ирĕк паракан хăйне евĕр хут, паспорт, леш тĕнчене кайма панă шанăç сăмахĕ, вилнĕ çын православине чунпа йышăнни, ăна православи тĕнĕн йăли-йĕркипе пытарни çинчен ĕнентерекен документ тыттарнă, çумне хĕрес хунă.

Тусĕн, Тан Ваçлин, вилĕмсĕр чунĕ, «Тан эпĕр, пурте тан, çĕр çыннисем, çĕрпе тан», – тесе, виле пуçĕ тăрринчи сывлăшра ярăнать.

Тула, уçă сывлăша тухсан, кĕвĕçӳллĕ чунне тытса чараймасăр, Мария Николаевна упăшкине чăрсăррăн каларĕ:

– Туяп эп сан чĕрӳ мĕнле хăвăртлăхпа тапнине. Кадилăран сарăлнă шăршран та вăйлăрах пулмалла йытă амин шăрши. Ах, мĕнле туртса илтĕн ăна сăмсуна нăшлаттарса-нăшлаттарсах... кай каçпа еркĕнӳпе ачуна ыталаса Карачăм мучин пуш пӳртне. Пурăнăр пĕрле Мускава тухса кайиччен. Эп Бориспа сехет каярах кăна телефонпа калаçрăм. Екатеринбургран çула май киле кĕрсе тухасшăн. Эп унран юлмастăп. Мускавра пурăнса ăша лăплантарас. Лина кĕртне хваттере сĕтĕрсе пырса ан шăршлантар тулĕк ясарлăх шăршипе. Лайăх пурăнăр.

Лина ачипе, хăйĕн ывăлĕпе, татса памалли ыйту пурччĕ те Крутовăн, вăл Максимкăпа тĕл пулмах шутларĕ. Петр Волков Мускавра аш-пăш, кăлпасси сутмалли «Шурăмпуç» магазин уçасшăн хăтланать. Масар çинчен пĕрле таврăннă хыççăн вĕсем çак ыйтупа калаçу пуçарсан, Максим Васильевич хаваспах пĕлтерчĕ:

– Петр Тельманович, документчĕсене хатĕрлесе çитерĕр те, виçмине пĕрле пыратăр. Эпир туман ĕç çуккă-ха халлĕхе.

Крутов, паллах, ачипе амăшне аслашшĕн кану çуртне чĕнмерĕ. Унта «Биопарк» хуçи, хăйĕн тăванĕ Святослав Викторович Воробьев пурăнма куçнă. Вĕсем валли Маминовсен аслă пӳртĕнчех вырăн тупăнчĕ. Юрату вăйăи вăхăчĕ марччĕ те, ывăлĕнчен те намăс

пекчĕ те... Максимки Волковпа туртма тухсан, Лина чăтаймарĕ, ăна-кăна шутламасăрах Макçăм чĕрçи çине хăпарса ларчĕ те, ăна мăйĕнчен ыталаса, хăвăрт-хăвăрт чуп туса, пăшăлтатрĕ:

– Çисе яратăп. Эп аннене лăплантарма, пулăшма юлатăп. Виçмине кĕтетĕп. Çуллахи пўртре.

Максим Максимович Вăрманкаса çитнĕ çĕре Борис амăшĕпе шăкăл-шăкăл калаçса ларать. Алăк çумĕнче – çула валли хатĕрленĕ япаласем.

Парне илсе килсе тултарнă ачи!

– Сана кĕтсех шўрпе пĕçертĕм, ывлăм, – тет савăнса амăшĕ. – Дачăра ман хур-кăвакалĕ те, чăххи-бройлерĕ те, сысни те, кроликĕ те пур. Ферма. Ĕнер пĕр сыснине пустартăм. Парной аш, кролик хума маннăçке эп. Кайса ил-ха, Макçăм, хăвăртрах? Пылне те, маринадланă шур кăмпине те ан манса хăвар. Ачисем валли мăйăр та татнăччĕ.

Каçчен пĕрлех пулчĕç. Борис васкать. Ыран вуннăра министерствăра питĕ хĕрў канашлу пулмалла иккен.

Амăшĕпе ывăлне вăрăм çула ăсатсан Максим Максимович тунсăх пичкине кĕрсе ўкнĕ пекех туйрĕ хăйне хăй. Мускав эрехĕ те анмарĕ. Диван çине канма тесе выртнăччĕ кăна, пўрт умĕнчех автомашина сирени умлă-хыçлă вăрăммăн виççĕ çухăртрĕ. Кунашкал кам хăтланнине пĕлсе çитнĕ Крутов чўречерен пăхрĕ те тўрех алăк уçма васкарĕ.

Яланхилле шавласа, Быстров майрипе кĕрсе тăчĕ.

– Мария Николаевна çук-им? – сывлăх суничченех ыйтрĕ Семен Ильич. – Салам.

– Тин кăна Борисла Мускава ларса кайрĕ.

– Борис Максимч хăçан килнĕ вара?

– Паян. Командировкăран çула май. Ĕçе васкать.

– Тепĕртак васкарах тухнă пулсан, ярса илеттĕмччĕ-ха эпĕ ăна. Питĕ вашнăй калаçмалли пурччĕ унпа. Ах çав хĕрарăмсене. Куç кĕски умĕнченех час уйрăлаймаççĕ.

Юлташне итле-итлех Максим Максимович хăнамайрана пулăшма та манмарĕ, ăна майланмалли пӳлĕме те кĕртсе ячĕ.

Быстровăн ямшăкĕ тулли баул йăтса кĕчĕ те вăшт кăна тухса çухалчĕ.

Сĕтел хушшине вырнаçса ларсан, калаçу пуçланчĕ.

– «Васка» ресторан майри, Ылтăн Тăрна, а ну кăтартха хăвăн маçтăрлăхна? – пуçне ялт! çĕклерĕ Семен Ильич. – Быстрă!

Вăр-вар, çаврăнăçуллă, хăнăхнă хĕрарăм сĕтел çине ĕçмелли-çимелли тултарса та лартрĕ.

– Апла эс суйлавччен çеç мăн хуçа-а-а-, – сăмахне тăсарах пачĕ Семен Ильич. – Каллех партипе аппаланасшăн. Так, так, так... Ман пĕр шухăш пур.

– Кала?

– Вăрăм пушăпа этем кĕтĕвне хăваласа, кĕтсе йăлăхмарăн-и?

– Тĕрĕссипе, курас та килми пулса çитрĕ хамăн ĕçе. Тем çăрăлчăкĕ. Сысна апачĕ пек пăтрататпăр пурнăç валашкине. Хамăр хăймине чаплаттарса çиетпĕр те, тĕпне, юлашкине, халăх валли хăваратпăр. Ĕçлекенĕн, хресченĕн хырăмĕ арпапа уйран шывĕпех çырлахать тесе шутлатпăр-ши? Ĕçлесе ирттертĕм хамăн ĕмĕрĕме. Тем те ыррине тума хатĕрччĕ халăхшăн, анчах та эпир иксĕмĕр парти йĕрне пăркаламасăр та пăркаланмасăр тытса пыни, пăр тăвĕ тăрне çара алăпа хăпарма хăтланса месерле шаплатса ӳкни çеç пулчĕ. Нумай вуларăмăр иксĕмĕр марксизм-ленинизм теорине... Юрать сан хыççăн манăн тăм пуçа та ватлăхра та пулин тăн пырса кĕчĕ. Эпĕ халĕ сана, Çемен, Чăвашри чи ăслă та чи чее пуçлăхсен шутĕнче тытатăп. Шутлатăп-шутлатăп та, эпир çынна ухмахлантаракан тухтăрсем вырăнĕнче пулнă иккенне тавçăрса илтĕм. Хăвах ăнланан, теори вăл – шухăшлав, пуç ватмăш. Унпах тăранаймастăн. Сĕтел хушшинче хырăма лăплантарнă хыççăн тин тарăнрах шухăшлама тытăнатăн. Этем те, темле чĕр-чун та чи

малтан хырăм çинчен шухăшлать. Выç хырăмпа юмах керменĕ те купалаймастăн. Эпĕр те çавăн пекех, тĕнчене тĕлĕнтермелле пысăк кермен выç хырăмпа лартаймарăмăр, унăн ăшĕнче халăха Анăç ăслайĕсен кăмунинче пурăнтараймарăмăр. Халĕ те... никĕссĕр кермен тума тапăлтататпăр...

– Каçарăр та, Максим Максимович, сире пÿлсех калаçас килсе кайрĕ. Сăмах ыйтасшăн?

– Тархасшăн? – майрана ирĕк пачĕ Крутов.

– Эп те сирнешкелех, просвещеннăй майлах, хаспатинсем, – Максим Максимович умĕнче лараканскер, юри тенĕ пекех урисене ылмаштарнă май кĕпи аркине йăлт çĕкленипе арçынна туртăм вăйĕ персе пачĕ Быстровăн çĕнĕ арăмĕ Милентина Михайловна, Мила-Милочка. – Ман Çомкка хупахĕнче Раççей чечекĕ кăна мар, тĕнче чечекĕ те çурăлса шанать. Пăхатăп та, эй турă... Ай мăн ĕç тума килет тетĕр-и эсĕр Шупашкара тем тĕрлĕ аслă кантур пуçлăхĕ? Çук, укçапа выляма килеççĕ вĕсем – пирĕнпе çара кутăн выляса йăпанма. Миçе пит вашнăй чина пĕлетĕп ĕнтĕ эпĕ Мускавран Чăваш çĕршывне хăпартма тесе çÿллĕ кĕлĕллĕ чăваш амазонкисем патне ятарласа килсе кайнине. Пирĕн те вĕсене, чаплă хăнасене, «Васка» хăна çуртĕнче васкасах ирччен пăхма тивет. Ют кукăль арăмĕсен пĕрешкел ăшлă кукăлĕнчен тутлăрах пуль çав. Ресторанта вĕсен калаçăвне кăшт хăлхана чикнипех туйма пуçларăм. Кусене хаклă парне, хĕрарăм купарчи, укçа арчи çеç çырлахтарать. Тантăшăм-проводница тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Çывăрмалли ятарлă вакунра шăхранлă Мускав министрĕпе çурăк кукăллĕ Шупашкар министрĕ иккĕнех, ытти вырăнĕсене йăлт парне купаласа тултарнă, тет.

– Çавăнпа ĕнтĕ хаçатсенче пĕрмай хăнасен тавĕ, – ахăлтатрĕ Быстров.

Крутов, вĕсене Урал çыннисен парнипе хăналанă май, шахвăртрĕ:

– Час манатпăр-çке хамăр та чаплă хăнасене пуш алăпа кăларса яманнине. Ман ачан машинне те тем те хурса панă. Ниçта çырса хуман, никам йышăнман йăла - пурнăç йăли. Эпĕ те ава паян Раççей министерствин хуравлă чиновникне килти пуянлăха тултарса парса ятăм. Савăнччăр.

– Вăл – килти, хăвăрăн ачусем валли. Эп калани вара – халăхăн, такам валли, – терĕ Быстровăн ăслă арăмĕ.

– Ан кулянăр, мускавсем темиçе вакун апат-çимĕç таварĕ илсе кайнăшăн Чăваш çĕршывĕ те, чăваш халăхĕ те чухăнланса юлмасть. Вĕсем те пире уншăн тав тăваççĕ. Ава, наци программи мĕн чухлĕ пурнăçлатпăр. Чкалов пилот пекех вĕçĕпĕр Раççей тӳпинче, – хавхаланса пычĕ Быстров.

– Парашютсăр, – вĕсене йĕплерĕ сарафанлă майра. – Пилотăн та топливă пĕтсен çĕр çинех сикмелле пулать. Хăмпă вĕрсе малалла каяймасть вăл. Пурнăç ытла чăлăш-чалăш пирĕн. Ман Çомккă пеккисем пуяççĕ, ман ялти атте-анне пеккисем чухăнлăхран тухаймаççĕ. Ял куçĕпе пăхсан... Пирĕн чăваш ялĕ... Мĕн калас... Кашни районти самăр вун-вун ик ял кĕлеткинчен тытăнса тăрать. Вĕсен шăмми-шакки – ашлă, çуллă, ытти вуншар ялăн - шăммипе тирĕ анчах. Эпĕ хам, вунă ачаллă çемьере ӳссе курнăскер, пĕлетĕп нуша кулачĕ мĕнле армути тути каланине. Халь те çав кулачпа тăранса пурăнакан хресчен çемйи республикăра вуншар пин. Эпĕ Çомккă çумĕнче хам мĕнле иртĕхсе пурăннине вĕсен нишлĕхри пурнăçĕпе танлаштаратăп та, манăн çĕр çыннишĕн макрас килет. Çав танлаштару-шайлаштару темипе ял хуçалăх наукисен кандидачĕ ятне илмелли хут-хĕтĕре тахçанах хатĕрлесе хунăччĕ. Диссертацине те хӳтĕлеме пултаратăп. Хамăн пĕлĕве, вăя шанатăп. Анчах... Ял хуçалăхĕн хăш наукин кандидачĕ пулатăп-ши, тесе пуçа çĕмĕретĕп. Тырă, аш, сĕт, çăмарта, çĕр улми, кавăн, хăмла кандидачĕ пулатăп-ши? Кашнин хăйĕн наука та. Каçарăр та, арçынсем, хастар кавалерсем, ман çăкăр...

– Тĕрĕс, чунăмçăм, Мила-Милашка, – лекци вулакана çумарах туртса илчĕ Быстров. – Кишĕр наукин кандидачĕ пулатăн. Ял хуçалăх наукисен кандидатне вара малашне, Милентина Михайловна, çăкăр науки кандидачĕ – çăкăр чĕллин пулас докторĕ теме тытăнатпăр. Акă мĕнле ученăй ман мăшăрăм, Максим Максимович. Ученăй-агроном, сверхученăй экономист, икĕ дипломлă хресчен. Пиçен чикесрен те, вăкăр тĕкесрен те хăракан аслă пĕлӳллĕ специалист, ялта ĕç тупайманнипе ресторана вырнаçнă официантка. Мана ялан тăн параканскер.

– Манашкалли çур хула. Ял хуçалăх академийĕнче ученăй-официантка, ученăй-сутуçă, ученăй-уборщица вĕрентекен кафедрăсем уçмалла, – кулать Быстров арăмĕ.

– Халĕ кăштах йĕрке тăваççĕ пулас-ха. Специалистсем вĕрентме академи хуçалăхсемпе килĕшӳ çырать. Диплом илнĕ хыççăн çамрăксен вĕреннĕ тăкаксене ĕçре саплаштармалла, терĕç, – ăнлантарасшăн пулчĕ Крутов.

Милентина Михайловна ун еннелле аллине çеç сулчĕ:

– Нимле йĕрке те чараймасть хальхи пурнăçра вĕсене вак укçашăн ял çăрăлчăкĕнче нушаланма. Пурпĕрех вăрăм укçа патнеллех, çăмăл пурнăç еннеллех тараççĕ вĕсем.

Кил хуçи те юмах çаптарккинче кĕреке çинчен маннă, аса илсе вара черкке çĕклеме ыйтрĕ:

– Хамăр пуласлăхшăн!

– Туслăхшăн! Крутов пулас миллионершăн!

Максим Максимович Семен Ильича пуç пӳрнипе юнарĕ.

Черккесене пушатса страус ашне çинĕ май, Ылтăн Тăрна çунаттисене çат-çат тутарчĕ:

– Эсир ĕнтĕ ял ĕçĕнче те, халăх ĕçĕнче те пиçнĕ, туптаннă ертӳçĕсем, калăр-ха, палăртнă мăн ĕçсенчен, наци программи текеннисенчен, хăшĕ сире ытларах шухăшлаттарать?

Икĕ алă икĕ ĕнсене икшер кăтăртаттарса илчĕ.

– Юлашки çĕр çул хушшинче, – терĕ Быстров.–Эпĕ çак тапхăрсене революцилле утăм – прогресс утăмĕ – тесе палăртасшăн. Патша влаçĕ пуçланă хут пĕлменлĕх реформине советсем çирĕммĕш-вăтăрмĕш çулсенче пĕтĕмĕшле вĕçлени. Çавă пире тĕнчери аталаннă çĕршывсен ретне тăма пулăшрĕ. Вĕренсе ăслăлăх пухнă халăхах халĕ пирĕн чăваш халăхĕ те. Тепри вăл, иртнĕ ĕмĕрти утмăлмĕш çулсенче патшалăх электролинийĕнчен çутă илсе экономикăна, ял хуçалăхне çĕклени, Ленинăн ГОЭЛРО планне пурнăçа кĕртни. Утмăл – çитмĕлмĕш-сакăр вуннăмĕш çулсенче çут çанталăк газĕ ял çыннине вутăшăн пăчкă тыттарма, лаша кӳлтерме пăрахрĕ – пĕтĕм халăх чунне хĕвел пек ăшăтрĕ. Тата – Германипе Сăшана хăй вăхĕтĕнче çирĕп, такăр çул йывăрлăхран тухма пулăшнă пекех, Чăваш çĕршывне те вăл малашлăх, телей çулĕ уçса пачĕ. Эпир те, пĕр ĕмĕр ытла иртнĕ хыççăн та пулин, такăр çулпа Анăçри çĕршывсемпе танлашма пултартăмăр. Çакă тăватă революци – пирĕн çĕнтерӳ. Атьăр-ха çав çĕнтерӳшĕн «Атăл шывĕпе» салют парар!

– Патшалăхĕ пулăшать ĕнтĕ пире. Хамăрăн наци программисем ăнăçлах пурнăçланса пыни те ял халăхне нумай ырă тăвать, – юлташĕнчен юлас темерĕ Крутов та. – Чылай малалла кайрăмăр: пур енĕпе те. Çавăншăн иксĕмĕр те, Çемен, çӳçе кăвакартрăмăр та, сайралатрăмăр та. Юрĕ, тусăмăрсем, çитет пуль сĕтел çинче пурте çитнĕ чухне проблемăсемпе сакусить туса. Эс çакна кала-ха, тусăм, мĕн çăмăлпа васкаса килтĕн майрупах, мĕнле ыйтупа тĕл пуласшăнччĕ манпа? Мансăрах хăналаса хăварнă эс ман Маруça...

Семен Ильич пăркаланса пукана чĕриклеттерсе илчĕ те, хăлтăртатрĕ:

– Хă-хă-хăх-хах! Итле? Пĕрремĕшĕ – сан валли ман ĕç пур. Вилнĕ йытта вил мулкач тенĕ пекскер. Влаç та, парти те ĕмĕрлĕх мар. Вĕсем çуралса чĕрĕлеççĕ те, часах çунса та кĕлленеççĕ. Пурин хыççăн та хăваласа

çитеймĕн. Манăн тĕп хулара консульствă ĕçлет. Вăт эпĕ сана «Васка» патшалăхĕн Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ Посолĕ, чăвашла каласан, Быстровăн элчийĕ тăвасшăн. Сана валли унта чаплă хваттер хатĕр. Ăна хăвнах парнелетĕп. Мусквич пулма та пултаратăн.

– Ытла асса кайнă-çке эс? – тĕлĕнчĕ Крутов.

– Манран ан епре. Эсĕ хăв Мускавра хваттер туянас теменшĕн ыттисем çывăрса лараççĕ-им? Эп кăна мар, Чăвашстанри миçе район «кĕпĕрнаттăрĕ», ял хуçалăх кооперативĕсемпе предприятийĕсен пуçлăхĕсем хваттер туяннă унта. Хуçалăхĕсене панкрута кăларса, ял çыннисене çулталăкра вунă пин тенкĕ тӳлесе пуйнăскерсем... Эп хăть никама та улталамасăр тунă пурне те. Патшалăх пулăшăвĕн майĕпе. Тăнла ик хăлхупа та лайăхрах. Сан унта ĕçӳ те «не бей лежачевă» майлă. Манăн Мускав усламçисемпе, ют çăршыв бизнесменĕсемпе вăйлăрах çавăрттармалла, «Васка» агрохолдингăн сăннисене мăн хула ăшне тарăнрах чикмелле. Чăваш Республикин Мускаври представительствипе таччăнрах çыхăнса ĕçлемелле. Çавă çеç. Килĕшетĕн-и? Пар ална.

– Шухăшлам-ха, кăштах. Маруçпа канашлам.

– Юрать, килĕшнĕ тесе шутлăпăр. Ăна çак черккене çавăрса хурса пичет çапса çирĕплетĕпĕр. Иккĕмĕшĕ – венчете тăмалла пирĕн. Айта ыран Пан Христос патне. Вăл эп çитессе пĕлет. Сана свидетель тăвасшăн.

Çынсене коммунистсен партине йышăннине курса ывăннă Крутова пĕрле вĕреннĕ, пĕрле ĕçленĕ Оманов юлташ чиркӳре мĕн хăтланни питĕ кăсăклантарчĕ. Çавăншăн та, юлташĕн кăмăлне хуçас килменнишĕн те шухăшласах вăл Быстрова алă пачĕ.

Шăмат кун Крутов Вăрăм Ваççапа Тымара çитрĕ. Чан сасси аякранах хăй патне çывхарма чĕнсе йăнкăлянкăлтататать. Мăн чанĕ, «Эпĕ те хам прихутра чи асли, чи хăватли», – тенĕн, сывлăша тан! та тан! тутарать.

Туй тумĕ тăхăннă кĕрӳ каччипе çураçнă хĕр вырăнĕнчи Çеменпе Милентина çунакан çурта тытнă. Çурта çунни çын Турă юратăвĕн çулăмĕпе çунса тасалса çĕнелнĕ этем пулса тăнине, Турра ĕненнине, унăн çуттипе çуталнине, Турăпа Амăшне, ангелĕсене мĕн тери юратнине çирĕплетсе парать.

Пантелей атте, сирĕн пурнăç çулĕпе Турă хушнă пек пымалла, пархатарлă ĕçĕр Турра панă парне пулмалла, тесе кадилипе суллакаласа, умра утать. Турă пилленĕ мăшăрланăва мухтани çинчен чиркӳ хорĕ юрă янратать.

Мăшăрланакансем чалăш сийлĕ çӳлĕ сĕтел умĕнче, урайĕнчи шурă тутăр çине пусса чарăнаççĕ. Аналой çинче – хĕрес, Евангели тата чаплă икĕ калпак.

– Турă чурисем, эсир никам хĕтĕртмесĕр, ирĕклĕн пĕрлешме кăмăл тăватăр-и, ку таранччен эсир урăх никампа та пĕрлешме сăмах паман-и, юратура пĕр-пĕрне улталамастăр-и?! – кулăллă куçĕпе Семен Ильича йĕкĕлтесе, хыттăн ыйтать пачăшкă вĕсенчен иккĕшĕнчен те пухăннисен умĕнче.

– Çук. Çук. Çук, – илтĕнет арçынпа хĕрарăм сасси.

– Эсир халĕ хăвăр ирĕкӳпе пĕрлешме, çемье чăмăртаса тату пурăнма турă умĕнче сăмах патăр.

Пантелей атте, виçĕ кĕвĕ вуласан, сĕтел çинчен илнĕ калпакпа мăшăрланакансен умĕнче хĕрес хурать те, Çăлакан-Христос аттен калпак пуçне тирнĕ сăнне Çемене чуп тутарать, «Чиркĕве мухмăрла килмеççĕ» тесе ăна вăрттăн асăрхаттарать те, сассине хăпартса, хулăнлатать:

– Турă чури Симеонпа Турă чури Милентина Ашшĕпе Ывăлĕ тата Святой Сывлăшĕ ячĕпе венчете тăраççĕ.

Пачăшкă çавăн пекех вĕсене калпакпа тепĕр хут хĕрес хурать те Милентинăна Турă сăнлĕ калпака чуп тутарать:

– Турă чури Милентина Ашшĕпе Ывăлĕ тата Святой Сывлăшĕ ячĕпе Турă чурипе Симеонпа венчет тăвать.

Пантелей атте мăшăра венчет калпакĕсене тăхăнтарать, çав хушăрах вĕсен хыçĕнчи Крутовран мăшкăлласа илет: «Партбилетна тур кĕтессинех хурса

хăвартăн-и?» Быстровсен кӳнтелийĕ Пан Христос йĕпленине пуçне пĕксе кӳренмесĕрех ирттерсе ярать.

– Мухтав сире, мухтав ырă ĕçĕрсемшĕн, Турă умĕнче çылăха ан кĕрĕр. Пĕрне-пĕри юратса пурăнасси вăйлантăр, кураймасăр усалланса пурăнасси çухалтăр...

Кĕлĕ каланă хыççăн пачăшкă Павăл апостолăн ефенянсем патне янă çырăвне, Иоанн Евангелийĕн сыпăкне вулать, çĕнĕ мăшăра тăнăç сыхласа упрамашкăн Турăран пулăшу ыйтать, каллех кĕлĕ вулать.

Пантелей аттен мăшăрĕ Мария игумен Туррăн Ӳчĕпе Юнне ăша илтермелли савăт йăтса пырать. Иерей, кĕл тунă май, куркана хĕрес хурать, ăна Çемене тыттарать. Малтан Çемен, унтан Милентина виçĕ хут черетлесе хĕрлĕ эрехе – турă юнне – ĕçсе яраççĕ. Турă умĕнче çапла хăйсем пĕрлешнине пĕлтереççĕ.

Пачăшкă упăшкин сылтăм аллине арăмĕн сылтăм аллипе пĕрлештерсе, таинствăсем туса тăма тивлет панине пĕлтерекен мăйран умалла çакнă епитрахиль текен тумтирне хывса, унпа мăшăрăн аллисене хуплать, çӳлĕ сĕтел – аналой тавра хăйĕн аллине виçĕ хутчен çавăрать. Ку вăл паян çуралнă мăшăршăн ĕмĕрĕпех алла-аллăн тытăнса пурăнмаллине, хăйсем Турра пуç çапса тупа тунине манмалла маррине пĕлтерет.

Савăнăç вăхăчĕ вĕçленнĕ май, Пантелей атте мăшăрсен пуçĕнчен венчет калпакĕсене хывать те мăшăрĕсене Турă, Турă Амăшĕ ячĕпе саламлать.

Çакăн хыççăн çĕнĕ мăшăра чиркӳн тĕп хапхи патне илсе пыраççĕ. Çимун вара Çăлаканăн, Милентина Турă Амăшĕн турăшĕсене, ун хыççăн Çимун Турă Амăшĕн, Милентина Çăлаканăн турăшĕсене чуп тăваççĕ. Пачăшкă вĕсене хĕресе чуп тутарать, пĕрер турăш парать: упăшкине – Çăлаканăнне, арăмне – Турă Амăшĕнне.

Венчет тунине ятарлă кĕнекене çырса хураççĕ.

Чиркĕве пухăннисем савăнăçлă мăшăра телейлĕ пурăнма ырă сунаççĕ.

Чиркӳ картишĕнче Крутова Лина Васильева-Маминова чарса тăратрĕ. Унăн ясар куçĕнче Макçăм ыйту палли курчĕ.

– Эх, пулмарĕ манăн санпа та, никампа та венчете тăрасси, Турă пилĕпе юратнă çемье тăвасси, – терĕ йĕрсе ярасла Лина. – Яр пĕчченех Вăрăм Ваççуна. Мĕн те пулин суйса юл. Эпĕ вара сана паян пурпĕрех ниçта та ямастăп.

Максим Максимович юрату пăявĕ мăйĕнчен явса илнине чăтаймасăр Тымартах, хăрман тымара малалла-çĕнĕлле чĕртмех юлчĕ.

6

Сăр вăрманĕн авалхи юманлăхĕ тавра чăмăртаннă Юманлăх ялĕ хăйĕн ĕмĕрĕнче мĕн кăна тӳссе ирттермерĕ пуль. Вун çиччĕмĕш ĕмĕртенпех кĕрлет ку тавралăх. Çĕршер çул хушши урапа çулĕпе турттарнă юман кĕрешĕсене Сăр юхан шывĕ хĕрне. Сулăпа ăна Атăла çитернĕ, пысăк шыв тăрăх – çурçĕрелле те, кăнтăралла та ăсатнă. Чукун çул янăрама тытăнсан, паха юманĕ, чăрăшпа хырĕ, çăкипе хурăнĕ пуйăспа ăçта кăна çитмен пуль. Юман кĕрешĕ пек çирĕп чăвашсен ялĕ Юманлăх, ача-пăча хунаттарса, Раççей халăхне йышлантарнă: ывăлĕсем алла пăшал тытса çĕршыва хӳтĕленĕ, хĕрĕсем качча кайса ача çуратнă, çĕр ĕçĕпе чакаланма йыш хунаттарсах тăнă. Патшалăх çилĕ хăш енчен вĕрнине пăхмасăр, пуçа çĕклемесĕр тăрмашнă Юманккай йăхĕн хресченĕсем, несĕлтен несĕле куçса пырса, ку таранччченех çут тĕнчере пурăнаççĕ. Ăру тымарĕ кунта йăва çавăриччен хăйсем хăш çĕр çинче амалнине астăвакан юлман. Йăх пуçĕ Юманккай пулнине çеç пĕлет Савватий Савельев та. Кӳршĕри Çиçĕм хĕрне качча илнĕренпе, Упа Укахвийĕ ăна хитрелĕхĕпе те, юратăвĕпе те, ĕçе вăр-вар тытса тăвассипе те, ача çуратассипе те пуç тӳпеки таранах хĕпĕртеттернĕ. Мăн пӳрт шăнăçайми тĕпĕртетекен ывăл-хĕрпе кăмăлăскерсем ытаклансах юрлатчĕç:

Ĕçре пулман ял кулли –
Пӳлме тулли тыр-пулли.
Савăнмашкăн чун туллин
Ачи-пăчи пӳрт тулли.

Мăшăрне «Ача амăшĕ-героиня» ят парсан Савватти кĕвĕçсе тутине те тăснăччĕ:

– Ах, патшисем те хĕрарăм майлах-çке, темме хисеплесех каймаççĕ пире, ашшĕсене. Йăх тымарне халăхра хĕрарăмран мар, арçынран шут илсе пыраççĕ те...

– Ан палка, Савватти-Ватти, сав та мана тепре, савала та хырăма, çиччас сана хăвпа пĕрле сава туртакан çамрăк Савватти тупса парап. Саккун улшăннă халь. Юманккайсен йăх тымарĕ малашне Упасен тымарĕнчен хунать.

Сисмерĕç те хĕрӳ ĕçре. Савельевсен юрату лăппинче пĕринче пĕчĕк Савватти тĕнче илтмеллех çухăрса ячĕ. Ашшĕпе амăшĕ те хăйсен юррине малалла тăсрĕç:

Колхозне те турăмăр,
Мухтавлă та пултăмăр.
Ма юрлас мар, ташлас мар –
Эпĕр çынран кая мар.
Юман урай авăнать
Юманккайсем пуснипе.
Несĕл несĕле куçать
Упа амин хевтипе.

Çĕр çыннин, хресченĕн ăсĕ-тăнĕпе, çĕр пăсĕпе, вăрман сывлăшĕпе паркаланчĕ мăн çемье. Çуркуннерен çуркунне çулçă кăларса симĕсленнĕ майăн пурнăç çилĕпе вăрăм сĕтел те, шелсĕр касса пĕтернĕ вăрман пекех сайралса юлчĕ. Савельевсен килĕ кăна мар, ял та кĕçех пушанчĕ. Йăмраллă, хурăн-çăкаллă урамсем тăрăх вăрман урлă кашласа çитнĕ çил-тăвăл алхасма пуçларĕ. Кĕç вĕсен «Çиçĕм» колхозĕн ячĕ çеç тăрса юлчĕ. Ĕç çук. Ялта та çын çук. Хулара ĕç пур. Унта Юманккайсемпе Упасен ачисем те пур.

– Ма тăнна ылтăнламарăн-ши эс çав Çиçĕмри Кукша Куçки пек. Вĕренсе тăн илнĕ пулсан, тен, хамăр яла та

сыхласа хăвараттăнччĕ пуль ун пекех, – ўпкелешет хушăран Укахви. – Эпĕр те «Юманлăх» кăмунă тăваттăмăрччĕ.

– Пĕлмесĕр ан лăпăртат-ха эс, карчăк. Сакăр вуннăран иртрĕн, пурпĕрех ăсу манне хăваласа ситеймерĕ. Çапах эпĕ «Çиçĕм» кенсекĕ пулнă, райкум нумĕн... клавитуринче тăнă, Тымарти Васка кумсен Илле-прурукĕн кумпанинче пулнă. Кашниех лекеймен унта!

– Мухтан-ха, хăмпăлан. Çиччас хăлха чикки парап ак. Райкумсемпе пĕр каварлă пулнăскер, апла эс те айăплă çак йăшнă пурнăçшăн. Тарăхтар-ха, яшка та пĕçерсе памас. Ăçта сан кăмуну? «Кăмунăра пирĕн кил те, укçа та, тум та, ĕне те кашнин уйрăм пулмасть, упши пулать. Мĕн çиес килет, çавна çиен, мĕн тăвас килет, çавна тăван, кама юратас тен, çавна саван. Ирĕклĕн пурăнан...» Хĕрарăмсемпе çапла лĕпĕртетсе ларнине сана эп хам та илтнĕ. Сирĕн кăмуна юмаххи хыççăн кайсах халăх пач ĕçлеме пăрахрĕ, телей кайăкĕ шыраса тарса пĕтрĕ. Кукша Куçкин тăн çитет çав. Сирнешкел Васка Илле-прурукĕсем хыççăн чупмарĕ, хăй пуçĕпех кăмунă турĕ. Ял ĕçлет, пурнать, савăнать.

– Мана халь ăшалама лайăх. Çын юмаххине ĕненсе пĕтрĕмĕр. Тăн çитмерĕ ман чăнах та Кукшанни пек. Фермăран ытла мана ним те кирлĕ марччĕ те...Пилет пур та, хĕстереççĕ. Сан шавласси. Эп кулхус кенсекĕ пулнăшăн çаралчĕ пуль ĕнтĕ ял. Партийĕ хăйăртан купаланă ту пекскер пулнăшăн эп айăплă халь. Пĕрре пăрлă çумăр шапăртаттарсанах исленсе çĕрпе танлашрĕ те вăл, шывпа юхса кайрĕ. Кукшасем авалхи юман тымарринчен çакланса юлчĕç. Таçта такам пур вĕсен. Кăмунă турĕ те... Çĕпĕрте нехтĕ-кас кăларнă çĕрте мĕльяртлă тăванĕ пур вĕсен. Юрать-ха тăнлă чăваш – чăвашах пулăшать. Кукша хăй мухтанса кăтартрĕ. Сан, терĕ мана, вун пĕр ачуна та вун пĕр ĕнçтитутра вĕрентни ним усси те çук.

Савватти аптăранă енне кукăр чĕлĕмне мăкăрлантарса ячĕ. Карчăкки аяккарах куçса ларчĕ те, ăна илтмелле хыттăнрах калаçрĕ:

– Шăнкăрч чĕпписем те хăш вырăнта хăш çăмартаран шăтарса тухнă шăршпа каялла вĕçсе килекенччĕ те... Савватти те санпах сава саваласшăнччĕ те хăйĕн пӳртне тума...Шалт аптрамалла. Кутăн чăмма кăвакал мар. Ачисен пурин те пĕрешкел сăмах: ман валли ялта пульница çук, теприсен – шкул, театр, савут çук. Тата мĕн çук-ши ялта пурăнма пирн ачапча валли?

– Мĕн пур? Ним те çуккă! Мăян, вĕлтрен пуснă урам пур та – вĕрман кашлавĕ.

– Ах, ухмахсем эпĕр. Эпĕ анчах-и? Ялта çĕр вунă кил çинче виçĕ мать-керуиньă вăтăр икĕ ача çуратса ӳстерсе те пĕр акрунум, ял инçенерĕ вĕрентеймерĕмĕр хамăр валли. Ăслах пулчĕç пирн ялсем те, тытрĕç те яла пăрахса кайрĕç ачи-пачи патне. Мĕн ыр курса пурăнаççĕ пуль вĕсем хулара. Эпир, ик тунката, хамăрăн...

– Хамăрăн йăх тымарне шăварса пурăнатпăр-ха, – ыталаса илчĕ карчăккине старикки. – Чуптаратпăр. Эпир пур та – ял та шивуй. Карттă çинчен сӳсе пăрахмаççĕ Юманлăх ятне иксĕмĕр леш тĕнчене кайиччен. Эс ан чар мана калаçма.

–Эй санпа, пакăлтипе. Паврах чĕлхӳ çине çăпан тухиччен.

– Вăт çав мĕльяртлă Кукши вĕсен, çиçĕмсен, «Ман ют патшалăхсенче çĕршер мĕльярт та туллăр пур. Леш, мĕрикансен укçи. Сана, Кăнстантин пиччe, пĕр мĕльяртне парнелетĕп. Кирлĕ пулсан – татах та парап. Эс унта хамăр йăх тымарне малалла тăс. Кукша йăхĕ пулсан та эпĕр – Çиçĕм йăхĕ. Пуйтар кăмунарусене те, – çапла мухтаннă Куçкă шăлнĕ. Çампа пуйрĕ Кукша. Ялне те пуйтарчĕ. Трактор-кумпайнĕ те унăн вĕр-çĕнĕ. Кермансен те мăрикансен. Виçĕм кун Куçкăн сысна ферминче пулса куртăм та, телĕкри кину тĕлĕкĕ пек туйăнчĕ.

– Мĕн, ылтăн сыснасем усрать-им?

– Чăнах. «Ку ман нăрх-нăрхсем пулас ылтăн куписем. Мана Тымарти Милов та çитеймест», – тесе мухтанчĕ. Пур çав хăмпăланмаллăх ун. Эп ĕçленĕ фермăна кăлхуса çиекен шĕкĕсемех авăртса пăх тунăччĕ. Халь ун

вырăнĕнче.. Кумплекс. Çирĕм пилĕк пин сысна хупнă самăртма. Çитмĕл пине çитерме кармашать. Вунă пин туннă сыснана тĕтĕмлесе сутма тытăнасшăн. Скумпри пулли пек, эппин. Нимĕçсенчен туяннă техникне. Сысни çурисене те нимĕçсемех панă. Çур çулччен центнĕр çур ўсеççĕ тит. Кумпикурм саучĕ те лартнă. Çиçĕмĕн çĕр çитмест те, юхха кайнă пилĕк ял çĕрĕпе усă курать. «Мĕн хака ларчĕ сана ку сысна кăмуни» тесе ыйтрăм та, ылтăн шăлĕсене кăтартрĕ: «Пĕр мĕльярта. Пуян шăллăм хушса пачĕ».

– Унпа-çке вĕл пирн ял çĕрне те çавăрса илнĕ, пушă лартмасть. Çав кĕтĕве пăхма, кăмунинче ĕçлеме çынни çитет-ши?

– Шăллăм яппунсемпе китайсен камантисене пĕр чукун çул эшелунĕ ярса парать, – терĕ.

– Эх турă, чăвашсене пусахласа пĕтереççĕ ĕнтĕ вĕсем. Таса чăваш та хăвармĕç. Çитĕ юмахласа, старик. Хĕвел анчĕ. Эп ĕнине паçăрах сунă. Пăрушне, сурăххисене, хур-кăвакалне хупар та. Эс Вăрманкасран çитессе кĕтсе ывăнтăм.

– Çул тăвакансем лартса килчĕç. Куран, кĕçех асфальт пулать пирĕн ялта та...

– Юрĕ, юрĕ, иксĕмĕр ирĕн-каçăн ăмăртмалла чупăпăр. Çывăр.

Упа Укахвийĕ тĕлĕк курать. Упа çырми çумĕнчи уçланкăна çапса хĕстернĕ пек хĕрарăм пухса тултарнă. Карчăксене. Уçланкă варринче, хăрăк юман тăрринче, халăхсен çул пуçĕ текен мухтавлă Сталин юлташ мăйăхне пĕтĕркелесе çăханпа юнашар ларать. Вĕсем тавра хура тум тăхăннă ентешĕ Берия пăван пек сĕрлесе явăнать. Иосиф Сталин, сылтăм хулне аран-аран çĕклесе, Кавказ ен чĕлхи уйрăмлăхĕнчен хăтăлаймасăр, тăрăшса калать: «Хаклă гражданкăсем! Чăваш çĕршывĕ – хăрушлăхра! Эпĕ пĕрре Тăван çĕршыва, пĕрлех сире те, çăлса хăвартăм. Халĕ тата, çăлма тесе, Турă вырăнне çĕр çине антăм. Ман патшалăхăн тĕп тымарĕнче – анархи. Нихçан пуçа усман Раççей куççуль кăларать. Патшалăх –

Турă çыннисен аллинче. Турă çынсене эсĕр Çĕр çинче хăнара кăна тесе улталать, леш тĕнчере çеç эсĕ райра пурăнма пултаратăн тесе васкавлăн хăй патне туртать. Çирĕп йĕрке çуккине пула патшалăх вăйсăрланать, çĕршыв макăрасла ахлатать. Манăн генеральнăй штаб пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Республикинче арçын вăрçăсăрах пĕтсе пырать. Эсир çуратнă ывăл-пăхаттирсем аллă-утмăлтах пăшалĕсене пăрахаççĕ. Ялта ват хусах хунать. Вĕсем – сирĕн харам пырсем. Эсир вĕсене тăрантарса усратăр. Халăх йышĕ ўстĕр тесе эпĕ хĕрарăмсене аборт тума чарнăччĕ. Вăл уссине пачĕ. Халĕ укçа тўлесе çамрăк хĕрарăмсем ăмăртса хырăм пăрахаççĕ. Пĕр ача та туман çемье хăвăрт ўссе пырать. Ĕçкĕ, наркомани этемлĕхе чакарать. Ачасăр, ывăлсăр, кам тытĕ-ха алла хĕç-пăшал? Хаклă гражданкăсем, патриоткăсем! Хĕсĕр çамрăк хĕрарăмсем тĕнче халăхне те, чăваш халăхне те йышлантараймĕç. Чăваш нацийĕ чакса пыни – куç умĕнчех. Шанчăк – сирĕн çинче çеç. Çамрăклăха аса илсе, ача çуратмалла! Эпĕ хавхалантармалли наградăсем туса хутăм: виçĕ ача çуратнăшăн – Сталин премийĕн пĕрремĕш лауреатне – ылтăн тупăк, иккĕшĕн – кĕмĕл, пĕррешĕн – юман тупăк. Ар пăшалĕсĕр тăрса юлнă арçынсенчен, алкашсемпе наркомансенчен усси çук. Çавăнпа хамăн çывăх тусăма Чăваш çĕршывне пĕрле илсе килтĕм. Сирĕншĕн Лаврентий Берия ăратлă ар пулать. Унăн паха опыт пур. Савăр, ыталăр ăна.

Эпĕ, арçынсен генералиссимусĕ, халăх йышне хунаттарса ĕçлекен те, тăван çĕршыва сыхлакан та кирлĕ чухлĕ çитересшĕн.

Гражданкă карчăксем, икĕ хут «Ача амăшĕ-героиня» ята çĕнсе илессишĕн социализмла ăмăртăва тухар!»

Хăранипе вăранса кайнă Укахви упăшкине сухалĕнчен туртса силлерĕ:

– Тăр-ха, тăр, Савватти.

– Мĕн, каллех хырăм саваламалла-и?

– Чăнах. Ытала-ха? Ытла хăрушă. Ман çума темле кăруçин çыпçăнчĕ. Мана ача тутарасшăн. Ах, тата хытăрах ытала-ха? Санпах çыврас...

Яланхилле панă камантăна итлесе, Сухалăн арăмĕн ватлăхра та хумханма пăрахман сухалĕ патнеллех алла яма тиврĕ.

Яла кĕçех такăр çул лавкка пулнă çурт умнех çитсе чарăнчĕ. Районтисем, шупашкартисем тата çул тăвакансем, вĕсемпе пĕрлех юманлăхсем те килсе тулнă. Машина тăратма вырăн çук. Шукăль тумланнă арçынсенчен пĕри, çул урлă турттарнă шупка хăю умĕнче тăраканскер, хĕрӳллĕн каларĕ:

– Этем хăйне валли çул уçнă. Çулсăр пурнăç пулман. Такăр çул – çĕршыв пуянлăхĕ. Чăваш халăхĕ те хамăр республика витĕр çĕпĕрелле каякан çула тунă çĕрте паттăрлăх кăтартнăшăн иртнĕ вăрçă умĕн Ленин орденĕ илнĕ. Юлашки вăхăтра çул ыйтăвĕ уйрăмах çивĕч тăрать. Унсăр эпир вăйланаймăпăр. Çавăнпа Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсем тăвассине хăвăртлатса пыратпăр. Кăçал тăват çĕр вунă çухрăм çул хыврăмăр, вуннăшне – Юманлăха çитиччен. Кашни яла асфалть сарнă çулпа çыхăнтартăмăр. Çитес вăхăтрах сирĕн урамсене те асфальтпа витетпĕр, пӳрт çуммипе те яп-яка çул пулать. Такăр çулпа – малалла!

Хĕрлĕ хăйăва касрĕç те, черетленсе сăмах-юмах çапрĕç те пуçлăхсем хăйсен çулĕпе яка çул тăрăх çилпе ăмăртсах вĕçтерчĕç. Вĕсем хыççăн – Юманлăх таркăнĕсем те.

– Таркăн та тăван çĕрне манмасть, çуралнă вырăнах туртăнать, карчăк. Пире иксĕмĕре валли мар ку çул. Пирĕн валли çеремлĕ масар çулĕ пур. Ава вĕсен, хамăр ял пуянĕсен, уйрăм хула. Ял хыçĕнче, вăрман уçланкинче. Вĕсен унта капмар керменĕ те, сачĕ те, утарĕ те, хаяр йыттийĕ те – пурте пур. Каллĕ-маллĕ хутлама такăр çулĕ те пур.

– Ан кулян, старик, – ыталарĕ ăна карчăкки. – Пире ку çулпа килсе курĕç-ха ачамккăсем. Çул пурри – пурнăç пурриех. Пирн ĕнтĕ халь, иксĕмĕрĕн, ĕмĕр-ĕмĕр хамăр йăх такăрлатнă пĕр çул юлчĕ – масар çулĕ. Унччен пурăнса юлар-ха. Вăрманкаса та, Шупашкара та, Мускавне те тухса курăпăр-ха ку такăр çулпа. Уншăн юрла-юрлах савăнар:

Пирĕн пурнăç пăрнăç çул
Пулнă пултăр – вăрăм çул.
Халĕ ĕнтĕ – тăнăç çул,
Пурăнар тата çĕр çул.

7

Çĕршывра кашни çулталăка чи паллă пулăмпа çыхăнтарса ăнăçлă вĕçлес йăла пурнăçа кĕрсе пырать. Акă, çемье тата ырă ĕç паллин çулĕсем хыççăн ял хуçалăх ĕçченĕн çулĕ те ял-ял тăрăх кусса кайрĕ.

Хĕл ыйхинчен вăраннă çĕр хресчене алă çуптарчĕ. Кĕр тыррисем сип-симĕс кавирлĕ. Ўсме те вăхăтра çумăрĕ пулчĕ. Тырă уйĕсем саралса пыраççĕ, тулли пучахĕсем, авалхилле каласан, йĕтем çине çаппуççипе выляма васкаççĕ.

Мускавран Усач министр та хул пуççи çине шăлланă çурла хурса Шупашкар еннелле васкарĕ. Темшĕн кăмăл туртать ăна Чăваш çĕрĕ-шывĕ. Çўреме çывăх пулнăран-ши? Вырăнĕ юхан шывлă та вăрманлăшăн-ши? Уншăн та, куншăн та пулĕ. Çапах ăна ĕçчен чăваш халăхĕ чуна çывăх. Çĕре юратакан, çĕрпе туллин усă курма пултаракан ăстаçăсем хаклă уншăн – Раççей çăкăрĕшĕн чи хуравлă çынна.

Раççей агропромышленноçĕн аталанăвĕнче ун шучĕпе чăвашсем ялав йăтса утаççĕ. Вĕсем уй-хир ĕçĕнче те, выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче те, ял хуçалăх продукчĕсене тирпейлессипе те ялан мĕнле те пулин çĕнĕлĕх тупма пултараççĕ. Унăн вара, министрăн, çав çĕнĕлĕхсене пĕтĕм çĕршыва сарма тивет. Мухтав мар-и

çакă вĕсемшĕн? Чăваш енĕн талпăнуллă хăват пурри çинчен вăл хăйĕнчен аслăрах пуçлăхсемпе те пĕрре мар каласнă. Çавна май, ытларах пулăшма та пултарать чăвашсене. Чăн та, Чăваш ен пек регионсем çĕршывра сахалтарах. Хăшĕсем çут çанталăк панă ырлăхпа та туллин усă кураймаççĕ. Ун куçĕ умĕнчех Чăваш çĕршывĕн сăн-сăпачĕ çĕнелсе, тĕпрен улшăнать. Çулсерен çĕнĕ утăмсем тăвать республика. Кама ырламалла-ши уншăн? Паллах, чăвашсене Турă панă патшана тата ĕçчен та пултаруллă халăхне.

Федоров президент командированнăй хăнана нумай тытмарĕ, ăна хирĕç ăшшăн пăхса, каларĕ:

– Çул çинчен – тӳрех вырмана. Вăрманкас енне çитсе пуçлар-ха çĕнĕ каçалăк. Хавхалантарса хăварар маттурсене.

– Хавхалантармалли ман та пур-ха, – тесе Усач президентпа юнашар машинăна кĕрсе ларчĕ.

Нурăс енчен тăвалла хăпарсан министр тĕлĕнсе пăхрĕ те:

– Николай Васильевич, астăватăр пуль пĕринче эпир ку уйра вăрманкассем мĕнле сап-сарă çĕнĕ культура ӳстереççĕ-ши тесе тĕлĕннĕччĕ.

– Хам та сиртен намăслантăм ун чухне куç умĕнчех çĕр аллă гектар анра çарăк чечекленсе ларнишĕн.

– Авă халĕ тулă уйĕ кăкăр таран. Тинĕс пек хумханать.

– Пытармастăп, вунă çул канса выртнă çак лаптăк. Республикипе хĕрĕх пин гектара çитнĕччĕ унашкал çĕр. Аран-аран сухаласа пĕтертĕмĕр – йăлтах.

– Сирĕн мĕн вăл. Çĕршывĕпе хĕрĕх миллион гектар çĕр усăсăр сарăлса выртать. Çĕршывăн, халăхăн пуянлăхĕ.

– Хрущев вăхăтĕнчи пек çав çĕнĕ çĕрсене патшалăх калăпăшĕпе, пысăк нимепе, хăватлă техникăпа уçсан?

Усач мăйăх вĕçĕсене çеç пĕтĕрсе илчĕ:

– Вăл – иртнĕ вăхăт. Халĕ – урăхла политика. Ăнланса пĕтереймен йĕрке. Выртса макăрсан та, çĕр кăшласан та

май килмест çав хĕрĕх миллион çĕртен триллион тенкĕ тупăш илме. Ун патнелле ытларах чикĕ леш енчен ют алăсем тăсăлаççĕ. Юрать-ха тĕнчери суту-илӳ организацине кĕресси, тулашри лару-тăру йывăрланнă пирки, вăхăтлăха чарăнса ларчĕ. Унта кĕрес-тăвас пулсан пире, Раççей хресченĕсене, тĕттĕм кĕтессе кăна хуптĕрлесе хураççĕ ют патшалăх фермерĕсем. Ăçта мĕн тата мĕн чухлĕ акса-лартса тумаллине те, мĕн чухлĕ аш-какай, сĕт, çăмарта туса илмеллине те совет влаçĕ вăхăтĕнчи пек хушса пурнăçлаттарма тытăнаççĕ. Турă усала сиртĕрех ВТО мурĕнчен. Юрĕ. Сире хăвăра та паллă вăл. Авă...

Çул çумĕпе тăсăлакан хурăнлăх хыçĕнчен тулă уйне, çапăçăва васкакан танксем пек, хăватлă комбайнсем пĕрин хыççăн тепри кĕрлесе тухаççĕ. Пĕрре, иккĕ, вуннă таран.

Кĕтмен пуçлăхсене-хăнасене Попов кĕтсе илчĕ. Усач паллать ăна. Тӳрех ĕçлĕ каласу пуçланчĕ.

– Вырмана паян тухрăмăр. Сирĕн куç умĕнче. Кăçал пĕтĕмпе çирĕм пин тоннăран кая пулмалла мар. «Дон-1500» комбайнсем кусем, – çарти пек шакăртаттарчĕ аш-какай комбиначĕн директорĕ. – Пире çĕр çитмест. Район агрохолдингĕ тумалла та...

– Ун патне çитĕпĕр-ха, Юрий Василеьвич, – чарчĕ хĕрсе кайнăскерне президент. – Куратпăр, вăю пур сирĕн. Агрохолдингсем – пирĕн ял хуçалăхăн пуласлăхĕ. Пысăк чăмăра пĕрлешсе пыратпăр.

Малти комбайн вĕсен тĕлĕнче чарăнчĕ те, ыттисем те харăсах тăчĕç. Уй-хир карапĕсен капитанĕсене Попов алă сулса чĕнсе илчĕ.

– Краснов пур-и? – ыйтрĕ Федоров.

– Эпĕ, президент юлташ!

Николай Васильевич хастар комбайнера республикăн тава тивĕçлĕ механизаторĕ хисеплĕ ят пани çинчен пĕлтерчĕ, комбинезонĕ çине унăн илем паллине тирсе ячĕ, аллине грамотине тыттарчĕ. Ун ăшĕнче – вунă пин тенкĕ.

Хавасланнă Хапăс Улекĕ шăхăрса ташă çаврăмĕ турĕ:

Эпир кам, эпир кам?
Хоп-хоп! хапăссем.
Эпир кам, эпир кам?
Чапа тухнă паттăрсем...

Пĕрер çаврăм тăвас килмест-и сирĕн, хаклă хăнасен?

Сĕнӳ президента та, министра та хаваслантарчĕ. Попов вара, ертӳçĕ пулса, Краснов комбайнĕ çине ларчĕ, ытти «доброволецсем» – ун хыçĕнчисем çине. Виççĕ çаврăннă хыççăн, комбайнсем чарăнчĕç. Пурте савăк. Улек Краснов пурин умне тухса тăчĕ те:

– Хастар комбайнерсем! Сире эпир, вырмара паттăрлăх кăтартнăшăн, хапăссен ячĕпе çакă тулă пучахĕсемпе наградăлатпăр. Кăçал пирĕн президент ĕмĕтленекен миллион тонна тĕш тырă шутне эпир те хамăр тӳпене тивĕçлипех хывăпăр. Тавтапуç сире ĕçлесе панăшăн. Пока!

Тулă пучахĕсене кăкăр кĕсйине чиксе хунă пуçлăхсем хапăссенчен уйрăлса «Шурăмпуç» хуçалăхĕ еннелле çул тытрĕç.

– Умрине витĕр куракан пуçлăхсемпе ĕçлеме çăмăл, – терĕ Федоров президент. – Эпĕр çитес хуçалăх пуçлăхĕ пулнă Тельман Волков академире пилĕк инженер вĕрентсе кăларнă: тракторпа, комбайнпа ĕçлеме. Кĕçех куратпăр акă вĕсене.

– Тĕрĕс тунă, – килĕшрĕ министр. – Хальхи кăткăс техникăна пур механизатор та шăл витереймест.

– Прогресс çулĕпе пыратпăр.

Аслă çул хĕрринчи хурăнварсем те вырмана тухнă. Анлă уйра пилĕк комбайн ĕçлет. Такам систернĕн, Шупашкар машини умне Петр Волков уазикпе çитсе тăчĕ. Комбайнерсем пухăнсан, председатель ямшăкĕ Мулла Микушĕн ачине шахвăртса илме те ĕлкĕрчĕ:

– Тимухха, куратăн-и министр кĕсйи çурлас пек мăкăрăлса тăрать? Итле-ха, пĕр орденĕ «Тимуххана салам!» – тесе чĕнет. Чуп часрах!

Тимуххан та йĕплĕ сăмаххи чĕлхи вĕçĕнчех, тухса та сирпĕнчĕ:

– Эс ху Африкăна вĕçтер. Некăрсене хунаттарнăшăн Лумумба медальне илме васка.

Çав самантрах Усач:

– Ман сире ырă ĕçшĕн, паттăрлăхшăн мухтас килет, – терĕ мăн саслăн. – Механизатор ĕçĕн тертне эпĕ çамрăкранах пĕлетĕп, хресчен ачи. Атте тракторист пулнă. Маттур, пултаратăр. Сире тав тăватăп, юратнă чăваш ачисем. Сиртен пĕри вара уйрăмах ăсталăх кăтартнă. Тимофей Николаевич Муллин вăл. Ăна эпĕ Раççей ял хуçалăх министертвин «Кĕмĕл медальне» сирĕн умра савăнăçлăн паратăп, пĕрле – çирĕм пин рупăль.

Патшасен ăйăрĕ хыççăн Гриша-Гриль те нихçан чăхăмламан урхамахне Вăрманкас çулĕпе хăваларĕ.

Раççей ял министрĕпе Чăваш патши паян çĕр уявне çĕр çыннисемпе пĕрле ĕçлесе пуçларĕç. Вĕсем хăйсем те хресчен ачи пулнишĕн чĕре çумĕнчи пучах ăшшине туйса хĕпĕртерĕç. Уйра – тăри юрри, комбайн-трактор-машина кĕрлевĕ. Вăл çыпăçуллă кĕвĕ хресченшĕн те, президентшăн та, министршăн та пĕр – тулăх кĕреке кĕвви.

* * *

Авал Тухăç енчен Аслă Атăл çыранне çитсе, хăватлă юхан шыва çăрттанла çĕнтерсе тăвалла хăпарнă, вăрман чăтлăхĕнче упа-кашкăрпа, тăшманпа кĕрешсе йăва çавăрнă Чăваш хăйĕн çĕршывĕн сарă тулă ылтăнĕпе тĕнче çуттине вăйлатса йăлкăшать. Сарă хĕвел айĕнче этем кĕтӳне йышлатса пыракан Тарăнвар, Хурăнвар, Кайривар ялĕсен çыннисем те ирпе, кăнтăрла, каçалапа сĕтел хушшине лараççĕ, çăкăр касма алла çĕçĕ, яшка çиме кашăк тытаççĕ. Чӳречерен пăхаççĕ те, Салтаккай–Салакайăк тымарĕнчен пĕри – вăрçă чăлахĕ Салтак лартнă арман авăрнине пăхса киленеççĕ.

Тăватă çунатлă арман хăш енчен вăйлăрах çил çапнипе хуллен те, хăвăрт та авăрать. Çут çанталăк вăйĕпе çаврăнакан çаврака йывăр чулпа айĕнчи шăллă чул авăртнă çăнăх ансăр шăтăкран миххе тулать, кăмакара пиççе сĕтел

çине çавракан е тăваткаллăн тутлă шăршă – уй шăрши кăларса тухса выртать. Çăкăра выçă хырăм алли кăкăр çумне тытса касать, çăвара васкаса хыпать.

Иртнĕ ĕмĕр варринче «Шурăмпуç» колхоз парткомĕн секратарĕ Максим Максимович Крутов, Хурăнвар ялĕнчи Салакайăк Карачăмне итлесе,Тельман Федотович Волков председателе ултă армантан пĕрне сыхлаттарса хăварнă ăрусен çак арманĕ Чăваш çĕрĕн варринче çăнăх авăртма пăрахмасть-ха. Çăнăх юххи чарăнмасть. Хушăран-хушă çилĕ улшăннă майăн, арман чулĕ вĕçĕмсĕр хăлтăртатать. Тырă пур та – çăнăх пур. Çăнăх пур та – çăкăр пур. Çăкăр пур та – пурнăç пур. Чăваш хресченĕ, арманçă, вăхăтлă çил яланах вĕртĕр тесе, Турра пуç çапать: тавах сана, таса сывлăшăм, пире ыр çанталăк парса тăнăшăн, пире манманшăн, турă кĕтессинчи кĕреке сĕтелĕ пĕрле пултăрччĕ.

Арман вăйланса та, вăйсăрланса та – чарăнмасăр авăрать. Хресчен унталла та, кунталла та тинкерет: хăш енчен çилĕ пире майлăрах вĕрĕ-ши?

1971-1979, 1981-1987, 2009 çулсем.
Йĕпреç – Чулхула – Шупашкар

Кузьмин Владимир Прокопьевич

КОРЕНЬ ЖИЗНИ

Роман

На чувашском языке

Книга третья

Издается в авторской редакции.

Подписано к печати 20.05.2009. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 24. Тираж 1500 экз. Заказ № 77.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98. E-mail: newtime1@mail.ru.

80.00

ВЗАИМОДЕЙСТВИЕ В ИНТЕРЕСАХ ПОВЫШЕНИЯ ЭКОНОМИЧЕСКОГО ПОТЕНЦИАЛА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

З.В. Воробьева,
генеральный директор

ОТКРЫТОЕ АКЦИОНЕРНОЕ ОБЩЕСТВО СТРАХОВАЯ КОМПАНИЯ "ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА"

428024, г. Чебоксары, проспект Мира, д. 90, корпус 1

ОАО СК «Чувашия-Поддержка» успешно работает более 15 лет. В его уставном капитале доля Правительства Чувашской Республики составляет 33,15 процента. Компания предоставляет широкий спектр страховых услуг, динамично развивается и имеет устойчивое финансовое положение. По объему собранных страховых взносов она входит в число лидеров регионального страхового рынка, а по страхованию урожая сельхозкультур занимает лидирующие позиции на российском страховом рынке. В целях доступности страховых услуг представительства компании открыты во всех городах и районах Чувашии, а с 2008 года ее филиалы открываются в других регионах России.

За заслуги и достижения в лидерстве по управлению бизнесом и за использование инновационных технологий компания награждена тремя международными призами общественного признания. В 2008 году она стала лауреатом Поволжской национальной премии в области страхования «Серебряный зонт» в номинации «Информационно-открытая страховая компания» .

ЧУВАШСКИЙ РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КРЕДИТНЫЙ КООПЕРАТИВ «СОГЛАСИЕ» (ВТОРОЙ УРОВЕНЬ)

ЧРСПКК «Согласие» создан в 1998 году при содействии СК «Чувашия-Поддержка». Сегодня он входит в число крупнейших сельских кредитных кооперативов России. Большой опыт работы на микрофинансовом рынке и высокая квалификация персонала позволяют кооперативу быть финансово-устойчивым и конкурентноспособным. Он успешно участвует в реализации социально-значимых республиканских целевых программ. В рамках его взаимодействия со СК «Чувашия-Поддержка» сформирована и развивается региональная двухуровневая система сельской кредитной кооперации. Микрофинансовые услуги становятся все более доступными и востребованными. Люди учатся жить в долг и успешно пользуются займами на выгодных для них условиях. Кредитные кооперативы хорошо вписываются в локальную социально-экономическую среду и становятся надежными партнерами для хозяйствующих субъектов, граждан и органов местного самоуправления.

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ ОБСЛУЖИВАЮЩИЙ КООПЕРАТИВ «СОДЕЙСТВИЕ» (ВТОРОЙ УРОВЕНЬ)

Неотъемлемой частью многоукладной сельской экономики становятся сельскохозяйственные потребительские кооперативы сельскохозяйственных и несельскохозяйственных видов деятельности. Их предназначение - обеспечивать личным подворьям граждан доступ к рынкам сбыта и переработки сельхозпродукции, оказывать на селе услуги по обработке земельных участков и уборке урожая, продаже материальных ресурсов, перевозке грузов, выполнению ремонтно-строительных и других работ. В целях объединения и координации работы таких кооперативов, более эффективного ведения хозяйства и увеличения доходов их членов в 2006 году при участии СК «Чувашия-Поддержка» и ЧРСПКК «Согласие» создан РСПОК «Содействие». Он оказывает своим членам консультационные, информационные и маркетинговые услуги, помогает им создавать и развивать материально-техническую базу, проводит для руководителей и специалистов кооперативов обучающие семинары.

УЧЕБНО-ИННОВАЦИОННЫЙ ЦЕНТР С УЧЕБНО-ДЕМОНСТРАЦИОННЫМИ ПЛОЩАДКАМИ

В рамках взаимодействия СК «Чувашия-Поддержка», ЧРСПКК «Согласие» и РСПОК «Содействие» на базе имущественного комплекса страховой компании осуществляются меры по созданию Учебно-инновационного центра с учебно-демонстрационными площадками на базе сельскохозяйственных потребительских кооперативов. Эта инициатива получила поддержку со стороны Минсельхоза Чувашии и России, а опыт работы этих трех структур востребован и за пределами республики.

ОАО СК "Чувашия -Поддержка"	ЧРСПКК "Согласие"	РСПОК "Содействие"
тел./факс: (8352) 286-484	тел./факс: (8352) 286-400	тел./факс: (8352) 286-873
www. podderjka.ru	www. chrspkk.ru	www. rspoksod.ru